К 84.09(=Чув)
К89
Ч-42358



Владимир КУЗЬМИН

# Тымар



II кĕнеке



Национальная библиотека ЧР
4-042358

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

К84.09(=Чув)
К89

**ВЛАДИМИР КУЗЬМИН**

# ТЫМАР

Роман

Иккĕмĕш кĕнеке

Шупашкар
«Çĕнĕ Вăхăт»
2009

Кузьмин В.П.
Д... ННЫЙ ЭКЗ.

УДК 821.512.111
ББК 84(2Рос=Чув)6-44
К 89

ПРОВЕРЕНО
20...

Кузьмин В.П.
Тымар. Роман. 2-мĕш кĕнеке. — Шупашкар: «Çĕнĕ Вăхăт», 2008. — 312 с.

*Утмăлмĕш-çитмĕлмĕш çулсенчи йывăр саманара хăйсен тивĕçлĕ вырăнне тупнă чăваш хресченĕпе интеллигенцийĕн хастарлăхĕпе паттăрлăхĕ, çĕнтерӳллĕ утăмĕсем çинчен романăн пĕрремĕш кĕнекинче сăнарлă чĕлхепе илемлĕн çырса кăтартнăччĕ. Ку кĕнекере çав геройсен пурнăçĕ малалли кĕрлесе пырать. Тĕнче вут-çулăмĕнче нумай ĕмĕр хушши аталанса тĕрекленнĕ чăвашсем çуралнă çĕрĕ çинче ырăлăхшăн, этем телейĕшĕн кĕрешеççĕ, тăван çĕршыв тĕрекĕшĕн вăйне-халне шеллемесĕр, ăс-тăн хăвачĕпе инкек-синкеке сирсе пултарулăн утаççĕ.*

И-42358

© Кузьмин В.П., 2008

# ТЫМАР

Тымар типсен — йывăç вулли хăрать.
*Ваттисен сăмахĕнчен*

## ПĔРРЕМĔШ ПАЙĔ

1

Чăваш текен этем те Çĕр-планетăн çаврăмĕнче çут çанталăк йĕркипе те, йĕркисĕр те кутăн-пуçăн çаврăнса халăх шутне кĕнĕ, тĕрлĕрен аçа-çиçĕмлĕ вăхăта чăтса ирттерсе малалла тапаçланмаллăх вăйне сыхласа хăварнă, хăй тăранса пурăнакан ура айĕнчи çĕре, çĕртен тапса тухакан шыва пуç çапса ялан ырлăхшăн терт-леннĕ, нумай ĕмĕр хушшинче ятне сыхласа хăварнă, тĕнчен аслати кĕрлевĕнче хăйĕн сассине панă.

Çĕр ăна тăрантарнă, шыв чĕртсе аталантарнă, хăйсем çумнех туртнă. Чăваш хресченĕн те, ытти халăхсенни пекех, çĕрпе шывсăр малашлăх курăнман. Çапла чăвашăн та, этемлĕхĕн пĕр пĕчĕк пайĕн, хăйне хăй сыхласа хăварассишĕн пайтах пуçа ватмалла пулнă. Çут çанталăк панă ырлăха пурин те куçĕ курать, пурин те унпа чун канăçлĕн усă курас килет. Чăвашăн та çавнашкалах. Аталану тапхăрĕсенчен пĕринче те вăл алă усса ларман, Турă панă ăс-тăнпа пĕрмай çĕнĕрен те çĕнĕлĕх шыраса тупнă, унпа усă курса хăйĕн кил хуçалăхне те, пĕрле йăшăлтатакан ушкăнне те, патшалăхне те вăй кĕртсе пынă... Пынă-пынă та çапла улпут аллисенчен хăтăлса, патшалăх хресченĕ те пулса, алăра çĕр тытса та курса, колхоз текен ушкăнра çĕрсĕр те тăрса юлса пăхнă... паян кун та вăтăр-хĕрĕх соткăллă кил çĕр лап-тăкĕпе нушаланса айланкаланать.

Ĕмĕр-ĕмĕр тăршшĕ пуç çапма хăнăхнă хресчен çирĕммĕш ĕмĕр ватă енне сулăннă вăхăтра та «эпĕ — çĕр хуçи» тесе хăюллăн калама пултараймасть-ха. Чăваньенри Вăрманкас районне кĕрекен ялсенче те кăвак хуппи уçăлса кайман-ха. Ăна яри уçассишĕн вăйхалне шеллемесĕр чунтан тăпăртатакансем те, çутта хура пĕлĕтпе хуплакансем те пур. Утмăлмĕш-çитмĕлмĕш çулсенчи ахăр саманара хăйсен тивĕçлĕ вырăнне тупнă кĕрешӳçĕсемпе чăрмавçăсен ĕçĕ-хĕлĕ çинчен романăн пĕрремĕш кĕнекинче тĕплĕн сăнласа кăтартнăччĕ. Çав геройсен пурнăçĕ малалла шăвать.

* * *

Акă, Хурăнварти Нухрат Кавăрлин ачи, район пульницинче ĕçлекен хирург, Макçăм Крутов идеологпа пĕр çурта пурăнма лекнĕ. Шăпа çулĕ ку еннелле пăрăнассине вĕсенчен, паллах, нихăшĕ те шутланă пулас çук. «Шурăмпуç» колхозра ашшĕне партирен кăларнăшăн Валерий Гаврилович унччен хытах тулхăрса çӳретчĕ-ха Максим Максимович çине. Паллă ĕнтĕ, ашшĕ ачишĕн çири кĕперен те çывăхрах. Кӳршĕсем çав-çавах пĕр-пĕринпе хутшăнаççĕ-ха.

Çак шухăшпа пуçа çĕмĕрсе пынă май Крутов Тымартан Вăрманкаса çуран утса çитнине те сисмерĕ. Килĕнче ăна арăмĕпе ывăлĕ чăтăмсăррăн кĕтсе илчĕç. Апата ларма хатĕрленнĕччĕ çеç, кӳрши каçрĕ. Нухратов кил хуçине сĕтĕрсех илсе тухса кайрĕ.

Нухратовсен хваттерĕ вĕсенни пекех, виçĕ пӳлĕмлĕ. Япала тултарса лартма ĕлкĕрнĕ.

— Эпир, Максим Максимович, интеллигентсем çав. Мĕн тумаллине хамăрах пĕлетпĕр. Грета та ман... санэпидстанци, главврач.

Шалти пӳлĕмрен тăклаттарса килекен Грета Родионовна çӳçне тепĕр хут майласа, çемçен сăмах хушрĕ:

— Сывлăхлă пулăр, иртĕр малалла. Маруçсем ăçта тата?

— Кĕçех каçаççĕ.

Нухратов кухньăран кăшкăрать:

— Куратӑн-и, Максим Максимович, сӗтел ҫинче пирӗн мӗн-мӗн ларнине? Эпир-ҫке вӑл — врачсем, интеллигентсем! Пирӗн пурте пур.

Чӑн та, ку тӑваткал сӗтел ҫинче мӗн кӑна ҫук-ши? Пӗҫернӗ хур, ӑшаланӑ кӑвакал, шӑрттан, темиҫе тӗрлӗ пулӑ, хура вӑлча, рак, апельсин, мандарин, ананас...

— Валерий Гаврилович! — илттӗр тесе хыттӑн каларӗ Крутов. — Чӗрӗ устрица ҫеҫ ҫитмест пуль кунта?

Нухратов кухньӑран тӑрӑхла ывӑс йӑтса тухрӗ.

— Устрица вырӑнне ӑшаланӑ нӑрх-нӑрх пур. Максим Максимович, иртнинче эс хӑвӑр патра мана идейӑпа тӑрантартӑн... Акӑ, кур-ха? — сӗтел ҫумӗнчи серванта уҫрӗ те вӑл икӗ аллине саркаласа кӑтартрӗ. — Вӑт манӑн идея, кур: спирт, столичнӑй, посольски, ром, эрмен коньякӗ, бальзам, иҫӗм ҫырли эрехӗ, шампански. Ну, мӗнле, хӑшӗнчен пуҫлатпӑр?

Хӗрӗнкӗскерне Крутов кӳрентерес темерӗ, шӳтлешӳтле ирттерсе яма шутларӗ:

— Ҫапла ӗнтӗ вӑл пурнӑҫ, манӑн та пур-ха пуянлӑхӗ, виҫӗ шкап туллиех: Маркс, Энгельс, Ленин, ытти классиксем, хальхи саманарисем...

Черккесене коньяк ярса тухнӑ май Нухратов каларӗ:

— Тоттӑ ҫав пур — классиксем... Вӗсемпе тӑранса...

Маруҫпа Боря шавласа ҫитрӗҫ. Маруҫ тӗлӗнсе:

— Ай Турӑ! Кам валли хатӗрленӗ-ши? Пуҫласа куратӑп кунашкал тӗлӗнмелле сӗтел! Эпир ӗмӗрте те сире ҫапла пӑхма пултараяс ҫук.

Сӗтеле икӗ енчен ҫатӑрласа тытнӑ Нухратов ахӑрса ларать:

— Пирӗн, врачсен,ултӑ ҫул вӗренни харама каймасть, сӑмах купипе танлашмасть ҫав... Институт суйлама пӗлес пулать.

Грета Родионовна ҫӳҫӗнчен пырса туртнипе упӑшки шӑпланчӗ, черккесем ҫӗклеме ыйтрӗ. Ҫав самантрах шӑнкӑрав сасси илтӗнчӗ. Килнӗ хӑнана, район пульницин тӗп врачне Виталий Арсентьевич Горячева, Макҫӑм ҫумне лартрӗҫ.

— Халь эпир, коллегăсем, интеллигентсен компанине уçатпăр, — хăлаçланчĕ кил хуçи. — Ларсан-ларсан вăл вĕçне çитермен шухăшне апат çумне хушса пычĕ. — Максим Максимович мана марксизм-ленинизм идейисемпе çĕнтересшĕн. Шалишь! Тӳрех илейместĕн! Эпир те вĕреннĕ ăна. Пустуй япала! Унта каланипе пурнăç хушшинче — сиксе каçайми шырлан. Чухăн пирĕн халăх. Ни тăраниччен çиеймест, ни капăрланиччен тумланаймасть, ни шикарнă канаймасть. Куратăп та пульницана пынă çав мĕскĕнсене... Çав пуш идейăсемпе тăрантарса çынсен ĕмĕрне кĕскететпĕр. Шутласа пăх-ха эс — парти ĕçлевçи, революционер, тейĕпĕр... Мана хама нимле идея те кирлĕ мар. Эп — врач, темле системăра та кирлĕ специалист. А эсир, парти функционерĕсем, хăвăрăн пăнтăх системуна ухмахла парăнса, суккăрла ертсе пыратăр хăвăр хыççăн çын кĕтĕвне... Пурпĕрех ман куçранах пăхатăр, мансăр утăм та тăваймастăр. Мĕншĕн тесессĕн тухтăр сиртен ăнăçлăрах сиплет. Калăпăр, ӳкрĕн чирлесе çак самантра, персе хĕстерчĕ сана хырăмран. Мĕн тăватăн? Классиксене вуласа вĕсенчен пулăшу ыйтатăн-и? Ман патах чупатăн, тухтăрах чĕнсе илетĕн. Идейăпа сурана та, чир-чĕре те сиплейместĕн. Çавăнпа эпир — врачсем. Çапла пуль, Виталий Арсентьевич?

Горячев кăшлама пуçланă кăвакал тукмаккине аялалла усрĕ, пурин çине те ыйтуллăн пăхса çаврăнчĕ, вара тин калаçăва хутшăнчĕ:

— Эпир тухтăрсем ĕнтĕ, çынна ура çине тăратма вĕреннĕ специалистсем. Анчах та вĕсем те, парти ĕçлевçисем, çынна тĕрĕс çул çине кăларса тĕрĕс çулпа уттаракансем — пире, халăха сиплекенсем. Тавлашма кирлех-ши?

— Пурпĕрех врач вăйлăрах, — чарăнасшăн пулмарĕ Нухратов. — Идейăпа аппендицит касаймастăн. Идейăпа çын чĕрине Барнард пек урăх чĕрепе ылмаштараймастăн. Сăмах вăл пурпĕрех çын ӳм-пӳ çыпçăнмасть. Сăмах вăл — çунатлă. Сăмах вăл, идея — сывлăшра вĕçет. Этем пуçĕ тавра пăтранать.

Максим Максимович ăна хирĕçлерĕ:

— Идеалист эсĕ, Валерий Гаврилович. Вĕреннĕ терĕн институтра маркизм-ленинизма. Тем, çиелтен çеç шăйăрттарнă пулас, ăнлансах çитмен пек туйăнать. Шухăшласа пăх-ха лайăххрах. Идейăпа идея хушшинче те уйрăмлăх пур. Эсĕ темшĕн материализм идейинчен пăрăнса каясшăн. Хăв хăш обществăра ӳссе çитĕннине, пурăннине, камшăн мĕн тунине туймастăн. Мана парти кирлĕ мар, тенĕччĕ эсĕ иртнинче те. Халĕ, акă, идея операци тума пулăшмасть тетĕн. Марксизм-ленинизм идейисем пулăшман пулсан эсĕ, ан кӳрен те, аллунти скальпеле, тен, тĕлĕкре те кураяс çукчĕ. Чăваш ачи умĕнче институт алăкĕ яри уçăлнине, кам вăйĕпе уçăлнине мантăн-и? «Шурăмпуç» колхоз парткомĕ пуçарса çине тăнипе тухса чупрăн вĕт чулхуланалла. Ялти пĕрремĕш стипендиатсенчен пĕри пултăн. Ял халăхĕ хăй укçипе вĕрентрĕ сана. Халĕ эсĕ вĕсене мĕскĕнсем вырăнне хуратăн. Пуç çапмалла сан вĕсене. Камшăн ĕçлетĕн эсĕ? Е çак сĕтелшĕн çеç? Çын чĕрине касса çĕнĕрен лартма та çăмăл мар пуль те... Çын чĕрине сăмахпа çĕнетме тата йывăртарах. Çавăнпа ĕнтĕ, Валерий Гаврилович, ман шкапсенче классиксем нумай. Вăт сана, хăв ăнланмалла каласан, идея вăйĕ.

Юрласа та пăхрĕç, ташласа та. Нухратов çав-çавах чарăнмарĕ, хăйĕннех печĕ:

— Сĕтел çинче пулмасан мĕншĕн ĕçлес ман? Мана идея мар, пурпĕрех скальпель тăрантарать. Касатăп, ваклатăп, тӳрлететĕп, çынна чĕртетĕп — ман умра пилĕк авса тăраççĕ, пурте, сан пеккисем те, Максим Максимович. Вилес темесен çын вăл врача тем пама хатĕр. Авă, кăтартрăм хамăн «коллекцине». Тавлашатпăр-и? Тата-и? Грета, чунăм, кил хам çумарах. Эпир хамăрăннех тăватпăр. Çакăнти пек закуска паян районĕпе те никамăн та çук — район хуçин Мургаевăн та. Пире, врачсене, Турра пуç çапнă пек пуç çапаççĕ. Сире, выговор парса ĕçрен кăларакансене, çурăм хыçĕнчен чышкă кăтартаççĕ. Ман аттене те Хурăнвара пырсанах

тапăнтăн та... Халăх вĕрентнĕ тет тата... Аттен тĕкки пулман пулсан... Мана эсир мар — партком мар, Кириллов, правлени янă вĕренме. Эп хам пуçпа вĕреннĕ. Мана Мургаев вырнаçтарнă райбольницăна. Ташĕ вăл, сирĕн КПСС райкомĕн пĕрремĕш секретарĕ, ачине операци тунă хыççăн çак ылтăнланă кашăксене парса хăварчĕ. «Идея» сана... «Халăх вĕрентнĕ» сана... Пуç çапмалла ăна, Яков Сидоровича, — пурин те. Пĕлеп эп кама пуç çапмаллине...

Ĕç шалалла кĕрсе каясран асăрханса Горячев юлташне хулĕнчен туртрĕ.

— Эхе, ăнлантăм, — чарăнмарĕ лешĕ, — Виталий Арсеньтьевич та вĕсемпе пĕр майлă, ман арăм та... Партие кĕресшĕн-çке вĕсем. Пусахласах çитерчĕç терĕн-и-ха, Грета? Итле, Максим Максимович, çакна ăнлантарса пар-ха мана? Мĕншĕн эсир начальниксене партие ирĕксĕрлесе, вăйпах илетĕр? Кала-ха? Вара чарăнатăп. Виталий Арсентьевичпа ман арăмран парторг уйрăлма пĕлмест. Икĕ главврач, икĕ пуçлăх, пĕрле коммунист пулаççĕ. Тĕлĕнмелле. Тĕнче кулли. Ултав, йăлтах ултав. Сăмахпа чăнлăх — икĕ тĕрлĕ пăтрав. Суя идея.

Тарăхмах пуçланăччĕ Крутов, çапах кăмăлне пусарчĕ, лăпкăн çеç каларĕ:

— Парти вăл, Валерий Гаврилович, эс шутланă пек, пĕртте пуçтахсен, карма çăварсен, карьеристсен, çăмăлттайсен, икĕ питлисен тата йăпăлтисен пĕрлешĕвĕ мар. Парти вăл халăхăн пурнăç тĕшши, урăхла каласан — авангарчĕ, халăхăн пысăк ăс-тăнлă, идейăллă çирĕп пĕр пайĕ. Унта никама та çĕрĕк вĕренпе туртса кĕртмеççĕ. Сан аçу пек ăнсăртран лекнĕ çын унта, каçар та тӳртен каланăшăн, пурпĕрех нумай тытăнса тăраймасть. Парти вăл...

Алăкри шав калаçăва татрĕ. Васкавлă пулăшу машинипе Нухратова илме килнĕ-мĕн. Хăпăл-хапăл тумланса тухса чупрĕ врач, каялла çаврăнса йĕкĕлтесе хăварчĕ:

— Халь ĕнтĕ, Максим Максимович, эс панă идейăллă вăйлă те çирĕп шухăшпа операци тăвăп, скальпельпе мар. Партком секретарĕ вилет тет. Эп киличчен тăхтăр.

Крутовсем, тĕп врачсемпе сыв пуллашса, хваттерне каçрĕç. Макçăм ассăн сывласа ячĕ. Икĕ черкке коньяк ĕçнипех пуç темлерех, урăхларах. Çынсенчен тĕлĕнет вăл. Нухратов, авă, унчченех ӳсĕрччĕ, вĕсемпе пĕрле тата ĕçрĕ, çапах операци тума кайрĕ. Хуравлăх çук çав вĕсен, пахалăх çук. Çын шăпи мар — çын мĕн пани малта унашкаллисен.

— Мĕнле пуйăпăр иксĕмĕр, Маруç? — ыйтрĕ вăл арăмĕнчен.

— Эс вара, Макçăм, кӳршӳнтен те чухăн-и? Ан кулян, майĕпен пурте пулать, укçа пухкаласа стенкине те, коверне те, нумай тĕслĕ кăтартакан телевизорне те туянăпăр... Эпĕ вара хама хам санпа пĕрле чухне такамран та пуян тесе шутлатăп. Вăл пуянлăхпа — юрату пуянлăхĕпе — мухтанма та юрать. Çав икĕ тĕп врача шанмастăп эпĕ. Илтнĕччĕ вĕсем çинчен пĕр ырă мар сăмах. Нухратов пурпĕрех санран чухăн. Чунĕпе, чĕрипе, юратăвĕпе...

Макçăм арăмĕн тăп-тăрă куçĕнчен тăранайми пăхрĕ. Шурăмпуç çăлтăрĕн çути пӳлĕме çутатса ячĕ. Çав çутăра вĕсен пепки упа çурипе вылять. Çак çутăра Макçăм хăйĕн пурнăç телейне курать. Иксĕмĕрĕн тĕнче çаврăмĕнчи курăнман çулсене пĕрлештерекен вăй пурах çут çанталăкра — анлăхра, тесе шухăшлать.

## 2

Инструктор ĕçĕ партком секретарĕннинчен урăхларах, нумай енлĕрех тата яваплăрах. Секретарьте чухне Крутовăн пĕр колхоз коммунисчĕсемччĕ, пурне те лайăх пĕлетчĕ, витĕр куратчĕ, пурин шухăш-туйăмне те ăнланатчĕ вăл. Инструкторăн вара, район хуçалăхĕпе культурине парти енчен ертсе пынă çĕрте, райкомпа унăн бюроне, секретарьсемпе пай пуçлăхĕсене политика, идеологи, организаци ĕçне тума пулăшмалла. Çав вăхăтрах пуçламăш парторганизацисен, ĕç коллективĕсен кулленхи пурнăçне тĕпчесе пĕлмелле, коммунистсемпе, партире тăман çынсемпе ялан çывăх пулмалла,

вĕсен сăмахне, ыйтăвне туйса тивĕçтермелле. Çынсене ĕçре çывăх курса, вĕсемпе тĕплĕн канашласа кашнин лайăх е япăх енĕсене палăртма пĕлмелле. Тĕп Комитет, обком, райком йышăнăвне мĕнле пурнăçланине тĕрĕслесси, пуçламăш парторганизацисен паха опытне пĕр çĕре пухса ытти çĕре сарасси те инструкторăн ĕçĕ. Хăйĕн тивĕçĕ çинчен Максим Максимович тепĕр хут аса илчĕ. Тахçан илтнĕ сăмах пуçра минресе тăчĕ: «Инструктор вăл райкомпа пуçламăш парторганизаци хушшинчи буфер. Ăна райком енчен те, парторганизацирен те яланах ят тивет. Инструктор партин икĕ сыпăкĕ хушшинче шакăртатса пырать, иккĕшне çыхăнтарать...»

Çирĕп план тунăччĕ. Унта кунсемпе сехетсем тăрăх мĕн-мĕн тумаллине йăлтах палăртнăччĕ. Хăйне çирĕплетсе панă «Çăлтăрпа» «Шурăмпуçĕнче» кашни эрнере пулма шутланăччĕ. Çур уйăх иртрĕ ĕнтĕ, çапах çăрăлса тухаймасть-ха вăл район центрĕнчен. Акă тата Оманов чарчĕ, каçпа культура çуртне кайма хушрĕ. Шупашкар лекторĕ умĕнче намăс курас мар тесе халăх пухмалла. Каллех телефон çине «утланса ларма» тивет.

— Итлĕр-ха, Пантелеймон Христофорович, — хирĕçлесшĕн пулчĕ вăл. — Пирĕн «Пĕлӳ» обществи мĕн тăвать-ши? Калпак-чăлха çыхса ларнипех укçа...

— Райком ячĕпе, арçын сассипе хăратмалла! — пӳлчĕ ăна пуçлăх.

— Урăх усăллăрах ĕç тăвас вырăнне такамшăн шавланипе...

— Шавлани мар, Крутов юлташ! — хыттăн чарса лартрĕ ăна Оманов. — Сăмаххусене суйларах кăлар. Райком çуртĕнчине ан ман! Кам умĕнче тăнине!..

Тавлашса пурпĕрех усси пулас çуккине туйса Крутов шăппăн пӳлĕмрен тухрĕ, коридорта Быстрова тĕл пулчĕ.

— Кăшт сывлăш çавăрса ярар-ха, Максим Максимович, хутсем ăшĕнчех чыхăнса вилес пулать, справки, отчечĕ... Ытла нумай çырмалла, вĕçĕмсĕр ыйтаççĕ, парторганизацисене тухса çӳреме те вăхăт юлмасть, — тесе вăл ăна аялалла çавăтса анчĕ.

Картишĕнче пысăках мар сад ешерет. Çынран çӳллĕрех ӳснĕ улмуççисем, кĕрхи сивĕ çилрен тураттисене хӳтĕлесе-ши, çăра çулçисене хăйсенчен уйăрма васкамаççĕ-ха. Чиесен те аяларахри сарăлнă çулçисем çеç тăкăннă. Канмалли вырăнта ларма та ĕлкĕрейменччĕ, иккĕмĕш хутран Оманов кăшкăрчĕ:

— Крутов, хăвăртрах ĕçе!

Алли çине вĕççе аннă улмуççи çулçине пĕтĕркелесе Максим Максимович каялла çаврăнса утрĕ. Быстров чĕлĕм мăкăрлантарса юлчĕ, хăлтăртатса кулчĕ.

Телефон трубкине çĕклерĕ те инструктор вăрман комбиначĕпе çыхăнчĕ.

Лекци итлеме халăхне пухрĕç-ха вĕсем, анчах уншăн Крутов виçĕ сехет çухатрĕ. «Телефонпа райкомран хушмасăр хăйсем тĕллĕн йĕркелейместчĕç-ши парторгсем çак ĕçе? Мĕншĕн яланхилле çӳлтен камантă парса тумалла-ха кашни ĕçе? Хăçан хăтăлăпăр-ши çак йăлăхтарнă путсĕр йăларан?» — çапла шухăшласа тăнă вăхăтра ун патне Оманов пычĕ.

— Лекци ăнăçлă ирттернĕ ятпа саламлатăп. Лекторĕ обком секретарĕн пултăрĕ пулнине манмалла мар. Кирлĕ чухне пирĕн пирки ырă сăмах та калама манмĕ вăл. Пултаратпăр çав хамăр та. Парти ĕçлевçин ун чи малтан тавçăрулăх кирлĕ, ун ялан çывăх çынпа, халăхпа пулмалла: халăх ĕçлет — ĕçлемелле, халăх ĕçет — ĕçмелле, халăх савăнать — савăнмалла...

— Ку таранччен халăхран уйрăлманччĕ те, сирĕн ĕç мелĕпех лăпăртатса ларас пулсан райком пӳлĕмĕнче, малашне вăрманти хăрăк тунката пек çĕрсе каясси те пулĕ, — тавăрчĕ кăмăлсăррăн инструктор.

Оманов хăйне ытла мăнна хунинчен, ĕçкĕпе вĕçĕмсĕр аташнинчен, майлашăнса, курăмлăх виткĕçĕпе витĕнсе пурăннинчен тĕлĕнет вăл. Пĕрремĕш секретарь асăрхаттарманнипе усă курать Пантелеймон Христофорович. Крутов шучĕпе, парти ĕçлевçин ун чи малтан çирĕплĕхе вĕренмелле, хăйĕнчен хытарса ыйтма пултармалла. Пар-

ти ёҫне кӳлӗнтӗк тӗк, чунупа та таса пул, чӗрӳпе те хӗрӳ пул, яланах ырӑ тӗслӗхлӗ пул — халӑхра намӑс ан кур. Максим Максимович хӑй умне тахҫанах ҫакӑн пек тӗллев лартнӑ та, ӑна пурнӑҫласах пыма тӑрӑшать. Ҫирӗп планпа ӗҫлейменни кӑна унӑн чунне тӑвӑрлантарать.

Ёҫе ҫирӗп палӑртса, районти мӗнпур хуравлӑ кантур ҫыннисемпе пӗрле, халӑхпа канашласа тумалли ҫинчен вӑл тунти кунхи канашлура пӗлтерсен, Яков Сидорович Крутова чарса лартрӗ:

— Эс Чулхуларан таврӑниччен ӗнтӗ, Максим Максимович, эпир пӗлмен ӗҫлеме. Курӑр-ха Крутов революци тунине? Тӗлӗнмелле. Кам хуҫа-ши кунта: эсӗ-и е эпӗ? Шупашкартисем килсен ялан пӑлхав ҫӗклетӗн, «эп — кам?» тетӗн пуль. Ҫынсене пӑтрататӑн. Пантелеймон Христофорович йӑлтах аллине усрӗ вӗт, Крутов мана хирсе ӗҫрен кӑларасшӑн тет. Ҫын ҫирӗп ларакан пукан ҫине тӳрех ӑмсанса пӑхма иртерех мар-и? Ёҫлесе кӑтартмалла чи малтан, тар тӑкмалла. Ха, эртелпе хуҫалӑхра эрне пурӑнасшӑн вӑл. Тымарта виҫ кун хӗрсемпе якӑлтатса ҫӳренине манмарӑн-и-ха? Эй, ҫук, санашкал пурте ярункана кайсан эпир хамӑр чыса, тивӗҫе ҫухататпӑр. Пирӗн — ҫӳлтен ертсе пымалла. Парторгсенчен хытӑрах ыйтмалла. Курӑмлӑ ӗҫ кирлӗ. Пӗрле пӗр тинӗсе сурса пымасан... Секретарь, пай пуҫлӑхӗн ӗҫӗ килӗшмест ӑна. Вӗсем хӑйсемех пӗлеҫҫӗ мӗн-мӗн тумаллине. Ман вырӑна та кӗрсе ларас тейӗн эс, пуҫтах? Тӗнчене култаратӑн. Тем те пӗр шухӑшласа кӑлариччен хушнине пурнӑҫласчӗ. Итлеттеретӗпех сире. Вӗрентетӗпех кама пӑхӑнмаллине!

Хуҫа пӳлӗмӗнчен тухакансенчен каярах тӑрса юлнӑ Крутов уҫӑ алӑк умӗнче чарӑнчӗ, Мургаев куҫӗнчен пӑхрӗ. Сӗнӳ панӑшӑн кутӑнлашса хӑйне пустуйран хӑтӑрса тӑкнӑ секретарь уншӑн ҫак самантра элеке мала хурса кӗвӗҫекен халсӑр ҫын пек туйӑнчӗ. Яков Сидорович инструктор куҫӗнчен уйрӑлчӗ те, сиввӗнрех ыйтрӗ:

— Мӗн, килӗшмерӗ-им тӳррӗн калани?

— Паллах, — тарăхăвне шаларах пытарчĕ Крутов. — Сирĕнтен эпĕ унашкаллине кĕтменччĕ. Эпĕ сире куçранах калатăп: никам сĕтелĕ хушшине те ларма, никамăн портфельне те туртса илме шутламастăп, никам пуçĕпе те пăтранма ĕмĕтленместĕп, мана эпир, эсир йытă вырăнне хуракан инструкторсем, Омановшăн, Посадкинашăн, Майловшăн, ял хуçалăх управленийĕн пуçлăхĕшĕн Вьюновшăн ĕçлени тарăхтарать.

— Тен, маншăн та? — йĕплесшĕн пулчĕ Мургаев.

— Сирĕншĕн те, — тарăхарах кайрĕ Крутов. — Омановсем тĕпсĕр шăтăка сиктереççĕ-ха сире хăçан та пулин. Ушкăнпа пурин те ялсене тухма сĕннĕ хам шухăшран вара эпĕ чакмастăп.

— Вăл ушкăна пионерсене хутшăнтарма кирлĕ мар-и тата, — сӳннĕ пирусне тарăхуллăн чĕртсе ячĕ Яков Сидорович. — Пăх-ха, ĕçсĕр аптăракансем тупнă вăл? Парти, профсоюз, комсомол, райсовет, райпо, «Сельхозтехника» пуçлăхĕсем ушкăнăн-ушкăнăн ярăнса çӳреме тытăнсан ман кунта кампа ĕçлес? Ман вĕсене камантламалла! Пуху, канашлу ирттермелле! Парти ыйтнине пурнăçлама хушмалла! Пурне те. Çук, урăх итлеместĕп. Вăхăт... ылтăнран та хаклă.

Крутов пĕрремĕш секретарь пӳлĕмĕнчен тухнă чух çавра сĕтел хушшинче Оманов хаçат вуланă пек туса ларать. Пан Христос мĕншĕн тухса кайманнине, мĕн шăршласа çӳренине ăнланакан Максим Максимович ун çумĕнчен курмăш пулса иртрĕ. Çурăм хыçĕнче Оманов сăмахĕсем илтĕнчĕç: «Ай-яй тăна кĕртнĕ ку ачана...» Максим Максимович, каялла çаврăнса, йышăну пӳлĕмĕнче ларакансем илтчĕр тесех кула-кула тавăрчĕ:

— Пускай же говорят собаки:

«Ай, Моська! Знать, она сильна,

Что лает на Слона».

Ахăлтатса кулнине чăтайман Оманов секретарь пӳлĕмне кĕрсе тарчĕ. Крутов аллинчи сехечĕ çине пăхса илчĕ. Кĕçех апат вăхăчĕ çитет, нимĕн те туман-ха.

3

Парторгсен семинарĕ хыççăн тин «Çăлтăра» кайма вăхăт тупăнчĕ. Вăхăчĕ тупăнни-качки ĕнтĕ... Канмалли кунсемпе усă курма шутларĕ Крутов. Юрать-ха арăмĕ кутăнлашмарĕ.

Нумай пулмасть çĕнĕрен суйланă партбюро секретарĕ Моисей Семенович Каргин хăй маçтăрланă çатан урапапа Вăрманкаса килнĕ. Тымарсен «газик» çук, «Москвичĕпе» çулла ялтан тухаймаççĕ. Çумăр çусан — лачака, типĕ чухне — хăйăр. Хĕлле путăк-шăтăка çут çанталăк сапласа якатсан тин чупкалаççĕ унпа. Çавăнпа ытларах лашапа çӳреççĕ.

Крутов Каргинпа ларса тухрĕ. Лаши лӳппертерехскер, машина-трактортан хăрамасть, мăн урам тăрăх, асфальт çулĕпе, хуллен аналлла юртать. Вăрманкассем, уйрăмах ача-пăча, вĕсем çине тĕлĕнсе пăхаççĕ. Ара, машина кăткă пек йăшăлтатнă саманара тăрантас кинори пек тĕлĕнтермĕш-çке.

Хăйсен çурчĕ умне çитсен Крутов ямшăка чарма ыйтрĕ. Хваттерне кĕрсе тухма ăна нумай вăхăт кирлĕ пулмарĕ. Портфельне ирех хатĕрлесе лартнăччĕ. Арăмĕн тунсăхлă сăнне ăшĕнче пытарса вăл тротуар вырăнне сарнă тимĕр-бетон лаптăкĕсем тăрăх салтак аттисемпе таплаттарса чупрĕ. Ăна хирĕç Нухратов пырать. Кӳрши ăна уплюнккана чĕннĕччĕ.

— Кăмпа хатĕрлесси пулмасть сан капла? — пуçне пăркаларĕ Валерий Гаврилович.

— Кайран. Халь васкамалла, колхоза çитсе хăвăртрах пуху ирттермелле.

— Апла хам ытларах татăп. Ман патра идейăпа пуçса çимелле пулать. Пĕркун кĕтменшĕн лекет-ха сана. Операцийĕ йĕркеллех иртрĕ, сирĕн пĕр комиссарне çăлса хăвартăм, киле часах таврăнаймарăм. Горячев ăслă, сан пек мар, тарман тухса, мана кĕтнĕ. Лайăх çӳре апла.

— Тавтапуç.

Крутов тăрантас кăрманне кĕрсе ларчĕ. Каргин юнашар ларма килĕшмерĕ, ямшăк вырăнне йышăнчĕ.

— Моисей Семенович? — йăлăнсах ыйтрĕ Крутов. — Тархасшăн кунта куçăр. Кулса вилĕç. Авă, ман юлташ та хыçалтан «райком улпучĕ» тесе шăл йĕрсе юлчĕ. Чăн та çынсем тем шутлĕç, тем калĕç.

Каргин лашине чармасăрах ун çумне хирĕнсе куçса ларчĕ. Тăвăр пулсан та аптрамасть, халăхран намăс мар.

— Камран, мĕншĕн хăрамалла кунта? — тилхепине Крутова тыттарса чĕлĕм туртса ячĕ Каргин. — Эпĕр хăнăхнă та.

— Тăрантасĕшĕн мар-çке, — ăнлантарчĕ Максим Максимович, — эсир ларкăч çинче те, эпĕ улпутла кăрман ăшĕнче сарăлса пыратăп. Çавăншăн.

— Ун пек шутласан, машинăпа та çавнашкалах, шофер руль тытса пырать, эсĕ юнашар е хыçалта.

— Машина вăл машина, тăрантас — урăхла транспорт, — каялла çаврăнса пăхнă лашана тилхепепе çаптарса илчĕ Крутов. — Ăçтан каятпăр?

Моисей Семенович пушă аврипе сулахайри тăкăрлăкалла тĕллесе кăтартрĕ. Тӳрĕрен мăн çул çине часах тухрĕç. Кустăрмасем çулçăпа витĕннĕ шыв кӳлленчĕкĕсене йыврăн шапăртатса кĕрсе тухаççĕ. Çаралнă йывăçсем хушшинче вичкĕн çил ирĕккĕн вылять, çăкапа ăвăс, хурăн çулçисене çӳлелле вĕçтерсе хăпартать те уçлăха сапса салатать. Вăрман тăррине çакланма пуçланă хĕвел çутинче йăмăхса вĕсем çĕре ӳкеççĕ. Сарлака вĕрене çулçисем çеç, ыттисенчен юлсах, сывлăшра вăрахчен ярăнаççĕ. Çил самантрах лăпланать те, вĕсем сасăсăр майланса выртаççĕ. Кустăрмасем вĕçĕмсĕр ланкашка шутлаççĕ.

Каргин каллех ямшăк вырăнне ларчĕ. Тăвăрланса пырас темерĕ пулас. Кайсан-кайсан лашине сылтăмалла туртрĕ. Çӳрен кĕсре урапа çулĕпе хуллен юрттарчĕ. Кĕтмен çĕртен малти кустăрма çулçă айне пытаннă лакăма чăмрĕ, лаши карт! туртнипе ямшăкăн сурăх тирĕнчен çĕлетнĕ çĕлĕкĕ Крутов пĕç хушшине кĕрсе ӳкрĕ. Хуçи лашине вăрçса илчĕ:

— Но, каналья! Чипертерех! Тӳр çулпа чупма пĕлместĕн. Çитетпĕр, ак, кĕçех. Çырма урлă каçсанах — хамăр ял.

Çĕлĕкне хытăрах пусса лартнă хыççăн Каргин пĕр хушă чĕнмерĕ. Моисей Семенович чылай пĕкĕрĕлнĕ, ларкăч çинче курпунĕ пушшех палăрать. Кĕске пиншакĕн тарпа-тусанпа çуталнă çухави айĕнчен йăрăмлă шурă кĕпе курăнать. Çӳçне паян кастарнă пулас, хĕрелнĕ сарлака ĕнсинче хырăнмасăр юлнă хура пĕрчĕсем кăнтарса тăраççĕ. Ялтан килнĕ çынна апла та капла юрать, теççĕ-ши çӳç касакансем? Çын вăл хăть ялти, хăть хулари — пурпĕрех пĕр: çĕр çынни. Çакна теприсем темшĕн ăнланасшăн мар, ялпа хула халăхне сăлтавсăрах икĕ пая уйăрма хăтланаççĕ, хăйсем ăçтан, хăш ялтан çăрăлса тухнине часах манса каяççĕ.

Моисей Семенович тепĕр хут чĕлĕмне чĕртрĕ, тĕтĕмне çăра пĕлĕт пек аяккалла кăларса ячĕ, хытанка кĕске пӳрнисемпе питне эрешмен картинчен шăлса тасатрĕ, унтан çаврăнса каларĕ:

— Кунтан халь çын сахал çӳрет. Куратăн-и, йĕр те çук. Çырми тарăн тесе мăн çулне аякран турĕç, пилĕк çухрăм таврарах. Ĕлĕкрех, хамăр тăрăхра чукун çул хывнăранпах, станцăна çакăнтан тухнă. Кунашкал çара марччĕ вăрманĕ. Çиллĕ-çумăрлă çанталăкра е каçалапа чун çӳçенетчĕ. Эс Тымарта пурăнман та, пĕлместĕн пуль, Хăлтăк Макçăмĕсем астăваççĕ ĕнтĕ. Сывлăхĕ мĕнле-ха вĕсен? Курманни чылай пулать хăтасене.

— Атте килтех, хурала çӳреме пăрахрĕ, ура ыратать тет. Анне вăрманпромхоз диспетчерскинче шоферсемпе вăрçса «чунне кантарать». Килте ларма шутламастьха. Эс унта çамрăксене кансĕрлетĕн пуль теп те, çук, пулăшатăп тет. Ĕçлетĕр-и чун каниччен, ывăниччен. Юрать сывлăхĕ аптăрамасть те. Яла пыма хатĕрленетчĕçха вĕсем, — терĕ Крутов ăна тăнласах итленĕ май.

Тӳрĕрен илнипе лаша тăрантаса юмана урлăлла хирсе лартрĕ. «Ах, çак выльăха, вĕрентен, вĕрентен, тăн кĕртсе çитерейместĕн» тесе Каргин ларкăч çинчен сикрĕ те тилхепине сулахаялла хыттăн туртрĕ. Максим Мак-

симович кайри тӗнӗлрен йӑтса тӑрантаса ҫерем ҫине куҫарса лартрӗ. Майлашӑнса каллех малалла кайрӗҫ.

— Тахҫанхине аса илтӗм-ха, — ассӑн сывларӗ Моисей Семенович, — эпӗ каччӑ пӳне ҫитнӗччӗ. Атте ялти активистсемпе пӗрлешӳллӗ хуҫалӑх тӑвать. Малтан ӑна ялсуветне лартрӗҫ, унта нумай та ӗҫлеймерӗ — колхоз тесе ят панӑ мӑн хуҫалӑха тытса пыма шанчӗҫ хамӑр ялсем. Хӑвӑрах ӑнланатӑр ун чухнехи пурнӑҫа, вӑхӑта. Вӑрӑ-хурах ҫак ҫул ҫинче миҫе ҫынна тапӑнса-хӗнесе сусӑрлатман-ши? Ман аттене те...

Каргин шалалла путса кӗнӗ куҫӗсене пӳрне вӗҫӗпе шӑлчӗ, анаталла юртма пуҫланӑ лашине туртса чарчӗ, татӑлнӑ калавне малалла сыпрӗ:

— Ман аттене те ҫак ҫырмара вӗлерчӗҫ, Шупашкара соцӑмӑрту ҫӗнтерӳҫисен слетне кайма тухсан. Инҫе юлмарӗ-ха вӑл вырӑн. Тӑвайккирен ку еннелле хӑпарнӑ ҫӗрте, кукӑрта, тӗм хыҫӗнчен пӑшалпа пенӗ. Камне пӗлмерӗҫ, йывӑҫ ҫине хушаматне-ятне картсаҫырса хӑварман. Таҫти ҫын мар ӗнтӗ, хамӑрӑннисемех. Вӑрӑ-хурах пурччӗ, шӑл хӑйраса ҫӳрерӗҫ-ҫӳрерӗҫ те вӗсем, хӑйсенне турӗҫ-турӗҫех. Эпир, пилӗк ача, аннепе тӑлӑха тӑрса юлтӑмӑр. Эп асличчӗ. Ман ҫине тиенчӗ вара ҫемье йывӑрлӑхӗ. Эх, пурнӑҫ тени, пӗрин пыллӑ-ҫуллӑ вӑл, теприн...

Лашине Каргин чарса тӑратрӗ, тилхепине ҫамрӑк хурӑн вуллинчен ҫыхса хучӗ. Ҫаран хӗрринче, уҫӑ вырӑнта, вӗтетнӗ алюмини сӑррипе сӑрланӑ ҫӳллех мар палӑк хӗвелпе ҫуталса ларать. Ун варрине хӗрлӗ армеец тумӗпе ӳкернӗ ҫын сӑн ӳкерчӗкне вырнаҫтарнӑ. Ҫамрӑк сӑн-пит, малалла тинкерекен уҫӑ, ҫивӗч куҫ. Салтак рамка ӑшӗнчен тухса ҫиле хирӗҫ чупса каяссӑнах туйӑнать. Сӑн ӳкерчӗк айне ылтӑн тӗслӗ сӑрӑпа ҫырса хунине Крутов сасӑпах вуларӗ: «Хӗрлӗ шуҫӑм» колхоз председателӗ пулнӑ Семен Кириллович Каргин коммунист. Халӑх тӑшманӗсем тискеррӗн вӗлернӗ. 1900—1933 ҫҫ.»

ч-42358
БИБЛИОТЕКА

Юман çулçисем айĕнче çывăракан паттăр вил тăпри умĕнче тăракан Крутовăн çан-çурăмĕ сăрăлтатса кайрĕ, нервисем туртăнса кĕлеткене хытарчĕç. Тăрантас çине ларсан иккĕшĕ те чĕнмерĕç, шухăша путрĕç. Çырмари çул аялалла кукăрăлса анать, ытла та тарăн. Айлăмра ӳсекен чăрăшсем шăпах çыранпа тан. Йăтăнса аннă кĕпер çумĕнчен лашана сиктерсе каçрĕç те тăрантас çинчен анса утрĕç. Тăвалла хăпарса çитсен вĕтлĕх пуçланчĕ. Каргин çанталăк çинчен калаçма пуçласан Крутов ăна чарсах пӳлчĕ. Татăлнă калава унăн малалла итлес килчĕ.

— Атте вил тăпри умĕнче темшĕн асатте аса килчĕ, — терĕ Каргин. — Курасса хам курман та ăна, асанне пĕрмай каласа паратчĕ. Асанне ман вырăс хĕрĕ пулнă, асатте Донбасра шахтăра ĕçленĕ чухне вăл ăна качча тухнă. Граждан вăрçинчен асатте таврăнайман, асанне унăн Хĕрлĕ Ялав орденĕпех пурăнса ĕмĕрне ирттерчĕ. Эх, пурнăç... Пĕрин савăк вăл, теприн... тарлă куççульлĕ.

— Савăк пурнăç çынни вăл, — калаçăва кĕчĕ Крутов, — пĕччен çын, халăх хăватĕнчен хăракан, халăхран аякра тăракан мĕскĕн. Хăйсĕр пуçне унăн савăклăхĕ никама та кирлĕ мар. Пурнăçра, халăх асĕнче юлмалăх тарăн йĕр хăвараймаççĕ унашкаллисем, вĕсенчен никам та вĕренмест, вĕсене никам та хисеплемест. Сирĕн аслаçупа аçунах илĕпĕр. Вĕсем хăйсен савăклăхĕшĕн мар, телейлĕ, ирĕклĕ саманашăн, нихçан сӳнми хĕвеллĕ пурнăçшăн кĕрешнĕ. Вĕсен паттăрла, усăллă ĕçĕ, хисеплĕ ячĕ халĕ те çамрăксен хĕрӳлĕхĕнче, кĕрешĕвĕнче. Çамрăксем вĕсен тĕслĕхĕпе çав ĕçе малалла илсе пыраççĕ, вĕсен ячĕпе çĕнтереççĕ. Тарлă куççуллĕ пурнăç савăнăçĕ уйрăм çынсен савăк пурнăçĕнчен миçе хут вăйлăраххине нимпе те виçсе кăтартма çук.

Каргин каялла пăхса пырса ывăнчĕ пулас, Максим Максимович çумне кĕрсе ларчĕ, пуçне кăтăрт-кăтăрт хыçрĕ:

— Ăнта... Пур çав савăк пурнăç шыракансем, янттипе тăранса пурăнакансем, вăрăм укça шыракансем,

пирӗн ялта та пур. Колхоз ӗҫне хутшӑнмаҫҫӗ вӗсем, колхозӑнне вӑрлаҫҫӗ, санран капӑр тумланаҫҫӗ, ҫиеҫҫӗ-ӗҫеҫҫӗ, санранах вӑрттӑн кулаҫҫӗ. Пирӗн кӗсьене ҫаратниех пулать те ҫав, тульккӑ хурми урӑх. Председателех ирӗке ячӗ халӑха, пӗтерчӗ пире. Юрататъ Маминов савӑк пурнӑҫа. Аслӑ Каҫал енчи хиртен куҫса килнӗскер, вӑрман пуянлӑхӗнче тымарланчӗ, Тымар патши пулса кайрӗ.

Крутов ӑна хирӗҫлерӗ:

— Нимле савӑк пурнӑҫа та курмастӑп эп унӑнне. Вӑл хӑть те мӗнле чаплӑ кермен каплантарса лартнӑ пултӑр. Кашни кун мухмӑр чӗртсе асапланакан хӑйне валли те, халӑх валли те ыррине нимех те тӑваймасть.

— Ҫапли ҫапла та, пурпӗрех вӑл хӑйне савӑк тытать, вӑхӑтлӑха та пулин.

— Тыттӑр, эсир каланӑ пекех, вӑхӑтлӑха ҫеҫ. Уншӑн пулсан, ик айкки те тӑвайкки.

Пынӑҫем йывӑҫсем вӗтелчӗҫ, шӗшкӗлӗхе куҫрӗҫ. Кӗҫ уй та курӑнса кайрӗ. Лаша анаталла хӑваламасӑрах юрттарчӗ, кӗр аки тунӑ ҫӗре ҫитсен чуппине чакарчӗ. Хура ана урлӑ сиктеркелесе каҫнӑ хыҫҫӑн ҫеремлӗхе тухрӗҫ. Самай сарлака улӑх инҫене тӑсӑлать. Ун веррипе хӑвалӑхпа пӗркеннӗ пӗчӗк юхан шыв каллӗ-маллӗ пӑркаланса васкамасӑр вӑрманалла шӑкӑртатать. Миҫе кукӑр-ши унӑн? Тӑсарах янӑ пружина пек.

— Ҫӗлен улӑхӗ, — пӗлтерчӗ Каргин, — эпир ҫамрӑк чух шывӗ тулличчӗ, армансем пурччӗ, хӑвалӑхӗ те ҫӑраччӗ. Ҫӗлен нумайччӗ. Шывӗ ҫӗлен пекех авкаланса юхать те, ҫавӑнпах ял пуҫласа яракансем Ҫӗлен улӑхӗ тенӗ пуль. Арман хуҫисене хӑшне-пӗрне айӑпсӑрах пӗтерчӗҫ. Вӗсем Ҫӗпӗртех ҫӗрчӗҫ. Ачисем... ачисем таврӑнчӗҫ. Ҫуралнӑ ҫӗр ҫинех. Эпир те пурӑнатпӑр. Вӗсем те. Эпир те аттесене аса илетпӗр. Вӗсем те. Пирӗншӗн кашниншӗн атте-анне ҫывӑх-ҫке. Халӑхшӑн ҫеҫ, халӑх ятӗнче ҫеҫ урӑхларах.

Моисей Семенович ӳслӗк аптӑратнипе калаҫма чарӑнчӗ. Сурчӑк сирпӗтес мар тесе пуҫне Максим Максимович енчен пӑрчӗ. Каллех Крутов умӗнче — курпунланнӑ шӗвӗртерех кӗлетке. Хытӑ ӳсӗрнипе унӑн хул пуҫҫийӗсем ҫӳлелле сиксе илеҫҫӗ, вара ун чухне вӑл тӳрленет, пысӑкланнӑ пек туйӑнать. Ӳслӗк иртсе кайнӑ хыҫҫӑн калаҫу малалла тӑсӑлчӗ.

— Пурӑнни качки, ӳслӗк кӑкӑра тӑпӑлтарать. Те туртни, те тем амакӗ пӗтерет. Вӑт, эпир те, вӗсем те пурӑнатпӑр, терӗм-ҫке. Пурччӗ пирӗн ялта Нил ҫӗрме пуян, Миров. Ӑҫтан-муртан куҫса килнӗ кунта, эпир ӑна пӗлмен.

— Ячӗ те, хушамачӗ те пит интереслӗ, — чӑтаймасӑр ыйтрӗ Крутов.

— Ҫапла ҫав, леш, Африкӑраччӗ-и-ха, Нил текен юхан шыв пурччӗ?

— Ҫурҫӗр Африкӑра, арабсене тӑрантарса усракан пуян юхан шыв.

— Африк Нилӗ ҫут ҫанталӑк пуянлӑхӗ. Ҫапла пуль? Ҫынна ырӑ тӑвать, савӑнтарать. Ку Нил халӑхран ӗметчӗ, халӑхран хӑпӑтатчӗ, халӑхпа пуятчӗ. Халь тин пуҫа пырса кӗчӗ. Ячӗ — Нил, хушамачӗ Миров.

— Ашшӗ-амӑшех унӑн тӗнче пуянлӑхне ҫавӑрса илес шухӑшпа пурӑннӑскерсем ӗнтӗ, хӑйсен хӑватлӑхне ят-хушаматра та палӑртса хӑварнӑ.

Каргин пуҫа пӑркаласа ӗххӗм-ӗххӗм турӗ, тилхепе вӗҫне ларкӑч умӗнчи тимӗр хӑлӑпран яваласа хучӗ.

— Хайхискерӗн, Нилӑн, Ҫӗлен улӑхӗнче виҫӗ шыв арманӗччӗ, вӑ-ӑн унта, ял пуҫӗнче, катка-пичке савӑчӗччӗ. Мӗн чул тар тӑкман пуль унта пирӗн ял ҫыннисем? Совет влаҫӗ Миров Нилсене хӗстерчӗ, асма памарӗ. Раскулачить турӗҫ. Уншӑн аттене айӑпларӗҫ. Ай, урчӗҫ. Шайкки нумайччӗ вӗсен, вӑрман чӑтлӑхӗнче суккӑрланса пурӑнакан йӑх-ях. Уй куҫлӑ, вӑрман хӑлхаллӑ теҫҫӗ. Халӑх куҫӗ курнах, халӑх хӑлхи илтнех пуль ҫав атте пирки. Ҫавсенех калатчӗҫ. Ачи пурччӗ, Тит. Манпа тантӑшах. Улатӑрта вӗрентетчӗҫ ӑна. Яла каникула килетчӗ

те пире тӗлӗнтеретчӗ. Арманӗсем юхӑнса пӗтрӗҫ. Каткапичке савӑчӗ вырӑнне артель турӗҫ. Вӑн, халь, ещӗк ҫапмалли ҫӳхе хӑма ҫураҫҫӗ, ҫункав хатӗрлеҫҫӗ. Мускава пӑхӑнаканскер.

Тичӗ вара, ашшӗ вилнӗ хыҫҫӑн, 1962 ҫулта, Ҫӗпӗртен яла таврӑннӑччӗ. Ун чухне эпӗ колхоз председателӗнчеччӗ. «Ӗҫе кӗрӗшме, сана пулӑшма килтӗм», — тесе шӑл йӗрет. Район центрӗнче йӑва тупрӗ, ӑшӑ, пуян вырӑн, халӗ — райпо председателӗнче. Райком членне те суйланӑччӗ. Иртнинче тӗл пултӑмӑр та, манран кулать: «Председательте ӗҫлерӗн-ӗҫлерӗн, фуфайка хывса кураймарӑн, кил хам пата, склада илетӗп, пуйтаратӑп». «Эп хам алпа ӗҫлесе хам вӑйпах пуятӑп, мана ялта фуфайкӑпах лайӑх, ӑшӑ», — терӗм. Вӑл каллех: «Эп сана кӳрентерме мар, пулӑшас шутпа, пӗр ялтан-ҫке, ентешсем», — тет. «Ҫук, — тесе алӑ султӑм, — пӗр ялтан пулсан та пӗр кутран мар, пӗр тантӑш пулсан та пӗр компани мар».

Максим Максимович тӗлӗнсе ыйтрӗ:

— Тӑхтӑр-ха, тӑхтӑр, райпо председателӗ пирӗн Миров мар-ҫке?

— Миров мар ҫав, тоттӑ, Милов.Улӑштарнӑ вӑл ашшӗн хушаматне. Ачи ашшӗшӗн хурав мар теҫҫӗ те... Юнӗ пӗр пулсан, ҫав енӗпех каять ҫын, ултав, пуянлӑх ҫулӗпе. Тит Нилович Милов халь, тен, ашшӗнчен пуян ҫын. Вӑрманта ашшӗсем пытарса хӑварнӑ ылтӑншӑн килнӗ тет-и Тит?

Каргин председательте икӗ хутчен те ӗҫленӗ. Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче хытӑ шӑннипе чирленӗ, ӳпкине амантнӑ, сивӗ «парни» йӑшӑлтатма, чӗрӗ ӳт-тире тирме пуҫланӑ, маттурскерне вырӑн ҫумне пӑталанӑ. Вара унӑн йывӑр хӑмӑта вӑхӑтлӑха хывса урӑххине пама тивнӗ. Сывалнӑ хыҫҫӑн ял халӑхӗ Каргина ҫак ӗҫе ҫӗнӗрен кӳлнӗ. Йывӑрлӑха тӳсме хӑнӑхнӑскер вӑл тар тӑксах, пуҫ ҫӗмӗрсех, нервӑсене ватсах пӗр вырӑнта нумай ҫул хушши тапӑртатса тӑнӑ хуҫалӑха тапратнӑ. Кӗпер леш пуҫӗнче лашине чарсах ун пирки Крутова кӗскен пӗлтерчӗ вӑл:

— Çĕлен улăхĕ ĕлĕк Нил йышши çĕленсене тутă парса тăратчĕ. Колхоз тусан сĕт те, аш та, çăкăр та ытларах çак улăхран тухатчĕ. Хальхи пек марччĕ те çав...

Каргин ассăн сывласа ячĕ, кăткă тĕмисем çине хурлăхлăн пăхса илчĕ, яланхилле пуçне пăркаларĕ:

— Çĕр çинчи çăпан. Шăкăри вĕт. Курăк ÿсет-и унта? Вăрçă хыççăн та нумайччĕ вĕсем. Тасатнăччĕ, пĕр тĕмĕ хăварманччĕ. Ял халăхне, ачи-пăчине, ватти-вĕттине пăхмасăр илсе тухрăм улăха. Кăткă тĕмисене кĕреçепе касрăмăр, çĕре тикĕслерĕмĕр, хыççăн курăк акса хăвартăмăр. Ӳсрĕ, çаран пулчĕ. Юхăннă арман пĕвисене лайăх пĕвелерĕмĕр. Хальхи пек каласан, культурăллă çаранах пулчĕ.

Пасартан пасара, ялтан яла çӳресе те ăратлăрах ĕнесем шыраттăмăр. Ярославль облаçне кайса пăрусем туянса килтĕмĕр. Колхозăн укçи çук та, халăхран пуçтарттăмăр. Чаплă ферма тунăччĕ. Савăнсах ĕçлеттĕмĕр. Кашни ĕнерен тăвата пин литр сĕт сăвакансем те пурччĕ. Маруç амăшĕ чи малтаччĕ. Çавăнпа ăна Мускава выставкăна ятăмăр, депутата суйларăмăр, Раççейĕн аслă Советнех. Шел, нумай пурăнаймарĕ... Çĕрне те аванах пăхса тăнă, тислĕкне те тăкнă, минерални те панă. Халăх ĕçлетчĕ, хальхи пек ирĕке пăхмастчĕ. Çемье уксахчăлахсăр пулман пекех, карма çăвар, кахал-наян, шапаш таврашĕ пирĕн те пулнă, халĕ те юлнă вĕсем. Çавсемпе тытăçма тиврĕ. Сывлăхĕ хавшарĕ. Операци тӳссе иртертĕм. Çулталăк ытла шур халатлă çынсен çепĕç сăмахĕпе те эмелпе пурăнтăм. Пульницаран таврăнсан та ытла çăмăллинех туймарăм. Хайхи асар-писер ялта пуç çĕкленĕ. «Чирлĕ, колхоза туртаймасть!» — тесе çухăрма пуçларĕç. Çавăн чухне илсе килчĕç те Аслă Каçал енчен Маминова. Мургаев ăна ман вырăна хăй лартса хăварчĕ.

— Ларать халь, — куç айĕн пăхса илчĕ Крутов.

— Лармасть, выртать, — тарăхса хуравларĕ ямшăк.

— Пирĕнтен инçех мар, вăрман варринче Авруй тата Хурашур ялĕсем пур. Районти пуçлăхсем çавсене тĕксе

панăччĕ пире эп председательте чухнех. Такам пуçĕпе пирĕн «Хĕрлĕ шуçăм» колхоза «Çăлтăр» ят партарчĕç.

— Мана «Хĕрлĕ шуçăмах» лайăх пек. Шуçăм çутинчех аван пулнă та сире...

— Çапли çапла та, халь ĕнтĕ ирхи шуçăм-шурăм пуçĕ те хура пĕлĕтпе хупланчĕ, çĕнĕ çăлтăрĕ те халăх куçĕнчен çухалса пырать.

4

Вĕсем клуба çитнĕ çĕре тĕттĕмленчĕ. Пухăва темиçе çын пынă. Крутов кашнине алă парса тухрĕ, унтан парторгпа пĕрле коммунистсен списокне тĕрĕслерĕ. Каргин ăна пурин çинчен те кĕскен ăнлантарса пачĕ. Парторганизаци ватăлнă. Çамрăксем çукпа пĕрех. Ытларах пайĕ — пенсионерсем.

— Эп те йӳтерĕм, çитменнине тата чирлĕ, — терĕ Каргин. — Пĕлӳ те çитмест. Хĕрĕхмĕш-аллăмĕш çулсемпе танлаштармалли çук паянхи пурнăçа. Нумай пĕлмелле, нумай вĕренмелле. Çулталăка чăтайăп-и е чăтаймăп...

Максим Максимович ăна лăплантарчĕ, йывăр пулсан та май килнĕ таран ĕçлеме ыйтрĕ. Каргин коммунистсен тивĕçне пурпĕрех ячĕшĕн мар, пĕтĕм чун-хавалĕпе пурнăçлассине ăнланать инструктор. Пуху кун йĕркинченех палăрать вăл. «Парти Уставĕ ыйтнине эсĕ мĕнле пурнăçласа пыратăн?» — акă мĕнле кун йĕркинчен тытăнать çĕнĕ секретарь ĕçе. Тепĕр ыйтăвĕ — ял хуçалăхĕнчи техника аталанăвĕ енĕпе колхоз умĕнче тăракан задачăсем çинчен. Кун пирки нумай пулмастьха райком пленумĕнче сӳтсе явнăччĕ. Унта тымарсене хытах лекрĕ. Çавăнпа Крутов çак ыйтăва мала лартма сĕнчĕ. Коммунистсем хирĕçлемерĕç.

Докладне Маминовăн тумаллаччĕ. Председатель тем мăнкăлтатрĕ-мăнкăлтатрĕ те, вырăна лак ларчĕ. Крутов пĕлнĕ тăрăх, тракторсемпе механизмсен усă курас шайĕ колхозра хĕрӳ тапхăрсенче те гектар çурă кăна. Хуçалăх

ĕçне хывнă кашни тенкĕ сакăр вунă пус çеç усă панă. Тыр-пулпа çĕр улми туса илес çĕре каякан ĕç вăйĕ тата тăкакĕ район кăтартăвĕнчен те пысăкрах. Уй-хире тислĕк кăларасси çулсерен чакать. Фермăсенчи ĕçе çăмăллатмаççĕ. Мĕн пирки? Кам айăпĕпе? Уçса парасчĕ хăть пĕрин сăлтавне те пулин. Иртнинче те çавсене пĕлес тесе Крутов председательпе хĕрсех калаçрĕ. Маминов Волковпа вăрçатчĕ. Ун шучĕпе тарăнварсене техника нумай параççĕ, минералпа чыхăнтараççĕ-мĕн. Максим Максимович кайран юриех тĕрĕслесе пăхрĕ. Айăпне çын çине йăвантарни çеç иккен. Юлашки пилĕк çул хушшинче «Çăлтăр» «Шурăмпуçĕнчен» ытларах трактор, комбайн, автомашина туяннă патшалăх шучĕпе, çав хушăрах техникине тарăнварсенчен нумайрах списать тунă. «Шурăмпуçĕнче» техникăна «машина тасалăха, сĕрсе тăнине юратать» текен тĕллевпе пăхса тăраççĕ пулсан, «Çăлтăрта» машина-трактор паркĕ тимĕр-тăмăр масарне аса илтерет. Тарăнварта механизатор ялти тĕп ĕçчен пулса тăнă, Тымарта — трактор-автомашинăпа килти пек хуçаланакан. Паллах, тарăхтарать ĕнтĕ йĕркесĕрлĕх. Акă Каргин мĕн калать:

— Çерки Тимахвич пире юрласа пачĕ-ха, хĕлĕхсĕр сĕрме купăс пекех. Кун йĕркинчи ыйтăвне çеç кĕтессинчен те тĕкĕнмерĕ. Халăх тăрăшнă чухне эпир çапла намăс курнă-и? Мускав таран янăранă! Хам та эп ял хуçалăх выставкине кайса килнĕччĕ. Пуçпа шухăшласа пăхăр-ха, юлташсем. Съезчĕ, пленумĕ, канашлăвĕ пирĕн валли те хут йышăнать пуль? Эпир çапла пăлахая персе выртăпăр, тата теприсем тупăнĕç пирнешкеллисем... Кам пурнăçлать вара Мускавпа Шупашкар каланине? Кам çӳлтен çăкăр пăрахса парĕ пире? Чĕр мăшкăл вĕт. Хĕлĕн-çăвĕн ĕçлен те, кутăрланан-кутăрланан та, кĕр çитсен тыррине кутамккапа меклеттерсе таврăнан. Укçи пĕрре лавккана кĕрсе тухмалăх çук. Кам айăплă çакăншăн? Ман шутпа, колхоз пуçлăхĕ Сергей Тимофейч. Пулă яланах пуçĕнчен çĕрет.

Куçран каланине чăтаймасăр Маминов чĕрре кĕчĕ:

— Моисей Семеновичне, снашăтă, те ылтăн шывĕпе сĕрнĕ. Тахçанхи вăл, ахаль лайăх пек. Суйлама мана, снашăтă, хăвăрах суйланă. Ирĕксĕрех кĕрсе ларман пуçлăх вырăнне. Çапла-и, халăх?

— Тĕп-тĕрĕс! — илтĕнчĕ Тан Васлин мухмăрла сасси. — Сергей Тимофейчпа пурăнма пулĕ-ха.

— «Шурăмпуçпе» танлашасшăн эсир, — сывлăш çавăрса янă Маминов, чееленсе, çиеле тухма хăтланчĕ. — «Кая юлакан хуçалăхсене — малтисен ретне!» текен чĕнĕве, снашăтă, мантăр-и? Партин çав чĕнĕвĕпе, снашăтă, хăпарса кайрĕ те Кириллов. Кайран, Волкова суйласан, техникине те, удобренине те йăлтах унта тăкрĕç. Пире, снашăтă, унашкал пуçран шăлман. Мана çинипех ĕç тухмасть.

Ăна итленĕ май Максим Максимович хăй «Шурăмпуçĕнче» ĕçленĕ вăхăта аса илчĕ. Аммиак шывĕнчен пурте хăратчĕç, пустуй укçа тăкатпăр тесе илесшĕн марччĕ. Тарăнварсем вара йăлтах хăйсем патне турттарчĕç, çаплах çăкăрлă пулчĕç.

— Çерки Тимахвич! — илтĕнчĕ Люда Белован çинçерех сасси. — Эпир халь чи кайрисем, апла сире те çав чĕнÿ кирлĕ пуль?

— Ыйтатпăр-ха, снашăтă, пулăшма, — тавăрса каларĕ Маминов. — Мургаев, снашăтă, сăмах пачĕ. Пирĕншĕн те чĕнÿ кăларĕç, снашăтă, пулать, пурте пулать.

Каргин тарăхсах кайрĕ:

— Чĕнÿ, пулăшу, тет. Пустуй япала мар-и? Ним те кирлĕ мар пире, шăршăнтарнă пушă çеç кирлĕ çурăм тăрăх. Çирĕм тăваттăмĕш съезд халăха чĕнÿ кăна мар, ял хуçалăхне аталантармалли питĕ анлă малашлăх палăртса пачĕ. Çавна пурнăçлассишĕн çине тăмалла çеç. Кам сăмах илет?

Пуху тин кăмăллăн уçăлса кайрĕ. Калаçу çивĕчленнĕ май, иккĕмĕш ыйту çине куçма пуçларĕç, айăплисене питлерĕç. Тан Васлине те ярса илчĕç, ĕçнĕшĕн, ĕçе япăхтарнăшăн, вăрман сутти тунăшăн вăйлах çунтарчĕç.

— Илтетĕн-и, Сергей Тимофейч? — председатель енне пăхса пĕчĕк ача пек йăлăнчĕ вăл. — Халăха мĕнле астарса ячĕ Каргин? Секретаре суйласа ыр турăмăр та ăна, халь хамăра хĕстерет, коммунистсене ман енне хаяр йытта вĕслетсе янă пек вĕслетсе ячĕ. Эп, мĕн, ахаль колхозник-им сирĕншĕн? Всюш, штатнăй, бригадир. Ĕлĕкхипе, хамăр уйрăм колхоз чухнехипе танлаштарсан-и... Сергей Тимофейчпа тан çын эп. Пĕр тан...

Максим Максимович шучĕпе пуху япăх мар иртрĕ. Парторганизацин кĕрешӳри хастарлăхĕ пĕтсех ларманха. Çав хастарлăх вутне хĕмлентермелле, çулăмлантармалла çеç. Вĕри кăвайт айне вуттине хурса хĕрĕвне йĕркелесе тăраканни пур халĕ: Моисей Семенович куçа тĕтĕм кĕресрен хăраса хӳтлĕхе пытанас çук.

Шăмат кун Максим Максимович парторгпа пĕрле каçченех ял хушшинче пулчĕ. Чи малтан вĕсем механизаторсемпе тĕл пулма шутларĕç. Анчах та мастерскойра Алеша Каргинсăр пуçне никам та çукчĕ. Каччă радиатор улăштарма пуçланă.

— Моисей пичче, йăлăхрăм эп, — гайка уççине аяккалла печĕ вăл. — Пĕтерчĕç трактора. Çĕнĕскерне вĕт, виçĕм çул илнĕскерне, çĕрле вăрмантан йывăç сĕтĕрсех тĕп турĕç. Çĕркаç, вăн... Хăй халь ӳсĕр выртать. Ман... Пăрахап та каяп Шупашкара. Ни тырри тенĕ пек, ни укçи... Пӳрт лартмалла. Мĕнпе?

Ирĕке сиснĕ механизаторсем колхоз техникипе килти ĕç хатĕрĕ пек усă кураççĕ. Çĕрĕпе калăмра ĕшеннĕскерсем тăр кăнтăрлах минтер хураллаççĕ. Алеша Каргин пек тӳрĕ кăмăллă çамрăксем сахалтарах. Вăл та, авă, çурăлса каясла тарăхнă. Калаçу вăхăтĕнче каччăн кăмăлĕ кăштах çаврăнчĕ.

— Сана эп халь, Алюш, хам куçран вĕçертместĕп, ултав çулĕпе ямастăп. Пĕр кунах партие илес пирки калаçнăччĕ, рекомендаци паратăп, тенĕччĕ. Ыран пыр, çырса хурăп, — уйрăлнă чух çурăмĕнчен лăпкаса хăварчĕ ăна Крутов.

Çула май тепĕр шоферпа калаçса пăхрĕç. Ку парторга хирĕçлерĕ. «Баранка алăра, кустăрма çаврăнать, хырăм тутă, çи-пуç лайăх, пурăнăпăр-ха мĕнле те пулин унсăрăнах, партиецсем камсем пулнине шутсăр лайăх пĕлетпĕр, — таварса хучĕ вăл, кулкаласа.

Алеша Каргинсăр пуçне сысна ферминчи икĕ хĕр вĕсемпе килĕшрĕ, ĕне сăвакансенчен тепри шухăшласа пăхма шантарчĕ. «Çăлтăр» парторганизацийĕшĕн ку малашне чĕрĕ шыв сапнă пекех пулĕччĕ. Унччен Крутов кунта тата килсе кайĕ-ха. «Шурăмпуçĕнче» чухне çамрăксене партие кĕме мĕнле хатĕрленине вăл ман-ман-ха. Заявлени çырнă çын çумне пĕр-пĕр коммуниста çирĕплетнĕ хыççăн та ăна хăй тепĕр хут тĕплĕн тĕрĕслетчĕ. Устава мĕнле пĕлет вăл. Программăна епле ăнланать. Парти политикипе такăнмасть-и? Чи малтан çак ыйтусемпе шĕкĕлчетчĕ вĕсене. Кам та пулин начартарах пĕлнине туйсан ăна хăйпе юнашар лартсах вĕрентетчĕ. Çавăнпа вăл райком бюровĕнче пĕртте намăс курман. «Сан çыннусене итлеме кăмăллă, экзамен тыттарма пĕлетĕн вара», — мухтатчĕç ăна райкомра.

Çак ĕçре Крутова яланах пĕр сăлтав тĕлĕнтерет, хушăран... хытах шухăшлаттарать. Хăш-пĕр парторгсем çынна заявлени çыртараççĕ те ун çинчен мансах каяççĕ. Пухура ăна партие илнĕ пекки тăваççĕ, райкома çитереççĕ. Лешĕ КПСС Уставĕ мĕнне те, Программине те лайăх пĕлмест. Пурпĕрех тĕртсе кĕртсе яраççĕ партие. Крутов бюрора миçе хутчен ĕнтĕ пĕрешкел сăмах илтет: «Партие илнĕ ятпа саламлатпăр сире... юлташ. Юлашкинчен пĕр сĕнӳ паратпăр: сирĕн Уставпа Программăна тĕплĕнрех вуламалла, лайăхрах пĕлмелле». Крутов шухăшланă тăрăх, Уставпа Программăна малтанах ăса хывман çын билет илнĕ хыççăн тин пуçа çĕмĕрсе ларать-ши вĕсемпе? Темле çав. Унашкалли çĕрте пĕр çын тупăнĕ. Те ун фермăна утмалла, те сухана васкамалла...

Парти мĕнне ăнланмасăрах партие кĕрекенсене хĕрхенет вăл. Кăмăлĕ те пысăк пуль вĕсен коммунист

пулмашкăн, парти те çывăх пуль вĕсемшĕн. Анчах та хăш-пĕр секретарьсен, парти ĕçлевçисен айăпĕпе вĕсем «ăнланусăр коммунистсем» пулса юлаççĕ. Вĕрентмелле çеç вĕсене. Ун чухне çын бюрона çирĕппĕн, хăрамасăр, хăйне хăй шанса пырса кĕрет. Атту, тăраççĕ пуçа чиксе, айăпа кĕнĕ çын пек. Çăвара шыв сыпнă, тейĕн. Райкомра ĕçлекенсене намăсах çакăншăн — инструктортан пуçласа пĕрремĕш секретарь таранах.

Уставпа Программăна тĕплĕн пĕлмен коммунист чăнчăн партиец мар. Ăна Крутов бюрора тахçанах çирĕплетсе каланă. Çавăнпа яла килсе вĕсене хăй тĕрĕслет, экзамен тыттарать, партин чи хаклă та чи хăватлă докуменчĕсене ăнланма, чĕрепе туйма пулăшать.

Каргинсем патĕнче икĕ каç выртрĕ вăл. Тымартан çуранах таврăнчĕ. Çула май вăрманта юман йĕкелĕ пуçтарчĕ, пилеш сапакисем татрĕ. Чӳречерен пăхса тăракан арăмĕпе ачине Макçăм пĕве урлă каçсанах асăрхарĕ. Хăй пӳрт патнелле çитнĕ çĕре иккĕшĕ те урама тухнă. Борис, пĕчĕк урисене урлă-пирлĕ çапăнтарса, ашшĕне хирĕç чупать, ун ытамне кĕрсе ӳкет. Маруç ывăлне кăшт кĕвĕçенçи те пулать. Борис выраннe хăйĕн уртăнас килет те упăшкин мăйĕнчен... Макçăм ăна Каргинсен кучченеçне, пуснă хур, тыттарать.

— Ĕç турăн апла, — хваттере кĕрсен ыйтрĕ Маруç.

— Ахаль иртмерĕç пек кунсем.

— Эпир Бориспа ниçта лăпкă кĕтес тупаймастпăр, чӳречерен пăхса ывăнтăмăр. Усси пулсан лайăх хăть, усăсăр пулсан... пĕрре хăв нушаланан, тепре пире тăнран кăларан.

5

Планеркăра Крутов хăй канмалли кунсенче «Çăлтăрта» пулни çинчен те каласа пачĕ, сăмах май, тымарсем вăрман суттипе мĕнле пуйса пурăннин сăлтавĕсене те уçса кăтартрĕ. Тĕп сăлтавĕ ĕнтĕ вăл — вăрлама май туса панинче. Вăрманпромхоз каснă йывăçа тĕппипе турттарса тухман пирки делянкăсенче тăкак нумай юлать. Унта

яланах тĕрĕслесе тăракан çук, çавăнпа касакансем ăна йӳнĕ хакпа е сăмакунла ярăнтараççĕ.

— Патшалăх пурлăхне çаратма чарас пулсан, чи малтан вăрманпромхозра çирĕп йĕрке туса хумалла. Кун пирки райкомра е райĕçтăвкомра ыйту хускатмалла, Эпир вара «Çăлтăр» колхоза та усă тăвăттăмăр. Хушма тупăшсăр тăрса юлнă çыннăн ирĕксĕрех колхозра ытларах ĕçлемелле пулать. Ку, паллах, дисциплинăна вăйлатмалли мелсенчен пĕри кăна. Коммунистсемпе, халăхпа пурпĕрех пикенсе ĕçлемелле. Çапах та, ман шутпа, çакна пурнăçлани мĕн чухлĕ те пулин усă пама кирлех, — сĕнӳ пачĕ Крутов.

— Ăнланмастăп эпĕ сана, Максим Максимович, — терĕ çăварти тĕтĕмне ункăлантарса кăларса янă хыççăн Мургаев. — Ху пуçупа тем пăтранса çӳрен. Вăрманпромхозпа мĕн ĕç пур сан? Унти парторганизацишĕн эс хуравлă мар. Ман шутпа, вĕсен ĕçсем йĕркеллех пулма кирлĕ. Эпир кунта тăрăшатпăр-тăрăшатпăр, съезд йышăнăвĕсене пурнăçлассишĕн пленумра ыйту сӳтсе яватпăр, мероприятисем палăртатпăр. Вăл пур, никама евитлемесĕр пухусем ирттерсе çӳрет, халăха пăтрататать, ĕçе çыхлантарса лартать.

— Райком тăрне тепĕр райком лартасшăн мар-и вăл? — сасă пачĕ çын сăмахĕ хушшине йĕплĕ савăл чикме вĕренсе çитнĕ Оманов. — Кунашкал кашни инструктор райком пулма тытăнсан... Кайма та манран ыйтман вăл...

Крутов Оманова алă сулчĕ те:

— Эсир мана йăнăш ăнлантăр, Яков Сидорович, — терĕ. — Юрĕ, эп хам ирĕкпе кайнă пултăр «Çăлтăра». Пухăвне ирттерме парторг палăртнă-çке...

— Палăртнă, палăртнă, — чарса лартрĕ ăна Мургаев. — Сан тĕрĕслемелле пулнă. Доклад çук — ан кĕрттер вăл ыйтăва кун йĕркине. Лартăр, шухăшлатăр лайăхрах пуç тавра, хатĕрлентĕр. Курăр-ха ăна, паттăра, Маминова епле намăс кăтартать, председатель сумне халăх умĕнче çунтарать.

— Мана каçарăр та эсир, Яков Сидорович, — чарăнма пултараймарĕ Крутов, — доклада хатĕрленмешкĕн унăн вăхăчĕ пулнах. Тата мĕнле председатель вăл парти пухăвĕнче хуçалăх аталанăвĕпе тĕрекĕ çинчен хутсăр каласа параймасан? Ку — пĕрре. Тепри вара — мана пустуй айăпланинче. Райком пленумĕ йышăннине пурнăçламашкăн никама та чăрмантарма шутламан эп, никама та ура хуман. Ĕç йĕркеллĕрех малалла кайтăр тесе çеç тăрăшнă. Тăрăшатпăр та. Пире çапла ĕçлеме вĕрентнĕ.

— Партшкул тин çеç пĕтерни тӳрех паллă, — инструктор çине кăнн пăхрĕ Мургаев. — «Хĕрӳллĕн ĕçе тытăнатпăр та тӳрех пĕтĕм çитменлĕхе пĕтеретпĕр, кивĕлле ĕçлекенсене вĕрентетпĕр», — çапла шутлаттăмăрччĕ эпир те Мускавран дипломпа таврăнсан. Унта лайăх, пурте яка, тавлашма та, чĕлхепе çĕнтерме те пулать. Ĕçе кӳлĕнтĕмĕр те — йăлтах урăхла иккен. Çапла-и, Быстров?

Çĕрелле пăхса ларакан Семен Ильич хушаматне илтнипе картах сикрĕ, вара ура çине тăрсах евитлерĕ:

— Çук, Яков Сидорович, ун пек мар. Пире партшкулта Лизуновсем шăпах Крутов каланă пек вĕрентнĕ. Пустуях ятлатăр эсир ăна. Эп хам сирĕн вырăнта пулсан-и, усăллă ĕçшĕн инструктора тав тумалла çеç.

— Медаль памалла мар-и тата? — йĕплерĕ каллех Оманов.

Быстров тарăхсах каларĕ:

— Намăса пĕлесчĕ, Пантелеймон Христофорович. Çын хăйĕн пушă вăхăтне хĕрхенмесĕр канмалли кунсенче ĕçлесе çӳрет те, унран кулатăн. Эс хăв çав икĕ кунра мĕн турăн? Ресторанпа кафе хушшинчи çула такăрларăн! Эх, сана... Халь те мухмăру иртмен.

— Парти шкулĕнче сире тем те вĕрентнĕ пуль, — пурне те чарса лартрĕ Мургаев. — Унта пурте лайăх. Кунта вара эсир Чулхулара мар, райкомра, Мургаев аллинче. Мургаева пăхăнатăр. Сире, çамрăксене, тепĕр хут ас тутаратăп: Крутов пек уйрăммăн çăмăлттайлanса тем хăтланса ан çӳренĕ пултăр! Шухăшлăр пуç тавра.

— Мĕнле йăла вăл пĕрремĕш секретарьпе тавлашасси? — хушса хучĕ Посадкина. — Планерка хыççăн Крутова хам пата чĕнетĕп. Парти этикине пăхăнмалла пуль? Ăна халăх умĕнче йĕркеллĕ тытса пымалла пуль?

Канашлу тавлашуллă иртрĕ. Яков Сидорович, Шупашкартан такам шăнкăравланă хыççăн, хытах пăлханчĕ. Ахаль те кăмăлĕ уçах марччĕ, ун çумне тата çӳлтен хытарса калани хутшăнчĕ. Район патшалăха пăрçа сутса çитереймен иккен.

Пĕрремĕш патĕнчен тухсан Оманов инструкторсемпе парторгсене иккĕмĕш канашлăва сĕтĕрсе кайрĕ. Вĕсемпе пĕрле утакан Крутова секретарь ушкăнран уйăрчĕ. Максим Максимович куншăн малтанах питĕ хĕпĕртенĕччĕ, пай пуçлăхĕн тĕлĕрӳ урокĕсене итлесе ывăннă-çке, йăлăхнă. Каярахпа, Василиса Матвеевна патне лексен, кулянчĕ. Панхристофпа пурпĕрех лайăхрах пек. Вăл пĕлнĕ япаланах (хăйĕн мăн пуçĕпе ыттисем ăна чухлаймаççĕ тесе шутлать ĕнтĕ) тепĕр хут вĕрентет пулин те, çапах ĕç пирки, ĕçе лайăхлатас пиркиех тăрмашать. Кунта вара...

Идеологи секретарĕн пӳлĕмĕ пĕрремĕшпе иккĕмĕшĕннинчен начартарах. Унта вĕсенни пек йышăну пӳлĕмĕ витĕр мар, аялти хутран хăпарсан тӳрех кĕмелле. Алăкĕ те пĕр хутлă çеç. Тул енче хыттăн шавлани те, шалта çухăрни те илтĕнет. Крутов шучĕпе райкомра пĕр секретарĕ ытлашши, вăл çеç те мар, ушкăн çуррине чакарсан ĕç кал-калрах та тухăçлăрах каймалла пек. Çурт тума хатĕрленекенсем те çавăнпах виççĕмĕш секретарь валли йышăну пӳлĕмлĕ анлă кабинет палăртман.

Акă халĕ Максим Максимович «ытлашши секретарь» умĕнче этика урокĕ итлеме хатĕрленсе ларать, харпăр хăйне çынсем хушшинче, халăхра йĕркеллĕ тытмалли çинчен тăн парасса кĕтет. Посадкина васкамасть, сĕтел çинчи кĕнекесене, хулăн папкăсене, хут листисене майлать, аллине «Мода журналĕ» кĕрсе кайсанах вăл телефон аврине çĕклерĕ:

— КБО директорне!

Йăла ыйтăвĕсене тивĕçтерекен комбинат директорĕпе хĕрарăм кĕпи пирки çӳллĕ шайра калаçнине итлесе ывăннă Крутов «Наукăпа тĕн» журнала вулама пуçларĕ. Василиса Матвеевна пуçлăха шупка йăпăркашăн вăрçать.

— Путлĕ ĕçлеме пĕлмеççĕ, капăр çĕлеме те пултараймаççĕ, — сайра шăлĕсем витĕр сăрхăнтарчĕ тарăху сăмахĕсене. — Сана та сĕнетĕп, Максим Максимович, арăму валли çак модăпа кĕпе çĕлеттер. Эп уйăрттарнă пиравăртан тепĕр икĕ кĕпе тухмалла. Куратăн-и, хитре вĕт?

Крутов ни хирĕçлеме, ни килĕшме пĕлмерĕ, хăй умĕнче капăр тумлă саркаланса тăракан катемпие хĕрхенсе кайрĕ, арăмĕпе калаçса пăхма пулчĕ. Ун пирки вăл Маруçне пурпĕрех аса та илтерес çук. Влаçпа усă курса ыттисенчен канăçлăрах сăпкара сиктерес килмест унăн мăшăрне.

Телефон шăнкăртатни калаçăва татрĕ. Ют патшалăхра кăларнă ковересем илсе килнĕ-мĕн. Райпо председателĕ Милов райком секретарьне çавăн çинчен пĕлтерет. Посадкина хĕпĕртесе ӳкнипе ниçта кайса кĕреймест, пуканĕ чĕриклетет, сасси пĕрре хăпарать, тепре анать. Телефон авăрне хурсан та сăнĕнче кулă йĕрри çухалмарĕ. сарлака тута хĕррисене тата сарса вăл Максим Максимович умĕнче епрерĕ:

— Çур çул вĕт заказ пани. Ну, Милов, нумай кĕттерчĕ, çапах пултарчĕ, тупса пачĕ. Инди коверĕ вĕт! Пĕлетĕн-и эс çавна? Урăхла темскер ан шухăшла эс. Укçасăр илместпĕр. Чаплăраххишĕн çеç. Пурте халь модăпа пурăнаççĕ те, пирĕн те, секретарьсен, юлас килмест. Тен, сире те кирлĕ? Крутов пуçне пăрса хирĕçленине секретарь ăнланчĕ, вара ăна часрах гаража чуптарчĕ.

Максим Максимович каялла таврăннă вăхăтра Посадкина телефонпа тем юмахĕ ярать, кулкаласа калаçать. «Чăнах-и?», «Апла-и?», «Ан тĕлĕнтер», «Пулма пултараймасть» текен сăмахсене итлесе те ывăнчĕ Кру-

тов. Ыйхӑ пуса пуҫларӗ. Ĕнтрӗке хӑваласа ярас тесе вӑл кабинет тӑрӑх каллӗ-маллӗ утса пӑхрӗ. Василиса Матвеевна ҫӑварӗнчен ҫаплах «Ларисӑна куртӑн-и?», «Ия, мӗнле пурӑнать?», «Серафима салам кала», «Иртнинчеваскаса кайрӑр та», «Эпир-и? Эпир кунта пурнатпӑрха хамӑр алра чух. Ковер тенӗччӗ-и-ха эс? Пур халь. Шӑмат кун кӗртсе паратӑп», «Ҫӗнӗ мода ҫине куҫрӑм, кӗпе заказ патӑм. Вилсе каятӑн курсан...» Ҫур сехет ытла пакӑлтатрӗ Посадкина, унтан тин Крутов еннелле ҫаврӑнса тӑкӑлтатрӗ:

— Ĕҫ вӑл... ӑна та тумалла, кӑна та. Ман шутпа чи малтан пуҫри канӑҫсӑрлӑха пӗтермелле, вара хамӑр ӗҫе те тума ҫӑмӑл, хавхаланса ӗҫлетӗн. Эп сана мӗншӗн чӗннӗччӗ-ха? А-а-а? Шофера каларӑн-и?

— Каларӑм, — терӗ Крутов. — Алӑк умӗнче кӗтет.

Посадкина васканипе сӗтел ҫинчи хучӗсене пушшех арпаштарса хӑварчӗ, Максим Максимович аптӑраса тӑнине асӑрхаса ӑна ҫапла вӗрентрӗ:

— Эп сана, Максим Максимович, ӗҫе йӗркелеме, райкомра ӗҫлеме пӗлменнишӗн вӑрҫма чӗннӗччӗ те, халь савӑннипе шӑрт та таҫта кайса кӗчӗ. Ҫапах та хам патра асӑрхаттарасшӑн. Ӑҫта сикетӗн эс? Пӗрремӗш секретарь урлӑ-и? Оманова, мана хыпарламалла малтан унпа калаҫиччен. Субординаци тенине пӑхӑнмаллах, пире хисеплемеллех. Эс заведующине, мана пӑхӑнакан ҫын, хӑв мӗнле рангрине ан ман. Ҫапла вӑл пурнӑҫ, Крутов юлташ. Ĕҫлеме пӗлмелле. Пирӗн, вӑн, пурте пӗр вӑхӑтрах пулать. Ӑнлантӑн-и?

— Ӑнлантӑн-и халь кам пусӗ ҫинче мӗнле ҫӗлӗк ларнине? — алӑкран сасӑсӑр кӗрсе тӑнӑ Оманов хӑпартланса кӑкӑрне каҫӑртрӗ.

— Ӑнлантӑм, — терӗ те тарӑхса Крутов пӳлӗмрен васкаса тухрӗ. — Мӗнле хул пуҫҫи ҫинче мӗн ларнине те...

Патшалӑхӑн тӗп шухӑшлав ӗҫне коверсемпе капӑр кӗпе-тумтире тата тӑван-пӗтене чапа кӑларассине мала хурса туса пынипе халӑхра курайманлӑх ҫеҫ вӑйланать.

Çак пукана йышăнакан хапсăнчăк çынсене сăпайлăха вĕрентни, йĕркелĕхшĕн тăн парса çӳрени ытла та кулăшла пулса тухать.

Ертсе пымалли ĕçе ăнсăртран лекнĕ çынсем, усă вырăнне, епле хур тунине пĕлет те, курать те ĕнтĕ Крутов. Посадкина та çавнашкаллисен шутĕнчех. Оманов та. Арçынларах манерлĕ Василиса Матвеевна пединститутран вĕренсе тухнă хыççăн шкулта нумаях ĕçлеймен, мĕнĕ кăмăла кайнă унăн райком секретарьне, ăна вăл хăйĕн ытамне илнĕ. Комсомол ĕçĕн шкулĕнчен «пиçсе» тухнă хĕр-активисткăсенчен нумайăшĕн пурнăç çулĕ утиял айĕнчи савăклăх çăл куçĕнчен пуçланнă-çке. Мургаев умĕнхи секретарь Посадкинана тата çӳлерех хăпартнă. Лартса хăварнăскер халь хăйне хăй çиччĕмĕш пĕлĕтри пекех туять, никамран та хăрамасть. Яков Сидорович ăна пĕр çулхине улăштарма шутланă. Ĕç тухман. Шупашкар енчен хӳтлĕх çилĕ вĕрме пуçланă та, Мургаевăнне хăйĕнне чутах шлепкине вĕçтерсе яман.

Пурнăçра тем те кирлĕ-ха, çапах ĕçре япалана мар, умри тĕллеве мала хумалла пек. Лартнă та, лараççĕ. Ĕç пырать, малаллах. Вăхăт та чупать, вĕсенчен иртсе кайсах. Кивĕ мелпе ĕçлекен Посадкинасемпе Омановсем, Мургаевсемпе Майловсем вăхăт хӳринчен тытса та пулин тапаçланаççĕ, вăй-хал çитменнипе тар ăшне путаççĕ, тусанпа витĕнеççĕ, аптранипе пӳлĕмсене кĕрсе пытанаççĕ. Вăхăт çеç, вĕсенчен кулнăн, малалла та малалла чупать, паянхи пурнăç ытамĕнчен ыранхи, малашнехи пурнăç çеммине куçать. Вăхăт хӳринчен хăтăлса, ăна çилхерен ярса илмелле, сулкаланмасăр ĕрĕхмелле, хăвпа пĕрле района та çав хăвăртлăхпах илсе каймалла... Анчах, вăхăт урхамахĕ çине ларма мĕн чухлĕ вăй, пултаруллăх, ăслай кирлĕ. Хăвăн ĕçлеме, çĕнтерме пĕлни çеç те мар, халăха пурнăç хăвăртлăхĕ çине куçма вĕрентмелле. Çапла ăнланать Крутов хăйĕн ĕçне.

Кăнтăрла иртсен вăл Тымара кайма палăртнăччĕ. Оманов ăна кăшкăрсах чарса лартрĕ:

— Çакна çакмасан урама тухма та ан шутла!

— Пурнăçларĕ вăл пуçлăх хушнине. Райкомалла пăрăнса кĕрекен çул кĕтессине хĕрлĕ хăмач çактарчĕ. Килелле кайнă чухне Крутов унта мĕн çырнине тата тепĕр хут тăрсах вуларĕ: «Парти йышăннисене пурнăçлассишĕн эсĕ паян мĕн турăн?»

Чăнах та, мĕн турĕ-ха вăл паян? Канашлура икĕ сехет çурă ларчĕ. Посадкина пӳлĕмĕнче хăйне йĕркеллĕ тытма «вĕренчĕ». Шофера, Васли Михалча, алăк умĕнче район идеологне кĕтсе илме кайса каларĕ. Çак чĕнĕве çакрĕ. Авă, пĕр пуçĕ чалăш пулнă. Оманов хăй камантласа тăчĕ-çке аялтан? «Симметри те симметри» текелерĕ. Çапах та пĕчĕк ĕçе те шайлашуллă, килĕшӳллĕ йĕркелеймен.

## 6

Максим Максимович шухăшĕпе, вăрманкассен хуçалăх аталанăвĕнче те шайлашулăх тени пулмалла. Халĕ вара, кăтартусене аякран çак чĕнӳ çине пăхнă пек тинкерсен, тата чалăшрах ӳкерчĕк тухса тăрать: «Шурăмпуç» — пĕр пуçĕнче, «Çăлтăр» — тепĕр енче. Пĕри çӳлелле кармашать, тепри аялалла туртăнать. Чĕнĕве халех, туххăмрах тӳрлетсе çакма пулать, юпа çине пусма тăрат та хăпарса танлаштар. Çак икĕ хуçалăха шайлашуллă тума вара ай-яй мĕн чухлĕ вăхăт, вăй, шухăшлав кирлĕ. Хуçалăхсем хушшинчи пысăк танмарлăх пирки хĕрӳ калаçу та, ахальли те час-часах пулса иртет: тĕрлĕ шайра. Лавĕ пурпĕрех вырăнта. Тапранмасть Тымар, чĕрĕлмест.

Мускавпа Шупашкарĕ те вара «çăлтăрсене» çутмах, тӳпенелле çĕклемех хуша-хуша ыйтаççĕ. Вĕсем валли уçă çул-йĕр кăтартса параççĕ. Вăл çулпа тӳрĕ утма, тымарсене хăв хыççăн мекĕрленсе туртса пыма вăй-хал çитер кăна. Вăй-хал çеç-и, анлă тавра курăм, татăклă çивĕч шухăшлăх кирлĕ кунта. Ывăннă лаша, тем пек пушăпа хăваласан та, тути умне сĕлĕ миххи çакса ярсан та, апатне кавлесе тӳрех вăй илеймест. Кивĕ мелпе ĕçлекен пуçлăх та çавнашкал янавар пекех. Хӳтерекен

сывлăшпа малалла талпăнса та пăхать, ыттисемпе тан пыма пурпĕрех вăй çитерeймест, йывăр çулра лаштăрах каять. Мĕн чухлĕ усăллă сĕнӳ, кăтарту, пулăшу параççĕ ăна. Вĕсемпе вăл пурпĕрех йĕркеллĕ усă кураймасть. Çапла, Мургаев район ял хуçалăхне пурнăç ыйтнă шая çитерме пултарайĕ-ши е çав ĕшеннĕ лаша хăраххи пуçа усса чăхăмласа тăрĕ?

Мургаев çеç мар, ял хуçалăхĕпе ятарласа ĕçлекен пуçлăх Вьюнов та пур. Тĕрĕссипе вĕсен лавне пĕрле туртмалла пек. Туртма туртаççĕ-ха, пĕрлех. Çапах Мургаевăн чи малта, тĕп çулпа ертсе пымалла. Ăна тĕпе кӳлнĕ. Унран чи малтан ыйтаççĕ, ăна чи малтан çунтараççĕ. Ял хуçалăхне аталантарма, çĕклеме пултартăн — эсĕ пĕрремĕш секретарьсем хушшинче лайăххи, хисепли, пултараймарăн — урăххине вырăн пар.

Çав мехелпех ĕнтĕ райком секретарĕсене улăштарса та пăхрĕç. Колхозĕсене е совхозĕсене мала кăларнă ăста хуçасем те темиçе район пуçĕнче тăраççĕ. Вĕсем лакса ларнă районсене ланкашкаран майĕпенех туртса кăлараççĕ. Мургаева çеç хальлĕхе тĕкĕнекен çук-ха. Мĕншĕн тесен Вăрманкас — вăтаммисен шутĕнче. Вăтаммисене малтисемпе танлаштарма алă çитмен-ха. Вăтаммисен — вăтам шайри пуçлăхсем. Вĕсене ытлах ятласа каймаççĕ, ырлама та васкамаççĕ, аслă канашлусенче-пухусенче те ячĕсене сайра асăнаççĕ. Вăтаммисем çав хушăрах мухтава та тивĕç пулаççĕ. Вĕсем района пĕтĕмĕшле çĕклеме хал çитменнине туяççĕ те, пĕр-пĕр уйрăм енĕпе те пулин çӳле сиксе тухма тăрăшаççĕ. Ун пек чухне вĕсене мухтавĕ те, парни те, орденĕ те лекет. Яков Сидорович Вăрманкасра виçĕ орден илнĕ. Мургаев хӳттинче Майловĕ те, Посадкини те, Вьюновпа Милов та орденлă пулнă. Акă тата сĕт суса патшалăха çур çулта нумайрах сутассипе Мускавран ăмăрту юхăмне сарса янăччĕ çĕршыв çийĕн. Унта палăртнă шая çити тултарсан сĕт тинĕсне, чăвашсем те пĕр хĕрлĕ ялавне çулса илме пултарчĕç. Çакăн хыççăн вакунĕпех килнĕччĕ орден-

медаль Шупашкара. Кашни района уйăх валеçрĕç вĕсене. Вăрманкаса та темиçе мăн мишук тиесе килчĕç. Ял çыннисенчен маларах районтисем аллисене чиксе ячĕç шакăртатакан мишука. Оманов аллине те «Хисеп палли» орден кĕнĕ. Вăт çапла вĕсем — вăтаммисем те чейисем. Вĕсен пурнăçĕ икĕ енлĕ хӳтлĕхре.

Крутовсемпе Быстровсем çĕнĕлĕхе ялсене сарни çапах та шăрăхпа типнĕ çĕре ăшă çумăр çуса шăварнă пекех. Мургаевăн лăпкăлăх пахчинче çĕнĕ хунав майĕпенех çĕкленет. Вăл ăна асăрхамасăр ирттерсе яма тăрăшрĕ пулин те, çĕнĕ çеçке куç умĕнчех ешерсе саралать. Вăрманпромхозра та, авă, Максим Максимович сĕнĕвĕ хыççăн, курăмлах йăшăлттатма пуçларĕç. Юрий Петрович Липов Тымар çывăхĕнче йĕрке тăвать. Çĕршыв пурлăхне, халăх пуянлăхне вăрттăн киле туртакансен аллине вĕлтрен пĕçертрĕ, хăшне-пĕрне шăнăрласах хытарчĕç. Тымарсем тин хăйсем ĕçлесе вăй хумасăр, хăйсем çĕкленсе тӳрленмесĕр хуçалăха малалла уттарма май çуккине ăнланчĕç. Çак улшăнăва Крутов унта кашни каймассерен сисет. Халăх шанчăкне çиеле кăларассишĕн Каргинпа иккĕшин самаях тарлама тиврĕ, сахал мар вăхăт ирттермелле пулчĕ.

Мускав енчен тепĕр ăмăрту юхăмĕ шавласа çитсен вĕсемшĕн тепĕр пысăк ĕç хутшăнчĕ. Хушăва сӳтсе явнă вăхăтра Максим Максимович «Шурăмпуçĕнче» акă мĕнле сĕнӳ пачĕ:

— Сирĕн «Çăлтăрпа» ăмăртса пăхсан мĕн тухĕ-ши? Ăмăрту вĕт вăл малтан мала иртсе кайни çеç мар, юлакансене пулăшни те.

Пуху шавлама пуçларĕ.

— Колхозне лачакана кĕртсе лартрĕç те, пирĕн туртса кăлармалла-и? Хамăрăнне çĕклесе те пилĕке пайтах авнă, — терĕ кĕскен те витĕмлĕн Хумма Петĕрĕ.

Ун хыççăн сăмах илнĕ Раман пиччĕшне итлемерĕ, тымарсемпе ăмăртас пирки хаваслансах калаçрĕ, хăй

«Çăлтăрти» пĕр бригадăна шефа илме пулчĕ. Шав майĕпен лăпланчĕ. Волков та, малтан пăркаланса тăнăскер, сĕнӳпе килĕшрĕ, ăмăрту пуçарма çураçрĕ.

Ку ыйтупа Крутов «Çăлтăрта» та пулчĕ. Пухура Тан Васли печĕ ячĕ:

— Пĕлетпĕр эпир Волкова! Ăмăртатпăр-пулăшатпăр тесе вăл колхозсене пĕрлештерессшĕн, пирĕн улăхсемпе вăрман лаптăкĕсене хăй аллине çавăрса илесшĕн. Ай-яй ăслă çаптараççĕ. Пĕрлешсен, унта, правление те сакăр çухрăм танккамалла пулать. Ха, тупнă пире, ухмахсене. Килĕшместпĕр! Мана хăть касăр, турăр, çакăнтах çĕр тĕпне антарса ярăр — эп хирĕç: ăмăртма та, пĕрлешме те. Пирĕн ирĕклĕхе пĕтересшĕн. Эпир хамăрах тан — пĕр тăван...

Крутов пĕлет-ха, çак ик хуçалăха пĕрлештермелли план малтанах пулнă, анчах вăл хут çинчех юлнă. Пуçланă ĕçе вĕçне çитереймен. Çакна аса илсе çухăрать те ĕнтĕ Тан Васли, халăха пăтрататать.

Моисей Семенович темиçе хут та ăнлантарчĕ, Максим Максимович та калаçса ывăнчĕ, Тан Васлисем çаплах хирĕлсе лараççĕ. Маминов килĕшнĕ хыççăн тин лăпланчĕç вĕсем.

— Мĕншĕн хирĕçлес? — терĕ председатель. — Ăмăртасси, снашăтă, пурпĕрех хут çинче юлмалла. Курнă эпир унашкаллисене. Пĕрлештересси, снашăтă, вăрман хыçĕнчен те курăнмасть. Пире никам та ирĕксĕрлеймест халь, аллăмĕш çулхи мар. Пулăшасах теççĕ пулсан пире тарăнварсем, снашăтă, ыранах Волков патне трактор ыйтма каятăп.

Вырăнта çĕнĕлĕхне те, йĕркесĕрлĕхне те нумай-нумай куратăн. Эс ху пуçупа пĕр майлă шухăшлатăн та, халăх вара — урăхларах. Çынсен нушине пĕлсе çитсен тин ĕçре пĕтĕмĕшле йышăну тумалла иккен. Крутов «Шурăмпуçĕнче» чухне уйсемпе фермăсем тăрăх кунĕпе çӳретчĕ. Миçе çынпа тĕл пулса чун каниччен калаçмастчĕ-ши вăл? Каçалапа лайăххипе япăххине эртелпе сӳтсе яватчĕç. Колхозшăн та, парткомшăн та аванччĕ

ку. Ĕç меслечĕ çавăн пекчĕ унăн — пурне те усă кӳмелли меслет. Халĕ те çаплах ĕçлеме тăрăшать. Каргин ахальтен каламарĕ пуль:

— Эсир, Максим Максимович, çын чунне уçма пултаратăр: те нумай пĕлнипе, те сăмах çаврăнăçулăхĕпе... Паян сирĕнпе колхоз тавра çаврăнса университет пĕтерсе тухнă пекех туйăнчĕ. Пирĕн тырă мĕншĕн начар пулнине те халăха тĕплĕн уçса патăр. Выльăх ăратлăхĕ пирки те уçăмлăн ăнлантартăр. Техникăна пĕлетĕр, хамăр инженер те ун чухлĕ ăнкараймасть. Тĕнче хыпарĕсемпе, политика ыйтăвĕсемпе тата кам çиттĕр сире. Районтисене нумай курнă та... Килеççĕ те, председатель пӳлĕмне хупăнса лараççĕ те апат çиме каяççĕ, ĕçĕ пĕтнĕ, вĕсем ялта пулнă, колхоза пулăшнă. Хальхи вăхăтри хуравлă ĕçлевçĕсем пурте сирĕн пек-ши?

Аптранă енне Крутов «пурте ман пек» тесе хучĕ.

— Çапла пулмасăр, — пуçа пăркаларĕ Моисей Семенович. — Атьăр-ха фермăна, кормоцех кăтартап. Иртнĕ эрнере вырнаçтарса пĕтермеллеччĕ, халĕ те лартман. Яков Сидорович хăй килнĕччĕ, Маминовпа пӳлĕмре тем сӳтсе яватчĕç. Кĕтĕм те, çапла-çапла, апла-капла тесе ăнлантартăм, кормоцехшăн «Сельхозтехникăна» кăшт хытарма ыйтрăм. Юрать, юрать, пурте пулать, тесе лăплантарчĕ райком секретарĕ. Те маннă тутлă апат хыççăн, тем тунă, авă, хăвăрах куратăр — тимĕр купи.

Выльăх апатне çĕпрепе йӳçĕтмелли хатĕр патĕнче Алеша Каргин тем шаккакалать.

— Майлаштарса парас терĕм, кĕт-кĕт «сельхозтехниксене», тахçан йăшăлтатса çитеççĕ вĕсем, — кăмăлсăррăн сăмахларĕ вăл. — Кунашкал япаласене кăçал кашни колхозрах лартма палăртнăччĕ пек, хаçатра çырнине астăватăп. Лайăх пулсан хăть, хăямата. Укçа тăккалани те, вăхăт сая яни те усса кĕтĕрччĕ.

Кормоцеха хĕрарăмсем пухăнчĕç. Вĕсем çак тимĕр купийĕ мĕнне тĕплĕнрех пĕлесшĕн пулчĕç. Крутов фермăра ĕçлекенсене ун çинчен ăнлантарма пуçларĕ.

— Акă, куратăр-и? — çӳлелле тĕллесе кăтартрĕ вăл. — Апат йӳçĕтесси çапла майпа пулмалла. Мăн хуранне вĕри шыв яратăр, çитмĕл-сакăр вунă градуса çитерсе. Унтан, пĕр ĕне пуçне пĕр кило кĕрпелентернĕ тырă е çăнăх, виç-тăвата кило çĕр улми, кăшман та юрать, тепĕр кило кишĕр яратăр та хытă пăтрататăр. Ун хыççăн çав хутăша вăтăр градус таран сивĕтетĕр, квас ярса хутăштаратăр, йӳçме, эппин. Çĕпре кăмпине аталантарма сывлăш кирлĕ-çке. Акă, компрессор ларать, хурана вăл сывлăш уçласа кĕртет. Çапла çур талăкра апат хатĕр пулать.

Хĕрарăмсем пĕр-пĕрин çине пăхса тем пăшăлтатрĕç. Пĕри Крутовран ыйтрĕ:

— Кăвас чустине çĕпререн тăватчĕç-и-ха?

— Çапла.

— Унпа-çке Тан Васли ял тăрăх сĕтĕрĕнсе çӳрет, — чăтаймасăр ахăлтатса ячĕ инке. — Пычĕ те хайхи-майхи пирĕн пата... Эпир шăпах ĕçкĕ ĕçеттĕмĕрччĕ. Кĕчĕ те ыйтать çав: «Ан çилленĕр те мана эсир, тăвансем-пĕр тăвансем, çилленсен те пурпĕрех çĕпре кирлĕ. Астăвăр, хам валли мар, колхоз выльăхĕ валли». Ĕçрĕ, кӳпрĕ вара пичке тĕпĕнчен çĕпре сăрхăниччен. Çĕпре тухсан вăшт çеç çухалчĕ.

— Апла вăл сăра тума та çĕпре хăвармĕ ялта, — чана ушкăнĕ пекех чанкăлтатса илчĕç хĕрарăмсем.

Пурте лăплансан Крутов малалла каларĕ:

— Хăрама кирлĕ мар, квас чустине ветбаклабораторисенче тăваççĕ. Сăри валли çĕпри тĕп сакайĕнче юлĕ-ха.

— Пур-ха вăл, пур, — ыттисен умне тухса тăчĕ халатлă хĕрарăм. — Тан Васли вăл ухмахланса çӳрĕ. Хăй те йӳçнĕ çĕпрех. Çак хурана ярсан ним мар выльăх апатне йӳçĕтмелле. Ман çакна пĕлесчĕ: нумай кирлĕ-и çĕпри?

— Талăкра кашни ĕнене вăтăр-хĕрĕх кило, пăрусене вун пилĕк-çирĕмпе те çитет. Пĕрре йĕркене кĕрсе кайсан хăвăрах хăнăхатăр-ха, уссине те куратăр, — евитлерĕ Крутов.

Ушкăнран уйрăлнă чухне Алеша Каргин ăна депутата наказ панă пекех хушса ячĕ: «Сельхозтехникăран»

хăвăртрах çын кирлĕ. Ку япалана хăйсем хатĕрленĕ тĕк, хăйсемех вырнаçтарса пĕтерччĕр. Ман пурне те тума ĕç хатĕрĕ те çитмест».

Вăрманкаса таврăнсанах Крутов килне кĕриччен малтан «Сельхозтехника» пĕрлешĕвне кайрĕ, ыйтăва управляющи пулăшнипе часах татса пачĕ.

Çынсемпе тĕл пулса вĕсен хуйхи-суйхине пĕлсе вĕсене пулăшни Максим Максимовичăн чунне кантарчĕ. Чăн та, халăхпа пулатăн, халăхран вĕренетĕн, халăхпа пĕрле кĕрешӳре çĕнтерме вăй пухатăн.

## 7

Тĕн çыннисем атеистсене хирĕç вăрттăн кĕрешӳ пуçланă. Ялсемпе поселоксенче наркăмăшлă çырусем çӳреççĕ. Тетрадь листисем çине çырнă çав çырусем Оманов патĕнче пĕр тĕрке. Пай пуçлăхĕ вĕсене Крутова пачĕ.

«Сăваплă» çырăва кашни вулаканăн тăхăр хут куçарса çырмалла, тĕрлĕ çĕре ямалла, вара, вăтăр ултă кун иртсен, çав çын инкекрен, йывăр чиртен сывалать пать, тăхăр çыру яманни нишпе асапланать иккен.

Крутовăн эрнипех шкулсенче, колхозсенче пулма тиврĕ, халăхпа нумай калаçрĕ. Тымарта Карачăм мучие тĕл пулчĕ. Ферма хуралне кĕнĕ-мĕн вăл, картишĕнче пит чинлă утса çӳрет. Мучи ăна ферма пӳртне чĕнчĕ. Кунта Крутов тахçан пулнăранпа нимех те улшăнман, кăмаки, сĕтелĕ, хăма лапки те çав майлах. Вырăнĕ çеç çĕнĕ, улăм вырăнне тӳшек сарнă, çиеле тĕрленĕ çивитти витнĕ. Минтерĕ çинче чечеклĕ пир татăкĕ. Хурăнвартан илсе килнĕ пăшалне пăтаран çакса янă. Крутов çурт ăш-чиккине пăхса çаврăннă хушăра Карачăм мучи шăлавар кĕсйинчен тăваткал хуçлатнă, лӳчĕркеннĕ хут листи туртса кăларчĕ.

— Вăхăтра çитрĕн, ыллăм, акă, вула мыскарана, — терĕ вăл хута Максим Максимовича тыттарса. — Инкекрен хăтарасшăн мана.

Крутова йăлăхтарса çитернĕ хайхи çырусенчен пĕри Карачăм мучи патне те çитнĕ, ватă çынна наркăмăш шăршипе канăçсăрлантарнă. Халĕ, итленĕ май, сухала чĕтретсех вăрçрĕ:

— Вăт, мать-касси, тупнă пуль ухмах. Куç кĕретех суяççĕ вĕт. Эп ват супнă пулин те унта чĕрне хури чухлĕ тĕрĕслĕх курмасп. Суя, мăшкăл япала. Ултав. Пер, вăн, тасамарлăх витрине. Тахçанах вăркăнтармаллаччĕ те ăна, эс килессе кĕтрĕм.

Мучие Крутов ку çырусем пирки ăнлантарса пачĕ, хăй Тымара шăпах çав сăлтавпа килнине пĕлтерчĕ.

— Эх, пулаççĕ вĕт шăпăрлансем, — сухалне чĕпĕтсе илчĕ Карачăм мучи. — Ку таранччен те курăнман вăл ман куçа. Тĕлĕкре те. Çырура çырнă пек пулăшас пулсан-и Турă? Тĕнче уçлăхĕнчен тахçанах карчăка каялла тавăрса килмелле те ман саявкăпа... Çук. Чунĕ тухнă, çухалнă. Шыра-ха ăна çав анлăшра. Хама лăплантарас тесе юрать-ха пĕр çăлтăрне Анук ятне парас терĕм.

— Турри-качки, — терĕ Максим Максимович, — вăй хурса хамăр ĕçлесе хамăр валли телейне хамăрах тăватпăр вĕт. Турри те хамăрах. Ленин тахçанах каланă: «Тĕн вăл ăс-тăна минретекен эрех пекех».

— Вăт, вăт, тĕп-тĕрĕс, ыллăм. Шалишь! Керасим Филипчăн пуçне лăпăрти çырупах минретеймĕç. Эс каланă пекех, эпĕр те пĕлетпĕр турă сывлăшра маррине, ĕçлекен сывă çын ăшĕнче ларнине. Çырăвĕ тĕп пултăрха, унпа расчут. Мана кунти пăртсетатель çиет.

— Мĕн пулчĕ тата? — ыйтрĕ Крутов.

Чӳрече умне пырса тăнă Карачăм мучи вите еннелле тĕллесе:

— Вăн, кур, ыллăм, инкек çурисене, — терĕ.

Вите çумĕнче чăн та йăрăмлă шĕвĕркке çурасем кускалаççĕ. Крутовшăн районта шурă пысăк ăратлă сысна ĕрчетни паллă, кунашкаллисене ниçта та курманччĕ-ха.

— Маминов таçтан ашлăх самăртма туянса килнĕ пуль-ха, тин йăраланма пуçларĕ, — савăнчĕ Крутов.

— Çапла пулмасăр, — лăх-лăх кулчĕ хуралçă. — Çаврăнкалать сана. Кĕтсех тăр ăрат улăштарасса. Çунсах çӳрет кăлхусшăн. Метис вĕсем, хутăш йăх, вăрман хăнисен парни.

— Мĕнле парне? — ниепле те ăнланаймарĕ вăл.

— Çапла парнех. Хир сыснисемпе пĕтĕçнĕ хыççăн пулнăскерсем. Çавăнпа йăрăм-йăрăм.

— Тин пуçа пырса кĕчĕ.

— Тоттă çав, ыллăм, метис. Çуралма пит чипер çуралаççĕ, ӳсме — ӳсмеççĕ. Авă, хăлтăртатса çӳрет пĕри. Ман пекех.

Максим Максимович мучирен тĕпчесех ыйтрĕ:

— Мĕншĕн сирĕн инкек тата вĕсем? Эсир пуçарман пуль опытне?

— Манăн çав, ыллăм, манăн. Манах айăплать пăртсетатель. Тан Ваçлийĕ те çĕмĕрсе хăварать. Пĕр кун ӳсĕрскерне пертанкăпах хăваласа ятăм.

Мучи пукан çине ларчĕ, туя вĕçĕпе янахне тĕкĕлерĕ, вăрăм сухалне яката-яката илчĕ, путса кĕнĕ çивĕч куçĕпе Крутов çине пăхса йĕркипе калама пуçларĕ:

— Ĕçĕ пилĕк авмалли мар ман, канлĕ ĕç. Малтанах аптрамасть пекчĕ. Пăхса çаврăнатăп ферма тавралла: хама шанса панă упьект вырăнтах. Унтан пӳрте кĕрсе канатăп. Хăвах куран, карта тавраш̆ĕ çук, çап-çарах. Хĕрарăмсем кăнтăрла сыснисене уçăлма кăлараççĕ. Выльăх ăна-кăна ăнланать-и? Ăна ирĕклĕх кирлĕ. Выляса чупаççĕ-чупаççĕ те вите тавра, кĕç вăрмана çерем çĕтме йăркаççĕ. Асăрхарăм пĕринче, вă-ăн тислĕк купи çумĕнче, ют сыснасем нăйкăшаççĕ, хамăрăннисемпе чăнласах выляççĕ. Курпун, шĕвĕр сăмсаллă, вăрăм хӳреллĕ, ула-хăмăр тĕслĕ хăйсем. Аран-аран тавçăрса илтĕм, ара, хир сыснисем-çке, кунти сакаçникрен. Аçисем те пулнă çав пĕрлех. Аçан ун мĕн шухăш — çут çанталăк панă ырлăхпа вăхăтра усă курмалла. Амин те çавах ĕнтĕ. Çапла вăрмантан фермăна «улах каччисем» час-час чупма тытăнчĕç. Юрату вăййи пуçланчĕ. Тем

кӑмӑла кайрӗ хамӑр сыснисене те, вӗсем те вӑрмана пустуяннӑ йӑрккама пуҫларӗҫ. Шалтах аптрарӑм. Хӑваласа яма вӑй-хал ҫитмест, кӑмӑл та ҫук тата.

Кунта ман Крахьян текенскер ӗҫлет, сысна пӑхать, качча каймасӑр юлнӑ ватӑ хӗр. Ҫакскер хайхи пӗррехинче шурӑ сыснапа юратуллӑ выляса тӗлӗрсе кайнӑ хир сыснине ҫурӑм тӑрӑх хулӑпа касать те касать. Лешӗ хаярланса хӑйне хирӗҫ сиксе ӳкрӗ. Аран-аран пусма картлашкинчен хӑпарса тарчӗ вӗт Крахьян. Сысни асавӗсемпе ярса илнӗ пулсан, ахаль...

Кӗтӗмӗр хашкаса иксӗмӗр те пӳрте. Крахьян сывлӑш ҫавӑраймасть, чӳречерен пыра-пыра пӑхать. Хир сысни каллех ферма сыснисем патнелле тӑпӑртаттарчӗ. Крахьяна калатӑп: «Ухмах эс, ҫынна та тапӑнать хир сысни, ешель хӑйне те мӗн те пулин тума чӑрмантарсан. Эс те тупнӑ ҫав вӑхӑтра хӑваламаллине». Крахьян ӗнсе хыҫнелле юхса аннӑ тутӑрне майлать, ҫав вӑхӑтрах такӑлтатать: «Мӗн вӑл тата ман сыснаран мӑшкӑллать. Темле ҫура пулать. Чӑтӑн унта. Тивме юранипе-юраманнине пӑхса тӑрӑн». Крахьян питӗ пӑркаланать те, тен, кӑна хӑйне те ҫак самантра чӑтма ҫав тери йывӑр тесе яр ил хайхискерне пилӗкӗнчен. Сыснасен юратӑвӗпе киленсе тӑнипе хамӑн та шухӑш арпашӑнчӗ пуль ҫав, карчӑка курманни тата миҫе ҫул... Хӗрелсе кайнӑ Крахьян, чӗтреме ернӗскер, каялла вӑрт ҫаврӑнчӗ те мана сухалран ҫулса илчӗ,вырӑн патне туртса ҫитерчӗ, унтан вӑльт! ҫӗклесе печӗ. Хӑй тухрӗ те вӗҫрӗ, алӑкра каялла ҫаврӑнса шӑл йӗрчӗ: «Сана, — тет, — ват супнӑна, кӗтсе качча каймасӑр пурӑнман эп. Вырт кӑмака хыҫӗнче картинкку ҫинчи «ҫара хырӑмна пӑхса». Выртрӑм вара намӑс курнӑ хыҫҫӑн «Ҫывӑракан Венерӑпа» хускалмасӑрах. Картинки те туртӑмлӑ, хитре те, сыснасен юратӑвӗ те... Эх, пӗччен пурнӑҫ...

Максим Максимович каҫса кайсах кулать. Карачӑм мучи ватлӑхра юрату ҫимӗҫне татасшӑн хӑтланса намӑс курни ӑна темшӗн пит тӗлӗнтерчӗ.

— Эс манран, ыллăм, шур сухалран, кулан. Чĕрĕ çын-çке, ватă пулин те. Шухăшпа куç нихçан та ватăлма пĕлмеççĕ. Кур-ха, вăл вăн хайхи Крахьян, мĕнле чупать метиссене витене кĕртесшĕн?

Пуçне чӳрече еннелле пăрчĕ те Крутов, пуш михĕпе ула çурасене хăмсарса хăвалакан хĕрарăма асăрхарĕ. Крахьян, кĕлеткине пăхсан, Карачăм мучине çеç мар, тепĕр вăй питти арçынна та тӳшек çине çăмăллăнах йăтса пемелле.

— Кулă-кулă та, ыллăм, — питне сăтăрчĕ мучи. — Маминов кулă парать мана. Аптранă енне вăрăм пушă яврăм. Аякран та пулин хăратас тетĕп-çке. Хам та шикленетĕп. Эп Крахьян пек çивĕч мар, урасем хытаççĕ. Хăвалас-мĕн пулсан, тарса та ӳкес çук. Ман Маминов прикасне пурнăçламаллах, хир сыснисене аташма чармаллах. Хуралламалли, сыхламалли вырăн тупрăм хайхискер. Вите хĕррине пусма тăратрăм, случайĕ чĕву хăпарса тарма. Килеççĕ те хир сыснисем, шутлатăп хам ăшра, юрату вăййи выляма пуçличчен мирлĕ хӳтерсе яратăп. Пĕр хăйсенне тытăнсан унта... ăçтан кӳрентерен вĕсене. Эп Крахьян пек пĕччен пурăннă çын мар, авланса курнă, ăнланатăп, всюшă вĕсем те чĕрĕ чун. Сĕтел çинчи айлă-çийлĕ шăнасене те çапса вĕлерме тăхтатăн та ун пек чух.

Вите кĕтессинче кĕтсе тăратăп çапла, куратăп, килеççĕ кĕтнĕ хăнасем, вăрмантан тухрĕç те тӳрех ман паталла çул тытрĕç. Инçех те мар Крахьян сыснисем çĕр чавалаççĕ. Çитрĕç. Шарт! тивертрĕм пушă вĕçĕпе хĕрринче тăраканнине, тепре çапма хатĕрленетĕп. Хăрт-харт! турĕ хайхискер, курпунне тата çӳлерех çĕклерĕ, асав шăлĕсене кăларчĕ те вирхĕнчĕ ман паталла. Хам та сисмерĕм, ракет пек вĕçсе хăпарса кайрăм вите тăрне. Çитрĕ хир сысни пусма патне, картлашкаран малти урисемпе уртăнчĕ, хăртлатса ман çине шур куçĕпе пăхать. Çӳлтен пушăпа касрăм тепре. Сысна аçи пушшех урса кайрĕ, сăмсипе хирет те хирет пусма кутне.

Чалăштарса, чалăштарса ячĕ те пусмана такки туртса антарчĕ. Виткĕçрен тытса аран-аран çакланса юлтăм. Пусмапа пĕрле шаплатнă пулсан-и, халь санпа юнашар та лараяс çук. Пĕр хушă çаврăнкаларĕ те, хăртлатса ферма сыснисем патнелле мăнаçлăн уттарчĕ. Мĕн, вĕсен, хальхи çамрăксенни пек вăтанчăк тавраш пур-и? Ним пулман пекех юрату юрри ĕнĕрлеме тытăнчĕç. Эс пур, лар вите тăрринче шăла йĕрсе. Сикес — çӳллĕ. Кăнтăр апачĕ те çитрĕ, çын тавраш курăнмасть. Ирхине уйран çеç ĕçсе тухнăскер, хырăмра мусăк пуçланчĕ. Сыснасем выля-выля вăрманалла юртрĕç. Хамăрăннисем ăсатсах яраççĕ. Çын пек. Вĕсем çине пăхса ларнипе тахçан çамрăк чух хама та инкесем ăсатнине аса илкелерĕм. Ютти тутлă пуль çав. Çын патĕнче уйран та сĕт пек те...

— Култарса вĕлеретĕр мана эсир паян, Герасим Филиппович, — сывлăшне аран-аран çавăрса ячĕ Крутов. — Малалла мĕнле?

— Виличчен калаçса юлас тетпĕр пуль-и? Çавăнпа ват çын нумай палкать вăл. Лартăм çапла çиле хирĕç шăл шаккаса,тĕлĕрсех кайма пуçланă. Çын сассипе шартах сикрĕм. Пăхатăп — аялта Крахьянпа тепĕр хĕрарăм ахăрса тăраççĕ: «Пĕр кун вырăн çине ывăтнăччĕ, паян такам вите тăрне улăхтарнă, кĕçех лере çитиех вĕçтереççĕ-ха та сана, мучи. Салам, космонавт!» — тесе мăшкăллать Крахьян, хăй çапах та ӳкнĕ пусмана çĕклерĕ. — Пĕр хушă шăпланчĕ те Карачăм мучи, пуçа пăркаласа каларĕ: — Çапла ман пуç çине хир сысни инкекĕ татăлса анчĕ. Маминов урсах вăрçать мана, хăратать. Кунта вара нимле турă та çăлаяс çук.

— Хайхи наркăмăшлă çырăва çырар та, — шӳтлерĕ Крутов, — пĕрне председатель патне ярар, вăтăр ултă кун кĕтер, тен, инкек иртсе кайĕ.

— Ан та кала-ха, ыллăм, тем курса ларăн кунта. Çырăвне, ăна, манăпăр. Ун пирки эп хĕрарăмсене тахçанах ăнлантарса панăччĕ. Фермăра пирĕн тĕн-тĕшмĕшпе минрекен çук.

Фермăран тухсан Крутов Тымарта урăх тытăнса тăмарĕ, васкасах Вăрманкаса таврăнчĕ.

8

Чуна парса тем пек тăрăшса ĕçлесен те ят илтме пулать иккен. Тепĕр чухне хăвшăн та мар, такамшăн, такамăн вăйсăрлатнă е тума пултарайман ĕçĕшĕн. «Колхоз хаçачĕн» редакторĕ Леонтий Корнилович Корнилов, ўпке чирĕпе аптраканскер, Максим Максимович вĕренсе килнĕренпе те ĕçре пулмарĕ, пульницара выртрĕ. Хваттер çук пирки Корнилов вунă çухрăмри Çиçĕм ятлă поселокра пурăннă, ĕçе унтан пуйăспа çўренĕ. Редактор вилсе кайни çинчен Крутов эрне кун райкомра илтрĕ. Урăх ун пирки ăна нимĕн те шарламарĕç. Пĕр канмалли куна та пулин этем ĕретлĕ ирттерес тесе вăл Хурăнвара тухса кайрĕ. Корнилова вырсарни кун пытарнă. Унта райкомран никам та хутшăнман.

Леонтий Корниловичăн пиччĕшĕ шăллĕне авалхи йăлапа пытарттарнă: Хуракас чиркĕвне илсе кайса кĕлĕ кĕртнĕ, вил тăпри çине хĕрес лартнă. Вăт камит — райком членĕн вил тăпри çинче — юманран тунă пысăк хĕрес! Корнилов шăллĕне пытарсанах обкома çăхав янă. Шупашкартан Хиркин килчĕ. Мургаев урнă пек çўрет, идеологи секретарĕпе Оманова Çиçĕме хăваласа ячĕ. Вĕсем усăсăрах каялла таврăнчĕç, тата тепре хутларĕç — пурпĕрех çураçтараймарĕç Корнилова хĕрес вырăнне чул палăк лартма.

Шывран типĕ тухас тесе пурте ултав çулĕ çине тăчĕç, Мургаев патне Крутова та чĕнтерчĕç. Алăкран кĕнĕкĕменех ăна пĕрремĕш секретарь çунтарма пуçларĕ:

— Хушнă ĕçе пурнăçламан çын кам вăл? Кахал! Хăйĕн тивĕçне манакан çын кам вăл? Йĕркесĕр! Мĕншĕн Корнилова пытарма каймарăн? Мĕншĕн пире обком умĕнче намăслантартăн? Камран ыйтаççĕ халь? Манран! Вилнĕ çыншăн та хуравлă иккен эп районта.

— Тăхтăр-ха, тăхтăр, кам хушнă вара мана виле пытарнă çĕре хутшăнма?

Çунакан вутта Оманов бензин сапса пырать:

— Эрне кун чĕнсе хам чĕлхепе хам каларăм редакци çыннисемпе кайма. Пуçлăх хушнине итлемен инструктор... Пĕлместĕп, Яков Сидорович, малашне мĕнле ĕçлемелле...

Намăс-симĕсе çухатсах суйса тăракан икĕ питлĕ Оманова Крутов çапса ярĕччĕ, анчах чăтас пулать, Мĕнле куçпа-питпе айăпсăр çынна путарать-ха вăл? Тĕрĕссипе Мургаев идеологи секретарьне, лешĕ Оманова кайма хушнă пулнă, Пантелеймон Христофорович, ахаль те редакторпа урлă пурăнаканскер, тарăхса алă сулнă. Çухалса каймарĕ Крутов, лăпкăн кăна ăнлантарчĕ:

— Нихçан та суйман эпĕ, Яков Сидорович, никама та улталама тăрăшман, Пантелеймон Христофорович пек путсĕр пулма çуралман.

Мургаев вĕсене иккĕшне те Çиçĕме хăваларĕ.

Путăк-шăтăклă, хăйăрлă çулпа машинăна хуллен илсе пырать райком шоферĕ. Ваçли Михалч вăрçăран таврăннăранпах парти çыннисене турттарать. Хăй вăхăтĕнче райком ямшăкĕ те пулса курнă. Кама кăна ярăнтарман-ши? Унтанпа миçе секретарь, миçе пай пуçлăхĕпе инструктор улшăннă. Пĕр вăл çеç ăшри чăтăмлăхне, çирĕплĕхне, ĕçри ăсталăхне, хутшăнусенчи çаврăнăçулăхне пĕтермен. Тăнлă-пуçлă çын ларса пырать-и унпа, хăватсăрри-и, чĕлĕм туртаканни-и, пакăлти-и е сăпайли — уншăн пурпĕрех. Вĕсене хирĕç чĕнмест. Хушнă — турттармалла. Хушнă — итлемелле. Куçĕ хăйĕн чее. Чĕлхи те хушăран çава пекех касса татма пултарать. Халĕ те вăл, хыçалта ларса пыракан Крутовпа Оманова тĕкĕр çинче сăнать, вĕсен калаçăвне ирĕксĕрех хăлхана чикет.

— Мĕн хуйхăратăн, Максим Максимович, пĕрремĕш секретарь паян асăрхаттарни выговор илни-им? —

ăпплантарасшăн пулас заведующи хăйĕн инструкторне. — Иртсе каять вăл.

Крутов Оманов вĕрсе кăларнă тăвăла аран чарса пырать, унпа ирĕксĕртен çеç пуплет.

— Айăпшăн хаяр выговор парсан та хуйхăрмастăп, — тет вăл. — Пустуй ятласа хăратса пĕтернин усси пур-ши? Юрĕ, эпĕ чăтăп. Хальлĕхе. Пурпĕрех çитес пухура çак ултавпа тĕрĕсмарлăх пирки сăмах пуçаратăп. Ытла кӳренмелле. Намăс та мар-и сире куç кĕретĕн суйма? Сутăнчăк эсир.

— Мĕнле ăнланмастăн эс? Кама та пулин айăпламалла вĕт, Мургаева е мана? Авторитет пĕтет пирĕн. Сан, инструкторăн, мĕн?.. Пысăк çын-им? Калаçнă, иртсе кайнă. Тĕрĕслĕх шырать тата...

— Маншăн-и? Иртмен! Иртмест те! Суйса таса çынна айăплани кунпах вĕçленмест. Паянтан Мургаев та маншăн авторитет мар — ултавçă, шанчăка çухатнă секретарь. Урăх эпĕ ăна ĕненме, хисеплеме пултараймастăп. Вăл çӳлтисене юратăр, вĕсен умĕнче ташлатăр, эпĕ хамăн совеç, парти совеçĕ умĕнче таса юлатăп, ăшчике усаллăх тимĕр пăхĕпе тултармастăп. Пĕчĕк çын, инструктор çеç пулам. Эсир, заведующисем, секретарьсем, мăн çынсемех пулăр. Эпĕ этемех юласшăн-ха.

— Унта çити хăпармалла-ха малтан. Унта кашниех лараймасть, — мăн кăмăллăн сиккелесе илчĕ Оманов.

— Эп уншăн çунмастăп. Мана инструкторта та аван. Ларма ăна таçта та пулать. Ĕçлеме çеç...

— Ĕçлеме ухмах та пĕлет, — шӳтленçи турĕ Оманов.

— Ухмаххи пушăпа ĕçлет, ăсли — пуçпа. Çапла мар-и? — пат татса калаçăва вĕçлерĕ Васли Михалч.

Сылтăмалла пăрăнса чукун çул урлă каçнă хыççăн машина Çиçĕме кĕрсе кайрĕ. Вăрман çумĕнчи хăрах урама çитсенултă кĕтеслĕ çĕнĕ çурт умĕнче чарăнчĕç. Крыльца умне тухса тăнă кил хуçи вĕсене тĕплĕн сăнать, шĕвĕр пӳрнисемпе сухал вĕçне якатать. Хĕвеле хирĕç пулнă куçне хĕссе лартнă. Чĕнмест.

— Сывлăх сунатпăр, — алă пырса пачĕ ăна Оманов. — Пурнăçсем мĕнлерех?

Корнилов пурпĕрех çăвар уçма васкамасть-ха, тем шухăшлать пулас. Унтан Максим Максимовичăн аллине хыттăн чăмăртаса шăл витĕр сăрхăнтарчĕ:

— Каллех хĕрес кастарасшăн-и? Пăчкине хурса килтĕр-и? Татма иксĕре меллĕ пуль. Çылăхран хăрасчĕ, антихристсем. Халăхран вăтанасчĕ. Туй хыççăн парappан çапакансем пек çӳреттĕр çав тĕмсĕлсе, мĕскĕнсем. Кĕрĕр ĕнтĕ, пĕр килнĕскер, иртĕр, хăваласа ямăп.

Çирĕп кĕлеткеллĕ çын Корнилов. Урисемпе хыттăн пусса утать. Вăрманта ĕçлесе ӳснĕ, юман кĕрешĕ пек хытнă арçын. Оманов ун çумĕнче ача пек çеç. Пӳрчĕ тирпейлĕ. Шалта никам та çук. Корнилов пĕчченех иккен, вăрман пункчĕн эстакади çинче çĕрле йывăç сыпăланă хыççăн канать.

— Ятлама килтĕр апла? — кăмăлсăррăн сĕтел хушшине ларчĕ кил хуçи. — Иртнинче вăрçса, милиципе хăратса хăварнипе мĕн турăр-ха? Çиллентертĕр эсир мана, кӳрентертĕр, нимĕн те тăваймарăр. Эп пĕлеп, обком пурпĕрех сирĕнтен ыйтать, сирех хăвалать, палăк ларттаратех, хĕреспе юнашар та пулин. Эх, эсир, пуççăрсем...

Оманов çак «парăнман çынна» тем каласшăн ăслăланать, çамкине сăтăрать, аптранă енне кăнттамлăн персе ярать:

— Лăпăртататтăр пустуй. Турă пур тетĕр. Такама тем туса пулăшнă вăл? Такам таçта курнă ăна? Хăвăр тĕл пулса калаçнă-и унпа? Лартса тултарнă та кĕтессе сăрăллă хăма татăкки...

Корнилов пичĕ çинче çĕнĕ йĕр палăрчĕ, тути хĕррисене шултра шăлĕсемпе якатса илнĕ хыççăн вăл Оманов еннелле пăхмасăрах каларĕ:

— Сирĕншĕн çук пуль те, маншăн — пур. Турра кĕл тусан чун канать, ăш-чик çемçелет. Чун вĕт этемĕн тĕп пурнăç вăйĕ-çке. Турă та малтанхи этем ăшне чун вĕрсе кĕртнĕ вĕт. Чуна ăна канлĕх кирлĕ. Эсир, парти

шăпăрланĕсем, манне те, шăллăмăнне те чуна силлетĕр. Тĕне ĕненекенсене хĕсĕрлеме юраманнине пĕлетĕр, йĕркине хăвăрах пăсатăр.

Ăнланса пычĕ Крутов, унччен çак сынпа питĕ çӳллĕ шайра калаçнă, хăратса пĕтернĕ ăна, анчах ун чунĕ патне кĕмелли вăрттăн çула тупайман. Кунта вара чăтăмлăх, ĕнентерӳлĕх кирлĕ.

— Йăнăшĕ пысăк ĕнтĕ пирĕн. Çынна хисеплес пулать. Эпир ун чухне хамăр юлташа пытарма килмесĕр хамăра хамăр япăх туса хутăмăр. Эсир тархасшăн каçарăр пире. Ятарласа хăтланман. Çаврăнăçу çитменнипе. Тен, пĕрле, сирĕнпе канашланă, калаçса татăлнă пулсан, сире те тек чăрмантарса çӳреместĕмĕрччĕ.

— Вăт, — терĕ Корнилов Оманова пӳрнипе тĕллесе, — ун чухнех каларăм вăрçнăшăн, пуçу пур-и сирĕн терĕм. Тĕрĕс мар-им? Тĕп-тĕрĕс. Ман ахаль ниçта кайса кĕрейми хуйхă, вĕсем пур, тата чĕрене çураççĕ. «Çĕрле хĕресне касса каятпăр» тени райком çыннин сăмахĕ-и? Çынпа, унпа, ак çак юлташ пек калаçма вĕренмелле.

Оманов чалтах сиксе тăчĕ, Çиçĕм çынни хăйне инструктор умĕнче намăслантарнине чăтма пултараймарĕ, тарăхса кăмака патне кайса килчĕ, чĕнмерĕ, каллех турăшсене сăнама пуçларĕ.

— Ку сирĕн аслăраххи пуль тесех персе ятăм-ха, — чеен пăхрĕ Оманов еннелле кил хуçи. — Эсир Турра ĕненекенсемпе мĕнле ĕçленине пĕлтĕр.

Калаçу малалла тăсăлчĕ.

— Пуçлăх-куçлăх мар-ха эп. Оманов юлташпа ĕçлетпĕр, райком инструкторĕ Крутов пулатăп, — хăйпе паллаштарчĕ Максим Максимович.

— Пĕртте инструктор пек мар та, эп «ку обком секретарĕ мар-ши» тесе ларатăп. Юрĕ-ха, хăть ăçтан, кам пулсан та. Çынна ăнланма пĕлни райкомра та, обкомра та пăсмасть. Тĕрĕссипе каласан, мана ку ĕçшĕн никам та хупса лартас çук. Кутăна петĕм мар-и. Хĕресне лартмастăмăрччĕ те пуль, малтанах тутарманччĕ.

Шăллăм вил тăпри çинче хĕрлĕ çăлтăрлă чаплă палăк пулни маншăн та усал япала марччĕ. Çапах вăл коммунист пулнă, райком членĕнче те, бюрора та тăнă. Вунă çул ытла редакторта ĕçленĕ. Сирĕнсĕр пуçне тата ман хамăн ун кăмăлне хуçма тиврĕ. Поссоветран та, сирĕн енчен те сас-чĕв çуккине туйрăм та, хам алăпах юманран хĕрес турăм. Лартрăмăр. Камран хăратăп эп шăллăма çĕр айне чикнĕшĕн? Тăпри çăмăл пултăр. Чунĕ леш тĕнчере ыр куртăр. Атту кунта, çĕр çинче, миçе çул чир силлерĕ.

Оманов иконостаса курса пĕтерчĕ пулас, хыçалалла тытнă аллисене вĕçертрĕ, пӳрнисене шăтăртаттарчĕ, вара Корнилова хыттăн каларĕ:

— Каллех сирĕн çав леш тĕнче. Каллех вилĕмсĕр чун. Пăрахăр пустуй лапăртатма. Коммунизм тăватпăр вĕт. Вăл пур, Турăпа пуçне минретет.

Крутов, шăпланма тесе, ăна куç хĕсрĕ. Пантелеймон Христофорович урăх шарламарĕ, тулалла тухрĕ. Корнилов Крутов куçĕнчен тӳррĕн пăхса ыйтрĕ:

— Идеологсем-ха эсир?

— Çавсем пулатпăр.

— Апла пулсан, начар шухăшлавçăсем. Чиркӳ çыннисем, туршăн та, вăйлăрах ĕçлеççĕ сирĕнтен. Халăхпа ĕçлеççĕ, халăх хушшинче. Пĕр инкек-синкеклĕ çынна та асăрхамасăр хăвармаççĕ. Агитаторсем çиччас çитсе лараççĕ: çынпа пĕрле хуйхăраççĕ, çынна хăйсем майлă çавăраççĕ. Тĕне ĕненетĕп эпĕ, пытармастăп. Тулĕк хам тĕллĕн, хам ăнланнă-пĕлнĕ пек. Халăх хушшине ăна сарма тăрăшман. Чиркĕве те çулталăкра пĕр-икĕ хутчен çеç кайса килетĕп. Арăм ман сăх сăхма кăна пĕлет, ачасем турра ĕненмеççĕ, хам пусахламан вĕсене.

Иккĕшĕ те сĕтел хушшинчен тухрĕç. Максим Максимович тĕн пирки унпа чылай калаçрĕ, витĕмлĕ тĕслĕхсем илсе кăтартрĕ: авалхине те, хальхине те, усаллине те, хитрине те. Корнилов пуçне çеç пăркаларĕ:

— Кирлĕ мар мана агитацилеме. Леонти те нумай вĕрентетчĕ. Кутăн эп. Тарăхрăм ун çине, тем пиркиччĕ,

маннă халь, пăрахрăм итлеме ăна. Кайран йăлăхрĕ пулас, шарлами пулчĕ. Вăл коммунистсен çулĕпе кайрĕ, эпĕ — хам пĕлнĕ çулпа. Турра ĕненеп тесе никама та хур туман ку таранччен. Ĕçре çынран юлман. Патшалăх ыйтнине панă. Хирĕçлемен. Халăхран ютшăнман. Ялан пĕрле.

Оманов пӳрте урăх кĕмерĕ. Крутов та Корнилова ăнланчĕ, сăмах вĕçне каллех хĕреспе палăк çине илсе тухрĕ. Чылай турткалашрĕ, пăркаланчĕ, тутине тăсрĕ, куланçи те турĕ Корнилов, юлашкинчен Крутов хул пуççийĕ çине каска пек аллине хучĕ те, хăлха çумĕнче йывăррăн пăшăлтатрĕ:

— Парăнас килмест. Каялла чакса мăшкăл турамне хыпас килмест. Айăпĕ хăвăртах та çав... Ларттарăр-и апла поссовета чул палăкне. Çăва патне. Тулĕк хĕресне ан тивтерĕр, ан кастарăр. Шăллăма кӳрентеретĕр. Христианин вĕт. Пĕрре аллине хĕрес тыттарнăскер, туртса илер мар ăна. Лăпкăнах, канлех çывăртăр.

Шăрçаланнă куççуль пĕрчисене тутăр вĕçĕпе шăлса илчĕ те Корнилов турăш еннелле çаврăнса сăх сăхрĕ. Унтан вăл вĕсене апатланма сĕнчĕ. Крутов килĕшмерĕ.

Сарайĕнче, уçă çĕрте, тимĕр читлĕх. Шалта самаях пысăк упа çури урлă-пирлĕ кускалать. Хуçине курнипе вăл мĕкĕрсе ячĕ. Корнилов ăна кĕсьерен сахăр катăкĕ кăларса хыптарчĕ те пусĕнчен ачашларĕ. Оманов та упа çурине шоколадлă канфет персе пачĕ. Упа çури ăна çӳлтенех çăвара каплаттарчĕ. Ачашлас терĕ-ши Оманов, аллине читлĕхе чикрĕ çеç, çухăрса каялла сиксе ӳкрĕ, пӳрнине ĕмме пуçларĕ. Корнилов малтанах асăрхаттарайманшăн ӳпкелешрĕ. Юрать-ха малти лаппипе кăна чавса илнĕ, çăвара лекнĕ пулсан алă...

Васли Михалч машинăран аптечка кăларса Оманов пӳрнине çыхса ячĕ.

— Авланиччен тӳрленет.

Ĕç ăнăçлă вĕçленнипе савăннăскерсем кил хуçипе ăшшăн сыв пуллашрĕç, поселок Советне вĕçтерчĕç, палăк лартас пирки калаçса татăлчĕç.

Шофер райком çыннисен калаçăвне тăнласа пырать.

— Юрать-ха вилĕмсĕр чун çуккă, — тет Крутов Оманова. — «Леш тĕнчерен» таврăнса килес пулсан-и халĕ пире, лăпăртисене, Леонтий Корнилович, ай-як тăн кĕртмелле те... Хăйĕн вил тăпринчен мăшкăлланăшăн. Çапла вăл, Пантелеймон Христофорович, çын çине çынла пăхма пĕлмелле...

Райком картишне кĕнĕ чухне Васли Михалч вĕсен калаçăвне каллех татса вĕçлерĕ:

— Мĕнле хĕрес лартаççĕ сирĕн ĕç çине Корниловсем?

«Алла тĕлли-паллисĕр читлĕхе чикнĕшĕн упа çури те айăплать те пире, йĕркесĕр, усăсăр ĕçленĕшĕн халăх мĕнле ятлать-ши?» — тесе шухăшларĕ Крутов.

Тунти кун вăл Оманов алăкĕ çинче пурăпа çырнă хĕрес курчĕ. «Иккĕмĕш планеркăна» пынă çынсем куллнине чăтаймасăр заведующи хĕресе çанă вĕçĕпе, сурчăкпа йĕпетсе шăлчĕ.

## 9

Райкомра юлашки вăхăтра «Кăвакал кӳлли» тени часчасах илтĕнме пуçларĕ. Миловсем вăрманти Явкаланчăк юхан шывне пĕвелесе ун çумне чаплă çурт туса лартнă. Пĕррехинче, аякри колхозран таврăннă чухне, Семен Ильич унта Крутова ятарласах кăтартма илсе кĕчĕ.

Пĕви симĕс кавир çинчи кăвак пĕкĕ пек. Пĕкĕ хĕррине чĕнтĕр çыхнă евĕр хăвалăх ешерет. Капмар çурт тăрринче — ватă пăлан мăйраки. Ун айне ылтăн шывĕпе «Ухутниксен кану çурчĕ» тесе çырнă. Çывăхрах — мунча. Таçта карăк сасси тата шывра пулă шăмпăлтатни илтĕнет. Вĕтлĕхрен вĕсене хирĕç лутра арçын юрласа тухрĕ. Хуралçă иккен — Йăлялов Мирун.

— Салам! Кăвакал пур-и? — ыйтрĕ Быстров.

— Пирĕн хăçан пулман, — сарлака çăварне тата сарса пăрахрĕ Мирун. — Эс килместĕн тесе тĕк татакан çук тетĕн-им? Пур.

Хул пуççи урлă янă михĕрен чăнах та кăвакал пуçĕ курăнчĕ. Каятчĕç те пуль вĕсем, анчах Васли Михалч машинне юсама пуçланă.

— Михĕпе хупласа тытрăм, — мухтанать хуралçă. — Мăйĕсене пăртăм та, шăпланчĕç. Çиччас хурана чăмтаратпăр, пĕчĕк акăшсен ташшине ташлаччăр. Быстров, пулăш, эс выльăх-чĕрлĕх пусса тирпейлеме маçтăрччĕ. Ку тата кам?

— Пирĕн çын, — паллаштарчĕ Быстров.

— Яснă, — терĕ Йăлялов. — Оманов пекки пуль-ха. Пан Христос кашни эрнерех килекенччĕ-ха. Паян та персе çитет ак, Миловпа. Ухутниксен обществине кĕмен-и эсир?

— Çук, кĕмен, шутламан та, — евитлерĕ Крутов.

— Начар. Кĕрес пулать. Паянлăха хăна пулатăр ку творчествăлла канмалли керменте, тепринче билетсăр кĕртместĕп. Сана та, Быстров. Пурин те кĕмелле вăл обществăна. Ташĕ мана та кĕртрĕç. Лартрĕç те çакăнта, билет çырса пачĕç, алла пăшал, сĕреке тыттарчĕç. Шăхран районĕнчен кăвакал чĕппи туянчĕç, комбикорм турттарса килчĕç... Пурăнатăп çапла. Ӳсеççĕ те — шаплаттаратăп. Пĕр пуслăхĕ пĕтиччен тепри ӳссе çитет. Халь, тулĕк, юлмарĕ-ха.

Ӳсĕртерех Мирун алăк уратинчен такăнса кĕчĕ те миххине çĕре ӳкерчĕ. Кавир сарнă урая кăвакалсем тухса выртрĕç. Вĕсене вăл мăйĕсенчен пĕрле çатăрласа тытрĕ те тулалла тухрĕ, мунча еннелле танкăшрĕ. Крутов шурă стена çине сăрланă майрасемпе пăлан пăрушĕсене, ăсансемпе пакшасене сăнать.

— Чаплă, нимĕн те калаймăн. Миçе тенке ларнăши ку кермен?

— Эх, Максим Максимович, — кулать унран Быстров. — Эпир иксĕмĕр ялан пуспа та тенкĕпе шутлама хăнăхнă. Укçа шутне пĕлеççĕ-и вĕсем, хуçалăх пуçлăхĕсем? Пăх-ха çак ӳкерчĕксене? Илемлĕх енчен илсен,

унта нимĕн те çук. Сăрă купи. Таçтан килнĕ халтурщик ӳкернĕскер. Вунă пин тенкĕ тӳленĕ çак пӳлĕме илемлетме. Укçине ниçта чикме пĕлмест пуль çав Милов. Хăйĕн кĕсйинчен пулсан, унашкал асмĕччĕ те. Юрать райпотребсоюзăн, халĕ ĕнтĕ — райпон...

— Тĕлĕнетĕп çавнашкал çынсенчен, — çемçе пукана тӳрлетрĕ Крутов. — Намăс та мар-ши вĕсене халăх умĕнче патшалăх пуянлăхĕпе выляма?

— Каларăн та çав, — ун умне пырса тăчĕ Быстров. — Укçапа выляма хăнăхнă пуçлăх никамран та, нимрен те хăрамасть. Пирĕн — парти ĕçĕ, халăх ĕçĕ. Вĕсен, Миловсен, урăх ĕç — халăха улталасси, халăх тарĕпе пуясси, халăхран куласси. Пĕрремĕш тивĕç вăл вĕсен. Çав тивĕç вĕсен пурнăç тĕллевĕ пулса тăнă. Пĕтĕм япалана, пĕтĕм ĕçе, çынсен мĕнпур хутшăнăвне вĕсем укçапа виçеççĕ, ылтăнпа танлаштараççĕ. Çавăнпа ку кермене капăрлатни вĕсемшĕн эпир пирус илме тăкакланă укçа вырăнне çеç.

Максим Максимович пӳрт ăш-чиккине тепĕр хут тавраллах пăхса çаврăнчĕ. Хаклă йышши сĕтел-пукан, пианино, баян, ĕçмелли-çимелли наборсем тата тем те пĕр... Куç-пуç алчăраса каймалла. Мотор кĕрлевĕ илтĕннипе тула тухрĕç. Чаръннă машинăран Тит Милов сиксе анчĕ, тепĕр алăкĕнчен темле майра тухрĕ. Милов тайкаланса килекен Йăлялова юнарĕ:

— Каллех пăх пек ӳсĕр. Хăçан пăрахан ĕçме?

— Эсир кунта килме пăрахсан, — шофер тăсса панă тулли сумкăна пӳртелле йăтса кĕрсе кайрĕ Мирун.

Хĕрарăмăн çинçе кĕлеткине тăвăртарах кĕпи тата илемлĕрех кăтартать. Утти арçынсен кăмăлне уçаканскер. Вăтăралла çывхараканскерĕн, куç айĕсем йĕрленнĕ пулин те, пит çăмартийĕсем яп-якак-ха, тути хĕрринчен йĕпе кулă çухалма пĕлмест, хăмăр куçĕ палламан арçынсене сăнăлать. Çут çанталăк ытамĕнче киленмелли, чуна кантармалли чиперккех ĕнтĕ.

— Чăвашсоюз ревизорĕ-ха ку, — паллаштарчĕ Милов. — Илсе килсе кăтартас терĕм хамăрăн çăтмах пахчине. Тит вĕсенчен каçару ыйтрĕ те майрана хулĕнчен çавăтса çыран тăрăх йăпăштатрĕ.

Мунча умĕнчи лаçра така хуранĕ çакăнса тăрать. Хурана мĕн кирлине янă хыççăн Йăлялов райком çыннисене пӳрте чĕнчĕ, ирĕксĕрлесех пĕрер черкке коньяк ĕçтерчĕ, хура вăлча çитерчĕ, пĕр кĕленчине пианино ăшне, аяла лартрĕ.

— Ку мана мухмăр чĕртме. Пирĕн пурнăç пыл та çу, хырăм тăрăх шу та шу, — сӳтĕкленчĕ Мирун. — Лĕпĕрти вăл Милов. Суять сире. Нимле Чăвашсоюз майри те мар. Урăх союз. Шăхран районĕнчен вăл — Альбина Аленчикова, культура керменĕнче ĕçлекенскер, — тем аса илнĕн хăлхи тăррине чĕпĕткелерĕ те вăл черккине коньяк ярса ĕçрĕ, вара пĕр мыскара каласа пачĕ.

Тит Милов Аленчиковапа кунта, шăхрансем хăнана килсен, паллашнă. Тепĕр эрнерен Йăлялов патне иккĕшех персе çитнĕ. Мирун пĕверен кăвакал тытса яшка пĕçернĕ çĕре сĕтел тулли ĕçмелли-çимелли хатĕрленĕ. Сасартăк алăк яри уçăлнă та пӳрте самăралма пуçланă майра кĕрсе тăнă. Стена çумне сĕвентернĕ Мирун пăшалне ярса илнĕ те вăл «пурне те, аскăнчăк йыттисене, çакăнтах тĕп тăватăп!» тесе сĕтел патнелле çывхарнă. Урнă хĕрарăм Çĕпĕртен упăшкине шыраса килнĕ Милов арăмĕ пулнине ăнлансан, пăшала ирпе авăрланине аса илсен, Йăлялов сехри хăпнипе пианино хыçне чăмнă. Тит чӳречерен сикнĕ. Альбина çеç, сĕтел урипчен çыхланса, урайне тăсăлса ӳкнĕ. Сиксе ларнă та лешĕ ун çине, ай тӳнĕ, ай тăпăлтарнă çӳçне.

— Аленчикова тухса тарсан Милов хуçяйки, ним тăвайманнипе, сĕтел çинчи апат-çимĕçе шăлчĕ те тăкрĕ. Çавăн чухне вараланчĕ стена çинчи çак çарамас майра. Вăл тухса кайсан эп те арăма аса илтĕм. Мана та килсе кĕрсе тĕк вĕçтерме пултарать вĕт, — кулса ячĕ Йăлялов.

— Мĕн, тупăнкалать-им? — лăхлатса ыйтрĕ Семен Ильич.

Мирун тути хĕррине çулласа мухтанчĕ:

— Хушăран леккелет. Те ытлашши пулать вĕсене, ӳсĕр майрисене çывратса хăвараççĕ. Мана мĕн, ӳсĕрри — урăлать... Пăрахса хăвартăр-ха паян Альбинине? Ха, епле авкаланса утать вăл? Оманов та пăхать те çав ун çине, анчах лешĕ Миловнех савать пулас, Тит Нилычах пĕчĕк акăшсен ташши ташлаттарать. Пианинине тулькка çав майрашăн илсе килсе лартрĕ. Халь кăвакал яшкине йăтса кĕрер те, чĕнер пурне те... шоферсем те çиччĕр.

Кăвакал кӳлли лăпкăлăхра тӳлеккĕн тĕлĕрет. Çыран хĕррипе Миловсем васкамасăр хăпараççĕ. Аленчикова çурма сасăпа савни тунсăхĕ çинчен юрлать. Милов ăна пианино калама хушрĕ. Арçынсем хăйсемех тăрса юлчĕç.

Чӳречерен хавас кĕвĕ панлатса тухрĕ, кӳлĕ тăрăх саланчĕ. Сулахай çыранран шапа сас пачĕ. Пулăсем шывран сирпĕне-сирпĕне тухса ташларĕç. Карăш хăй пуррине систерчĕ. Вĕлтрен кайăкĕсем чăвлатрĕç. Чаккасем чакăлтатрĕç. Альбина çинçе сасăпа уçăмлăн юрлать. Тĕлĕнмелле илемлĕ, чуна çĕклентерекен пĕрлешӳллĕ кĕвĕ вĕçĕмсĕр тăсăлтăрччĕ тенĕ пекех, пурте шухăша путнă.

Шалпар, вăрăм кĕпе тăхăннă хĕрарăм туяпа хăмсарса çывхарнине сиснĕ Мирун эртел хыçне пытанчĕ. Çăварĕнчен хĕм кăларакан хĕрарăм ăна хӳтерсе çырантан сирпĕнтерсе антарса ячĕ. Шампăрт! туни илтĕнчĕ аялта.

— Вил! Кăлармас эп сана пĕверен! — туйипе печĕ Мируна хĕрарăм. — Ман патра суйса çывăрса пурăнтăн та, халь кăвакалсене вăрласа килсе такама кӳптеретĕн-и? Йытă пуçĕ! Çунтарап та ярап ак çуртна. Ултавçă! Мана çакăнта илсе килсе усрап тет. Хăйĕн тата темле якăлти пур, вăн, çухăрать качакалла. Каяп та пĕлтереп милицие. Кăвакал вăррине-и, сана?!

Йӑлялов леш ҫырана ишсе тухрӗ те тунката ҫине тӑрсах хӗрарӑма вӑрӑм чӗлхине кӑларса кӑтартрӗ. Хӑйне витленӗшӗн лешӗ пушшех урса кайрӗ. Васли Михалч машина патӗнче ахӑрса тӑрать. Крутовпа Быстров ним калама аптраҫҫӗ. Милов ҫеҫ пӗр чӗлхе тупрӗ хӗрарӑмпа, кӗсьерен аллӑ тенкӗлӗх укҫа кӑларчӗ те тыттарчӗ хайхискерне. Хӗрарӑм укҫине лӳчӗркесе шыва печӗ.

— Кирлӗ мар мана ним те! Шӑмӑ лартӑр пырна!

Милов тӑрӑшсах тем калаҫать:

— Инке, тата паратӑп укҫине, ме ҫӗр тенкӗ, шӑплан, намӑс ан кӑтарт пире, ак кунта райкомрисем те пур...

— Райкомрисем пур тетӗн-и? Хӑшӗсем? Ҫаксем-и? Ман юлашки кӑвакалсене райком ҫыннисем валли вӑрласа килчӗ-и Мирун? Тӑватӑ ача ман килте, пурте куҫран пӑхса апат ыйтаҫҫӗ, пурне те пӗччен тӑрантармалла-тумлантармалла... Эй, турӑ... Милицине мар, Шупашкарах кайса калап. Машин номӗрне пӗлеп. Сире-и, сире, янкӑсланса ҫӳрекенсене!..

Хӗрарӑм Милов сӗннӗ ҫӗр тенке илсе кӑкӑр ҫумне хӗстерчӗ те шыври укҫана патакпа туртса илчӗ, Мируна ик чышкине хирӗҫ ҫапса кӑтартрӗ. Крутовсем машина патнелле утрӗҫ.

— Тупрӑмӑр та тупрӑмӑр хамӑр валли, — тарӑхса пычӗ Максим Максимович. — Ӑҫтан илсе килтӗн эс, Ҫемен, ку усал вырӑна?

Васли Михалч хуллен «кунти пек чаплӑ вырӑн ҫӑтмахра та пулас ҫук» тесе газ хушрӗ, машина малалла карт! туртӑнчӗ. Шлепкине каялла ӳкернӗ Быстров ахӑлтатсах пуплет:

— Кӑвакал яшки тӑварлӑ пулчӗ. Коньякне тепӗртак ямаллаччӗ хӑть. Ай, Мирун, улахра пулни ҫитмен, инке кӑвакалӗсене пӗҫертсе килнӗ.

— Мӗн ҫитерет тата Миловсене, — терӗ Васли Михалч, — утӑри ҫынсем кӑвакалӗсене тытса пӗтернӗ те.

Хӑй инке патӗнче, кӑвакалӗсем — хуранта. Эсир те инке кӑвакалӗсене пӗҫерме пулӑшрӑр, хамӑр тутанса пӑхаймарӑмӑр. Кам ҫийӗ-ши шӳрпине?

Шофер вӑлтса каланине ӑнланчӗ Крутов, вара шухӑша путрӗ.

10

Ҫапла Кӑвакал кӳлли инкекӗ инке кӑвакалӗсенчен пуҫланчӗ. Милов ӑна улталаса шантарса хӑварнӑ та, хӑй яка тӑрса юлнӑ. Тит Ниловича Саланчӑк хӗрарӑмӗ Вӑрманкасра шыраса тупнӑ, анчах вӑл ӑна нимпе те пулӑшман, райкома тӗллесе янӑ. Ҫав кун тата аялти хутра Оманов ӗҫсӗр аптӑраса тем саркаланса тӑнӑ. Халиччен кӗрсе курман ҫуртра кам патне пымаллине, камран ыйтса тӗпчемеллине пӗлмен инке шӑпах ун аллине лекнӗ. Панхристоф ӑна пысӑк ҫын пулсах йышӑннӑ, кӑвакалсем ҫинчен, килти пурнӑҫӗ пирки тӗпӗ-йӗрӗпех ыйтса пӗлнӗ. Инкен пӳрт юсамалла иккен. Юлашкинчен Оманов хӗрарӑма «кунта нимӗнле йывӑҫ та, хӑма та памаҫҫӗ» тесе ятласах вӑрманпромхоза кӑларса янӑ, юриех. Инке пӗр ҫӗртен тепӗр ҫӗре ҫӳресе ывӑннӑ, ним тума аптранипе Мирун Йӑлялов кӑвакал вӑрлани ҫинчен милицие кӗнӗ те евитленӗ. Пуҫлӑхӗ, шӑв-шава ҫӗклес мар тесе, ҫӑхава хуптарнӑ. Ҫакӑн хыҫҫӑн инке тӗрӗслӗх шыраса райкома тепре ҫитнӗ, Мургаев патнех.

Черетлӗ планеркӑра яланхи пекех эрнере кам мӗн туни ҫинчен пурте пӗрремӗшне пӗлтереҫҫӗ. Мургаев Семен Ильича Ухутниксен ҫуртӗнчи кӑвакал яшки пирки нимӗн те шарламарӗ. Акӑ черет Крутова ҫитрӗ.

— Хӑҫантанпа ӗнтӗ ачасем валли канмалли вырӑн шыратпӑр, — Мургаев еннелле тӳртӗмӗн ҫаврӑнса тӑчӗ Максим Максимович. — Ҫула май Явкаланчӑк улӑхӗнче пулса тӗлӗнмеллипех тӗлӗнтӗм. Ухутниксен ҫуртне шал енчен йӗркене кӗртмелле те пионерсен лагерӗ уҫмалла.

Чӑх! турӗ аллипе тутине хупласа хунӑ Оманов.

— Ай паттăр тĕнчере çĕнĕ çĕр уçакан, ялан ăслă сĕнӳ паракан, хăй вара...

— Мĕн «хăй вара?» — Омановран ыйтрĕ Крутов.

— Парти этикине çӳлте тытатăп тесшĕн, — пуçне çĕклемесĕрех тавăрчĕ Панхристоф.

Яков Сидорович ура çине тăчĕ, пирус кĕлне пӳрни пуçĕпе вĕçтерчĕ, ку вăл унăн шалти пăлхавне пĕлтерет, вара икĕ аллине те кăкăрĕ çумне тытса калаçрĕ:

— Лăпкă, пархатарлă тытасшăн пек кăтартать хăйне Крутов. Акă курăр эп мĕнлине тенĕ пекех майлашă-нать. Пирĕн куçран çухалсан вара хăй тем тума та маçтăр. Ĕç вăхăтĕнче ĕçкĕ-çикĕпе ашкăнма та, хĕрсемпе çӳре-ме те, темле мыскара кăтартма та. Быстровпа иккĕшĕ, туссем, Ухутниксен çуртне иленнĕ. Хуралçăна шӳрпе пĕçерттереççĕ. Кӳлĕре кăвакал та çук, Йăлялов Са-ланчăка вăрлама каять. Хуçи ун хыççăн йĕрлесе ăна пырса тытать. Саланчăк хĕрарăмĕ райком, парти, ком-мунистсем çинчен мĕн кăна павраса пĕтермерĕ пуль. Халăх хушшине сарать вăл çав усал сăмаха. Мĕнле куçпа-пуçпа пырса кĕмелле халĕ пирĕн яла çакăн хыççăн? Намăс пире урама тухма та. Райком ĕçлевçи-сем-и эсир çакăн хыççăн? Çук, райкома, пире вăрă ятне илттерекенсем. Быстровпа иксĕре те райкомран хӳтерсе ямалла, шăпăрпах...

Пуçлăх çине куç айĕн вăкăрла пăхса илнĕ хыççăн Быстров ăнлантарма пуçларĕ:

— Ан тĕлĕнтерĕр-ха, Яков Сидорович! Пире ку-нашкал тăн парса хăртнипе эсир хăвăрăн пархатарлăх-на татах çухатса мĕскĕнлететĕр çеç. Элекçĕсен пыл ка-шăкне çулласа пирĕн çине наркăмăш сирпĕтиччен малтан Крутовпа манран ыйтса пĕлмелле пулнă. Уй куçлă, вăрман хăлхаллă тенине ан манăр. Халăхра ырă ят çӳремест çав çăтмах кĕтесĕ пирки. Пирĕн хăлхана та кĕнĕ вăл, райкома та çыраççĕ, акă вĕсем, — Се-мен Ильич Мургаев умне купипех çыру пырса хучĕ. — Çавăнпа, колхозран таврăннă май, унта кĕрсе хамăр

куçпа хамăр курса ĕненес терĕмĕр, анчах та кĕтмен-туман çĕртен камите лекрĕмĕр.

— Суятăн! — сурчăкне сирпĕтрĕ Мургаев. — Тавлашать тата...

Кун хыççăн Крутов та чăтаймарĕ, сиксе тăчĕ:

— Пире сăлтавсăр айăплама нимĕнле право та çук сирĕн, Яков Сидорович. Ăнланăр, суймасăр, тĕрĕссине калатпăр. Ĕненмесен чĕнĕр апла Васли Михалча. Вăл та суяс çук.

— Эп мĕн, следователь-им кунта?! — пушшех тарăхса кайрĕ секретарь. — Ай ман сирĕн хыççăн тĕрĕслесе-йĕрлесе çӳремелле-и? Тупăннă паттăрсем. Ман факт пур. Эп çавна ĕненетĕп.

Максим Максимович та тĕрĕслĕхпе çиеле тухасшăнах тапаçланчĕ, хăйсем Кăвакал кӳллинче мĕнле пулли çинчен пĕр пытармасăрах ăнлантарчĕ:

— Эпир пынă чухне унта никам та çукчĕ. Кăшт тăрсан Мирун Йăлялов текенскер мишукпа вилĕ кăвакалсем йăтса çитрĕ, Милов апат хатĕрлеме хушнă терĕ. Кĕç Тит Нилович темле хĕрарăма ярăнтарса çитрĕ...

— Пуçанасем каллех тĕл пултăр-и? Лешне, хăвăнтан туртса илнĕ чиперккине мар-и? — йăх-йăх кулчĕ Панхристоф.

Крутов ăна хуравламарĕ, куç хĕлхемĕпе çеç сапса пуçне чиктерчĕ, хăй малалла каларĕ:

— Васли Михалч моторне сипленĕ хыççăн эпир лартăмăр та килтĕмĕр. Вĕсем унтах юлчĕç. Айăпсăр хĕсĕрлетĕр пулсан, сире, Яков Сидорович, куçранах калама тивет: пире мар, хуçалăх пуçлăхĕсене чарасчĕ Ухутниксен çуртĕнче асма. Çапах та, ачасен канăвĕ пирки те манас марччĕ.

— Шофер машина сипленĕ чухне сире хăвăра кам сиплерĕ? Йăлтах паллă, пытараймăр. Çын çине йăвантаратăр-и тата? Сире, сире... пухура итлетпĕр! — тарăхнипе шăрпăкне чĕртеймесĕр хăшкăлчĕ Мургаев.

— Вăт, вăт, унта уççăн калаçăпăр, — сĕрсе ларчĕ Оманов, — вăйлăрах айăплăпăр.

Крутов сиввĕн пăхнине чăтаймасăр Панхристоф шăпланчĕ, урăх çавар уçмарĕ.

11

Саланчăк хĕрарăмĕ сăмахне çилпе вĕçтерекен çын пулман иккен. Вăрманкасри вĕçленменункă тăрăх чупса ывăннăскер, тарăхнипе тытнă та çырнă Шупашкара. Сăмах купипе пӳрт юсаяс çуккине туйнăскерĕн çăхавра сăрмакламалли тупăннах. Ара, инке тӳшекĕ çинче кăвакал мамăкĕ вĕрсе выртнă вăхăтра Мирун сахал мухтаннă-и Ухутниксен çурчĕпе? Йăлялов юмахĕ çăхава пуянлатнă.

Акă мĕншĕн хуралçă пăтратнă кӳлĕ час тăрăлмарĕ. Мирун еркĕнĕ кăларнă çил-тăвăл та чылайччен çырана кăпăклă хум сапрĕ, унта канма иленнĕ çынсен питкуçне самаях уçăлтарчĕ, пурнăç мухмăрĕнчен урăлтарчĕ.

Обком инструкторĕ Хиркин çăхава кăкăр кĕсйине чиксех илсе килчĕ, тӳрех оргĕç пайĕн пуçлăхĕ патне кĕчĕ. Быстров ăна ыталасах илчĕ. Чулхулара пĕрле вĕреннĕскерсем, пĕрне-пĕри тăван пекех хăнăхса çитнĕ. Калаçăвĕ те вĕсен шӳтпе пуçланчĕ:

— Çимун-Çимунушка. Мухтанчăк эс. Партшкулта чухнех чĕнеттĕнччĕ хăвăр пата, вăрман çăтмахне, вĕренсе те пĕтертĕмĕр, ĕçлетпĕр, пурăнатпăр, ку таранччен те пулса кураймарăмăр унта. Кам айăплă-ши уншăн?

Быстров аслати пек хăлтăртатрĕ:

— Çăтмаха, инструктор юлташ, сирĕн те унта, Шупашкарта, обком секретарĕсемпе бюро членĕсене çеç, арăмĕсемпе пĕрле, кĕртеççĕ тенине илтнĕччĕ, обкомпа Совмин тата Аслă Канаш президиумĕн пуçлăхĕсем валли ятарласа лавкка тытса тăнине те пĕлетпĕр. Советсен çуртĕнче столовăйĕ те виçĕ тĕрлĕччĕ вĕт: çӳлтинче чи çӳлтисем чи чаплă апат-çимĕçне яплаттараççĕ, вăтамминче вăтам шайрисем кĕптĕртеттереççĕ, аял хутĕнче сирнешкеллисем — чи аялтисем — чи юлашкине пуçтараççĕ мар-и...

— Тěрěсех, ăçтан пěлетěн эс вăл вăрттăнлăха?

— Халăх çăварěнчен илтетěп. Çапла вăл пурнăç тени, инструктор юлташ, çăтмаха унта кашнинех кěртмеççě çав. Пирěн, иксěмěрěн, çулě — тамăкалла. Кунта та, унта та пěрех лекмелле пире. Ма васкан унта эс? Чěнмен-çке эп сана. Чěнетěп — килетěн.

— А эс, Çимун, манман-и, чěнмен хăна тутартан та усал тенине? Эп паян — чěнмен хăна. Хам ирěкпех каятăп та куратăп.

— Чěнмен пулсан та эс чаплă хăна-ха. Çапах, тусăм, Кăвакал кӳллипе хуçаланма ман влаç çук. Уççийě Мургаевра.

— Эх, хăçан пулăн эс район çăтмахěн патши. Мěн, пěр вырăнта кăмсăкланса ларма вěренмен пуль? Ай Майловсем пек пěр пукан çинчех çěр шăлавар çěтме шутлатăн?

Тусě пит чеен куç айěн пăхнине, тем пытарнине сисет-ха Быстров, анчах ыйтмасть, вăхăт çитсен пěлтерессе кěтет, вăлта-вăлта калаçать:

— Тупрăн та эс, Василий Николаевич, кампа танлаштармаллине. Майловсемпе Омановсем вěсем çěр мар, пин шăлавар якатиччен та ларма хатěр пуль пěр пукан çинче. Вěсем хăйсен мěнпур пултарулăхне, чеелěхне, хěрӳлěхне çав пукана сыхласа хăварассишěн кăтартаççě. Эс пур, тěлěкре те ěçрипе аташса выртатăн. Тăратăн та, райкомалла хăюллăн утатăн, пуçра тěллевлě шухăш — уçă шухăш. Кăмăл та тулăх. Унта-кунта чупатăн, хушăран пӳлěмре те пăчăхса ларатăн — пурпěрех савăк. Мěншěн тесен хăвăн вăйна, ăсталăхна, пěлӳне туятăн, шанатăн, чăннипех ěçе кӳлěннине куçупа куратăн. Ěçě тамăкри пек йывăр пулин те, хамăра хамăр тамăкра тесе шутламастпăр.

— Çăтмахра тесе шутлатăр-и Крутовпа иксěр?

— Çăтмахра пулмасăр ара, рай пахчинчех. Майловсем лере хăть те ăçта лекчěр, çěр çинче вěсем пурпěрех чěр тамăкра. Пултарайман, вăй çитереймен, шăл витереймен ěç вěсемшěн сăмала хуранěнче вěренě пекех

туйӑнать пуль. Хамӑн влаҫ пулсанах эп унашкаллисене кашнине хӑй пултарнӑ ҫӗре лартса тухмалла та... Майлова — ирӗклӗ пушар обществине ертсе пыма, Оманова — тумтир ҫакса илсе панӑ ҫӗре.

— Каларӑн та ҫав, — кулса ячӗ Хиркин. — Чее тилӗ вӑл пуш аслӑк тӑрринче те чӑх тукмакки тупать. Пуҫлӑх пулас пулсан та Оманова гардероб таврашне ан ярах, атту пальто тӑхӑнтартнӑшӑн тӳлесе выҫӑ тӑрса юлан. Юрӗ шӳтлесе, ак ҫакӑнпа паллаш-ха, — хӑна кӗсьерен хуҫлатнӑ хут листи кӑларса Быстрова тыттарчӗ.

Ҫӑхав вулакан Семен Ильичӑн сӑнӗ улшӑнса пычӗ, сулахай пит ҫӑмартийӗ чӗтренсе илчӗ. Вуласа пӗтерчӗ те аллипе шап! ҫапса хучӗ хута яка сӗтел ҫине. Сывлӑш хумӗпе сунчӑкри чӗлӗм кӗлӗ аяккалла сирпӗнчӗ.

— Нда, — пуҫне кӑтӑрт-кӑтӑрт хыҫрӗ Семен Ильич. — Ҫӗр ҫинчи ҫӑтмах ӗмӗрлӗх мар иккен. Ун пахчине кӗме ҫеҫ лайӑх, тухнӑ чухне пылчӑк ҫыпҫӑнать.

Ҫӑхава Хиркин виҫӗ хут тӗрӗслерӗ. Ӗҫе вӗҫне ҫитерчӗҫ. Ыйтӑвӗ ытла та кӑткӑс. Кама айӑпламалла Кӑвакал кӳллишӗн? Кӳллине те, ухутнисен ҫуртне те Милов хуҫалӑх пуҫлӑхӗсемпе пӗрле пӗвелеттернӗ-каплантарнӑ. Ячӗ халь райкома тивет. Вӗсен такамшӑн кӑвакал шӳрпи ҫимелле.

Райпо председателӗ Милов, ӗҫ ӑҫталла кӗрсе каяссине малтанах сиснӗскер, шывран яланхи пекех типӗ тухма тӑрӑшрӗ. Вӑл ӑнлантарнӑ тӑрӑх, ухутниксен ҫуртне тунӑ ҫӗре никама та ӗҫ вӑхӑтӗнче хӗсӗрлесе яман, унта стройматериал тӑкакламан. Ухутниксен обществинче тӑракансем канмалли кунсенче хӑйсен ирӗкӗпе ӗҫленӗ. Пианинине Милов хӑйӗнне килсе лартнӑ имӗш. Йӑлялов ӑҫтан, камран шалу илсе тӑни те паллӑ мар. Ӑнлантару хутне ҫырма пӗлнӗ вара: «Эпӗ, Йӑлялов Мирун, ухутниксен ҫуртне чӗре хушнипе, ухутниксен обществин уставӗ ыйтнипе, хам ирӗкпе пӑхса тӑратӑп, кӳлӗри кайӑк кӑвакалӗсемпе, вӑрман ҫимӗҫӗпе, уҫӑ сывлӑшпа сывласа тӑранса пурӑнатӑп. Ухутана тата

пулла килекен çынсем хӑйсене йӗркеллӗ тытаççӗ, пурнӑç картӗнчен иртмеççӗ».

Явкаланчӑк юхан шывӗ хӗрринче мӗнле ухутниксен çурчӗ капӑрланса ларнине, кӳлӗре ылтӑн пулӑ кам тытнине, кӑвакал тукмакки кам кӑшланине Мургаев лайӑх пӗлет. Унта вӑл хӑй те хӑнасене сахал мар йышӑннӑ. Унтан хӑйӗн те тухас килмест. Çавӑнпах-и, тен, вӑл сӑмаха аяккалла, аяккалла пӑрать, айӑпне йӑлтах Миловсен киммине купалать. Çакна итлесе ларакан Крутов чӑтаймарӗ.

— Айӑпне кунта кӳлӗ тӗпӗнчи ахах пӗрчине шыранӑ пек шырама кирлӗ мар, — терӗ вӑл çирӗппӗн. — Хӑвӑртах вӑл айӑпӗ, Яков Сидорович!

Мургаев сӗтел çинелле чикнӗ пуçне ялт! çӗклерӗ, тӑма хатӗрленчӗ, хыçалалла тӗшӗрӗлсе пуканне нӑйӑклаттарчӗ, сулахай аллине пирус пачки еннелле шутарчӗ, «Мӗнле-ха капла, инструктор ӑна хирӗç калама хӑять?» тенӗн тутине пӑркалантарчӗ.

Максим Максимович, хӑйне никам та чарса лартманнине кура, хӑюллансах пычӗ:

— Çапла, Яков Сидорович, кӳлӗ историйӗшӗн чи малтан эсир айӑплӑ. Картран вӗçертнӗ япала халӗ бумеранг евӗр сире хӑвӑрах каялла пырса çапрӗ.

Куçа тӗтӗм пек çиекен сӑмахпа хӑлтӑкланнӑ Мургаев чӗртнӗ пирусне хыттӑн пусса сӳнтерчӗ те хирӗç тавӑрса хучӗ:

— Çынна айӑплама кашниех пӗлет-ха, хӑвӑр айӑпа çеç йышӑнмастӑр. Быстровпа иксӗре тӳрех выговор парса кӑларса ямаллаччӗ те çав хӗрарӑм кӑвакалӗсене пусса çинӗшӗн... Уçӑ кӑмӑла пулах айӑпне хам çине илеп. Парасса ирӗкне панӑ ӗнтӗ хуçалӑх пуçлӑхӗсене. Ман Миловсемпех ӗçлемелле-çке. Район хуçалӑхӗн аталанӑвӗ вӗсенчен нумай килет. Канччӑр-и, савӑнччӑр-и, ӗçпех касӑлса ан пӗтчӗр тетӗп-çке тепӗр чухне.

Обком инструкторӗ Хиркин хушша кӗчӗ:

— Тӗрӗсех те пуль пӗр енчен, чӑн та, вӗсемпе ӗçлемелле, вӗсемпе пӗрле пурӑнмалла, хуçалӑх пуçлӑхӗсен

куçĕнчен те пăхма тивет, паллах. Яланах халтăр хушупа та, хăратупа та алла илме çук вĕсене, чееленме те, урăх сĕреке карса тытма та тивет. Анчах вăл тактика меслечĕ кăна. Унашкал мелпе усă курни пĕртте вĕсене йăлтах ирĕке ямаллине пĕлтермест. Вĕсенчен çирĕпрех ыйтмалла, йĕркесĕр çул çине кĕрсе кайма памалла мар. Çавăнпа эсир райком пусĕнче. Эп астăвассах хăçантанпа пионер лагерĕ тума хатĕрленетĕр, Миловсене укçа уйăрса пама ӳкĕтлетĕр. Унта валли ытлашши укçа çук вĕсен, «курорт» тытса тăма тем те пур. Мĕншĕн тесен çав рай кĕтессине эсир хăвăр валли çавăрнă... Быстровпа Крутова айăплама нимле сăлтав та çук. Вĕсем унта ăнсăртран çитсе кĕнĕ çеç. Çав пĕччен хĕрарăм пек чухăн çынсене тулăх пурнăç туса парассишĕн çунмалла пурин те, çакăнта лараканскен. Пирĕн тĕп ĕç тĕллевĕ çавă вĕт.

Мургаев хыттăн ӳсĕрсе илчĕ те ура çине тăчĕ, вара чӳрече еннелле утса кайрĕ, Хиркин çурăмĕ хыçне пулчĕ, лешĕ çаврăнса сăмахне хытарсах пычĕ.

— Çапла вăл халăхран уйрăлни, мăн кăмăлланса çӳлтен чарлан пек пăхни. Халăхран мала ан иртсе кай, халăхран кая ан юл тесе ахальтен каламан çав. Эсир халь мĕн тăватăр? Халăх панă влаçпа усă курса хăвăра хăвăр мăнăлатса, ӳстерсе ылтăн-кĕмĕл кăшăлпа кăшăллатăр, мăн кăмăлланатăр. Авалхи хуçалла тытма хăтланатăр. Район губернаторĕ пулмалла мар ĕнтĕ райком секретарĕн. Тĕслĕх шырама аякках каймăпăр. Акă сирĕн хушăра бюро членĕ, райпори гараж механикĕ Иванов юлташ ларать. Мухтава тивĕçлĕ çын. Милов та, ун хуçи, юнашарах. Иккĕшĕ те пирнешкел çынсемех, пĕр çĕртех ĕçлеççĕ, тăрăшаççĕ тейĕпĕр. Анчах та... Иванов Явкаланчăк шывĕнче пуллине вăлтапа тытать, ухутниксен керменĕ çине ăмсанса пăхса иртет. Милов вара Йăлялсем сĕрнĕ пулла ылтăнланă тарелкăран ылтăн вилкăпа суйласа çиет, ухутниксен çуртĕнче пĕç тăратса выртать, хитре майра-еркĕн каланă кĕвве итлесе чунне кантарать. Ивановсем улттăн икĕ пĕчĕк пӳлĕмлĕ хват-

терте пушаланса пурӑнаҫҫӗ, Миловсем — виҫҫӗн ҫитмӗл пилӗк тӑваткал метрлӑ капӑр ҫуртра. Тит Нилович патшалӑх шучӗпе ятарласа уйрӑм ҫурт, мунча, сарай, гараж ларттарнӑ, садра тепӗр кермен тутарнӑ. Николай Иванович черетре вуннӑмӗш вырӑнтан тӑватӑ ҫул малалла куҫаймасть. Миловпа Иванов хваттерӗсене улӑштарма вӑй ҫитерекен пур-ши ҫакӑнта? Ҫук. Мӗншӗн тесен пурте эсир Яков Сидорович куҫӗнчен пӑхатӑр. Мургаев юлташ вара Иванов коммуниста мар, Милов коммунистах хӳтӗлет. Мӗншӗн тесен механик ӑна нимӗн те туса пулӑшса параймасть, райпо председателӗ вара — пӗрремӗш секретарӗн пурнӑҫ склачӗ, бази. Иванов та пурӑнать, Милов та...

— Кӗскенрех, — ыйтрӗ Яков Сидорович, — юмах ҫапма пухӑнман, ку сӑмахсемшӗн хурав тытмалла пулса ан тухтӑр. Василий Николаевич, сирӗн те, пуҫлӑх пур. Философилле калаҫусӑрах вӗҫлӗпӗр ыйтӑва.

Сӑмахне тӑсса янине хӑй те ӑнланчӗ пулас Хиркин, каҫару ыйтса ҫапах та шухӑшне вӗҫлемесӗр чарӑнмарӗ.

— Милов ҫеҫ ҫапла пурӑнать-и Вӑрманкасра? Кашни пуҫлӑх, Мургаев юлташран пуҫласа ДОСААФ райкомӗн председателӗ таранах уйрӑм кермен ларттарнӑ. Пурте нумай хваттерлӗ ҫуртран, халӑх куҫӗнчен тараҫҫӗ, сад ӑшне чӑмаҫҫӗ. Вӑл — хуҫа-ҫке, вӑл — ытти сенчен уйрӑмрах, вӑл — пуринчен те вӑйлӑрах. Ҫавӑнпа эсир, пӗр енчен халӑхран иртсе кайса каппайланатӑр, тепӗр енчен илсен, халӑха хисеплеменнипе, унран кая тӑрса юлатӑр. Вӑхӑт ҫитсен вара сире халӑх хӑйпех танлаштарать. Паянхи ыйту Кӑвакал кӳлли пирки кӑна мар, коммунист, пуҫлӑх, ҫын тивӗҫӗ ҫинчен. Сире ӗҫ халӑхӗ чӑннипех влаҫ пачӗ пулсан, ӑна парти хушнӑ пек, пурнӑҫ ыйтнӑ пек халӑхшӑн, ҫутӑ пуласлӑхшӑн хӑлӑхлӑ тивӗҫпе тытса пырӑр, унпа тӗрӗс усӑ курӑр. Яков Сидорович, эпӗ ӗнтӗ обком секретарӗ мар, инструктор ҫеҫ, ҫӑхава тӗрӗсленӗ май шухӑша кайнӑ пирки, сире юлташла, совӗҫ хушнипе асӑрхаттарас

терĕм. Ан кӳренсемĕр. Ухутниксен çуртĕнчен вара, сире Крутов юлташ хăйсем унта кĕрсе тухнă хыççăн сĕннĕ пекех, малашне кану пансионачĕ, çулла пионер лагерĕ тумалла пулать пуль.

Кăвакал кӳллишĕн Мургаевăн пичĕ хĕрелчĕ, чунĕ тарăхрĕ. Милова выговор пачĕç, Оманова, райпори парторганизацишĕн хуравлă пулнăран, асăрхаттарчĕç.

Янкăр уярччĕ вăл кун. Хĕвелĕ, Вăрманкас тăрринче пĕр пĕлĕт татăкĕ çуккипе усă курса, никама та ним хĕрхенмесĕр çунтарать. Килпетлĕ çынсем пĕрерĕн-икшерĕн саланма пуçларĕç. Миловпа Оманов пĕрле утрĕç. «Выговор тени хăнăхнă япала-ха пирĕншĕн, паян параççĕ те, ыран снимать тăваççĕ. Пите те хĕретмест, усал чир пек çумма та çыпçăнмасть, сывлăшри сăмах. Милов çĕр выговор илсен те пурпĕрех сирĕнтен пин хут чаплă пурăнать», — шухăшларĕ Тит. Урамра Оманов унăн шаклаланма пуçланă шĕвĕр пуçĕ çине хăйĕн улăм шлепкине лартрĕ.

— Пĕлетпĕр сана камне. На, тăхăн, атту хĕвел çунтарса çапса антарĕ. Парти ĕçлевçисенчен мар, хĕвелтен сехĕрленетĕн эс, çӳлти хăватлă вăйран. Сан хулăн тирне никам та витерейместь, хĕвел çеç... Авă, тепĕр хĕвелӳ, официантку, ресторан умне хирĕç тухса тăнă. Епле çиçет?

— Ман пикесем çине кушак аçи пек ан пăх, Паня, — пӳрнипе юнарĕ ĕçкĕ тусне Милов. — Çын хыççăн кĕпе чĕнтĕрĕпе те выляс килмест.

— Ман тата мĕн тумалла-ши? — пулă куçĕсене çаварттарчĕ Панхристоф. — Альбинăна кам сĕтĕрсе çӳрет Кăвакал улăхне. Эс мар-и? Эс — Титок. Качча илесшĕн эп ăна, пĕлетĕн-и, арăм тăвасшăн Аленчикована. Ман та хитре майрапа Вăрманкас çыннисене тĕлĕнтерсе саркаланса çӳрес килет. Ман вара эс ишнĕ кӳлĕре шапа пăттипе çăрăлса ишмелле-и? Тархасласа ыйтатăп: чарăн. Хĕрхен мана. Халăх умĕнче намăс ан кăтарт.

Йăх-йăх кулакан Милов умри хĕвелне пилĕкĕнчен тытса ассăн сывлаттарчĕ те:

— Ак сана валли арăм, ытала, килĕшсен — кĕçĕрех парса яратăп, Альбинăран вунă хут çӳлĕрех ывăтать, — тесе иккĕшне те алăкран тĕртсе кĕртсе ячĕ.

Вăл вăхăтра Мургаев хура «Атăлĕпе» килнелле вĕçтерчĕ. Майлов пӳлĕмне питĕрĕнсе ларчĕ те, Милов лартса хăварнă пилĕк çăлтăрлă коньяк кĕленчине уçрĕ, сĕтел сунтăхĕнчен шăрттан кăларса апатланма пуçларĕ. Аш-какай комбиначĕн хуçи ăна какăричченех тăрантарать. Посадкина çĕвĕ мастерскойне хăшăлтатрĕ. Çитес эрнере Вăрманкаса унăн çамрăклăх еркĕнĕ килмелле. Чунтан юратнă, ылтăн картлашка пăрахса панă пуçлăха юмахри пек капăр тумпа кĕтсе илесшĕн-çке вăл. Юрату романне Кăвакал улăхĕнчи çăтмахра месерле выртса тепĕр хут çĕрĕпе чарăнмасăр вуласан, тен, вăл ăна кӳмеллĕ урапапа аслă хулана яланлăхах хăй çывăхне илсе каять. Вăт кăтартĕччĕ те вара ун чухне Быстровпа Крутова хĕвел ăçтан тухнине. Çулăмлă шанчăкпа пурăнать Василиса Матвеевна. Вьюнов Шăхран райялуправленийĕн пуçлăхне кĕтсе илме чиккеваскарĕ. Волков лару таврашне пит юратмасть те, юлашки ыйту пĕтсенех пуринпе те сыв пуллашрĕ, «ман ялта ĕç мăй таран» тесе алă сулса хăварчĕ.

Быстровпа Крутов Шупашкар хăнине юлашки автобуспа ăсатаççĕ. Тусĕпе шӳтлерех калаçса пынă май вĕсен хуçăк кăмăлĕ уçăлчĕ.

— Кăвакал кӳллинче шыва кĕреймесĕрех, çăтмахра пулă тытса кураймасăрах каятăн ĕнтĕ, — терĕ Быстров.

— Тĕрĕсленĕ чух куртăм: тĕпсĕр кӳлĕ вăл сирĕн, — кулчĕ Хиркин. — Авăрлă кӳлĕ. Кĕме те хăрушă. Çынна кăна мар, карапа та çăтĕ вăл. Ан чăмăрах унта, таса тытăр хăвăра.

Автобус тапранчĕ. Урам тулли тусан, сывлама çук. Вĕсем вокзал çумĕпе пăрăнса чукун çул хĕрринчи сукмак çине тухрĕç. Кунта уçăрах, пуйăс иртсе кайнипе сывлăш хумханчĕ, çан-çурăма кăштах уçăлтарчĕ. Вĕсене Нухратов хăваласа çитрĕ.

— Калаçмалли пур-ха сирĕнпе, — терĕ вăл вăрман хӳттине çитсен.

— Мĕн тата? Итлетпĕр, — ватă çăка çумне таянчĕ Быстров.

Шухăшне малтанах хатĕрлесе хунă тухтăр нумаях кĕттермерĕ, «килти пирки-ха» тесе хăрăк турата пусса хуçрĕ. Крутов куçĕ умне халĕ хăйсем çине ыйтуллăн пăхакан Нухратов вырăнне идейăпа скальпель вăйĕ пирки тавлашакан хирург тухса тăчĕ. Ун чухне Валерий Гаврилович пит хăюллăн хăпартланатчĕ, халĕ вăйсăррăн хашлата-хашлата калаçать:

— Операци хыççăн спирт та ярса пăхрăм, пурпĕрех нервăсене лăплантараймастăп, хама хам алла илейместĕп. Пуç арпашăнчĕ. Икĕ главврач — икĕ начальник — ман чуна çиеççĕ. Горячевпа пирĕн институтра вĕреннĕ чухнех истори пулнăччĕ. Грета Виталий Арсентьевичпа çӳретчĕ, юлашки курсра ăна пăрахса манăн арăм пулса тăчĕ. Горячева унран çие юлнă тепĕр студентка ирĕксĕр качча тухрĕ, арăмне вăл çавăнпа юратмасть. Эпĕ Гретăна юрататăп, хам çумран çухаласран хăратăп. Виталий Арсеньтьевич ман арăм çине ăмсанса пăхнине тахçанах туятăп, сисетĕп. Командировкăсене пĕрле çӳреççĕ, ăна хăнана пĕрмаях чĕнет. Вăрттăн шухăшлă вĕсем. Тем тесен те иккĕшĕн хушшинче темскер пурах. Пысăк хирĕçӳ пуласран та шикленетĕп. Хамăр парторг та, райкомри Оманов та вĕсене хӳтерсех кандидата кĕртрĕç, çулталăк вăхăчĕ çитсен тархасшăн çавсене партие ан илтерĕрех.

Майĕпен вĕсем кил еннелле утрĕç. Хура пĕлĕтсем капланма пуçланăччĕ, вăрман шавĕ вăйланчĕ. Крутов кӳршине лăплантарса пычĕ:

— Кунта сирĕн хăвăрăннах пĕр чĕлхе тупмалла. Килти кукăле юлташна, ют арçынна çиме ан пар. Кĕреш. Çĕнтер. Ку историре, темле, скальпель пулăшаймĕ. Ак сана тĕп шухăш, идея, тупсăмне туп.

Вĕсем хăйсен çурчĕ патне çывхарнă тĕле чӳрече умĕнче васкавлă пулăшу машини чарăнчĕ. Алăкран Грета Родионовна пăркаланса анчĕ, тулли сумкине йăтса

арçынсем умне пырса тăчĕ. Нухратов арăмне Максим Максимович ку таранччен витĕр куçпах пăхманччĕ, халĕ, упăшкин иккĕленӳллĕ сăмахне илтнĕ хыççăн, пуçра сăнаслăх шухăш çирĕпленчĕ, унра вара вăрттăнлăх, туртăмлăх паллисем шырарĕ.

Çук, Грета никамран та ытлашши чаплă хĕрарăм мар ĕнтĕ. Çамрăк кĕлеткинче вăйлăх хусканăвĕсем, чăваш хĕрарăмĕн мăкăллĕ пит çăмартиййĕсем, лапчăкрах сăмси, шупкарах сăрăпа хитрелетнĕ хулăнрах тута хĕррисем, куçĕ... Аха, куçĕ ясарлăх хĕмĕ сапать. Тен, çав хĕм, çунтаракан, сӳнме пĕлмен тахçанхи хĕм Горячев хĕвне кĕрсе ӳкнĕ? Çынăнне пĕлме хĕн.

Çумăр шапăртатнипе пурте подъездаваскарĕç. Çиçĕм куçа çиет, аслати чарăнмасăр кĕрлет.

Борьăпа амăшĕ тутлă ыйха путрĕç, Макçăм çывăраймасть. Куç умне манăçа тухма пуçланă Лина таçтан муртан сиксе тухрĕ. Кĕпе çумалли кĕпер çинче çара урисемпе лĕп шыва шăмпăлтаттарса ларакан, Кирилловсен килне илĕртсе кĕрекен, вĕри кĕлеткипе çунтаракан, уйри утмăл турат вырăнне тăрса юлнă Лина. Хăлхана хăмăшсен чăшăл-чăшăл сасси кăтăкларĕ. Тур çырманах пуль çав вĕсене пĕрле пурăнма. Тен, Грета Родионовнан ясарлăх хĕмĕ те чи малтан Виталий Арсентьевича çунтарнă... Çынпа çын хушшинчи вăрттăн туйăма ютти туйсан та пĕтĕмпех ăнланса пĕтмест, икĕ чĕре çеç пĕр çулăма пĕрлештерсе çирĕп шухăшпа сӳнтерме пултараççĕ ăна.

Çĕрĕпе алхасрĕ çут çанталăк, çĕр çинчи мĕнпур усал-тĕселе çапса-çунтарса, шывпа юхтарса ярас пек кĕрлерĕ. Кăвак çутăпа тин тӳпе тасалчĕ. Çĕнĕ ир — хĕвеллĕ ир пуçланчĕ.

Максим Максимович ĕçе пынă чухне аякранах Оманова асăрхарĕ. Вăл яланхи йăлапа аллисене хыçалалла тытса райком çурчĕн картлашки çинче тăрать. Темле кулăш калас пек тутине епрестнĕ. Пантелеймон Христофорович, алă тытнă май, чăнах та Крутова çĕрлехи çĕнĕ хыпарсене пĕлтерчĕ:

— Çĕр каç Хуракас чиркӳне, ухутниксен çуртне аçа çапса çунтарса янă, Явкаланчăк кӳлли вăйлă шывпа татăлса кайнă. Ĕнер бюрора пустуях çур кун чакаланса лартăмăр. Вăт епле пурнăç, Максим Максимович?

— Чăнах-и?

— Сăх сăхса кăтартас-им сана? Çуккă халь чиркӳ, пĕлетĕн-и, çуккă. Пĕтнĕ, кĕл пулнă, сывлăша вĕçнĕ. Ĕçлеме те çăмăлланать пире. Атеизм пропагандине çĕклетпĕр. Кансĕрлекен çук. Турри хăех пулăшрĕ.

Крутов ăна итле-итле пуçне пăркаларĕ:

— Ытла ир хĕпĕртеместпĕр-ши? Чиркӳ çурчĕ çунса кайни тĕне пĕтерни мар-иç вăл? Чиркĕвĕн çыннисем юлнă. Çырлахса алă усса ларĕç-ши вĕсем? Чиркӳ кăмрăкĕпе кĕлĕ çумĕнче пурпĕрех тĕн сĕрĕмĕ явăнать. Кам та пулин ăша туртса илетех ăна. Тĕн-тĕшмĕш сĕрĕмне ĕненекенсен ăшĕнчен вĕрсе кăлариччен шур сухаллă та пулăпăр-ха. Тем, халăх çав имлĕ сывлăшпа ытларах та ытларах сывласшăн.

— Ничево! — ывăç тупанĕсене сăтăрчĕ Оманов. — Турра хамăр ĕненмесен те çут тĕнчере пире пулăшакан вăй та пур иккен. Пурнатпăр халь, аптрамастпăр.

«Пурнатпăр çав хамăра аçа çапиччен», — ăшĕнче кулса пӳлĕме кĕрсе кайрĕ Крутов.

Çав эрнерех Оманов, Мургаев хушнипе, Хуракаса васканă. Колхозпа ял Совет пуçлăхĕсене юнашар лартать. Чĕнтереççĕ хайхисем «двадцатка» членĕсене, хăрата-хăратах чиркӳ канашĕнчен тухма ыйтса çыртараççĕ. Пупĕ, пушартан сыхланса юлнă пĕчĕк пӳрт чӳречинчен кула-кулах, алă сулсах ăсатать Оманова, хыççăнах Шупашкара çăхав çырать. Тĕрĕслӳ хыççăн ыйтăва райком бюровĕнчех сӳтсе яврĕç. Оманова выговор, Хуракас ял Совет ĕçтăвкомĕн председателĕпе колхоз пуçлăхне хаяр выговор туянтарчĕç.

Чиркӳ çыннисем çывăрмарĕç, туххăмрах вăрмантан йывăç кăларчĕç, кĕлĕ çурчĕ турĕç те лартрĕç. Чиркӳ

канашне ҫӗнӗ ҫынсем суйласа тата вӑйлатрӗҫ. Пуп, «аҫа ҫапнӑ» райком идеологӗпе ял пуҫлӑхӗсенчен ихӗре-ихӗрех, кадилӑпа чун уҫҫиллӗ сӗрӗм сарать. Ҫынсем туртӑннӑҫемӗн ытларах туртӑнаҫҫӗ унталла.

Мӗншӗн? Максим Максимович пӗлӳ шайӗпе те, туйӑмӗпе те, этемлӗх аталанӑвӗн хирӗҫ тӑрӑвӗнче мӗнле вӑйсем ытларах ҫӗнтерсе пынине пуҫра шӗкӗлчесе чӑнлӑха ӑнланма пултарнипе те унӑн хуравне ӑнлантарса пама пултарать. Вырӑссем, ҫав вӑхӑтрах чӑвашсем те, хӑйсен авалхи тӗнлӗхне ҫухатса ют хӑвата ӗненме пуҫланӑранпа пин ҫул ытла иртнӗ, коммунизм шевли вара ҫӗр ҫул та йӑлкӑшаймасть-ха умра. Ҫын ӑшне тарӑн кӗрсе вырнаҫнӑ, ӑс-тӑна ҫапса ларнӑ, шухӑшлавра ҫирӗп ӗненӳлӗхпе пулӑшу шанӑҫӗн асамлӑ йӗрӗ ҫине ӳкернӗ вӑй Анӑҫран капланса килнӗ ҫӗнӗ вӑя чун-чӗре алӑкӗнчен кӗртесшӗн мар иккен. Тухӑҫран Хӗвелпе тӗнчене ҫӗкленнӗ вӑях ҫӗнтерет.

## ИККĔМĔШ ПАЙĔ

1

Парти обкомĕн пленумĕ выльăх апачĕн никĕсне çирĕплетес тата кĕтӳ çӳретме нумай вăхăтлăх культурăллă çарансем тăвас тĕлĕшпе çĕнĕ тĕллевсем палăртнă хыççăн райкомпа райĕçтăвкомшăн пысăк ĕç пуçланчĕ. Унта хушнă пек çулталăк çурăлăх выльăх апачĕ мĕнле хатĕрлемелле-ха? Пур çĕрте те «Шурăмпуçĕнчи» пек пулсанччĕ. Тарăнварсен çуллен апат çителĕклĕ, ытлашши те юлать. Хăйсемпе ăмăртакан тымарсене çуркуннеччен тракторпа виçĕ улмури кайса пачĕç. Волков ĕçĕпе те, ăсĕпе те çынсенчен малта пырать çав. Çӳлтен хушнине ытти колхозсем паян тин палăртни ун ĕнерех пур. Вĕсем çав çĕнĕлĕхпе усă курнă вăхăтра Волков хуçалăха тата çӳлерех çĕклет.

«Çăлтăрта» ĕне выльăха тутлăхлăн тăрантараймаççĕ, çавăнпа сĕт сăвасси, аш тăвасси чакрĕ, патшалăх планĕ тулмарĕ. Крутов çав ыйтупа пынăччĕ. Каргин ăна чун хавалĕпе кĕтсе илчĕ.

— Айланатпăр-айланатпăр, майланса çитейместпĕр, — хуйхăрать Моисей Семенович. — Çулса типĕтнĕ утта шывпа юхтарса ятăмăр. Çĕлен улăхĕнчи купасене ферма патне турттарса капана хывтарас тесе тем пек ӳкĕтлерĕм, хистерĕм Маминова. Итлемерĕ, наряд памарĕ. Эх, пĕрех хут ку Сергей Тимофейча, ма юхса каймарĕ-ши çав çумăр шывĕпе? Тан Ваçлипе купа кутĕнчех ытакланса çывăрнă терĕç те... Çапла çав ĕçкĕçĕн ун турриех пур пулмалла, ни шывра путмасть вăл, ни качакалла машин айне пулмасть, пĕрмай урă çын ăшчикне хыптарать: ĕçре те, килте те...

Вăрман çывăхĕнчи колхозсем тырă вырма тухайманха. Тымарта та ырашпа урпа, пăрçа пиççе çитеймен. Çавăнпа вĕсен халĕ выльăх апачĕ хатĕрлемелли чи лайăх вăхăт. Крутов хистенипе çырма-çатрари вĕлтĕрене, уйри армутие тата ытти курăка çулма халăха кăларчĕç. Сенаж

тума тытăнчĕç. Çĕлен улăхĕнче симĕс милĕк касрĕç. Çанталăкĕ пăсăлчĕ тата... Карачăм мучи каларăшле, «кăмунистсен те çӳлтен панипе çырлахма тивет, çут çанталăка Çилçуната çăварлăхланă пек чарса лартаймаççĕ».

Çапла çав вăл, пирĕнтен килмен, пирĕнтен ыйтман çут тĕнче. Пĕлтĕр типĕ тăнăччĕ. Çу каçиччен пĕлĕтелле пăхнипе мăй та ыратакан пулчĕ пуль çынсен. Тырă сутмалли плана район аран-аран саплаштаркаларĕ. Колхозниксене валеççе памалăх тата выльăхчĕрлĕхе çитермелĕх хутаç тĕпĕнче тенĕ пек çеç юлчĕ. Хăш-пĕр хуçалăхсем выльăх-чĕрлĕхе çĕре ӳкесрен ик енчен тĕкĕлесе кăна хĕл каçарчĕç, аран-аран çăва кăларчĕç. Халсăр чĕр-чун ураланиччен пайтах вăхăт кирлĕ. Унран план тăрăх пурпĕрех аш, сĕт ыйтаççĕ. Кăçал йĕпе-сапа тăнран ячĕ. Клевер, люцерна, çерем утти çĕрсе-çăрăлса нумай пĕтрĕ. Кам сенаж хатĕрлеме ĕлкĕрчĕ — çав апатлă пулчĕ.

Çут çанталăкĕ каллех хăй умĕнче çĕлĕк хывса пуç çаптарасшăн. Тинĕс хĕрринчи пек йĕпхӳ пĕрĕхет. Эрнипех уçăлмарĕ йĕпе пĕлĕт арки, хĕвеле кăтартмарĕ. Жаткăпа çулса пăрахнă ыраш аптрасах каймарĕ, пăрçа вара çĕр çине ӳксе çара хырăмне кăтартрĕ. Ырашпа кĕрхи тулла сивĕ хĕл нумай пĕтерНĕччĕ. Вăрман варринчи колхозсем, çуркунне çĕр вăрах типнипе, тыр-пула вăхăтра акса хăвараймарĕç, çитменнине тата вăл пĕрешкел лайăх пулса çитеймерĕ. Райкомра çапах та йывăрлăхран тухмалли тĕрлĕрен мелсем шыраççĕ. Шупашкартан хушнипе патшалăха икĕ план чухлĕ тырă сутассишĕн ăмăртăва тухма чĕнӳ пуçармалла терĕç. Çав ĕçе йĕркелеме Мургаев «Шурăмпуçне» Оманова ячĕ. Хăйне пулăшма вăл ял хуçалăх хуçине Вьюнова илнĕ.

— Маншăн пулсан, пурпĕрех, — килĕшсе алă сулчĕ Волков. — Кăçал эпир виçĕ планлăх та сутма хатĕр. Йышăнатпăр. Виçĕм çул та çапла... Ял хуçалăх министрĕпе Васильевпа Мургаев килнĕччĕ. Паянхиллех чĕнсе калани йышăнтараççĕ. Шупашкарта палăртса хунă та, на

сана, Волков, алă пус колхоз ячĕпе, сут талăкра ĕне пуçне пĕр пăт сĕт. Те хухаканскер сĕчĕ, те юхаканскер, ăна-кăна тĕплĕн ăнланмаççĕ, мана хĕсĕрлеççĕ. Эпĕ те пуçа чиксе лармарăм, хирĕç пăхсах шутласа кăтартрăм, фермăри пурнăçпа тĕппипе паллаштартăм. Пурпĕрех пирĕн вун виçĕ килоран иртмест. Ăçтан тупмалла-ха ытти виççĕшне тетĕп. Кулса та, лăпкаса та, хăратса та пăхрĕç — йышăнтараймарĕç. Мĕн пустуй павран. Пурпĕрех пурнăçлаймастăмăрччĕ, республика умĕнче намăс кураттăмăрччĕ. Çӳлтен пăрахса панă чĕнсе каланисене пайтах курнă эп. Кӳрĕр-ха, мĕн сăрмаклатăр-ха пирĕншĕн шăршлă пӳлĕмре эсир, Илья Ильич?

Вьюнов тăсса панă хута председатель çурма сасăпа вуласа тухрĕ те кăххăмлатрĕ, унтан чӳрече çумĕнче пăхса тăракан Оманова та хăй патнерех куçма чĕнчĕ.

— Пантелеймон Христофорович, усăллă ĕçех тăватпăр-ши? Эпир çак хут таткисĕрех... Икĕ план тултарма пултаракан колхоз районта пур-ши кăçал? Ман шутпа — çук. Апла тăк мĕн тума кирлĕ ку чĕнӳ — усăсăр хут татăкки?

— Эсĕ районшăн мар, хăвăншăн сăмах тыт. Чĕнсе калани мĕнле пысăк вăй пулнине эпир хамăрах аван пĕлетпĕр. Пире çӳлтен хушнă. Эпир сире хушатпăр, — мăн кăмăллăн хуравларĕ Оманов.

Волков хучĕ çине тĕллесе кăтартрĕ:

— Эх, хушакан-хушкинсем эсир... Пĕлеттĕр тĕк — хăвăрах пĕлĕр. «Патшалăха тырă сутасси — пирĕн пĕрремĕш тивĕç!» тесе çырса хурас çакăнта. Ĕлĕкрех, астăватăп, тыр-пул хатĕрлессине чи пирвайхи халал тесе шутланă. Чĕнӳ те пурччĕ, темшĕн ăна халĕ манчĕç. Те тырă ӳстерес ĕçре шутсăр йывăрлăх пулманран, темрен килчĕ. Ман шутпа пĕрремĕш халал чĕнĕвне çĕнĕрен аса илмелле. Унран пысăкрах тивĕç мĕн пултăр-ха?

«Шурăмпуç» колхозникĕсем чĕнсе каланине райком бюровĕ ырларĕ. Ăна кашни ялах çитермелле. Çав ыйтупа Крутов та Тымара кайма тухрĕ. Вăрман çулĕпе

кузовра ташласа пынă вăхăтра вăл шухăшларĕ: «Чĕнсе калани кампани пуçарни ĕнтĕ. Вăл — хĕрӳлĕх кăварĕ. Лăпланма пуçланă çынсене çав кăвар хĕрĕвĕ ыйхăран вăратать, каллĕ-маллĕ чуптарать, ахаль чухне вăраха хăварнă ĕçех çийĕнче тутарать. Хистет, ыйтать, юнать чĕнӳ сăмахĕ. Унтан, лăпкăлăха сасартăк динамит пек сирпĕтсе янă чĕнӳ кăварĕ майĕпенех тамалать те, унăн хĕрӳлĕхĕ чакать. Çынсем каллех малтанхи канăç юхăма куçаççĕ. Кĕç тепĕр чĕнӳ сиксе тухать — тепĕр кампани пуçланать. Каллех пурте унталла-кунталла чупма тытăнаççĕ, ыйхă çухатаççĕ, кăшкăрашаççĕ, вăрçаççĕ... ывăнаççĕ те, кампание вĕçлеççĕ, тепĕр чухне — вăхăтсăрах, палăртнине пурнăçламасăрах. Йăлăхнипе. Тарăхнипе. Нервсене вĕçĕмсĕр хускатакан, пурнăç хăмпи вĕрсе хăпартакан вăхăтлăх ĕç çыншăн йăлăхтармăш иккен. Куллен ылтăн çумăрĕ çума тытăнсан этемшĕн вăл та ахаль çумăр пекех туйăнать пуль çав. Кашни эрнере, вунă кунлăхра, уйăхра ял ĕçченĕ умне пахаран та паха, çĕнĕрен те çĕнĕ чĕнӳ кăларса пăрахсан, ун çине вăл янахи куçпа кăна пăхма тытăнать. Тăрăшса, пуçа çĕмĕрсе хатĕрленĕ мероприятин вăйĕ, хакĕ пĕтет. Халăх вăйне пĕрмай лăскаса хумхантарнинчен ывăнать. Ĕçе кампанилле мар, çав вăхăтри хĕрӳлĕхпе тăрăшса йĕркелес пулсассăн-и пур çĕрте те... Ял халăхĕ яваплăха та ӳстерĕ. Мĕншĕн Тарăнварта кампаниллĕ ĕç çук? Сĕрсе çемçетнĕ, йĕркелесе майланă механизм пек ĕçлет хуçалăх».

Крутов вĕсене пурне те хирĕçлемест. Кирлĕ вĕсем. Пĕтĕм ĕçе, пурнăçа кампаниллĕ юхăма кĕртсе яма юрамасть çеç. Вĕсем районта кăçал унашкал миçе ĕç пуçарнă, пурпĕрех Тымарта пурте пурнăçланаймарĕç. Айăпĕ колхоз хуçисенче çеç мар, Крутовра та, райкомпа райсовет ĕçтăвкомĕнче те, республика ертӳçисенче те ĕнтĕ.

Тарăнварсен чĕнĕвне Тымарта сӳтсе яврĕç. Халăхĕ хирĕç мар, килĕшет патшалăха икĕ план чухлĕ тырă сутма. Анчах пурте хаш та хаш сывлаççĕ, хуйхăраççĕ, «тыррине ун чухлĕ ăçтан тупăпăр-ши» теççĕ. Крутов хăй

те Тымар уйёсене ывăç тупанĕ пек курать, унта мĕн ӳснине пĕлет. Правленире те шутласа пăхнă — патшалăх планне тултараймаççĕ. Пĕлтĕр те парăмра юлнăччĕ. Хăçан ура çине тăрасси куçпа та курăнмасть-ха. Çавăнпа Максим Максимович сĕнĕвĕпе патшалăха тырă нумайрах сутасси çинчен кăна мар, ăна васкавлăрах та тирпейлĕрех пухса кĕртесси пирки ытларах калаçу пычĕ. Тымарсем «шурăмпуççене» ырласах чĕнӳпе килĕшменшĕн хăйне пĕçерккĕ лекесрен те хăрамарĕ вăл. Догматик пулмалла мар-çке, тишкерсе шухăшламалла, ырăнти майсене кура халăха ытларах усă кӳме тăрăшмалла. Çук, Крутов ĕçе ячĕшĕн кăна тăвакансен юххине кĕрсе ӳкмест. Тĕп çул-йĕртен пăрăнмасăр малашне те шыравлă, парăнмасăр ĕçлет.

Вăрманкаса таврăнсан Максим Максимович каллех таппа çакланчĕ. Эрне канашлăвĕнче Мургаев ăна сисĕмлех çыртса илчĕ:

— Çӳлтен палăртнă çул-йĕре пăсма никам та ирĕк паман. Тырă сутассине вăйлатса эпир района, республикăна, çĕршыва ытларах усă кӳрес тесе чĕнӳ хатĕрлетпĕр, ăна хаваспах ырлаççĕ, ăмăрту пуçараççĕ, пĕр Крутов çеç чĕнӳ тĕллевĕпе вăйне шута хумасть, хăй пуçĕнчен шутласа кăларнă сĕнӳсемпе ял ĕçченĕсен кăмăлне пăтратать. Кунашкал эпир кашниех «творчествăлла» ĕçлеме тытăнсан, пирĕн анархи пулса каять. Çитет, Максим Максимович! Чарăннă пултăр! Курорта кайса килем-ха, сана-и, сана, пуçтаха...

Тавлашса усси пулас çуккине туйрĕ Максим Максимович, çитменнине тата ăна Яков Сидорович, ура çине тăнăскерне, хистесех лартрĕ, урăх ыйту пуçларĕ.

Пӳлĕмрен тухсан Крутов Тымарти ĕç-пуç пирки кам элеклеме пултарнине ăшра тĕпчерĕ. Мургаев хĕрӳ ĕççи вăхăтĕнче района пăрахса кăнтăра канма кайни ăна хытах тĕлĕнтерчĕ. Чун-чĕре туйăмĕ, тивĕç çинчен маннă иккен вĕсем. Уйра тарпа тусан ăшĕнче пăчăхакан-нушаланакан халăх умĕнче пĕртте намăс мар-ши Хура

тинĕс хумĕсемпе чӳхенсе выртнă вăхăтра? Хăйĕн çуммине, Майлова, тыттарса хăварнă район тилхепи пурпĕрех хавшак алăра.

2

Райкомăн иккĕмĕш секретарĕ Геннадий Васильевич Майлов пуçлăхĕ вăхăтлăха хăй вырăнне хăварсан хуçаланма юратни тахçанах паллă. Пĕрремĕшĕ пур чухне ларусемпе канашлусенче хăрах куçпа ун çине, теринпе çĕрелле пăхса шăпăрт лараканскер, влаçа алла илсен пит хăвăрт улшăнать. Малтанхи именчĕкрен чăркăш çын пулса тăрать. Майлов вара никама та шанмасть, никампа та канашламасть, юри тенĕ пекех çынсем умĕнче Мургаевпа ыттисен сумне чакарма хăтланать. Ăс паракан шанчăклă Омановĕ ун пӳлĕмĕнчен тухма пĕлмест. Панхристоф вĕскĕртнипе Майлов ытларах йĕркелӳ пайĕн пуçлăхне тапăнать. Быстров ăна канлĕ пурăнма памасть-çке, «штаб начальникĕ» секретарьсене те сĕрсе хунă механизм пек пĕр тĕллевшĕн ыттисемпе танах ĕçлеттерме хăтланать. Çӳлтен каланине яланах пăхăнасшăн мар, «Шупашкар сиртен мар, манран ыйтать», — тет те, хăлтăртатса кулса ярать. Çав мăшкăла тӳсеймесĕр Майлов хивĕнче чул тытса усрать, майлă самант килсе тухсанах ăна вăл чĕри çумĕнчен шакăрт кăларса пăрахать Семен Ильич е урăххи умне. Акă Майлов Быстрова чĕнтерчĕ, кĕçех унта Крутова та илсе кайрĕç.

— Ларатăр çав лăпăртатса, парти шкулĕн академикĕсем. Йĕркелӳ пайĕ хут-хĕтĕре хатĕрлеме вĕренсе çитеймест. Крутов та хуравлăха çухатнă, хăйне çирĕплетсе панă ялсене маннă. Ĕçлеме шутлатăр-и, пултаратăр-и е пултараймастăр? — шарт! çапрĕ сылтăм аллипе Майлов сĕтеле. — Мĕн çăвара шыв сыпнă пек тăратăн, Максим Максимович? Редакцишĕн хуравлине манса кайрăн-им? Пĕрре Корниловпа тавралăха култартăн. Çынпа этемле сыв пуллашма та пĕлместĕн. Халь тепĕр мыскара...

Крутов ăнланчĕ хăйсене мĕншĕн тăнкăрук пама чĕннине. Пултаруллă Васильев журналиста парти членĕн кандидатне илнĕччĕ. Ун чухне Крутов Тымарта пулнă, Быстров — пульницара. Кандидада кĕме лешин пĕр сасă çитмен пулнă, парторгĕ, тепĕр мемме, хучĕсене майлаштаркаласа çырнă та райкома кайса панă. Çынна комиссие чĕнтернĕ, унтан — бюрона. Кандидата илнĕ ятпа Мургаев ăна саламланă. Яков Сидорович канма тухса кайсанах Омановсем тĕрĕсмарлăха «тăрă шыв çине кăларнă». Çĕленĕ редакциренех шуса тухнă пулнă, халĕ райкомра епле чашкăрать.

Айăплу йышăнăвне итлеме Оманов кăштăртатса çитрĕ, кĕтессе йăпшăнса кĕрсе ларчĕ, аллисене кăкăрĕ çине хĕреслĕ хурса хăлхисене тăратрĕ. Майловĕ те, вăл илттĕр тенĕ пекех, ун еннелле çаврăнса çĕмĕрĕлчĕ:

— Çирĕплĕхе çухатнăшăн, секретарьсене сахал пулăшнăшăн, ĕç хучĕсене суккăрла хатĕрленĕшĕн иксĕре те хытă асăрхаттаратăп! Ăнланмалла-и?

— Ăнланмалла, — секретарь сăмахне тепĕр хут каларĕ Быстров. — Анчах, мĕнлерех?.. Тен, ку асăрхаттару хăвăра та пырса тивет? Эсир хăвăр та хаçат çыннишĕн алă çĕкленĕ вĕт?

— Ах, сире! Ытла чăркăшма-тавлашма маçтăр. Ак çак Максим Максимович пăсса ячĕ пирĕн туслă эртеле, эс те усаллантăн, Семен Ильич, — терĕ те Майлов телефонпа калаçма пуçларĕ. Ун вырăнне Панхристоф сасă пачĕ:

— Пĕрремĕшĕ вырăнне юлнă пуçлăха хисеплесчĕ. Хăçан тытма вĕренĕр хăвăра аслисем умĕнче.

— Мунчари йĕпе çулçă эс. Кĕçех ак çӳлтен çунтарма тытăнсан типсе хăпăнса ӳкетĕн Майлов çумĕнчен.

— Кам кама пуç çапĕ-ха, — секретарь еннелле пуçĕпе сĕлтрĕ Оманов. — Пурпĕрех пирĕн умра çĕлĕк хывса тархасламалла пулать, Быстровпа Крутов юлташсем.

— Нихăçан та!

— Эпир мар, хăвăр ташласа тăрăр ак пирĕн умра!

Тепӗр кунне черетсӗр бюро ларӑвӗ пухрӗҫ, журналиста кандидата илни ҫинчен калакан йышӑнӑва пӑрахӑҫларӗҫ. Хӑйсем тунӑ ҫак курӑмлӑ ӗҫшӗн Геннадий Васильевич питӗ савӑнчӗ, ҫавӑнпах никама та айӑплamарӗ, шӑпӑртах ирттерсе ячӗ хирӗҫӳллӗ ӗҫе.

Партие илмелли ҫынсене Крутов Тымарта хатӗрленӗччӗ. Вӗсен хушшинче ҫамрӑксен ертӳҫи Людмила Белова та пур. Вӑл Алеша Каргина качча тухнӑ хыҫҫӑн та хушаматне улӑштармарӗ. Ҫивӗч, ялан савӑк сӑн-питлӗскер, пӑтӑр-пӑтӑр калаҫаканскер, хӗр чухнехи вут-ҫулӑмне ҫухатмарӗ. «Хуйхӑрма та пӗлмест пулӗ вӑл», — тесе шутланӑччӗ ун пирки Максим Максимович. Анчах хуйхӑ темле ҫынна та лӑскаса тӑкма, тем пек ҫирӗп ҫыннӑн чӗрине те тимӗр кӑшӑлпа пӑрса хӗстерме, ыраттарма, макӑртма пултарать иккен. Ӑш-чикне кам мӗнле ҫунтарать, хуйхине ҫиеле мӗн таран кӑларать, ҫын куҫӗ умӗнче епле нӑйкӑшать — ҫирӗплӗх тени ҫавӑнтан нумай палӑрать. Людмилӑн чӑтӑмлӑхне Крутов бюрора хӑй куҫӗпе хӑй курчӗ.

Парткомисси членӗсем вӑлтса панӑ ыйтусем ҫине те Белова хумханмасӑрах тӗрӗс хуравларӗ, бюро ларӑвӗнче те хӑйне хӑюллӑ тытрӗ. Пӗр ыйту ҫеҫ такӑнтарчӗ ӑна. Пуху йышӑнӑвӗнче хирӗҫле икӗ сасӑ пурччӗ. Белована кандидита илмешкӗн Маминовпа Тан Ваҫли килӗшмен, хирӗҫ сасӑланӑ. Акӑ халӗ Майлов ӑна ҫав ыйтӑва пачӗ. Вӑл пытарса тӑмарӗ, сӑлтавне тӗрӗссипех ӑнлантарчӗ:

— Айӑплах пуль. Ҫӗнӗ пӳрт ӗҫки тӑвас терӗҫ те. Хуняма сӑмакун юхтарма пуҫланӑччӗ. Апата килтӗм те ҫавӑнпа аппаланаттӑмӑрччӗ. Тан Ваҫли таҫтан муртан пырса кӗчӗ, хӑй лӗмсӗр-лӗмсӗр ӳсӗр, ӗҫмелли ыйтать. Ятласах хӳтерсе кӑларса ятӑм. Вӑл та мана «кӑтартӑп-ха сана, шуйттан хӗрне» тесе юнаса хӑварчӗ. Кӗҫ ял Совет депутачӗсене сӗтӗрсе ҫитрӗ. Эпӗ шӑпах тулли четвӗртпе лаҫран тухаттӑм. Акт ҫырчӗҫ, милиције пӗлтерчӗҫ. Алеша амӑшне штраф тӳлеттерчӗҫ. Мӗнле намӑслантӑм.

Нихçан ăша ярса курманскер çав усал шĕвеке «самогонщица» ятне илтрĕм.

Вăл ăнлантарса пĕтернĕ хыççăн пӳлĕм шăп пулчĕ. Пуçа чиксе тăракан çамрăк хĕрарăм çине кашниех хăй шухăшĕпе хăй майлă пăхрĕ. Шăплăха Майлов хускатрĕ: «Кам тухса калаçать?» Бюро членĕ, халăх контроль комитечĕн председателĕ Ишлеев икĕ майлă та çаптарчĕ. Ун шучĕпе Белова айăплă та, айăпсăр та. Райком секретарĕ Посадкина, бюрора хĕрарăмсене ялан хӳтĕлекенскер, Людмилăна ун чухне асăрханулларах пулмалла пулни çинчен тăнлантарчĕ.

Уйăх каялла кăна çĕршывра ĕçкĕпе иртĕхнине хирĕç кĕрешессине вăйлатмалли анлă кампани пуçланнăччĕ. Райкомпа райĕçтăвком та вăл енĕпе мĕн-мĕн тумаллине хатĕрленĕ. Паян шăпах вĕсене бюрора пăхса тухса çирĕплетмеллеччĕ. Çав вăхăтрах, ав, сăмакун тума хутшăннă çынна кандидата илмелле. Бюро пуху йышăнăвне çирĕплетмерĕ. Каргинпа пĕрле тухакан Белова пурне те илтмелле каласа хăварчĕ:

— Ĕçкĕ ăшне путнă Маминов пеккисене çеç пуçран шăлса ларатăр эсир. Вĕсем валли Цĕка йышăнăвĕ те, нимле указ те çук. Макăрмастăп паянхишĕн. Чунпа эп таса. Пурпĕр кĕретĕп партие. Курăр, ак...

Геннадий Васильевич парторга каялла чĕнтерчĕ. Крутовпа иккĕшне, парти ретне илме çынсене лайăххăн тĕрĕслемесĕр япăх хатĕрленĕшĕн, выговор пачĕ. Çак пысăк ĕç çапла Вăрманкас районĕнче ĕçке юратман таса çынна айăпланинчен пурнăçланма пуçларĕ. Бюро хыççăн Крутов тымарсемпе ларса кайрĕ.

— Пустуях ят тиврĕ сана паян, Максим Максимович, — терĕ Каргин. — Куçпа курса, пуça хывса ĕçлекене ăна... Ыррине сахал курать вăл.

— Райкомра ят тивсен те, колхозра ят юлать, — хушса хучĕ Людмила. — Сире, Максим Максимович, чăннипех юратса пăрахнă пирĕн ялсем. Ним вăлтмасăр калатăп кăна.

— Çавăнпа Вăрманкаса таврăннă çĕре райкомра çăхав кĕтсе выртать, — хаш! сывларĕ Крутов.

— Кам çырнине пĕлетпĕр, — тарăхса кайрĕ Каргин. — Халь тин ырă çын тăваяс çук вĕсенчен. Çĕнĕ указ та пулăшаймĕ.

— Ĕçрен те, партирен те кăларса сирпĕтмелле Танваçлисене, — хĕрӳленчĕ Белова. — Тупăннă коммунистсем. Документсем улăштарнă вăхăтра çав ĕçкĕçсене те хăварсан сире, хăвăра та чăн-чăн коммунист тесе шутламастăп. Тымарĕ те юлмалла мар вĕсен пирĕн партире! Хамăр Тымарта та çав путсĕрсен тымарĕ урăх ан хунатăр, пурнăç тымарĕнче ан чĕрĕлтĕр ĕçкĕ япали. Маминовсен тымарне ак çапла хăртмалла, типĕтмелле! — чышкине чăмăртарĕ вăл.

— Тата чĕнсе калани сӳтсе явмалла терĕн-и çак? — ыйтрĕ Каргин. — Мĕн çинчен?

— Хамăр та аптрарăмăр-ха, — куллине чараймарĕ Крутов, — асаматсен чĕнĕвĕ майлах.

Шăп пыракан Людмилăна партбюро секретарĕ вырăн ытларах пушатса пачĕ, райком инструкторĕ çумнерех куçрĕ, унтан çапла каларĕ:

— Нимĕр хыççăн нимĕр тутлă-шим?

— Хăнара кил хуçи лартса парсан мĕн тăвăн, çиес пулать, — терĕ Крутов.

— Ячĕшĕн-и, лайăх мар тесе-и? — лăхлатрĕ Каргин.

— Да, — хаш сывларĕ инструктор, — кунта хăнара мар. Ячĕшĕн, кил хуçине çиллентерес килмесĕр çинĕ апат мар. Начальник вăл, нимĕр хыççăн нимĕр юрать пулин те, хăйĕннех тутарасшăн. Пĕрремĕш секретарь курорта тухса кайнă-кайман Майлов Прошлина «Мотора» хуса янă. Иккĕмĕш секретаре килĕшмен-мĕн асаматсен чĕнсе каланийĕ. Çĕршыв менелникне çĕнтерӳпе кĕтсе илесси çинчен çиелтен çеç асăннă пулать. Çавăнпа чĕнсе каланине тарăнлатмалла, анлăлатмалла. Бюрора ларнă чух хăй ăна мĕншĕн вăйлатма сĕнӳ паманши? Çынсемпе тан алă çĕклерĕ. «Мотор» колхоз халĕ

районти ял ĕçченĕсене тыр-пула ăнăçлă пухса кĕртессишĕн, юбилей тĕлне патшалăха планран ирттерсе тырă, аш-какай, сĕт, çăмарта, çăм сутассишĕн ăмăртăва тухма чĕнет. Çак пункта уйрăммăн сӳтсе явма хушнă, бюро ячĕпе. Ыран чĕнсе калани «Колхоз хаçатĕнче» пичетленет. Сӳтсе яватпăр-и?

Каргин карттусне майланçи турĕ, хăлхи хыçне сăтăркаларĕ, машина лакăмра сиктернипе кăххăмлатса, хирĕçлерĕ:

— Тухтăр, вулăпăр. Сӳтсе явассипе вара... пĕр нимĕре кашни апатрах ларса çимĕпĕр-ха. Райком секретарĕ калани бюро, пленум йышăнни мар. Пире Мургаев пĕçерсе парса хăварнă апат та çитет. Хăй киличчен ăна та çисе ярайmăпăр. Майлов тата пĕçерсе хунă. Хамăр Союз аллă çул тултарас умĕн хастарлăрах ĕçлес пирки халăхпа калаçăпăр. Аптрамалла, кашни эрнерех чĕнсе калани. Анархи. Ячĕ тивет те ĕнтĕ сана. Куçпа курса пуçа хывса ĕçлекене ăна...

3

Çанталăкĕ те, халăхран кулнă пекех, пĕр кун çумăрлă, тепĕр кун уяр тăрать. Талăкĕ-талăкĕпе йĕпхӳ пĕрĕхсе тăнă хыççăн эрнипе хĕвел çунтарать. Карачăм мучи тĕлĕнтерчĕ.

— Çанталăка хамăр майлă çавăрмалла пирĕн, ыллăм, — питĕ тăрăшсах пуплерĕ вăл. — Кăкăр çине хĕрес хунипе мар, пуç мимине çĕмĕрсе пăхăнтармалла. Астăватăн-и, «Колхоз хаçачĕ» эп ыйтнипе статья çапса кăларчĕ? Ферма пӳртĕнче эртелпе вуларăмăр. Шутсăр аван, ăнланмалла çырнă. Ара, кăнтăр енче пăр пĕлĕчĕсене тупăран персе салатаççĕ, пусахласах çумăр çутараççĕ, ракетсемпе урнă çил-тăвăла çăварлăхлаççĕ, а çӳлтен лӳшкекеннине... чарма пултараймаççĕ. Шухăшларăм-шухăшларăм та çак статья хыççăн, пуçа тем йĕкĕлтеме пуçларĕ, çĕр çывратмасть. Пурпĕрех шухăш вĕçне-хĕрне тухрăм. Итле, ыллăм, акă мĕн тумалла. Тăвата тиришапăль кирлĕ. Уй сарлакăш плюнкă, витĕр курăнаканни, кармалла

та хăпартса ямалла вĕсене. Çӳреччĕр ярăнса сывлăшра. Тиришапăльсем аякка вĕçсе ан кайччăр тесен вĕсене вăрманти юмансенчен кăкармалла. Пулчĕ те уй сунчăкĕ. Пĕр çумăр пĕрчи ӳкмĕ çĕр çине. Выр вара тырруна, çап, патшалăха сут, выльăхна тăрантар, пуй. Çапла, ыллăм, çанталăкран хăраса ларсан, унран... Хăй вăл пире пуç çаптăр. Çын-çке эпир, выльăх мар, пуçпа ĕçлемелле пирĕн. Пĕлĕтелле янах каçăртса шăла йĕрсе тăнипех пурнăç пулмасть.

Карачăм мучи хăйĕн «чаплă исопретенине» Мускавах çитересшĕн. Максим Максимовичран пулăшу ыйтать. Кун пирки вăл ăна тем тĕрлĕ те ăнлантарса пăхрĕ, мучи унпа килĕшмерĕ, ун «акатемĕксемпех канашламалла». Калаçăва Крутов ферма ĕçĕсем çине пăрса ярасшăнччĕ, çук, пулмарĕ.

— Эс мана ан пӳл, ыллăм, — кăмăлсăррăн пăхрĕ вăл Максим Максимович çине, — ан чар. Астăватăни, витнĕ йĕтем тăрринчи улăма хĕлле çитерсе янăччĕ? Йĕтеме те плюнкăпа карма пулать. Теплица пекех. Маминовпа Каргин итлемерĕç мана. Юрать-ха, ыллăм, эс тăрăшнине пула, ыраш вырнă хыççăн тӳрех витрĕç. Таçтан килсе каламасăрах тума пулать те ĕçе, хресченĕн хресчен чунех пулмалла ăшра. Райкомсăр йĕтем тăрри витейменççĕ те, аптрамалла. Эс килсе çӳреме пуçланăранпа кăлхусĕ те халь «Шурăмпуçĕнчи» пекрех туйăнать. Эп те хама хам хăюллăрах тытатăп. Тĕкĕ пуррине сисетĕп. Эх, лартасчĕ сана, ыллăм, пăртсетатĕле, анчах...

— Анчах лартмаççĕ, — мучирен кулчĕ Крутов. — Упаран хăранă пекех хăраççĕ пуль манран хăшĕсем.

— Шалишь, — шĕвĕр пӳрнипе юнарĕ мучи. — Халăх санран хăрамасть. Халăх сана юратать. Усалли вăл яланах пур. Пусă çаврăнăшне йĕркелеме пулăшнăшăнах эп сана, хам хуçа пулсан, хисеплĕ кăлхуснике илмелле.

— Эп агроном вĕт, ман тивĕç вăл.

— Тивĕç унта. Пĕлетпĕр эпир, ыллăм. Çерки Тимахвич та акрунум тет те, кăлхусăн хăйĕн те пур та, районăн

та пĕр купа... Пĕлеп, сан ĕç мар вăл, çавсен ĕçĕ. Сан çынсемпе ĕçлемелле. Эс райкум çынни. Çавăнпа тархасласа ыйтатăп: пулăш тиришапăль пирки. Тен, акатемĕксем те шутласа илеймен. Кăлхусах усă парать вĕт, халăхах.

Крутов ыйхăсăр нушаланчĕ. Халăх пуçĕ ĕçлет, тĕлĕрмест иккен, пурнăç аталанăвĕ валли лайăх, усăллă япала шырать. Çемçен хăрлаттарса çывракан Карачăм мучи те хăйĕн «исопретенийĕпе» Мускавах çитесшĕн.

Çут çанталăк вылянчăкĕпе пĕлсе усă куракансем тырра май килнĕ таран тăрăшсах пухса кĕртсе пычĕç. Ялан çумăрпа, çил-тăвăлпа пăтранса-явăнса ӳксе пĕтнĕ ыраша вырма мĕн тери нуша пулчĕ. Комбайнсем ниепле те малалла шăваймаççĕ. Палăртнă вăхăт иртсе кайрĕ, тырă тăкăнма пуçларĕ. Юрать-ха тӳпе çуталчĕ. Хĕвеллĕ кун ял çыннине кăмăл кӳчĕ.

Майлов яланхи пекех ытлашши хумханса ӳкмерĕ. Шупашкартан хĕтĕртнине те пăхсах тăмарĕ, район ĕççире юлса пынине çанталăк çине йăвантарчĕ. Хушнă тăрăх, тырă вырса пĕтернĕ кăнтăр енчи районсем Вăрманкаса вунă комбайн ярса пачĕç. Председательсене пухрĕç. Волков тӳрех пиллĕкĕшне ыйтрĕ. Ыттисене вара аран-аран пайласа пĕтерчĕç. Укçа нумай тӳлессинчен сехĕрленсе ӳкнĕ пуçлăхсем чееленме пуçларĕç, техника хамăрăн та çитет терĕç.

«Шурăмпуç» колхоз районта чи малтан тырă вырса пĕтерчĕ, патшалăха икĕ çул планĕнчен ирттерсе сутрĕ. Усă курса юлчĕ вăл кӳршĕсен пулăшăвĕпе.

Курортран таврăннă Мургаев ĕçе тепĕр майлă çавăрса яма хăтланчĕ, анчах та лайăх вăхăт хĕвелпе çунса кайнă, çумăр шывĕпе юхнă. Майлов ним пулман пекех хăйĕн кабинетне кĕрсе çухалчĕ. Майлов каллех шăпланчĕ, пĕрремĕш секретарĕн ĕçне вăрттăнла куç айĕн сăнама пуçларĕ.

Район патшалăха тырă сутмалли плана тултараймарĕ, выльăх валли фураж та çителĕклĕ хывса хăвараймарĕ. Тырă çĕр улми мар, ăна килрен пуçтараймастăн.

Пуçтарма мар, тыррине хăйне колхозниксене памалла. Мургаев хатĕрлеттернĕ чĕнсе калани те, Майлов ăна çĕнеттерни те уссине нумай кăтартаймарĕç. Района ертсе пыракансем, колхоз пуçлăхĕсем патшалăх, халăх умĕнче айăпра, каçарайми айăпра юлчĕç.

4

Вăрçă хыççăнхи асаплă çулсем те мар ĕнтĕ. Çĕршыв палăрмаллах аталанать. Ял хуçалăхне тĕреклетмелли çулйĕрне уçса панă темелле, унпа мĕнле утмаллине, мĕнле ĕçлесе мĕнле çитĕнӳ тумаллине чăмласах параççĕ. Мускавран вĕçсе килекен çулăмлă сăмахсене Шупашкар районсене вăхăтра çитерет: тĕп хуларан та, ялсене тухса çӳресе те аслă пуçлăхсем хăйсене пăхăнакансене пăрăç хыптарсах тăраççĕ, пушшипе те тивретсе илме манмаççĕ. Палăртнă чи кирлĕ ыйтусене пурнăçлама мĕн-мĕн йышăнни, мĕн-мĕн туни çинчен Вăрманкасран та кунсерен, эрнесерен, уйăхсерен уççăн пĕлтерсе тăраççĕ çӳлтисене. Ыйхă çухатса, пуçа çĕмĕрсе таса хута хуратни, хĕрӳ сăмах вĕçтерни халăх пурнăçĕпе тата куллен-хи ĕçĕ-хĕлĕпе çыпăçса вăй илеймест. Пĕлĕте çити капашакан хут купи пуш параппан сассипе ишĕрĕлсе çĕршывăн «пуçĕ» çине тăкăнать, куçне суккăрлатать, çăварне пăкăлать, мимине минретет.

— Э-эх, ачамккă, — çурăмĕнчен лăпкасах шеллерĕ Крутова Карачăм мучи хăйсем патĕнче, — ытла нумай шухăшлатăн, тем те тăвасшăн та çав эс, анчах... тинĕсе пĕччен суратăн. Сăрă хурт иленнĕ сирĕн йыша. Эсир пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕн пухакан тутлă сĕткене намăса пĕлмесĕр ĕмекенсен кĕтĕвĕ хунаса кайрĕ. Партийĕ те мана темшĕн амасăр хурт вĕлли пек туйăнать. Амасăр йыш нумай каяймасть, саланать...

Вата çын пуçĕнчи шухăш халăх шухăшĕ пулнине Максим Максимович пĕлет-ха, çак вăй малашне çĕршыв пуçĕнчех çĕрсе каяссинчен те хăрать. Чи çӳлти хутра та, вăтам шайра та, аялти картлашкара та чăрмав

кӳрекенсем нумай. Вăрманкасра та çавăнпах ĕнтĕ, çӳлтен тем пек хӳтерсен те, лавĕ сĕрмен кусатăран сассипе кăна мĕшĕлтетет. Аслă ямшăкĕ Мургаев тилхепине никама та шанса памасть, хăй мехелĕпех район çийĕн чĕлĕм тĕтĕмĕ йăсăрлантарать. Райĕçтăвкома ум памасть. Шутласан, ял хуçалăх управленийĕнче аслă специалистсемех икĕ теçетке. Мĕн тăваççĕ-ха вĕсем? Кашни кун миçе сысна çури çуралнине, миçе паккус утă çулнине ыйтса çырса лараççĕ, пĕр пĕтĕмлетсе Шупашкара евитлеççĕ. Патшалăх вĕсене çуран уттармасть, пӳлĕмре «ял хуçалăхне çӳллĕ шая çĕкленĕшĕн» пысăк укçа тӳлет. Яла вĕсем халăх кĕлетĕнчен пылак-тутлă апат-çимĕç сĕтĕрмешкĕн ытларах çӳреççĕ, пĕр-пĕр хуçалăхра сăмса кăтартаççĕ те — каялла тапаççĕ. Пуçлăхĕ Илья Ильич Вьюнов ĕçтăвком хуçине мар, ытларах чунĕпе Мургаева пăхăнма кăмăллать. Ун шучĕпе председателĕн ял тата поселок канашĕсемпе ытларах камантламалла. Советсен кĕрешӳри шайне ӳстермелле, ял хуçалăхне вара управлени пуçлăхĕпе пĕрремĕш секретарь ертсе пыраççĕ.

Ертсе пыраççĕ çав... Ял хуçалăхĕ çине машинăпа таптаса çӳреççĕ. Ахальтен юратать-и Мургаев Илья Ильичпа ярăнса çӳреме? Начальникĕн куçса çӳрекен склачĕпе хупахĕнче çыртмалли-кăшламалли, мăкăрлантармаллипыр чӳхемелли иксĕлмиех: суйла кăна!

Хуравлисен хуравсăрлăхĕ, кампаниллĕ ĕç вăйсăр çулăм пек çеç. Ĕç чăрмавĕн тĕп сăлтавне Крутов Вьюновсемпе Мургаевсен канăç пурнăç хӳттинче курать. Çак лăпкăлăх чирĕ Мургаева пăхăнакан ытти çынсен ӳт-тирне те, ăш-чикне те чирлеттернĕ. Уйрăм керменсем, кăвакал кӳллисем, вăрттăн курортсем, çăмăл машинăри хупахсем, манерсĕр ĕçкĕсем, йăпанчăк мунчисем ăслă хушусене пурнăçлама пулăшмаççех. Чи малтан хăйĕн хырăмĕшĕн, çи-пуçĕшĕн, чаплă керменшĕн çеç çамки çине тар кăларакан пуçлăхран мĕн ыррине кĕтĕн-ха?

Крутов каллех тепĕр кампание халăх хушшине сарма яла каять. Раççейĕн Хура тăпраллă мар тăрăхне ура çине тăратмалли калама çук пысăк ĕçсем палăртнă. Унта Чăваш Ен те, Вăрманкас районĕ те кĕрет. Малашне мĕнле улшăнусем пулма пултарасси пирки вăл ĕмĕтленсе пырать. Анчах та теприне ылтăн купи çине хăпартса лартсан та, унпа усă курма пĕлмесен, вăл çутă металл çеç пулса юлать. Йышăннине пурнăçлама чăрмантаракан шалти вăй кăшласа хавшатать пурне те. Ертсе пырас меслете тĕпрен улăштармасан, темле ЧАПЛĂ йышăну та халăха ырлăх кӳреймĕ. Кутран тапни те пулăшаймĕ.

Халăх хушшине тухсанах çынсен ушкăнĕнчен пĕрмай уçăмлă сасă чĕтревлĕрех янăрать пек: «Хăвăр шыçмакланса ларнă та, пурнăç хуйхи-суйхине хырăм выççипе туймастăр та, сирĕншĕн пулсан вăл выговор парасси ача вăййи вылянă пек çеç». Вăрманкасри вăтам шкул учителĕ Иванов каланă çак хĕçлĕ сăмахсем касаççĕ те касаççĕ. Халăх приговорĕ пекех.

Нумай хура-шур тӳснĕ, халăхра ят илнĕ интеллигент, ватă коммунист вăлтса мар, чун-чĕрипе тарăхса, кӳренсе каларĕ çакна. Çав çулхине вăл çăкăр перекетлĕхĕн кампанине лексе айăпа кĕчĕ.

Çăкăртан аслă пулма никама та хушман ĕнтĕ, никамăн та хăйма кирлĕ мар унпа киревсĕрле хăтланма. Çĕршывĕпех пысăк калаçу чĕртсе янăччĕ çăкăр перекетлĕхĕ пирки. Темле майпа, такам пулăшнипе пилĕк буханка таранах туянма пултарнă-ха Иванов. Çул çинче ăна милиционер хирĕç пулнă. «Мĕн тума кирлĕ-ха ăна çавăн чухлĕ çăкăр?» — шухăшланă йĕркелĕх хуралçи. Ыйту çине ыйту, хурав çине хурав... Милиционер лăпланман, учитель килне çитсех тĕрĕсленĕ. Картишĕнче унăн икĕ сысна çӳренĕ. Лешĕ пунеттейсем илсе пынă, акт çырнă. Шкула, райкома çитнĕ усал хыпар: «Иванов коммунист килти выльăха çăкăрпа тăрантарать, ăна указпа айăпламалла».

Çапла намăслантарчĕç учителе. «Сутăр-ха апла ашне лавккара, усрамăттăм выльăхне, тăрантармăттăм çăкăрпа, нуша курмăттăм, ватлăхра сирĕн умăрта пите хĕретмĕттĕм. Кунта, вăн, хам вĕрентнĕ ачасем шăкăри лараççĕ, вĕсенчен те намăс мана. Халиччен çĕршыв умĕнче те, парти умĕнче те айăплă пулманччĕ, мĕншĕн выговора тивĕçрĕм-ши?» — аллине кăкăр çумне тытсах калаçрĕ вăл. Тарăхупа çунакан куçĕсем халĕ те асрах.

«Кам айăпĕшĕн, кам хуравсăрлăхĕшĕн, кам пăтăрмахĕшĕн ят илтрĕ-ши хисеплĕ педагог? Ăна-кăна пĕлеймесĕрех хуллен тухса утрĕ вăл райкомран. Çăкăра юратма, çăкăра пуç тайма хушнă халăх. Çав учитель те, паллах, килĕнче кăна мар, шкулта та ачасене çăкăрпа выляма вĕрентмен. Ватлăхра вара... хăй çăкăр тапки çирĕ. Районта çав вăхăтрах кашни гектар пуçне икĕ центнер ытла тырă тăкăнса юлчĕ. Уйран ик çĕр пин пăт тырă пӳлмене кĕреймерĕ. Пулăшма янă комбайнсенчен хăраса «укçа перекетленĕ» пуçлăхсем те, ытти лăпкă хуçасем те тырă тăкса янăшăн выговор та илмен, усал ят та илтмен. Вĕсен сĕтелĕ те тулăх, выльăхĕ те картиш тулли: пусмалли те, сутмалли те. Канăç пурнăçра вĕсем халăх çăкăрĕпе выляççĕ. Акă камсене ятламалла, выговор панипе кăна çырлахмалла мар, ĕçрен хӳтермелле», — тесе тарăхрĕ Крутов.

5

Район лавне Мургаевсен парти çулĕпе малалла туртса каймалла пулсан, Крутов шучĕпе, вĕсен пуçлăхсене пичевре пулăшса пымалла. Пичеврисем те çав çул çинче хăйсен йĕрне хăвараççех. Анчах, мĕнле йĕр?

Хăйне райком аппаратĕнчи партбюро секретарьне суйланăранпа çак ыйту Максим Максимовича пĕртте канăç памасть. Ун пирки вăл оргĕç пайĕн пуçлăхĕпе канашласа пăхрĕ. Семен Ильич ахаль те инструкторсен ĕçне кăсăкрах, анлăрах йĕркелес тесе тахçантанпах пуçа çĕмĕрекенскер, хăпартлансах ун майлă пулчĕ.

— Чăнах та, — терĕ Быстров, — эс каларăшле, мĕнле йĕр юлать пирĕн хыççăн? Мĕнле палăрмалли пулăшу паратпăр парторгсене, коммунистсене, халăха?

Крутов хăй мĕн тума шутланине те пĕлтерчĕ:

— Пуху кун йĕркине çапла палăртас терĕм-ха: «Халăхра пирĕн ят юлать-и?» Атту ялан пĕр евĕрлĕ ыйту сӳтсе яватпăр: «ЦК Пленумĕн йышăнăвĕнчен, Уçă çыруран, Чĕнсе каланинчен парторганизаци умне тухса тăракан задачăсем çинчен...» Йăлăхтарсах çитерчĕ пуль пурне те. Калаçатпăр-калаçатпăр, аслă органсем малашнех йышăннă ăслă сăмахсене чĕлхе çинче тепĕр хут çавăрттаратпăр-çавăрттаратпăр...

— Сăмахне сăвăрма ăна вĕреннĕ-ха эпир, уйрăмах трибуна умĕнче. Ирттерер-ха чăнах та, пĕр çивĕч пуху. Куçран куç калаçар, вырăнта ларсах, — килĕшрĕ Семен Ильич. — Парторгсене те чĕнер.

Палăртнă вăхăтра Крутов парти ĕçлевçин тивĕçĕ, ăна кам мĕнле пурнăçлани çинчен кĕскен калаçу пуçарса ячĕ.

— Паянхи ыйтăва кун йĕркине тахçанах лартмаллаччĕ, — терĕ Быстров. — Пурне те хумхантарма тивĕç пуль вăл. Оманов юлташшăн çеç.. Пăхăр-ха ун çине? Çак пухура та пуç ватмăшпа аппаланса ларать.

Оманов, сасартăк хăйĕн хушаматне илтнипе, «Огонека» урайне ӳкерчĕ, ăна çĕкленĕ май, мăкăртатрĕ:

— Персональнăй ĕç мар пуль ман паян? Тем чакаланать хĕрарăмла.

Семен Ильич пăлхансах каларĕ:

— Канăç сăпкинче сикет-ха Пантелеймон Христофорович. Сиктерекенни — чаплă. Çапах та, кала-ха, усăллă пĕр йĕр хăварнă-ши эс халăх хушшинче ху райкомра ĕçлеме пуçланăранпа? Темле, иккĕленетĕп. Ытла улпутла тытатăн хăвна. Обком секретарĕсемпе райком секретарĕсене те, такама та сахал мар курнă эпĕ хам ĕмĕрте, анчах санашкал кахал, чее çын тĕл пулман. Пӳлĕмре телефонпа камантласа ларнипех ĕç тухмасть. Парти ĕçлевçин тĕп вырăнĕ — парторганизацире. Шутлăр-ха хăвăрах, юлташсем, райком бюровĕнче пирĕн

пурин те хирĕнкелесе тĕккеленсе лармалла-ши? Камăн ыйтăвĕ пур — çавă юлтăр. Ыттисене — яла. Планеркăра та секретарьсемпе пай пуçлăхĕсем кăна пулмалла.

«Шурăмпуçĕнчи» партком секретарĕ Воробьев та Оманова сисĕмлех лектерчĕ:

— Пантелеймон Христофоровичăн ĕç мелĕ «питĕ килĕшет» пире. Всеобучпа тăнран ячĕ. Юлашки вăхăтра кăна ЦКн пилĕк йышăнăвне пăхмасăр калама вĕрентĕмĕр. Ăçтан пирĕн пултаруллă ĕçлеме вăхăт юлать? Халăх хушшинче мар, райком çуртĕнче çеç ура йĕрри хăваратпăр эпир!

— Ĕçĕн вĕçĕ ĕçлĕ пултăр, — хушса каларĕ Крутов. — Ман шутпа та инструкторсемпе ялти партком секретарĕсене планеркăна чĕнмесен те юрать. Яла темиçе кунлăх ушкăнпа тухса çӳреме тытăнмалла. Райком кунĕсем тăвар. Халăх ыйтакан, коммунистсене хумхантаракан ыйтусене атьăр-ха пĕрле, эртелпе, татса парар. Ирĕклĕн, уççăн канашлар. Райкомăн тĕп ĕçне çак çуртра мар, çынсем хушшинче ытларах туса пырар, вара ĕçĕн вăйĕ те курăнĕ. Çапла-и, юлташсем?

— Тĕп-тĕрĕс ку! — сиксе тăчĕ Каргин. — Парти ĕçлевçин, тен, артист те пулма тивет пуль. Пулĕ. Ăна хирĕçлеместĕп. Эпĕ çакăнпа çеç килĕшместĕп. Парти ĕçлевçин, инструктор-и вăл, секретарь-и, пурпĕрех, нихçан та гастролер пулма юрамасть. Гастрольти артистсене эпир алă çупса кĕтсе илетпĕр, ăшă кăмăлпа ăсатса ятратпăр. Гастролер-партиецсене вара — кĕтместпĕр, пĕртте! Вĕсенчен ним усси те çук. Сан çине йытă пек вĕрсе хăвараççĕ: «Ма кăна халĕ те пурнăçламан!» «Ма мобилизацилемен!» Пĕрмаях «ма» та «ма». «Ма» мĕншĕн пулмасть — никам та кăсăкланмасть. Сирĕн хушăра та пур вĕсем — Омановпа Мургаев юлташсем... Пирĕн колхоза кам мĕнле усă кӳнипе кӳменнине лайăх ăнланатпăр. Вĕсенчен пĕрне асăнса хăварасшăн.

Пурте ун енне тимлесех тинкерчĕç, кам пирки каласса кĕтрĕç. Кĕсйинчен шурă ал тутри кăларса ӳсĕрсе илнĕ хыççăн Моисей Семенович Крутова мухтарĕ пăрахрĕ:

— Максим Максимовича эсир райкомра мĕнле хак паратăр — пĕлместĕп. Эпĕ хамăр ял хакне çеç пĕлтересшĕн. Ăна çынсем чĕререн тав тума хушрĕç. Мĕншĕн? Халăхпа ĕçленĕшĕн. Халăха итленĕшĕн. Халăха хисепленĕшĕн. Колхоз ура çине тăма пуçланăранпа эпир никама та мар, чи малтан ăна мухтатпăр. Вăл пирĕн ялти типме пуçланă çăл куçа, пурнăç çăл куçне, уçса юхтарма пулăшрĕ. Ăна мĕнле, мĕнпе уçмаллине, шывне ăçталла юхтармаллине кăтартма пултарчĕ. Тавах çак çынна пирĕн тĕле тунăшăн. Тĕслĕхсем илсе кăтартап. Вăрмантан йывăç вăрласа пуясси пĕтрĕ-и колхозра? Пĕтрĕ. Пусă çаврăнăшне йĕркелесе ятăмăр-и? Ятăмăр. Тарăнварсем пулăшаççĕ-и? Пулăшаççĕ. Çĕлен улăхне çĕнететпĕр-и? Çĕнететпĕр. Çынсемпе ĕçлеме вĕренетпĕр-и? Вĕренетпĕр. Парторганизаци çамрăкланать-и? Çамрăкланать. Пурне те асăнса та пĕтерес çук. Акă вăл пирĕн Крутов юлташăн ял халăхĕ хушшинчи хăварнă ĕç йĕрĕ — пурнăç йĕрри!

— «Пирĕн» теççĕ-çке ăна вĕсем? — лăх-лăх кулчĕ Оманов. — Ма пуçĕпех илсе каймастăр тата?

Моисей Семенович ун еннелле сиввĕн пăхса:

— Пирĕн теме ăна пирĕн таса тивĕç пур — халăх тивĕçĕ. Председателе те паянах суйлама хатĕр, килĕштĕр çеç. Колхозниксен ячĕпе калатăп: Максим Максимович сирнешкел, Оманов юлташ, улпут мар, чăн-чăн ĕçлевçĕ. Сирĕн вара çынран кулассинчен сывалмалли эмел ĕçмелле — ăслăлăх, сăпайлăх эмелĕ. Лайăх çынна хурапа варалама памăпăр, — терĕ.

Пухури кăсăк ыйту никама та шăп лартмарĕ, тавлашăва кĕртсе ячĕ. Ун пек чухне пĕрремĕш секретарь юлашкинчен мĕнле ăслă сăмах каласса кĕтетчĕç, анчах паян вăл çук. Мургаева сĕт ыйтăвĕпе Шупашкара чĕннĕччĕ. Майлов йĕрке тума пикенчĕ, тавлашăва вĕçлерĕ:

— Пит лайăх, шутсăр ăслă сĕнӳсем. Тĕрĕсех те пуль эсир калани. Хирĕçлемĕпĕр вĕсене. Йĕркене пăсмăпăр. Крутов та, Быстров та маттур, Каргин та лайăх, Ома-

нов та улпут... Çăвартан тухнă сăмаха каялла чикейменĕр. Пурте ĕç мелне улăштарасшăн, пурте пуçаруллă пуласшăн. Ку — тĕрĕсех ĕнтĕ. Хушнине пурнăçламаллах. Ăна пурте ăнланатпăр. Анчах та, юлташсем, пуçаруллă ĕçлемелле тени вăл умра палăртнисене пĕртте пасар меслечĕпе татса памаллине пĕлтермест. Пухун пуху пек пулмалла. Йĕрки кирлĕ, тахçантанпа çирĕпленнĕ йĕрке. Парторгсене хамăра ятлама, хамăрпа хĕремеслентерсе тавлашма чĕнтĕр-и? Пуху мĕнле ирттерме вĕрентме-и? Анархи патне çитсе çапăнатпăр капла, тепĕр утăм тусанах. Эпир пурте Максим Максимович пек ĕçлеме тытăнсан, райкома салатса яратпăр. Крутов пек ялта ĕçлесе пурăнсан, инструктор кирлĕ те мар. Парторгăн шалти ĕçне хутшăннипе хамăрăн ята та, унăн ятне те яратпăр çеç. Райкомри ĕçе кам тăвĕ? Паянхи калаçу калаçупах юлтăр. Пурпĕрех Яков Сидорович хăй çук. Кайран усăллă йышăну пулĕ.

Майлов хыççăн тухса калаçма хăнăхнă Оманов иккĕмĕш секретарь шухăшне ăнланчĕ, çавăнпа хăйне çамкаран çапакансене сăнăлас тесе алă çĕклерĕ.

— Ман ăнлантармалли пур. Мана, айăпсăр çынна, «улпут» тесе намăс кăтартнăшăн эпĕ Быстрова суда паратăп, парти енчен те айăплама ыйтатăп.

Кулаканĕ кулчĕ, тĕлĕнекенĕ тĕлĕнчĕ. Пуху Оманов сĕнĕвне сивлерĕ, Майловăн икĕ питлĕ сăмахне те шута илмерĕ. Эртел — çĕнĕлĕхшĕн!

Пуху ăнăçлă иртнĕшĕн Крутов савăнчĕ.

6

Парти документчĕсем улăштарма райком çулталăка яхăн хатĕрленчĕ, Тĕп Комитет йышăнăвĕ хыççăн парторганизацисемпе пĕрле çав тери пысăк ĕç турĕ. Çак тапхăрта халăхра хивре шухăш çуралнăччĕ. «Тинех парти çӳп-çапран тасалать», — тенине час-часах илткелеме пулатчĕ. Карачăм мучи те çаплах шухăшланă.

— Сан, ыллăм, — терĕ вăл пĕррехинче Крутова, — хăрамалли çук-ха. Эс чисткăна лекместĕн, эс — кăму-

нистах. Чисткăна лекмеллисем ман пӳрне çинчех-ха. Вĕсенчен пĕри, вăн, Тан Ваçли, фермăна тайкаланса килет. Пăртçетатĕльпе иккĕшĕ те лектĕрччĕ-ха. Ара, карти çук, сысна ами çухалнă та — ман тӳлемелле. Сысни вăрманта якăлтире çӳренĕ, кайран кашкăр чĕрни айне пулнă. Ах, курас килмест çав тăр палтайсене.

Крутовăн ăна ирĕксĕрех парти докуменчĕсем мĕншĕн улăштарни çинчен ăнлантарса пама тиврĕ.

— Ненай? — ĕненмесĕр пуçне пăркаларĕ мучи. — Тĕплĕнрех кала-ха? Пуçа хывас. Ман кунта хĕрарăмсемпе агитмасса тума лекет.

— Итлĕр апла, — унпа юнашар ларчĕ Максим Максимович. — Партие çирĕплетесси пирĕн граждан вăрçи вăхăтĕнчех пуçланнă. Вун тăххăрмĕш çулта, саккăрмĕш съезд йышăннă тăрăх, партиецсене тĕрĕслесе тухнă, шута илнĕ тейĕпĕр. Коммунистăн билета тавăрса памалла та, çĕнĕрен анкета çырса хăйне çывăх, лайăх пĕлекенрен икĕ сĕнӳ тăратмалла пулнă. Камăн сĕнӳ çук — ăна кандидата куçарнă.

Вăрмана кĕрсе каякан Тан Ваçлине хĕсĕк куçĕпе ăсатса янă Карачăм мучи аяккалла сурчĕ те тин хуравларĕ:

— Ăнланмасăр ара, хам пулнă-çке вăрçинче. Пайтах курнă чăн-чăн пульшевиксене. Çĕмĕрттеретчĕç те çав... Та... Апла, вĕсене те тепĕр хут тĕрĕсленĕ. Ай-яй, партийĕ те, ваçка, хытă тытнă хăйĕн салтакĕсене.

— Тепĕр тапхăра илĕпĕр. Вăрçăсем пĕтнĕ ĕнтĕ, эпир çĕнтернĕ. Пирĕн çĕнĕ пурнăç тумалла — мирлĕ пурнăç. Вуннăмĕш съезд çапла йышăнать: рет ӳсрĕ, улт çĕр пинрен те иртрĕ, партие шалтан хавшатакансем, влаçшăн çунакан мещен йышши элементсем кĕрсе тулчĕç. Тасалмалла иккĕленӳллисенчен, 1921 çулта парти çапла хăйĕн пĕрре виççĕмĕш пайне чакарать.

Крутов сăмахĕ çумне мучи хăйĕнчен хушса хучĕ. Пайтах курман-и вăл, шутласан, чĕрĕ историех. Çамкине сăтăрса илчĕ те вăл кулса ячĕ:

— Хă-хă-хă. Астурăм халь, симĕс сĕлĕ çуль, хурал пӳртĕнче, тĕтĕм ăшĕнче, ай турă, пуху кĕрлерĕ. Вĕллери

хурт пек. Шашка Пашкине тӗрӗслетпӗр. Ялсувет хуҫине. Халӑх сӑмахне те итлеҫҫӗ-ҫке ун чухне. Арман хуҫи Кӗпитун ҫухӑрать: «Партийцӑ мар вӑл, шантарм! Вульверпа хӑратса ҫӳрет. Килӗшместпӗр!» Шашка Пашкине эпӗр партирех хӑварасшӑн. Кӗпитун майлисем ӑна унтан хӑваласшӑн. Уесран килнине Пашка «вульвер пирки» хӑй ӑнлантарса пачӗ. Май праҫникӗнче вӑл Кӗпитуна хӑратсах темунстрацие илсе тухнӑччӗ. Ял ҫыннисене пурне те хӗрлӗ ялав айне тӑратса ревулюци юрри юрлаттарасшӑнччӗ. Халӑх Шашка Пашкине партирех хӑварма йышӑнчӗ. «Тутартӑр пире ҫӗнӗ пурнӑҫ», — терӗмӗр пӗр харӑс.

Мучи калать-калать те Крутова тӑнласах итлет.

— Так, малалла ҫапла пулса пынӑ, — ӑнлантарать Максим Максимович. — Астӑватӑр ӗнтӗ вӑтӑрмӗш ҫулсене, ун чухне парти тепӗр хут тасалнӑ.

— Пурнӑҫ якалнӑ ҫулсемччӗ ҫав, — сухалне шӑлса илчӗ Карачӑм мучи. — Шашка Пашки контрӑсене тӗп тумалла тесе кӑшкӑрнине хальхи пек астӑватӑп. Пирӗн ялтан та пӗрне кӑларса ҫапрӗҫ. Шашка Пашкисем вара виҫҫӗнех тӑрса юлчӗҫ. Пӗри те ҫук ӗнтӗ халь. Вӑрҫӑра пӗтрӗҫ. Мӗнле маттурччӗ. Ахальтен кӗнӗ-и вӗсем партие? Ҫерки Тимахвичсем вӗсен чӗрне хурине тӑмаҫҫӗ. Партийӗ чӑтать ҫав. Хӑвӑртрах тӑвӑр-ха чисткине. Таса кӑмунистсен ятне ан яччӑр вӗсем. Сан пеккисен ятне. Сахалӑн юлӑр та — ылтӑн пулӑр.

— Чистка мар ҫав, Герасим Филиппович, — тепӗр хут каларӗ Крутов, — парти докуменчӗсем улӑштарни ҫеҫ. Ӗлӗкрех парти хӑйӗн ретне массӑллӑн тасатнӑ пулсан, халӗ унашкал мелсӗрех ҫирӗпленме пултарать. Чисткӑсене вӑрҫӑчченех йӑнӑш мел тесе йышӑннӑ, вун саккӑрмӗш съезд хыҫҫӑн унашкал кампани иртермен. 1954 ҫулта документсем улӑштарнӑччӗ, халӗ тепре улӑштаратпӑр. Ҫапла, улӑштаратпӑр ҫеҫ, партие массӑллӑ майпа тасатмастпӑр.

Карачӑм мучи пӗр хушӑ чӗнмесӗр ларчӗ-ларчӗ те, унтан шӗвӗр пӳрнипе Крутова юнарӗ:

— Эх, хĕрес хурсах калатăп сана, ыллăм, тăнла мана. Ара, çĕн партпилет панипе Тан Васли улшăнать-ши? Ахрат! Пĕрне кĕсйинчен кăларса теприне илсе чикрĕ те, аллю, ăна çума — каллех утара... Халь те унта кăрчама кӳпсе ларать пуль-ха.

Максим Максимович кайма тесе пуçтарăннăччĕ, портфельне каска çинчен çĕклерĕ, çапах васкамарĕ, ăна лăплантарсах хăварма шутларĕ:

— Шăпах парти унашкаллисенчен тасалма хушать, çапла вара документсем улăштарма хатĕрленнĕ вăхăтра вăл хăйĕн речĕсене татах та çирĕплетĕ. Тан Васлисем партире пулма тивĕçлипе тивĕçлĕ маррине колхозри коммунистсем хăйсемех калĕç. Вĕсен ирĕкĕ.

— Халăха чĕнесчĕ те ун чухне кăмунистсен пухăвне... Калăттăм хамах виç сăмах — çирĕп çăмах. Чĕнетĕр-и?

— Халĕ унашкал йĕрке çук çав. Пухăвĕнче коммунистсен çеç пулмалла.

— Ĕлĕк тата мĕншĕн чĕннĕ?

— Ĕлĕк урăхла вăхăт, урăхла йĕрке, коммунисчĕсем те сахал пулнă. Халĕ Тымартах вăтăра çитет. Халăх шаннă пысăк организациех. Вăл ĕнтĕ кашнин шăпинех татса пама пултарать. Ăнлантăр-и, Герасим Филиппович? Аллуна парăр та, сывă юлăр, лайăх пурăнăр.

Райком инструкторĕ çул çине тухса малалла уттарчĕ. Карачăм мучи хăйпе хăй калаçса юлчĕ: «Чистка мар апла? Вăрттăн хăтланаççĕ. Халăхран хăраççĕ...»

## 7

«Çăлтăрти» парторганизаци çамрăкланма пуçларĕ ĕнтĕ. Унта тата виçĕ çын хутшăнчĕ. Людмила Белова та райкомра намăсланнăшăн хуçăлсах ӳкмерĕ, партие кĕрес шухăша пурпĕрех пăрахмарĕ. Тепĕр хут кандидата илнĕ чухне çав Тан Васлипе Маминовах хирĕç сасăларĕç. Райком хальхинче пуху йышăнăвне çирĕплетрĕ. Бюрора Мургаев унран куларах ыйтрĕ: «Сăмакун мĕнле юхтармаллине вĕренсе çитрĕн-и халĕ?» Людмила хăюллăн ху-

равларӗ: «Ыран комсомол рейчӗ ирттеретпӗр, сӑмакун аппарачӗсем пуҫтаратпӑр. Ҫав сӑмакуна-и? Вӑй пур таран кӗрешетӗп ӑна хирӗҫ. Кандидат ячӗпе сӑмах паратӑп».

Белова пек ҫамрӑксем колхозри парторганизацин шалти чӗрӗ вӑйӗ пулассине ӗмӗчӗпе туять Крутов. Анчах вӑл — малашнехи хӑват ҫеҫ-ха. Хальлӗхе вӗсене вӗрентмелле, чӑн-чӑн коммунист ҫулӗ ҫине тӗрӗс тӑратмалла.

Тан Ваҫлине партирен кӑларнӑ чухне пуху ирттерме Крутов та пынӑччӗ. Унта икӗ юхӑм юхрӗ. Колхоз председателӗпе унӑн хӳрешкисем ӑна хӳтӗлесшӗн тем пекех тапаҫланчӗҫ, пурпӗрех партбюро секретарӗ Каргин пуҫарнӑ юхӑма ҫӗнтереймерӗҫ. Вӑл вӑйланса, вӑйланса пычӗ те Маминовсен халсӑр юхӑмне аяккалла сирсе ывӑтрӗ. Тан Ваҫли, ҫырана тухса ӳкнӗ пулӑ пек, ҫӑвара карса сиккелерӗ, пурпӗрех шыва лекеймерӗ.

Пухура Сергей Тимофеевичӑн ыйтӑвӗ те вӑраха тӑсӑлчӗ. Маминовӑн виҫӗ выговорччӗ. Вӗсенчен пӗр харӑсах тасалас тесе вӑл намӑса туймасӑрах ыйтса ҫырнӑ. Коммунистсем шавласа кайрӗҫ. Людмила Белова тӑчӗ те хыттӑнах каларӗ:

— Ӗҫкӗпе кӗрешмелли ҫӗнӗ указ, ҫӗн йӗрке тетпӗр, йӗркине тахҫан тӑватпӑр. Сӑмакун аппарачӗсене те чылай пухрӑмӑр, усси сахал. Пурпӗрех манерсӗр ӗҫеҫҫӗ. Аслисем хӑйсем тӗслӗх кӑтартаҫҫӗ те, ял халӑхӗ те чарӑнмасть ӗнтӗ. Халӗ те усал шӑршӑ перет Сергей Тимофейчран. Намӑс. Тата хӑй выговор снимать тутарасшӑн. Строгийне памалла ӑна пухӑва ӳсӗр килнӗшӗн.

Маминов выговорсенчен тасалса пӗтеймерӗ.

Райком бюроне Тан Ваҫли пыма та шутламан иккен. Каргин унран ӑнлантару хучӗ илсех килнӗччӗ. Лешӗ партбилетне пурпӗрех парса яман. Бюро ыйтӑва унсӑрах пӑхса тухрӗ, парторганизаци йышӑнӑвне ҫирӗплетрӗ. Парти Уставне пурнӑҫламаншӑн, тӑххӑрмӗш параграф тӑрӑх, Тан Ваҫли текех коммунист мар.

Бюро хыҫҫӑн Мургаев Быстровпа Крутова Тымара кӑларса ячӗ. Вӗсем ширанӑ ҫын, Тан Ваҫли, ялта пулмарӗ,

вара фермăна çул тытрĕç. Машина сассине илтсе пӳртрен Карачăм мучи хирĕç сиксе тухрĕ, вĕсемпе калаçса кайрĕ.

— Пурăнни-качки, чаплах мар, — терĕ вăл. — Кăмăл хуçăлчĕ, йывăç туратти пекех шартлатрĕ пулмалла. Çанталăкĕ те усăлмасть, вăн, хĕвел пĕлĕт витĕр шăтарса тухаймасть.

— Хуйхă пулчĕ-им? — ыйтрĕ Крутов.

Мучи вĕсене хăй хыççăн пӳртелле утма ыйтрĕ, çав вăхăтрах ăнлантарса пычĕ:

— Пур ман Тан Васли йышши кĕсен-çăпан. Килеççĕ те ӳсĕр-какăрла, ферма пӳртне кĕрсе выртаççĕ, те кустиницă кунта ман вĕсем валли...

Тан Васли ятне илтнĕ Быстров савăнсах ӳкрĕ, çиййĕнчех мучие тĕпчерĕ: — Сирĕн хӳтĕре апла вăл. А эпир ăна шыратпăр. Каллех ӳсĕр-им?

Карачăм мучи тарăхнипе лач! сурчĕ, кăххăмлатрĕ те çурăкрах сасăпа:

— Харлаттарать, — терĕ. — Трактор пекех. Манпа сĕмпĕлтетсе ларчĕ-ларчĕ те ăсанчĕ хуп турттарма. Пĕрмай Муйçей Çимунчпа вăрçать. Сана та, Максăм Максăмч, хăватлă сăмахсемпех «ырлать».

Ферма пӳртне кĕчĕç. Чӳрече çумĕнчи кутник сакки çинче чăн та Тан Васли сĕлеке юхтарса ыйхă туртать. Карачăм мучи тĕллесе кăтартрĕ:

— Курăр-ха, ывăçĕнчи хĕрлĕскерне? «Ку ман пурнăç кĕнеки, телей уççи пулнă» тесе хăлаçланчĕ-хăлаçланчĕ ман умра, хĕрарăмсене кăтартса çӳрерĕ. Тем пулчĕ, ăнланса пĕтереймерĕм. Сире вăрçма тытăнчĕ те... Партирен чăнахах кăлартăр-и, шуйттан кĕвентине?

— Кăларма кăларнă-ха ăна. Ара, партбилет мар-и-ха? — çывăхран пырса пăхрĕ Семен Ильич.

Ялт! пуçне çĕклерĕ çав самантра Тан Васли, куçне хура пӳрнисемпе сăтăрса уçрĕ те умра тăракан яштака çынсем çине вăкăрла тинкерсе пăхрĕ:

— Ман пата-и? Акă вăл! Куратăр-и? — аллинчи партбилета кăтартрĕ Тан Васли. — Малтан эп те кирлĕччĕ. Кĕр те кĕр терĕç. Кĕтĕм. Халь эп юрăхсăр. Халь мана —

канава?! — Çапла каласа вăл алăкран вĕлт! тухса вăркăнчĕ. Пурте ун хыççăн чупрĕç. Тан Васли ÿсĕрпе хутăшнă хаярне ниçта хума пĕлмерĕ, аллинчи партбилета ланкашкана пăрахрĕ те атăпа çăрма тытăнчĕ.

— Тăхтăр, ыллăмсем! — ун патнелле чупакан Быстровпа Крутова чарчĕ Карачăм мучи. — Çиччас эп ăна хĕрлĕ кĕнеке таптама вĕрентеп. Туххăм урăлса каять.

Карачăм мучи алăк çумĕнче çакăнса тăракан вăрăм пушша ярса илчĕ те тăрна пек ташлакан Тан Васлине пĕтĕм вăйран шартлаттарчĕ. Çурăм тăрăх пырса тивнĕ пушă вĕçĕ каялла туртăнчĕ. Тан Васли качака пек çухăрса аяккалла сиксе ÿкрĕ. Пушă вĕçĕ кĕлетке тăрăх тепре чашлатрĕ. Тарма тытăннăскерне хыçалтан çатлаттарчĕ те мучи хĕвел енне çаврăнса сăх сăхрĕ:

— Хĕрлĕ кĕнекерен кулнăшăн ку, канальă, партие таптанăшăн...

Тан Васли вите еннелле хурах кăшкăрса чупрĕ. Вăрмантан хир сыснисем тухрĕç. Те выляс, те тапăнас шутпа, тапрĕç сикрĕç çынна хирĕç. Вĕсене асăрханă бригадир чикелене-чикелене хăшăлтатрĕ, пусма тăрăх вите тăррине упăте пек вĕлтĕртеттерсе хăпарса кайрĕ. Ӳхĕрсе çитнĕ хир сыснисем пусмана силлеме пуçларĕç, тайăлтарса канава кĕмсĕртеттерчĕç. Тан Васли вите тăррине чи çÿле хăпарса ларчĕ, кăшкăрма тытăнчĕ: «Тархасшăн вилĕмрен çăлăр! Тан вĕт эпир — пĕр тăван. Эй, çынсем, тан пулар, тан пурнар. Пулăшăр!»

Максим Максимович пылчăкпа вараланнă партбилета çĕклерĕ, кĕсйинчен хаçат кăларса чĕркерĕ те Быстрова тыттарчĕ.

Пуç тăрринчи хура пĕлĕт çĕр çине пĕрчĕн-пĕрчĕн шыв силлеме пуçларĕ. Вĕсем, Карачăм мучипе сыв пуллашса, машинăна кĕрсе ларчĕç. Витерен илтĕнекен нăриклетнĕ сасăпа хир сыснисем пушшех асса кайрĕç, аялти пĕрене çумĕнчи çĕре йăштарĕç. Тан Васли хурахлатса вите тăрринче хăлат пек саркаланчĕ. Хăрăх тăрăллă юман тăрринчи çăхансем унталла пăхса кăранклатрĕç.

Райком шоферӗ Васлли Михалч ниепле те ахӑлтатма чарӑнаймасть:

— Сирӗнпе каллех кулӑш кустӑрмине лекрӗм, хэ, хэ, хэ...

— Камитне эпир лартман вӗт, — аптранӑ енне Быстров та кулса ячӗ. — Курас пулать ӗнтӗ курманнине. Итле-ха, Максим Максимович, эпӗ ҫакна ӑнланмастӑп, ниепле те пуҫра вырнаҫмасть пӗр япала.

— Тан Васлисем мӗншӗн партире тӑнӑ пирки пульха эс?

— Чӑн та, ҫавӑн пиркиччӗ. Партие илнӗ чухне ячӗшӗн пӑхатпӑр. Лайӑххах тишкерсен, ҫынна пурпӗрех пӗлсе ҫитме пулать.

— Пурне те пӗлейместӗн. Унашкал аппарат шухӑшласа кӑларайман этем.

— Аппарат аппаратах вӑл, ҫын — ҫынах. Тепӗр чухне куҫпа курсах кӗртсе яратпӑр вӗт: карьеристне те, эрех юратаканнине те, хитре хӗрарӑм ҫинчен ҫеҫ шухӑшлаканнине те, патшалӑха улталаса ҫаратма хатӗррине те. Акӑ, «Ҫӑлтӑр» председателӗ Маминов, райпо хуҫи Милов, икӗ тӗп врач... Рабочисемпе хресченсен процентӗнче тап-таса кӗленче пеккисем-им тата пурте... Сурӑх кӗтӗвӗ хӑваланӑ пек хӑвалатпӑр вӗт хамӑр мӑн ушкӑна, пушӑпах. Таҫта кайма ӳстерсе ятаҫҫӗ. Взнос пухса ҫак пысӑк аппарата тытса тӑма-ши, ун валли иртӗхсе пурӑнма, никамран чаплӑ канма майсем туса пама-ши? Туршӑн та, ҫавӑншӑнах. Обком пӗрмай хушать: тавай, тавай... Вӗҫӗмсӗр конвейер. Вӗреннӗ ҫынсем, уйрӑмах учительсемпе культура ӗҫӗнчисем, служащисен процентчӗ иртсе кайнипе, партирен аякра тӑрса юлаҫҫӗ. Пур вӗсен хушшинче тивӗҫлисем, пултаруллисем, нумай. Пуҫлӑх тесен вара... Коммунист пулмасан юрамасть вӗт пуҫлӑх пуканӗ ҫинче ларма, ҫирӗп ыйтма май ҫук-ҫке унран тетпӗр. Хурав ӳстермелле-ҫке унӑнне. Куҫа хупсах пуҫтаратпӑр тӗрлӗрен йӑхтӑр-яхтӑра хамӑр рете.

— Ҫыннисене партие кӗме те йӗркеллӗ хатӗрлесе ҫитерейместпӗр. Васкатпӑр. Обкома хӑвах отчет паратӑн:

ку уйăхра çавăн чухлĕ рабочи, колхозник, интеллигент... Ĕç тунă пек. Ятлакан çук. Ятлама вара пире, Семен Ильич, ятламаллах, халăхăн ятламалла.

— Эп хам та хирĕç те çав хăшне-пĕрне илме, мĕн тăвăн... Вырăнта йышăннă тейĕпĕр, процент тултарма е пуçлăх вырăнне йышăнма вăл питĕ кирлĕ, çавăнпа райком... Эп ĕçлеме пуçланăранпа пĕр кандидата — «Çăлтăрти» Белована хирĕçлерĕç. Урăх унашкалли пулман. Браксăр, пахалăх паллипе ĕçлетпĕр. Паллах, кĕрсе тулать: тивĕçли те, тивĕççĕрри те, — хуравларĕ Быстров.

— Эх, нушаланма тытăнатпăр вара хăшинпе. Партие илнĕ-çке ăна: юсамалла, сиплемелле, çын тумалла унран. Çăпан тупатпăр хамăра валли. Унсăрăн çуккă-шим лайăхрах çын, КПСС ретĕнче чăннипех пулма тивĕçли, — чышкипе чĕркуççинчен çапсах калаçрĕ Крутов.

— Пурри пур та çав, — кулса илчĕ Быстров, — пĕвере те темле пулă та пур та, çĕлен-калти те, шапи те, темле чĕрчун та... Халăхра та çавнашкалах.

— «Партире те темли те пур» тесшĕнччĕ-и, Семен Ильич?

— Пур, тĕрĕсех, пурин те билет пур: таса чунлин те, карьерисчĕн те, вăррин те, преступникĕн те...

— Хăтăлса пĕтейĕпĕр-ши Тан Ваçли йышшисенчен?

— Эх, Максим Максимович, Тан Ваçли мĕн вăл? Пешка кăна. Эс çӳлерех пăх, витĕртерех сăна. Королĕсем мĕн-мĕн хăтланнине курса-пĕлсе тăрас пулсан-и рядовой коммунистсем... Чăтать мăнтарăн билечĕ — такам аллинче те, — пĕшкĕнерех ларса пыракан Быстров тӳрленчĕ. — Çитрĕмĕр авă. Арăму, ачу кĕтет. Вĕсем мĕнле чăтаççĕ-ши пире, ухмах сутти туса çӳрекенсене. Вĕçлер пуль паянлăха ĕçе, тăххăр çывхарать. Пуçа пустуй çĕмĕрер мар, эпир улăштараяс çук вăл çирĕпленнĕ бюрократи йĕркине, çапах, лăпланса та ларар мар. Çавăнпа парти докуменчĕсем улăштарма хатĕрленетпĕр, партие тивĕççĕр элементсенчен тасатасшăн. Эх, шăласчĕ çуррине...

— Ятласса вара пире, Семен Ильич, чăннипех халăх ятлать, — терĕ Крутов. — Çуррине анчах мар шăлмалла та çав унтан...

Чылайччен чĕнмесĕр пынă Васли Михалч та хĕрсех каларĕ:

— Ятлать çеç-и? Кулать халăх, пӳрнепе тĕллесех: «Авă, коммунист ĕçсе супнă, вăн, пульшевик патшалăха çаратать, ха, партиец çăмăл ĕç шырать...» Тан Васли терĕç-и-ха? Мучийĕ юсарĕ-ха ăна, нателă пачĕ. Вĕсем, ялтисем, пĕр-пĕрне кутран та тапаççĕ, пуçран та шăлаççĕ. Çав Оманова мĕн тума тытса усратăр райкомра? Хамăн влаç пулсан-и, çав «шурă çурт» çывăхне те вунă çухрăма ярас çук. Хăвăра та намăс вĕт унашкал «улпутсемшĕн»? Халăх хушшине тухма. Çулпала эпĕ сирĕнтен чылай аслăрах ĕнтĕ, пурнăçра нумайрах курнă, çавăнпа мухтама та пултаратăп сире, тен, тепĕр чухне, юлташла асăрхаттарма та...

— Юлташла калани лайăх, вăл çынна шĕкĕ пек вăрттăн çини мар, — чарăннă машинăран тухма хатĕрленчĕ Крутов.

— Апла юмахласах пĕтерем-ха, — хыçалалла çаврăнчĕ шофер. — Çыннăн ун çынлах пулмалла çав, юта та, туса та кут хыçĕнче кăшламалла мар. Чарса лартма тивет хăшпĕр чухне сирĕн вырăнта ларса пыракан Оманов пек сар туталлă «революционерсене». Яланах вĕсем хăйсем çеç чаплă. «Хăвăр камсем-ши? Тĕнчере чи аслă, чи пултаруллă, чи таса çынсем пулсан, мĕншĕн ман хыçра силленсе çӳретĕр, тахçанах «чайкăсемпе» те «зилсемпе» ярăнмалла», — тетĕп те куçран, ах вара тута чăмăртама тытăнаççĕ. «Эс — ямшăк, политикăран аякра тăраканскер, ăнланмастăн пурне те, сан баранка пур, çавăрттар ăна, эпир мĕн хушнине пурнăçла», — теме юратать Панхристоф текенни. Çилленместĕп эп, ăшра çеç кулатăп хăйсенчен: «Эх, сăмса шывĕсем, халăх тинĕсĕнче ишекен парти карапĕ сире пулах шăтса путма пуçларĕ ĕнтĕ». Тата тепĕр юмах калам-ха. Çапла Ома-

новпа Тымара çитрĕмĕр. Хайхи паçăрхи мучи Панхристофа ыйту пачĕ: «Калăпăр, эпĕ турра ĕненеп. Мана кăмунисăма илеççĕ-и е илмеççĕ?» Тем тĕрлĕ те çавăрттарчĕ Оманов сăмаха, вара, тарăхсах лаплаттарса хучĕ: «Санашкал турра ĕненекене тамăка çеç илеççĕ!» Ӳкĕте кĕмен мучи çапла каларĕ: «Хăш алăкра тăратса хăваратăр-ши апла эсир пире, хура халăха? Хăвăр анчах кăмунисăмра ыр курасшăн пать. Пирĕнпе ăнланмалла чĕлхепе калаçма та вĕренеймен, пирĕн хушăра тымар яраймастăн. Вун виççĕмĕш числа пирки Хурăнварта тарланă çамку халĕ те типсе çитмен».

Васли Михалч калаçăва пат татрĕ те вĕсемпе сыв пуллашрĕ.

Райком шоферĕ хăйсене те майлăн тивертсе илнине туйнăскерсем ватă çăкасем хушшипе килĕсене васкаса уттарчĕç.

8

1973 çулхи ака уйăхне кĕнĕ тĕле Вăрманкас райкомĕ парти документĕсем улăштарма республикăра чи малтан хатĕрленсе çитрĕ.

Кунашкал пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕçе пĕрремĕш хут туса кураканскерсемшĕн пурте çĕнĕ. Нимле хавхаланусăр, сӳрĕк, пурнăç картĕнчен тухса ӳкме патне çитнĕ, ĕçкĕ урапи çине кĕрсе ларнă коммунистсене райкома чĕнтернĕччĕ. Вĕсенчен хăшин-пĕринпе Быстровăн та калаçма тӳр килчĕ.

«Шурăмпуçĕнчи» Муллин тракторист оргĕç пайне кĕчĕ те Быстровпа Крутова кушăрханă аллине пачĕ, унтан васкамасăр кăкăр кĕсйинчен çутă хутпа чĕркенĕ партбилетне туртса кăларчĕ, сĕтел çине хуллен хучĕ.

— Райком таранах ятлама чĕнеççĕ пулсан, эп... Эп партие нимле хур та туманччĕ те. Таса чĕрепех кĕтĕм. Çылăхсăр кăларăр, чăннипех тивĕççĕр пулсан. Акă кĕнеки, — терĕ вăл йĕрсе ярас пек.

Максим Максимович Мулла Микушне хăçантанпа ĕнтĕ пит лайăх пĕлет. «Шурăмпуçне» пынă малтанхи

кун ун комбайнĕпе ĕçленĕччĕ. Каярахпа вăл ĕçме пăрахнăччĕ. Ĕçре маттур. Йĕркеллĕ çын. Кăшт чакаланма юрататъ, çитменнине тата чĕмсĕртерех. Пăлханнăскерне лăплантарас тесе Крутов унпа юнашар ларсах ыйтрĕ:

— Ăнланмалларах каласа парăр-ха, хисеплĕ Николай Семенович, мĕн пулчĕ? Мĕнле пăван çыртрĕ? Сире, районти чи малта пыракан трактористсенчен пĕрне, партие савăнсах илтĕмĕр...

— Ан та калăр-ха, Максим Максимович, — ура çине сиксе тăчĕ Мулла Микушĕ. — Сирĕн умра мана мĕнле намăс. Иккĕмĕш хута хăпарнă чухне чĕркуççи чĕтрет. Паллакан-пĕлекен, хама пулăшакан юлташсем партирен кăларма хăйсем патне чĕнеççĕ те...

Хаш та хаш сывлакан арçынна Быстров лăпланма хушрĕ.

— Итлĕр, ăнлантарам-ха сире, Николай Семенович. Документсем улăштарма тытăниччен хăшпĕрисемпе куçа-куçăн калаçмалли йĕрке пур пирĕн. Аслăрах ĕçрисене секретарьсем чĕнеççĕ, ыттисене — пирĕн пеккисем. Мана та хушнă çав ĕçе тума. Эсир те лекнĕ авă списока, хавхаланусăррисемпе пĕрле.

— Воробьев лапăртататъ ăна, — тесе Муллин каллех ура çине тăчĕ. — Ун шучĕпе эп пассивлă коммунист ĕнтĕ. Тĕлĕнтерет. Пустуй мĕн павран унта кашни пухура? Пĕрмай пĕр юрă: «мобилизацилемелле... коммунистсене ответлă вырăнсене çирĕплетсе тухмалла...» Ахаль те ответлă çĕртех пуль эпир? Ĕçлетпĕр, тар тăксах кутĕрленетпĕр, тата мĕнле ответлăрах вырăн кирлĕ-ши пире... Хĕлле эп фермăра-çке, кормозапарникре. Çĕпре тумалли хатĕр ванчĕ. Юсамалла. Такама та каласа пăхрăм. Пурте сăмах параççĕ — установка пурпĕрех ĕçлемест. Вăрманкасран килекен çук. Чăтаймарăм, хамах кайса килтĕм, çĕмрĕк пайĕсене тутартăм, хам шутран. Çийĕнчен литр столичнăй ĕçтертĕм. Унсăр калаçмаççĕ те. Ялта укçине тӳлекен никам та çук. Тĕп бухгалтер Марков оправдательнăй хут ыйтатъ. Ман ăçтан тупас? Правленире хытах шавларăм пулмалла çав. Обкомран килнисем пулнă-мĕн вăл вăхăтра. Парторг çавăн хыççăн

тапăнма пуçларĕ мана. «Пухура эс шыв сыпнă пек ларан, правленире арçури пек çухăран, пире намăс кăтартан. Çиччас эп сана хура списока кĕртеп. Райкомра пуçран шăлмаççĕ», — тет. Паян çавăнпа фермăран хăваласах ячĕ. Ĕçĕ мăй таранччĕ. Кĕçех çур акине тухмалла.

— Ай, ку Воробьева, — пуçа пăркалать Быстров. — Ĕçкĕпе ашкăнакансене кĕртмен-ха списока. Малта пыракан колхозра вĕсем пушшех мала туха пуçларĕç-ха. Те укçи-тенкине ниçта хума пĕлмеççĕ. Тупнă вара вăл хавхаланусăр коммунист. Акă мĕн, Николай Семенович, кулянма пĕртте кирлĕ мар. Кунта эпир сире партирен кăларма чĕнмен. Ытах та пассивлах тет пулсан, кăтартăр хăвăрăн активлăхна тепĕр хут. Куçран, чĕррĕн çунтарăр айăплисене. Парти билечĕпе вара нихăçан та ан вылянăр. Кирлĕ-кирлĕ маршăн пули-пулми самантра çын умне кăларса хумалли, пемелли япала мар вăл. Коммунистăн ăна упрама, чыслама, унпа мухтанма пĕлмелле. Мейĕр, çирĕп çăрапа питĕрсе хурăр чĕрӳ çумне. Халĕ кайăр та яла, ним пулман пекех, ним шухăшламасăрах ĕçлĕр. Авă, чăнах та çуркунни чӳречерен шаккать, уя чĕнет. Пирĕн паян лармалла-ха, ĕç нумай — пӳлĕм ĕçĕ. Тепре куриччен — çĕнĕ билет иличчен.

Воробьев пек тарăн шухăшламасăр çынсен пурнăç шăпине татса парас текен парторгсем татах тупăнчĕç. Райком вĕсене вăхăтра тӳрлетрĕ. Çĕнĕ партбилет илме тивĕççĕррисем алара тытăнса юлкаларĕç. Маминовпа Миловсемшĕн çеç алара та шăтăк тупăнчĕ. Крутовшăн çав ала ытла шултра пек. Тен, Карачăм мучи шухăшланăкĕтнĕ пек чăннипех чистка туса мĕнпур йăхтăряхтăртан пĕр шеллевсĕр тасалса шанчăклă çирĕп вăй çеç сыхласа хăвармалла? Анчах çӳлтен хушнинчен иртейместĕн. Ĕçе лайăх хатĕрленĕшĕн Быстрова шупашкарсем ырларĕç. Крутов та, пуçра иккĕллĕ шухăш пур пулин те, хĕпĕртенĕ. Ара, «Шурăмпуç» коммунисчĕсене районта чи малтан партбилет улăштарма ирĕк пачĕççке. Сахал мар вăй хучĕ вĕт вăл уншăн.

Ирхине вунă сехет тĕлне тарăнварсем Вăрманкаса колхоз автобусĕпе çитрĕç. Райком çурчĕн аялти хутĕнче вĕсене ăшшăн кĕтсе илчĕç. Коммунистсем пурте килнĕ. Парти гимнĕ — «Интернационал» янăрать. Аял хута çĕнетсе капăрлатнă. Акă район кăтартăвĕсем çумне колхоз ӳсĕмĕсем çинчен калакан уйрăм уçнă. Çак чаплă кун тĕлне тарăнварсен савăнмалли-савăнтармалли нумай: сĕт сăвассине ӳстернĕ, аш-какай планне тултарнă, çур акине хатĕр.

— Çанталăкне те заказ панă пуль эсир паян, ирех хĕвел çунтарать, — Быстрова алă тытнă май шӳтлесе илчĕ Волков. — Çĕнĕ билетпа хăть тӳрех уя — кĕрешĕве тух.

— Пĕлетпĕр эпир кампа çирĕп çыхăну тытмаллине, — пӳрнине çӳлелле тĕллесе аслати сасси кăларчĕ Быстров.

Хут-хĕте тĕрĕс çырнипе çырманнине кашниех оргĕç пайĕнче пĕрерĕн-пĕрерĕн тĕрĕслерĕ, райком секретарĕ патĕнче калаçура пулчĕ. Ирĕкленнисем политвĕренӳ пӳлĕмĕнче Ленин сăмахне магнитофонпа итлерĕç. Кăнтăрлапа пурте пĕрремĕш секретарь патне хăпарчĕç. Вĕсемпе пĕрле унта бюро членĕсем, райкомра ĕçлекенсем кĕчĕç. Кăмăллă пит-куçлă Мургаев хăй вырăнĕнчен çăмăллăн тухса мăнаçлăн калаçма пуçларĕ:

— 1973 çулхи çĕнĕ йышши пĕрремĕш номерлĕ партбилета Совет Союзĕнчи Коммунистсен партине туса хуракане, Аслă çул пуç Владимир Ильич Ленин ячĕпе çырса хунă. Вăл кашни коммунист чун-чĕринче. Пирĕн партин кашни членĕ — Ленинăн пĕр пайĕ. Паян, çĕнĕ партбилет илнĕ май, сирĕнтен кашниййĕн çакна чунчĕрере тепĕр хут тарăнрах туйса тăмалла, пурнăçра хăвăрăн вырăна тĕрĕс палăртмалла. Ленин пек ыйтнине ĕçре мĕнле пурнăçланине пуçра виçсе пăхмалла. Ленинăн пĕр пайĕ пулма çăмăл мар, анчах унăн пĕр пайĕ пулмасан, коммунист та пулаймăпăр...

Çак сăмахсене итленĕ самантра Павăл Фомич çумра тăракан шăллĕне айăкран кăлт тĕртрĕ. Петĕрĕ пиччĕшĕн аллине хыттăн чăмăртаса тытрĕ. Пиччĕшĕ шăллĕне мĕншĕн асăрхаттарнине Максим Максимович сисрĕ.

Механизаторсен партгрупоргĕ никама та хĕрхенсе тăмасть. Воробьевсем кунта тăваттăн. Хăйсеннех çемьери партгруппа пулать.

— Пирĕн парти билечĕ çинче хăть те хăш номер пулсан та, пĕрремĕш номерлĕ партбилет Владимир Ильичрине, парти билечĕ çине çул пуç сăнне ӳкернине, унăн «Парти вăл — пирĕн самана ăсĕ, чысĕ тата совеçĕ» тесе çырнă сăмахсене нихçан та манма юрамасть. Ленин партийĕн членĕн аслă ятне çӳлте тытăр! — çирĕп сасăпа вĕçлерĕ Мургаев.

Çĕнĕ йышши партбилета Яков Сидорович районта чи малтан Волкова пачĕ.

— Паян çак чаплăран чаплă, хаклăран та хаклă кĕнекене кăкăр çумне хунă май, çакна калас килет, — терĕ Тельман Федотович. — Вăхăт çитсен, тен, парти документсене татах улăштарĕç. Ĕç ун çинче мар. Билета ăна улăштарăпăр, анчах чĕрене, чуна улăштарар мар. Яланах вăл коммунистла вĕри çунтăр, яланах вăл тĕнче илтĕнмелле кĕрлесе тапса тăтăр.

Çак паллă куна Крутов «Çăлтăрти» коммунистсене те аванах хатĕрлесе çитерненччĕ. Анчах тымарсен район валли ĕç парни пулмарĕ. Çавăнпах-ши, тен, вĕсем райкома килнĕ кун хĕвелĕ те çиçмерĕ, кунĕ те çумăрлăрахчĕ. Тĕнче тытăмĕнче пурте çыхăнуллă, пулăмлă иккен, ырри валли ырлăх, усалли валли хурлăх ӳкет çӳлтен.

Çĕнĕ билет илнĕ кун Крутовсен килĕнче уявччĕ. Мария Николаевна ĕçрен васкаса таврăнчĕ, ахаль те йĕркеллĕ пӳлĕмсене тата тепĕр хут майласа тухрĕ, урай сĕрсе кайрĕ. Бориса садикран маларах илсе килчĕ. Иккĕшĕ те вара яланхи пекех чӳречене тăрăнчĕç. Кĕтсе ывăннипе миçе хутчен çакăнтах тĕлĕрсе кайман-ши вĕсем? Канмалли кунсенче мăшăрăн-мăшăрăн утакан упăшкисемпе арăмĕсене епле ăмсанса сăнаман-ши? Мĕншĕн çуккă-ши ун упăшкишĕн шăмат кунпа вырсарни кун? Пысăк праçниксенче çынсем виçшер-тăватшар кун пĕрле савăнаççĕ. Мария Николаевна çеç

ывӑлӗпе вӗҫӗмсӗр вӑхӑт шутлать. Хӑнӑхрӗ ӗнтӗ савӑк кунсене кӗте-кӗте ҫунтарма.

Тарӑхса та пӑхнӑ вӑл. Кӗвӗҫӳ текен кӗве хурчӗ те ун чӗрине кӑшларӗ. Такамӑн усал алли упӑшки ҫинчен ҫӑхав ҫырса килти почта ещӗкне ярса хӑварнӑччӗ. Макҫӑм яла командировкӑна кайнӑччӗ. Аякри колхозран час таврӑнаймарӗ, ҫурҫӗр иртрӗ. Фермӑра ҫӗнӗ партгруппа тунӑшӑн хӗпӗртенӗ Макҫӑм, хваттерне кӗрсенех арӑмне ыталаса чӑмӑртасшӑнччӗ... Хирӗҫ тухакан, чупса пыракан пулмарӗ. Ҫавӑнпа вӑл хӑвӑрт-хӑвӑрт хывӑнчӗ те, ҫывӑрмалли пӳлӗме кӗчӗ. Пӗчӗк сӗтел хушшинче арӑмӗ ӗсӗклесе ларать. Тумтирӗпех. Кравачьне те тӗкӗнмен. Макҫӑмӑн тахҫан ҫырнӑ ҫырӑвӗсем ҫине куҫҫуль тумламӗсем тӑкӑнса чарнилӑна сарса янӑ.

Нимӗн те ӑнланман Макҫӑм арӑмне хыҫалтан ыталаса тытма шутларӗ. Маруҫ вӑрт ҫаврӑнчӗ те упӑшкине аҫа-ҫиҫӗмле куҫпа ҫунтарчӗ:

— Ултавҫӑ! Мана колхоза каятӑп тесе суйса пурӑнать. Икӗ пит! Люда тупнӑ-ҫке вӑл, ҫамрӑккине. Ӑҫта кайса кӗрес? Хама намӑс сан умӑнта. Акӑ вула, савӑн! Лӳчӗркенӗ хут татӑкки Макҫӑма питӗнченех лекрӗ. Ӑна вӑл вуласа тухрӗ. Унтан арӑмне вӑйпах юнашар лартрӗ, обкома ҫырнӑ ҫӑхав ҫинчен каласа пачӗ. Почеркӗ кунта та пӗрех — Тан Ваҫлиннех.

Ҫӗр ҫыврасси пулмарӗ: Маруҫ та, Макҫӑм та иккӗшӗ тӗл пулнӑ кунран пуҫласах хӑйсен пурнӑҫне мӑйӑр шӗкӗлченӗ пек шӗкӗлчесе тухрӗҫ. Маруҫ темиҫе кунран тин лӑпланнӑччӗ. Ҫӑхавра суйнӑ пек упӑшки ют хӗрарӑмсемпе асса ҫӳрет тенине ӗненмест халӗ, ун ҫинчен шутламасть те, ӑна шанса, ӗненсе пурӑнать.

Акӑ вӑл, вӗсен юратнӑ ҫынни, пысӑк ҫул хӗрринчи шыв ҫисе ишӗлтернӗ тротуар тӑрӑх чупнӑ пек сиккелесе анать. Яланахваскать Макҫӑм. Яланах Маруҫ упӑшкин пит-куҫӗнче кӑмӑллӑх кулли курать. Вара кӗтсе ывӑнни те, тарӑхни те йӑлтах иртсе каять. Борис та асӑрхарӗ ашшӗне, сисмен хушӑрах тулалла тухса сирпӗнчӗ.

Хăш вăхăтра ашшĕн ĕнси çине улăхма ĕлкĕрнĕ вăл? Иккĕшĕ те алăкран «Интернационал» юрласа кĕреççĕ:

Тапран, чура тĕнчи, хастаррăн,
Çитет выçса асапланма!
Çунать ăс-хакăл шĕл кăваррăн,
Чĕнет хаяррăн çапăçма.

Борис ашшĕне сылтăм хăлхинчен туртса кухньăналла уттарать:

— Но, лаша! Но, чула, малалла! Çитет выçса асапланма. Яшка сивĕнет. Но-о!

Арăмĕ ăна ыталасах саламларĕ.

— Пире те манса ан кай, парти чури, кăтарт-ха çĕнĕ билетна?

Макçăм кăкăр кĕсйинчен хĕрлĕ кĕнекене асăрханса кăларчĕ.

— Анне, анне, пăх-ха, Лелин мучу...

— Малтанхинче çуккăччĕ, Ленин мучу тунă парти çав вăл. Çавăнпа унăн сăнне ÿкернĕ билет çине.

Бориспа амăшĕ çĕнĕрен çĕнĕ ыйту параççĕ:

— Эс те вилместĕн, атте. Нихçан та-и?

— Чăн-чăн коммунистсем яланах чĕрĕ, пĕчĕк ывăлăмçăм, яланах вилĕмсĕр.

— Улла! — ашшĕ çинчен урайне сиксе анчĕ Борис. — Вилмеспĕл!

Макçăм та коммунист текен çынна чи малтан килте курнăччĕ. Пĕчĕк Макçăмшăн ашшĕ пĕрремĕш вăйлă çынччĕ. Ашшĕн партбилетне курсан ыйтнăччĕ: «Атте, ма пĕрмай кĕсьяра чиксе çÿрен эс ăна?» «Парти билечĕ вăл, ачам. Унран хакли маншăн ним те çук. Мана вăл вăй пĕтсен те вăй парать, чĕре уксахлама тытăнсан та ун таппине хăвăртлатать, пĕтĕм чуна ăшăтать. Çавăнпа çумран уйăрмастăп», — тесе ывăлне алă çине çĕкленĕччĕ Кăра Макçăмĕ. Пĕчĕк Макçăм ашшĕн билетне пир кĕпе ăшне, чĕре çумне хурса пăхнăччĕ, савăннипе кăшкăрсах янăччĕ: «Чăнах та ăшă! Атте, пар мана ăна? Вара эп те нихçан та шăнмăп». Ашшĕ ачана пуçран шăла-шăлах

каланӑччӗ: «Çынна парсан ӑшши пӗтет çав унӑн. Ӳсӗн, ак, Максӑм, мӑн çын пулӑн, чӑн-чӑн çын, вара сана та парӗç çак пурнӑç кӗнекине. Халь кӳр, хам кӗсьерех упрам. Уншӑн — эп хуравлӑ».

Чӑн-чӑн çынах пулчӗ-ши унран? Çак ыйту çине вӑл халӗ те тивӗçлӗ хурав параймасть-ха. Ку таранччен сахал мар курнӑ ӗнтӗ. Юратнӑ ашшӗпе амӑшӗ, партие кӗме сӗнӳ панӑ çынсем, совпартшкулта, партшкулта вӗрентекенсем, Тельман Волков, Воробьевсем, Каргин, Быстров... пурте, пурте вӗсем Максим Максимович асӗнче. Пурте вӗсем уншӑн — чӑн-чӑн çынсем, чӑн-чӑн коммунистсем. Поэт каларӑшле вӗсем пурте «мӗльюн пӳрнеллӗ, сулмаклӑ, çапса аркатас пек çӗкленнӗ алӑ, хӗссе хытарнӑскер пӗр чӑмӑра». Çав чӑмӑрта — парти вӑйӗ. Çав чӑмӑртах — вӑл хӑй те. Крутовшӑн парти — пӗтӗм пурнӑç, нихçан улталами пӗртен-пӗр шанчӑкӗ. Хӑй те вӑл ӑна нихçан улталама шутламасть.

9

«Шурӑмпуç» колхоз председателӗ Волков тымарсене пулӑшма пынӑччӗ. Унта вӑл тусне, Крутова, тӗл пулчӗ. Шоферне вӗсем Вӑрманкаса ячӗç те хӑйсем çуран тухма шутларӗç.

— Канашлура та машинӑра вӑхӑт иртет. Капла ура уссине курмасӑрах вилес пулать. Вӑт пурнӑç... — пӗчӗк ачалла сиккелесе илчӗ Волков.

Канав урлӑ сиксе каçнӑ Крутов кӑчӑк туртрӗ:

— Çит-ха хӑваласа!

Çамрӑк хунавсем хушшипе явкаланса выртакан хӑйӑрлӑ сукмак тӑрӑх Максим Максимович малалла вирхӗнчӗ. Волков та мӗнпур вӑйне пухса ун хыççӑн чупрӗ, анчах хуса çитеймерӗ. Юхан шыв хӗрринче Максӑм ахӑлтатса кӗтсе тӑрать.

— Эс те çав, çу ӑшне путнӑскер, çамрӑклах пӳлӗнен. Чӗрӳ тапма чарӑнмарӗ-и? Тытса пӑхам-ха?

— Хамах туяп самӑрӑлма пуçланине. Иксӗмӗр Санар улӑхӗ тӑрӑх чупнӑ чух юлмастӑмччӗ санран, иртсе те кайнӑ.

— Вăл вăхăтра каччăччĕ çав, халь — ик ача ашшĕ. Тата темиçе çултан эс утса та çӳрейми пулăн? Атя, майĕпен шутарар.

— Сывлăш пӳлĕнчĕ. Эс вара малтанхи пекех, шухăлăхна çухатман.

— Çухатас темесен шухăлăх вăл виличченех хамăрта, ак кунта, — чышкипе кăкăрне çапса кăтартрĕ Макçăм. — Кам хăйне мĕн чухлĕ лăпкăрах тытать, ирĕке ярать, самăрлать — çав çавăн чухлĕ маларах йӳтет.

— Эс манах ятласа пыран-ха, — пӳрнипе юнарĕ тусĕ. — Ăнланатăп шухăшна.

— Апла пулсан итле: эсир — президиумсемпе ларусенче ларса мала тухакансем, хырăм тăрăх пăхса, пуçа каçăртса эпкамлатакансем...

— Унашкал бюрократсен миххине ан персе чик-ха мана, — тутине тăсрĕ Волков. — Çитес çул отпуска вăрман ялне килсе, Карачăм мучи патĕнче пĕрле, çемьесемпе, канăпăр.

— Аванччĕ, — чеен пăхрĕ ун çине Крутов. — Каннă хыççăн Тымара яланлăхах тымар ярсан та чаплă пулмалла.

— Авă ăçталла кукăртатăн?

— Пултаран эс вĕсене ура сыртарма. Улăх-çаран мĕн чухлĕ. Выльăх-чĕрлĕх ӳстер те ӳстер.

— Сĕнĕвĕ лайăх. Паллах, çĕклеме пулать «Çăлтăра», анчах хăйсем мĕн тăваççĕ? Эпир никама та кĕтсе ларман, хамăрах тăрăшса ĕçленĕ. Çĕр çине хресчен куçĕпе пăхнă. Çĕр ĕç культури çынран килнине, çĕр çыннинчен пуçланнине тĕрĕс ăнланнă. Тăпра пире хăй тĕллĕнех ылтăн пучах параймасть. Ылтăн алă, ылтăн пуç пулăшнипе çеç пирĕн ывăç тупанĕ çинче йăлкăшать вăл. Астуха, гектар пуçне тырă вунă центнер те илейместĕмĕр. Паян пăх-ха? Вăтăр пиллĕк. Малашне хĕрĕхрен ирттермесен, аш-какайпа сĕт тухăçлăхне икĕ хут ӳстермесен, çак пуян çĕр çинче утса çӳреме те намăс пире.

— Тĕрĕс калатăн, — унпа килĕшсе утрĕ Крутов. — Пуш параппан çапакан çын мар эс, халăх вăйне те,

хăвăнне те хресчен чунĕпе туятăн. Çавăнпа колхозу та район пăхаттирĕ пулса тăчĕ. Çав хушăрах районти çичĕ колхоз ак çак кукăрălса, тайăлса ӳсекен çăка пек. Малалла кайма пулăшаймасан эпир çав хуçалăхсене, пире вара...

Çул тăрăх çавра çил пĕтĕрĕнсе, явăнса, пĕлĕте тусанлă хăйăр çĕклесе çывхарать. Вĕсенчен аяккарах уласа иртсе кайнă хыççăн сывлăш хумĕ йывăççем хӳттинчи сукмак çине те пырса çапăнчĕ.

— Начар ĕçлесен çав çавра çил пире те шăлса ывăтать, — пичĕ çинчи тусана тасатрĕ Крутов. — Хальлĕхе унăн хумĕ лăпкăн çеç пырса тиврĕ-ха.

— Çапли-çаплах, — килĕшрĕ Волков. — Ĕçлес пулать. Пулăшмалла, çĕклемелле вĕсене, Тымарта та çавăншăнах эрне пурăнтăм. Çавра çил ăшне лексен те хамăрăн тымара кăклаттарма парар мар. Çирĕп тăрар çак çĕр çинче.

— Акă çитрĕмĕр те. Нумай та вăхăт иртмерĕ — сехет çурă çеç. Якши кантăмăр-и?

— Санпа, ача, канăн. Пăсăлсах кайнă эс. Юсама хам пата чĕнмелле пуль. Тепре пĕрле ĕçлер мар-и?

— Шухăшласа пăхма юрать, — терĕ Крутов хваттерне кĕнĕ май.

Калаçура Маруç, хӳтлĕх тупса-ши, сăмаххипе Макçăма чĕрĕ вырăнтанах лектерчĕ:

— Упăшка тени анчах ĕнтĕ. Ĕçпе аппаланса кил çинчен манса кайрĕ те. Çынсем савăннине куратăп та...

Маруç ăшран тарăхса мар, кӳтнĕ чунне кантарма кăшт çеç каланине ăнланчĕ Тельман Федотович, вара вăл чĕнмесĕр ларакан тусне куçран пăхрĕ.

— Арăмсем «упăшка ячĕшĕн çеç» тесе хăçан ӳпкелешнине туятăн-и, парти салтакĕ? Хĕрарăм хăйне ачашланине, упăшка çумра пулнине юрататъ, арçын вăйне хаклатъ. Пĕтĕм вăй-хала ял-ял тăрăх сапаласа киле валли хăвармастăн пулать, тем. Ай-яй. Эс ĕнтĕ, Макçăм, ĕçе хĕрарăм йăпанулăхĕпе улăштармастăп тесе шутлатăн пуль те...

— Ĕçĕ те, йăпанăвĕ те пулмалла-ха пурнăçра, пĕрпĕрне вĕсем çĕклентерсе, пуянлатса çеç пымалла, — терĕ Крутов.

Хĕрелнĕ питне аллисемпе хупларĕ те Маруç, сăмахĕсене хыпăнсах тӳрлетме пуçларĕ:

— Тельман, эс таçталла ан кĕрсе кай-ха, пуçласа пар сире, арçынсене, калаçу, ялан хĕрарăм çемçелĕхне таптама хăтланатăр. Ытакласси-чуп тăвасси пирки мар эп. Килте сахал пулать вăл. Бориса та çывăрнă чух çеç курать. Çынсем ĕçе саккăр çурăра каяççĕ, вăл пур — Мускав чанĕпех тухса чупать. Пурте киле улттă иртсенех таврăнаççĕ, вăл — çĕрле. Эрни-эрнипе, уйăхĕ-уйăхĕпе тăсăлать çавнашкал пурнăç. Йăлăхтарсах çитерет. Тунсăх пусать. Тăр вара çав чӳрече умĕнче упăшка çулпа анасса кĕтсе. Канмалли кунсенче килте тетĕн-им эс ăна? Мĕн те пулин тупăнать ун валли. Те пĕчченех ĕçлет райкомĕнче? Район ĕçĕ ĕмĕрте те пĕтмĕ вăл? Унăн, тупата, авланма та кирлĕ пулман. Янраса çӳремелле ирĕклĕн. Никам та кĕтмест килте, никам та сăмахламасть. Пĕр пуç — пĕр хуйхă. Кĕнеке вулама пăрахрĕ.

— Ăçта вăхăчĕ? — çиллессĕн хушса хучĕ Макçăм.

— Парти ĕçлевçисене пурне те санпа танлаштарас пулсан, çаплах шутлатăп: ăс-хакăл шайĕ, шухăшлав пултарулăхĕ сирĕн, илемлĕ литература вуламасан, чухăнланса, хытса пырать. Интеллект мар, хăртеллект — хăрнă политикан пулса юлатăр. Политиздат кĕнекисемпех этем чунне вăратаймастăн, ун чĕрине ăшăтса кăмăлне çĕклентерейместĕн, унăн илемлĕх тĕнчине кĕрейместĕн, — чĕлхе пушшипе тивертрĕ упăшкине Мария Николаевна.

Арăмĕ малтанхи çулсенче кунашкал калаçманнишĕн савăннăччĕ Крутов, вăл хăйне, хăйĕн ĕçĕнчи пур япалана та хăй пекех ăнланать тесе шутланăччĕ. Халĕ, çуркунне, кӳтсех çитнĕ-çке чунĕ. Ха, тăрăшсах юрлать тунсăх юррине. Пĕччен чухне те мар, юлташĕ умĕнче хăртать. Йăнăш сăмах çук-ха, пурте тĕрĕс. Ĕçе пĕтĕм вăя, вăхăта пама тăрăшни райкомшăн, паллах, усăллă. Килшĕн, çемьешĕн, сывлăхшăн... Начар! Усăллине мала хунипе вăл паян юратнă арăмĕнчен выговор илчĕ.

Çапла шухăшласа Макçăм арăмне пуçĕнчен ачашларĕ, унăн куçĕ айне шăрçаланнă çутă тумламсене шăлса тасатрĕ.

— Çемьене, чăнах та, маннă. Каçар мана уншăн. Ĕçлеме пĕлменни, хамăр ĕçе йĕркелеме пултарайманни пĕтерет. Çавă çеç, — çурма сасăпа каларĕ кил хуçи.

Тельман Федотович ун çумне пырса тăчĕ те Макçăма çамкинчен пӳрнепе ыраттармаллах шаклаттарчĕ:

— Паçăрах çапла уçса памалла та чунна. Ман та, сан та пĕр чирех иккен. Пурнăç кашни кун, кашни сехетре хамăр ума кăларса тăратакан нумай-нумай ĕçрен чи кирлине, чи усăллине илме пĕлменнинче пирĕн инкек.

— Çаплах, тусăм, — сиксе тăчĕ Крутов. — Пур ĕçне те час тумалла. Пурте васкавлă. Пурте васкатаççĕ...

— Эх, вăхăт çитменнипе аптăракансем! — кулчĕ вĕсенчен Маруç. — Хăвăра хăвăр «эпир кам — хуçа!» тетĕр пуль. Хуçан вара пур ĕçе те хăйĕн тумалла-и? Ман упăшка пек?..

Тельман Федотович алăкăн-тĕпелĕн кумса, çамкине тытсах калаçрĕ:

— Сан Макçăму пек пурте ĕçлес пулсан-и? Кĕнеке вулама та, арăмсемпе выляма та вăхăт ытлашшипех пулмалла та пирĕн. Çук çав, ĕç çине пурте пĕрешкел пăхманнипе, çитменнине тата хăйсем пирĕн ĕçе туртса илнипе нушаланаççĕ вĕсем. Эпĕ хам та тем чул ĕç вăхăтне тухăçлăрах майласшăн. Çапах пулса пĕтмест. Ахальтен шуралса-кăвакарса пырать тетĕн-и, Маруç, упăшкун çӳçĕ? Тăнлавĕсем епле ылтăн-кĕмĕлĕн йăлтăртатаççĕ? Çӳлтен хытă пусаççĕ çав, ыйтаççĕ... Тĕрĕс. Апла тăк, пирĕн те çирĕпрех ыйтмалла. Ыйтатпăр, хĕстеретпĕр. Ку та тĕрĕс. Анчах та, ялан унпах та пулса пĕтмест. Хăвăн та тухса кайма тивет çав çынсем патне: пулăшма, ĕçе йĕркелеме. Такам вырăнне те ĕçлесе пăхатăн. Паян та, авă, Макçăмпа тымарсен тăпра карттине майлаштартăмăр. Мĕн тăвăн,

Маминовсем маннӑ, чун чӑтманнипе ирӗксӗрех пирӗн вӑхӑта ирттермелле уншӑн.

— Вӑхӑчӗ вара пире кӗтмест, — стена еннелле пуҫне пӑрчӗ Макҫӑм. — Шӑвать, малаллах каять, сехет йӗппи те куҫать, вун пӗр ҫинче. Ҫывӑрмалла, канмалла. Ыран ирех — ӗҫе. Маруҫ, авӑ, диван ҫинех вырӑн хатӗрлет. Венерӑнни пек тӗк тӳшек ҫине хумастпӑр сана, Тельман, мамӑк ӑшӗнче ҫывӑрса юласран шикленетпӗр.

— Вӑхӑтран-и?

— Аха, вӑхӑт уттинчен.

— Ыранхи кун хама та хӑратать. Шупашкара канашлӑва каймалла, каҫхине — партпуху...

Вырӑн сарса пӗтернӗ Маруҫ вӗсем патне пырса каларӗ:

— Сахалтарах канашлӑр. Пирӗн те ҫав пухусемпех ҫӗтет. Тепӗр чухне ӗҫсӗр аптранипе чӗлхе тӑррине якатса лараҫҫӗ пуль тетӗп. Кай, ӗҫ марах.

— Унсӑр та май ҫук ҫав, — ӗнсине хыҫрӗ Волков.

— Эх, эсир, чӑтман чунсем. Унти ӗҫе те тӑвӑр, килтине те ан манӑр. Макҫӑм, итле-ха, стенка туянмалла вӗт пирӗн. Палас кирлӗ. Бориса костюм илсе памалла. Аш пӗтнӗ. Шӑмат кун каятпӑр-и лавккасене?..

Макҫӑм арӑмӗн хӑлхинчен пӑшӑлтатрӗ:

— Шӑмат кун райком пленумӗ пулать, унтан — колхоза...

## 10

КПСС Чӑваш обкомӗн пӗрремӗш секретарӗ Ҫӑханов вилнӗ каҫ Яков Сидорович Мургаев тӗлӗк курса выртать. Кӑтра шурӑ пӗлӗтрен ҫекӗлпе ҫаклатнӑ вӗрен пусма тӑрӑх шуйттансем ҫӗре анаҫҫӗ. Хӳрисемпе пӑлтӑртаттарнипе сывлӑш хумханать, пит-куҫа хӑрушшӑн уҫӑлтарса ярать. Анчӗҫ те шуйттансем сада, уҫӑ чӳречерен упӑтесем пек чалт та чалт сикрӗҫ. Пӗри, Явкаланчӑк картунӗнчи лесникӑн хура-шурӑ пӑрушне аса илтерекенни, Яков Сидоровича сивӗ аллине тӑсса пачӗ те, хырӑма каҫӑртса сӑмах каларӗ:

— Район патши Мургай! Тамăкри тăвансем хушнипе сире илме килнĕ делегаци. Делегаци пуçлăхĕ — Чансаслов. Делегаци членĕсем — Урраурраев, Хамамалтанов, Калтанов тата Хӳрешкин! Паллашăр!

Шуйттансем кам ăçта пĕлнĕ, çавăнта хăпара-хăпара ларчĕç. Чансаслов утиял айне кĕчĕ те выртрĕ, чĕтреме ернĕ Мургаев хăлхинчен пăшăлтатать те пăшăлтатать:

— Яков Сидорович, хăвăртрах тăрăр! Обком секретарĕ пулас тесе пустуй ан ĕмĕтленсе выртăр. Сире пурпĕрех лартмаççĕ унта. Эпир çӳлтен йăлтах куратпăр, пĕрремĕш секретарь кам пуласса та пĕлетпĕр. Ватă халĕ эсир. Унта тăн ытларах кирлĕ теççĕ. Пирĕн патра пĕр вырăн пушаннă, тамăк лаççинче вакантлă вырăн пур. Пĕри унтан ĕнер рая куçрĕ. Хисеплĕ ĕç. Кăтартатăр хăвăра лайăх енчен, çӳлерех хăпаратăр, рай та çывăхланать. Тулĕк кунта ĕçленинчен ытларах тарлама тивет. Райкомри пек пумушниксем çук.

Çамки çинчи кантăр пĕрчи пек тарне простынь аркипе шăлса илет те Мургаев, шуйттана пăчăртаса тытать:

— Кала хăвăртрах, мĕнле ĕç?

— Çĕр çинчен килекенсен чунĕсене йышăнаканни, сăра-эрехпе кĕтсе илекенни пулатăр.

— Суймастăн-и?! — хытăрах та хытăрах пăчăртать Мургаев шуйттана.

Чансаслов ниçта кайса кĕрейми çухăрать, хăйне нушалантараканскерне питрен чавать те урайне тăрст! сикет. Яков Сидорович хăрушшăн кăшкăрса вăранса каять, суракан питне хыпашлать, утиялне сирсе пăрахать — никам та çук. Телевизор, комод, шифоньер çинче те пĕр шуйттан курăнмасть. Урайĕнче çеç хура кушак куçĕсем ăна хирĕç симĕссĕн-шенкеррĕн çунса пăхаççĕ.

— Ну сана, Васька! — тарăхнипе минтерпе шаплаттарчĕ кушак аçине Яков Сидорович. Минтер кушака лекмерĕ, арăмĕн алăкран мăкăртса кĕрекен тулли кăкăрĕ çине пырса выртрĕ.

— Ку тата мĕне пĕлтерет? — тĕлĕннипе лак ларчĕ арӑмĕ. — Пĕтрĕ пуҫ. Старик выляма пуҫларĕ. Тĕнче. Пӑхӑр-ха ӑна, пӑхӑр? Ĕнер питне такам майрине чавтарса килнĕ те, ир манпа пĕчĕк ачалла вылять. Тен, тӑрса ыталаса та илĕн?

Яков Сидорович ҫамкине икĕ аллипе пӑчӑртать, тĕлĕкпе, кушак чавнипе ахаль кӳтсе ҫитнĕскер, арӑмĕн шӳтне те йышӑнмасть, ӳсĕре-ӳсĕре ҫĕтнĕ сасӑпа урмӑшать:

— Камӑн мĕн ыратать, камӑн мĕн шухӑш ĕнтĕ. Каккуй юрату, ыталашу халь кунта? Тĕлĕкре шуйттансемпе аташса выртнӑ. Леш тĕнчерен илме килчĕҫ вĕт. Уф! Ҫурӑм сӑрлататъ аса илнипе. Ырра мар ку тĕлĕк.

Арӑмĕ ун патне хуллен утса пычĕ, минтерне хучĕ те юнашар ларчĕ, упӑшкин пĕркеленнĕ, шӑртлӑ пит ҫӑмартисем тӑрӑх ҫемҫе пӳрнисемпе сӑтӑрчĕ.

— Эх, старикĕм, старикĕм. Итлеместĕн мана. Кун пек ĕҫсен тĕлĕкре мар, кӑнтӑрлах чĕркуҫҫи ҫинче ташлакан пулаҫҫĕ, ак, шуйттанусем. Хӑҫантанпа урӑ курман, хӑҫантанпа ыталаман сана. Ҫамку сип-сивĕ. Вилнĕ ҫынӑнни пек. Кашни ир каласа яратӑп: ан ĕҫ. Ĕнер каллех Вьюновпа шофер аран сĕтĕрсе кĕчĕҫ. Ҫынсем пек киле ҫуран таврӑнас пулсан-и? Пĕтрĕ пуҫ. Утса ҫитейместĕн вĕт. Латнӑ машинӑпа илсе каяҫҫĕ, машинӑпа леҫсе хӑвараҫҫĕ. Ҫын-мĕн курмасть.

— А какшĕ, первӑй вĕт эп, — хӑпартланчĕ Мургаев. — Вĕсем — ман тарҫӑсем.

Арӑмĕ ӑна куҫĕнчен пӑхса малалла каларĕ:

— Ытлашши ан хӑмпӑлан, Якку. Кала-ха, кам ĕҫтерчĕ ĕнер сана? Мĕн тума? Кама чавтартӑн питне? Э? Калатӑн-и, каламастӑн-и?

Унталла-кунталла пӑркаланчĕ Яков Сидорович, тӑрасшӑн пулчĕ, арӑмĕ пӑталаса тытнипе лӑпланчĕ, суймасӑр ӑнлантарчĕ:

— Кушак чаврĕ. Васькӑпа ҫыварнӑ. Шуйттансен делегаци пуҫлӑхне Чансаслова пӑчӑртап тесе хĕстернĕ те эп ӑна, тав турĕ мана чĕрнипе. Ха, епле мӑрласа ларать, эсрел. Лӑплантӑн-и халь? Прис!

Арăмĕ куççульпех макăрса ячĕ, сăмахĕсене çăта-çăта каласрĕ:

— Мĕне сиснĕ эс, Якку? Тупата ырра пулас çук. Кушак чавнисĕр пуçне унта тата тепĕр чĕрне йĕрри пур. Çын алли йĕрриех. Манран пытараймăн. Ак куçкĕски, пăх, савăн. Тата ăçта уçрăр Ухутниксен çурчĕ? Кала! Уншăн Шупашкартан выговор илсе килнине мантăн-и? Кала, ăçта уçрăр каллех кĕрт çурчĕ? Пуçу йăлтах пăтранса кайнă вĕт? Темле Чансаслов пур ун. Вьюнов пурри çитмест. Урăлман вĕт пĕртте. Çăварăнтан мĕн шăрши кĕнине пĕлетĕн-и?

Арăмĕн ытамĕнчен вĕçерĕнсе урайне шуса аннă Яков Сидорович чавса вĕçĕпе Васька хӳрине лектерчĕ. Кушак çухăрнинчен хăраса арăмĕ тӳшек çине лапах выртрĕ, чĕрине хыпашларĕ. Мургаев урайĕнче выртакан лӳчĕркенчĕк шăлаварне тытса пăхрĕ те пукан хыçне çакса ячĕ, шифоньертан урăх костюм кăларчĕ. Арăмĕ сиксе тăчĕ, костюма упăшкинчен карт туртса илсе каялла çакрĕ. Малтанхи кăмăллă куçсем халь тăвăлланнă, чĕлхи те картран вĕçерĕннĕ, çунтарать те çунтарать:

— Каламастăн апла ĕнер ăçта пулнине? Тăхăн, кай лӳчĕркенчĕк костюмупах. Хăвах тасат, хăвах якат! Аллуна пăсас темесессĕн, питрен чавакансене якаттар!

Ахаль те пуç хĕснипе аптăранă Яков Сидорович, арăмĕнчен хăтăлса, холодильникран «Нарзан» минерал шывĕ ĕçрĕ, чунĕ уçăлнипе вĕçне-хĕрне çитичченех ăнлантарма шутларĕ:

— Мĕн пустуй юхтаран куççульна? — терĕ вăл. — Итле ăçта пулнине, Шăхранта, районта. Юлдашев патĕнче. Хăвах пĕлен. Ăмăртатпăр вĕт унпа.

— Кам ытларах ĕçме пултарнипе-и? — упăшкине тарăхтарас тесех хушса хучĕ вăл.

— Сан ялан пĕр юрă, — лӳчĕркеннĕ шăлаварне тепĕр хут илсе çĕре пăрахрĕ Мургаев. — Итле эс вĕçне çитиччен, вара ăслă çынсен ретне кĕрен! Ăмăрту кăтартăвĕсене пĕтĕмлетрĕмĕр. Вьюнова та илнĕççĕ пĕрле.

— Ăна эс хăвăнтан шит те уйăрмастăн-ха.

— Ман сылтăм алă вĕт вăл. Эп район хуçи пулсан, Вьюнов всюшĕ район ял хуçалăхĕн хуçи.

— Маймар тупăннă хуçасем, — парăнмарĕ арăмĕ, — çӳреççĕ кĕрлесе. Мĕн тăватăр-ши эсир кунĕ-кунĕпе, çĕрĕ-çĕрĕпе? Ĕçлеме йывăр тетĕр. Ĕçлеме мар, ĕçме йывăр пуль сире. Сăлтавне хăвăр шыратăр та. Пионер организацийĕ çур ĕмĕр тултарнине те банкет тусах уявларăр та... Омановне, ухмах, хĕрлĕ галстук çакнă икĕ мăнттай хулран çавăтса таврăнчĕç. «Ленин ĕçĕшĕн кĕрешме хатĕр пул!» тесе кăшкăраттăр пуль. Пуçпах ĕçлетĕр-ши эсир, пĕлместĕп? Вăхăт сирĕн, тем тесен те, ытларах ĕçре мар, банкетра иртет. Мана суяймастăн, манран пытараймастăн. Халăхран тем чул вăрттăн ĕç, пурпĕрех киле таврăнатăн, пурпĕрех ӳсĕрне пĕлетĕп. Шăхрансемпе ăмăртнине черкке çинче виçрĕр-им? Кам мала тухрĕ-ха: эсĕ е Юлдашев юлташу? Каллех икĕ район чиккинче ыталашса тăнă ĕнтĕ. Ăçтан динамит тупас? Сирпĕтсе ярăттăм çав чул купине. Мĕн чухлĕ макăртман мана çав чикĕ.

Яков Сидорович хаваслăрах калаçма тытăнчĕ:

— Çавăнтах пулмасăр. Вăл пирĕн таса вырăн. Вĕсем пире унта çитиччен ăсатса яраççĕ, эпир — вĕсене. Никамăн та кӳршĕрен ӳксе юлас килмест. Ĕнер пит хастарччĕ Юлдашев. Кăтартусем лайăх. Пирĕнтен малта. Ытала-ыталах, чуп тăва-чуп тăвах уйрăлтăмăр. Пите çавăнта, катăркалатнă чул çумĕнче, ăнсăртран сăтăрттартăм. Манпа пустуй вăрçан. Нимле ухутник çурчĕ те уçман, нимле майрана та чавтарман. Ăнлантăн-и? Тавай костюма! Шупашкар калаçма пуçларĕ. Итлес.

Шупашкар хурлăхлă хыпар пĕлтерчĕ: 1973 çулхи ноябрĕн 28-мĕшĕнче обкома ертсе пыракан секретарь вилнĕ. Ăна илтсен Мургаев та урăлса кайрĕ, арăмĕ те шăпланчĕ. Хура кушак аçи çеç Яков Сидорович ури çумĕнче мăрлатса явăнчĕ. Тĕлĕкпе хутăш çак хыпар ăна

шутсăр пусăрăнчăк шухăша путарчĕç. Сисмесĕрех ăш вăркама пуçларĕ. Урампа утса пынă чухне çынсем хăй çине пӳрнепе тĕллесе: «Акă вăл, район хуçи, халăхшăн мар, хăй пырĕшĕн, хăй хырăмĕшĕн тăрăшаканскер», — тесе кăшкăрассăнах туйăнчĕ.

11

Вилсен виççĕмĕш кунне обком секретарьне пытарма палăртнăччĕ. Яков Сидорович Шупашкара кайма район делегацийĕ пухрĕ. Виçĕ машинăпа ирех çула тухрĕç. Мургаев тĕл хулана кайнă чухне хăйпе пĕрле çын лартма юратмасть. Вĕçĕмсĕр чĕлĕм мăкăрлантарнипе никама та тăвăрлантарса пырас килмест.

Обком пленумĕнче асăрхаттарнă хыççăн районта курăнакан агитацие çĕнетме пуçланăччĕ. «Мĕн тăваççĕши ку енĕпе Посадкинăпа Оманов?» тесе «Атăл» чӳречинчен çул тăрăх пăха-пăха пырать. Секретарь шухăшне ăнланма вĕренсе çитнĕ Ваçли Михалч машинăна юриех хăваламасть. Урам тăршшипех щитсем, çĕнĕрен çырнă чĕнӳсем, ӳкерчĕксемпе илемлетнĕ плакатсем... Куншăн вăл хĕпĕртерĕ.

Поселокран тухсан çур çухрăмсенче — масар. Шоссерен пăрăнса унта çул кĕрет. Çав тĕле шăпах пысăк щит лартнă. Çӳле çырса хуни аякранах курăнать: «Телейлĕ çул пултăр сире, хаклă юлташсем!» Тепĕр енче «Ырă сунса кĕтсе илетпĕр сире, хаклă юлташсем!» тесе çырнă.

Секретарĕн тарăхупа хăмпăланнă хĕрлĕ пит çăмартисенчен вăрттăн кулса илчĕ те Ваçли Михалч хăвăртлăха ӳстерчĕ. Машина хумлă асфальт тăрăх малалла уласа ӳхĕрчĕ. Яков Сидорович куçа хупса та пăхать, куçлăхне те тăхăнать: умра пурпĕрех шуйттансен делегаци пуçлăхĕ Чансаслов хырăма каçăртса тăрать, ăна кăчăк туртать. «Эп те делегаци пуçлăхĕ, эсир те делегаци пуçлăхĕ, юлăр кунтах, хăвăр çыннусемех телей сунса кĕтсе илмелли

чĕнӳ килсе çапрĕç. Епле хисеплеççĕ. Юлăр», — хăлхара нăйлатнă сасă илтĕнет. Сехĕрленнĕ Мургаев машинăна хуллентерех илсе пыма хушрĕ. Тем çинчен те шухăшласа пăхрĕ вăл, пурпĕрех хура-шурă Чансаслов унран хăпма пĕлмерĕ. Хулана кĕнĕ чухне тин, милици постĕнчен хăрарĕ-ши, таçта кайса çухалчĕ.

Виле пытарасси хăна-вĕрлепе савăнасси мар. Хурлăх сăмахĕ, хура тумтир тĕсĕ кăмăла пуç тăрринче çакăнса тăракан кĕрхи çумăр пĕлĕчĕ пекех пусать. Шупашкарсен те, районсемпе хуласенчен пынисен те калаçу пĕр енлĕрех пулса пычĕ. Мĕнле сăлтавпа та пулин кашниех «вăрттăнлăх» пĕлесшĕн çунчĕ: секретарь кам пулать? «Вăрттăнлăха» вара виле çинче те, виле пытарнă хыççăн та уçса паракан пулмарĕ. Делегацисем килĕсене саланчĕç.

Мургаев Юлдашевпа Кӳкеçри «Юманай» ресторанне апата чарăнчĕ. Шалти пĕчĕк залра ытти район çыннисем те пурччĕ. Обком секретарьне тепĕр хут асăнса самаях вăхăт иртрĕ. Камшăн лайăх пулнă вăл — компартин тĕп йăви Чăваш патшине вăхăтлăха лартнă Курск ырăсĕ (вăл шутра Мургаевшăн та!), камшăн япăх, усал; кама орден панă вăл, кама — выговор; пурăннă, ĕçленĕ, область парторганизацине пилĕк çул хушши тытса пынă. Халĕ — асра çеç. Халĕ ăна асăнса райком секретарĕсемпе райĕçтăвком председателĕсем сĕтел çине черккерен коньяк тумламĕсем тăкаççĕ: «Тăпри çăмăл пултăр».

Коньяк ĕçнипе Мургаевăн шăм-шакĕ лаштăрах кайрĕ. Питĕ канлĕн кĕрсе ларчĕ вăл машинăна, шухăша путрĕ, ĕмĕчĕпе тĕтреллĕ ӳкерчĕк çине ӳкерчĕк курса пычĕ. Акă вăл та ăнсăртран вилнĕ пек. Районта траур. Хаçатсем сăн ӳкерчĕкпе некролог пичетлесе кăларнă. Пурте унăн ĕçĕ-хĕлĕпе вуласа паллашаççĕ. Шупашкартан, нумай-нумай организацирен, паллă çынсенчен хурлăх телеграммисем килсе тăраççĕ. Унăн ӳтне хунă тупăка райком çуртне вырнаçтарнă. Хĕрлĕ хăмач çинче — хура хăюпа эрешленĕ портречĕ. Икĕ енĕпе ялавсем. Вĕсене

те хура хăюпа тыттарнă. Хĕрлĕ пурçăн минтерсем çинче орденпа медальсем. Ун умне чечек кăшăлĕсем хураççĕ. Парти райкомĕн бюро членĕсемпе райсовет ĕçтăвкомĕн членĕсем хисеплĕ хурала тăраççĕ. Тупăк умĕнчен район халăхĕ вĕçĕмсĕр иртет. Масар çинчи митингра ăна ырлаççĕ: «Мургаев юлташ пуриншĕн те лайăх, партишĕн, халăхшăн чунне парса ĕçленĕ пултаруллă, хисеплĕ, сăпай çын, тимлĕ пуçлăх, чăнчăн коммунист пулнă...»

Вăхăт иртнине те сисмерĕç вăрăм çулра, Шăхран та çурăм хыçĕнче ĕнтĕ, машина çырмаран хăпарса кукăрта пăрăнчĕ те, куç умне каллех масар умĕнчи щит тухса тăчĕ: «Ырă сунса кĕтсе илетпĕр...» Çав вăхăтрах таçтан муртан Чансаслов курăнса кайрĕ. Яков Сидорович килне пусăрăнса, тарăхса, тăвăлса çитсе кĕчĕ.

Ирхине вăл Посадкинапа Оманова чĕнтерчĕ, курăнакан агитацие ăçта, кам валли, кама курăнмалла çапма «вĕрентрĕ».

# ВИҪҪĔМĔШ ПАЙĔ

1

Ăмăрту шухăшламасăр пуҫланмасть. Вăрманкаспа Шăхран районĕсем хушшинче те вăл хăй тĕллĕн пуҫланман. Мургаев тĕл пулусенче Юлдашева час-часах хăйсен «ҫитĕнĕвĕсемпе» тĕрте-тĕрте илнĕ. Егор Васильевич та Яков Сидоровичран парăнасшăн пулман. Шăхрансем те вăрманкассенчен нимпе те кайра мар, чылай кăтартупа — маларах та. Мургаев пустуй мухтанни кӳршине хăлтăклантарнă, вара вăл каланă: «Сăмахпа мар, айта чăннипех ĕҫпе ăмăртар, ҫулталăк вĕҫĕнче пухăнса калаҫар». Мургаев та килĕшсе юлташне алă тытнă.

Ҫапах та малтанлăха ăмăрту тарăн тымар ярайман, пуҫлăхсем ĕҫ сĕтелĕ хушшинче, Ухутниксен ҫуртĕнче, чикĕре хĕремесленсе тавлашса калаҫнипех иртсе кайнă. Килте арăмĕсене те ăмăртсах хĕремеслентернĕ пуҫлăхсен вăрттăн «ăмăртăвĕ».

Ҫăханова пытарма кайсан, «ăмăрту» тени ытти пуҫлăхсен чĕлхи ҫинче та ташлакаласа илнине асăрхарĕ Мургаев. Хăй вăхăтĕнче вăл та ҫамрăк пулнă, пуҫарусемпе палăрма пултарнă. Ҫавăнпа Юлдашев патне райĕҫтăвком пуҫлăхĕпе Крутоваваскатсах ячĕ. Шăхранта вара ăмăртăва малашне мĕнле йĕркелесе ямалли ҫинчен тĕплĕн калаҫса татăлчĕҫ. Шăхрансем малтан хăйсем патне чĕнеҫҫĕ.

Кăрлач варринче кӳршĕре Вăрманкас районĕн кунĕ пулчĕ. Пуҫлăхсем, ĕҫ паттăрĕсем, культура ĕҫченĕсем кунĕпех ялсене курса ҫӳрерĕҫ, сысна комплексĕ тунă ҫĕре ҫитрĕҫ. Пĕтĕм район тăвать ăна. «Туслăх» ятлă «фабрика» ҫулталăкра патшалăха икĕ пин тонна аш хатĕрлесе парать-мĕн. Вунă пин сысна пĕр ҫыннăн пăхмалла. Мургаев сĕнĕвĕпе кунта вăхăта ытларах иртерчĕҫ, мĕншĕн тесен кĕҫех Вăрманкас ҫумĕнче те «Хĕвеллĕ ир» комплекс каплантарса лартма палăртнă. Ял хуҫалăхне аталантармалли ҫĕнĕ малашлăх хĕвелĕ Чăвашьен ҫийĕн тĕтрс витĕр тĕксĕммĕн ҫутатать.

Шăхрансен ялсем пулăшнипе тунă район пульници Максим Максимовича пуринчен те ытларах килĕшрĕ. Ял çыннин сывлăхĕшĕн чи малтан тăрăшмаллине кӳршĕсем вăрманкассенчен тăнлăрах ăнланаççĕ иккен. Пур çĕрте те тирпейлĕх, тасалăх. Тен, хăнасене кĕтсе йĕркене кĕртнĕ пуль? Хăна-вĕрле килес умĕн пӳрт-çурта кашниех уяв сăнĕ кĕртме тăрăшать-çке. Кăтартусене çеç ятарласа хатĕрлейместĕн. Маттур ĕçлеççĕ. Нумай мала кайнă. Пурнăç пуç çинче ташласан та вăранаймастпăр иккен эпир, терĕç вăрманкассем. Кăтартусене танлаштарнă чухне Вьюновăн пичĕ анис улма пек хĕрелчĕ.

— Яков Сидорович, — шӳтлесе илчĕ райĕçтăвком пуçлăхĕ. — Вĕренмелле пулать шăхрансенчен, ман та, сирĕн те, Илья Ильичăн та. Сирĕн çурăм хыçĕнчен туртса кăлармалла пуль Вьюнова, авă халĕ те пытанса тăрать. Çывратпăр, вăранаймастпăр. Суккăр кушак çурисем пекех. Намăс пире сирĕн умра, Егор Васильевич.

— «Кайри мала, малти — кая» тенине аса илер. Паян эсир çак халăхпа пирĕн ăсталăха, çитĕнĕве çавăрса илсе кайсан... хамăр валли те хăвармăр, — кулать вĕсенчен шăхрансен пĕрремĕш секретарĕ. — Эсир Явкаланчăк кӳллипе чапа тухрăр. Эпир те хамăртан кану çурчĕ лартасшăнччĕ те унта... Сыхласа усраймарăр та Ухутниксен çуртне...

Маларах тухса тăнă Волков шӳт çине шӳтпе хуравларĕ:

— Эсир тĕлĕрсе каясса кĕтес пулать ĕнтĕ халĕ пирĕн. Ун чух вăратмастпăр, иртсе каятпăр.

— Апла çывăрас марччĕ, — терĕ Юлдашев. — Пирĕн сирĕнни пек ыйхă килмест.

Хăнасене культура çурчĕ умĕнче çăкăр-тăварпа кĕтсе илчĕç. Икĕ районăн ăмăрту килĕшĕвне çирĕплетрĕç.

Мургаев хĕрлĕ пурçăнтан хатĕрленĕ вымпела çĕклесе кăтартрĕ?

— Эпир ăна хамăр турăмăр, пĕлсех илсе килтĕмĕр, эсир тăрăшарах ĕçленине, пиртен иртсе кайнине курсах. Вымпела сире паратпăр. Саламлатпăр мала тухнăшăн. Уява малалла пирĕн артистсем тăсĕç.

Культура енĕпе вăрманкассем ўксех юлмаççĕ-ха, чи пултаруллă çамрăксене автобусĕпех тултарса килнĕ. Вĕсене шăхрансен Культура çурчĕн хуçи Альбина Аленчикова та пулăшать. Оманов ун тавралла кускалать. Панхристоф Крутовран ыйтрĕ:

— Лартса каймалла мар-ши ăна паян? Туй тума меллĕ кун. Пăх-ха? Епле илемлĕ арăм пулмалла. Такам ăмсанса пăхĕ. Эх, кĕлетки, сăнĕ, çўçĕ. Эп ыраниех.

Максим Максимович Оманов тĕллесе кăтартнă еннелле пуçне çĕклесе пăхрĕ. Пукан çине хăпарса тăнă Альбина шкап тăрринчен гитара илет. Пуçне каçăртнипе хыçалалла усăннă йĕтĕн тĕслĕ çўç тапки çап-çаврака купарчине çурмалла хуплană. Сылтăм аллине хускатнипе чĕтренекен кĕрен кĕпи айĕнчен чăп-чăмăр пĕçсем çуталса тăраççĕ. Вĕсене аялти кĕпе чĕнтĕрĕ шăла-шăла илет.

Оманов Крутова чаршав хыçнелле туртать, типнĕ тути хĕррисене çулласа йăлăнать:

— Калаçар-и пĕрле? Çитет иксĕмĕре хирĕçсе. Хăйматлăх тăватăп сана. Килĕшет пуль. Ахаль çын-им эпир?

Гитара йăтса утакан Аленчикова çине Максим Максимович Явкаланчăк çыранĕнче Миловпа утнă чухне курнă ясарлăх куçпа сăнаса пăхрĕ. Утти те, кĕлетки те, сăн-пичĕ те илем ăшĕнче — асамлăх вăйĕнче. Çăвар карса пăхса тăракан Панхристофа вара вăл вĕрентсех каларĕ:

— Авланма-авланмаллах, Паня, анчах та... ку таранччен пурăннăскерне чăт тулĕк кăштах. Хыçалтан куç хывнипех хĕртен ăçтан-ха арăм тăван? Тем пекех килĕшĕ вăл пире, тăнран ярса ухмаха кăларĕ. Умĕнчен мĕнлерех-ши? Тепĕр чухне таварăн та çийĕ çирĕп, ăшĕ — йăшăк. Тытса хыпашласа пăхмасăр та пĕлместĕн. Арăм тăвиччен кунпа та тĕплĕн паллашмалла, куçран-куç калаçса пăхмалла. Милов çинчен те манмалла мар. Эп кунта ытлашши çын. Хăвăрах килĕштерĕр виççĕр. Тен, вăл хăй хирĕç. Тит та парас çук сана «пĕчĕк акăшсен» мусăкçине. Талантлă вăл — Чайковскине юратать.

— Пулма пултараймасть! — кӗлетки тӑрӑх пӑхса илчӗ Оманов. — Тит вӑл вуннӑ та авланнӑ. Эп пӗртте авланса курман. Мӗн, тум начар-им ман? Тӑхӑнмалли ҫук-и урӑх? Хваттер-и?

Суккӑр юратупа хавхаланса пӑтранакан ват хусаха Крутов куҫран каласах кӳрентерес темерӗ. Ятарласа правур арҫынсем валлиех тӗнче парнеленӗ илемпи ҫумӗнче лутака, сӑнсӑр, кӗлеще ураллӑ Пантелеймон Оманов ӑман пек епле кулӑшла курӑнассине танлаштарса пӑхнӑскер, вӑл ӑна часрах артистсем патне хӑваласа ячӗ.

Концерт чаплӑ иртрӗ. Шӑхрансен Мускав — Чӗмпӗр мӑн ҫулӗ ҫинче «Салам» ятлӑ ресторан пур. Уяв ҫавӑнта куҫрӗ. Оманов Аленчикова ҫумӗнчех явкаланасшӑн-ха. Альбина Александровна, хӳрине пӑркалакан ҫурхи тиха пек, вырӑнта тӑма пӗлмест, арҫынсен ушкӑнӗсене кӗре-кӗре ӳкет, ҫамрӑксемпе шӳтле-шӳтле ахӑрать.

— Арӑм пулсан, лӑпланать, — шанчӑкне ҫухатмасть-ха Панхристоф. — Пусӑрӑнать. Ача-пӑчаллӑ пулсан унта... Ҫапла-и, Максим Максимович?

— Пӗлместӗп ҫав, унашкал якӑлтине качча илмен те, — пуҫне пӑркалать Крутов.

— Хӑвӑн та Тымарти Лину унран каях марччӗ-ха, Тит Миловпа епле?..

— Авӑ Тит тусу килет, ҫавӑрса каять Альбинуна.

Аленчиковӑна чӑнах та Тит Милов пилӗкӗнчен ярса тытрӗ те ташша ҫавӑрса кӗчӗ. Оманов тутине ҫыртса лартрӗ, ниҫта кайса кӗрейменнипе тулалла сирпӗнсе тухрӗ. Тап-таса тӳпе ҫӑлтӑр ҫути сапалать. Картлашка умӗнче ҫил юр хӗвет. Уйӑх ҫинчен кӗвентеллӗ хӗр пӑхнӑнах курӑнать. Кулнӑ евӗр вӑл Омановран каччӑ чӗрине сивӗтсех ячӗ. Хӑлха тӑрри пӗҫернипе Панхристоф шалалла тарса кӗчӗ, алӑк ҫумӗнчи пушӑ вырӑна ларчӗ. Ӑна ӗҫме-ҫиме сӗнеҫҫӗ, кӳршӗсем калаҫтарасшӑн, унӑн ҫӑвар уҫма та кӑмӑл ҫук, пуҫӗнче Альбина ҫеҫ. Авӑ, Аленчикова, хӗрнӗскер, арҫынсен умне тӑнӑ та, пӑркаланса юрлать. Оманов унӑн тӑпӑлкка вӑрӑм ҫӳҫне, кӗрен

кĕпине, çӳлелле çĕкленнипе чĕтренекен чĕнтĕре, асамлă кĕлеткине хыçалтан пăхса савăнать.

Тепĕр ташăра Панхристоф çамрăк хĕрарăмпа пĕр мăшăра лекрĕ-лекрех. Хул пуççи çине хунă алли кăвар пек çунтарать, чĕркуççипе чĕркуççи тĕкĕнсе лекнипе хусахăн çурăм тăрăх сăсăл вĕçет, çăварĕ уçăлмасть, чĕлхийĕ çĕтнĕ. Аленчикова чĕмсĕр арçынпа çаврăнса йăлăха пуçларĕ пулас, хăй сăмах хушрĕ:

— Пантелеймон Христофорович-и-ха эсир? — çӳлтен пăхса шап-шурă шăлĕсемпе йăлкăшрĕ Альбина. — Йăнăшмарăм-и?

Сасартăк хăйĕн ятне илтнипе çухалса кайнăскер, вăл такăнчĕ, хĕрарăм ури çине ĕнелле пусрĕ.

— Айăпа кĕтĕм, урăх виличчен те пусмăп, каçарăр, тархасшăн? Мана эсир Паня тейĕр. А эп, Альбинушка, чунăм тейĕп сире, э?

Пикен вутлăн çунакан куçĕ Оманова пушшех вăтантарчĕ, пуçне чиктерчĕ. Панхристофăн шĕвĕр сăмси Альбинăн тулли чĕччисем хушшинех лекет. Кĕлетке туйăмĕпе вĕсем пĕрре çĕкленеççĕ, тепре усăнаççĕ, çаврăннă чух сив сăмсана аяккалла пăрса яраççĕ. Альбина кулать:

— Паня терĕр-и-ха? Ытла çемçешке ят. Арçын ячĕ пек мар. Хастар çынсен ячĕсене юрататăп. Çавăнпа эпĕ сире Христофор тейĕп луччăкăн — Христофор Колумб. Хăюллă çул çӳревçĕ, паттăр моряк çĕнĕ çĕр уçас хавалпа мĕнле ишнĕ вĕççĕр-хĕрсĕр тинĕсре, çавăн пекех сирĕн те çаврăнмалла пултăр юрату çил-тăвăлĕнче. Эх, ярăнас килет ун хумĕ çинче...

— Альбинушка... Чунăм... Хама Африкăри Чомбе «революционер» ячĕпе чĕнсен те хирĕç мар эпĕ хăвăр качча тухма килĕшсен... — кавăн пек пуçне ухрĕ Панхристоф. — Паянах лартса кайма хатĕр сире. Хваттер чаплă ман...

Аленчикова тăрук кулма чарăнчĕ, пĕшкĕнсе хăлхаран пăшăлтатрĕ:

— Эх, эсир те çав, манăн ăнăçсăр Христофор Колумбăм. Çав хастар çул çӳревçĕ çĕнĕ çĕр уçас тесе миçе

пин çухрăм ишнине, миçе çул ирттернине пĕлме кирлех эсир. Мĕншĕн пит васкатăр? Васкакан арăмĕнчен савăнман тет. Чăтăмлăх кирлĕ пуль. Пуçу ман чĕре çумĕнче тесе хĕр чĕри те хăвăрта тетĕр-и? Ан кӳренĕр тĕрĕссишĕн. Сире хĕрхенсе калатăп. Ха вăл, пĕрре хĕр çумĕнче ташланипех якорь ярасшăн. Итлĕр: ман чĕре çыранĕ ытла та чуллă, ун çывăхне пыма хăрушă, карапу шăтса путĕ, чĕрем тавра явăнакан çил-тăвăл çавăрттарса кайĕ. Эпĕ сире урăх координат паратăп — хăвăра майлăрах çулпа ишмелле. Хваттерӳ...

— Ма, икĕ пӳлĕмлĕ, балконлă...

— Пит лайăх пулсан, — кулсах ячĕ Альбина, — çитессинче, пирĕн район кунне хăвăр патра ирттернĕ чухне, хăнана пырса курăпăр — тантăшăмпа. Ывăнтăм эп ташласа та, калаçса та, каçарăр. Çапах та ман Нил флотĕнчех ишес килет-ха кĕçĕр. Тавтапуç...

Хăйсем патнелле лаплаттарса пыракан Тит Нилыча асăрханипе Омановăн чĕркуççийĕ тăр-тăр чĕтреме пуçларĕ. Акă ун аллинчен вĕçерĕннĕ йăпăлкка пулă Милов ытамне кĕрсе ӳкрĕ, вĕри сывлăш çавăрттарса ячĕ. Титăн хура çӳç пайăрки сулахай куçĕ çинех усăннă, ăна Аленчикова майласа якатать, хăнчăр куçлă яштакăн мăйăхĕ çумне тутине çывхартать. Панхристоф куçĕ умне Явкаланчăк кӳлли, Ухутниксен çурчĕ тухса тăрать.

Чикке çитиех ăсатса ячĕç кайран вăрманкассене. Хĕл сивви нумайччен ытаклашса тăма памарĕ. Çапах та пуçлăхсем кунта та ĕçлĕ калаçуран хăтăлаймарĕç: ăмăртăва пур хуçалăха та явăçтармалла.

Чулран купаласа, яп-яка якатса сăрланă чикĕ юпи икĕ район çыннисене халĕ ĕнтĕ час-часах пĕр çĕре пухать. Акă вĕсем паян та чун каниччен пуплерĕç, ĕçрĕç, çирĕç, юрларĕç, ташларĕç, ыталашрĕç, сыв пуллашрĕç, машинăсем çине ларса пĕрисем тухăçалла, теприсем анăçалла вĕçтерчĕç. Сивĕ çил çиекен чул юпа çап-çутă типĕ каç ытамĕнче тăлăххăн тăрса юлчĕ. Тунсăх ăна — хуралта.

## 2

Çĕнĕ малашлăх хĕвелĕ Чăвашьен çийĕн капланнă çăра пĕлĕтсемпе тĕтрене аран-аран тĕллĕн-тĕллĕн шăтарса тухкалать-ха. Тĕнче чаршавне уçса ярасшăн Шупашкар варринчи Аслă çурт тăрринчен те, Мускав енчен те мекĕрленсех вĕреççĕ. Хăмпă пек хăпарса кайнă мăн хырăмсем çав хĕвел мĕншĕн пурнăç тӳпине ăшшăн çутатса ярайманнине чухлаймаççĕ. Аталану тытăмĕн вăйĕ ямасть иккен пӳлĕмре чĕртнĕ хĕвеле талккишпе çутатмашкăн. Акă, çав суя хĕвел пайăрки шăхрансен çĕрĕ çине хĕсĕнсе ӳкнĕ те... район сыснисене пĕр хӳтлĕхе хуса пухнă. Сĕтел хушшинчи калаçура Крутов хăлхине те кĕчĕ «Туслăх» хуçин хăравçăрах шухăшĕ: «Ял хуçалăхне вĕлермелли фабрика тепĕр вунă çултан çулăмпах çунса каять, паян шашлык чăмлатпăр пулсан, ун чухне типнĕ шăмă кăшлăпăр-ха».

Кӳршĕ нуша кулачĕ çиме пуçлани паллă пулчĕ. Вăрманкассен те çав хĕвел пайăрки валли хушă пулмалла. Ĕне выльăх, сысна самăртмалли, кролик комплексĕ, чăх-чĕп фабрики тума йышăннă. Çурт-йĕрне çăва тухсанах купалама тытăнмалла. Унччен хуçалăхсен пая кĕмелле те укçа-тенкĕ, техника, çын уйăрмалла. Район тинех вара ĕрĕхсе чупма тытăнать. Хуçалăхсен пĕр çемьери пек туслăн килĕштерсе, пулăшса пурăнма вăхăт çитет акă. Эртеллешсе, вăй пухса çĕмĕрттермелле çеç. Çавна пурнăçлама вăрманкассем комисси турĕç. Ăна Мургаев хăй ертсе пырать.

Çĕнĕ малашлăх хут çинче пур енĕпе те лайăх курăнать темелле, анчах та унта ял культурине ӳстермелли хĕлхем йăлкăшмасть пек. Ялтан таврăннă хыççăн Максим Максимович ун пирки калаçура ыйту хускатрĕ:

— Комплексĕсене туса лартăпăр. Колхозĕсем тупăш илĕç. Ял халăхне пухăнса савăнма çеç пĕр путлĕ клуб çук. Килте телевизор умĕнче ларсах ирттермелле-и çыннăн? Мĕнле майпа татса парăпăр-ха культура ыйтăвне? Пĕр енлĕ аталану кама усă парĕ-ши?

Мургаев унран кулма пуçларĕ:

— Ытла эс пĕр кашăкпах яшкине те, пăттине те ăсса çиесшĕн. Калама, вĕрентме такам та маçтăр. Тума тытăнсан... Сан шутупа ĕнтĕ чи малтан кермен каплантарса лартмалла. Комплексне, витине хăçан тăван? Патшалăх планне клубри ташă-юрăпа татса пăх-ха... Авă, район пульницине çĕрсе ларать. Ăна тума та укçа пухмалла. Клуб вăл... Пуриннă ку таранччен, ыран та чăтаççĕ. Выç хырăмпа сиксе-юрласа пăх-ха...

— Шăхрансем пульница комплексне те, сысна комплексне те харăсах тунă, культура керменĕсем те лартаççĕ, — парăнасшăн пулмарĕ Крутов. — Эпир çеç хӳрере...

— Вăт илсе кайса кăтарт вĕсене кӳрше, — йывăррăн сывласа ячĕ секретарь. — Ним те ăнланмасть тесе ан шутлăр мана. Йывăр халĕ, питĕ йывăр. Аш-какай керменĕсенех çĕклер-ха малтан. Çавăншăн тире сĕвеççĕ манне. Сирĕн, мĕн...

— Эпĕ сирĕнпе пурпĕрех килĕшместĕп, — хĕрсех пычĕ Максим Максимович. — Çын тут хырăмпа кăна пуян мар. Çын вăл какăриччен çисе çăтмах пахчи çинчен çеç ан ĕмĕтлентĕр. Ĕçрен таврăнсан халăх çине тухтăр, хăйĕн культура шайĕнчи пултарулăхне кăтарттăр, çав хушăрах ыттисенне те курса савăнтăр, кăмăлне çĕклетĕр, хаваслантăр, тăрăшарах ĕçлес ĕмĕтне пуянлаттăр. Çавăнпа сысна керменĕ те этем керменĕпе пĕр харăс пултăр. А пĕлетĕр-и, Яков Сидорович, мĕн каласшăн сире?

— Мĕнле çĕнĕлĕх тата? — тем шута кайнăскер, лешĕ шартах сикрĕ.

Крутов чеен кулса илчĕ:

— Халăх ĕненмест пирĕн малашлăха, шанмасть комплекссене.

— Мĕнле шанмасть? Парти политикине эсĕ те хирĕçлетĕн-и? Мутри сана, шăпăрлана!

—Шăхранта та, хамăр патра та шанмаççĕ, ырламаççĕ. Тымарсем «Хĕвеллĕ ир» комплексне тунă çĕре пая

кĕресшĕн мар. Карачăм мучи пухура култарса пĕтерчĕ. «Этем кăмуни те, кăткă кăмуни те, хĕрарăм кăмуни те курнă эп хам ĕмĕрте, — терĕ. — Этем кăмуни хăйне хăй тăрантарса пурăнайманнипе арканчĕ. Кăткă кăмуни таврари вăрмана касса выльăх таптаттарнипе саланчĕ. Хĕрарăм кăмуни вăрçă вăхăтĕнче арçын сĕткенĕсĕр типсе ларчĕ. Халь сысна кăмуни тăвасшăн-и-ха Якку Çитăрч унта? Выльăх кăмуни те уммасăр, тырăсăр нумая каяймасть. Çаплах кала эс ăна, пуçлăха».

— Çаплах каларĕ-и вара? — ывăç тупанĕсене сăтăрса илчĕ Мургаев.

— Çаплах, Яков Сидорович. — Пĕртте хамран хушмарăм.

— Н-да, — пуçне ухрĕ хуçа. — Пĕлетпĕр вăл мыскараç-старике, тахçанах... А çапах та, пирĕн çӳлтен хушнине тумалла. Хирĕç тăма вăй-хал çук. Юрамасть.

Пӳлĕме Прошлин пырса кĕчĕ. Ватта пуснă Архип Андреевич ывăнни тӳрех сисĕнет. Ахаль те мăн çăматă тăхăннăскер, вăл кавир тăрăх аран кăштăртаттарса утать, вĕсене сывлăх сунчĕ те кăвак галифе кĕсйинчен сăмса тутри кăларса тарланă çамкине шăлчĕ, унтан пукан çине лаках ларчĕ:

— Вьюновпа урăх ниçта та каймастăп.

— Мĕн пулчĕ тата? — кăсăкланчĕ Мургаев.

— Ара, ман уншăн виçĕ кун çухатмалла пулчĕ.

— Эп хушнине пурнăçларăн-и?

— Пухăвĕсене ирттернĕ ĕнтĕ халь, — терĕ сывлăшне аран çавăрса ярса инструктор. — Икĕ колхозĕ те пая кĕме килĕшрĕç. Комплекса хирĕçех мар. Анчах та кам турĕ-ха çав ĕçе? Райком. Хăй пĕрмай пире райком пуçарулла ĕçлеме ирĕк памасть тесе янраса çӳрет.

— Ăçта кайса çухалчĕ тата хăй? — Крутов та хутшăнчĕ калаçăва.

— Ăçта, ăçта? Яла çитрĕ те, хуçа пӳлĕмне кĕрсе пырне çурĕ те, çухалчĕ. Райком хĕсĕрлет-ши, кӳрентерет-ши управлени çыннисене? Райком улăштарать-ши вĕсен ĕçне? Вĕсем хăйсем кӳлеççĕ пире хăйсен ĕçне. Чеелене-

кен е пултарайман хуҫалӑх ҫыннишӗн ялан кутӗрленме тивет. Эсир, Яков Сидорович, манашкалах ватӑ партиец, тахҫанхи пуҫлӑх, хуҫалӑха парти енчен ертсе пырассипе пиҫнӗ ҫын. Кашни хӑй вырӑнӗнче пулмасан эпир туршӑн та малалла каяймастпӑр. Управлени ӗҫӗшӗн чи малтан Вьюнов хуравлӑ.

Кам мӗншӗн хуравлине Яков Сидорович никамран лайӑхрах пӗлет пулин те, улшӑну тӑваймасть. Йыт пырши тырӑ туни тӑрӑх явакланса хӑпарнӑ майлӑ Илья Ильич та Мургаев ҫумне пӗрре ҫыпҫӑннӑ та, ӑна хӑйӗнчен уйӑрмасть, кунӗн-ҫӗрӗн шӑварать, тымарне хӑртса, хӑртса пырать. Тайӑлма пуҫланӑ пуҫлӑх Чансаслов ушкӑнӗнчен хӑпаймасть. Кашнинчех, куҫ курми пуличчен ӗҫсен, шуйттансем ҫывӑрмалли пӳлӗмре ташлаҫҫӗ. Ҫӗр каҫ та вӑл Вьюнов кӗрсе хӑналаса хӑварнӑ хыҫҫӑн вӗсемпе аташса выртнӑ. Илья Ильич ӑҫта тата мӗн туса ҫӳренине, паллах, вӑл хӑй умӗнче ларакан инструкторсене каламасть. Вьюновпа Милов секретарь арӑмӗ валли япаласем илме ятарласа Чӗмпӗре кайса килнӗ-ҫке. Арӑмне вӑл ятлаҫасран кӗрӗкпе хупларӗ. Хӗрӗпе кӗрӳшне те пуйтарса хӑвармалла унӑн хӑй пенсие тухиччен. Прошлинсем павранi мӗн вӑл? Вӗсем — лашасем. Вӗсен тарласах ӗҫлемелле, райком урапине туртмалла. Комплексӗ те, пульници те, клубӗ те вӑл майӗпен хӑех пулса пырать. Вӑрманкас районне пурнӑҫ кимминчен никам та уйрӑммӑн путарса хӑвармасть. Ӑна тума май та ҫук. Ытти ырлӑхне вара яланах майӗ пур унӑн хӑй ҫумне туртма. Паян янкӑсра пурӑнса пултӑр. Кайран унта... Крутовсемпе Быстровсем хӑть те мӗн хӑтланччӑр.

— Мӗн калас сире, — пирусне чӗртсе ячӗ пӳлӗм хуҫи. — Ӗҫлес пулать. Пуҫпа ӗҫлес пулать. Сире урӑх тытмастӑп хам патра.

Акӑ мӗншӗн, акӑ камсене пула тачка пӗлӗтсемпе ҫӑра тӗтрене шӑтарса сирсе тухаймасть малашлӑх хӗвелӗ пурнӑҫ уҫланкине. Тухсан та сӳнме пултарать.

Шупашкарти Шурă çурт тăрринчен вĕрекенсем çăра пĕлĕте сирсех ярасшăн, хăйсем те чупкаласа килеççĕ районсене, хупăнма пуçланă куççене чăр-чăр уçа-уçа хăвараççĕ. Мургаев та Вăрманкас чăтлăхĕнче пытанса юлаймарĕ, лăпкă хӳтĕрен туртса кăларчĕç ăна. Вăл хăй те çывăрмарĕ, кутран паракан тапкăна ыттисене те лектерме май туса пачĕ.

Пĕлĕте шăтарса Вăрманкаса аннă хĕвел пайăрки пуç тӳпекине пĕçертсе ярасран Мургаев хăрамасть. Ватă кашкăра шăмă татăккипе илĕртсех читлĕхе хупаймăн. Читлĕх алăккине вăл хăйне пăхăнакансем валли уçса хучĕ. Вьюновпа Милов унăн çемье керменне купалаççĕ пулсан, Майловпа Омановăн сысна керменĕ тумалла. Хут çине палăртнă пысăк ĕçсене никам та аякран килсе туса памĕ, вырăнти çынсемпех пурнăçа кĕртмелле пулать мĕн палăртнине. Хуçалăхсем пĕрлешсе тăвакан аслă стройкăна ертсе пыракан ширанă чух Яков Сидорович Майлов çинче чарăнса тăчĕ. Бюро членĕсене те ун пирки пĕлтерсен Геннадий Васильевич, те хăйне райкомран яланлăхах кăларса пăрахаççĕ, те парти ĕçĕнчен пăрма шутлаççĕ тесе-ши, чалтах сиксе тăрса, хирĕçлерĕ:

— Мансăр пуçне çын çук-шим вара? Ан мăшкăллăрха? Тен, шӳтлетĕр? Ăçтан пултаратăп эп унта? Сысна вити тăвасси ман ĕç-ши?

Пĕрремĕш секретарь ăна вырăна ларма хушрĕ, хăй тăчĕ те:

— Эсир кунта мĕн хăтланнине эпĕ çеç мар, ыттисем те лайăх пĕлеççĕ, — терĕ лăпкăн. — Эсир хальлĕхе райкомăн иккĕмĕш секретарĕ пулма пиçсех çитменнине те куратпăр. Ман çурăм хыçĕнче пукан йышăнса ларнипе çитет пуль. Яланах çын аллипе кăвар туртса аллуна пиçтерсе яма пултаратăр. Çавăнпа хуравлăрах та хăвăра çывăхрах ĕç шанса парас тетпĕр. Эсир çӳлти шайра промышленноçпа строительствăна ертсе пыратăр-çке, хăвăр пуçупа, çак алăсемпе нимĕн те тума пултараймастăр-и вара? Чи хĕрӳ, чи çивĕч, чи йывăр вырăн вăл пирĕншĕн халĕ. Унта куçарнипе сирĕн суму çеç ӳсет. Ăнăçу сунатпăр.

Мургаева хирĕç калакан пулмарĕ.

Лару вĕçленсен Майлов патне Оманов йăпшăнса кĕчĕ, ăна çĕнĕ вырăнпа саламларĕ, çийĕнчен йĕкĕлтесе илчĕ:

— Тахçанах каларăм вĕт сана çил-тăвăл çывхарать тесе. Ку ик хутлă алăкран пĕрре тухсан, алю... çыртма тытăнаççĕ, пултараймасан — бюро членĕнчен те, директортан та кăларса çапаççĕ...

Ахаль те тарăхса, чĕрине хыпаласа ларакан Майлов тусне ятла-ятлах хăваларĕ, Оманов тухса кайсан пуçне сĕтел çине хурса шухăша путрĕ. Хăй ыттисем пек тата çӳлерех хăпарайманшăн, аялалла анса пыма пуçланăшăн кӳтнĕ чунĕпе ĕсĕклерĕ. Уншăн обком инструкторне Хиркина айăпларĕ. Пуласси пирки хăраса ӳкрĕ.

Майлов вырăнне Семен Ильич Быстрова кĕртсе лартрĕç.

Сысна керменĕ тунă çĕрте коммунистсен вăхăтлăх ушкăнне йĕркелерĕç. Ăна райком çынни Панхристоф ертсе пырать.

Акă Мургаев вĕсене çĕнĕ вырăна илсе каять. Майловпа Омановăн чеелĕхне пит лайăх пĕлсе çитнĕ ĕнтĕ вăл. Çапах та Яков Сидорович вĕсен ăшĕнче уçман çерем кăмăлĕ шырать. Ун шучĕпе вăрттăн пытанса выртакан лаптăка суха туса усă курмаллах. Çав вăхăтрах уçнă кăмăл пурлăхĕ çавра çилпе вĕçсе саланасран та шиклене. Çапах та ырринех шанать-ха. Çын мĕнле чунчĕрепе, мĕн вăй-халпа ĕçе тунине тĕрĕслесех тăрсан пулăшма та пулать. Çавăнпа çак тĕтрелĕх витĕр вăл çутă пайăрках курать. Çав пайăрка, Майловпа Оманов чунĕ витĕр тухса, халăхшăнах çутатма тытăнĕ ак.

Яков Сидорович куçа шартарса янă ирхи хĕвелтен сыхланса сулахай аллине çĕклерĕ те пуçне хыçалалла пăрчĕ. Ларкăч çинче сиккелесе пыракансем вăл мĕн каласса кĕтсе шăпланчĕç.

— Куратăр-и, ачамсем? — кӳлепине тата çывăхарах куçарчĕ Яков Сидорович. — Мĕнле çиçет? Ан манăр çак çутă ире — хĕвеллĕ ире. Комплекс тума пуçланă

пĕрремĕш ире. Епле хăвăрт сирĕлчĕ тĕтре, çул та уçăлчĕ, тӳпе те тасалчĕ. Телейĕ хамăр умрах-иç?

Малтан тĕксĕм пит-куçлă Майлов та çуталса кайрĕ:

— Телейне куратпăр-ха, Яков Сидорвоич, — Уйра, çырма хĕрринче, Хиркас масарĕ çумĕнче ĕнтĕ малашне пирĕн телей: хĕвел çуттинче, уçă тӳпе айĕнче, çил çинче.

— Романтиксем эсир — пулас роман сăнарĕсем... — чăхх! кулса ячĕ баранка çавăрттаракан Васли Михалч.

— Мĕн епрен! — айккинчен сисĕмлех тĕртрĕ шофера Оманов. — Ай ху анчах тетĕн-им? Патумаешь вăл секретарьсене турттарсах Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕ илнĕ ямшăк. Пире ĕнтĕ тупăка кĕртсе хунă мĕскĕнсем выраннех хурать. Те ĕçлеймест тет. А мĕн, романтика мар-им? Пулас роман паттăрĕсем мар-им? Паян эпир Геннадий Васильевичпа Вăрманкас çĕрĕ çинче халиччен пулман вите тума пуçлатпăр. Курăпăр-ха пирĕн какая мĕнле туртса ларнине? Çулталăкра çирĕм пин сысна концерт памалла пулать пирĕн кермен!

Асли вĕсене шалалла тавлашса кĕме памарĕ. «Хĕвеллĕ ир» хули пулмалли вырăнта йăла-йĕрке вакунĕ, экскаваторпа самосвал пур, темиçе çын калаçса тăрать.

— Нумай çывратăр, пуçлăхсем... — тӳрех кӳренӳ сăмахĕ илтĕнчĕ ушкăнран. — Хăшĕ пулать-ха пирĕн хуçи?

Мургаев вĕсене puринпе те паллаштарчĕ, коммунистсен пухăвне ирттерчĕ. Йăмраран çӳлерех çĕкленнĕ хĕвел вĕсенчен чалăшшăн пăхса кулчĕ.

## 3

Аслă стройкăна райком малтанхи кунранах тĕрĕслесе тăма пуçларĕ пулин те, унта хăйĕн парторгне, бюро членне ярсан та ĕç кал-кал каяймарĕ. Ялшăн чи хĕрӳ вăхăт çитрĕ — ял çынни вырмана тухрĕ. Ал вăйĕ çитмест. Йывăрлăхран тухмалли сăлтавсене шыраççĕ. Калаçу тимĕрçĕ лаççи пекех вут-хĕм сирпĕтет. Хуравлисем макăрса кăтартнă хыççăн «Шурăмпуç» пуçлăхĕ Волков тарăхса кайрĕ.

— Мĕн сехет çине пăхса ларатăр? — терĕ вăл хăй пек хуçасене. — Ман, мĕн, çын ытлашши тесе шутлатăр-им? Кашниййĕ — ылтăн шутĕнче. Шутласа пăхăрха хăвăрах? Хĕрӳ ĕç ялта уйăхĕ-уйăхĕпех тăсăлать. Сăлтав тупса пĕри ан ярăр стройкăна техникăпа çын, тепри... Тата тем тĕрлĕ чăрмав сиксе тухĕ. Кунашкал ĕçлесен эпир комплекса вунă çул тăватпăр. Хăвăр çав вăхăтрах витисене те юхăнтаратăр, выльăх-чĕрлĕхне те путлĕ пăхмастăр. Чакса лартăмăр вĕт сысна хули çине шанса? Э-э, комплекс пĕлĕтрен ӳкмест, çумăр пĕрчи мар. Кĕçех пире хула çынни питрен сурать. Вăл пиртен аш, сĕт, çăмарта ыйтать. Пирĕн çак комплекссене кĕтет, шанать, ĕненет. А эпир кунта, тункатасем, çын çук тесе лăпăртатса ларатпăр. Пур çын ялта — кашни колхозрах. Тупмалла ăна. Çĕршыв калăпăшĕпе пăхма вĕренмелле пурнăç çине. Сăмса умĕнче мĕн выртнине çеç курсан хăвăн хуçалăх картишĕнчен малалла тинкерейместĕн. Эпир, туршăн та, ял хуçалăхне малалла аталантаракансем мар, каялла туртакансем. Çирĕпрех ыйтмалла. Çӳлтен.

— Эп унашкал комплекссене яланах хирĕç пулнă.

— Çирĕм пин сысна валли апат ăçтан çитерĕпĕр?

— Кайран чавса çыртасшăн пулăпăр-ха та...

— Укçа-тенке пустуй шывпа юхтарса яратпăр...

Тельман Федотович çамкине ку сăнăсем пурте шăтарса кĕрсе ларчĕç, вăл вĕсене колхоз председателĕсем тарăхса пересре тахçанах кĕтнĕ, хăй те пĕтĕм вăйран ярăнтарнă çав сăнна Мускав айванĕсен кăкăрне. Ялта çуралса ӳснĕ, ял сысни, ĕни, сурăххи ăçта, хăш картара ытларах та тутлăрах сĕтек пама пултарнине ял сывлăш-курăкĕпе, ял туйăмĕпе курса-сывласа тӳснĕ вăл. Выльăх лагерьне, тĕрĕссипе концлагерьне тесен те çылăх пулас çук, çак комплекссем кĕрлемеулама тытăнсан, вĕсен, колхозсен, ялта сысна çăвăрлаттарса, ĕне пăрулаттарса, сурăх пăрамлаттарса, çурисене, пăрушĕсене, путекĕсене çавăнта кайса памалла, вĕсене тăрантарса ӳстерме апатне те кирлĕ чухлĕ парса

тăмалла. Комплекс чуппинче сан вĕçĕнче мĕн тухса ӳкет — çавна чикетĕн енчĕкна. Шăхрансем халех чир-чĕр мурĕпе туслашма пуçланă. Мĕнпур тăкакне шутласан, выльăх-чĕрлĕх кăмунисем (ăна Карачăм мучи пит сăнарлă каланăччĕ) яла та, хулана та выçă та, йĕмсĕр те тăратса хăвараççĕ. Усси пулмасть вĕсенчен. Анчах та... райком пуçĕнче тăракан çынсенчен пĕри вăл — «Шурăмпуç» колхоз председателĕ те — хальлĕхе çак комплекса тăвассине хирĕç тăма пултараймасть: чунĕпе-юнĕпе пултарсан та — ĕçĕ-хĕлĕпе вăй çитерейместь. Вăл та — кăшăлра.

Район канашне ертсе пыракан Альберт Григорьевич Большаков та, райком хуçи Яков Сидорович Мургаев та пиншер выльăх-чĕрлĕх усраса самăртмалли шăршлă «хуласем» ырăнне кашни хуçалăхра тухăçлăрах, тупăшлăрах фермăсем, хресченсен, рабочисемпе интеллигентсен килĕсене çемье сĕтелĕ тулли аш-какай, сĕт-çу, çăмарта тата ытти çиме юрăхлă чĕр-чун витисем тумашкăн çутă çул уçса параймаççĕ. Çав çул çинче патшалăх чаркăçĕ тăрать. Ун урлă сиксе каçас текенсен е ури хуçăлать, е пуçĕ çухалать. Ирĕксĕрех вара район енчĕкне тĕппипе силлесе, юмахри тĕпсĕр шăтăка юлашки ылтăн-кĕмĕле суккăрла силлеççĕ. Республикипех çапла.

Вăрманкаса нумаях пулмасть ĕçлеме килнĕ Большаков халĕ ку пăтранчăка пушшех туйса пычĕ. Çунатлă сăмах вĕçевĕ темшĕн çутă малашлăхалла мар, йăлтах тепĕр еннелле илсе каять халăха. Малашлăх ĕмĕлки, хĕвелне вупăр çинипе, сӳнсе, курăнми пулса пырать. Мургаев-Вьюнов-Оманов-Маминов йышши коммунистсем çине çивĕчрех куçпа пăхнă май, Шупашкарти тата Мускаври партертӳçĕсен карьеристла-сутăнчăкла хăтланăвĕсене пуçра çавăрттарса илнĕçем вăл Коммунистсен партийĕ нимле самана ăсĕ те, чысĕ те, совеçĕ те маррине ăс-тăнĕпе ăнланса пырать. Маска тăхăннă суеçĕсем, вăрăсем, чыссăрсем ертсе пыраççĕ иккен ылтăн шывĕнче чӳхесе кăларнă арпапа вуншар çул хуш-

ши пуҫӗсене тултарса пыракан нумай миллионлӑ ҫара. Тӗсӗ ҫухалса пынӑ май, ҫынсен пуҫӗ те ҫав пушӑ арпаран тасалать ӗнтӗ. Ҫурхи шыв тӑрӑлнӑ пекех тасалса пырать ҫынсен мимийӗ Анӑҫ тусанӗнчен. Волков-Крутов-Быстров калаҫӑвӗнче вара Альберт Григорьевич шухӑшлав тасалӑхне куҫӗпе курать.

Вӑл унччен агроном, колхоз председателӗ, районти ял хуҫалӑх управленийӗн начальникӗ пулнӑ. Кунта киличчен Большаковӑн Хӗрлӗ Сӑр районӗнче пӗрремӗш секретарьте те ӗҫлеме тӳр килнӗ. Яков Сидорович вӗчӗхсе ӑна обком хӑй вырӑнне лартма хатӗрлесе кут хыҫне килсе янӑ, тет. Альберт Григорьевичӑн вара пӗртте унашкал вӑрттӑнла усал шухӑш ҫук. Шупашкарта та урӑхла шухӑш, ун валли Министрсен канашӗнче вырӑн пушанасса ҫеҫ кӗтеҫҫӗ. Кадрсен вылявӗн тактика меслечӗ ҫеҫ вӑл вӗсемшӗн. Тӗнче аталанӑвӗнче КПСС пурнӑҫ пӑсне тухса пынӑ вӑхӑтра райком секретарӗн пӗрремӗш пуканӗ сӑваплӑ та ҫӳлелле улӑхмалли ҫирӗп картлашках мар ӗнтӗ. Мургаев ӑна ӑнлансах ҫитеймест пулас. Чупса-утса тухмалли ҫул вӗҫӗ те курӑнать те ӗнтӗ ватӑлса пыракан ҫыннӑн...

Альберт Григорьевич Тӑван ҫӗршывӑн аслӑ вӑрҫи тухсан иккӗмӗш ҫулӗнче ҫуралнӑ. Ашшӗ фронтра пуҫне хунӑ. Амӑшӗ ӑна пӗччен пӑхса ӳстернӗ. Вӑл ӳссен Шупашкарта ял хуҫалӑх институтне вӗренсе пӗтернӗ, каярахпа КПСС Тӗпкомӗн обществӑлла наукӑсен академийӗнчен ученӑй пулса тухнӑ. Чулхула облаҫӗн чиккинче ҫуралнӑскер вӑл вырӑсла ачаранах тӑван чӗлхерен кая мар калаҫма-ҫырма вӗреннӗ. Калаҫма пуҫласан вара ыттисенчен уйрӑмрах хулӑн сассипе пӗтӗм таврана янратса ҫавӑрса илет. Вӑтӑр урлӑ каҫнӑ тӗлех унӑн хурахӑмӑр ҫӳҫӗ кӑвакарма пуҫланӑ. Сӑнӗ те хурарах хӑмӑр тӗслӗ. Ни вӑр ҫавракa, ни туртса тӑснӑ пек тӑрӑхла мар чӑн чӑваш сӑн-питлӗскер. Кулнӑ чухне пит ҫӑмартисем пӗчӗк ача чышки евӗр хӑпара-хӑпара каяҫҫӗ. Тути патнелле тарӑн йӗрсем анаҫҫӗ. Кӑшт хӗсӗкрех куҫӗнче ӑшӑ

туйăм тата вăрттăнлăх палли йăлкăшса илет. Кĕлетке хăвачĕпе çĕкленсе кулнă майăн пит çинчи çав йĕрсем якалаççĕ, тӳрĕленнĕ çӳлти тути хĕрри айĕпе шултра çирĕп шăлсем шуралса каяççĕ. Уçă сăн-пит такама та хăй патне чунтан калаçма çывхартать.

Хăйне мĕншĕн кунта куçарнине Альберт Григорьевич малтанах лайăх пĕлнĕ. Вăрманкас районĕн хуçалăхĕ хăçантанпа ĕнтĕ ыváннă кĕтӳ тăсăлса кайнă пек аталанса пырать. Мал пуçĕнче — «Шурăмпуç» колхоз, хӳрешкере — «Çăлтăр». Парти вара «çăлтăрсене» те «шурăмпуçсемпе» тан пыртарасшăн, вĕсене хăваласа çитмелли уçăмлă çул-йĕр кăтартса парасшăн. Çав çул тăрăх тӳрĕ утма пултар çеç.

Мургаев вара пурнăç юххипе юхнă, район парторганизацийĕн тилхепине лăнчăлатнă, кивĕ мелпе ĕçленĕ. Ывăннă лаша,тем пек пушăпа хăваласан та, пурпĕрех ыттисенчен каярах юлать, çăвартан сĕлĕ хыптарсан та кавлесе вăй илеймест тенĕ евĕр, хевте çитмен пуçлăх çӳлтен панă пулăшупа туллин усă курайман.

Ĕçне хавшатнă пулин те Мургаев район тилхепине хăй ирĕкĕпе пама шутламан-ха, «Эпĕ пултараймастăп, райком секретарĕнчен хăтарма ыйтатăп» тесе заявлени çырма хал çитереймен. Хăй тăвакан ĕç уншăн пурпĕрех çителĕклĕ пек туйăннă. Хуçа пулма хăнăхнă усал йăла пĕтерне ăна. Влаçа ирĕкпе паракан сахал çав. Унта епле те пулин ытларах тытăнса тăрас, влаçпа туллинрех усă курса юлас килет. Унашкалли хăйĕнчен ăслăраххине, çивĕчреххине, пултаруллăраххине ум памасть, ăна такăнтармалли сăлтав шырать. Ун ăшĕнче кĕвĕçӳ çуралать.

Çĕнĕрен çĕнĕ, пысăкран пысăк ыйтусем тухса тăнипе юлашкинчен Мургаев çухалса кайнă. Района ертсе пыракан кăткăс механизм çапла якалнă, тутăхнă. Тутăхнă япала вара, тем чул çупа сĕрсен те, вăй хушса парсан та, пурпĕрех пĕр тикĕс ĕçлеймест. Ун пек чухне ăна улăштараççĕ, çĕнетеççĕ.

Çав вăхăтра чĕннĕччĕ Большакова Шупашкара. Парти обкомĕн секретарĕ ăна хаваслă кăмăлпа кĕтсе илчĕ. Ун умне вăл тӳрех кăткăс ыйту кăларса тăратрĕ: «Вăрманкас районĕнчи парторганизацие ертсе пыма тытăнмалла, халех, конференцичченех». Альберт Григорьевич парти ĕçĕн йĕркине аван пĕлет: пĕрремĕш секретарьсене яланах хăвăрт, çын сисмелле мар улăштараççĕ. Малта пынă колхоз председателĕсем те халĕ темиçе район пуçĕнче тăраççĕ. Юлашки вăхăтра унашкал улшăнусем тата икĕ районта пулса иртрĕç. Черет Вăрманкаса та çитрĕ. Район хуçалăхне парти хушнă-ыйтнă пек ертсе пырайманнисене обком пултарулăраххисемпе çĕнетет.

Ку ыйтупа Мургаев та çав кунах обкомра пулчĕ. Вăл секретарь пӳлĕмне кĕнĕ чухне унта Большаков калаçса ларатчĕ. Яков Сидорович, хăйне кĕтмен хыпар пĕлтерсен, малтанах хăлтăкланчĕ, унтан, пурпĕрех усси пулас çуккине туйрĕ те, сĕнӳ парса пăхрĕ. «Пĕрремĕшсене, — терĕ вăл, — ĕçрен хăтарсан та тӳрех кунта илсе килекенччĕ-çке? Ман валли те вырăн тупăрха ĕнтĕ». Обком секретарĕ Мургаева çапла хуравларĕ: «Пулнă тахçан унашкал йăнăш йăла. Районта пултарайман е ята янă пуçлăхсенчен хăшне-пĕрне Шупашкара лăпкăрах ĕçе куçарнăччĕ. Эпир çав йăларан малашне пăрăнас тетпĕр. Сире райсовет ĕçтăвкомĕн председательне куçарасшăн. Района Альберт Григорьевичпа пĕрле йĕркеллĕ ертсе пырăр».

Обком секретарĕ умĕнче йĕрсе ярас пек ларакан Мургаева хĕрхенчĕ Альберт Григорьевич, хăйне ун вырăнне мар, райĕçтăвкома яма ыйтрĕ. Килĕштерчĕç унăн сĕнĕвне-ыйтăвне.

4

Çĕнĕ ĕçе Альберт Григорьевич чи малтанах çынсенчен пуçларĕ, райкомрисемпе тата райĕçтăвкомрисемпе тĕплĕн паллашрĕ, колхозсенче, ял Совечĕсенче тăтăшах пулчĕ, вăрманпромхозра, «Сельхозтехника» пĕрлешĕвĕнче,

фабрикăсенче ĕçе мĕнле йĕркеленине тĕрĕслерĕ. Вăхăта шеллемерĕ. Халăх хушшинче мĕн чухлĕ ытларах çӳретĕн, çавăн чухлĕ унăн хуйхи-нушине ытларах пĕлетĕн. Халăх чи çывăх критик та, чи аслă шкул та пулнине вăл тахçанах ăнланнă. Çавăнпа унран уйрăлман, иртсе кайма та шутламасть.

Пуçламăш парторганизацисенче пуринче те тенĕ пекех пулчĕ вăл, коммунистсемпе кашни кун куçа-куçăн тăрса калаçрĕ.

Советсен депутачĕсемпе тата активĕпе канашлани те Большакова чылай пулăшрĕ. Ял хуçалăх аталанăвĕнче Советсен ролĕ пĕчĕккине туйрĕ. Хăш-пĕр колхоз председателĕсем вĕсене хăйсене пăхăнакан хатĕр вырăнне хăварма пуçлани сисĕнет. Мĕншĕн Тарăнвар ял Совечĕ «Шурăмпуç» колхозшăн пысăк вăй? Мĕншĕн пур çĕрте те ун пек мар? Çак ыйтăва вăл Мургаева райком бюровĕпе райсовет ĕçтăвкомĕн пĕрлехи ларăвĕнче сӳтсе явма сĕнчĕ. Ларăва Тарăнварта ирттерчĕç. Унта, вĕренме тесех, ял Совет хуçисене пурне те чĕннĕччĕ.

Район пурнăçне Большаков майĕпенех хăнăхса пычĕ, унăн халăхра ячĕ-сумĕ те ӳсет. Кăткăс ыйтусем татса пама халĕ пĕрремĕш секретарь пӳлĕмне мар, Альберт Григорьевич патне халăх йышлăн çӳреме пуçларĕ. Мургаев çакна асăрхамасăр юлмарĕ, хăйĕнчен хисеплĕрех, сумлăрах çын районта пурришĕн ăшĕнче тăвăрланчĕ, кĕвĕçрĕ.

Ял хуçалăхне ертсе пырассине вăйлатмалли мерăсем сахал йышăннă-и юлашки çулсенче? Камăн тăрăшмалла station? Акă, райсовет ĕçтăвкомĕн ял хуçалăх управленийĕ. Штачĕпе унта аслă специалистсемех икĕ алăри пӳрне чухлĕ. Ялсенчен сводка пухса ларакан зоотехниксем, агрономсем, инженерсем... Управлени начальникĕ Вьюнов мăйлама тытăнчĕ: специалистсене яла кăларса янипе сводка пухакан çук-мĕн. Ял хуçалăх министерстви кашни кун, эрнере, вунă кунра, уйăхра, кварталта, çур çулта вуншар кăтарту ыйтать вĕсенчен. Кашнин — хăйĕн вăхăчĕ. Пурнăçламасăр пăх-ха?

Тăнкăрук лекет. Ирĕксĕрех вара пĕрне дежурствăна хăварма, ыттисене колхоза яма килĕшрĕç. Ял хуçалăх управленийĕнчи специалистсем тин хăш колхоз ферми, уйĕ, машинăпа трактор паркĕ ăçта вырнаçнине курса тĕплĕн паллашма пуçларĕç.

Ял хуçалăх управленине Шупашкартан вĕçĕмсĕр паха хут килсе тăрать. Управлени вĕсене пурнăçламалли инструкци хатĕрлет, колхозсене ярса парать. Ял хуçалăхне аталантармалли ĕçсен программи вара районпа колхозра вăйсăр çулăм пек сӳнет.

Хăçан мĕн тумалли те, ăна камăн пурнăçламалли те, уншăн кам хуравли те, кама пĕçерккĕ памалли те паллă. Пĕр сăлтав çеç паллă мар: мĕншĕн çавнашкалах сӳсленчĕкленсе кайнă-ха яваплă вырăнта ларакансем?

Большаков халĕ пĕлет ĕнтĕ, яваплисем тивĕçе çухатнин тĕп сăлтавĕ вăл — канăç пурнăçра. Лăпкăлăх чирĕ Мургаева пăхăнакан çынсен ӳт-тирне те, ăш-чикне те хытах чирлеттернĕ. Вĕçĕмср ĕçкĕ-çикĕ парти йышăнăвĕсене пурнăçлассишĕн пултаруллă ĕçлеме чăрмантарнах пуль çав. Чи малтан хăйĕн хырăмĕшĕн, çи-пуçĕшĕн, кил-çурчĕшĕн çеç çамка çине тар кăларакан пуçлăхран ыррине кĕтеймĕн.

Мургаевпа район тăрăх çӳренĕ вăхăтра Большаков çакна асăрхарĕ: кашни колхоз председателĕ апата чĕнет, килне мар, ăçта та пулин вăрттăн уçнă «хупаха». Сĕтел çинче така шӳрпи те, чăх тукмакки те, сар пулли те тулли. Эрехĕ хăшĕн ещĕкĕпех ларать пулмалла. Хăналаççĕ те хăналаççĕ.Унашкал йăлана хăнăхман Альберт Григорьевич аптăраса ӳкрĕ: çиме те, ĕç вăхăтĕнче ĕçме те именчĕ. Яков Сидорович: «Эс ман умра юри пăлахая перен», — терĕ. Çакнашкал çул çӳревсем хыççăн иккĕшин хушшинчи туйăм шăнса пăсăла пуçларĕ.

Пыллă-сыллă хутшăнусемпе ĕçлеме хăнăхнă Вьюновăн çапах та самаях нушаланма тиврĕ. Райсовет сессийĕнче, ял хуçалăх управленийĕн ĕçĕ çинчен сӳтсе явнă чухне, Большаков тӳрех каларĕ: «Пире пĕлсе, опера-

тивлӑ, коллектива ӗҫе тӗрӗс кӳлме, ӑна парти хушнӑ пек ертсе пыма пултаракан пуҫлӑх кирлӗ. Ҫав енсене эпир хальлӗхе Вьюнов депутатра сахал куратпӑр-ха. Чӑннипех управлени пуҫӗнче тӑраясах тетӗр пулсан эсир, Илья Ильич, ӗҫ ҫине паянхилле канӑҫ куҫпа мар, тарӑнраххӑн пӑхма вӗренӗр. Управлени хальлӗхе колхозсене тивӗҫлӗ пулӑшу параймасть-ха. Специалистсем ялсенче сахал пулаҫҫӗ, пырсан та курӑнса, хут таврашӗ тӗрӗслесе ҫеҫ тухса каяҫҫӗ. Мӗншӗн райком инструкторне Крутова фермӑсенче те, уйра та, пур ҫӗрте те халӑх лайӑххипе асӑнать? Мӗншӗн тесен вӑл сӑмахпа кӑна мар, хӑй пӗлнипе вӗрентсе пулӑшать колхозниксене. Инструктор пусӑ ҫаврӑнӑш йӗркелессипе те, ҫӗпре установки лартассипе те, сыснасен ӑратлӑхне лайӑхлатассипе те чупса ҫӳремӗччӗ, ҫынсемпе, парторганизацисемпе ытларах ӗҫлӗччӗ. Сирӗн специалистсем тумалли ӗҫпе унӑн вӑхӑта ирттерме тивет. Намӑс. Хӑвӑр йӗре хӑвараймастӑр ялта. Ҫавӑнпа та ӗнтӗ «Мӗн пустуй укҫа илсе лараҫҫӗ-ши ҫав управленире?» тенине час-часах илтме пулать. Хутпа тӗркӗшсе ҫитет. Ӗҫе ҫӗнӗлле йӗркелемелле».

Хӑйӗн ҫум ҫаккине Мургаев мӗншӗн вилсе каясла хӳтӗлени паянхи калаҫура та хытах сисӗнчӗ. Хуҫалӑх пуҫлӑхӗсен яланхи перкелешӗвне чарса лартнӑ хыҫҫӑн Большаков айӑплисене куҫ кӗретӗн асӑнма пуҫларӗ, комплексшӑн Вьюновӑн ытларах чупса ҫӳремелли ҫинчен аса илтерчӗ. Яков Сидорович ӑна хӳтӗлеме пуҫларӗ:

— Япӑх ӗҫлет, пултараймасть ӗнтӗ сирӗн шутпа, Илья Ильич. Пулӗ. Ҫапах та эпӗ ӑна, Альберт Григорьевич, сирӗнтен ытларах пӗлетӗп. Илья Ильича ҫунат сармашкӑн ӗҫре ирӗклӗх кирлӗ. Управление ертсе пырать пулсан, пуҫлӑх ятнех илттӗр вӑл. Сирӗн те тӳрех тӑлламалла мар унӑн урисене. Пуҫпа, пултаруллӑ ӗҫлетӗр. Ҫапах та вӑл ман ҫын — райком бюровӗн членӗ. Сире те, мана та итлет. Эсир вара пурне те хӑвӑр пек тутарасшӑн. Никама та шанмастӑр. Пуҫаруллӑ ҫынна кӳрентерсе пӗтеретӗр. Иртнӗ сессире те... Кам хушнипе ҫапла

ĕçлетĕр-ши? Те ман хыççăн йĕрлесе, пурне те çĕнетсе-улăштарса, «эпир хамăр тунă» тесшĕн-ши, историе кĕрсе юласшăн-ши? Çын ĕçĕ ахаль хуран курăнать вăл.

Мĕн каламаллине те аптрарĕ ĕнтĕ Большаков йӳтĕке, çапах та çынсем умĕнче ăна ытлашши кӳрентерме шутламарĕ.

— Яков Сидорович, сире кураймасăр та, хисеплемесĕр те мар, юлташла куçран калатăп: бюро шутĕнче тăрать тесе Вьюнов юлташа тархасшăн сăпкара ан сиктерĕр, малашне пурпĕрех май килмĕ, вăл райкомра мар, ĕçтăвкомра укçа илет... Илья Ильича малашне çемçе пуканĕ çинче пуçран шăлса ларассипе ларас маррине те хамăрах татса парăпăр, — терĕ юлашкинчен райĕçтăвком председателĕ.

Лару вăраха тăсăлса кайнăшăн тарăхнă Волков пĕрремĕш секретарь енне пăхса илчĕ те:

— Яков Сидоровичăн та пустуй кутăнлашса Альберт Григорьевича усăсăр тавлашăва кĕртсе ярас йăлана пĕтерме вăхăт. Икĕ пуçлăх тавлашăвне итлесе ларма пухăнман эпир кунта. Чăкрашланни — ырă хутшăну мар, — терĕ сăпайлăн. — Сан вара, Илья Ильич, мухмăрна эрехпе мар, выговорпа чĕртмелле пулать. Ыйтсах ĕçен вĕт яла пырсан! Хăналамасан — хăратма пăхан. Намăс мар-и сана? Район тем пек мăн ĕç палăртать те, вăл пур, суйса, хуларан хулана ярăнса çӳрет. Кунашкал ертсе пыракан ял хуçалăхне, темле, умра телей курăнмасть пирĕн.

Вьюнов секретарь енне пăха-пăха хӳтлĕх шырарĕ, анчах Мургаев çăвара шыв сыпнă пек ларчĕ.

## 5

Чăнах та, бюрора тĕпĕртеттернĕ хыççăн, ĕç малалла кайрĕ пек. Анчах, инкек çине синкек тенĕн, пуçланнă пысăк ĕç умне çĕнĕрен çĕнĕ чăрмавсем хура карта тытса пычĕç. Халăх çителĕклĕ ĕнтĕ. «Шурăмпуçсем» кĕрешӳ килĕшĕвĕ турĕç. Çĕмĕрттермелле çеç...

Райкомри пайсем хушшинчи «китай хӳмине» тӳнтерсе янӑ хыҫҫӑн Быстров йӗркелӳ ӗҫне кашнинех хутшӑнтарма пуҫларӗ. Иккӗмӗш секретаре ларсан вӑл хӗрӳлӗхне ниҫта хурайми пулса ҫитрӗ. Мургаев хӑй те аптраса ӳкет тепӗр чухне, ҫапах Семен Ильича пӑркӑчлама шутламасть. Пӗлет вӑл Быстров мӗншӗн хӑлтӑртатса ҫӳренине, ӑна Майлов пек вӑрттӑн влаҫ кирлӗ мар. Кут хыҫӗнче динамит пытанса выртнине тахҫантанпах туйса-пӗлсе пурӑннӑ хыҫҫӑн вӑл тин сехӗрленме пӑрахрӗ: ку ачана шанма пулать. Ҫумра вут пек ҫунса ӗҫлекен пур чухне лӑпкӑн вӑхӑта irттерме май пур-ҫке. Болшаковран ҫеҫ упаран хӑранӑ пек хӑрать халь вӑл хӑй аллинчи Вӑрманкас тӑрӑхӗнче. Ӑсӗ-пуҫӗпе те, ҫулӗ-сумӗпе те, мал ӗмӗт-малашлӑхӗпе те Альберт Григорьевич ҫӳлерех тӑрать унран. Шупашкарта ҫапса хуҫтармарӗ пулин те, пурпӗрех Мургаев ку вӑл вӑхӑтлӑх вӑйӑйи кӑна тесе шухӑшлать. Ах шутсӑр йывӑр-ҫке тахӑш самантра та хӑвӑн вырӑнна шанчӑклӑн йышӑнма хатӗр ҫын юнашар чухне. «Ман район», «ман Вӑрманкас», «ман халӑх» теме хӑнӑхнӑ хыҫҫӑн ҫынсем урӑхххине пуҫ тайса пӑхӑнма тытӑнни уншӑн вилӗм пекех. Яков Сидоровичӑн пурне те хӑйне ҫеҫ пӑхӑнтарас килет. Хуҫан суккӑрла ӗненӗвӗ акӑ кунсерен шанчӑкне ҫухатать. Крутов Большаковпа «Хӗвеллӗ ире» ларса кайнишӗн те кӗвӗҫсе юлчӗ вӑл. Кусем пуш параппан ҫапакансем мар, ӗҫне тӑвӗҫ-ха, ыран шупашкарсене калама та мӗн те пулин ырринех илсе килӗҫ тесе хӑйне хӑй лӑплантарчӗ.

Большаковпа Крутов ҫитнӗ чухне романтика хулинче шӑпахчӗ. Кам ҫунтаракан хӗвелтен пытанса мӑн ҫул хӗрринчи хырлӑха кайса выртнӑ, кам купаласа пӗтермен стена сулхӑнӗнче ыйха туртать. Уйпа кунталла чупакан ҫынна Крутов аякранах асӑрханӑччӗ-ха, ҫывхарнӑ май, палларӗ. Ара, ку Тарӑнварти Тимуш вӗт: тракторне ватнӑшӑн стройкӑра ҫылӑх каҫарттарать. Ҫурт кӗтессинче вӗсем сӑмсапа сӑмса тӗкӗннӗ пекех тӗл пулчӗҫ. Тимуш

çутăлса çиçекен куçне мăчлаттарчĕ те алăри карттусне атă пуçне çавăрса çапрĕ.

— Тĕнче кулли! Тĕнче ухмаххи! Çĕнĕ стройкăра çĕнĕлле ĕçлесе çĕнĕ çын тăвасшăн манран. Анра сухра. Ух, çав пуш параппан çапакансене! Тирне сӳсе хам параппан тăвăттăм... — такампа çухăрашрĕ Тимуш.

Крутов хĕрсе кайнă çамрăка лăплантарасшăн пулчĕ, анчах кăлăхах, итлемерĕ вăл ăна, чĕлхи çине килнĕ шăллă сăмахсене обоймăри патронсене персе пĕтернĕ пекех кĕрслеттерчĕ:

— Ĕç çук, Максим Максимович. Ăнлантăр-и? Куратăр-и? Иртенпе шăл хăйраса ларатпăр. Миçен? Пĕлетĕр-и? Çĕрĕн. Колхозра тырă тăкăнать. Çав çĕр çын çĕр пăт тырă пухса кĕртсен те кĕлет тулать. Паян кăнтăрлаччен лартăмăр, ыран ларăпăр. Пăрахатăп та каятăп. Луччĕ колхозра тырă вырап. Эх, хуçасăрлăх, йĕркесĕрлĕх! Тарăхнипе чăтаймарăм, илтĕм те вăн, çав трос татăккине, хӳтерсе кăларса ятăм.

— Кама? — интересленчĕ Большаков.

— Кама?.. Паллă, кама — хуçасене, стройка лăпăртисене. Ĕçе йĕркелеймеççĕ. То машина çук вĕсен, то раствор, то бетон. Машина ăшне чăмман пулсан-и? Лайăх яваттăмччĕ троспа пирĕнтен кулнăшăн. Омановĕ саркаланса тăнă та пирн умма, юмах çапать. Сире эпĕ, тет, Адампа Ева ăçтан пуçланса кайни çинчен лекци вуласа паратăп. Майловĕпе Вьюновĕ ахăлтатса кулса яман пулсан, тен, çав тĕрлĕ тарăхмастăмччĕ те, çунакан чĕрене ахаль тепĕр хут чĕртсе ячĕç те... Ярса илтĕм вара трос. Милицие ăсататпăр тесе хăмсарса хăварчĕç-ха.

— Ан тĕлĕнтерĕр, — пуçа пăркаларĕ Максим Максимович.

— Ак хĕвеле хирĕç пăхса калап, суймас. Ун хыççăн вă-ăн унта, тырă пуссине, кайрăм. Комбайнертан ĕçлеттерме ыйтрăм — ирĕк памарĕ. Чуна кантарас тенĕччĕ, пĕреххут, комбайн çинче. Пушшех тарăхса таврăнтăм. Машина куртăм та, каллех Вьюновсем пуль тесе, кунта

хашкаса чупрăм. Эсир пултăр. Бетон илсе килееççĕ-и-ха паян? Çăкăрсăр стройка та пирнешкел «батонсăр» выçă. Илтетĕр-и, епле улать тавралăх çилпе? Пар-ратпăр ак халь вĕсене мил-лици! Çак хĕрӳ кун эпир сулхăнра аяк пĕрчи хырса выртнине пĕлсен-и пирĕн Тельман Федотович... Çиет вĕсене, чĕрĕллех кăшлать. Ара, ма ман Волкова евитлемелле-ха? Хуçапа килнĕ вĕт эсир, Максим Максимович? Вьюнов пуçлăхĕччĕ пуль ку? Мăн Альпă текенни? Вăрманкас каланчин хуралçи?

Большаков кулма та, ним калама та пĕлмерĕ, ĕç тумтирĕ тăхăннă йĕкĕте вăрăм аллине тăсса пачĕ:

— Большаков пулатăп, Альберт Григорьевич. Аван-и?

— Якши! — карттусне çĕклесе тăхăнчĕ те, чысларĕ: — Стройка, смирно!

Сасса илтсе çынсем çывхарма пуçларĕç. Вĕсем çитиччен Крутов кула-кулах калаçрĕ:

— Ялти кулăш театрĕн артисчĕ ку пирĕн, Альберт Григорьевич. — Хăйсемех çыраççĕ, хăйсемех лартса параççĕ камичĕсене. Вĕсен ялĕнче, Тарăнварта, Карачăм мучи пур, халĕ вăл Тымарта пурăнать-ха, хăçан та пулин паллаштарап унпа. Çавскер, пушар каланчи çинче ял шăплăхне сыхласа ят илнĕскер, райĕçтăвком çуртне район каланчи тет, райкома...

— Райком çуртне... — ихиклетсе хушса хучĕ Тимуххa. — Хăрăк юман тăрринчи çăхан йăви тет.

— Чăнахах та çапла кулать, — çирĕплетсе каларĕ Крутов. — Мускаври секретарь Воронов, Шупашкарти секретарь Вороновский, Çĕнваркасри секретарь Воронцов... «Мĕнле-ха çăхан хушаматлă çынсем çавăрса илчĕç партие, юманĕ хăрма пуçланăран-ши» тесе пуçа пăркаласа çӳрерĕ-çӳрерĕ те ват çын, халăха пĕчĕк спектакль лартса пачĕ, авă халĕ рольне тракторист та вылять. Сире те Мăн Альпă теççĕ.

Пуçлăх умĕнче лайăхмарланнă Тимухха куç айĕн чеен пăхрĕ:

— Кулса мар эпир — хисеплесе. Хăвăр мăнă пулнăран, яту Альпă тенĕ пек илтĕннĕрен. Пирĕн район тăвĕ

пулăр. Каланчине унта хăпартса лартăр. Пăшалне авăрласах тăрăр. Хăрăк юман тăрринче явăнакан Мургаевсемпе Омановсем йышши выçă çăхансене куçна чалтаса кăларттарма ан парăр. Сыхă тăрăр пирĕншĕн. Вĕсене эпир тек шанмастпăр.

Кӳтсе-тарăхса çитнĕ çынсен ыйтăвĕсем çамкаранах пырса çапаççĕ. Халăха ĕçе хăвалани çителĕксĕр, ăна ĕçпе, ĕç турамĕпе, ĕç мухтавĕпе çӳле çĕклемелле. Çын вăл пурне те тăвать, çав вăхăтрах — пурне те ыйтать. Этеме нумай кирлĕ — хăй пекех пысăк, хăватлă пулăшу.

Çывăх ялсенчен килекенсем аптрамаççĕ-ха. Аякри е вăрман варринчи колхозсенчен кашни кун машинăпа икĕ-виçĕ сехет силленсе тухма, каялла каллех çав тертлĕ çула тума никамах та килĕшес çук. Чунне хытарса, ăшне пусарса эрне ĕçлĕ вăл кунта, унтан ытла чăтаймасть. Ахальтен улшăнса тăраççĕ-и çынсем стройкăра? Тин кăна мĕн те пулин тума ăнкартать, пăхатăн та тепĕр темиçе кунран — çуккă вăл. Тимуш «кунта пире юсанма яраççĕ» тесе ахальтен каламарĕ пуль çав. Иртнинче килсен пĕр хăюллă хĕрарăм Большаков умĕнчех пурне те йĕплесе илнĕччĕ: «Пире стройкăна пушăпа ан хӳтерĕр, пыллă-çуллă пурнăçпа илĕртĕр». Çав пурнăçа туса парассишĕн хальлĕхе никамах та тăрăшманнине Крутов паян хăй хăлхипе халăхран илтрĕ, хăй куçĕпе курчĕ.

Ĕç хатĕрĕ çитмест, ĕç тумтирĕ çук, строиматериал кал-кал килсе тăмасть — ку пĕрре. Ĕçе лайăх йĕркелейменнипе çынсен ĕç укçи пĕчĕк — ку иккĕ. Йăла условийĕсем начар — ку виççĕ. Çак виçĕ пысăк ыйту стройкăна малалла кайма чăрмантаракан чаркăч пулнине Крутов алăри пӳрнесем çине хутлатсах шутларĕ. Вĕсене татса памасан, комплекс хулине килсе кайнипе райкомрисем те, ĕçтăвкомрисем те, шупашкартисем те ĕçлес кăмăлпа тăрăшакан, çунакан çынсен ăшĕнче тарăхупа курайманлăх çеç çуратĕç. Çак ыйтусене район канашĕнче сӳтсе явмасăр татса пама май çуккине ăнланчĕ Большаков.

Анчах та... Альберт Григорьевич ыйтăва тĕплĕн хатĕрлеттернĕ вăхăтра... Мургаев черетсĕр бюро пухать. Унта вăл хăйĕн вăйне кăтартма шутлать.

— Эсир ĕнтĕ, Альберт Григорьевич, кунта хăна мар, — пуçларĕ секретарь мăн кăмăллăн. — Сĕнў-кăтарту парса çўренипех пулмасть. Эпĕ те пĕрре кăна мар пулнă стройкăра, эсир те канма кайса килтĕр Крутовпа. Унти çивĕч ыйтусем тахçанах паллă. Çĕнни çуккă унта нимĕн те. Пантелеймон Христофорович, хăйĕн кунти ĕçне пăрахмасăрах, стройкăра та хастар кĕрешет. Вăл манăн сылтăм алă, парторг ячĕпе кашни кун пĕлтерсе тăрать. Кама ытларах ĕненмелле ман? Сире-и, троспа Омановсене хăвалакан чарусăра пуçран шăлакансене? Аскăнчăка тытма пынă милици ушкăнне хăваласа янăшăн Шупашкарта хурав тытмалла ан пултăр. Çапах та, политикăллă терророрла хăрушă ĕç...

Ирĕксĕрех кулса ячĕ Большаков:

— Хэ-хэ-хэ... Юрать хăвăра каялла çул кăтартса ямаççĕ-ха, Яков Сидорович. Итлесе курасчĕ пĕрре хамăр çинчен вĕсем мĕн калаçнине, хамăра мĕнле хак панине...

— Кашни путсĕре пуçлăхсем çине алă çĕклеме ирĕк парсан... — типпĕн ўсĕрсе илчĕ Мургаев. — Ырă ятах илтмĕпĕр. Ĕçе йĕркеллĕ туса пыраймасан та!.. Миçе хутчен сăмах панă вĕсене? Мĕншĕн тумастăр?! Татса памалли çак ыйтусем пĕтĕмпех район Совечĕ, ĕçтăвком аллинче. Е райкомăн пĕтĕмпех комплекса куçса каймалла-и? Миçе йышăну çыртăмăр? Çав виçĕ ыйтăвне татса памалли хаклă йышăнусем пур. Мĕн тума вĕсене тепĕр хут ĕçтăвкомра сўтсе явмалла? Кашни кун, кашни эрнере пĕр пăтă çиетпĕр. Йĕрĕнтерсех çитерет: хамăра та, ыттисене те.

Район канашĕн пуçлăхĕ хăйĕн айăпне туять. Çав айăп вăл унăн та, Мургаевăн та. Çавăнпа пĕрле канашласа лăпкăн татса парасшăнччĕ вăл пур ыйтăвне те, хуравлисене пурне те пĕрле хутшăнтарасшăнччĕ унта. Халĕ секретарь авă тем пайлать:

— Çук, кунта Мургаев çине пĕтĕмпех йăвантарнипе ĕç малалла сиккипе каймасть. Сысна комплексĕшĕн

сирĕн пуç тирне те сĕвеççĕ. Ман та ун чухне мĕн каламалли пур. Ай-яй лайăх шутласа кăларнă. Пĕрин лавне туртмалла, теприн туртаканне пушăпа хăваламалла. Пĕрин вăйсăрланса тĕшĕрĕлсе анмалла, теприн ун урлă сиксе çӳл тӳпене çитмелле. Тавай, ыранах йĕркелесе ярăр стройкăри ĕçе. Майлов та, Оманов та чармасть. Çăкăр, ытти тавар ытлă-çитлĕ турттарса тăрăр, столовăй хăвăртрах уçса парăр. Власть çук-им сирĕн? Сире итлеме, пăхăнма, сиртен хăрама кирлĕ. Малтан Совет влаçĕн вăйне кăтартăр, кайран тин райкомра сăмахна хăпартăр.

Паян калаçу ырăпа вĕçленмессе, шухăш пĕр тĕвве çыхăнаймасса ăнланса илнĕ икĕ пуçлăх шăпланчĕç. Мургаев чӳрече умне, унтан сĕтелĕ патне каллĕ-маллĕ хутласа çаврăнчĕ, пуканĕ çине йывăррăн ларчĕ, урисене сĕтел уринчен çаклатса хыçалалла тайăнчĕ, мăйне каçăртса, пирус тĕтĕмне ункăн-ункăн кăларса ячĕ:

— Çитет паянлăха. Хырăм выçать. Апата...

Вĕри мунчаран милĕкпе çапăнаймасăрах тарласа тухрĕç те икĕ пуçлăх тарăннăн сывласа ячĕç. Большаков иккĕмĕш секретарь патне кĕчĕ. Семен Ильича хисеплет вăл, ун пирки Шупашкарта та нумай ыррине илтнĕ. Ăшри туйăм çыхăнăвĕ вĕсен шухăшне те пĕр тĕвве пухать.

— Яков Сидорович улшăннинчен тĕлĕнтĕм-ха, — хăлтăртатса кулчĕ Быстров. — Эсир Вăрманкаса киличчен вăл хăйне райком умĕнче тăракан Ленин палăкĕ пекех туятчĕ, халĕ... сирте вăл чĕрĕ çул пуça курать.

Большаков ăна хул пуççинчен тĕртсе илчĕ:

— Çул пуç пачĕ-ха вăл мана паян, çынсем умĕнче пусарсах хурасшăн пулчĕ. Пĕр енчен тĕрĕсех те пуль вăл. Советсен вăйне халăхра çĕнетмеллех. Советсен пĕтĕм йĕркелӳ, хуçалăх ĕçне, администраци тытăмне çĕнĕлле алла илмелле. Партин вара — халăх ăс-тăнĕн шухăш ăнлавĕпе, халăха воспитани парассипе ытларах ĕçлемелле.

— Чиркӳ тăрринчи хĕрес пек çутатса лармалла, — кулса ячĕ Быстров. — Влаçшăн çав эпир. Тĕнчене хамăр алăра тытасшăн.

— Ăспа та, алăпа та ытама илейместпĕр. Мими типет, кĕлетки чĕтрет...

Семен Ильич пит-куçне çирĕплетсе каларĕ:

— Тĕнче кăмунин влаçĕ мĕнлине курман, илтнĕ çеç, вĕреннĕ кăна унăн ырлăхĕпе хурлăхĕ çинчен... Хамăр патрине вара лайăхах пĕлетĕп. Эпĕ те çак пӳлĕмре тепĕр чух хама хам хастар тытатăп та... Манпа хирĕççинчи аслă пӳлĕмре?..

— Влаç вăл, — терĕ ассăн сывласа Большаков, — пӳлĕмренех, унти пуканранах килет. Райком çуртне тунăранпа çакăнта миçе çын ларнă-ши? Вĕсенчен кашниех района хăйне евĕр ертсе пынă: пĕри — хĕрӳ, тепри — майĕпе, çӳлтен пушăпа хăваланипе; пĕри — пултарнă, район хуçалăхне çĕкленĕ, тепри — пултарайман, района антарса лартнă. Пурте влаçпа усă курнă — парти панă влаçпа. Райсовет ĕçтăвкомĕн пуçлăхĕ ун куçĕнчен пăхнă.

— Халĕ эсир Мургаев куçĕнчен пăхатăр-и? — асăрханарах ыйтрĕ Быстров.

Аллине малалла çĕклесе кĕрешĕве чĕнекен бронза кĕлеткене чӳречерен пăхса тăракан Большаков, ун еннелле çаврăнса, каларĕ:

— Хамран ăслăрах çын куçĕнчен çеç пăхма хăнăхнă эпĕ...

Телефон шăнкăртатни калаçăва татрĕ. Арăмĕ Семен Ильича çула май пĕр буханка çăкăр тупса килме ыйтать.

— Каллех çăкăршăн хупахри сутуçă куçĕнчен пăхмалла пулать ĕнтĕ, — шарт! хучĕ вăл кукăр авăра. — Хăçан ытлă-çитлĕ пулĕ вăл, пирĕн пурнăç.

— Хальхи йĕркепе ĕçлесе пырсан — нихçан та, Семен Ильич, — тем аса илнĕн çамкине картлантарчĕ Альберт Григорьевич. — Хресчен ӳстерет ăна, тыррине патшалăх пӳлмине силлет, унтан каялла çăкăр чĕллине те илеймест. Çĕр хуçи, тырă ами пулмасан хресчен, вăл хăй те, эпир те паянхи пекех выçă ларатпăр. Анăçран йăлкăшса килекен кăмуна шевли ӳксе сӳнчĕ... Анăçран харпăрлăх çути каялла ӳксе хамăр тăван çĕр çинче аваллăх хĕвелне ялкăштарса ярасса çеç кĕтесси юлать, тусăм.

Пӳлӗм хуҫи, пуҫа пăркаласа, Большаков аллине хыттăн чăмăртарӗ.

6

Татса паман ыйту пурнăҫра ҫук. «Хӗвеллӗ ир» ҫийӗн те тӗтре сирӗлсе пычӗ. Райкомпа райканаш хирӗҫсе те, ҫураҫса та, пурпӗрех пӗр лавах туртрӗҫ. Мăн кăмăллăх, кӗвӗҫӳллӗх, стройка тусанӗпе хутшăнса, Хиркас масарӗ ҫывăхӗнчех явăнчӗ. Этемлӗхпе пӗрле ҫуралса аталаннă тупăшупа ăмăрту маҫтăртараххисемпе пултарулăраххисене палăртрӗ. Вӗсем алă парса та, пӳрне пуҫӗпе хут ҫине пусса та килӗшӳ турӗҫ. Тимухха шӳтленӗ пек, халӗ сысна хулинче хупах ҫуккă та Париж хваттерӗ ҫеҫ уҫман. Райпо пуҫлăхӗ Тит Милов хăйӗн майрисем мӗн ӗҫтерсе-ҫитерме пултарнине экстра-класс шайӗнче кăтартрӗ-ха пӗр уявра, анчах... пӗрне те парса хăвармарӗ «выҫă» строительсене. Тимуххасен вара хӗрнӗ сăмсасене «хăна ҫурчӗ» хыҫӗнчи хурăн шывӗпе чӳхесе сиплеме тиврӗ. Вăрман варринчи Хурăнлăх ял пирӗштийӗсем пурăнаҫҫӗ-ҫке ҫав кустиницăра. Тарăнвар ар ҫурийӗ те вара йӳплӗ хурăн хушшинче хӗвел кăларчӗ. Ҫапла, аякран килнисем халӗ эрнипех «хăна ҫуртӗнче» пурăнаҫҫӗ. Хăма керменте концерт, кино, тӗл пулу... Оманов Шупашкар лекторне илсе килчӗ. Философ, терӗ хăйне лешӗ. Сыснапа этем хушшинче те ăруйăх ҫыхăнăвӗ пурри ҫинчен марксизм-ленинизм философийӗ мӗнле ăнлантарать-ха тесе икӗ сехет ытла паврарӗ вăл. Анчах Тимухха, ун пирки ҫӗрӗпе шухăшласа выртрӗ пулин те, пуҫа ватса мар, куҫпа курса самантрах ăнланчӗ. Хурăн кати ҫумӗнчи ҫу каҫипе типме пӗлмен лачакара райком парторгӗ Оманов тата Шупашкар философ-лекторӗ хуп турттараҫҫӗ. Варрине Хиркасси сысни кӗрсе выртнă, сăран пуртвӗлтен кăнтарса тăракан тачка кăлпасси патаккине нăчлаттарать. Ăруйăх тăванне икӗ идеологӗ те ыталаса илнӗ. Халăх хырăмне какăриччен тăрантармалли, сысна пуҫӗпе кăна

мар, хӳрипе те тӗлӗнтерсе Чӑваш Ене, ҫӗршыва тӗнчере пуйтармалли ҫӗн ӗмӗр ирӗ Хиркас масарӗ ҫумӗнче акӑ епле туслӑн та тутлӑхлӑн пуҫланать иккен. Тимухха кӗҫтемен ӗнсине кӑтӑртаттарса илчӗ те, чан ҫапса ячӗ.

Сысна хулинче ҫӗнӗ кун пуҫланчӗ.

Улшӑнӑвӗ пурах ӗнтӗ: ӗҫӗнче те, канура та. Укҫине ялтинчен ытларах тӳлекен пулчӗҫ. Ҫавӑнпах пуль Большакова, унти ӗҫ-пуҫа тӗрӗслеме пырсан, «пире стройкӑна пушӑпа ан хӳтерӗр, пыллӑ-ҫуллӑ пурнӑҫпа илӗртӗр» текен инке савӑнсах пӗлтерчӗ: «Пире халь Хурӑнлӑхра пыллӑ-ҫуллӑ пурнӑҫ туса паччӑр, атту кунтах юлатпӑр, ял хули туса пӗтеретпӗр те, хамӑр хуҫа пулатпӑр».

Ку лайӑх. Халӑх кӑмӑлӗ уҫӑлчӗ, пурнӑҫ майлӑ ҫаврӑнчӗ. «Хӗвеллӗ ир» комплекс аякранах курӑна пуҫларӗ: ҫурт хыҫҫӑн ҫурт ҫӗкленет. Малтан палӑртнӑ пекех вӑл ашкакай фабрики пулса тӑрӗ. Вӑл — малашлӑх. Анчах...

Альберт Григорьевичӑн чӗрийӗ комплекс ҫинчен аса илсенех, ҫакӑнта килсенех, йӑшкама пуҫлать, чун вырӑнта мар. Райком инструкторӗпе Крутовпа пӗрле пулнӑ чухне паллашнӑ йӗкӗт каллех тем вӑлтассӑн туйӑнать. Шухӑш ҫинех тата кӗтмен-туман ҫӗртен сиксе тухрӗ вӑл ҫурт хыҫӗнчен, пуҫне чалӑштарса йӑлл кулчӗ те, растворлӑ аллине тӑсса пачӗ:

— Салам! Хаваспах сире кӗтсе илме, Мӑн Альпӑ. Каҫарӑр мана, ухмаха.

Большаков ӑна ыталасах илчӗ:

— Сывах-и? Нумаях юлмасть-ха. Кунтах юлас теместӗр-и? Сирӗн пек маҫтӑрсем шӑпах кирлӗ.

Тимухха нумай шутласа тӑмасӑрах пӗлтерчӗ:

— Кӑмӑл ҫук. Ӗмӗт ҫук.

— Хӑвӑр ял, Тарӑнвар, туртать-и? Уйрах ӗҫлес килет пуль ҫав.

— Вӑл та, ку та туртать, тракторӑм та тӗлӗкре урхамах пекех тӑпӑртатса кӗҫенет. Сӑлтавӗ сувҫем урӑххинче.

— Тем шухӑш тытнӑ тата?

Райканаш пуҫлӑхне вӑл ҫавӑтса уҫҫа илсе тухрӗ те:

— Курӑр, пӑхӑр тӗсесе, — терӗ.

— Тухăç ен...

— Тухăç ен те çав... Сысни хулине те «Хĕвеллĕ ир» ят панă та çав... Вырăнне суйласа илме пĕлмен Мургаевсем.

Аптăрарĕ Большаков. Ун шучĕпе ку комплекс валли Вăрманкас таврашĕнче урăх майлăрах вырăн çук пек: мăн çул хĕрринче, шăк-пăх тасатса юхтарма çырма юнашар, шыв илме мăн пĕве пур...

— Илемлĕ пулсан та, тунсăх, виле шăршиллĕ вырăн.

— Çывăхра масар пуртан çапла калатăр-и?

— Киле кайман чухне хамăр вакунккăрах çывратпăр. Ют çĕрте эп ыйхăсăр аптрап. Кăвак çутлах вăранап. Пăхса выртатăп чӳречерен. Шурăм пуçĕпе сыв пуллашнă хĕвел пайăркисем пĕлĕтрен çакăнаççĕ. Тавралăх çуталать, анчах çут çăмхи умра сиккелемест. Масар вăрманĕ явакласа тытнă иккен ăна. Унтан кĕç хура пĕлĕтсем явăнма тытăнаççĕ те... «Хĕвеллĕ ир» çине ирхи хĕвел ӳкеймест те. Каярахпа тин вара тӳперен çунтарма пуçлать. Пирĕн хамăрăн «Шурăмпуçĕнче» хĕвел Туçи тăвайккинчен хĕмленсе виксе тухатчĕ те, кӳршĕсенчен малтан пире култарса яратчĕ... Вăт кунта темскер пур, те çут çанталăкĕнчен, те вырăнĕнчен, те такам-мурĕн ăсĕнчен килекен шайлашусăрлăх тĕлĕнтермĕшĕ пурри сисĕнет. Ман та хăлха уçах та, кĕрсе каять хушăран халăх чĕлхинчен тухнă вăрттăн сăмах. Мăн Альпа килсен, ыйтса пĕлĕр-ха тĕрĕссине, тесе хушрĕç хамăрьялсем.

Тарăнвар ачи мĕн пирки шахвăртса тăнине ăнланчĕ Большаков, те каласан, те каламасан лайăхрах тесе ăсĕнче урлă-пирлĕ çавăрттарчĕ, халăхра çӳрекен чăн сăмаха эпир пытарни пушшех тарăхтараканччĕ-ха терĕ те вара вăл хăй ют патшалăхсенче мĕн курнине каласа пачĕ:

— Курман мар, курнă эп выльăх-чĕрлĕх комплексĕсене. Питĕ таса унта, питĕ тикĕс те типтерлĕ ĕçлеççĕ, апачĕ енчен илсен мĕн чухлĕ мĕн кирлĕ — çителĕклĕ, виçепе, чир-чĕртен хытă сыхлаççĕ. Аш-какайĕ те, сĕчĕ те, çăмарти те йӳне ларать. Хăйсем вара вĕсене çиесшĕн мар, ытларах сутса услам тăваççĕ. Сĕтелĕ çинче вĕсен

урăх апат: хĕвел питтинче симĕс çаран çинче самăрăлнă выльăх-чĕрлĕх юр-варĕ. Шăнтнă аш-какая та тиркеççĕ вĕсем, тин пуснă аш, ăшă сĕт пултăр. Ăна комплекс-фабрикăран илейместĕн, уйрăм хуçалăхран кăна. Çавăнпа фермер, хресчен хуçалăхĕ тупăшлăрах аталанать. Сана та лайăх — мана та.

— Пирĕн Тельман Федотович та сирĕн майлах калаçать, тем, вилĕ çуралнă сысна çурине мур картине чавса чикнĕ пекех туйăнать капла хама та çак аш-какай фабрики. Пирĕнтен, тирпейсĕрсемпе карма çăварсенчен пулас çук ăна йĕркеллĕ ĕçлеттересси. Шутлăр-ха хăвăрах, енчен те эп Тарăнварта çакăн евĕрлĕ сысна фабрики е завод туса лартап. Ман ни сысна çури, ни апачĕ çук. Ял çыннисене эп сире кĕркунне ылтăн айне тăвап тесе кашни кун юмах çапам. Ĕненеççĕ-ши мана, ухмаха? Темле. Турра сăх сăхса калатăп, ман пата никам пĕр сысна çури çухăртса пымасть, пĕр хутаç тырă парса хăвармасть. Луччăкăн килĕнче самăртса ылтăн çĕрĕ илсе тăхăнать вăл. Çĕр çитменни пĕтерет пире. Çĕр нумайрах пулсанах, кашни килте ферма тытмалла. Ĕлĕкхинчен те ытларах. Ах епле йывăр пуль сире ял масарĕ çумĕнче мур карти тутарма.

— Эпĕ пуçламан çав, Мургаев пуçланă, ăна хамăрăн тепĕр мурĕсем, хамăрăннисене — чи çӳлте ларакан мурĕсем пуçлаттарнă. Халăх туприне мура яратпăр.

— Чухлатпăр эпир сирĕн умра мĕнле çӳллĕ ту тăнине. Каçмалла вĕт ун урлă. Уписательнă каçмалла. Суворов мĕнле чеелĕхпе паттăррăн илсе каçарнă вырăс çарне Альпă тăвĕсем-пăрĕсем урлă? Эсир те, Мăн Альпă, илсе каçарăр-ха халăха пăрланнă çамкасенчен купаланнă мăн ту урлă çав ăсталăхпа? Вакунккăра урăх çывăрмастăп ĕнтĕ. Масар витĕр ӳкекен хĕвел пайăрки чĕрене шăнтать.

Шухăшăмсем пирĕн пĕрешкелех, малашлăх кăтартса парĕ-ха хăшĕ усăллăраххине, халĕ вара хамăрăн çак ĕçех тăвар тесе Большаков тăнлă-пуçлă çамрăкран уйрăлчĕ. Майлова шыраса тупса Шупашкартан тимĕр-

бетон купташкисем турттарассине хӑвӑртлатмалли майсене палӑртмаллаччӗ.

Большаков Геннадий Васильевича унччен лайӑхах пӗлмен, вӑл пӗрремӗш секретарь хыҫӗнче майланкаласа ларать тенине ҫеҫ илтнӗччӗ. Мургаев ӑна хӑйне хуравлӑ ӗҫ шанса панӑ хыҫҫӑн ҫын йӑлтах улшӑнчӗ, урӑх чӗре куҫарса лартнӑ тейӗн. Лӑпкӑ пуҫлӑхран чӑрсӑр хуҫа пулса тӑчӗ. Пырса перӗн-ха ун патне? Никама та уяса тӑмасть, айӑпне шыраса тупать, тӳрех стройкӑна вӗҫлемелли вӑхӑта аса илтерет. Парторгӗ, Омановӗ, ҫиелтен ҫеҫ пулӑшать-ха ӑна. Вӑл ҫав ҫилӗмрен ниепле те хӑпаймасть.

«Хӗвеллӗ ир» ҫапла, аслисемпе кӗҫӗннисене те, лӑпкӑ ҫывратмасть. Мургаев Хиркас уйне кайма пушшех сехӗрленет. Шӑхранра Юлдашев патӗнче чун уҫса калаҫса ларнӑ хыҫҫӑн лӑпках пӑхса пыратчӗ «Атӑл» чӳречинчен, ахух, Хиркас масарӗ енчен Чансаслов пӑлан пек яртлаттарса чупса килет. «Лартса кайӑр!» тесе аллине ҫӗклесе кӑшкӑрать.

— Хӑвӑртрах хӑвала! Мӗн тӗлӗрсе пыран?!

Машинӑна хуллен тытса пыракан Ваҫли Михалч шартах сикрӗ, унтан сӑмах чӗнмесӗр мотора ӳхӗрттерсе ячӗ.

Каялла ҫаврӑнса пӑхрӗ те Яков Сидорович куҫне хупрӗ: хыҫалта Чансаслов ларать, мӑшкӑлласа калать: «Ҫак усӑсӑр чул купипе аппаланиччен сӑра курки тытса тӑмаваскӑр».

## 7

Чӑваш ҫӗрӗ ҫине кӑҫал ҫур вӑрах кунпа килчӗ. Ака уйӑхӗнваррипе вӑр-варлӑн выляса илнӗ хыҫҫӑн тин хӗвел ҫӗре ӑшӑтса ячӗ, ҫур шывӗпе тасалнӑ ҫӗр симӗс курӑк-ҫимӗҫ ҫуратрӗ. Ҫӑвар пуррисем пурте ун патнелле туртӑнчӗҫ, намӑслисем куҫ шӑрҫинче ҫаврӑнма пуҫларӗҫ. Канма вытнӑ сӗткен канӑҫсӑррӑн вӑранчӗ те, нихҫан чарӑнман юхӑма Хӗвелӗн мӑшӑр пайӑркине сапса ячӗ. Тӗнче ҫӗнӗ тум тӑхӑнчӗ. Ҫан-ҫурӑма хастарлатнӑ вӑй мӗн пур чӗрӗлӗхе ҫӳлелле туртать. Шӑнса хӗл каҫнӑ шӑнасем те пӗр-пӗрин ҫинче вӑранаҫҫӗ, салакайӑксем

те куҫ умӗнчех туй тӑваҫҫӗ, автан та хӑй тавра чӑх карти ҫавӑрнӑ, кушак ҫенӗхре ҫӗрӗпе юрласа хусах маткана мӑрьере улаттарать... Юхать ҫур сӗткенӗ аталану ҫулне ҫӗнетсе, вӑратса.

Пантелеймон Христофорович Оманов та тӗлӗкре Альбина Аленчикован чӗнтӗрлӗ ҫӳхе кӗпипе чӑркашӑнса выртнӑ. Сӑмси умӗнчех — кӑтра вӑрман, уҫланкинче — ҫӑл куҫ. Ӑш хыпнипе аптранӑскер вӑл ҫурхи хурӑн шывне ӗҫсе ӑша кантарасшӑн, анчах чӗнтӗр картланипе ҫуллӑ ҫырана ҫывхараймасть, ҫӑл куҫа Тит Милов хупласа хунӑ, ӗмет те ӗҫет вӑл чарма май ҫук сӗткене. Панхристоф, чӑтаймасӑр, кӗлеткинчи ҫур парнине икӗ ывӑҫ тупанӗнче йӑваласа кӑларса ярать. Чӗрӗлӗх юххи темле пӗвене те татса каять ҫав.

Этемлӗх йӑшӑлтатать — сут ҫанталӑк ҫаврӑмӗ унпа пӑшӑлтатать. Хупӑ айӗпе йӑрлатакан сӗткен хӗвел ҫутине тухса ӳсен тӑрана ыталаттарса йышлатнӑ пекех, этемӗн те ар сӗткенӗ ҫӳлеллех пӗрхӗнет — ик ураллӑ урхамахпа ик чӗчӗллӗ ҫӗр пикине пӗҫ хушшинче хунав тымарне яртарать.

Пӗҫ хушшинче ӳснӗ пурнӑҫ чечекне аләра тытса курман вӑл, Оманов. Шупашкарта Крутовпа совпартшкулта вӗреннӗ ҫулсенче Алла Соснова пурччӗ, анчах вӑл Паня аллине лекмерӗ, ӑна Улатӑр ачи ҫавӑрса илчӗ. Халӗ каллех... Тит Милов унӑн юратӑвне ҫурхи автан пек таптать. «Мӗншӗн хӗрарӑмсем ун умӗнче чӑх автана кӗтнӗ пек кутне саркаласа ташлаҫҫӗ-ха? Мӗншӗн Явкаланчӑк улӑхӗнче явкаланать-ха явка пулӑ пек вӑл — Альбина? Мӗншӗн ман хаклӑ тумтир, ман чаплӑ хваттер илӗртмест ӑна? Тит Нилыч пикене чӑн-чӑн Нил шывӗнче крокодил ҫине утлантарса иштереп тесе хавхалантарнӑшӑн-ши? Тит мӗншӗн Крутов мар, Милов... Пуҫ пӑтранать Омановӑн. Милов Крутовӑн савнине майлаштарса хӑй ҫумне ҫыпӑҫтарнӑшӑн савӑннӑччӗ-ха вӑл. Халь вара унӑн мӗншӗн савӑнмалла? Пӗрле ӗҫсе ҫиекен, пӗрле Крутова наркӑмӑшпа сирпӗтсе пурӑна-

кан тус...Юрату çăл куçĕнчен сим-пыла ĕçекен Тит... Тĕлĕкре пулсан та... Пулнах пуль вĕсен мĕн пулмалли... ай, çук, Альбина маннах пулать. Ăна эпĕ юрататăп-çке. Камăн юратма правă пур-ха ăна урăх? Эпĕ — парти ĕçченĕ, пай пуçлăхĕ, темле райпо пуçлăхĕ мар...» — асапланать ват хусах «шăллĕне» ывăçра сиктернĕ май.

Хĕрӳ тапхăр умĕнхи тĕл пулăва Оманов шухăштуйăм ăмăртăвĕпе кĕтсе илет. Шăхрансене пур енлĕн тивĕçтерессишĕн вĕсен сисĕмлех тарлама тиврĕ. Кӳршĕсем хăш кун çитмеллине Мургаевран тĕплĕн пĕлнĕ хыççăн Панхристоф эрне ыйхăсăр аптрарĕ. Хăнана лартса килет те ĕнтĕ вăл, ăна хваттер пуянлăхĕпе илĕртсе, хăй патĕнче хăварать. Юнашар çывăрмалли таса хатĕр-хĕтĕрне сарчĕ, варалас мар тесе эрне диван çинче выртса тăчĕ. Шухăшĕпе... мĕн кăна туса пăхмарĕ пуль, тепĕр хут аса иле-иле вăтанма та пуçларĕ.

Акă тинех Шăхран сасси илтĕнсе кайрĕ, анчах мĕншĕн-ха курăнмасть вăл Юлдашев камантинче? А-а, тинех пуçа пырса çапрĕ: Альбина пултарулăх ушкăнне ертсе килет-çке. Ял-поселок тăрăх саланнă хăнасемпе унăн кайма юрамасть, мĕншĕн тесен вăл тĕл пулун илемĕшĕн хуравлă.

Машинăсем курăнми пулсанах Оманов хăйне çирĕплетсе панă «тăрантаспа» килне вĕçтерчĕ. Чечек ӳстерме юратакан хусах ирпе çурăлнă жасмина тăм куршукĕпе пĕрлех тирпейлĕ чĕркерĕ те каяллаваскарĕ. Çул çинче шухăшĕпе пăтранчĕ: «Алла кĕмен акăша мĕнле алла илмелле-ши? Каймарĕ вĕт Милов Мускава, çĕршыв калăпăшĕпе ирттерекен чаплă канашлăва хăйĕн çуммине ячĕ.Ахаль чухне пулсан Тит Мирович (тусне вăл кăмăл уçă чухне Нилович темест) таçтан шыраса тупать ашкăнчăк пуху-тĕлпулу, на сана — паян вăл мăйăхне те хитрелеттернĕ. Ах, Альбинăнах утара илсе каять пуль. Мĕн тупнă-ши ун çумĕнче Шăхран хĕрĕ? Эп арçын мар-ши? Паян килĕштерсен, француз духийĕпе сапнă таса вырăна вырттарсан?.. Милов та кирлĕ пулмĕ

те вара милӑй кӑвапа пӑнчине пуснӑ вӑхӑтра... Кӑтартӑччӗ савӑк каҫ хыҫҫӑн вӑл Тита кам «салху сӑнарлӑ рыцарьне».

Илемписен автобусӗ ҫитсе ларма та ӗлкӗрнӗ. Альбина Александровна сцена ҫинчен хӗрарӑм ҫилне вӗҫтерет. Унталла ҫывхаракан Панхристоф сӑмсине ҫурхи ӳсӗртекен шӑршӑ сӑрхӑнса кӗчӗ, кӗлеткине шалкӑм ҫапнӑ пек аптратса ӳкерчӗ, чӗлхесӗрлентерчӗ. Курӑнман йӗпсем чӗри витӗрех тухрӗҫ пулмалла. Чӳрече сакки ҫумне таянса сывлӑш ҫавӑрса янӑ хыҫҫӑн кӑвалер епре шурлӑхнелле ура ярса пусрӗ. Сцена ҫине хӑпармалли картлашка уншӑн ҫуралнӑранпа утакан пӗрремӗш картлашка пекех туйӑнчӗ.

Хуҫалӑхсен ӗҫӗ-хӗлӗпе паллашакансемпе вырӑнти хуҫасем анлӑ сӗтел хушшине кӗрсе ларнине те астумасть вӑл. «Сире, пропагандӑпа агитаци пайӗн пуҫлӑхне Пантелеймон Христофорович Оманова, Шӑхранри культура керменӗн Аслӑ илемпийӗ Альбина Аленчикова тата «Шӑхран» колхозри ӗне сӑвакан Роза Митрофанова «Кӳршӗ каччӑ» юрӑпа саламлаҫҫӗ» тенине илтсен тин такам ҫутӑлтарса янӑ хыҫҫӑнхи пек куҫа яриех уҫса ячӗ.

Альбинӑпа пӗрле йывӑҫ урай варрине чӗнтӗрлӗ-чечеклӗ авалхи майлӑрах капӑр кӗпе тӑхӑннӑ, йӑпӑрка тутӑр ҫыхнӑ лутакарах хӗр кусса тухрӗ, пуҫне усарах парса тата пӗчӗкленчӗ те вӑл юнашар каҫӑрӑлса ҫӗкленнӗ Альбина сасси ҫумне ютшӑннӑн хутшӑнчӗ. Юрӑ вӗҫленнӗ тӗлелле Оманов, чӳлмеке пӗҫ хушшинчен кӑларса, ҫутӑ пӗҫ хушши патнелле ӑнтӑлчӗ, пӗҫ хушшийӗ ҫеҫ уншӑн хӗҫ хушши пулса тӑчӗ.

— Ах, манӑн Паня, Христофор Колумбӑм, салам, — аллине ачашшӑн тӑсса пачӗ Альбина. — Ман ҫыран хӗррине ҫитрӗм терӗн-и? Карапу арканасран хӑрамастӑн-и? Путатӑн вӗт? Сана эп курс улӑштарма тахҫанах каланӑччӗ вӗт? Акӑ, паллаш, манӑн хӗр-тантӑш Роза. Сан парнӳне чӗререн йышӑнаканни. Тен, чӗрине те парӗ чечекшӗн? Ихик!

Алăк хыçĕнче курăнми пулнă Альбинăшăн çунакан каччă палламан хĕр умĕнче çухалсах кайрĕ. Юрать Роза йывăрлăхран хăтарчĕ.

— Сирĕн çинчен мана Альбина каласа кăтартнăччĕ, паллаштарма пулнăччĕ. Тĕл пултăмăр та, — кушăрханă аллине тăсрĕ вăл. — Ку чечеке эсир ăçтан тупнă?

— Эп вĕсене хам ӳстеретĕп.

— Чăнах-и?

— Суймастăп ĕнтĕ. Эпир — парти çыннисем...

— Вăт тĕнче... Чечек юратакан арçын арăмне хыт савать тет.

— Хăй савсан — савмасăр.

— Чăнах-и? Аплах-и? Вăт тĕнче... Халĕ ĕнтĕ ку парнене ĕмĕр асăнса пурăнăп.

Розăран уйрăлнă хыççăн Оманов пуçĕнче икĕ шухăш пăтранчĕ. Альбина унран кулни, мăшкăллани тин паллă пулчĕ. Хăй вырăнне урăх хĕр тупса пачĕ. Концерт вĕçленсенех таçта çухалчĕ, ав. Милов та курăнмасть. Розăн паллашма, калаçма кăмăлĕ пур пек. Сăнĕ кук тĕрриллĕрех те, янахĕнче шĕпĕн, ун тăрринче виçĕ тĕк ӳсет, тути хупаххисем хулăнрах — чуп тума меллĕ. Чĕлхи-çăварĕ те аптрасах каймасть. Куçĕ вара çунтарать.

Залран тухнă чухне Оманов, хăйне сылтăмарах тытса, алăк çумĕнчи çӳллĕ куç кĕскине хирĕç ятарласа утрĕ. Лутра, пысăк пуçлă, кĕлеще уraллă шукăль тумланнă каччă ăна хирĕç ĕнсине хыçса пырать. Хăй кĕлетки, сăнĕ çине темшĕн нихçанхинчен тинкererех, тишкererех пăхрĕ вăл. «Хамăр юрататпăр тесе пире те хитре хĕрсем хамăр пекех юратаççĕ пуль тесе нихçан та ан шухăшла. Идеаллă юрату ĕмĕчĕ çеç вăл. Çӳпçи май хупăлчи кирлĕ», — тесе кулнăччĕ унран Шупашкарта Крутов. Темле ĕмĕтленсен те алла кĕмерĕ çав Алла Соснова. Паян та... «Тĕп пултăр Альбина-Альбинушка» тесе Розăн пĕç хушшинчи чечекне шăварса ӳстерме хатĕрленмелле-ши? Эх, Милов Тит, ма пĕрмай тыттаран-ши эс мана? Çăва патне кай тата эс, Явкаланчăк шывĕнче явкаланнă явка. Çӳрех

çӗтсе. Çын çӗтнӗ çăпатана сапласа сыриччен... Нил шывӗнчех крокодилпа выля», — тесе пуçне усрӗ Панхристоф.

Туслă калаçу хупаха куçрӗ. Милов майрисем пӗлеççӗ хăна-вӗрле кӗтсе илме. Кăштах хӗрнӗ хыççăн Омановăн чăрсăр шухăш çуралчӗ: тула тухсанах вăрлатăп та каятăп Альбинăна! Туслăха юратупа çирӗплетнӗшӗн ăна никам та ятламӗ. Мургаев хăйӗн резервӗнчен ăна виçӗ пӳлӗмлӗ хваттер парнелӗ. Ӗçкӗ-çикӗ вăхăтӗнче майлă самантпа усă курма юратакан Вăрманкас ачисемпе вăрттăн килӗшрӗ вăл. Лешсем усал ӗçе хатӗрленчӗç. Анчах Альбина тула тухмасть, ташлать те ташлать Титпа, унăн усăнса аннă çӳç пайăркине каçăрăлса чăмлать, вăтанмасăрах чӗлхипе сăмси тăррине çулласа илет. Роза ташша чӗнчӗ:

— Эпӗ сире, Пантелеймон Христофорович, кăмăллаëса пăрахрăм. Виçӗм кун фермăра çуралнă пăрăва Аля, хи-хик, пӗлетӗр-и, их-хик, Панька ят хуртарчӗ. Сирӗн ятпа. Ташлас, юрлас килет: «Ой, мороз, мороз, не морозь меня...»

Кăмăл чикӗре те усăлмарӗ Омановăн: «Эх, ма парнелерӗм чечеке, куршукӗ шалккă...»

8

Хумма Петӗрӗ, пиччӗшӗ Павăл Воробьев хистенипе, Мулла Микушӗн ачине, Тимуххана, каллех хăй патне йышăнчӗ. Тимухха сысна кăмуни тунă çӗрте кирпӗч хума та, раствор çăрма та, штукатурка тума та вӗренсе çитрӗ. Комплексăн малтанхи черетне хута ярсан, вӗсен бригадине салатрӗç. Муллин Хиркаса хăнăхса çитнӗччӗ, çапах малтанхи ӗçӗшӗн те ăш вăркатчӗ унăн, механизаторсем патнех чун туртатчӗ. Айăп вăхăчӗ иртсен вăл техникăпа çӳреме çӗнӗрен экзамен пачӗ. Тарăнварсен йӗрке çирӗп. Çӗнӗ правапа та Тимуххана никамах та хăйпе пӗрле ӗçлеттересшӗн çунмарӗ. Юратьха партгрупорг пулăшрӗ, ăна шăлнӗ çумне çыпăçтарчӗ.

Çулла Тимухха комбайнер помощникӗнче ӗçлерӗ.

— Айта-ха, Тимухха, — терӗ Воробьев вырмана тухиччен, — ҫак бункера растяжкӑсемпе лайӑхрах тыттарар, мастерскойне вӗҫтер, тутарса кил.

Тимухха малтан иккӗленсе тӑчӗ:

— Завод ҫыннисем хыҫҫӑн пирӗн ҫӗнетмелле-и?

— Ҫӗнетмелле ҫав, — ӑнлантарчӗ Хумма Петӗрӗ, — тин кӑна туса кӑларнӑ япала хӑйӗн ҫитменлӗхӗсене ялан ӗҫре кӑтартать. Пӗлтӗрех асӑрхарӑм, бункер тулать — барабан япӑх ӗҫлеме тытӑнать. Куратӑн-и, бункерӗ хӑрах енче? Пӗлетӗн вӗт унта мӗн чухлӗ тырӑ кӗнине? Тонна ытла. Йывӑр. Бункер рамӑна чалӑштарать те лартать. Барабан стенкӑсем ҫумне ҫакӑнать. Ӑнлантӑн-и халь растяжкӑсем мӗн тума кирлине? Тырӑ йывӑрӑшне сулахайран сылтӑмалла туртса илме.

Ҫӗнетесси пирки вӑл стройкӑра та нуша кулачӗ ҫинӗ те... Пӗри никӗс яртарать, тепри ӑна ҫӗрпе хупласа хурать, пӗри бетон сартарать, тепри ӑна майлакан пӑрапа шӑтарса аркаттарать. Пӗрмаях ҫӗнетеҫҫӗ. Камантлакан нумай. Ҫавӑнпа Тимухха ӗҫ йӗркине, пурнӑҫ йӗркине улӑштармалла сирӗн тесе пуҫлӑхсемпе тавлашса та илнӗ. Паян вӗсем Хумма Петӗрӗпе ҫӗнӗ техникӑна ҫӗнетни те вӑл патшалӑх тытӑмӗ тутӑхнине пӗлтерет, анчах нимӗн те тӑваймастӑн. Юрӑхсӑр.

Тимухха мастерскойне кайса килсен вӗсем растяжкӑсене майлаштарса лартрӗҫ. Воробьев пуҫне чиксе тата тем чакаланма тытӑнчӗ.

— Пулӑш-ха, Тимухха?— эхлетет вӑл барабан приводне редуктор урлӑ илнӗ май. — Кӑҫал тырӑ ҫӑра. Ҫавӑнпа кӑна барабан хӑвӑртрах ӗҫлетӗр тесе майлаштартӑм. Ҫаврӑмсене халӗ пысӑклатма та, пӗчӗклетме те ансат.

Смена вӗҫленичченех топливо хушса вӑхӑт ирттерес мар тесе вӗсем ҫӳле иккӗмӗш бак вырнаҫтарчӗҫ.

— Тата тепӗр япала юлать, — Тимухха умӗнче кулкаларӗ Воробьев, — сана «Нивӑна» каллех ҫӗнеттеремха. Ун юрттипе чӑхӑмлӑхне пит аван чухлатпӑр.

Тимухха унран тӗлӗнчӗ. Тем шырать вӑл тимӗр купи ҫинче? Унта пӑхать, кунта, пӗрне тӗккелет, теприне... Мӗнпе те пулин кӑмӑлсӑр.

— Тырра тӑкса хӑварас килмест-ҫке, Тимухха, — пичӗ ҫинчи кулӑ паллине пытарчӗ Хумма Петӗрӗ. — Тырӑ пӗрчин ун акнӑ чухне ҫеҫ ҫӗре ӳкмелле, вырнӑ чух мар. Ак ҫакӑнта, улӑм силлемелли клавишсен вӗҫне, шнек вырнаҫтаратпӑр, тырӑ пухмалли хутаҫ лартатпӑр. Улӑмпа клавишсем ҫинче яланах пӗрчӗсем юлаҫҫӗ-ҫке. Халь вара унашкал пулмасть. Сылтӑм енне хутаҫлӑ элеватор ҫирӗплетӗпӗр. Ку элеваторне хамӑн списать тунӑ кивӗ комбайнран илсе юлнӑччӗ.

— Мӗнле ӗҫлет-ха вӑл? — ыйтрӗ Тимухха.

— Так, ҫапла тейӗпӗр, — шӑхӑркаларӗ Хумма Петӗрӗ. — Хамӑр лартнӑ хушма шнек улӑм ӑшӗнчи тырра сыхласа хӑварать те ҫак элеватор тӑрӑх ятарласа тунӑ шнека кусарать, унтан малалла, ҫӳлти решеткеллӗ станӑн умӗнчи пайне ярать. Ӗҫ кӑткӑс та... Тырри хаклӑ-ҫке. Пӗлтӗр те ҫапла самаях пухӑнчӗ.

Тимухха Хумма Петӗрӗнчен ӑсталӑха вӗренсе пычӗ. Пилӗк пин ҫурӑ центнер ҫапса илчӗҫ ҫу каҫиччен. Ҫӗнӗлӗхсем нумай пулӑшрӗҫ. Вӗсем пеккисем районта та нумаях тупӑнмарӗҫ.

Юратнӑ ӗҫне каялла таврӑннӑшӑн Тимухха хӗпӗртерӗ. Халӗ вӑл иккӗмӗш сменӑра шӑпах хӑйсем сӗлӗ вырнӑ ана ҫинче кӗр аки тӑвать. Мотор пӗр тикӗс кӗрлет. Ҫӗрле пулсан та ыйхӑ пусмасть. Ҫуллахи вӑхӑт аса килчӗ ӑна. Ҫакӑнта, икӗ колхоз чиккинче, райком секретарӗ вӗсен экипажне куҫса ҫӳрекен вымпел пачӗ. Сӗлӗ вырса пӗтерсен, Мулла Тимуххипе Хумма Петӗрӗ Тымар комбайнерӗсене пулӑшрӗҫ. Эрне ӗҫлерӗҫ унта. Пӗррехинче, апата ларсан, Воробьев калаҫу пуҫарчӗ. «Пирӗн те, сирӗн те, шутласан, хальхи техникӑна ҫаврӑнмаллӑх ҫӗрӗ ҫитмест. Ҫакӑнта, вӑт, чикӗ пулмасан, виҫӗ звенопа кашлаттараттӑмӑрччӗ те пирӗн сӗлле те, сирӗнне те тахҫанах пӗтернӗччӗ. Халӗ пустуй вӑхӑт ирттеретпӗр.

Тырри тата... чикĕ леш енче икĕ тĕрлĕ: пирĕн — кăкăр таран, сирĕн — чĕр куççи çӳллĕш. Талккишпех пирĕнни пек ӳстернĕ пулсан-и? Сахалтан та пин центнер ытларах тухатчĕ пуль». Кӳршĕсен комбайнерĕ, Алеша Каргин, ушкăн варринчен хăйĕн шухăшне пĕлтерчĕ: «Чăн та, çак чикĕ текенни пире, ял хуçалăхне промышленность никĕсĕ çинче аталантарнă саманара, самаях хур кăтартать. Эсир комплекссем турăр, цехсем, йăла служби йĕркелерĕр. Пирĕн вара... нимĕн те çук-ха. Тĕрĕссипе, колхозсене пĕрлештерсе çеç ямалла. Пирĕн улăх-çаран нумай, выльăх ĕрчетме лайăх. Хамăрăн та шăхрансемпе пĕрлешмелле. Ытти çĕртипе танлашатрсан, тепĕр совхозран пĕчĕк пирĕн район. Хальхи çул-йĕрпе, çыхăну йĕркипе илсен, Чăвашра вунă район хăварсан та ним мар ăнăçлă ертсе пыма пулать халăх хуçалăхне. Мĕн чухлĕ кантур чакать, патшалăх укçи перекетленет. Ман шутпа ку ыйтăва пирĕн çӳлерех çĕклемелле.

Темиçе хутчен те шавлакаларĕç вĕсем кун пирки, çапах тавлашăва вĕçне çитереймерĕç. «Ку пирĕн ĕç мар — патшалăх ĕçĕ; пайлану-пĕрлешӳ пулман мар, тен, малашне те пулĕ; политикăпа çыхăннă ыйту, ытлашши шавлар мар», — терĕç те «хура питсем», тырă вырма пуçларĕç.

Тимухха халĕ икĕ колхоз чиккине çитет те, плуга хăпартса, каялла çаврăнать. Пĕчĕк лаптăкра каллĕ-маллĕ хутласа йăлăхрĕ-ши вăл е çав тавлашуллă шухăш хумхантарчĕ-ши ăна... Трактор чикĕ çеремĕ урлă каçса «Çăлтăр» çĕрĕ çинех кĕрсе кайрĕ. Кӳршĕсен чикĕ лаптăкĕ хуралсах пычĕ. Тимухха чĕлхе вĕçне çыпçăннă кĕвве ĕнĕрлет. Мĕнле те пулин паллă ĕç тунă чухне унăн ялан пĕр юрă: «Эпир пултаратпăр, пур ĕçре те паттăр, Марс çине те хăнана кайма пултаратпăр». Ана çул хĕрнелле хĕсĕнсе пырать, акă. Юлашки касă тунă хыççăн вăл кабинăран тухса кăштах канчĕ, çырмана анса çăл куçран шыв ĕçрĕ. Юрă çаплах чĕлхе çинчен каймарĕ: «Эпир пултаратпăр, пур ĕçре те паттăр...»

Тимухха ĕçлекен вырăнтан инçех мар анлă çул уйăх çуттинче çуталса выртать. Хушăран унта машина çути йăлкăшса сӳнет. Чикĕре лартнă чул юпа та çывăхрах. Шăхран енчен висĕ машина çути çывхарни курăнчĕ, чикке çитсен чарăнчĕç. Иккĕшĕ çутине сӳнтерчĕ, пĕри фарисене юпа çине тĕллерĕ, çутăра çын кĕлеткисем вĕлтлетрĕç. Чикĕри палламан çынсем чĕлĕм туртса янине асăрханăскерĕн ăшĕнче тутлăхлă туйăм çуралчĕ. Юлашки сигаретне паçăрах канфет пек ĕмсе янăскер, вăл хытса ларнă урасене çемĕçтерсе çул хĕрринелле лаплаттарчĕ.

Кирпĕчрен купаланă сарлака чул юпа çумĕнче пĕр-пĕрне ыталакан арçынсем, ăна курсан, сасартăк шăпланчĕç. Мургаев хăйĕнчен пĕчĕкрехскерне ытамран вĕçертрĕ те:

— Ну, мĕнле, ăмăрткайăк? Вĕçетĕн? Çĕрле те. Миçе гектар патăн? — тесе шăршлă хура алла хыттăн тытса силлерĕ.

Тимухха, вĕсене палласа илнипе нимлемарланса кайнăскер, сăмах чĕнме аптрарĕ, аран-аран сывлăш çавăрса ячĕ те, хулăн сасăпа пĕлтерчĕ:

— Шутлама шутламан та, виçме те виçмен, çаплах чухлатăп: пиллĕк-улттă пулма кирлĕ. Каçарăр та, сирĕн туртмалли тупăнмасть-и?

Каласа пĕтерме те памарĕç ăна, ял хуçалăх управленийĕн начальникĕ Вьюнов тракторист ывăçĕ çине пачкăран вăрăм сигаретсем силлерĕ, çийĕнчен çурăмĕнчен лăпкарĕ:

— Ачи, эс, маттур-ха. Лайăх ĕçле. Çĕн правуна кĕсьерен ан кăларса пар. Никама та. Пĕлетĕп эп сан юрату историне. Шельма...

Шавлаканскерсене, тайкаланса утаканскерсене, Тимухха тӳрех ăнланчĕ: пурте ӳсĕр. Мургаевпа ытакланаканнине те пĕлет — шăхрансен пĕрремĕш секретарĕ. Хушаматне çеç астумасть. Вюновпа хăлаçланса калаçаканни, ахăртнех, вĕсен управлени начальникĕ пулма кирлĕ.

— Паллашăр, пирĕн Волков паттăрĕ, терĕ Мургаев. — Пурте вĕсем пек ĕçлесен эпир ялта, тахçанах комму-

низм тумалла. Парне кĕтет халĕ вĕсене, Воробьевпа иккĕшне, тырă вырнăшăн, чапа тухнăшăн. Кĕр праçникĕ çиттĕр. Сирĕнтен те тухать, сире те пулăшнă вĕсем.Илсе кил-ха кунта эрехне? Илья Ильич, хăналар хамăр паттăра.

Вьюновпа пĕрле тăраканни пуçланă кĕленчерен стакана эрех ячĕ те Тимуххана тыттарчĕ. Иккĕленсе тăракан тракториста Вьюнов çурăм хыçĕнчен хытах тĕртсе илчĕ, «яра пар, каç кунта никама та таптас çук» тесе стакана ун тути патнех çĕклентерчĕ. Тимухха та хăюлланчĕ, мĕн пулать те мĕн килет тесех эрехе янк тутарчĕ, Шăхран çынни тыттарнă аш татăкне чăмласа тракторĕ патнелле уттарчĕ.

Кĕçех лешсем те уйрăлчĕç. Икĕ машини çаврăнса Шăхран еннеле кайрĕ, тепри - вăрманкасалла.

Хаяр эрех ĕшеннĕ Тимуххан пуçне çапрĕ, хастарлантарчĕ, вара вăл тахçанах çуралнă чăрсăрла шухăшĕмĕтне пурнăçлама кабинăна кĕрсе ларчĕ. Стройкăра чухне Оманов мухтанни аса килчĕ. «Шăхрансемпе шăваракан чикĕ юпи кĕçех пĕлĕте çити ӳсет ак», — тесе ахăратчĕ райкомăн вăхăтлăх парторгĕ. Халĕ авă епле ăсатрĕç Шăхран пуçлăхĕсем пирĕннисене? Ни уяв мар. Мĕн мухтанмалăх пур-ши? Тыррине те вĕсем пулăшнипе аран-аран пухса кĕртрĕç. Юнашар уйра улăм сапăнса çĕрсе выртать. Кукуруза мĕн чухлĕ! Вĕсем кунта килсе вăрттăн хăйсен пырĕсене чӳхеççĕ. Мĕн тумаллаччĕ-ха унăн? Аха, акă мĕн тумалла: «Хăвала, Тимухха, хурçă утна! Мĕн пулать те мĕн килет».

Вара вăл тракторне çырма пуçĕпе çул хĕрне илсе тухрĕ те тӳрех чикĕ юпи çине тытрĕ, гусеницăпа çаклатса ăна ишсе хăварчĕ, чикĕ çеремне сухаласа ялалла кĕрлеттерчĕ. Юрă кĕвви пĕрмаях пуçĕнче минрерĕ: «Эпир пултаратпăр...»

— Кала тӳррине, эс хăтлантăн-и Шеремет уйĕнче çĕркаç? Эс сухаласа пăрахнă-и тымарсен çĕрне? — тĕпчерĕ Волков тепĕр кунне. — Эс ишнĕ-и чикĕ юпине?

Мĕн пулса иртнине Тимухха турткалашса тăмасăрах каласа пачĕ.

— Чĕрӳ таса пулнăшăн ырлатăп, чарусăрла ĕç тунăшăн — ятламаллипех ятлатăп, — терĕ председатель. — Урăх унашкал ан хăтланнă пултăр. Вĕсен — хăйсен пусă çаврăнăшĕ, пирĕн — хамăрăн. Пуçпа шухăшласа тăвасчĕ кашни ĕçе, каскăнла мар.

— Пуçпах шухăшланă, Тельман Федотович, — çине тăрсах ăнлантарчĕ Тимухха. — Çулла, тырă вырнă чухне, пирĕн тавлашу пуçланнăччĕ. «Çăлтăр» механизаторĕсем те, эпир хамăр та икĕ колхоза пĕрлештересшĕнччĕ, хайхи икĕ пусă çаврăнăшĕнчен пĕрре тăвасшăнччĕ. Чиккине çавăнпа малтанах сухаласа хурас терĕм. Хуть те хăш пысăк ĕç те халăхран пуçланать те... Эпĕ халăхăн пĕр пĕрчи пулнине шута илсе... Чикĕ юппине ăна, çылăхлăскерне...

Волков тарăхăвне пусарса каларĕ:

— Пăх-ха вĕсем, суха тунă та, чикĕ çеремне пăснă та... Итле, колхоз вăл çĕр лаптăкĕ çеç мар, çын ушкăнĕ, эртелĕ, коллективлă япала, патшалăх хуçалăхĕ. Колхоз вăл — эс те, эп те, пĕтĕм ял халăхĕ. Ха, пĕрлештереççĕ вĕсем... çăмăл меслетпех. Ай-яй!

Чикке сухаласа пăрахнине пĕлсен, «Çăлтăр» колхоз председателĕ Маминов, тарăнварсем çĕре туртса илеççĕ тесе, урсах кайрĕ, ун пирки вăл çийĕнчех райкома пĕлтерчĕ. Райком секретарĕ Мургаев Волкова хăй патне чĕнтерчĕ. Яков Сидорович, ăна-кăна ăнлансан, çĕркаçхине аса илсен, председателе ятламарĕ, тахçан хăйсем палăртнине аса илчĕ те, тымарсемпе пĕрлешме май пур-и, çук-и тесе тĕплĕн канашларĕ.

— Чăн та, пурнăç сухинче икĕ колхоз чикки çухалма та пултарĕ, — шухăшларĕ Тельман Федотович райкомран тухнă чухне.

9

Аллăмĕш çулсенче респбуликăра вак хуçалăхсене пĕтĕмпе тенĕ пекех пĕрлештерсе пĕтернĕччĕ. Ырă ĕç тунă

чухне пирĕн яланах чикĕрен иртсе каясси пур. Çав чир вăл çĕршыв аталанăвĕн хуххи пулнă. Капашсăр мăн хуçалăхсем туса хуни халăх пурнăçне пуянлатмарĕ те, илемлетмерĕ те. Вăрманкассен вара «Çăлтăра» «Шурăмпуçпе» пĕрлештерес ыйту тахçанах çуралнăччĕ. Ăна пурнăçа кĕртме Тимухха суха касси те уçса пачĕ.

Крутовпа Прошлин шăмат кун Тымара тухса кайрĕç. Вьюнов чире персе юлчĕ.

Вăрман çулĕ хĕлле асфальт витнĕ çулран пĕртте кая мар. Машина пысăк хăвăртлăхпа чупать. Хирĕç вутă тиенĕ грузовиксем, вăрман турттаракан мазсем иртеççĕ. Крутов таврана сăнаса пычĕ, юр тумтирĕ тăхăннă йывăçсем хĕллехи ыйхăра. Вĕсем çийĕн хушăран ула курак е чакак вĕçсе иртет. Мулкач йĕрри час-часах тĕл пулать. Хир сыснисем каçса кайнă-ши, тарăн йĕрсем ăвăслăхра çухалаççĕ. Шофер машинăна тăрук чарчĕ те сулахаялла тĕллесе кăтартрĕ:

— Куратăр-и, пăшисем!

Крутов çул çине сиксе анчĕ. Чăнах та, машинăран инçех те мар, хырлăхран вĕсем еннелле мăйракаллă виçĕ пуç пăхать.

— Пăшисем мар, пăлансем вĕсем, çурçĕр хăнисем. Виçĕм çулхи çуркунне килсе янăччĕ вĕт. Хăнăхаççĕ пулас пирĕн тавралăха, — ăнлантарчĕ Максим Максимович.

Малалла тапрансан, шофер пăши çинчен хывнă юрра ĕнĕрлерĕ. Çутçанталăк илемĕ чуна уçать. Çапах Крутовăн теме сиссе ăш вăркать.

Тымар ялĕ вĕсене тĕтĕмпе, тутлă апат шăршипе кĕтсе илчĕ. Урамсенче Крутов хăй кунта килнĕ малтанхи çулсенчи пек йывăç, вутă «склачĕсем» курăнмаççĕ. Шаршансене те кил хушшине куçарнă. Пурасем пур вара. Вĕсем, паллах, сутма тунăскерсем пулас çук, кивĕ пӳртçурт умĕнче çеç лараççĕ.

Маминова правленире тупаймарĕç, килĕнчен чĕнтерсе тухрĕç. Председателĕн пуçĕ юсавлах мар пулас, калаçма та ӳркенет.

— Эс, мĕн, каллех чирлĕ-им? — ыйтрĕ унран Прошлин.

Сергей Тимофеевич мăкăртатрĕ:

— Чирлесе те кайăн сирĕнпе, снашăтă, ĕҫсĕр тăратса хăварсан. Колхоза Волкова чиперлесех суттараттăр та, снашăтă.

Ҫумра тăракан Каргин ăна ҫакăншăн хăтăрса тăкрĕ:

— Ухмах-и эс е ăссăр? Суттараҫҫĕ ăна. Волков туянать ун колхозне. Тьфу! Аптрамалла санпа. Пуҫупа кăштах та пулин шухăшлатăн-и каласнă чухне? Мĕнле вăл пурнăҫ аталанăвне туйман ҫын пулать ҫĕр ҫинче. Ĕнерех каларăм сана урăх ан ĕҫ тесе... Эх, Сергей Тимофейч... Унашкал марччĕ-ҫке эсĕ пирĕн пата килнĕ малтанхи ҫулсенче? Халĕ, авă, ҫумăнта тăма йывăр. Хăсăк тухать. Кай, санпа. Пĕр кун та пулин канса пăхха. Календарь ҫинчи пек пĕр хĕрлĕ кун ту пурнăҫунта. Ĕмĕрӳ хура кунпах иртет. Ирсĕр ĕҫкĕ-ҫике эпĕ ăна хура кунпа танлаштаратăп.

— Паян та, снашăтă, хирĕҫ эп. Килĕшместĕп. «Шурăмпуҫпе» пĕрлешместпĕр, хамăрах вăйланатпăр, ак. Патшалăхран кивҫен укҫа илетпĕр те... Ку таранччен панине халь те парĕҫ-ха. Председательтен тухас килмест ман. Пĕлетĕн-и, снашăтă, ҫавна, Моисей Семенч? Миҫе ҫул... Хăнăхнă... Ĕҫме пăрахсан...

Каргин каллĕ-маллĕ утса пăхрĕ, хумханăвне пусараймасăр Маминова ҫунтарчĕ:

— Вăйлатасси пирки павратъ тата. Патшалăх шучĕпе пуясшăн. Хуҫарах юласшăн. Ĕҫме пăрахасшăн... Хăвшăн, хăв хырăмушăн, хăв пырушăн ҫунатăн эс! Епле ҫаврăнать чĕлху? Сан вырăнта пулсан эп, намăса чăтаймасăр, тахҫанах урăх ĕҫе куҫнă. Хăть хирĕҫ тăр, кăшкăр, хăлатла хăлаҫлан, пурпĕрех нимĕн те тăваймастăн. Пурнăҫ йĕрки хăйĕннех илет. Ăна хирĕҫ пыраймастăн. Шăлса перет. Ҫĕлен улăхĕнчи юшкăн пек хытса ларатăн.

— Сирĕн ятласси пĕтмест. Мана халь, ҫунма пуҫланăскерне, снашăтă, тем калама та юрать. Вăрҫăр. Кӳпкĕр.

Çапах эпĕ, снашăтă, хальлĕхе председатель-ха. Мана никам та кăларман. Эп хам хуçа кунта, снашăтă, эсир мар. Хам хырăмшăн та çапăçма пултаратăп. Курăпăр-ха колхозсене мĕнле пĕрлештернине, курăпăр, снашăтă, райкомрисемпе пĕрле мĕнле ĕçленине, — шахвăртрĕ Маминов.

Колхозниксен пухăвне партбюро секретарĕ, бригадирсем тăрăшсах хатĕрленĕ: бригадăсенче, фермăсенче пухăнса çынсемпе калаçнă, кил тăрăх çӳресе пурне те пĕлтернĕ. Маминов та пухăва хăй енчен «тĕплĕн хатĕрленнĕ». Тан Васлипе икĕ кумне юриех пуху умĕн ĕçкĕ тума хушнă. Ял çынни чи малтан ăçта сулăннине пĕлет-çке вăл, ĕçкĕ хыççăн мухмăр чĕртме юратнине те, эрне кĕрекерен тухманнине те ăнланать. Магазинĕнче тата пуху кунне кивçенле эрех сутма пуçланă. Сутуçă хăйматлăх хĕрĕ-çке, итлет. Тан Васлине Маминов тепĕр оперативлă задани панă: клубри шыв бакне ăйăрсене хастарлантармалли шĕвек ямалла.

Клуба ӳсĕр çын нумай пухăннине Крутовпа Прошлин малтанах сисрĕç. Тан Васли районтан килнисене пилĕк авсах алă пачĕ:

— Тав сире, ырă çынсене, пире юратнăшăн, хисеп тунăшăн. Аллу çăмăл сан, Крутов юлташ. Эс пирĕн яла çӳреме пуçланăранпа эп партбилет çухатрăм, ферма çулне мантăм, паян колхоз салатма килтĕм, ыран...

Каласа пĕтерейменрĕ вăл, васкаса килекен Карачăм мучине асăрханăскер, шалалла лăкăштатрĕ, каялла çаврăна-çаврăна кив юррине юрларĕ:

— Тан эпĕр пурте, Тап-тан. Çĕр çыннисем эпĕр. Çĕр çимĕçне çиетпĕр. Çĕр çинче пурăнатпăр. Çĕр пулатпăр. Пурте тан...

Карачăм мучи Тан Васлинчен кулать:

— Хĕрлĕ кĕнекешĕн пушăпа çунтарнă хыççăн манран халь вăл, эсремет, вутран хăранă пек хăрать. Пурнăç çăпанĕ.

Халăх пухăнчĕ. Пуху уçма вăхăт ĕнтĕ. Вĕсем зала кĕчĕç, Карачăм мучи, ăш хыпать тесе, коридорти шыв савăчĕ патĕнче юлчĕ.

Хура пуставран ҫӗлетнӗ костюм тăхăннă Каргин сцена ҫине васкамасăр хăпарчӗ. Вăл аллинчи шăнкăравӗпе шăнкăртаттарать, пурне те шăпланма ыйтать. Тан Васлисен ушкăнӗнчен ăна хирӗҫ пӗр арҫын урмăш сасăпа кăшкăрчӗ: «Кирлӗ мар пире Тарăнвар!»

Халăх ниепле те лăпланаймасть. Ҫынсем алăкран кӗре-кӗре тухаҫҫӗ, шавлаҫҫӗ. Тенкел ҫинче ларакан арҫынсемпе хӗрарăмсем ыталашма пуҫларӗҫ. Пӗр ӳсӗртерехскер арăмне киле туртать, вăтанмасăрах ун ҫумне ҫулăхать. «Мӗн, асса кайрăн-им?» тет те арăмӗ, упăшкине тӗртсе ярать. Лешӗ тепӗр хӗрарăма ҫыхланать. Карачăм мучи те, малти ретрен куҫса, сысна пăхакансем хушшине кӗрсе ларчӗ, тахҫан пилӗкрен явса илнӗ Крахьяна чиперех айăкран кăтăклать. Крахьянӗ ăна «ват супнă ясар» парнелесе тепӗр енне тарать, Карачăм та юлмасть. Ват ҫынна мӗн ăс кӗчӗ-ши тесе Максим Максимович ăна чарма пăхрӗ. Мучи ҫăра сухал ăшӗнчен сарă шăлӗсене кăтартрӗ те сулахай куҫне мăч хупрӗ, Крахьян хыҫҫăн тухса чупрӗ. Шалти туйăм хӗтӗртнипе асса кайнă ҫынсем юрату савăкӗшӗн ҫунма пуҫларӗҫ. Волков та малтан чиперех Людмила Беловапа ӗҫ пирки калаҫса ларатчӗ, коридора тухса шыв ӗҫсе кӗчӗ те ҫамрăк хӗрарăма упăшкинчен вăтанмасăрах ыталаса илчӗ. Алеша Каргин та, ясарланса кайнăскер, арăмне ҫилампах сӗтӗрсе тухса кайрӗ. Тельман Федотовича, пухăва килнӗ «шурăмпуҫсем», хăвăртрах залран тасатрӗҫ.

Каргин шăнкăрав тытнă аллине усса аяла анчӗ. Крутов ун патне пычӗ те, айăпа кӗнӗн:

— Пӗтерчӗҫ, намăслантарчӗҫ, — терӗ. — Мӗнле пуху иртерен ӗнтӗ халь ҫак аснă халăхпа? Ырана хăварар. Тата тӗплӗнрех хатӗрленӗпӗр. Айăпӗ хамăртах. Йышăнатпăр.

Пушаннă клубра Крутов, Прошлин, Каргин, Маминов тăрса юлчӗҫ.

— Сергей Тимофейч? - тӳрех ыйтрӗ Крутов. — Кăмăлу тулчӗ-и?

Маминов пăлахая печӗ, айăпне сирме хăтланчӗ.

— Мĕн тапăнатăр, снашăтă, мана пĕрмай? Мĕн турăм эп, снашăтă, сире? Пуху пухса панă, снашăтă. Çыннисемпе калаçайманшăн, снашăтă, те эп айăплă?

Райком çынни шăтарасла пăхнине чăтаймасăр председатель ура çине тăчĕ, пуçне аяккалла пăрса сăмахне шăл витĕр сăрхăнтарчĕ:

— Тытăр та, снашăтă, хупăр апла. Манран, снашăтă, мăшкăллама вĕреннĕ. Маминов чăтать, снашăтă.

— Пуху мĕншĕн саланнине йĕрлесе тăмăпăр. Ахаль те паллă. Шыв çине тапратакан-астаракан эмел янă. Кам? Паллах, сире хӳтĕлекен çын. Сирĕншĕн тăрăшакан. Колхоз малашлăхне хирĕç тăракан. Туйса илĕç-ха кайран хăйсен йăнăшне. Эсир çеç, Сергей Тимофеевич, йышăнасшăн мар. Эсир таса юласшăн. Парторг начар ĕçленĕ тесшĕн. Каргин юлташăн пухмалла-и колхозниксен пухăвне? Эсир айăплă çакăншăн халăх умĕнче, район умĕнче, парти умĕнче айăплă. Коммунист тетĕр тата хăвăра. Ыран райком бюровĕнче калаçăпăр, вуннăра. Чипер юлăр.

Çула май Крутов сысна фермине кĕрсе тухма шутларĕ. Ферма пӳртĕнче шăп. Карачăм мучи кăмака хыçĕнчи вырăнĕ çинче хывăнмасăрах выртать. Тути хĕрринчен сухалĕ тăрăх сĕлеке юхса аннă. Пуçĕ вĕçĕнче — ĕмĕр-ĕмĕр çывракан чĕрĕ Венера.

— Вьюнов ĕçĕ çакă, — ассăн сывларĕ Прошлин. — Çав улталаса вырăнтах майлаштарса хăварасшăн Маминова. Малтанах туйрăм. Эп ват кашкăр. Мана суяймастăн. Колхоз та, район та пĕрлештернĕ, уйăрнă та, анчах паянхи пеккине хам ĕмĕрте те курман.

Вĕсем Каргин патĕнче çывăрчĕç. Тепĕр кунне те çанталăк улшăнманчĕ-ха. Каварçăсем лăпланман.

Кĕтесре ӳсĕр куçĕпе вăкăрла пăхса тăракан Тан Ваçли çухăрма пуçларĕ:

— Хамăр тунă колхоза-и?! Хамăр алпах никаккуй та салатмастпăр! Тан вĕт эпĕр. Пĕр тăвансем, тымарсем, тан! Хамăрах маттур. Сергей Тимофейчпах тан пулар. Пире никам та кирлĕ мар. Тан эпĕр. Вăрман тăрри пек тан!..

Халăх шавласа кайрĕ. Пĕри теприне пӳле-пӳле калаçать. Каргин шăнкăравне пуç тăрне çĕклесе шăнкăртаттарать. Акă, вăйлă çил чарăннă хыççăнхи пек шăп пулчĕ. Çакăнпа усă курса, Карачăм мучи хуллен вырăнтан çĕкленчĕ те, кăххăмлатса илчĕ, сухалне якатса, сăмах пуçларĕ:

— Тан Ваçлисем кунта «Шурăмпуç» кирлĕ мар тесе павраççĕ. Эпĕ те калатăп: «Шурăмпуçне» Тан Ваçли йышшисем кирлĕ мар! Тарăнварсемпе хурăнварсем сирĕнсĕрех лайăх пурăнаççĕ. Анчах та халăх... Тымар халăхĕ... Итлĕр мана, ват çынна. Эп «Шурăмпуçĕнче» сухал шуратнă. Пит аван пĕлеп унти пурнăçпа кунти пурнăça. Ман шутпа, ват çын шучĕпе, колхозсене пĕрлештермеллех. Çитет Маминов вăййине выляса. Çерки Тимахвич хуçалăха пурпĕрех лачакаран туртса кăлараймасть. «Шурăмпуç» пăртçетателĕ, Кашкăр Хĕветучĕн ачи, Тельман, ним мар вăшлаттарса кăларать. Тарăнварсемпе хурăнварсене тата кайриварсене çăкăр çитерчĕ вăл. Малашне те, Макçăм Макçăмчпа ĕçлесен, тата ăнтармалла. Эх, кăмиссара суйласанччĕ çав ачана. Кăлхус патшинче иккĕшĕ те пултармалла.

Çил-тăвăл тепĕр хут кашласа çитнĕ пек хумханма пуçларĕ залри халăх. Каргин каллех ура çине сиксе тăчĕ, пĕрре хĕремесленсе тавлашакан çынсем çине, тепре юнашар ларакан Крутов куçĕнчен пăха-пăха илет. Ретсем хушшинчен вăйлă сасăсем илтĕнчĕç: «Шурăмпуçсемпе» пĕрлешетпĕр! Çитет Маминова мăшкăллатарса!»

Тан Ваçлисен ушкăнĕ Маминова хӳтĕлесе хăварассишĕн ĕрлешет. Хĕрĕнкĕ председатель те урăлса кайрĕ пулас, куçне чаркаласа чăл-чăл пăхакан пулчĕ, çамки çине тапса тухнă тарне шăла-шăла ывăнчĕ.

Тĕрлĕ шухăшпа калаçакан халăх майĕпенех пĕр йĕр çине куçрĕ. Акă, пуху пуçлăхĕ Каргин «Шурăмпуçпе» пĕрлешмелли пухăва кайма уполномоченнăйсем суйлаттарма пуçларĕ.

Çĕршыв ял хуçалăхĕнче наукăпа техника революцийĕ сарăлни Вăрманкас районĕнче те палăра пуçларĕ. Партин çирĕм тăваттăмĕш сьезчĕ хыççăн ял хуçалăхне специализацилессипе тата концентрацилессипе кăшт та пулин курăнмалли ĕç турĕçех. Вак фермăсене, бригадăсене, хуçалăхсене пĕрлештерчĕç. «Çăлтăрти» Маминовсемпе Тан Ваçлисем ăнлансах çитмен колхозниксен пуçĕсене пăтратни те, тĕрлĕ пăтăрмахсем те пулăшмарĕç. Пурнăç аталанăвĕн юхăмĕ чăрмавсене аяккалла сирсе хăварчĕ. Çурхи хĕвел çуттинче тарăнварсемпе тымарсем пĕр-пĕрне туслăн алă пачĕç. Çĕнĕрен çуралнă колхоза «Шурăмпуç çăлтăрĕ» ятне пама килĕшрĕç. Волков ун пирки пухура çапла каларĕ:

— Шурăм пуç — тухăçран килекен çĕнĕ кун çути. Шурăм пуç çăлтăрĕ — ирхи хĕвел, тӳпери хĕвелпе уйăх хыççăнхи чи çутă çăлтăр. Шурăм пуç çутинче эпир ял пурнăçĕн малашлăхне куратпăр. Çав çутта пире парти парса тăрать, ял хуçалăхне аталантарма çĕнĕ çул кăтартать. Пирĕн унпа утма вĕренмелле, ывăнма пĕлмесĕр çине тăрса ĕçлемелле, хамăр телейшĕн мĕн тума пултарнине туйса, ăнланса ĕçлемелле. Паянтан пуçласа Шурăм пуç çăлтăрĕн çутипе мăн эртелпе пĕрле утма пуçлар.

Тымарта комплекслă бригада турĕç. Людмила Белова бригадир пулса тăчĕ. Моисей Семенович, чирпе аптранипе, ĕçлеме йывăрри çинчен тахçанах калаçатчĕ. Çапах хальлĕхе ĕçе пĕтĕмпех пăрахас темерĕ, Волкова итлерĕ, çамрăк бригадира уй-хир ĕçĕ енĕпе пулăшса пыма килĕшрĕ.

Маминова колхозра нимле портфель те лекмерĕ. Чăркăшса, кĕвĕçсе, йăлăнса çӳрерĕ, çапах Волковран хăтлă сăмах кĕтсе илеймерĕ. Тусĕ пулăшнипе çеç ĕç тупрĕ. Яков Сидорович ăна ял хуçалăх управленине, кадрсен пайне, вырнаçтарчĕ. Волкова вăл çакăн хыççăн чĕлхе çеç кăларса кăтартрĕ.

## 10

Уполномоченнӑйсен пухӑвӗнчен таврӑнсан Крутов пӗрремӗш секретарь патне кӗчӗ. Яков Сидорович ӑна ӑшшӑн йышӑнчӗ. Вӑл пуху мӗнле иртни, коммунистсен шухӑш-кӑмӑлӗ пирки кӑсӑкланчӗ. Максим Максимович сӑмах май ҫакна та каларӗ:

— «Шурӑмпуҫ ҫӑлтӑрне» ӗҫлеме каяс тетӗп.

— Каллех хӑвӑн вырӑна-и? — куҫран пӑхса ыйтрӗ Мургаев. — Секретарьтех ӗҫлес килет апла?

— Ҫапла, Яков Сидорович. Шутларӑм-шутларӑм та, ҫаплах йышӑнтӑм: партком секретарӗнче эп партие райком инструкторӗнче ларнинчен ытларах усӑ пама пултаратӑп. Чуна кантарӑймастӑп эпӗ кунта. Ман ялан ялта, халӑх хушшинче, хӗрӳ ӗҫре пулас килет. Пӳлӗмри телефон ӗҫӗ — ман ӗҫ мар.

— Сана канцелярист тесе никам та каламасть вӗт. Ав ӑепле ырларӗ партпухура Каргин. Волков та пӗрмай мухтать. Чӑн та, вӑл сан пирки тахҫанах сӑмах-юмах пуҫарнӑччӗ. Хӑй патне илесшӗн. Эсир калаҫса татӑлнӑ пуль?

— Ҫук, ҫук, Яков Сидорович. Тельман Федотович мана ун пирки аса илтермен.

— Василий Фомича, Воробьева, ӑҫта хурӑпӑр? Вӑл та парторганизацие начар мар ертсе пырать. Хӑйнех хӑварар мар-и? Ӗҫлетӗр-ха тепӗртак. Сана майӗпен ҫӳлерех хӑпартас пирки те шухӑшлӑпӑр.

— Ҫӳлерех?.. — лӑх-лӑх кулчӗ Крутов. — Кирлӗ мар мана карьера. Мана ялтах лайӑх. Василий Фомич пирки ыйту татса панӑ вӗт эсир? Мӗн пустуй кушакпа шӑшилле вылямалла? Вӑл колхозӑн тӗп агрономӗ пуласси сире тахҫанах паллӑ. Юратать ӑна председатель, ҫавӑнпа ял хуҫалӑх управленине те ярасшӑн мар, ялтах ӗҫлеттересшӗн. Василий Фомичӑн хӑйӗн те колхозран каяс кӑмӑлӗ ҫук.

— Ӑнлантӑм сана, Максим Максимович. Юрӗ, ирӗксӗрлесе тытмӑпӑр. Быстрова паянах калатӑп. Пуху ирттерме кунне палӑрттӑр.

Çунат хушнă пекех тухрĕ Крутов пĕрремĕш секретарь пӳлĕмĕнчен. Коридорта тусĕпе, Семен Ильичпа, чутах çапăнмарĕ.

— Эсĕ, мĕн, пăванла вĕçен? — тытса чарчĕ ăна Быстров.

— Сан патаччĕ эп.

— Мĕн пулчĕ тата? Сăну-пуçу пит улшăннă. Пĕçерккĕ памарĕ пуль те пĕрремĕш?

— Атя, атя часрах хăвăн пӳлĕмна. Пĕр вăрттăнлăх пĕлтереп.

Быстров алăка уçса Крутова шалалла кĕртсе ячĕ.

— Кала-ха, мĕнле вăрттăнлăх?

— Яков Сидорович мана парторга яма килĕшрĕ.

— Ăçта, «Шурăмпуç çăлтăрне» мар пуль те?

— Çавăнта.

— Ан ухмахлан.

— Ухмахланмастăп. Ыйтрăм — ирĕк пачĕ. Сан пуху ирттермелле те...

— Ирттерттерĕп сана пуху. Çиччас, ак, ярса илсен хăлхунтан... Кăçал партконференци пуласса пĕлетĕн эс — пĕлетĕн.

— Пĕлсен, вара мĕн?

— Апла тăк, шăп лар. Сана пропагандăпа агитаци пайĕн пуçлăхне, унтан идеологи секретарьне лартма палăртнăччĕ-çке кадрсен резервĕнче? Обком секретарĕ те пĕр кун çаплах каларĕ.

— Мургаев тата мĕншĕн ман сĕнĕве хирĕçлемест?

— Эх, тăм писмен эс, Макçăм. Эс партком секретарьне кайма килĕшни уншăн хăйĕншĕн лайăх-çке. Капла Оманова сыхласа хăварма меллĕ. Ун вырăнне лартмалли шанчăклă кандитатура çухалать. Авă мĕншĕн пĕр сăмахсăрах ирĕк панă вăл сана колхоза кайма.

— Заведующи те, секретарь те пулас килмест манăн. Партком секретарĕнчи пек кăмăллă ĕç маншăн çук-ха халлĕхе. Мургаев чеелĕхĕ те, Оманов путсĕрлĕхĕ те йăлăхтарнă мана.

— Пухӑва хам пыратӑп, сана пурпӗр «ҫунтаратӑп».

— Ҫук, ҫунтараймастӑн. Маншӑн вӗсем икӗ алӑпах сасӑлама хатӗр. Тахҫантанпах кӗтеҫҫӗ.

— Эх, сана, пулмасть пуль ҫав «ҫунтарасси». Ытла тарӑн тымар янӑ иккен эс унта. Тарӑнварпа Тымарта тымарлансах кайнӑ.

Йӗркелӳ ӗҫ пайӗ «Шурӑмпуҫ ҫӑлтӑрӗнче» тепӗр эрнерен пуху ирттерчӗ. Крутов каллех хӑйӗн юратнӑ ӗҫне таврӑнчӗ.

Райкома пырсан, ӑна Оманов хӑй пӳлӗмне туртса кӗртрӗ.

— Саламлатӑп, Максим Максимович...

— Мӗн, ман ҫумран тинех хӑпрӗ ку тесе саламласшӑн-и? — пӳлчӗ ӑна Крутов.

— Эс тӳрех таҫти чӑтлӑха ан кӗрсе кай, ан кӳрен, — тӗссӗр куҫне ҫавӑрттарчӗ Оманов. — Эс инструктортан партком секретарьне ҫити анса ларнӑшӑн вара эпӗ пӗртте айӑплӑ мар. Ху ӗҫлеме пӗлместӗн. Тахҫанах, совпартшкулта чухнех, вӗрентеттӗмччӗ сире, сарӑ тутасене, пуҫлӑх сывлӑшӗпе сывлӑр, пуҫлӑх куҫӗпе пӑхӑр, пуҫлӑх шухӑшӗпе пурӑнӑр тесе. Ӑша хывмасӑр ӑслӑ ҫын сӑмахӗсене, хӑвӑрӑннех перетӗр. Хама кӑҫал секретаре суйласанах эпӗ сана хам вырӑна, ак ҫак пукан ҫине, лартасшӑнччӗ. Эс пур, ракла, кутӑн чакатӑн. Хӑҫан ҫӑрӑлса тухатӑн халь унтан, колхозран? Пай заведующийӗ пуличчен пенсие каятӑн.

— Вӑхӑт ҫитсен, курӑпӑр — тухӑпӑр. Ҫапах та, Пантелеймон Христофорович, халӑх сумӗпех каясчӗ пенсие. Вӑй-хӑват, ӑс-хакӑл пур чухне ватлӑхра асӑнмалӑх халӑха усӑллӑ ӗҫ туса юласчӗ. Унччен... такам темле пукан ҫинче-ха. Сирӗн те, тем, ӗмӗт никӗсӗ ҫӗрнӗн туйӑнать. Ӗмӗт керменӗ ҫӳлелле хӑпармасть пулас. Юрӗ, саламланӑшӑн тавтапуҫ.

— Эп колхоза пынӑ чухне мӗнле кӗтсе илмеллине ан ман. Ҫапах та эпир пӗрле вӗреннӗ, пӗр ҫуртра ӗҫленӗ ҫынсем, халӗ те пӗрлех ӗҫлетпӗр, — алӑ тытрӗ Оманов.

— Юрĕ, шӳрпе пĕçерсе, чей вĕретсе хуртарăп, — кулкаласа тухрĕ пай пуçлăхĕн пӳлĕмĕнчен Крутов.

Упăшки çĕнĕ ĕçе куçасси çинчен пĕлсен, Мария Николаевна хумханса ӳкрĕ. Хăйĕн юратнă Макçăмĕ райкомра малалла ӳсессе кĕтмен мар, кĕтнĕ вăл, ăшĕнче çунатлă ĕмĕтпе хăпартланса та илнĕ. Халĕ ĕнтĕ мĕн тăвăн, партком секретарьне суйланă хыççăн, лăпланма, шухăша пусăрăнтарма тивет. Вăрманкасран ĕнтĕ те куçса каймалла, те уйрăм пурăнмалла — ку ыйтăва татса параймарĕç-ха тӳрех.

## 11

Районти актив пухăвĕ Раççейри хура тăпраллă мар тăрăхри ял хуçалăхне малалла аталантарас енĕпе партипе правительствă пысăк калăпăшлă ĕçсем палăртнă хыççăн пулса иртрĕ. Çак тăрăха кĕрекен 29 облаçпа автономилле республикăра чи пысăк хуласемпе промышленность центрĕсем вырнаçнă. Ял хуçалăхĕнче усă куракан çĕрсем 52 миллион гектар, 32 миллионĕ — сухалакан çĕрсем. Вăл хисепрен 2 миллиона яхăн гектарĕ Чăваш патшалăхĕнче, 30 пин гектарĕ Вăрманкас районĕнче, 5 пин гектарĕ — «Шурăмпуç çăлтăрĕнче». Çав ĕçсене ăнăçлă татса пани çĕршыв пурнăçĕнче палăрмаллах улшăну тума пултарать. Йышăнăва пурнăçласси вара вăрманкассенчен те нумай килет. Халлĕхе... районти çĕрсен тупăшлăхĕ начар-ха. Хăйăрлă, йӳçек тăпраллă, ушах лаптăксем чылай.Вĕсене çĕнетмелле, тупăшлă тумалла. Патшалăх ун валли, авă, укçа, техника, удобрени нумай уйăрса парать. Усă курма çеç пĕл.

Ку ыйту, паллах, пурне те хумхантарма тивĕç. Райкомăн иртнĕ пленумĕнче те çĕр тупăшлăхĕ пирки нумай калаçнăччĕ. Актив пухăвĕ ăна малалла тăсрĕ. «Шурăмпуç çăлтăрĕ» колхоз председателĕ Волков пухура калани пурин кăмăлне те кайрĕ пулас. Унăн кашни сăмахĕ пуç мимине кĕрсе лармалла.

«Эпир, — тенӗччӗ Тельман Федотович, — ҫӗр ҫыннисем, ҫӗре пуҫ ҫапса ҫӗр ҫӑкӑрне ҫиме хӑнӑхнӑ ҫынсем — хресченсем. Пирӗн хамӑр хырӑма тӑрантарма та, пӗтӗм халӑха ҫитерме те, выльӑх-чӗрлӗх валли те, вӑрлӑхлӑх та, сутмалӑх та кирлӗ чухлӗ тыр-пул, ҫӗр улми тата ытти ҫимӗҫ туса илмелле. Эпир мӗнле ӗҫлеиинчен ҫӗршыв аталанӑвӗ нумай килет. Акӑ мӗнле пысӑк ҫынсем эпир — хресченсем! Ҫӗр патшисем, ҫӗр хуҫисем! Пире патшалӑх пулӑшать-и? Пулӑшать. А эпир мӗн хӑтланатпӑр? Тӳрех калатӑп: мӑшкӑллатпӑр. Ҫӗршыв панӑ пуянлӑха ҫӗр пуянлӑхӗ ҫине куҫарма пӗлместпӗр, пултараймастпӑр. Удобрени илетпӗр, укҫа тӑкатпӑр, унпа пӗлсе усӑ курмастпӑр, ӑна типтерлӗ упрамасӑр пустуй пӗтеретпӗр. Техника мӗн чухлӗ вӑхӑтсӑр ванать, тутӑхать, ҫӗрет, юрӑхсӑра тухать тата... Калӑр-ха, тархасшӑн, камӑн укҫи ҫилпе вӗҫсе, шывпа юхса каять ҫаканта? Паллах, халӑхӑн, хамӑр кӗсьери мар. Кам та пулин килӗшет-ши сирӗнтен ик-виҫ уйӑхри ӗҫ укҫине ҫырмари шывпа юхтарса яма? Ҫук пуль ҫав. Укҫана, ӑна, ай-яй, кассир панӑ хыҫҫӑн та тепӗр хут тӗрӗслесе пӑхатпӑр, лавккара япала туяннӑ чух та пӗр пус таран шутласа тыттаратпӑр. Хамӑр ӗҫлесе илнӗ укҫана шутлама, тӑкаклама, упраса усрама вӗренсе ҫитнӗ-ха эпир. Халӑх, колхоз, патшалӑх укҫине шутлама кӑна вӗренеймен. Вӗренме вара — тӑрӑшсах вӗренмелле. Акӑ ӑҫтан тытӑнмалла пирӗн ҫӗнӗлле ӗҫлеме те. Ҫавӑн чухне тин эпир ҫӗр пуянлӑхне ӳстерме, ҫӗр ҫине халӑх укҫине пӑхӑрпа сапса ылтӑн пуҫтарма вӗренӗпӗр. Партипе правительствӑн ҫак йышӑнӑвне пирӗн ҫӗр ҫине выртса чуп тумалла. Ҫӗр ҫинче хӑраса утар мар. Ҫӗрпе туслашар. Ҫӗре хисеплер. Ҫӗре пуянлатар. Вара вӑл та пире хӑйӗн пуянлӑхне хӗрхенмесӗр парӗ. Ҫавӑн чухне тин эпир ял хуҫалӑхне специализацилеме те, концентрацилеме те, электромеханизацилеме те, автоматизацилеме те чӑннипех пултарӑпӑр. Кӗр уявӗнче тулли кӗрекере ял-йышпа саркаланса хамӑрӑн юратнӑ ҫӗр,

юратнă Тăван çĕршыв çинчен савăнса юрă шăратма та намăс пулмĕ çакна пурнăçласан. Пирĕн малашнехи пуянлăх — çак йышăнура. Ĕçлемелле, ĕçлеме вĕренмелле çеç».

— «Пирĕн пек ĕçлеме вĕренмелле», тесе хушса хурăр, Тельман Федотович, — ун еннеле ăшшăн пăхса ларĕ райком секретарĕ Мургаев.

Волков, вырăна çитсе ларнă май, евитлерĕ:

— Ун пек калама та юрать, çылăх пулмĕ. Ĕçчен, хĕрӳ çынсем пирĕн.

Пуху хыççăн Крутов тарăн шухăша путрĕ. Ял культури ял хуçалăх аталанăвĕ айне пулма тытăнни ăна тахçанах хумхантаратчĕ-ха. Чылай çĕрте, вăл шутра унччен «Çăлтăр» колхоза кĕнĕ Тымар, Авруй, Хурашур ялĕсенче пурăнакансем те паянхи пурнăç илемне çителĕклĕ кураймаççĕ, паянхи культурăллă пурнăç уттипе утаймаççĕ. Çамрăк колхозник çавăншăн ялтан хулана куçать. Ял ватăлса пырать. Ял тухăçлă ĕçлейми пулать. Тарăнварсен, паллах, пурнăç тахçанах урăхла. Колхоза каялла илме çырнă заявлени правленире купипех выртнине курнăччĕ. «Таркăнсем» ăш вырăн шыраççĕ», — кулатчĕ вĕсенчен Тельман Федотович. Çав таркăнсем шăпах колхоз тайкаланнă вăхăтра хулана вăрăм укçашăн пăрахса кайнă. Халĕ, колхоз пуйсан, ял çынни культурăна алла илсен, вĕсене каллех çĕр, çуралса ӳснĕ пуян кĕтес туртать. Председатель каларăшле: «Тарăнвар çăл куçĕ сиплĕ çав».

Чăн та Тарăнвар, Хурăнвар, Кайривар ялĕсенче пĕри тепринчен чаплă çурт лартать. Пӳрчĕсенче — хула çыннăнни пек япалах. Газĕ те, водопровочĕ те пур вĕсен. Ĕç хыççăн фермăра, машина паркĕнче çăвăнма, мунча кĕме пулать. Культура çуртне пĕлтĕр миçе хутчен артистсем килсе каймарĕç пуль. Хула çынни те яланах уйăхра пĕрре театрта пулаймасть. Колхозниксем вара çемçе пукан çинче ларса чаплă артистсен, ансамбльсен концерчĕсене итлеççĕ, чăваш театрĕн спектаклĕсене кураççĕ. Культура университетĕнче композиторсем, художниксем, писательсем лекци вулаççĕ. Вăрманкасри музыка

шкулĕ ялта филиал уçрĕ. Художество шкулĕн директорĕ те Крутов патне çав ыйтупа кĕрсе тухрĕ. Правлени çĕнĕ çурта куçсан, киввинчен музей турĕç. Культура çуртĕнче Крутов тахçантанпа ĕмĕтленекен «Ялти Третьяковка» уçăлчĕ.

Хулапа ял хушшинчи уйрăмлăхсем кунта майĕпенех çухалаççĕ, ял çыннипе хула çыннин ĕç укçийĕ, йăла ыйтăвĕсем, культура аталанăвĕ енĕпе палăракан тан марлăх хушши кĕскелсе, пĕтсе пырать. Ахальтен туртать-и сиплĕ çăл куç хулара телей тупайман ял çыннисене? Çав сиплĕхпе усă курасшăн-ши, колхозшăн ырă ĕç тăвасшăн-ши вĕсем е лайăххинчен лайăххине çеç шыраса çӳреççĕ? Унашкал çапкаланчăксене колхозниксем хăйсемех аван пĕлеççĕ, эртелпе канашласа пĕрлешӳллĕ хуçалăха хăйсемех йышăнаççĕ. Ыйтаканĕсем нумай, анчах сиплĕ çăл куçĕ çумĕнче вырăнĕ сахалтарах Волковăн.

Максим Максимович шутланă тăрăх, хурашурсемпе авруйсенчен тухса таракан колхозниксем малашне, тен, хурăнварсемпе тарăнварсем пекех каялла таврăнĕç. Унччен вара çав ялсене вĕсен шайне çитермелле. Çак анлă йышăну шăпах ĕнтĕ ялсене улăштарса çĕнетсе социаллă тан марлăха пĕтермелли тепĕр пысăк май уçса парĕ. Палăртнине никам та аякран килсе туса памĕ. Çапла, ялăн социаллă аталанăвĕ нумай енлĕ пулса пымалла. Вăл — парти Программин тĕп çул-йĕрĕнчен пĕри. Çак шухăша уçса пачĕ партком секретарĕ колхоз председательне.

Тельман Федотович çĕнĕ парторг куçĕнчен чăлчăл пăхса илчĕ, тарăн шухăшлăн çамкине картлантарчĕ, унтан, типшĕмрех питне аллипе сăтăрса, хуллен каларĕ:

— Нда, çĕнĕрен пуçламалла пулать ĕнтĕ. Пĕр колхозне майлакаласа ура çине тăратрăмăр. Халĕ тата пысăкрах хуçалăх çĕклемелле. Мана ĕнтĕ эсĕ, Максăм, каллех клуб тутарасшăн. Çапла вĕт?

— Тымарта клуб çеç мар, Тарăнварти пек культура çурчех кирлĕ. Унти çынсем те çав çынсемех — хамăрăннах.

— Çапах та ман шутпа Тымар бригадинче чи малтан сысна фермине çĕнетмелле, ĕне выльăх самăртмалли комплекс тумалла. Культура керменне кăшт каярах тума пуçлăпăр.

Çакна илтнипе Максим Максимович ун умне пырса тăчĕ, икĕ аллине те тусĕн хул пуççийĕсем çине йывăррăн хучĕ:

— Санпа килĕшместĕп эп.

— Эс килĕшни кирлех те мар...

— Аха, эсĕ каллех ĕлĕкхи юрра пуçласшăн-и? Каллех «Эп председатель, эп — хуçа!» — тесшĕн. Сана ун чухне те сысна витинчен маларах культура çурчĕ тутарттарма пуçланăччĕ, анчах... мĕнле йывăрлăхпа. Астăватăн-и хăв партком ларăвĕнчен тухса тарнине? Пурпĕрех çиеле тухаймарăн, пăхăнтăн парти дисциплинине. Культура керменĕ тума килĕшрĕн - турăн. Итле, халĕ эпир ун чухнехи пек чухăн мар. Кивçен укçатенкĕ илес çук, хамăрăн кассăра миллион ытла. Атя, килĕшсе татăлар: кăçал Тымарта культура керменĕ тума тытăнатпăр. Пректпа смета хучĕсем хатĕрлеме хушнăччĕ пире ял хуçалăх управленийĕнче. Сысна витине те, ыттине те тăвăпăр. Çавна асту: ялта çын юлмасан, мĕн, выльăхпа ĕçлетĕн-им? Чи малтан çын çинчен шухăшламалла. Çын çинчен!

— Эх, ахалех килĕшрĕм санпа ĕçлеме, Нервăсене çĕнĕрен хускатмалла пулать ĕнтĕ. Воробьевпах лайăхчĕ. Мĕн хушнине итлетчĕ Василий Фомич, чĕрре кĕместчĕ, сан пек тем те пĕр шухăшласа кăлармастчĕ.

Крутов ăна пукан çине пусса лартсах юнарĕ:

— Çитет, çитет сана улпут вырăнĕнче пурăнса. Ха вăл, пĕччен хуçа пуласшăн. Пире, парткома, парторганизацие шута хурасшăн мар. Шалишь! Ĕç тухмĕ.

Волков ура çине сиксе тăчĕ, хура çӳçне каялла шăлса якатрĕ, йăл кулчĕ те, шӳтлесе илчĕ:

— Мĕнле турă пăрахса пачĕ-ши ку инкеке ман пуç тăрне. Ĕмĕрне те уйăраяс çук пуль ĕнтĕ ăна, сĕлĕхе. Ман юна ĕмиччен, айта-ха ĕне сĕчĕ ĕçме, киле. Венера сурĕ пуль.

Волковсем патĕнче апатланнă хушăра та пуçран тухмарĕ тĕп шухăш. Вăрманти çак ялсем культурăллă шая çĕклениччен пĕр çул кăна иртмĕ-ха. Çапах вĕсем те Тарăнвар шайне çитĕç. Халĕ ĕçлемелле, хăйне хирĕç ларакан, какай яшкине хыпăнтарсах çавăрттаракан, «Чи малтан сысна вити тумалла» тесе шухăшлакан тусне, Тельман Федотовича, ўкĕте кĕртмелле, кутăнлашсан, силлемелле, вăратмалла, колхозри кашни ял çинех çĕнĕ пурнăç тăваканăн тарăн та вичкĕн куçĕпе пăхма хăнăхтармалла. Волков ун шухăшне ăнланнăн, вилкипе măн аш татăкне тирсе илет те çўлелле çĕклесе кăтартать:

— Куратăн-и çакна? Хырăму мĕнпе тутă сан: ашпа-и е культура керменĕпе? На, тыт, çи. Малтан хырăмах тăрантарар-ха, унтан... ташлас-юрлас пирки шухăшлар.

Максим Максимович куçне мăчлаттарса тусĕ панă йывăр вилкăна тытрĕ.

## 12

Района килсенех Большаков хуçалăхсен ĕçĕхĕлĕпе, вырăнти пуянлăхпа тĕплĕн паллашрĕ. Мĕн пуррине наука çитĕнĕвĕсемпе пĕрлештерсе, чи лайăх тĕслĕхсемпе усă курса, курăмлă çитĕнĕвех тума пулать. Ун пирки вăл Мургаевпа куçа-куçăн ларсах калаçрĕ. Хăйне вĕрентнине, сĕнў панине килĕштерсех кайман Яков Сидорович тăнласах итлерĕ ăна, унтан пирусне сўнтерчĕ те:

— Сирĕн ĕнтĕ, кандидатсен, чĕлхе çинче те наука, опыт, — терĕ кăмăлсăррăн. — Таçта та тем те тăваççĕ пуль, пурин хыççăн та сиксе ĕлкĕреймĕпĕр. Паян унта, ыран таçта кайса укçа тăккаласа вăхăт иртгерсе çўренипех эпир района пуйтараймăпăр-ха. Вулăр ял хуçалăх литературине. Мĕн тума çыраççĕ? Вĕренме...

Альберт Григорьевич Чĕмпĕрти ял хуçалăх институчĕпе тахçанах пĕр ĕç пирки калаçса татăлнă-мĕн. Вĕсен вĕренӳ хуçалăхĕ тĕш тырă культурисен вăрлăхне лайăхлатассипе ăнăçлă ĕçлет. Вăрлăх пахалăхне палăртнă тĕллевпе çĕнетме вĕренсе çитнĕ. Çук, агрономсен ушкăнне унта кайса вĕренме ирĕк памарĕ Мургаев.

Мургаев чăкрашма, чееленме, кутăнланма хăтланни вăрттăнлăх мар ĕнтĕ. Пулăшса пĕрле тăрăшас чухне ура хурса пыни райканаш пуçлăхне те тарăхтарсах ярать тепĕр чухне. Мухмăр чирĕ те иртмест Яков Сидоровичăн. Пĕрремĕш секретарь тумалли чи пысăк ĕçсенчен чылайăшне ахаль те хăй çине тиесе пырать Большаков. Унсăрăн района чăрмав пулать. Яков Сидорович çакна ăнланасшăн пулмарĕ, «Большаков мана хирсе кăларасшăн» тесе сăмах кăларчĕ, кирлĕ мар çĕртех ун пирки ырă мар хыпар сарать. Вьюновĕ: «Мана пĕрмаях яла хăваласа хамăн ĕçе тума памасть, юри тапăнать çĕн хуçа», — тесе макăрса çӳрет. Омановĕпе Милов хăйсене майлă пăтăрмах тума хатĕр. Хушăран пушă вĕçĕ лекет-çке райпо пуçлăхне. Чун тасалăхĕ, чĕре хĕрӳлĕхĕ, шухăшлав çирĕплĕхĕ вĕсен йăнăш йĕрпе — халăха хур тăвакан йĕрпе — кайнă.

Лава кам мĕнле вăйпа туртса пыни аякран пит лайăх курăнать. Халăх, паллах, кашнинех хăй хакне парать. Альберт Григорьевичăн ăсĕпе ĕçĕ те вăрманкассене çурхи хĕвел çут çанталăка ăшăтса чĕртнĕ пекех туйăнать.

Пуçлăхсен хирĕç тăрăвне тиркевлĕн сăнакансем тĕрĕслĕх кам енчине курса ăнланаççĕ. Большаков та хăй мĕн палăртнинчен пăрăнма шутламарĕ, райком куçĕнчен пăхмасăрах мĕн тумаллине туса пычĕ. Вĕсене пурнăçлама унăн хăйĕн те Совет прависем пур вĕт.

Чĕмпĕре вăл агрономсене хăй илсе кайса килчĕ. Волковсем хапăлах пулчĕç. Вьюновăн çав кун юн таппи ӳссе кайнăччĕ. Мургаев телефонпа ятлаçса илчĕ те, шăпланчĕ. «Усси пулсан, мана та ыр ят тивет», — тесе шухăшларĕ. Большаков чĕннипе Челябинскран хăнасем килсе

кайрĕç, сакăр хуçалăхра эрне ĕçлерĕç, çурхи тулăпа урпа вăрлăхне ионпа имçамласа пачĕç. Чăваш ученăйĕсем выльăх апачĕ ытлă-çитлĕ хатĕрлеме пулăшаççĕ.

Ял хуçалăх управленине, хуçалăх пуçлăхĕсемпе агрономсене, инженерсене хĕл каçипех канăç памарĕ райканаш. Уйри пĕтĕм çĕр лаптăкĕ çине юр тытса хăварчĕç. Липова ĕçтăвкома чĕнсе тарлаттарнă хыççăн, вăрманпромхоз юр тытмалли хӳтлĕхсем туса пачĕ. Тарăнварсен тĕслĕхĕпе уя тислĕк шĕвекĕнчен шăнтса тунă плитасем лартма пуçларĕç. Фермăсем çумне тислĕк шĕвекĕ пухмалли вырăнсем хатĕрлерĕç. Кашни бригадăпа фермăн мĕн чухлĕ тислĕк хатĕрлемелли пллă. Тымар çывăхĕнче торф нумай. Волков ăна кăларса тислĕк хутăшĕнчен компост тума тытăнчĕ. «Шурăмпуç çăлтăрĕ» кунта та ыттисенчен малтан çуталса кайрĕ.

«Пур хуçалăха та турттарма пулать вĕт ăна? «Сельхозтехникăна» кӳлмелле те... Ура айĕнчи пуянлăхпа мĕншĕн усă курмалла мар?» Çак шухăшпа Большаков райкома кĕчĕ. Яков Сидорович вырăнтахчĕ. Сĕнĕве вăл яланхилле хирĕçлемерĕ, пирĕншĕн вăл çĕнĕлĕх мар, çул начаррипе, техника çитменнипе тăхтаса тăнă, пултаратăр тăк, яра парăр, эпĕ сывах мар-ха, сипленмелле çур акиччен, тесе килĕшрĕ. Вăл Пантина чĕнтересшĕнччĕ, анчах Большаков алă сулчĕ:

— Пантелеймон Михайлович патне манăн тахçанах çитмеллеччĕ-ха, мехотряд пирки те калаçăп.

Тимĕр хули райкомран инçех мар, пĕчĕк урампа Альберт Григорьевич унта çурранах утрĕ. Иккĕмĕш хутран Пантин ăна хирĕç шăпах чупса анать. Сывлăх суннă хыççăн вăл пуçлăхран ыйтрĕ:

— Çӳле хăпаратăр-и?

— Çук. Эсир ăçта васкатăр, эпĕ те пĕрлех хăшăлтатам-ха.

— Мотор юсамалли плана тултармалла. Техника килсе тулнă. Стройки тата. Çĕнĕ цех хута ямалла. Иртнинче каларăм-çке сире ку çĕнĕлĕх пирки. Леш, автомашинă-

сене техника тĕлĕшĕнчен тĕрĕслесе тăмалли, юсамалли цех. Çын çитмест. Мургаев сăмах панăччĕ... Атьăр-ха пĕрле шырар строительсем, Альберт Григорьевич?

— Эпĕ шăпах çав цеха курма килтĕм, — тесе Большаков управляющипе хыпăнса утрĕ.

Вăхăтра çитни вырăнлах пулчĕ. Ырантан стройкăра çын çитмелле. Унтан вĕсем ĕç пӳлĕмне кĕрсе торф ыйтăвне пуçларĕç. Миçе экскаватор, бульдозер, самосвал кирлине шута илчĕç. Хуçалăхсене ертсе пыракансемпе калаçасси çеç юлчĕ.

Тепĕр эрнинче Тымарта мехотряд кĕрлеме пуçланă, анчах... Пурте çу сĕрнĕ пек пулса пымасть çав.

Тымара Большаковăн «тимĕр хули» пуçлăхĕпех каймалла пулчĕ. Кунти ĕçсене йĕркелесе пыма вăл Вьюнова хушнăччĕ. Илья Ильич малтанхи кун пулнă та торф кăларакансем патĕнче, урăх сăмсине кăтартман, райком бюровĕнче шутланнă май, Мургаевпа шăхрансен çĕнĕлĕхĕсене вĕренсе çӳренĕ. Ырă мар хыпара вăрмантан вĕçен кайăксем мар, шоферсем илсе çитрĕç. Çавăнпа Альберт Григорьевич Пантин патне васкарĕ.

Типтерлĕ, сăпай, йăлттам кĕлеткеллĕ хĕрĕхсенчи çын Пантелеймон Михайлович. Саратовран вĕренсе килсенех Вăрманкасра ĕçлеме пуçланă та, ку таранччен юратса пурăнать техникăна. Хурçă шăратмалли цехран пуçласа мотор завочĕ таранах пуянлатрĕ вăл тахçанах мастерской пулнă «тимĕр-тăмăр хулине». Ямшăксăр, хăй çӳрет машинипе, ăна тап-таса тытать, яланах шап-шурă кĕпепе, галстукпа, хура çăра çӳçне шăлма юратать.

Пантин райканаш хуçине хăйпе юнашар ларса пыма чĕнчĕ. Альберт Григорьевич унпа килĕшсе шоферне ячĕ те, вĕсем çула тухрĕç.

— Хам Мускава кайни пĕтерчĕ, — айăпа кĕнĕн сылтăмалла пăхса илчĕ Пантин. — Пирĕн иксĕмĕрĕн кайса тумалла-и халь çавăнта йĕрке? Унта ман пулăшаканăм, сирĕн пулăшаканăн тапăртатса тăмалла, хăйсеннех татса памалла ыйтăвне. Мемме хунаса кайрĕ пуçлăхсем хуш-

шинче. Ялан кам ҫине те пулин шанаҫҫӗ. Ман райкомран камантлакансенех ятлас килет. Юрӑҫсем микрофона юратса пӑрахнӑ пекех ҫавӑрса тытнӑ та телефон аврине, хӗрарӑм вырӑнне вырӑн ҫинче ыталаса выртма та хатӗр. Сирӗн те пур унта пралук тӑрӑх камантӑ чуптаракансем. Килӗшетӗр-и манпа?

— Килӗшмесӗр ара, хама та тарӑхтарса ҫитернӗ те вӗсем.

— Апла ална парӑр.

Управляющин вӑйлӑ аллине хӑй пекех ыраттармалла чӑмӑртарӗ Большаков.

— Вӑт кун пек калаҫма та юрать, кӑмӑллӑ, ҫураҫуллӑ, — кӗлеткине пушшех тӳрлетрӗ Пантелеймон Михайлович. - Вӑйлӑ ҫынсене хисеплетӗп. Тытатӑн тепӗр чух пӗр-пӗр лӗнчӗр-лӗнчӗрӗн, леш, Оманов пеккин аллине.. Те вилӗ ҫын вӑл, те чӗрӗ, — шӑнтать. Ҫемҫешке кӗлеткере хастарлӑх, хӑюлӑх курмастӑп, этем чунӗ туймастӑп.

Большаков пуҫне ун еннелле пӑрса, каларӗ:

— Эпӗ те юрататӑп хастар ҫынсене, анчах хама мухтаканнисене...

— Куҫ умӗнче мухтани вӑл куҫ умӗнче чӗпӗтсе илни мар-ши?

Пантин машина хӑвӑртлӑхне ӳстерчӗ, хыҫран килекен самосвалаирттерсе ячӗ те малалла калаҫрӗ:

— Сирӗнпе, Альберт Григорьевич, килӗшсех каймастӑп. Ҫыннӑн мухтамалли, ыррине палӑртмалли пур пулсан, ӑна хӑй умӗнче те, халӑх хушшинче те палӑртмалла. Хӑйӗн хевти пулмасан, каҫарӑр та, хамӑрӑн лидер, лӗтӗр-летӗр лидер, парти ячӗпе-шучӗпе пурнӑҫ сӑпкинче ярӑнакан Мургаевӑн тата унӑн компанийӗн мехелӗ пулмасан, хевти хивреленсен, хӑть ылтӑн те эс ӑна е вӗсене, — пурпӗрех. Пайтах курма тиврӗ-ҫке: лӑпкаканнине те, вӑрҫаканнине те, кутран тапаканнине те... Теприпе унпа юнашар ларас килмест, анчах лармаллах. Теприне куҫран та пӑхас килмест, анчах — итлемеллех. Мана эсир ан ятлӑр куҫран каланӑшӑн. Эпӗ

Саратовран килнĕренпе Вăрманкасра та, хамăрăн Чăвашри «Сельхозтехникăра» та, суймастăп, пире, хуçалăх çыннисене, чунпа ăнланакан пуçлăх курман. Тĕнче тытăмĕн хутшăнăвĕсене, халăхпа политика юхăмĕсен çыхăнăвĕсене, çĕршыва, ĕç ушкăнне, этемĕн çĕр çинчи уттине мĕнле майпа усăллăрах та тухăçлăрах йĕркелесе пыракансен асаплăхне тĕпчесе вĕренкеленĕ май, эпĕ пĕр чăнлăха ĕненетĕп.

— Ăнкарма пулать, Пантелеймон Михайлович, пуçлăхăн халăха улталамалла мар, унăн кулленхи ĕçĕ халăхшăн усăллă пулмалла тесшĕн пуль.

Пантин шухăшласа пычĕ-пычĕ те:

— Тĕрĕсех те пуль, — терĕ. — Халăх умĕнче таса пулнине çитмест. Çав вăхăтрах эпир хамăрăн шалти туйăма ăна йăлтах кăларса памастпăр, вăрттăнлăха ăшра тытса юлатпăр. Тĕнче политикине кĕрсе каймасăрах хамăр куçкĕрет тăвакан «йăнăшсене» шĕкĕлчесе пăхар.

— Так, юрĕ, юрĕ...

— Эсир ĕненетĕр-и партин хальхи политикине?

Альберт Григорьевич ку ыйту çине тӳрех хуравлама та аптăрарĕ.

— Ан шикленĕр, Миловпа Оманов пек стукач мар эп. Хăрушсăрлăх органĕн çыннисем этеме варалама çавнашкал путсĕрсенчен тикĕтлĕ пылчăк пуçтараççĕ. Мана унти тусăм каласа панăччĕ. Пĕрне-пĕри шансах калаçар. Сирĕн телефона, Мургаевăнне вăрттăн итленине те пĕлетĕп эп. Альберт Григорьевич, ăнланăр, ку вăл сирĕншĕн те çĕнĕлĕх мар. Тен, манне те итлеççĕ... Юрĕ, хальхи саманара читлĕхе хупсах çĕртмĕç. Улшăну пурпĕрех пулмалла. Шултăрканă çĕрĕк карап тинĕс çилтăвĕлне чăтса ирттереймест. Çавăнпа патăм ĕнтĕ сире çак ыйтăва. Ну эппин — ял хуçалăхĕ пирки.

Машина чӳречине уçса вăрман сывлăшне туртса илчĕ те Большаков васкамасăр каларĕ:

— Шухăшĕпе-тĕллевĕпе малашлăхах чĕнет те, хушать те вăл, парти текенни... Ял хуçалăхне тарăннăн

специализацилессипе концентрацилесси çапах та хут çинче çеç унăн авторĕсене усă парассăн туйăнать. Ăнланмаççĕ, курмаççĕ халăх нуши-тертне, ял мĕнле çулпа аталанса е анса пынине Мускавра. Унта алă çупса «мухтав!..» тесе кăшкăрма хамăрăннисем те вĕренсе çитнĕ. Вĕсем ĕнтĕ, вĕсем, шупашкартисем, чăваш пурнăçĕн ыррипе-усаллине иксĕмĕр пекех пĕлеççĕ, çапах çăвара шыв сыпса, маска тăхăнса лараççĕ. Хута кайнă сысна, ĕне выльăх, сурăх комплексĕсенчен пĕри те тупăш парайман-ха республикăна. Çĕпĕртен, кăнтăртан апат турттаратпăр вĕсем валли. Хамăрăн пирĕн, чăвашсен, тырă çур çул çиме те çитмест. Тата вун пилĕк комплекс палăртрĕç республикăра. Хамăрăн «Хĕвеллĕ ирĕн» иккĕмĕш черетне хута ямалла. Пирĕн те кролик, сурăх комплексĕ каплантармалла. Мĕн тума? Сурăхсем эпир. Вак ялсене пĕтерсе халăха тĕп усадьба текен концлагерьсене пухатпăр. Лашасене пусса, сурăх, чăх фермисене пĕтерсе çăмсăр, çăмартасăр алăсене кĕсьене чиксе йăваласа çӳретпĕр. Ялран хула тăватпăр, ухмахсем. Унăн пĕтĕм сиенне эпир халăха чăннипе каламастпăр вĕт, ăна çутă малашлăха хура тум тăхăнтартса кĕртсе яратпăр. Çавăнпа та эпĕ, хамăрăн ăшра юлнă вăрттăнлăхпа усă курса, чăнах та, улталатăп та хăшне-пĕрне.

— Мĕн пирки вăл?

— Хам ăнланнă тăрăх, пирĕн сысна комлексĕ, ыттисен те, тепĕр темиçе çултанах пăчланать. Халĕ унта колхозсенчен илсе пынă пилĕкçĕр çураран çурри чирлесе вилчĕ. Хăçан хамăр унта çура ĕрчетме тытăнатпăр? Чиртен тасалса пĕтиччен... Иккĕмĕш черетне тата пысăкрах тутарасшăн. Кӳршĕсенчен, пасарсенчен пухма шутлаççĕ сысна çури. Фу, Мускаври пĕр куккурус сысна пуçĕ силос траншейине чăмнă хыççăн Шупашкарта сысна пуçĕсем чĕрĕлме пуçларĕç. Çил симфонийĕпе шалтăртатса ларакан пушă мăн «залсем» вырăнне ялсенче тутă витесем туса юласчĕ тетĕп. Комплекс валли уйăракан материалтан пĕр пайне ялалла яртаратăп. Акă

мĕншĕн эпĕ халăха улталамастăп, кама та пулин улталаса халăха пулăшасшăн. Хамшăн мар.

— Унашкалли ман та пулкаланă вăл. Тепĕр ыйту канăçсăрлантарать мана.

— Мĕнле ыйту вăл?

— Торф ыйтăвĕ кунта тахçанхи ыйту вăл. Партин паянхи çав çул-йĕрĕпех пырать. Пирĕн вăйлă тыр-пул туса илмелле. Уншăн пурте тăрăшатпăр. Волков çеç торф нумай кăларать тесе эсир иртнинче пурне те хытах ятларăр. Ятарлă отряд йĕркелерĕмĕр халь. Тĕрĕс, çĕр апачĕ кашни хуçалăхах кирлĕ. Эсир те пĕлетĕр Тымар пуçĕнчи Çĕлен улăхĕ «Шурăмпуç çăлтăрĕ» колхоз çĕрĕ пулнине.

— Пĕлетĕп.

— Тата мĕншĕн тымарсен пуянлăхне пĕтĕм района салаттаратăр? Халăхшăн тăрăшса, район халăхĕшĕн тăрăшса, ял халăхне улталатăр. Тĕрĕсех тăватăр-ши?

Пантин пайă шутлав райканаш пуçлăхне шухăша ячĕ: «Чунри ку ултав, пĕрне чухăнлатса, теприне пуйтарса, района малалла яраймĕ».

— Тымар патнелле çывхарнă май, тем, машина хĕлхемĕ чака пуçларĕ, хамăн та чĕре-магнето сикчĕллĕ тапасшăн, ырра марах ку, çакăнта çывăхрах ĕлĕк ялсувет пуçлăхне вĕлернĕ тенине илтнĕччĕ, тытакан вырăн пулас, — тесе çӳçенсе илчĕ Пантин.

Ямшăк шӳтленине ăнланса илеймен Большаков малалла тинкерчĕ. Айлăмра машинăсем курăнаççĕ. Вĕсенчен иртсе кайнă самосвал хыçала çитсе тăнă. Бульдозерсемпе погрузчиксем ĕçлемеççĕ. Вĕсенчен инçех мар вăрăм кĕрĕк, мулахай, çăматă тăхăннă, çурăмĕ хыçне пăшал çакнă кĕреçе сухаллă ватă çын каллĕ-маллĕ утать. Çăмăл автомашинăран аннă çынсене курсан вăл пăшала вĕçертрĕ те, тĕллерĕ: «Ямастăп!» Пантин аллине тăратса ăна хирĕç утрĕ, хуралçа ятлама пуçларĕ: «Ах, сана пула кунта ĕç чарăнса ларнă? Ăçта Волков?!» «Кашкăр Хĕветучĕн ачи вăрманта, Макçăм Макçăмч мана пĕр машин та ылтăн тияттарса яма хушман. Мăн Альпăпа

çеç калаçма хушнă», — тесе çӳлелле кăрслаттарчĕ. — Тасалăр кунтан, пирĕн çĕр çинчен!» Пантин каялла чакрĕ, хăйĕн ятне илтнĕ Альберт Григорьевич «Эпĕ вăл — Мăн Альпă!» тесе кăшкăрчĕ. Пăшал сассине илтнипе вакунккăран арçынсем чупса тухрĕç: хăшĕ ятлаçса илчĕ, хăшĕ кулса ячĕ.

Пантин хăйĕн çыннисемпе калаçма пуçларĕ. Карачăм мучи çӳллĕ арçынна хăй патне кăчăк туртрĕ, лешĕ çывхарсан, алсине хывса хытнă аллине тăсса пачĕ:

— «Шурăмпуç çăлтăрĕн» салтакĕ — Воропьев, Кераçим Филипч. Упьекта сыхă тытатăп. Сире халь, хаçат картăчкипе танлаштарса, пĕлтĕм камне. Каçарăр мана. Слушпă.

Кулкаласа Большаков мучие ыталасах илчĕ:

— Маттур-ха эсир — «Шурăмпуç çăлтăрĕн» кавалерĕ, çав пысăк отряда пĕччен тытса чарнă.

Карачăм мучи шавлакан арçынсем еннелле алă сулчĕ:

— Начар салтаксем вĕсем, пĕрисем — ĕçкĕре, теприсем — «качакара». Тымар сăмакунне ĕмеççĕ те пуçлăхсемпе вăрçаççĕ. Эсир пулатăр-ха апла вăл — Мăн Альпă. Сысна кăмуни тăвакан Мулла Тимуххи юмахласа panăччĕ. Чăнах хуса пухатăр-и вара ял-ялĕн чухчухĕсене? Пире ăшаласа çиме те хăвармастăр-и? Ман, ачамккă, сысна юлмасан, ĕç пĕтет. Фермă та хураллатăп-çке эп. Мана пăшал пуртан çеç паян кунта килсе ячĕç. Каларăм-çке пĕркунах Муркайне, кăлхус нĕрхнĕрхĕсене тĕкĕнмесĕрех вăрманти хир сыснисене пухса кăмунă тăвăр, терĕм. Кунти сакасникре туллиех вĕсем, пирн кут айне те чавса кĕрсе вите тăрне улăхтарнă Тан Ваçлипе иксĕмĕре. Итлемерĕ пулать ват çынна.

Альберт Григорьевич ăна мăн сысна ферми çинчен ăнланмалла чĕлхепех каласа пачĕ. Карачăм мучи пуçне çеç пăркаласа тăчĕ:

— Сысна купинчен тем тесен те тутлă аш пулмасть, çуллă та çемçе аш çиес килсен сыснана уйрăм картара таса пăхса мăнтăрлатмалла. Сирĕншĕн темле çӳллĕ çатанхӳме те хăрушă мар, тесе houses каларĕ мана Тимуххa. Эсир

чăнах та Альпă тăвĕсем урлă каçса курнă Мăн Альпă пек пулсан, пире те çăлса хăварăр çав пасурмансенчен. Тăр кăнтăрлах, куç кĕретех кăлхуса çаратаççĕ вĕт? Çак ылтăна районĕпе сапăтса тухса куççуль кӳлли туса хăварасшăн. Çук, урăх пĕр ывçă та памастпăр. Чавма пуçласассăнах — перетĕп. Мана, ват çынна, тĕрмене те хупмаççĕ халь. Каллех çав Якку Çитăрч пуççăр хăтланать ĕнтĕ... Мĕнле унта, район каланчи çинче, канлĕ-и?

Ватă çынпа майлах юптарчĕ вăл:

— Çăмăлах мар, мучи, пĕр канлĕх те çук. Çил çинче. Силленесшĕн-ха тата каланчи. Çĕр чĕтренни илтĕнет. Вăрманĕ шавлать.

— Çапла пуль çав, çапла, — пăшалне хул пуççи çине çакрĕ старик. — Авă, куртăр-и хăрăк тăрăллă юмана? Тăррине ярса илчĕ те чир, пуçĕнчен хăрса пырать. Вăрманкас варринче те пурччĕ пулас унашкал юман, э?

Аса килсех кайрĕ Большакова юманпа çăхансем çинчен пынă калаçу. Çак сарлака çамкаллă вăрăм сухалран тухнă сăмах халăх сăмахĕ пулнине ăнланма йывăр мар.

— Пур, унта та пур, — терĕ вара вăл кăшт куларах.

— Сирĕн каланчу та силленесшĕн те, тăрринчен хăракан Вăрманкас тымарĕ кĕçех типет пуль ĕнтĕ. Шупашкарти е Мускаври хărать-ши малтан? Çăхансем ăçта вĕçсе саланĕç-ши вара?..

Пантин çитрĕ. Большаков ăна мехотряда каялла тавăрма хушрĕ.

Торфпа пăтăрмах пулса тухассине Мургаев малтанах пĕлнĕ, çавăнпа вăл ку ĕçе пĕтĕмпех хăвăр çине илĕр тесе чире пенĕ, Большакова намăс кăтартма шутланă. Альберт Григорьевич уншăн хăраса ӳкмерĕ, минераллă хутăшсемпе тислĕке хуçалăхсем мĕнле хакланине тишкерсе, уççăн калаçма шутларĕ. Хăшин-пĕрин пите самаях хĕретмелле пулчĕ.

— Патшалăх ăна пире çителĕклех парĕ, ан хăрăр, тӳрех такампа вăрçма ан пикенĕр, — терĕ вăл, — çитес пилĕк çуллăхра, акă, минераллă удобрени икĕ хут ыт-

ларах илме тытăнатпăр. Ăçта хурăпăр ăна? Складсем çук. Тумалла-и вĕсене? Тумалла. Камăн? Хамăрăн.Патшалăх уншăн мĕн чухлĕ укçа тăкаклать? Халăх тарĕ мĕн чухлĕ юхать? Эпир мĕн тăватпăр унпа? Е çил çине сапса яратпăр, е шывпа юхтаратпăр, е чуллантарса лартатпăр. Астăватăр-и кун пирки Волков мĕн каланине? Кăшкăрма та ăс кирлĕ, юлташсем. Ăссăр ăна качака та çухăрать. Минераллă удобрени кĕтсе фермăра кашни кун купаланса пыракан тислĕкпе, пуянлăхпа епле усă куратпăр? Фермăри ылтăн куписем куçа çимеççĕ-ши? Укçасăр туяннă ылтăн çумрах, алă айĕнчех. Пин-пин тонна. Тыт та ту компост асаматсем пек. Фосфорит çăнăхĕ сап та. Фосфор та лайăх хушăнать, аммиак йăшасси те чакать. Йывăр-ши ăна тума? Е фосфор çăнăхĕ, е торф çук? Пурте пур. Ĕçлеме çеç пĕлместпĕр, культурăллă, наука хушнă пек ĕçлеме вĕренейместпĕр. Кахалшăн çĕнĕлĕх яланах йывăр, йĕр çыншăн - хăнăхнă ĕç çеç.

Альберт Григорьевич ĕнентермелле, витĕмлĕ сăмах каланинчен Крутов тĕлĕнмест. Вăл ăна, пĕрле ĕçлесе, лайăх вĕренсе çитрĕ. Унăн ĕнентерӳлĕхĕ — район пурнăçне, кашни колхоз, фермăпа бригада пурнăçне тĕплĕ пĕлнинче. Большаковăн малтан хатĕрленĕ доклад та, хут татăкĕ те çук. Йăлтах пуçра, ăсра, чĕлхе çинче. Доклад тăвас пулсан та вăл хăй çырать, такам çине шанса лармасть. Трибуна умĕнче ăна пуçа чиксе вуламасть, кашнинчех хăй чĕлхипе каласа парать. Çавăнпа ăна итлеме те кăмăллă, интереслĕ. Акă вăл халĕ те, залра тăнласа ларакан çынсем еннелле тепĕр хут пăхса çаврăнчĕ те, малалла хĕрсе калаçрĕ:

— Эпир йĕрĕ пулнинчен, ăслă пулнинчен халăх вĕрентĕр, халăх ан ятлатăр пире çакăншăн. Акă тĕслĕхсем илсе кăтартатăп. Итлĕр: районта хатĕрлекен тислĕкрен пĕр процент кăна азот çухалтăр-ха. Мĕн чухлĕ сиен кӳрет çакă? Икĕ пин тонна мочевина е пилĕк пин тонна аммиак шывĕ çухатнипе танлашать. Укçа çине куçарса пăхăпăр ăна: çĕр çирĕм — çĕр вăтăр пин тенкĕ.

Пирĕн миçе процент пĕтет-ши? Шутламан. Шутламастпăр. Шутлама та тăрăшмастпăр. Тĕрĕссипе — шутламаллах! Тислĕке ылтăнпа танлаштармаллах! Тислĕк шĕвекнех илĕпĕр. Ăна эпир çулталăкне вунă пин тонна пухма пултаратпăр. Çак пуянлăхпа туллин усă курсан? «Шурăмпуç çăлтăрĕ» колхоз председателĕ Волков каланине манмарăр-и? Мĕншĕн вĕсем тислĕк шĕвекĕпе çулталăк тăршшĕпех усă кураççĕ? Çулла ирхи çĕртме, кĕркунне çĕртме уйне хываççĕ. Хĕлле юра бульдозерпа хырса тухаççĕ те тислĕк шĕвекĕ сапса хытараççĕ. Фермăра плиткăсем тăваççĕ. Кам хистет вĕсене? Чĕре, хресчен чĕри, çĕр çыннин чĕри хистет. Акă мĕншĕн эпир вĕсенчен вĕренме тивĕç, хамăрăн кахаллăха ĕçлĕ çивĕчлĕхпе улăштарма тивĕç.

Конференци Тарăнварта вĕçленчĕ. Тислĕкпе, тислĕк шĕвекĕпе мĕнле усă курмаллине кашни хăй куçĕпе куртăр, хăй пуçĕпе ăнлантăр тесе ахальтен унта илсе каймарĕ Большаков.

Колхозăн çĕнĕ агрономĕ Василий Фомич Воробьев питĕ тĕплĕн ăнлантарса пачĕ.

— Сире эп вĕрентесшĕн çунмастăп, — пурин çине те çивĕччĕн пăхса çаврăнчĕ вăл. — Тислĕк шĕвекĕ азотпа тата калипе пуяннине эсир хăвăрах лайăх пĕлетĕр, хăшĕ унта миçе процент йышăннине те. Мĕнле усă панине те ăнланма тивĕç. Сирĕн те, пирĕн те ĕне выльăх пĕрешкелех, витесенче вăтамран 240 кун пулать. Çав вăхăтра пирĕн икĕ пин тонна ытла тислĕк шĕвекĕ пухăнать. Сахал мар вĕт? Эпир ăна малтантарах уя юр купи çине тăкса шăнтаттăмăрччĕ. Хăй халлĕн сапни усăллах маррине шута илтĕмĕр те, плитка тума тытăнтăмăр. Пĕр «шоколад плитки» аллă-утмăл кило таять. Гектар çине пилĕкçĕр плитка лартатпăр. Çапла, эпир çĕр-аннене малтан чăннипех хамăр шоколад паратпăр. Çавăнпа вăл та пире шоколадах çитерет — кашни гектарĕ икçĕр тенкĕ ытла таса тупăш парнелет.

Наукăпа техника прогресĕ ялăн лăпкă пурнăçне пур енчен те силлет: вăратасшăн, вăй кĕртесшĕн, малалла кайма çăмăллăх туса парасшăн. Вăл ялта чăннипех революци тăвать. Хăйĕн авалтан пыракан йăли-йĕркипе тăлланнă ял çынни унта асăрханса, васкамасăр хутшăнать, сăмси умĕнчи савăк улшăнăва курмăш пулать, пархатар паракан çĕнĕлĕхе пӳрте кĕртесшĕн çунмасть. Революци пурпĕрех чарăнмасть, тавраллах çавăрса илет, никама та манăçа хăвармасть, кашни ялах ыйхăран вăратать. Çав вăраннă халăха пĕр вăя пухса пĕр кĕвĕпе уттарасси парти комитетĕнчен те нумай килет. Çавăнпа хĕлле партком членĕсенчен никамăн та лăпланса ларасси пулмарĕ.

Çур кунĕ ял çыннин пит-куçĕнче хĕвел чĕртрĕ, ăшчикĕнче хаваслăх туйăмĕ ташлаттарчĕ. Пăсланакан, типекен хура çĕр, ешерекен симĕс калча çине хресчен тишкерсе, шухăша кайса пăхать, пуçĕнче пулас тырпул тухăçне виçет. Çурхи кун уншăн — савăнăçлă канăçсăрлăх. Кĕр телейĕ паянтан килнине лайăх пĕлет вăл. Çавăнпа çурхи куна тарасапа виçнĕ пекех виçет. Çулталăк картĕнче унăн хăйĕн вырăнĕ пулмалла. Çурхи ĕçсене çав карта çитиччен те, картран иртсе кайсан та тумалла маррине ăнланать. Хăйĕн вăхăчĕпе, хăйĕн виçипе ирттерме хатĕрленет çĕр çынни çур акине.

## 13

Çур аки ĕçĕсем, тыр-пул пухса кĕртесси тата кĕрхи тырă акса хăварасси Тымар енче ытти çĕртинчен уйрăмрах. Вăрман варринчи е хĕрринчи çĕр лаптăкĕсем юртан каярах тасалаççĕ, çумăрлă çулсенче ушахра вырташĕ. Хăш-хăш çул çынсем ĕç вĕçлесен те кунта тин акана е вырмана тухаççĕ. Кăçал вĕсем кӳршĕсенчен юлсах каймарĕç. Çуркунне вăраха тăсăлнипе юр юлмарĕ. Кĕр калчисем парка тухрĕç. Вĕсене пĕтĕм лаптăк çинче апатлантарчĕç.

Ял çыннипе пĕрлех партком та çуракине тухрĕ. Партком членĕсем бригадăсене саланчĕç. Крутов çур акине

хутшӑнакан агрегатсене саламламалли хут хатӗрленӗччӗ, ӑна мӑн открыткӑсем ҫине пичетлерӗҫ. Салам хутне митингра кашни агрегат ҫыннисене савӑнӑҫлӑн пама шутларӗҫ. Максим Максимовичпа Василий Фомич машинӑсен паркне ҫитнӗ ҫӗре ирхи капланнӑ тачка пӗлӗтсем саланма пуҫларӗҫ. Вӗсем хушшипе хӗвел ҫиҫсе сиксе тухать те сисмесӗрех пытанать, унтан каллех тухать. Хӗвел ташши куҫа йӑмӑхтарать.

Ҫап-ҫуттӑн йӑлтӑртатакан тракторсем пӗр рете тӑрса тухнӑ. Механизаторсем мастерской умӗнче халап ҫапаҫҫӗ. Вӗсем ҫитсен, пурте шӑпланчӗҫ. Крутов ҫынсене черетпе алӑ тытса ҫаврӑнчӗ. Воробьев та ун хыҫҫӑн пырать. Агронома Муллин алӑ памарӗ, ҫийӗнчен ӑна йӗплӗ сӑмахпа тӗртсе илчӗ:

— Аллу сивӗ сан. Максим Максимовичӑн вӗри алли хыҫҫӑн шӑнтас килмест. Куҫу та сивӗ пӑхать.

Юнашар тӑракансем кулса ячӗҫ. Тӗп агроном хӗрелчӗ, те тӳрре тухасшӑн пулса, каласа хучӗ:

— Пирӗн пассивлӑ коммунист епле активлӑ халь. Партбилет улӑштарас умӗн хӑйне райкома чӗнтернӗшӗн ҫиет вӑл мана. Хамах уҫма пулӑшрӑм та ӗнтӗ чӗлхине... Унтан вӑл секретарь енне пӑхса пурне те шӑпланма хушрӗ: — Ҫитет пустуй павраса, ӗҫ пирки калаҫар. Ҫур аки пуҫланнӑ ятпа ирттерекен митинга уҫӑпӑр.

Ҫав вӑхӑтрах уҫӑ чӳречерен гимн сасси илтӗнчӗ. Пурте тӳрленсе тӑчӗҫ. Максим Максимович кӗске сӑмах каларӗ, кашни агрегат хуҫине салам хучӗ пачӗ. Митинг вӗҫленсен трактористсем «хурҫӑ учӗсем» патнелле хаваслӑн утрӗҫ. Чи малтан Муллин тракторӗ сасӑ пачӗ, ун хыҫҫӑн — ыттисем те.

Тымара кайма тухсан Крутов ҫула май тарӑн ҫырма хӗрринче чарӑнчӗ те вӑрман енчен килекен тракторсене сӑнама пуҫларӗ. Вӗсем хӑвӑрт ҫывхараҫҫӗ. Сӳресем хыҫӗнче хура йӗр юлать. Унта курак ушкӑнӗ явӑнать. Кун пек агрегатсемпе виҫӗ талӑкра сӳресе пӗтермелле. Вӗсем хыҫҫӑн уя культиваци тӑвакан,

çĕртме сухалакан, тырă акакан агрегатсем кĕрлесе тухĕç. Çĕр механизатор ытла хутшăнать çур акине. Кăçал вĕсен умĕнче — тата кăткăсрах ĕç.

Партком пĕтĕм ĕçе çуракине лайăх вĕçлессишĕн туса пычĕ. Агитплощадкăсем мĕнле ĕçленине Крутов хăй тĕрĕслесех тăчĕ. Социализмла ăмăрту бюллетенне кăларчĕ. Кашни ир ăна уя хăвăрт çитерсе пачĕç.

Колхоз тăрăх çӳренĕ май Максим Максимович Тымара çитрĕ. Ялтан инçех мар виçĕ сеялка кăкарнă агрегат çаврăнать. Алеша Каргин, партком секретарьне асăрханăскер, тракторне вăхăтлăха тăратрĕ те кăпăшка тăпра çине сиксе анчĕ.

— Фу, шăрăх. Хĕвелĕ те çуллахи пекех çунтарать. Нумаях юлмарĕ-ха, пĕтет. Юрать кăçал скорăй агрегатсем турăмăр, унсăрăн вăраха ятраттăмăрччĕ, — терĕ тракторист, çамки çинчи тарне шăлса.

— Сирĕн хăрамалли çук-ха, вăхăтрах вĕçлетĕр. Азот паратăр пуль? — ăна çĕнĕ бюллетень тыттарнă май, ыйтрĕ секретарь.

— Кăнтăрла азот хыватпăр, каçхине, хĕреслĕ май, фосфор. Арăм халь çеç тĕрĕслесе кайрĕ, асăрхаттару талонне шăтарасшăн. «Тракторна хыт хăвалан, «Урал» вырăнне анра сухра кăтартап», — тет. Асăрхарăр пуль мĕнле хăвăртлăхпа акнине? Виççĕмĕшпе.

Ĕнсине хыçса тăракан тракториста Крутов лăплантарчĕ:

- Арăму маттур-ха сирĕн, ан пăшăрханăр. Людмила Павловна пек çынсем пур çĕрте те пулсанччĕ... Халăхĕ итлесшĕнех мар, ĕçлекен сахал сирĕн ялта. Пахалăхшăн вăл тĕрĕсех ятланă. Авă унта, кĕтесре, утаса яхăн шăйрăк хăварнă. Кайса акăр алăпа. Мотоцикл пирки ... ман шутпа, «Урал» сирĕн алăра.

Алешăн тусанлă пичĕ хĕвеллĕ кулăпа йăлкăшрĕ:

Пурпĕрех пилĕк çĕр гектартан кая мар пулать ман.

— Шăп та шай ăмăрту условийĕнчи пек тухать. Пĕрремĕш преми. «Уралпа» пĕрле, курорта кайма, тӳлевсĕр путевка, Хисеп грамоти парăпăр. Талон шăтар-

малла ан ĕçлĕр çеç. Арăмна вăхăтра шăтармалли çинчен те ан манăр, вара...

Хĕрлĕ вымпел çакнă трактора Крутов чылайччен пăхса тăчĕ. Ăмăрту условийĕсем çирĕплетнĕ чухне çыннăн мораль енне те, пурлăх енне те тимлĕн пăхма кирли çинчен вăл тепĕр хут аса илчĕ. Пĕрремĕш премисене иккĕшне те кам илесси паллă ĕнтĕ. Чи малта пыракансем халлĕхе Каргинпа Муллин. Иккĕмĕшне, ИЖ-Юпитер мотоциклпа турист путевкине, виççĕн илме пултараççĕ. Ăнтăлу питĕ пысăк механизаторсен. Унашкал хавхалану вĕсен Маминов вăхăтĕнче ĕмĕрне те пулман. Вăт епле вăл çынра хĕлхем чĕртме пĕлсен.

Такам тпру! тенипе Крутов шартах сикрĕ. Каялла çаврăнчĕ те, хыçра вăрлăх тиенĕ лава асăрхарĕ. Çӳлте, михĕ тăрринче, Тан Ваçли ларать. Максим Максимович ăна сывлăх сунчĕ. Лӳчĕркеннĕ карттус сăмси айĕнчен ун çине хĕсĕк куç хăравçăллăн пăхать. Шăрт пек кĕске сухал. Пĕркеленнĕ пит çăмартисем. Чăмăртаса лартнă тута. Акă, лав çинчен шуса аннă Тан Ваçли мекĕрленсе михĕ çĕклеме пикенчĕ. Крутов тепĕр енчен пушатма пуçларĕ. Михĕсене çул хĕррине вырнаçтарса лартсан тин Тан Ваçли çăварне уçрĕ:

— Кăмунистсен пуçлăхне партире тăманнисен ячĕпе тав!

Тан Ваçли халĕ те такама айăплать пулас, кӳреннĕ кăмăлне уçса кăтартать. Максим Максимович чĕлĕм туртакан лутра арçын умне пырса тăчĕ, унран ыйтрĕ:

— Мĕнле чуптаратăр?

— Сиккипех, — кĕскен таврăрса хучĕ вăл.

— Тем, кăмăлсăр пек эсир.

— Пулăн кăмăллă сирĕнпе.

— Мĕн амакĕ сиксе тухрĕ тата?

Çăварĕнчен çăра тĕтĕм кăларса ячĕ те Тан Ваçли, аяккалла чăртлаттарса сурчĕ.

— Пĕлмĕше перет тата? — сивĕ куçĕпе пăхса йĕпленчĕ вăл. — Хăйсем партирен кăлараççĕ те, билета туртса илсе пушăпа хĕртеççĕ те... Тан Ваçли çакăнса вилет, терĕç пуль. Ничево, пурнатпăр! Нушаран хăтар-

нăшăн тав та тăвас килет. Пустуй укçа тӳлесе тăнă çав, ухмах, эрех илсе ĕçес вырăнне...

Те сăмакун, те пăрака шăрши кĕрет унран, чĕлĕм тĕтĕмĕпе хутăш пушшех ăша пăтрататъ. Чăтаймарĕ Крутов, çиле майлă çаврăнса тăчĕ.

— Партирен сире никам та кăларман вĕт. Эсир унран хăвăр уйрăлса кайнă. Мĕн çилленмелли?

— Ял кулли пултăм, — тарăхса кайрĕ Тан Ваçли. — Ял кулли! Партийцă чухне эп çапах та ял авангарчĕ пулнă. Халĕ, курăр, обозра!

— Парти ĕçкĕçсене юратмасть çав! — çирĕппĕн каларĕ Крутов та. — Хăй ретĕнче тытасшăнах çунмасть вĕсене. Пурнăç çине сирĕн пек ӳсĕрле е мухмăрла пăхсан, эпир пурте обозра пулмалла — пурнăç обозĕнче. Ăнлантăр-и? Сывă юлăр!

Тан Ваçли тăпра канрашкине тапса сирпĕтрĕ, чĕлĕмне ĕмсе илчĕ, машина патнелле утакан партком секретарĕ хыçĕнче мăкăртатса юлчĕ:

— Эс партире, эп партире мар тесе пин çул пурнас çук — никам та. Эс те çĕр çинче утакан. Эп те. Эс те пĕр ĕмĕр пурнан. Эп те. Эс те вилен. Эп те вилеп. Эс те çĕр хурчĕ. Эп те. Пĕр тан. Тан эпĕр пурте — çĕр çынни.

Максим Максимович çак этем пирки шухăшласа тĕлĕнсе пычĕ. Тан Ваçлине парти билечĕ пурнăçне çăмăллатма кăна кирлĕ пулнă иккен. Кладовщикре те завхозра, ферма пуçлăхĕнче те бригадирта ячĕшĕн тытăнса тăнăскер, ку таранччен йывăр ĕç туса курман. Халĕ, авă, михĕ йăтса та мекĕрленме тивет. Парти членĕн ячĕпе витĕнсе Тан Ваçли пек киревсĕр сăн-сăпатне пытарса усракан коммунистсем татах та тĕл пулкалаççĕ-ха. Парти докуменчĕсем улăштарнă вăхăтра та вĕсем темле майпа ала витĕр лайăххисемпе пĕрлех тухрĕç, хывăха юлмарĕç. Тĕрĕссипе ĕнтĕ — алаканĕсем пулăшнипе. Парти дисциплинине пăсма пурпĕрех пăрахман вĕсем. Çав коммунистсене воспитани парас тесе халĕ камăн та пулин хĕрмелле, çапăçмалла, нервсене пĕтермелле.

## 14

Хресченĕн ĕçĕ яланах хут çине çырса хунă пек пулмасть. Çăмăл пуçланнă çур аки те вăраха тăсăлчĕ. Çанталăк сивĕ те йĕпе-сапаллă тăни кансĕрлерĕ. Пĕрчĕллĕ тырăсене пурпĕрех вăхăтра акса хăварчĕхха. Май та вĕçленет, çапах çĕр улми лартса пĕтермен, вăрманлă уйсене кукуруза акма тăпра ăшăнса çитмест. Нумай та юлман ĕнтĕ ĕçĕ: çĕр гектара яхăн çĕр улми, çĕр аллă гектар кукуруза.

Çумăрĕ упа сурчăкĕ пек пĕрĕхет те пĕрĕхет...

Районтан пĕрмай хистеççĕ: хăçан вĕçлетĕр, пирĕн Шупашкара отчет памалла.

Çур акинчи ĕçе оперативлăрах ертсе пыма тесе райком «Шурăмпуç çăлтăрне» Оманова янă. Пантелеймон Христофорович колхоз уйĕсем тăрăх курса çӳреме пулчĕ. Волков ăна тӳрех Тымара илсе кайрĕ.

Уйра уазик ерипен чарăнчĕ. Пурте хытса ларнă урасене çемĕçтермелле выляткаларĕç, хĕвел шартарнă куçĕсене аллисемпе хупларĕç. Мотор шавне хăнăхнă хăлхасем нăйласа тăраççĕ. Çав сасă çумне çурхи хир юрăçин тăрăлти кĕвви хутшăнать. Вăрман енчен юхса килекен имлĕ шăршă кунтăкланнă пуçа сиплет. Ăшă çил çара кăкăра кăтăклантарса çаврăнать. Кĕлетке сисмесĕрех тӳрленет, çӳлелле çĕкленет, ура вăйĕ хутшăнать, ăша çăмăллăх туйăмĕ тулать.

Канрашкаллă çулпа вĕсем çĕр улми лартакансем еннелле утрĕç. Суха пуç тытнă хĕрарăм вĕсене саркалансах кĕтсе илчĕ.

— Тур пулăшать пире, ачам. Тăхта! Кантăр-ха кăштах лаша, — хура кĕсре пуçĕнче пыракан çамрăка чарса тăратрĕ вăл. — Акă, тинех çитрĕç суха пуç тытакансем. Ларас кăштах. Канас. Хул-çурăм юлмарĕ. Вăй виçĕр-ха пĕрре, интеллигенцисем. Мĕн тути калать çĕр улми?..

Волков суха пуç тытма ухутах пулчĕ. Хурăнварта та килти çĕр улмие сахал мар лартнă унпа. Çĕр çыннин хăнăхнă, вилме пĕлмен ĕç хатĕрĕпе «Шурăмпуç»

хирӗнче те хушӑран усӑ курнӑ. Оманов кӗсре хӑртлатнинчен хӑра-хӑрах чӗлпӗре ярса илчӗ, лашана касӑ тӑрӑх майӗпен уттарса кайрӗ. Волков тимӗр ҫӗҫӗ каснипе купташка тӑрӑх ик айкинелле сирӗлсе юлакан тачкарах тӑпра катрашкисене сӑнать. «Трактор кӗртме ҫук ӗнтӗ кунта, лаша плугӗпе те кансӗр, суха пуҫпе пит меллӗ», — шухӑшлать вӑл хӑй ӑшӗнче. Пуҫне ҫӗклесе тавралла пӑхса ҫаврӑнчӗ те тӗлӗнчӗ. Тепӗр енчен вӗсене хирӗҫ Крутов килет. Лашисене пӗр харӑсах тӑратрӗҫ. Алӑ ҫӗклесе сывлӑх сунчӗҫ те, кула-кулах малалла кайрӗҫ: пӗри — ҫул хӗрнелле, тепри — вӑрман еннелле. «Хӑваласа ҫит!» — тенине ҫеҫ илтсе юлчӗ Волков. Вӑл юлташӗ ӑмӑртӑва чӗннине ӑнланчӗ. Председатель те чӗнӗве йышӑнчӗ, лашине чуххӑмӑнах «Эй, Савраска!» тесе хӳтерме тытӑнчӗ.

Ани ҫур ҫухрӑм тӑршшех пулас. Пӗрре тухмах чӗр нуша вӗт. Волковӑн ҫамки тӑрӑх тар юхать, кӗпи ӳт ҫумне ҫыпҫӑнса ларчӗ. Хӑнӑхман урасем касӑ тӑрӑх тӑйккитайкки ҫапӑнаҫҫӗ. Суха пуҫ хул-ҫурӑма лӑскать. Оманов та кӗсрене васкатать. Тем чул хӑвӑрт кайнӑ пек туйӑнать, анчах Крутовпа вӗсен хушши, кӗскелес вырӑнне, вӑрӑмланса юлать. Акӑ, Максим Максимович вӗсен хыҫне тухрӗ. Хӑвалать. Кӗҫех ҫитет. Волковсен хура кӗсрин кӗлетки тӑрӑх шур кӑпӑк юхать. Оманов ӑна малалла хӳтерет, ывӑннипе хӑй те тӑпра катрашкинчен такӑнать. Волков ним пӗлми пулнӑ хулӗсене хытара-хытара, шӑла ҫыртса, хуралса килекен куҫне чаркаласа йывӑррӑн хашлатса утать, касӑ пуҫне тухать те суха пуҫ тимӗррине ҫул хытти ҫине тӑрӑнтарса лартать, хӑй ҫумне чашласа ҫитнӗ ҫӳрен лашаран пӑрӑнса юлташӗ патне пырать, ӑна алӑ тытать:

— Парӑнтӑмӑр. Ҫиелтен пӑхма ҫеҫ капан пек эпир.

Хӗрарӑмсем вӗсене сырса илчӗҫ. Ушкӑна ҫитнӗ Людмила Белова, «чакаксене» юнасах чарса лартрӗ, ӗҫе хӑваларӗ. Хӗрарӑмсем те ӑна итлесшӗнех пулмарӗҫ, каннӑ вӑхӑтра павраса юлас терӗҫ пуль. Ыйту пара-пара анратсах ҫитерчӗҫ. Мӗн кӑна кӑсӑклантармасть вӗсене: ялти

ача сачӗпе парикмахерски таранах. Оманов, каллех кӑткӑс ыйту лекесрен сехӗрленсе-ши, хыҫаларах чакса тӑчӗ.

Ҫӗр улми пуссинчен уйрӑлсан, Крутов пуринчен те ыйтрӗ:

— Тӗрӗс мелпех ӗҫлетпӗр-и?

Хӑшӗ мӗн каласса кӗтсе кашниех пӗр-пӗрин ҫине ытарлӑ пӑхрӗ. Волков ывӑҫ тупанӗпе пит ҫӑмартине сӑтӑрчӗ. Оманов шӑхӑркаларӗ. Шофер, Кӗркури, чеен кулса, тутине пӑркаларӗ. Мотор кӗрлевӗ хӑлхара нӑйларӗ. Максим Максимович нумай кӗттермерӗ, ыйтӑвӗ ҫине хӑех кирлӗ сӑмах тупрӗ:

— Ман шутпа — тӗрӗсех. Эпир паян суха пуҫ тытни никамшӑн та япӑх пулмарӗ пуль, тетӗп.

— Япӑххи япӑх мар та, анчах мана ҫакӑ шухӑшлаттарать, — калаҫӑва хутшӑнчӗ райком представителӗ. — Пирӗн ӗҫ суха пуҫ тытса уйра тар тӑкасси мар-ҫке. Пирӗн коммунистсене, пӗтӗм колхозниксене ҫав ӗҫе тума пӗр тӗвве тӗвӗлесси. Сӑмахпа, сӗнӳпе, кӑтартусемпе вӗсене кӗрешӗве ҫӗклесси. Халӗ мӗн пулса тухрӗ? Партком секретарӗпе колхоз председателӗ тата райком пуҫлӑхӗсенчен пӗри ҫӗр улми лартрӗҫ, хӗрарӑмсене култарчӗҫ. Партилле хӑтлану марах ку. Тем тесен те, эпӗ санпа килӗшместӗп.

Иккӗшӗ калаҫма пуҫланӑран-ши, ыттисем вӗсене кансӗрлемерӗҫ, тӑнласа пычӗҫ.

— Эх, эс те ҫав, пире вӗрентесшӗн. Парти ӗҫӗ вӑл, тусӑм, ҫӳлтен кӑтартни ҫеҫ-и? Парти ӗҫӗ теори сӑмахӗ ҫеҫ-и? Парти ӗҫӗ вӑл — практикӑра, мӗн ӗлӗкренпех. Парти ӗҫӗ вӑл — пӗр вырӑнта хытса тӑракан япалана чӗртсе тапратни, ӑна чарӑнса ларма паманни, кирлӗ ҫулпа малалла, малалла хӑвалани, усӑллӑ ҫӗре ҫитерни, ҫав юхӑмра пӗрле, юхӑм пуҫӗнче пыни. Ҫӗнтерни!

— Тӗлӗнтеретӗн эсӗ тепӗр чухне, Крутов, — терӗ Пантелеймон Христофорович, — пысӑк танлаштарусем илсе кӑтартатӑн. Витерме тӑрӑшатӑн. Массӑсене вырӑнтан тапратса кӗрешӗве ҫӗклемелли меслет тупнӑ вӑл. Тытнӑ та суха пуҫ аври, хӑваланӑ кӗсрене: эй, малалла!

Хĕрарăмсем, курăр мана, мĕнле ĕçлеме пултаратăп! Пустуй мухтанса хăтланни çеç ку. Эпир килсе туса панипе çăкăрлă пулаççĕ пуль тымарсем, çĕршыва тăрантараççĕ пуль вĕсем. Ăçта сирĕн вăй питти арçынсем? Вĕсене кĕрешĕве çĕклекенсем, Каргин, парторг, коммунистсем, ăçта? Вăт çак ыйту çинче чарăнса тăмалла пулнă та сан, партком секретарĕн. Уя хĕрарăмсене çеç мар, арçынсене те кăлармалла пулнă. Тĕрĕс калатăп-и эпĕ, Тельман Федотович?

Паçăртанпах калаçăва хутшăнасшăн пыракан Волков, хăйĕнчен ыйтсан, çапла ăнлантарчĕ:

— Пĕтĕм айăпĕ ĕнтĕ — çав вăрман ялĕсем çине района ертсе пыракансем алă сулнинче. Унчченех, колхозсене пĕрлештеричченех, урăхла пăхнă та вĕсем çине, халĕ эпир те улшăну тусах çитереймерĕмĕр. Айăпа пирĕн йышăнмаллах. Хăйне евĕр çынсем кунта. Тепĕр чухне итлеттерме те хĕн. Арçынсем — платникре. Куртăр-и, çĕнĕ урам тăваççĕ? Çитсе калаçăпăр-ха вĕсемпе те. Унта нумайăн мар, тейĕпĕр. Ыттисем... ыттисем вара — шапашра. Тухаççĕ те каяççĕ — Атăл тăрăх е Çĕпĕре. Кĕрĕшсе пĕр-пĕр хуçалăхра ĕçлеççĕ те хĕлпе пĕрлех яла персе çитеççĕ. Укçа мăй таран. Ĕç, çи. Арăм — колхозра. Анкарти —хыçра. Нимех те тăваймарăмăр-ха вĕсене. Алă çитмерĕ тӳрех. Машина-трактор çинче — каллех арçын. Каччăсем салтакра е хулара. Питĕ йывăр тымарсене хамăр ялсем пек ĕçлеме хăнăхтармашкăн. Бригадирĕ те маттур, парторганизаци секретарĕ те кахал е ĕçке ярăннă çын мар. Каргина пĕлетĕр. Çапах ĕçе вĕсем те, эпир те малалла яраймастпăр. Юрать-ха паян Максим Максимович çĕр улмие суха пуçпе ларттарма ăнкарнă. Хамăн пуça та пырса кĕрес çук хальхи вăхăтра унашкал шухăш. Ырансем вĕçлетпĕр, акă. Района пĕлтеретпĕр. Эсир те ĕç пĕтерсе таврăнатăр. Пирĕн кунта, ялта, парти çыннин те тепĕр чухне темле хура ĕç те тума тивет.

Райком представителĕ Волковпа та килĕшмерĕ, хăйĕн шухăшĕнчен иртесшĕн пулмарĕ. Парти ĕçлевçи

халăхпа пĕрле ĕçлесе халăхпа хутăшса вĕтелсе каясран, курăнми пуласран хăрать иккен вăл.

— Парти ĕçлевçин урăхларах мел пулмалла. Пире парти чăннипех организатор, воспитатель пулма вĕрентет, хушать çавна тума, — терĕ Крутов. - Ку енĕпе эсир тĕрĕс шухăшлатăр, Пантелеймон Христофорович. Анчах...

Тельман Федотович, шоферпа юнашар лараканскер, каялла çаврăнса хушса хучĕ:

— Эпĕ ĕнтĕ яланах хуçалăх ĕçĕпе чакаланнă. Каçарăр та эсир мана, Пантелеймон Христофорович, çапах ку калаçура манăн Максим Максимович майлах пулас килет. Тахçан пĕрле ĕçлесе пурăннă тесе мар. Темле ан шухăшлăр. Эпир унпа унччен те пайтах тавлашнă, паллах, ĕçшĕн. Тавлашнă, анчах пĕр-пĕрне çилленмен. Ман шутпа та паян суха пуç тытни пуриншĕн те усăллă. Кăтартса çӳренипех, çивĕч сăмахпах пур çĕрте те ăнăçу тума çукрах. Тепĕр чухне эпир, хамăр ята ярасшăн мар, хамăр тумтире вараласшăн мар, хамăр халăхпа ваклanса каясшăн мар хăтланса организатор рольне çухатмастпăр-ши? Паянхи тĕслĕхех илер. Енчен те Максим Максимович бригадира е парторга çĕр улми лартса пĕтерме чи лайăх кăтарту панă, тейĕпĕр. Бригадир — колхозниксене. Ертсе пырас ĕçĕн мелĕ, йĕрки çапла вĕт? Пурте йĕркеллех пулса пырсан, савăнмалла çеç. Ĕç кĕрлет кăна. Енчен те урăхла пулса тухсан? Паянхи пек, сăмахран? Крутов уйрах каларĕ-çке. «Ертсе пырас мел кунта, халăх патне çитсен, каялла чакма пуçланă», — терĕ. Бригадир çынсене уя илсе тухаймасть. Мĕн тумалла? Ирĕксĕрех хăвăн çул кăтартса памалла.

— Пĕр хĕрарăма ӳкĕтлесе кӳлтертĕм-кӳлтертĕмех суха пуç, — куларах каларĕ Крутов. — Тепĕр ача тупрăм. Тухрăмăр çапла уя. Сехет ытла тăрмашрăмăр. Пăхатăп: ял енчен суха пуç кӳлнĕ лашасем килеççĕ... вуннă таранах. Йăлтах хĕрарăм та ача. Тытăнчĕç ĕçе. Кашлаттартăмăр кăна. Эсир те пырса пулăшрăр. Мана, мĕн, ĕçленĕ, ала-ура татăлса ӳкмерĕ уншăн. Намăсси. Ăна халăх хăй пĕлет.

Машина правлени умĕнче чарăнчĕ. Калаçу татăлчĕ. Вĕсемпе пĕр шухăш тупайман Оманов пуçа хыççа утрĕ.

— Сана, Крутов, колхозра хӳтĕлекен нумай, председатель те сан майлă, — терĕ вăл. — Çапах та, ĕçне ырламастăп. Ун пирки райкомра та калатăп. Ку пĕртте парти мелĕ мар - паянхи мел мар. Суха пуç та, партком секретарĕ хĕрарăмсемпе ăмăртса çĕр улми лартни те, вăрманти ялсем çине ală сулни те... Улăштармалла сан ĕç мелне, ак çакăнта, кантурта, пулмалла сан тĕп ĕçӳ.

— Халăх хушшинче тата камăн пулмалла? — юриех ыйтрĕ унран Крутов.

Пуçламăш парторганизаци секретарĕсен, парторгсен, бригадирсен ĕçлемелле халăхпа.

— Вĕсем хушшинче те, халăхра та пулмалла пирĕн. Эпир — сахалăн, халăх — йышлă. Çавна шута илсе пирĕн пурпĕрех халăхпа ытларах ĕçлемелле. Парти мĕнле ыйтать пирĕнтен? — парăнмарĕ Максим Максимович.

— Парти пире организаторла ĕçе вăйлатма хушать. Ăна вара бригадăсенчи парторганизацисем, партгруппăсем урлă туса пымалла. Вĕсене вăйлатмалла. Ăнлантăн пуль.

— Ăнлантăм, Панхристоф. Çапах та халăх хушшинче пулнинчен ытла эпĕ хамăр ĕçре чи вăйлине, чи лайăххине курмастăп. Халăх пире хăй патне туртать, хăйпе пĕрле ĕçлеме, канашлама, кăткăс ыйтусене пĕрле сӳтсе явма тата татса пама ыйтать. Пирĕн халăх тăрринче мар, халăх хушшинче пулмалла. Ăнлантăн-и эс те?

— Ăнлантăм, секретарь юлташ. Санпала ĕнтĕ, паянхи паттăрпа. Халăххупах пурăн. Çиччас, тĕрĕслем-и эс мĕнле ĕçленине? Пур-и-ха курăнакан агитаци? Мĕнле хавхалантарса çĕклетĕн колхозниксен идейăллă шайне? Уйра агитатор тавраш ĕ çукчĕ.

— Ман агитаци çĕр улми ани çинче — ĕç кĕрлевĕнче. Ĕçлекен çынна чăрмантармаççĕ. Ăна ĕçе тухиччен, е каннă вăхăтра, е ĕç хыççăн агитацилеççĕ. Курăр, «боевой листок» тухнă. «Паян çĕр улми лартнă çĕрте Иванова, Сидорова, Козлова, Морозова, Леснова кол-

хозницăсем малта» тесе çырнă. Ун çумне хамăр пирки те çыртарас мар-и?

Оманов тутине пăрса, куçĕпе мăч-мăч тукаларĕ те, лăпланчĕ.

18

Хăйне 1974 çулхи çулла СССР Верховнăй Совечĕн депутатне суйласан Волков Мускава пĕрремĕш сессие кайса килчĕ. Унтан таврăннă чух тӳрех райкома кĕчĕ. Мургаев пӳлĕмĕнче вăл вăхăтра шăпах ял хуçалăх ыйтăвĕсене татса паратчĕç.

Тĕп хуларан çитнĕ ятпа Тельман Федотовича пурте саламларĕç.

— Пăчă сирĕн кунта, — питне юриех шăлнă пек турĕ Волков. — Мĕнле мунчара тарланине хăлхана кĕнĕ виç сăмахранах ăнлантăм. Сессире те çав сăмахахчĕ — пурнăç сăмахĕ. Калаçу вăл калаçу та, анчах ял хуçалăхне çĕклеме пирĕннех, ял çыннинех çĕрпе те тусанпа, тислĕкпе вараланмалла пулать çав. Эпир çавăнпа çĕр çыннисем — çĕр хуçисем. Çавна май сире сĕнӳ парасшăн. Аш-какай сутассипе пилĕк çуллăх план тулаймасть, тетĕр...

— Мускав вăйĕпе тапăнасшăн пуль-ха пире, — йăлл кулса хул пуççине сиктерсе илчĕ Мургаев.

— Эсир, Яков Сидорович, пустуй ан ихĕрĕр-ха, — сассине улăштарчĕ Волков. — Специализаци ыйтăвне йăнăш ăнланнипе сăвакан ĕнесен шутне чакарса лартрăр, сурăх фермисене пĕтерсе шар кăтартрăр. Юрать сирĕн хыççăн каймарăмăр эпир, Крутовпа выговор хыççăн выговор иле-илех сурăхсене те, ĕнесене те кирлĕ чухлĕ сыхласа хăвартăмăр. Пире эсир ун чухне «Парти линине хирĕçле пыракансем» теме хăтлантăр. Халĕ те суккăрла пăхатăр иккен пурнăç аталанăвĕ çине. Ĕçлеместпĕр, тăрăшмастпăр çынсем пек. Хăнăхнă та пĕр юхăмра чӳхенме. Айта, юхтарса каять пурнăç киммии, çынсем авăсчĕр кĕсменне, хушăра мĕнле те пулин ларса пырăпăр, тетпĕр. Çапла шухăшланипе ĕнтĕ

эсир аш-какай планне тултарасшăн мар. Тултарасах тесен — тултарма пулать ăна.

— Кĕскенрех-ха эс, Волков, — чарса лартрĕ ăна пĕрремĕш секретарь. — Пулать, пулать, тет. Мĕнпе? Ăçта выльăхху? Ăçта выльăхна усрамалли витӳ?

— Ман пулĕ-ха. Сирĕн, вăт, ăçта? — тарăхсах кайрĕ Тельман Федотович. — Эсир хăвăрах тăсса пыратăр стройкăсене! Ĕне выльăх самăртмалли виçĕ комплекса пĕлтĕр е кăçал хута янă пулсан-и? Пилĕк çуллăх пирки калаçу та çукчĕ. Комплекссем çине шанса миçе çĕрте фермăсене юхăнтарса ячĕç, ĕнесемпе сыснасен йышне чакарчĕç? Кам айăплă çакăншăн? Паллах, эсир — çакăнта ларакансем!

— Кивĕ витесемпе кивелсе лармастпăр, — йĕпленчĕ Мургаев. — Пирĕн хăватлă комплекссем пулаççĕ. Ун чухне...

— Кивелсе ларасран хăратăр апла. Парти пире комплекссем тунă вăхăтра кивĕ фермăсене пĕтерме хушать-и? Комплекссем ĕçе кайиччен вĕсене çĕнетсе, вĕсенчен пысăк тупăш илмелле, тет. Кунта, юлташсем, пуçпа ĕçлемелле. Сăмахран, механизациленĕ усă лаптăксем тумалла.

— Мĕнле çĕнĕлĕх уçать-ха ку Тельман Федотович, тетĕп, — каллех лăх-лăх кулчĕ Мургаев.

— Вăрттăнлăх тин уçăлать-ха, — хуравларĕ Волков. — Ылтăн арчан хуппи хулăн, йывăр — час уçăлмасть. Киров облаçĕнчи колхозсем вăрманпа усă кураççĕ.

— Вăрманĕ пирĕн те нумай та, сакăр вунă пин гектар таранах, анчах стройка валли кам кастарать-ха ăна?

Волков çакна çеç кĕтнĕ пулас, вăрт çаврăнчĕ те:

— Кам кастарать-и? Эсир кастаратăр, Яков Сидорович, эсир, — терĕ. Тупăр пĕр чĕлхе вăрманпромхоз хуçисемпе. Халĕ ман киле каймалла. Расчечĕсене парса хăваратăп, мейĕр, вĕренĕр, кирлех пулсан — чĕнĕр. Ун пек витесем кăçалах темиçе тума пулать.

Пĕрремĕш секретарь алă çеç сулчĕ:

— Ытла эс пĕр кашăкпах темиçе мăн салма ăсса хыпасшăн. Пĕри те кĕмест, ак. Комплексĕсене тумал-

ла, Максим Максимович культура керменӗсемпе ҫӗтет, больница, ялти ытти строительство, поселокри... Кам туса ҫитерет? Волкова мӗн ӑна? Пире сӗнӳпе пӑтратса хӑварать те, аякран пӑхса ларать эпир ҫӗмӗрӗлсе ыйту татса парасса. Кӗтмеллех пулать комплекссем хута кайиччен. Укҫа-тенке те, ӗҫ вӑйне те вакласа ярар мар. Вӑрманпромхоз ҫине шансан? Ку таранччен мунча лартса паман вӑл пире. Пустуй япала. Ку пилӗк ҫуллӑх та ҫаплипех иртсе кайӗ-ха... Патшалӑх планне тултарманшӑн ку таранччен пире хупман, ҫаплах ирттерсе янӑ.

Мургаев лӑпкӑн калаҫрӗ те, анчах Волков ҫӗнӗлӗхпе усӑ курасшӑн ҫунчӗ. Майне тупса вӑхӑтлӑха та пулин усӑ курса юлмаллах. Мӗншӗн пӗлӗтрен ӳкессе, такам ҫӑвартан аш хыптарасса кӗтсе лармалла?

Мургаев пӳлӗмӗнчи хӗрӳ калаҫӑва райканаш пуҫлӑхӗ хутшӑннӑ пулсанах ҫил кӑнтӑр енне куҫатчӗ-ха та, анчах Большаков Вьюновпа Шупашкарти канашлуран час таврӑнайман. Унта та комплекс, аш, план тусанӗпе ҫавӑрттарнӑ ҫил-тӑвӑл. Пурнӑҫлаймаҫҫӗ вӑрманкассем патшалӑх умӗнчи тивӗҫе. Тем тӗрлӗ те шутласа, ҫавӑрттарса пӑхать Альберт Григорьевич, пурпӗрех ҫитмест. Ял ҫыннисен выльӑх-чӗрлӗхне пуҫтарсан та. Ыйткалакан нихҫан та хисепре пулман, кутран та, пуҫран та лекет ӑна. Шӑхрансем пасарти ӗне-сыснана сутӑн илсе патшалӑх планне хӑпартаҫҫӗ. Милов Мургаева сӗнӳ парса хавхалантарнӑ. Потребсоюз ҫул-йӗрӗпе вӑл района мала кӑларать. Ӑҫтан тупать ашне, вӑл унӑн вӑрттӑнлӑхӗ. Пурте ултав. Пӗри те патшалӑх лавккине аш-какайпа тултараймасть, халӑха пуйтараймасть. Ҫӗрле Волков шӑнкӑравласан, вӑл уҫӑлсах кайрӗ. Тельман Федотович сӗнӗвне ырантанах чӗртсе ямалла!

Калаҫма ҫӑмӑл та... чӑрмавӗ кашни утӑмрах сиксе тухать. Чи малтан вӑрманпромхоз хуҫи ҫӗнӗ ҫула картларӗ. Юрий Петрович ку ӗҫе хӑй тӗллӗн тӑваймасть. Ахаль те лакса ларнӑскерсем вӗсем хӑйсем те ҫӳлтен пулӑшу кӗтеҫҫӗ.

— Йăлтах хирĕçлеместĕп, пулăшма пултаратăп, май килнĕ таран, ытлашшине, пĕлетĕр, параймастăп, вăрман аслă та, тăрри те тан та унăн, хуçи те пысăк çав, аслă — çĕршыв, халăх, — терĕ лăпкăн.

Çак тулăхах мар калаçу хыççăн Большаков пуçĕнче шухăш тата çĕнелчĕ — ăслăланчĕ. Киров енчи вăрман-промхозсемпе Липовăнне ăçтан танлаштарăн? Вĕсенчен пĕри пирĕн Чăваш вăрман хуçалăхĕ чухлĕ ĕç тăвать. Апла тăк Вăрманкасра та вăрман калăпăшне ўстермелле — министерствăна кўлмелле. Çапла ĕмĕтленсе Альберт Григорьевич Тарăнвараваскарĕ.

Колхоз хуçине вăл рацине механизациленĕ йĕтем çинче шыраса тупрĕ. Тельман Федотовичăн кăмăлĕ пит хуçăкчĕ. Тырă суйласа сăвăрмалли машина пайĕсем пурте килмен, çавăнпа хăшне-пĕрне хăйсен туса хатĕрлеме тивнĕ, механикĕсем вĕсене вырнаçтараççĕ.

— Ялан пирĕн хăрах урапасăр та поршень лартмасăр хăварнă тимĕр купи... Яла килекен пĕр япали те тўрех ĕçлеттерме хатĕр мар. Анархи пуçланчĕ. Çĕршывĕ те чăлах алă-уралла, чĕресĕр çын пек тайкаланать те. Тьфу, Мускавра хăсас килекен пулчĕ. Пуçлăхсен пурнăç — курнăçне пĕлсе. Нимле шанăç çук. Анаталла кусаççĕ. Хăйсемпе пĕрле патшалăхне аркатаççĕ. Пире мĕн? Пирĕн сасă çитмест унта. Пирĕн вĕсен кут шăлмалли хутне вуласа вĕренсе, çĕнĕ пурнăç тумалла. Мĕн пур планне ирттерсе тултармалла. Анчах.. мĕнпе?

Ĕçлекен çынсене чăрмантарас мар тесе вĕсем калаçса аяккарах пăрăнчĕç.

— Эсир мана мĕнле ыйтупа килнине тўрех ăнлантăр. Пĕлетĕр-и кунта мĕн тумалла пулать пирĕн?

— Çуллахи витесем пиркиех пуль?

— Эпĕ те эсир çынна витĕр курнине, ун шухăшне кĕнеке вуланă пек вуланине тўрех ăнланнăччĕ, — Волков хул пуççийĕсем çине аллисене хучĕ Альберт Григорьевич. — Министерствăна каймалла пулать, обкома çитмелле.

— Вăрманçăсем патне-и?

— Çавăнта, мĕншĕн тесен Липов вăй çитерейместь. Ыранах, тен, паянах тухса каятăр Шупашкара? Виçмине ман хамăн та обкомра пулмалла. Эпĕ те çине тăрсах хускататăп ку ыйтăва. Çийĕнчех тытăнсан, эсир шутланă пекех, кĕр уявне кĕрлесе кĕме кирлĕ. Килĕшсе таталтăмăр-и? Аслă пуçлăхсен пуçĕсене кăштах пăтратар-ха.

Волков ирпе тĕп хуçасемпе калаçма тĕп хулана вĕçтерет.

Пуçлăхсемпе калаçасси çăкăрпа пыл пуçса çиесси мар. Аслă Канаш депутачĕ пулсан та сана пурте шлепке хывса кĕтсе илмеççĕ. Мургаев çуккă-им сирĕн, секретарь мĕншĕн нимĕн те шарламасть текенсем те, пустуй шăв-шав çĕклетĕр тесе алă сулакансем те пулчĕç. Тельман Федотович каялла чакмарĕ, лăпкăн та, хĕрсе кайса та пурне те тăнлантарчĕ, ĕнентерчĕ. Большаков пырса кайни те пулăшрĕ.

Çакăн хыççăн вăрманкассен нумаях кĕтмелле пулмарĕ. Республикăри вăрман хуçалăх министерстви «Шурăмпуç çăлтăрĕ» колхозра сакăр çĕр ĕне выльăх усрамалли лагерь тума хатĕрри çинчен пĕлтерчĕ. Парти обкомĕпе Министрсен Канашĕ йышăнăва ырларĕç.

Çĕлен улăхĕ вăрманалла пĕкĕ пек авăнса кĕнĕ çĕре утă уйăхĕн пĕр ирхине мотор кĕрлевĕ хупларĕ. Машинăран аннă Липов сехечĕ çине пăхса илет те, çул еннелле тинкерет. Юрий Петрович хăйсем маларах çитнĕшĕн савăннă. Çĕмĕрлери вăрман комбиначĕн пуçлăхĕ ăна ĕнерех ăмăртăва чĕннĕччĕ, улăха чечек татма санран иртерех ĕлкĕрĕп, тенĕччĕ. Тĕп шефсем, вăрманкассем, çывăрса юлни, паллах, намăса кăтартатчĕ. Çавăнпа Липов хăйĕн инженерĕсемпе техникĕсенчен пухнă ушкăнне каçалапах çирĕп хушса хунăччĕ: çывăрса юлмалла мар! Акă халĕ вĕсем, типĕ çырма çумĕнче, кухня валли вырăн хатĕрлеççĕ, палаткăсем караççĕ. Механизаторсем вакункkисене вырнаçтараççĕ.

Кӳршисем те нумай кĕттермерĕç, вăрманкассем çумне вырăн йышăнчĕç. Район хăй те аякра юлмасть. Пантин мехотрячĕпе çитрĕ, Карачăм мучи каллех пăшалпа тăмасть-ши тесе-ши, торф кăларнă лаптăкалла йăлт пăхса илчĕ. Торфне халĕ ĕнтĕ урăх çĕрте, шупашкарсем ирĕк панă хыççăн, вăрман хуçалăхĕн улăхĕнче кăлармалла пулать. Вăрман хĕрринчи çур ункăллă уçланкă шăв-шавпа тулчĕ, вăрманпа улăх шăршине çунăк шăршă килĕнчен хăваларĕ.

Тымарсен бригадирĕ Людмила Белова трактористсене тӳрех алла илчĕ, пĕр çĕре пухнă та вĕсене, чикĕпе паллаштарать.

— Ак çак юпаран иртсен сире, улăхра ытлашши йĕр тусан улăпсемпе, мĕн курассине хăвăрах ăнланăр. Эп шӳтлеместĕп! — ян та ян каять хĕрарăмăн уçă сасси.

— Мĕн чикки вăл? Хĕр чикки-и е инке чикки. Ман каçса йĕр хăварасах килет те улахра, чĕре сикме пуçларĕ сире курсан, — ахăрчĕ тăсланкă каччă.

Людмила Павловна та парăнмарĕ:

— Курăр-ха ăна, чăтлăхра çутăсăр ӳснĕ черчен хунава! Улăх тăрăх кашлаттарса çил вĕрсен, çурмаран хуçăлать. Хĕр-хĕрарăм чикки урлă каçас мехелпе сулланса тăрать тата... Кайăр, кайăр ĕçлеме! Сирнешкел шăршлă донжуансем пирĕн кунта хамăрăн та пур.

Трактористсем ахăлтата-ахăлтата, каялла çаврăнса пăха-пăха ушкăна таврăнчĕç. Белова вĕсене пĕчĕк чышкипе юнарĕ:

— Каçтарăп сире çак чикĕ урлă! Акă, хăлха чикки!

Çăмăл машинăна курса бригадир унталла утрĕ. Крутовпа Волков çитрĕç. Ĕç пирки калаçу пуçланчĕ.

— Халлĕхе колхозран пулăшу кирлĕ мар-и? — ыйтрĕ вăрманпромхоз директорĕнчен партком секретарĕ.

— Ан кулăр-ха пиртен, Максим Максимович, — кăмăлсăрланчĕ Липов, — хамăр пулăшма килнĕскерсем, пулăшу ыйтса лармăпăр-ха.

Кӳршӗри вӑрман комбиначӗн директорӗ ӑна ҫанӑран туртса чарчӗ, хӑлхинчен тем пӑшӑлтатрӗ, вара Юрий Петрович хӑйсен шухӑшне пӗлтерчӗ:

— Пурте ҫитмелле пек: техники те, инструменчӗ те, тимӗр-йывӑҫ материалӗ те, рабочийӗ те, специалисчӗ те... тӑрӑ витмелли ҫеҫ ҫук.

— Шутласа хунӑ ун пирки те, тахҫанах палӑртнӑ, Мускаврах, — шантарчӗ вӗсене Тельман Федотович. — Кӗҫех темиҫе вакун шифер килмелле.

Директорсем хӑйсем бригадирсем. Икӗ бригади те пӗр-пӗринпе ӑмӑртать. Ахаль тӑракан, алла кӗсьене чиксе ҫӳрекен ҫук. Ҫӑмӑл машинӑпа килнисем те пӗр кана ӗҫлес терӗҫ, юман юпасем пушатса ҫан-ҫурӑма кӑштах «ҫӑмӑллатрӗҫ». Пантелеймон Михайлович ыран хӑй патӗнчен ҫӗклесе пушатмалли машина илсе килме шантарчӗ, вара ӗҫ тата хӑвӑртланать, ҫӑмӑлланать те. Кутӗрленни харама каймарӗ.

Волковсем пуҫарнӑ пысӑк ӗҫ питӗ ӑнӑҫлӑ пуҫланчӗ. Ҫурчӗ-йӗрӗ самаях пысӑк пулмалла: тӑршшӗ ҫӗр чалӑшран та иртет, сарлакӑшӗ ҫирӗме яхӑн. Хӳмине, урайне, вӑлашкисене чусран тумалла, варринчи лаптӑкне асфальт сармалла. Тавралла карта тытса ҫаврӑнчӗҫ. Картишӗнче те вӑлашкасем кирлӗ пулаҫҫӗ. Ыр ҫанталӑкра выльӑх уҫӑ сывлӑшра ҫӳрӗ, ҫумӑрта е сивӗре витене кӗрӗ. Ансат та ҫӑмӑл, йӳнӗ лагерь пулать.

Мургаев та Ҫӗлен улӑхне хушӑран килкелесе кайрӗ. Малтан хӑй хирӗҫленӗ ҫӗнӗлӗх пурнӑҫланса пыни вӗчӗрхентерчӗ те, хӗпӗртеттерчӗ те. Ватлӑхра никамӑн та хӑнӑхнӑ йӗртен, хӑйӗн шухӑшӗнчен пӑрӑнас килмест пуль ҫав. Хытнӑ ӑс-тӑн, йывӑрланнӑ кӗлетке пурнӑҫ сиккипе чупасшӑнах мар, канлӗх, лӑпкӑлӑх шырать иккен.

Лагерь ӗҫӗпе Шупашкар хытӑ кӑсӑкланать. Акӑ, пӗрремӗш секретарь патне Тымартан шӑнкӑравларӗҫ. Вӑрман хуҫалӑх министрӗн заместителӗ тӳрех унта

кӗнӗ иккен. Мургаев ытти ӗҫе пӑрахсах «Шурӑмпуҫ ҫӑлтӑрне» тухса кайрӗ.

Акӑ, ял пуҫӗнчен пӑрӑнсанах куҫ умне ҫӗнӗ строй-ка тухса тӑчӗ. Хӳме тытӑнтарма лартнӑ юман юпасем тӑррисене татса кайнӑ йывӑҫ вуллисем пек курӑнаҫҫӗ. Хушшисене чус ҫапма пуҫланӑ та ӗнтӗ. Шофер ма-шинӑна арҫын ушкӑнӗ патнелле тытрӗ. Крутов юпи-не майласа тӑрать, Волков шӑтӑка тӑприне ярать, министр заместителӗ чыхать.

— Ҫак яла килсен ҫан-ҫурӑма самай ҫемҫетсе каятӑп вара, — пуҫне ҫӗклемесӗрех калаҫать Волков. — Ӗҫлени усӑллах та пирӗншӗн.

— Этеме ӗҫ тунӑ тет те, этемӗ те ӗҫе тытса тунӑ, тет. Ӗҫ ҫынна илемлетет, шур питсене те хӗретет тет, — кулать Крутов.

Волков пуҫне ҫӗклерӗ те кӗреҫине юлташне тыттарчӗ.

— Эс кунта, — терӗ вӑл, лекци вуласа юпана ча-лӑштарса ятӑн. Чӗлхе якатнипех пулмасть. Тӑхтӑр-ха чыхма? Айтӑр, тӗкер, танлаштарар ыттисемпе. Килӗр, пулӑшӑр, Яков Сидорович? Япӑх паллӑ илсен пире яшка та ҫитермӗҫ. А ну, давай! Р-раз!!!

Юпана тӳрлетсе лартнӑ хыҫҫӑн Яков Сидорович кулкаласа илчӗ:

— Унпа ман Оманов пӗрмай нӑйкӑшать, сирӗн пата килесшӗн мар, ӗҫлеттерсе тӑнран кӑларатӑр-иҫ эсир хӑнасене...

— Ҫапла эпир, хамӑр пата килнӗ пуҫлӑхсене алла кӗреҫе тытма пӗлнипе-пултарни тӑрӑх хаклатпӑр, — терӗ лӑпкӑн Волков.

— Вьюновпа Милова ҫеҫ алла илеймерӗмӗр-ха, — кулса ячӗ каллех Максим Максимович. — Вӗсем ма-шина алӑкӗнчен пуҫ кӑларса: «Пулать-и унта сирӗн, начальствӑна тулушить тумалӑх ӗҫ турӑр-и?» — тесе кулкалаҫҫӗ те, хупах майрисемпе Явкаланчӑк улӑхнелле мӑкӑрлантараҫҫӗ. Юрать-ха Тит Нилычӗ буфетне та-лӑкӗпе ӗҫлеттерет. Хурӑн шывӗ юхсах тӑрать...

Мургаев ăна пӳрнипе юнарĕ:

— Йывăр ĕçре хурăн шывĕ те кирлĕ, авă, кăшт ĕçлесех çан-çурăм сурать.

Çĕмĕрлесен директор-бригадирĕ те Яков Сидоровича хута кĕчĕ:

— Эпир, вăрман çыннисем, хурăн шывĕ ĕçмесĕр ĕçлеме хăнăхман та, сирĕн Милова тав тăватпăр. Эсир ăна ятласан, пирĕн хамăрăн ОРС хупахĕ пур. Чĕнетпĕр те — хамăр хуçа. Ун пирки пĕрне-пĕри тĕртсе ан тăрăр. Нимле вăрттăнлăх та çук кулленхи пурнăçра. Пурте кирлĕ.

Тата икĕ машина çитсе чарăнчĕ. Большаковпа Пантин иккен.

— Вăт çак упасене юпа йăттармаллаччĕ, кунта ват çынна кутĕрлентереççĕ, — шӳтлеререх пачĕ Мургаев ĕçсем йĕркеллĕ пынăшăн кăмăлне уçнăскер.

Министр заместителĕ те строительство ĕçĕпе кăмăллă юлчĕ. Вăл, килнĕ пек чухне, вăрман хуçалăхне пăхма шутларĕ. Мургаев вĕсене çурранах çӳреме сĕнчĕ. Паянхи пысăк сăлтавпа усă курса, директорсем те кĕске «отпуск» илчĕç. Çав вăхăтра вĕсем патне ял хуçи Белова çитрĕ. Велосипед çинчен аннă Людмила Павловна васкаса пурне те алă тытса тухрĕ.

— Йĕркене пăсатăр, юлташсем, — терĕ вăл çивĕч куçĕпе йăлтăртаттарса. — Кил хуçисĕрех тĕпелелле иртесшĕн. Халĕ юрать ĕнтĕ, тархасшăн, хуçалăха кăтартса çӳреме хатĕр. Ăçта илсе каяс: уя-и, йĕтем çине-и?

— Людмила Павловна, йĕтем çине кĕрер мар-ха. Ĕçлекен çынсене ку эртелпе хăратса пăрахăпăр. Эпир вăрмана çитсе килесшĕн, — ăнлантарчĕ ăна Мургаев.

Çула май бригадир уйсем кăтартса хакласа пырать:

— Астăватăр-и, Яков Сидорович? — райком секретарĕ çумнерех куçрĕ Людмила Павловна. — Çак икĕ çырма хушшинче эпир нихçан та чĕркуççи таран тырă ӳстерсе курманччĕ. Халĕ пăхăр-ха? Çурхи тулă мĕнле? Ыраш пек çӳллĕ, — усăнма пуçланă пучахсене çĕклет те вăл хăйĕн тăпăлкка çӳçĕ тĕлнех çитерет.— Акă епле

пулăшрĕç пире хурăнварсем. Роман Фомич бригадăна шефа илсен, ăслă çĕр хуçи аллине лекрĕ çак çут. Çĕр те ачашланине, лăпканине, тутлă тăрантарнине юрататъ.

— Пулăшни çеç мар-ха, эс ху та маттур, — мухтарĕ бригадира Мургаев. — Вĕренни — вĕренниех. Диплом илсен, акă, Волков тата çӳлĕрех те ӳстерĕ.

Калаçăва илтнĕ председатель хушса хучĕ:

— Ма пулмасть, пулать ӳстерме, анчах пирĕн бригада пусĕнче те аслă пĕлӳллĕ пултаруллă çын кирлĕ-çке. Людмила Павловна шăпах çак вырăнта тивĕçлĕ. Унран ыррине нумай кĕтетпĕр.

— Эпир те мĕнле юратмăпăр ĕнтĕ? — хĕрарăма куçран пăхрĕ кӳршĕ районти вăрман комбиначĕн директорĕ. — Тархасшăн, тутанса çийĕр.

— Çухалса каймасть вара çак хусах, — айккинчен кăт тĕкрĕ юлташне Липов. — «Ылтăн пучах» конфет та пур ун кĕсйинче.

— Вăрманта ку таранччен çухалса кайманнине Тымар хĕр упраçĕпе юнашар ылтăн тулă пуссинче пĕтмĕпĕр-ха, — мăн кăмăллăн пăхса илчĕ директор.

Тырă пуссинчен уçă çĕре тухрĕç. Вăрмана каякан çул анкартисем хыçĕпе, хăмла пахчи çумĕпе сысна ферми патнех пырса тăрăнать. Ферма халĕ Максим Максимович кунта малтанхи хут килнĕ чухнехи мар. Тавралла карта тытса çавăрнă. Тислĕк çăрăлса выртмасть. Вăрман çумĕнчи витене юсанă, унпа юнашар кирпĕчрен тата иккĕ лартнă. Апат пĕçермелли çĕнĕ. Шыв башнинчен инçех мар тата тем тăваççĕ.

Икĕ хутлă пӳрт картлашки çинче Карачăм мучи сухалне касăртса тăрать. Вăл аллисене хыçалалла тытнă, чечеклĕ кĕпине салтак пиçиххипе туртса çыхнă, хура тĕслĕ шалпар шăлаварпа, уринче фетрăран çĕленĕ çемçе пушмак, яланхи пекех пусĕнче карттус. Хăйне алă парса тухнă çынсене тепĕр хут пăхса тĕплĕн тĕрĕслерĕ те вăл салтакла йăнк тӳрленчĕ, сылтăм аллине хăлхи çумне ялт! çĕклерĕ:

— Хурăнвар салтакĕ Воропьев рятовой сывлăх сунать сире, енерал юлташсем!

Ватă çын умĕнче пурте кĕлеткисене тӳрлетрĕç, пĕрпĕрин çине пăхса йăлл кулчĕç. Кĕрӳшĕ Волков ыталанипе мучин куççулĕ сухал ăшне юхса анчĕ.

— Аякранах курап-ха та сире. Пит хуллен килетĕр те. Калаçмалли пĕтмест пуль çав ĕçлĕ çынсен, патшалăх çыннисен, тетĕп. Хирĕç пуш алăпах тухнăшăн каçарăр, — терĕ мучи.

Пурте общежитине кĕчĕç. Шалта радио кĕрлет. Транзистор умне мучин мăнукĕ ларнă та хăлхана çурас пек янăракан таçти темле музыкăна итлет.

— Чар-ха, тархасшăн, ар çурисене? Мусăк-и вăл? Выç сысна кĕтĕвĕ çухăрнă пек çухăраççĕ, кашкăр пек улаççĕ. Тем чул калап та çав, ăнлансах çитмест, сăмса шывĕ.

Транзисторне йăтнă ача алăк хыçĕнче курăнми пулчĕ.

— Пурнатпăр çапла, — урайĕнчи улăм çӳппине хăвăрт пĕшкĕнсе илчĕ мучи, — культури-мĕнĕ, хамăр майлă. Унтан, тем аса илнĕн, кăмака çумĕнчи стенана çурăмĕпе хупларĕ те, унтан ниепле те тапранмарĕ. Карачăм мучи мĕншĕн унта пырса тăнине, Джорджоне картинине «енералсене» кăтартасшăн пулманнине туйрĕ те, аяккалла пăхса кулчĕ. Юрать-ха Волков тулалла тухас терĕ. Карачăм мучи куçĕ Крутов куçне хирĕç мăч турĕ. Людмила Белова хуллен пĕлтерчĕ:

— Тарăнварта картинăсен галерейи уçăлчĕ-ха. Фермăра ĕçлекенсене эртелпе илсе кайса кăтартасчĕ. Карачăм мучине те хăвармастăп. Атту кăмака хыçĕнчи чĕрĕк картина çине пăхса ывăнчĕ пуль. Унта пысăкки, чăн-чăн çывракан Венерах пур.

— Çитес эрнере художниксем килеççĕ. Сирĕн колхоза. Герасим Филипповича та ӳкерттерĕр. Колхозăн картина галерейинче сухала шăлса лартăр. Юрать? — терĕ Большаков.

— Кăна уписательнă тăватпăр-ха, Альберт Григорьевич. Пирĕн хисеплĕ çынсем нумай.

Витене кӗрес темерӗҫ. Ахаль те ящур чирӗ пирки нумай калаҫаҫҫӗ те. Директорсем вӑрмана васкарӗҫ.

— Мучи, тен, сире ывӑнтарса та ҫӳрес мар, — хӗрхенӳллӗ пӑхрӗ хуралҫӑ ҫине кӳршӗ районти вӑрман комбиначӗн директорӗ.

— Ытлашши пулсан, пымӑп, — юнтарнӑ пек турӗ Карачӑм мучи. — Эп енерал мар.

Люда Белова вӗсем умне пырса тӑчӗ:

— Герасим Филипчӑн халь фермӑра нимех те тӑвас ҫук, мӑнукӗ те асӑрхакалӗ. Ай-яй, эсир те ҫав, ваттине пӑрса хӑварасшӑн. Ытлашши ҫын-и кунта вӑл? Арҫын купи ҫинче эп пӗччен хӗрарӑм. Халь ман мисси пӗтрӗ. Малалла делегаци, Герасим Филиппович, сирӗн алӑра. Таврӑннӑ чух йӗтем ҫине кӗме ан манӑр.

Директорсем бригадира каласа пӗтерме те памарӗҫ, хулран ярса илчӗҫ те, ихӗре-ихӗрех утрӗҫ. Карачӑм мучине Крутовпа Волков ыталарӗҫ. Пӗрремӗш секретарьпе райӗҫтӑвком председателӗ министр заместительне варрине хупнӑ та вӑрман юрри янӑ.

Заказникри вӑрман ытти вырӑнти пек мар таса. Выльӑх ҫӳретменнипе куракӗ те парка ӳсет. Ҫаран лаптӑкӗсенче ҫулнӑ утӑ типет. Шӑрӑхран сулхӑна пытаннӑ хыҫҫӑн йывӑҫ, утӑ шӑрши ҫан-ҫурӑма вӑй кӗртет, курӑнман сывлӑш шерпечӗ кӑкӑра уҫать. Ҫул айккипе ӳсекен вӗтлӗхре вӗлтрен кайӑксем, савӑнӑҫне ҫынсене парнелес тенӗ евӗр, ӑмӑртмалла чӑйӑлтатаҫҫӗ. Фермӑран ҫухрӑм ҫурӑсенче — лесник картунӗ. Унта ҫитсен ҫӑлран шыв ӗҫрӗҫ. Хуҫисем ҫук. Кил карти алӑкне шал енчен питӗрнӗ. Икӗ хаяр йытӑ туллашса вӗрет. Липов министр заместителӗ умӗнче хӗрелчӗ:

Сире асӑрхаттарма мансах кайнӑ, тӗп лесничи чӗннӗччӗ те вӗсене паян...

— Вӑрманӗ йӗркеллӗ ӳстӗр, канашлӑва та, пасара та чупасси пулӗ, заказнике лайӑх тытӑр, — терӗ министр заместителӗ.

Липов вĕсене прачак тăрăх Çĕлен улăхĕ еннелле илсе кайрĕ. Улăха аннă май прачакран пăрănса çул уçланка çитсе кĕчĕ.

— Привал!

Шăрăхра утнипе шăм-шак самаях йывăрланчĕ пулас, камантă панă-паман пурте çерем çине тăсăлса выртрĕç. Директорсем портфель уçрĕç, Людмила Беловăна кăчăк туртрĕç.

— Тин пĕлтĕм мана мĕншĕн яманнине, хуçайкă тăвасшăн. Ай-яй, чее, канфетпа улталасах сĕтĕрсе килчĕç. Юрать, юрать. Ыран сире вут çурма чĕнеп-ха. Атту старик ерçмест те ерçмест, — терĕ бригадир.

— Эпир хатĕрех, кансервă уçма пуçларĕ кӳршĕ районти директор, — икĕ бригадăпа пырсан, ĕçмелли-çимелли çитерейĕр-и, тулĕк.

— Аншарли юхтаракан-ха вăл, аптрамĕ, — лĕхлетрĕ вĕсене илтсе Мургаев.

Шӳт тепĕр майлă çитсе тивнипе хĕрелнĕ Люда ним калама аптрарĕ, çăкăр касма хатĕрленнĕскер, çĕççине хаçат çине пăрахрĕ, пуçне чикрĕ, çапах хурав пачĕ:

— Юхтаратăп, юхтаратăп, Яков Сидорович, халĕ те темиçе четвĕрт ларать, ун чухне юхтарнă куççуль...

— Ну-ну, Белова, тахçанхишĕн тутуна ан тăс. Эп шӳтлесе çеç.

«Пирĕн тем те пулĕ» текен директор портфельтен коньяк кĕленчисем туртса кăларсанах Большаковпа вăрман министрĕн заместителĕ ура çине тăчĕç. Унччен чĕнмесĕр чечекпе вылякан Карачăм мучи те вĕсем хыççăнах çĕкленчĕ, ассăн сывласа ума пырса тăчĕ, калаçма пуçларĕ:

— Итлесе выртрăм-выртрăм та сире, ыллăмсем, хам ухмах ăспа çапла ăнлантăм: чупас килет пулас сирĕн. Пĕрмай малти, кайри, ăмăрту, текелетĕр те. Ман та чупас килет сирĕнпе. Тавай тупăшар ура пур чух, сывă чух.

Большаков ун сĕнĕвĕпе ухутах пулчĕ, министр заместителĕ те хирĕçлемерĕ. Мургаев та тăчĕ. Крутовпа Вол-

ков, Пантин вăрмантан тухрĕç. Пурте пĕрле çапла килĕшрĕç: уçланкă тавра пиллĕк чупса çаврăнмалла. Людăна судья турĕç. Мала тухакана приз пама ăна шанчĕç.

— Эп чемпиона мĕн памаллине хам пĕлетĕп, — директорсем енне пăхса шăл йĕрчĕ судья. — Хатĕрленĕр!

Ăмăртакансем пурте пĕр йĕркене тăрса тухрĕç. Кĕписене хывнăскерсем, кулăшла курăнаççĕ. Карачăм мучи, авă, шăлавар пиçиххине хытăрах туртса çыхрĕ. Ун çумĕнчи Максим Максимович çирĕп кĕлеткипе вылять. Ял хуçалăх министрĕн заместителĕ минтер пек хырăмне шăла-шăла илет. Большаков вăрман хуçалăх министрĕн заместительне хăлхаран тем калать. Мургаев малалла тинкерсе пăхать. Хырăмсене аялалла усма пуçланă директорсем судья çинчен куç илме пĕлмеççĕ. Пантин урисене çемĕçтерсе кукалет.

— «Мĕн парассине хам пĕлеп», — терĕ-и, — чăхлатать Липов кӳрши. — Пурпĕр тухатăп мала. Тыттăр вара хăйĕн сăмахне. Эх!..

— Марш!!!

Людмила Белова камантă панипе вăрман янраса кайрĕ. «Арш! Арш!» каялла килсе çапăнчĕ уçă сасă. Пурте малалла тапса сикрĕç. Директорсем, пĕр-пĕринчен юласшăн мар, алла-аллăн тытăннă пек вирхĕнеççĕ. Пĕрремĕш çаврăмра никамах та юлса каймарĕ. Иккĕмĕшĕнче Мургаев йăшма пуçларĕ, Крутовпа юнашар чупакан Карачăм мучи çине тем чул ăмсанса пăха-пăха илет вăл, пурпĕрех сывлăшĕ пӳлĕнет. Виççĕмĕш çаврăм хыççăн вăрман хуçалăх министрĕн заместителĕ ушкăнран татăлчĕ. Ун хыççăн директорсемпе Пантин юлма пуçларĕç. Большаков, ăш-чик тулса çитнипе, сывлайми пулчĕ, Крутовпа Карачăм мучие irттерсе ячĕ. Юлашки çаврăм! Малта иккĕн çеç. Карачăм мучи аллисемпе хăлаçланса, урисене яртлаттарса хаш та хаш туса пырать. Крутов унпа юнашар хăйне лăпкă тытать. Акă, нумаях та юлмарĕ, юриех такăнчĕ те вăл чикеленсе çаврăнса тăчĕ. Çав самантра Карачăм мучи финишра

кăшкăрса сиккелесе тăракан судья аллинчи тутăра ярса илчĕ. Ăна алă çине çĕклесе çӳлелле печĕç.

— Хастарлăх, хăюлăх призне чемпиона Герасим Филиппович Воробьев пенсионера паратăп, — терĕ те Люда, шупка-кĕрен тутăра мучи мăйĕнчен çыхса ячĕ. — Ан кулăр, директор юлташсем, мала тухнă пулсан та эп сире юман çулçи çеç параттăмччĕ. Карачăм мучи пирĕн ку тутăра чăннипех тивĕç. Вăл тутăра мана чи хастар, хăюллă, вăйлă каччă, пулас упăшка, хам хĕр чухнех парнеленĕччĕ. Маттур çыншăн парне те шалккă мар. Эх, эсир те çав, сакăр вунналла хăвалакан старикрен юлансккерсем, уçăр луччĕ коньяк, чемпионшăн ĕçер.

Бригадир сăмахĕпе хĕпĕртенĕ тата хăй чупса пурне те çĕнтернипе халтăрланнă мучин чĕлхи çур стакан коньяк хыççăн пит уçăлса кайрĕ.

— Паçăрах шутлап-ха сирĕн çинчен, — йĕплесе ларчĕ вăл. — Мĕнле шӳтермелле-ши кăсен хырăмĕсене, тетĕп. Ăмăрту ячĕпе сăлтав тупăнчĕ. Пета вăл хырăм. Эп хамăн карчăкранах илеп. Малтан çак Лютка пекех çинçешкеччĕ. Кайран тем пулчĕ. Шĕвет те шĕвет карчăк хырăмĕ. Ни йăрт-ярт утайми, ни чупайми пулса çитрĕ. Уншăн ĕçлесех тăнран тухаттăмччĕ. Юрать-ха ман карчăк хырăм пĕчĕклетмелли меслетне пĕлетчĕ те... Эп вăрмантан çапă турттарса таврăннă çĕре Лютка пекех çинçелсе юлатчĕ. Сирĕн вара.. Эх, ыллăмсем-енералсем, каплах ӳссе пырсан ку хырăмсемпе мĕн курса ларăр, арăмусем пек таçта кайса килсен те çинçелеймĕр. Мăн хырăм тени, ман шутпа, чупма мар, шухăшлама та кансĕрлет. Лютка куçĕ умĕнче калама та вăтанмалла та ку сăмаха... Кăрсавицăсем çинчен шухăшлас пирки эп. Тӳрĕ тăнă чух шăллăма курайми пулсан унта, хырăм урлă...

— Начар ĕçлетпĕр, - хĕрелнĕ питне ал тутрипе шăлса илчĕ Большаков. — Шăм-шака çемĕçтермелли, сывлăха çирĕплетмелли çинчен мĕн чухлĕ, хăçантанпа çĕмĕрлетпĕр. Хамăр тĕслĕх кăтартмасан... Район пуçлăхĕсене, хуравлă çынсене çулла чуптармалла-сиктер-

мелле, хӗлле йӗлтӗр ҫине тӑратмалла. Массӑллӑ физкультурӑна хамӑрӑн кӑтартса ертсе пырсан ҫеҫ эпир мӑн хырӑмсене шӳтерӗпӗр.

— Пуҫлӑх темме канӑҫа куҫать-ҫке вӑл, - терӗ мучи. — Акӑ, тахҫанхи вӑрҫах асра. Колчакӑвӗцсем пирӗн ҫине саранча пек капланса килеҫҫӗ. Камантир, патша ҫарӗн ухвицерӗ пулнӑ вуенспец, выртнӑ та месерле, турра кӗл тӑвать, такана тӗпӗ пек хырӑмне, пулькkӑ шӑйӑрса пӑсасран сехӗрленсе, карттусӗпе хуплані. Хырӑма сыхласа хӑварасшӑн, турран килесшӗ, тетпӗр. Хамӑрӑннисенченех такӑшӗ шаплаттарчӗ ӑна. Хӑйсен хырӑмӗсемшӗн кӑна ҫунакансемшӗн пайтах терт курнӑ пуль. Вӑт, ыллӑмсем, енералсем, хӑть эсир мӗнистӑр, хӑть тиректӑр, хӑть кӑмиссар пулӑр, анчах мана, ват ҫынна, куҫран каланӑшӑн, каҫарӑр. Тем тесен те хырӑм янас пурнӑҫра ӳсет. Кӑвакал та, лайӑх тӑрантарсан, епле самӑрлать? Аранаран пӑркаланса утакан пулать вӗт, кахаллансах ҫитет, пӗвери йыт пуллине те тытма пӑрахать. Ҫын та ҫавах, лӑпкӑ пурнӑҫа хӑнӑхсан, хырӑмӗ тӑрӑх ытларах пӑхма, хырӑмне пӗрмай шӑлма, хырӑмӗ ҫинчен кӑна шухӑшлама тытӑнать. Хырӑм чирӗ, ачамсем, енералсем, этеме пӗтерекен хӑрушӑ чир. Ман шутпа, пуҫлӑхра та хырӑм ӳснине кура тытмалла. Вӑхӑтра сиплесен те юрать. Халь те, вӑн, хамӑр хырӑмшӑн ӗҫ пӑрахсах уҫланка, сулхӑна килсе выртрӑмӑр. Сначӑт, пирӗн тем тума та вӑхӑт пур. Сначӑт, кӗрӳ, хырӑм сирӗн ахальтен мар ҫамрӑклах така хуранӗ пек ҫап-ҫаврака. Эпӗ, мӗн, ҫакна ҫеҫ каласшӑн: халӑхӑн та хырӑмӗ тутӑ пултӑрччӗ, паянхи пекех — манни пекех. Ҫавӑншӑн тӑрӑшар-и?

Людмила Павловна Карачӑм мучие термосран чей ярса пачӗ, хура вӑлча сӗрнӗ ҫӑкӑр татӑкӗ тыттарчӗ. Ун енне вӑл тиркевлӗн пӑхрӗ, пуҫне силлерӗ, сухала лекнӗ тумламсене шӑлчӗ, сӑх сӑхрӗ те ҫӑкӑра чӑтлӑхри шӑллӑ ҫӑвара персе чикрӗ.

— Тутлӑ иккен хура кантӑр вӑррийӗ, — тав турӗ вӑл. — Кӑна эп леш тӗнчере те ҫисе кураяс ҫукчӗ-ха.

Тем пулнăн пурте шухăша путрĕç. Шăплăха Мургаев хускатрĕ:

— Тăна кĕртрĕ те кĕртрĕ пире Герасим Филиппович, хăть çакăнтах çĕр тĕпне анса кай.

— Тĕрĕсех калать пире мучи, тĕрĕсех, — апат чăмлачăмла килĕшрĕ министр çумми.

Карачăм мучи вĕсем çине пăхса илчĕ те, каларĕ:

— Эх, ыллăмсем, енералсем, таçта вĕçсен те çĕр тĕпне анса ан кайăрах. Çӳле вĕçекен мухтав курнă, çĕрелле пăхакан çĕрнĕ, тет.

Эртелпе «сĕтеле» пуçтарчĕç те кукăр-макăр çулпа Çĕлен улăхне анчĕç. Карачăм мучи кĕрӳшĕн хăлхинчен тем пăшăлтатрĕ те пурне те хăнана чĕнчĕ. Анчах пĕрин те вăхăт çук.

— Эх, эсир, вăхăтсăр çынсем — вăхăта пушăлла çунтаракансем, — кула-кулах ăсатрĕ хăнасене старик.

Вĕсенчен уйрăлнă хыççăн Карачăм мучие тунсăх пусрĕ. Çĕлен улăхĕнчи çул çине пăрăнса кĕрекен килпетлĕ арçынсен ушкăнне, вĕсем умĕнче çăмăллăн утакан бригадира, вăл курăнми пуличченех пăхса тăчĕ.

Вăрманти ирĕклĕ тĕл пулу хыççăн Шупашкара çăхав тавраш вĕçмерĕ. Шухăш-кăмăл пурин те пĕрешкел пулчĕ пулас. Кăштах канса илни те пăсмарĕ. Шухăшлава çăмăллатни ĕçре те пулăшать. Кун хыççăнах кашнин хăйĕн кăткăс ыйтăвĕ чĕрене хускатса чуна лăскама пуçларĕ. Мургаевпа Большаковăн уйрăмах нумай вĕсем. Хушусене пурне те вăхăтра, мĕн палăртнине тĕплĕн пурнăçлас пулсан, виçĕ ĕмĕр те çитес çук. Пĕрин çине тепри купаланса пыраççĕ кăтартусемпе йышăнусем. Мĕнле пурнăçланнине тĕрĕслесе тăни те çăлаймасть.

Аслăраххисем хăйсене яланах ăслăрах кăтартасшăн. Пуçра мар, пуканра, кут айĕнче пули вĕсен ăс-тăнĕ, мимийĕ? Шупашкара чĕнсе чиперех вĕрентеççĕ çуллахи лагерь тума. Виççĕ хурав тытрĕç Большаковпа Мургаев. Хăвăртлăх, хăвăртлăх, хăвăртлăх кирлĕ теççĕ.

Унтанпа вăхăт ытлашши нумаях иртмерĕ. Вăрман хуçалăх министерстви туса панă лагерьте «Шурăмпуç

çăлтăрĕ» колхоз ĕне выльăх самăртать ĕнтĕ. Районта унашкал лагерь тата иккĕ тума тытăннă. Аш-какай сутассипе вăрманкассем пилĕк çуллăха тултарма кирлĕ. Уншăн халĕ никам та иккĕленӳллĕ шухăшламасть.

17

Районăн тĕп идеологĕ Посадкина Шупашкара «качча каяймарĕ». Пукане пек капăр тумланса кĕтсе илсен те «савниййĕ» ăна хул хушшине хупма васкамарĕ. Камăн çунса каяс килтĕр-ха çамрăк чухнехи вылянчăклăха чĕртсе? Ĕçне сӳрĕк тунăшăн Мургаев хăлтăкланать те, çапах Василиса Матвеевнапа çырлахать. «Маншăн пулсан хут купăс», — тет ăшĕнче. Çавăнпа ăнлантару, шухăшлав, ӳкĕтлев ĕçĕ хăй юххипе юхса ура айĕнче типет, тусан пулса çилпе вĕçет.

Мĕн тери кăткăс, ăнланса çитме май çук вăл этем тени: уçă кăмăллă е кутăн, ăслă е ухмах пуçлă, кашни — уйрăм, хăйне евĕр. Парти сăмахне ун патне çитерме, ун чĕрине варăнтарма пĕлнинчен идеологи ĕçĕн тухăçлăхĕ нумай килет. Шупашкара панă отчетсем тăрăх шута илес пулсан, райком та, «Пĕлӳ» обществин районти организацийĕ те питĕ лайăх ĕçлет, темелле. Политвĕренӳ çӳллĕ шайра, унта иртнĕ вĕренӳ çулĕнчинчен çавăн чухлĕ ытларах çын явăçтарнă. Халăх хушшинче çĕршер, пиншер лекци вуланă. Мĕн тĕрлĕ ыйту хускатман пуль? Шучĕ пур. Пахалăхĕ? Çак ыйту çинче чарăнса тăчĕç пĕр семинарта. Парти обкомĕ ку тăрăхри районсенчи парторгсене пухнăччĕ. Крутова ку ыйту канăç памастчĕ-ха, ун пирки вăл хăçантанпа тавлашать, райкомра ĕнентерме хăтланать, вĕçне-хĕрне пурпĕр тухаймасть. Çавăнпах пуль семинарта тухса калаçма шутларĕ. Сăмахне пачĕç ăна.

— Шучĕшĕн, ячĕшĕн пирĕн Вăрманкас районĕнче тем тума та хатĕр. Оманов юлташ ахаль калаçăва та лекци вырăнне шутлаттарать, Шупашкар лекторĕсене ырă тăвас тесе е çĕр грамла путевка çине алă пустарса ярта-

рать. Идеологи ĕçĕнчи хушса çырни вăл — воспитани тăшманĕ, — терĕ вăл. — Хуçалăх ĕçĕнчи хушушăн суд-па е ытти енĕпе айăплаççĕ, йăнăша тӳрлеттереççĕ. Пирĕн идеологсем вара хушушăн орден е мухтав ячĕ илсе лараççĕ. Шутласан, идеологи ĕçĕнче те суд, совеç сучĕ пулмалла. Çавă кашни ултавçа парти умĕнче тăрă шыв çине кăлартăр, çиелтен, ячĕшĕн ирттерекен ĕç шутне чакарма, хушса çырнине пĕтĕмпех пĕтерсе лартма пулăштăр. Вара çавăн чухне тин эпир халăха чăннипех усă кӳрĕпĕр. Ăслă та витĕмлĕ ăнлантару сăмахĕ çын ăшĕнче хăйĕн вырăнне туптăр, тарăн тымар ятăр. Колхозник те, рабочи те, кил хуçи хĕрарăмĕ те халĕ нумай пĕлет, нумай вĕренет, информаци купипех илет. Пуçа хывнă çав хыпар-пĕлтерӳпе, пĕлӳпе вăл тĕрĕс усă куртăр тесен пирĕн, идеологсен, сăмахпа калакан ăнлантару витĕмлĕхне ӳстермелле, ăна парти йĕрĕпе ямалла, совет çыннине тĕрĕс çулпа илсе пымалла. Çын пирĕн сăмаха кулса мар, хумханса, тарăннăн шухăшласа йышăнтăр. Çавăн чухне çеç эпир унăн ăс-тăнĕнчи иккĕленӳллĕхе пĕтерме, ăна ăнланса ĕçлеме, пурăнма, хăйне те парти агитаторĕ пулма вĕрентĕпĕр. Çак пулăшу — пирĕн ĕçре чи кирли, чи йывăрри. Ăна пирĕн пурнăçламаллах. Çавна тăвассишĕн эпир хамăр, ак çакăнта калана пекех тăрăшатпăр. Ĕненмесен, пырса курма пултаратăр. Районта çитсех каймасть-ха кунашкал ĕç. Пропагандăпа агитаци пайĕ питĕ лăпкă пурăнать.

— Пайĕ мар, пуçлăхĕ ыйхăра пуль, — тӳрлетсе каларĕ обкомран килнĕ Хиркин.

— Тĕрĕссипе каласан, Пантелеймон Христофорович вăл идеологи пайне ертсе пымалли çын та мар. Пиçмест унран, — вырăнтан хушса хучĕ Крутов. — Пĕлĕвĕ те çителĕксĕр.

Хĕрлĕ пустав витнĕ сĕтел хушшинче ларакан Оманов палан пек хĕрелнĕ питне хупласа пуçне чикрĕ.

Йывăрлăха тӳсме хăнăхнă Крутовшăн та çынсемпе ĕçлесси уйрăмах йывăр. Тĕн-тĕшмĕш йытăвĕсем пуш-

шех кăткăс. Пĕррехинче вăл, партпуху хыççăн, ун пирки коммунистсемпе чылайччен калаçса ларчĕ. Юлашкинчен Муллин ăна апата илсе кайрĕ. Çын кăмăлне ытараймарĕ секретарь.

Кил-çурчĕ Мулла Микушĕн пуян. Пӳрт ăш чикки ялти пек мар тап-таса, йăлтăртатса çеç тăрать. Крутов кăнтăр енчи кĕтесселле пăхнине сиснĕ кил хуçи айăпа кĕнĕ çын пек калаçса кайрĕ:

— Çĕн пӳрт туса кĕрсен пĕрре турăшсăр пурăнса пăхас шухăш та пырса кĕнĕччĕ çак çаврака кунтăка. Чылайччен кив пӳртрех усрарăм илемлĕ сăрăпа сăрланă картинккăна. Пӳрте сутас умĕн тем пулчĕ, арăма та парăнтăм пулас, Микулнă çитеспе йăтса кĕтĕм те, хамах çак пĕчĕк пӳлĕм кĕтессине хăпарса çакрăм. Шалти мăн пӳлĕме кĕртессе кĕртмерĕм, çапах, пӳртре вăл Христос. Катан пирпе картласа тăратаканччĕ, паян, сире кăтартас тесе кĕтнĕ пекех тата, аça çапман Укахвийĕ, уçă хăварнă. Каçарăр ĕнтĕ мана. Алă çĕкленмест илсе хума. Темле вăй тытса чарать. Аттепе анне çав турăша сăх сăхсах ĕмĕрне ирттерчĕç те, пытармастăп, ваттисене асăннă чух хам та тăратăп ун умне. Ăшран хĕртсе тухакан ăшă вăй ваттисен йăлине чĕртсе пырать-ши? Пăсма хал çитмест çав йăлана.

Максим Максимович кил хуçипе хирĕç ларчĕ, ăна тинкерсе сăнарĕ. Вăйлă сăн-питлĕ, çирĕп кĕлеткеллĕ, аллăсенчен иртнĕ арçын ăшĕнче иккĕленӳллĕ шухăш пурăннишĕн ăна кӳрентерес темерĕ, çапах та чĕлхе çине килнĕ сăмаха калаймасăр чăтаймарĕ:

— Сире эпĕ ăнланатăп, турăш тытнăшăн пĕртте айăпласшăн мар, анчах килĕшӳллех туйăнмасть пек, — терĕ.

Килĕшӳллĕ мар та... — çăра яшка тултарнă турилккене ун умне куçарса лартрĕ Муллин, — çапах... тытатпăр. Партбилет улăштарнă вăхăтра Василий Фомич уншăн хытах тапăннăччĕ, билет туртса илессипе те хăратса пĕтернĕччĕ. «Эсĕ, — тет мана, — кивĕ пурнăç юлашки, турăш чури». Эп те парăнмастăп çав, хирĕçех каларăм:

«Мана эс кив пурнăç юлашки, тетĕн-и? Эп çак алă-семпе çĕн пурнăç тăватăп. Социализм тума мана турăш кансĕрлемест. Парам сана «кив пурнăç юлашки». Эй, хирĕлетпĕр. Парторг та парăнмасть. «Эсĕ, — тет, — тава тивĕçлĕ колхозник, ялти ятлă çын. Сана çамрăксем ăмсанаççĕ пуль. Эс вĕсене турăш çине пăхтаратăн, усал тĕслĕх кăтартатăн, тĕн-тĕшмĕш юлашкине саратăн ял хушшине». Каларăм вара эп те: «Ман пӳртре Ленин сăнĕ те пур, политбюро членĕсен те, çав хушăрах-кĕтесри Христос та çывăх. Аслă коммунистсем маншăн — çĕнĕ пурнăç ертӳçисем, турăш — тĕнче асамлăхĕн сăнарĕ». Çакăн хыççăн хăпнăччĕ манран Воробьев. Çапах пассивлă коммунист тесе райкома ярса пăхрĕ те, ĕç тухмарĕ ун, билет улăштарма чăрмантараймарĕ, эсĕр пулăшрăр.

Яшка сыпнă май Крутов кĕтесселле пăхса илчĕ те:

— Коммунист турăш тытнине пĕлекен çамрăксем урăхларах ăнланма пултараççĕ пуль. Усалли халăх хушшине ырринчен хăвăртрах саланать-çке, — терĕ.

— Ăнлантăм, ăнлантăм сире, Максим Максимович. — Тур карттинккине кĕтесрен йăтса антармалла ĕнтĕ. Эх, туррине те ĕненсех пĕтермен те, хăма татăккине сăх сăхма вĕреннĕ, атте-аннерен... ачаранпах ун вăйне хирĕç тăраймасăр ӳснĕ. Халь тин вăй çитерееc çуках Христос çине алă хума. Ахаль те пирĕншĕн те курать пуль тертне пăталанă хĕрес çинче.

Хурăнварти калаçу çинчен Крутов тахçанах маннăччĕ. Ял хуçалăх ĕçлевçисен кунĕнче Муллинпа тепĕр хут тĕл пулчĕç.

— Тем ĕç тума та пултарап çак алăпа. Халăхран юлман. Паян та Волков костюм парнеленĕшĕн чунтан савăнтăм. Çав турăша антарма çеç вăй çитерейменĕм. Начар коммунист эп, начар. Партбилет çинчи Ленин сăнне пăхатăп та кĕтесри Христос сăнне сăнатăп. Иккĕшĕ те çывăх пек, иккĕшĕ те чуна çывăх, чĕре кутĕнче, иккĕшĕ те ăшра. Мĕн тăвас-ха манăн, хамăн шалти вутçулăма сӳнтерме пултарайманскерĕн? Тен, эпĕ ком-

мунист та мар? Партие кӗрсе кайнӑ турӑ чури? Каларха? — пӗчӗк ача пек йӑлӑнса ыйтуллӑн пӑхрӗ Мулла Микушӗ партком секретарӗн куҫӗнчен.

Крутов ӑна ҫурӑмӗнчен лӑпкаса:

— Чунупа чӑннипех ырӑ ҫын эсир, хӑвӑрах Ҫӗр турри, — терӗ.

Атеизм пӳрте, этем ӑшне шанчӑклӑн кӗреймест. Христос ӗненӗвӗн тымарӗ чӗрӗлсе тутлӑ шӑршлӑ чечек ҫурать. Арҫынӗ те, хӗрарӑмӗ те, яш-кӗрӗмӗ те ӑна чӗре ҫумне тытса ӑшӑнать, шӑршласа ӳсӗрлет. Мулла Микушӗн те чунӗ теме сиссе турӑ кӗтессинеллех ҫывхарать. Тӗн вӑйӗ хӑйсене хӗссе пынине, халӑх хушшинчен марксизм-ленинизма мӑшкӑллӑн тасатса сарӑлнине курать Крутов. Тӗн ӑс-тӑнӗн аслӑ шкулӗсем, епархисем, чиркӳсем шалти ӗнентерӳллӗ туйӑмпа халӑхӑн ытларах та ытларах пайне алла ҫавӑрса илессишӗн каҫса кайсах тӑрӑшаҫҫӗ. Тӗн сӗрӗмӗ нумайӑшӗн ӑшне кӗрсе, пуҫа минретет — этемлӗхӗн ҫутӑ малашлӑхне — коммунизма курми тӑвать.

Тельман Федотовичӑн арӑмӗ Венера Ивановна ачине куҫса ҫӳрекен чиркӳре шыва кӗртни ӑна тӗлӗнтерсех пӑрахрӗ. Хурӑнварта хӑйӗн юратнӑ Ульки аккийӗ, Макҫӑмӑн чи ҫывӑх ҫыннийӗ, асламӑшӗ патӗнче чӑпӑл туса хӗрес чуп тутарнӑ, турӑ юнӗ сыптарнӑ райком бюровӗн членӗн ачине. Волковӗ хӑйне партирен кӑларса ҫапассинчен те хӑрамасть, «Эс пока шӑпӑрт», — тесе хытарчӗ ҫеҫ. Шутларӗ вара Крутов унӑн тусӗ Мускавран кашни таврӑнмассерен хальхи пурнӑҫ йӗркине хӗремесленсех мӗншӗн вӑрҫнине.

— Тавай пустуй шыв юхтарма чарӑнар, — ӑс пама пуҫларӗ Тельман Федотович кӑмиссара. — Наукӑллӑ атеизм пушӑ вырӑнта ҫакӑнса тӑнине пӗлетӗн-и?

— Чухлатӑп кӑштах, — хирӗҫлес темерӗ Крутов.

— Пӗлетӗп эс чун туртман ӗҫе тунине, анчах мана та, никама та ун ҫинчен уҫҫӑн каламастӑн. Ухмахла шанӑҫ хуҫаланать сан ӑшунта. Усал. Ӑсу-тӑну пӗрмай

çапăçать, тем шырать. Манни пекех. Çав суя атеизма çынсен пуç мимине ытларах çапса кĕртмелли майсемпе мелсене обкомра, райкомра, парткомра хĕремесленсе сӳтсе яватпăр. Темле канашсем, комиссисем, шкулсем, семинарсем, кружоксем туса тултарнă тĕне хирĕç. Омановĕ тата лектори уçма шăнкăравлать. Мĕн кăна шутласа кăлармаççĕ. Те урăх ĕç çуккă теççĕ? Çăва патне кайтăр сан наукăсăр атеизму. Тĕн коммунизмччен хăех пĕтет, теттĕнчĕ эсĕ те, халĕ мĕнле çаптаратăн-ха?

— Эх, санпала, — аллине сулчĕ Крутов. — Манран пăвăртса çакна пĕлесшĕн ĕнтĕ: халĕ тĕн коммунизм шухăшне хăех пĕтерет. Килĕшетĕн-и?

Тельман Федотович ăна çурăмĕнчен шап! тутарчĕ:

— Тĕп-тĕрĕс ăнланатăн. Хамăра валли пустуй кампанисем шутласа кăларса хамăр ĕçе йӳнеçтеретпĕр. Атеизм çумăрĕнчен-пăрĕнчен çын чиркĕве тарса пытанать, алăкки яр-уçах. Хăть кашни çын çумне çулăмлă атеист тăрат эс, пурпĕрех тытса чараймастăн ун ăшне кĕрекен вутлă вăя. Хамăр ялсем çумне виçшер агитатор тăратсан та вĕсем унтан ытларах ĕçлеймеççĕ. Вĕсем хăйсемех пĕлеççĕ мĕн тусан мĕнле пурăнмаллине. Ăнлантару, ăс-хакăл ĕçне эпир тахçанах ылтăн пучахпа, самăр вырăх-чĕрлĕхпе, пĕр сăмахпа каласан, хамăр çитĕнӳсемпе виçме вĕреннĕ. Иксĕмĕр пĕрле. Анчах паян сĕт ыйтăвĕ чи малта тăрать-ха. Тĕн мар. Тĕншĕн тире сӳмеççĕ пирĕнне. Тĕн вăл — хăй хуçа. Айта Тымара. Çавăнта çитсе курар мĕнле сĕрĕм явăннине.

Хăйсен планне тултарнă-ха вĕсем. Шупашкарсем Мургаев урлă тепĕртак хуштарасшăн. Волкова хăйне те ӳкĕтлесе итлеттернĕ, трактор пама шантарнă. Куншăн тăрăшма юрать.

Çапах та халăх ăс-тăнĕ ăçталла улшăнса пынине вăл Волковсен çемйин пурнăç çулĕ çинче курасса кĕтменччĕ. Ăс-тăн уйрăм çав.

18

Тĕп шухăш этемĕн хăйпе пĕрлех. Çут çанталăк тивлечĕпе вăл ар вăхăчĕ арланса çитсен арлашма ăнтăлать.

Савăк вăхăт иртсе кайсан, хăйĕн çумĕнче мăшăр çуккипе антăхса та кĕвĕçсе, юрату çимĕçĕ шырама тытăнать. Пурнăç пӳрмен Пантелеймон Христофорович Оманов та хĕрарăм тутине тутанса курмасăрах ватта çывхарчĕ, алла Алла Соснова кĕреймерĕ пулин те, алла туя тытиччен авланмах тĕв тытрĕ.

Хирĕçни-тавлашнине мансах вăл Крутов çумне çыпçăнчĕ. «Авланатăп, сана хăйматлăх тăватăп», — тесе час-часах асăнать.

— Хăшне илсен телейлĕрех пулатăп-ши, Максим Максимович? Эс авланса курнă çын. Мĕнле хĕрарăмпа пурăнма лайăхрах? Аяккалла ан пăхтăр тесен, арăма малтанах мĕн тумалла?

Ухмахла ыйтусене итлесе ывăннă Крутов чăтаймарĕ, кула-кулах каларĕ:

— Тумалла — хытăрах чуп тумалла...

Кавăн пуçне пăрса мĕкĕл çавăрчĕ те лутра Панхристоф куçне шăлса илчĕ:

— Тит чуп туса пĕтернĕ хыççăн ман тата хытăрах чуп тумалла-и Альбина Аленчиковăна? Милов халь те «эп ăна Нил шывĕ тăрăх крокодил çине утлантарса иштереп» тесе кулать кăшт ярсанах. Альбина пĕççисене курсан, купарчи вылянине сăнасан, ташланă чухне сăмсана икĕ чĕччи хушшине чиксе ăшăтсан... тĕнчере мана урăх нимĕн те кирлĕ мар. Эпĕ ăна йăлт çавăншăнах виличчен хам хваттерте усрамалла. Атя-ха пĕрле калаçса пăхар, Максим Максимович. Сан чĕлхе-çăвар çаврăнать. Ку ейпух Алла Соснова мар.

— Тит Нилыч ăйăрне çăвакан мунчала сана мĕн тума кирлĕ, Паня? Путатăн тĕпсĕр кӳлĕре.

Ларать-ларать те Панхристоф чалт! сиксе тăрать, каллех авланассипе çĕтет:

— Вупше-тă, манран мăшкăлларĕ вăл Аленчикова ятлă якăлти, тантăшне тĕксе хăварчĕ.

— А-а, Роза Митрофановăна-и? Ан васка-ха, суйлав иртсе кайтăр. Шăхран «космонавтички» Марс пат-

не халех вĕççе каяс çук, хăйсен картинчен тухас çук. Аленчикована çаклатаймасан, енчен те «Шăхранта» ĕне сăвакан Розăнах çавăрса илес тесен, çакăн çинчен ан ман: ăна Аслă Канаша депутата суйлама тăратнă. Суйлав умĕн кандидата ют çĕре кам качча парса ярать? Тăхтар суйлавччен.

— Тĕлĕк лайăх мар пек туйăнчĕ-ха, — ниепле те лăпланӑймасть Оманов. — Ман Роза таçта çити, пĕлĕте шăтарса ӳссе кайнă пек. Ой, хăракан пултăм ку хĕрсенчен.

Крутов хусаха тăрăшсах тăнлантарать:

— Алла-Альбинупа пустуй ан суп. Розăна тĕлĕкре курнин сăлтавне ăнкартаймарăн-и? Пулас арăму, депутата суйласан, паллах, çӳлелле вĕçет, аяккалла та пăхма пуçлать.

— Нивушлĕ авланаймастăп эпĕ? Намăс куратăп-ши?

— Эх, каччă, каччă. Пурте лайăхах пулĕ-ха. Ан шиклен. Райкомра ĕçлетпĕр тесе халăхран аякра тăракан юпапа танлаштарар мар-ха хамăра. Тăван халăх йăлийĕркине манмасăр ăна пĕрле çĕнетер, чăваш туйĕ туса чăвашлах утар малалла. — Унтан вăл, кайма тăнăскер, Панхристофран ыйтрĕ: — Роза хăй килĕшет-и-ха?

Пантелеймон Христофорович турткаланса илчĕ, хул пуççийĕсене сиктерчĕ, тин вара çурăк сасă кăларчĕ:

— Килĕшнĕ пекех туйăнчĕ те малтан хамăр района килсен?..

— Пустуй çĕмĕрен çав ман пуçа. Тĕплĕн калаçса татăлман хăй, пĕринпе те килĕшмен, хăйматлăх шырать.

Оманов туй пирки калаçма Крутовранах ыйтать.

Амăшĕн чĕччине тупма пĕлмен çулламан пăру пек çĕтнĕ çак тăмсай Максим Максимовичăн чунне пăлхатса ячĕ. Усăнса аннă хура çӳçлĕ, мăйăхлă, хурчка сăмсаллă Тит Милова аса илтернипе пĕтĕм кĕлетке вĕриленсе кайрĕ, пуçра кĕвĕçӳ хĕрĕвĕ вăйланчĕ, çав путсĕре, хĕрне туртса илнĕшĕн, çапса салатас килсе кайрĕ.

Маруçа юратать, унсăр пурăнма май çуккине чунчĕрере шăратса кăларнă пулин те шалти вилмен туйăм

Крутова канăç памасть, вăранса хăй çинчен аса илтеретех. Арăмĕн юратăвĕ айĕнчен мĕнле те пулин йăпшăнса тухатех. Лина вара ăна Тарăнвара вĕçтерсе каять, Кирилловсен хыçĕнчи пĕве хĕррине илсе çитерет, хăмăшсен юррине итлеттерет. Кĕпе çумалли пĕчĕк кĕпер çинче çара урисемпе лĕп шыва шăмпăлтаттарса ларакан Тарăнвара хăнана пынă Маминов хĕрĕ халĕ те, сукмакпа иртсе çӳренĕ чухне, куç умне тухать.

Оманов та хăй пуçĕпе çав майлах пăтранать пуль ĕнтĕ. Вăл та ун пек çынах-çке. Унăн та чĕри кутне тахçан кĕрсе ларнă Алла Соснова яланах чĕлхи çине тухать, Альбина Аленчикова кĕлеткине силлесе пăрахать. Тулĕк унăн çав туйăма хупласа лăплантаракан хĕрарăм юратăвĕ çук. Алла та, Альбина та унран хăпрĕç. Розине шанма хĕн. Ялта ыр куракан пулас депутат валли Шăхранрах каччă тупăнма пултарать. Панхристофăн пĕр шанчăк çеç юлнă. Пĕлтĕр района килнĕ çамрăк учительницăсем хушшинче украин хĕрĕ Оксана Майборода пурччĕ. Çавăн çумне çыпçăнать иккен Оманов.

Ăнланмалла мар ĕненӳ вырăнне хурать юратăва Макçăм Крутов. Тусĕпе Волковпа тĕн пирки тавлашнă чухнехи икĕ шухăшлав пăтранать пуçра. Ăша кĕрсе ларнă тĕнче курăм вăйĕ этем пуçĕнчен шăранса тухнă хут çинчи вăйпа кĕрешет. Çав кĕрешӳри тĕп шухăшĕн тупсăмĕ уççăнах палăрмасть-ха, ăс-пуçа çивĕчлетет çеç. Пурнăç чăнлăхĕпе кăтартуллă ĕмĕт ĕмĕлкийĕ хушшинче мĕн тери пысăк уйрăмлăх иккен. Ăнланса улшăнас та килмест, халăх умне урăх тумпа тухас та килмест. Ăшра çав-çавах çĕрпе пĕлĕт хушшинчи хăватлă вăй хуçаланать.

Венера Ивановна хĕрарăм тейĕпĕр. Унăн чунĕ çемçерех, туйăмлăрах. Пĕтĕм хĕпĕртӳ, инкек-синкек ыратăвĕ хĕрарăма чи малтан ытларах çавăрса илет. Тен, ыттисем хыççăн кайса, Венера Ивановна та ачин малашлăхĕшĕн, ăна çӳлти аттен хăвачĕпе сыхласа çирĕп пулма, сывă çитĕнме ырă хăват парас тенĕ. Чиркӳре мар пулин те, яла вăрттăн пынă пачăшкă аллине амăшĕн

шанчăкĕпе тыттарнă, чунне лăплантарнă. Тельман Федотовичран вара Крутов кунашкаллине ĕмĕрте те кĕтменччĕ. «Каплах сулнăк çапма пуçласан пурнăçра хамăн Маруç та ывăла шыва кĕртес тейĕ? Хĕрарăмран тем те кĕтме пулать. Вăрманкасра та пĕр килте чиркӳ пекки уçнă тенине илтнĕччĕ. Тен, арăм унта Бориспа кайса та килнĕ? Çывăрмалли пӳлĕмре пĕчĕк турăш асăрханăччĕ-ха. Борис мăйĕнче хĕрес пур. Ăна кӳршĕ хĕр ачи çакса янă, терĕç. Кунта темскер таса мар. Венера Ивановнапа пит пăшăлтататчĕ арăм чиркӳ, турă пирки...» — тесе шухăшларĕ вăл.

Тĕнчери хăватлă вăй халăх пусĕнчен суя ĕненĕве тасатать иккен, Крутовсен ĕçне сывлăшра тĕп тăвать. Ку таранччен шанса ĕненнĕ, тăрăшса вĕреннĕ, çынсене пусахласа вĕрентнĕ ăслăлăх тымарсăр хăрать. Ун вырăнне ĕмĕр симĕсленекенни, çурăлаканни, чечекленекенни йышăнать. Тымарсăр юрату та çавнашкалах-мĕн, тĕнче çаврăмĕнче сиплĕ чĕрĕ çăл куç тупайманни, типсе сӳнет.

Посадкина пуçĕнче мĕн явăнать-ши? Капăр кĕпекĕрĕк, тĕп хула савăкĕ пирки-ши, çемçе пукан çинче сарăлса ларакан çамрăклăх юратăвĕ çинчен шухăшлатьши? Е Крутова бюрора итлесе айăплас ĕмĕтпе вăшталанать? Идеологи пайне, пуçлăхне Оманова семинарта хурласа тĕнче умĕнче намăслантарнăшăн шăл хăйраса çӳретчĕ-ха. Ахалех ирттерсе ямĕ. Кĕтмелле, чăтмалла ĕнтĕ. Çапăçăва хатĕрленмелле. Суйлав кампанийĕ алурана тăллать тата.

Суйлавччен эрне маларах районти ĕçпе юрă уявĕ пулчĕ. «Шурăмпуç çăлтăрĕ» те хăйĕн тĕсĕпе йăлкăшма хатĕрленетчĕ унта.

Вăл кун Максим Максимович ирех парка тухрĕ. Вăрман капăр тум тăхăннă. Оманов та унта кускаласа çӳрет. Ем-ешĕл хурăнсем, симĕс хырсемпе чăрăшсем, хăватлă юмансем хушшине вырнаçтарнă чĕнӳсене, стендсене тепĕр хут тĕрĕслет вăл. Кăтартусемпе халăх

туллинрех паллашма пултартăр тесе Крутов та пулăшрĕ ăна. Уçланкăри сцена та пит капăр.

Уявла тумланнă çынсем йышланчĕç. Çӳллĕ хапхаран кĕрсе эрешлĕ йывăç кĕпер урлă каçакансене Крутов та сывлăх сунать. Шăхрансем те килсе çитрĕç, акă. Юлдашевпа юнашар Мургаев утать, тусне вăл чикке тухсах кĕтсе илнĕ пуль-ха: йăли çапла. Хулран çавтăнса юхăм пек çывхаракан Альбинăпа Роза хĕвел куллине ясарлатсах ячĕç. Аллинчи чечекне никама тыттарма аптăраса çăвар карса тăракан Оманов «о, ман...» теме ĕлкĕрнĕ самантра роза çыххине илме аллине тăснăччĕ кăна Роза Митрофанова, парнене Альбина Аленчикова хăйĕн уçă кăкăрĕ çумне çывхартрĕ, тантăшĕ те çухалса каймарĕ, «о, ăман, тăмана» тесе Панхристоф çине кӳренчĕклĕн пăхса, хăйсен çыннисем хыççăн чупса кайрĕ.

Альбина Александровна çухалса кайнă чечек çыххишĕн тав туса-ши, качча тем каласа ахăрттарать. Аяккалла пăрăннă Крутов ăна лайăххăн илтмерĕ.

Уçă лаптăкра вылямалли-тупăшмалли нумай вырнаçтарнă. Максим Максимовичăн вăрăм шăчĕ тăрне çакнă шампань эрехĕпе шăрттана хăпарса илес ĕмĕт çуралчĕ. Черетпех вăй виçеççĕ яшсем, çĕнтерекенни çеç тупăнмарĕ-ха. Пушмакĕсене хывсах тапаçланса пăхрĕ Крутов та, анчах... вĕçне çитесси çур шит пек юлсан, шăлавар пĕççинчен такам туртрĕ тейĕн, аялалла шуса анчĕ. Таçта та йывăр иккен çӳллĕшне çĕнсе илме, çĕрелле çеç чăмма çăмăлрах. Çамрăк чухне пĕрре кăна мар шăчă парнине çавăрса илнĕччĕ те... Лӳпперленме пуçланине пĕлтермест-ши ку тесе сехĕрленсех ӳкрĕ вăл. Çерем çине çара урисемпе тăнк анса тăрсан, унран Альбинăпа Панхристоф алă çупсах кулма пуçларĕç. Çынсем хушшипе хĕсĕнсе Милов тухса тăчĕ, вăл та ахăрать.

Шӳте юратакан Аленчикова вĕсем çине йăлт-ялт пăхкаларĕ, çывăхрисем илтмеллех каларĕ те хучĕ:

— Ак ман кăвалерсем çамкапа çамка тĕл пулчĕç, хăшĕ малтан хăпарса илсе парнелет мана çав шампанскине, çавна паянах качча тухатăп. Р-раз...

Панхристоф хăйĕн юрату ăмăртуçи çине вăкăрла пăхса илчĕ, Тит Нилыч пушмакне хывма пуçланине асăрхаса часрах путтинккине силлеме пуçларĕ, вара ывăç тупанĕсене сурса сăтăрчĕ те шăчăран ярса тытрĕ. Эхлетсе çуррине çитрĕ те... пĕр вырăнта хытса тăчĕ, аялалла пăхрĕ те, «пусма!» тесе çухăрса ячĕ, çав самантрах шусашуса анчĕ те хырăм çине шаплатрĕ. Халăх вилет кулса. Аран-аран тăрса пушмакĕсене тăхăнчĕ, вăтаннипе Альбина çумне те пыма хăрарĕ. Аленчикова шеремете пуçĕнчен ачашларĕ: «Эх, ман Христофор Колумбăм, мачта тăрне хăпарса курайман, çĕнĕ çĕр уçайман ишевçĕм, кунашкал халсăра сире Роза та ĕне хӳринчен тыттармĕ, авă, курăр!

Тит Милов упăте пек çӳлелле улăхать, акă вăл çăмăллăнах вĕçертрĕ кĕленчепе шăрттана, вĕçсе анать, кушакла тăрст! сикрĕ те, вăтанмасăрах Альбинăна ыталаса чуп турĕ, парнине хаваспах тыттарчĕ. Мăшкăл курнă Оманов пуça чиксе таçта çухалчĕ.

Уявăн ĕçлĕ пайĕ вĕçленсе пырать ĕнтĕ. Сцена пултарулăх ăстисен аллине куçрĕ. Пĕрлештернĕ хор тулăх пурнăç юррине шăрататать. Хор умĕнче — дирижер патаккине çĕкленĕ Альбина Аленчикова. Ăмăртакан районсем хушшинчи культура çыхăнăвĕсене аталантарас тесе музыкантсене пĕр-пĕрин патне пулăшма ярасси йăлана кĕрет. Аленчикова та пĕрлештернĕ хора уява хатĕрлеме хутшăнчĕ, халĕ, сцена пуçĕнчи çӳллех мар сĕтел çине тăнă та, çинçе аллисемпе хăлаçланса, пуçне силлесе, кĕлеткине чĕтретсе юрлакансене хĕрӳллĕн, çĕкленӳллĕн ертсе пырать. Тулăх пурнăç юрри вăрмана саланать:

Мĕншĕнех-ши чыслă-сумлă ятăр,<br>
Халăхра кашни мухтавлă паттăр?<br>
Ĕç çинче хастарлă пулнăран,<br>
Ӳсĕм хыççăн ӳсĕм тунăран...

«О, ăман-тăмана» тесе хăварнă Роза Митрофанова та çӳрес темерĕ айван каччăпа, хăйсен çамрăксен ертӳçинчен уйрăлмарĕ.

Панхристоф кукалесе кăна çӳрет, юлашкинчен чăтаймарĕ, малти ретре ларакан Тит Милов умне саркаланса вырнаçрĕ, хĕр тăшманне хупласа хурасшăн пулчĕ. Кунтан Альбинăн кашни хусканăвĕ, ура хырăмĕсен мускулĕсем уççăн курăнаççĕ, сылтăмалла, сулахаялла пăркаланса вылякан купарчи хăй патнелле туртать. Тытса ачашлĕччĕ чĕрĕ минтере Оманов, анчах... Паян хĕрарăм çӳлĕ вырăнта пулин те, кĕпе айĕнчи вĕтĕ чĕнтĕр тулли пĕçсемпе вылямасть. Хусахăн куçĕ тĕтреленет, шухăшĕ пăтранать. Çурăм хыçĕнчи Милов савнине ура çине тăрса саламлать.

Хор хыççăн сцена çине «Шурăмпуç çăлтăрĕсем» чупса, сиккелесе тухрĕç. Тымар бригадинчи хуралçă Герасим Филиппович Воробьев шăпăрĕпе курăнсанах, халăх алă çупса ячĕ. Тымарсене ĕлĕк туйра тĕлĕнтернине, çĕнтернине аса илчĕ-ши Карачăм мучи, пĕтĕм вăйне пухса вăкăр хăмпине вĕрсе хăпартрĕ те, шăпăр сасси анлă уçланкăна тулчĕ: «Ăн-на, ăн-на, ăн-на-на!»

Хĕвел вăрман хыçне пытаниччен пычĕ ака туй. Омановшăн çеç вăл уяв-туй пулмарĕ. Хатĕрленнĕччĕ икĕ хĕртен пĕрне вăрласа юлма. Çак хура кун Альбинăшăн ăнтăлса пурăннă вăхăт, тутлă та савăк ĕмĕт вăрманта çулăмсăрах, тĕтĕмсĕрех çунса кайрĕ. Аленчикова Тит машинине кĕрсе ларнине асăрхарĕ те, шăхрансене чикке çитиччен ăсатма та «манчĕ», юри çынсем хыçне пытанчĕ.

Ăш-чикĕ йăлтах кăмрăкланса ларман пулас-ха Омановăн, вăтам шкул учительницине качча илме хатĕрленчĕ.

Туй пеккине райкомран пурте тенĕнех пычĕç. Украина хăнисем килнĕ. Панхристоф çиччĕмĕш пĕлĕт çинчи пекех, Крутов хăлхинчен пăшăлтатать: «Пăхăрха ман арăм çине? Мĕнле чипер. Поселокра, туршăн та, ун пекки çук. Каккуй поселокра — районта та,

районта çеç-и — республикăра та. Шăхран Альбинисемпе Розисене юнашар тăратсан... Тьфу! Йытă пек чупрăм вĕсем хыççăн. Ку мана хăй юратрĕ, çаварса илчĕ, çĕнтерчĕ, упăшка турĕ. Тулĕк ялта, амăшĕсем патĕнче, ачи пур. Такам качча илеп тесе улталанă хыççăн çуралнă тет-и? Ун пирки ни-ни. Никама та. Хамăр хушăри секрет. Шанап эп сире».

Пуçларĕ янрама чăваш юрри — туй юрри. Параппан çапакан Быстров баян туртакан Крутов çине пăхса пуçне ухать. Туй хĕрет, туй кĕрлет.

Туй хыççăн суйлав ирттерчĕç. Ытла хĕрӳ вăхăт. «Шурămпуç çăлтăрĕнче» вырма уявĕ туса пăхас терĕç.

Тарăнварсем ун валли колхоз «мăтăсинчен» инçе мар, вăрман хĕрринче, илемлĕ вырăн суйласа илнĕ. Вăхăтлăх тунă сцена çине хуçалăха ертсе пыракансем, ĕç паттăрĕсем, хăнасем хăпарчĕç. Уява партком секретарĕ Крутов уçрĕ.

— Хаклă юлташсем! — терĕ вăл. — Тырă пиçсе çитрĕ. Акă вăл, хăй те тухрĕ, çепĕç сассипе таврана янратрĕ:

— Эсир мана, хисеплĕ ял ĕçченĕсем, тăрăшса пăхса ӳстертĕр. Савăнăçпа пуçăм та çĕрелле усăнать.Сире чăтăмсăррăн кĕтетпĕр. Акă, уй-хир пуянлăхĕн уççи. Ăна эпĕ колхоз пуçлăхне ырă сунса паратăп.

Чĕнтĕрленĕ шурă кĕпе тăхăннă Волков пысăк уçça капăр Тырпулран илчĕ те сăмах каларĕ:

— Тавтапуç, пуян Тырпулăм. Сире çĕре ӳкерсе макăртмăпăр.

Механизаторсен ячĕпе Павел Воробьев ĕçри çĕнтерӳшĕн тупа турĕ. Волков виçĕ качча чĕнсе кăларчĕ, хул пуççийĕсем урлă «Механизатор» тесе çырнă хăю çакса ячĕ, вĕсене хăйсен çемйине йышăннă ятпа саламларĕ, ырă сунчĕ, инструментсем пачĕ. Каччăсем уйра тăрăшса ĕçлеме, çĕре юратма тупа турĕç. Комбайнерсене, трактористсене тата шоферсене пионерсем утмăл турат çыххи тыттарчĕç. Хумма Петĕрне, çур акинче çĕнтернĕ тракториста, Тырпул ыраш кĕлти парнелерĕ.

Агиткультбригада паттăрсен ячĕпе юрăсем шăрантарчĕ. Кĕвĕ чарăнчĕ те, председатель хыттăн кăшкăрчĕ:

— Хире тухма хатĕр-и?

— Хатĕр!

Кун хыççăн Волков механизаторсене наряд-задани, комбайн çинче ĕçлеме ирĕк паракан хут, ĕç пахалăхĕн паспорчĕ тата агрегатсен маршручĕ тыттарса пурне те тапранма хушрĕ. Хăй, пысăк уçăпа суллакаласа, хĕрринчи комбайн çине улăхрĕ. «Уй-хир карапĕсем» пĕрин хыççăн тепри ыраш уйнелле çул тытрĕç. Пуç кăшăлĕ тăхăннă, пучахсемпе илемлетнĕ пике, Тырпул, грузовик çинче хĕвел шевлипе çиçсе юрласа пычĕ.

## 19

Шыракан — тупать. «Шурămпуç çăлтăрĕн» пуçлăхĕ Тельман Федотович Волков колхозра цехсем туса пĕтĕм таврара янăрарĕ. Кӳршĕсем те, ăмăрту кăтартăвĕсене пĕтĕмлетме пырсан, хăйсене тӳрех унта илсе кайма ыйтрĕç.

— Яков Сидорович, — терĕ делегаци пуçлăхĕ Юлдашев, — пĕрре савăнатăп сирĕн ĕç çине пăхса, тепре кĕвĕçсе вĕчĕрхенетĕп. Чăннипех хура тăпраллă мар тăрăхри паттăрсем эсир. Тупăша-тупăшах мала кайрăр, намăс кăтартрăр пире.

Мургаев ăна чеен итлесе ларать, хăй ăшĕнче мăнкăмăлланнă пек те пулать. Обком бюровĕнче, икĕ район ăмăртăвĕ пирки калаçнă чухне, кӳршĕсене, каярах юлнăшăн, йĕплĕ сăмах тивнĕччĕ-çке. Çĕнĕлле ĕçлеме вăрманкассенчен вĕренмелле, тесе асăрхаттарнăччĕ. Обком ун чухне икĕ район ăмăртăвне ырларĕ, малашне вĕсен тĕслĕхĕпе ытти районсемпе хуласене те социализмла ăмăрту килĕшĕвĕсем тума хушрĕ. Çапла вĕсен çĕнĕлĕхĕ пĕтĕм Чăвашьенне сарăлчĕ. Ун çинчен хаçатсем тĕплĕн çырчĕç, радио эфирта янăратрĕ. Яков Сидоровичăн телевиденире тухса калаçма тиврĕ.

— Мĕн мана хăмпă пек хăпартса ларатăн çак эсĕ? — чăтаймарĕ Мургаев. — Тельман Федотовича мухтас пу-

лать. Çĕнĕлле ĕçлеме пуçлаканĕ вăл вĕт. Пурнăçа кĕртрĕмĕр темелле ĕнтĕ ăна «Шурăмпуç çăлтăрĕнче», — ура çине тăчĕ Мургаев.— Шавлатпăр. Çапах та, ытлашши паврама пăрахмалла пуль. Пĕтĕм районĕпе сарсан, ун чухне... вăт ун чухне кăшкăрма та юрать. Халĕ, мĕн, тепĕр икĕ колхозра туса хурăпăр, ыттисенче — май çук. Специалистсем çитмеççĕ. Хуçалăхсем те аталанăвĕ енчен начартарах. Никĕс çук. Вăхăтра хывайман. Тарăнварсен, авă, уй-хир бригадисем те çук. Вĕсен вырăнне механизациленĕ бригадăсем тунă. Ытти çĕрте каллех хатĕрленсе çитмен эпир çĕнĕлĕхе ĕçе кĕртме.

Пĕрремĕш секретарь пӳлĕмĕнчи калаçу çакăнпа вĕçленчĕ. Вĕсем йышăну пӳлĕмне тухрĕç. Район ĕçĕхĕлĕпе паллашма чăнах та Тарăнвартан пуçлас, терĕç.

Максим Максимович Вăрманкасран малтанхи хут çурран тухнăранпа пысăк улшăнусем пулса иртнĕ. Çурма кăшăл пек чечеклĕ кукăр çул вырăнне асфальт сарнă анлă шоссе тăвайккинчен вăрман кĕтессинелле хăпарать, унтан правлени патнех çитет. Хуçалăхăн тĕп вырăнĕ питĕ капăрланнă. Чул çуртсем татах лартнă. Культура керменĕ, суту-илӳ çурчĕ тунă, кану паркĕ уçнă, тротуарсем сарнă. Правлени умĕнче çăмăл автомашинăсем речĕпе лараççĕ.

— Цех начальникĕсене Мускав учĕ илсе патăмăр, — «москвичсем» еннелле тĕллесе кăтартрĕ Волков.

Кӳршĕсен райком секретарĕ Юлдашев пӳрне хуçлатса шутлать:

— Мĕн кăна çуккă пуль сирĕн? Хуçалăх расчечĕ — пĕрре, цехсем — иккĕ, диспетчер службинĕ — виççĕ, — учет тумалли чек йĕрки — тăваттă...

— Пиллĕкмĕшшĕн Хурăнварти Воробьев бригадир «пиллĕк» илнĕ, — пĕлтерчĕ савăнса Волков. — Вăл — акă мĕн. Эпир хуçалăх расчечĕпе тахçантанпах, çирĕм çул каяллах ĕçлеме пуçланине эсир хăварах пĕлетĕр. Бригадăсемпе фермăсем çакăн хыççăн вăйланчĕç ĕнтĕ. Юлашки çулсенче механизациленĕ звеносем çумне

уйрăм çĕр лаптăкĕ уйăрни выльăх апачĕ тухăçлăрах туса илме май пачĕ. Виçĕм çул вара çапла тума шутларăмăр. Хурăнвар бригадине, уй лаптăкĕ пур таран, мĕн кирлине пурне те уйăрса патăмăр. Техникипе те, удобренийĕпе те, пуринпе те вĕсем хăйсем пĕлнĕ пек усă курчĕç. «Сахалтарах тăкакпах — пуян бригада» тĕллевпе ĕçлесе чапа тухрĕç. Тыр-пул тухăçĕ вĕсен хĕрĕх центнертан иртрĕ, çĕр улми — тăват çĕре капашать. Гектар хăвачĕ епле ӳсрĕ? Укçипе тыррине те хурăнварсене хăйсен тупăшне кура тӳлетпĕр. Ĕлĕкрех ĕç кунĕ пуçне панă пек. Паллах, çынсен хавхаланăвĕ те ӳсрĕ. Роман Фомич ыйтнипе халĕ бригадăна темиçе çуллăх çĕр, техника тата ыттине те çирĕплетсе патăмăр. Пусă çаврăнăшĕпе хăйсем майлă туллин усă курччăр. Колхозри пĕчĕк колхоз пек халь вĕсем. Ытти бригадăсене те çак йĕрке çине куçартăмăр. Фермăсенче те çав йĕркех. Вăт районĕпе, республикипе пирĕн Воробьев пек ĕçлеме пуçласанччĕ. Ун чухне эпир мĕнле пуян пулнă пулăттăмăр! Халлĕхе — калаçу çеç-ха. Коллективлă хуçалăх меслечĕ пирки сăмах çапса та хут хуратса ытларах чапа тухаççĕ. Çĕнĕрен йĕркеленĕ рапосем те куçĕсене уçайман кушак çурисем пек кăна тапаланаççĕ.

— Мал курăмлă çынсем эсир. Пултаратăр, — мухтарĕ вĕсене Юлдашев. — Эпир ку енĕпе обозра пыратпăр-ха.

— Цехсем тусан, хама та ĕçлеме çăмăлланчĕ, — малалла ăнлантарчĕ Волков. — Унччен правление пăхăнакан «пуçлăх» аллăран та иртетчĕ, халĕ — вун виççĕ. Хуçалăх ĕçĕсемшĕн вĕсенчен çеç ыйтатпăр. Агроном-зоотехник-инженер ытларах канаш парса ларатчĕ, халĕ вара — уй-хир, выльăх-чĕрлĕх, механизаци цехĕсене ертсе пырать, хăех специалист-технолог та, хăех — организатор та. Пĕр сăмахпа каласан, хуçа. Прависем те анлăрах. Бригадирсемпе ферма заведующийĕсем цех начальникĕсене пăхăнаççĕ.

Председатель хăнасене диспетчер пунктне ертсе кайрĕ. Сарлака та вăрăм аппаратура умĕнче йĕтĕн çӳçлĕ

чиперкке хĕр ĕçлесе ларать. Вăл паян фермăра мĕн чухлĕ сĕт сунине тĕрĕслет. Стенд çинчи карточкăсем тăрăх колхоз мĕншĕн кĕрешни, кашни кун мĕн чухлĕ сĕт суни, патшалăха ăсатни, кулленхи сĕтри çу хисепĕ, выльăхсен апат рационĕ тата сĕт хăй хаклăхĕ йăлтах паллă. Пур отрасльпе те çавнашкалах, танлаштарса пăхма пит ансат. Сăмахран, ăратлăха лайăхлатассипе мĕн-мĕн тунă? Хуçалăх расчечĕн заданийĕсем мĕнле пурнăçланаççĕ? Пурне те вĕсене куçпа курма пулать. Тĕп диспетчер служби пурин çинчен те правление куллен пĕлтерсе тăрать. Колхоз пурнăçĕн тĕкĕрĕ выраннех хучĕç ăна кўршĕсем.

— Эсир пирĕнтен сахалтан та пилĕк çул маларах пыратăр, — пуçа кăтăрт-кăтăрт хыçать Юлдашев. — Пулăшăр-ха пире те цех йĕрки çине куçма? Ăмăртура пĕрне-пĕри малалла туртни лайăх-çке.

— Мĕнпе пулăшмалла-ши кўршĕсене? — ыйтрĕ председатель.

— Специалист çитмест, Тельман Федотович, агроном, инженер тупаймастпăр. Сирĕн ытлашши тенине илтнĕччĕ.

— Мургаев хăпартланса калаçрĕ:

— Сутлăх çук çав, хамăра валли çеç. Вĕсен бригадирĕсем те е агроном, е инженер вĕт. Фермăсене те зоотехниксем ертсе пыраççĕ. Йăлтах хăйсен вăйĕпе вĕрентнĕскерсем. Акă, тĕп диспетчер та кăçал институт пĕтерчĕ. Ан пăхăр ытла пирĕн хĕрсем çине, пурпĕрех качча илсе тараймастăр, чикĕллĕ пурăнатпăр пулин те. Астăвăр, пирĕн йăли çапла: хамăр специалистсем валли хамăр патрах каччă е хĕр тупăнать. Сирĕн пек таçта парса ямастпăр. Авă епле ĕçлемелле, пурне те шута илмелле. Максим Максимовичран ыйтăр кун пирки. Тельман Федотовичпа иккĕшĕ çирĕм çул каяллах хыврĕç çак пуянлăх никĕсне.

Кўршĕсен секретарĕ çаплах «Пуян ялан хытать» тесе пăшăрханать. Волков ăна пўрнипе юнасах ăнлантарчĕ:

— Малтан кӳршӗ анине вырса парса, кайран тин хӑйӗнне вырнӑ хресчен пулнӑ-ши ҫӗр ҫинче? Малтан ют районти ют колхоза ура ҫине тӑратса хӑйӗн колхозне чи юлашкинчен ҫӗклеме тытӑннӑ председатель те пулас ҫук. Мӗнле майпа ӑслӑрах ӗҫлемеллине вӗренӗр эсир, ытти вӑл йӑлтах хӑвӑртан килет.

Кӑнтӑрла иртсен Волков диспетчер сехечӗ ирттерчӗ. Вӑл вӗҫленнӗ хыҫҫӑн Юлдашев хӑйсен ҫыннисене «шурӑмпуҫсем» умӗнчех хытарса каларӗ:

— Кадрсем вӗрентсе хатӗрлес пирки темшӗн итлеместӗр мана. Вӗсене институтсемпе техникумсем урлӑ пухатпӑр, тетӗр. Министерствӑна панӑ заявка чӗрӗ ҫын мар. Хамӑр валли хамӑрӑнах вӗрентмелле. Тельман Федотович пире ку енӗпе аванах ӑс пачӗ.

Вӑрманкаса таврӑнсан хӑнасене апата чӗнчӗҫ. Хӑнавӗрле пӑхассине райком унччен те хӑй ҫине илмен те, Мургаев, сӗтел ҫинче хаярри ҫуккине асӑрхаса, пӗр хушӑ аптӑраса тӑчӗ. Большаков хӑлхаран пӑшӑлтатсан тин вӑл сӑмахне пуҫларӗ:

— Самани хӗсӗк пулнӑшӑн мар, вӑхӑчӗ хӗсметленсе ҫитнӗрен сире паян, хаклӑ кӳршӗсем, чейпе хӑналас терӗмӗр. Пире йывӑр ан илӗр. Апачӗ тутлӑ пултӑр.

Черккене хӑнӑхнӑ алӑсем тӳрех кашӑк тытма та аптрарӗҫ. Апатланнӑ май ташӑ кӗвви янӑраса кайрӗ. Авланнӑ пулин те, Оманов Шӑхран пикисене манман-ха, Роза Митрофановна ташша чӗнчӗ, депутат паллине тытса пӑхас тесе хӗрӗн чӗччине сӗртӗнсе чунне кантарчӗ. Роза ун аллине чӑмӑртарӗ те ӑна вальс ҫеммипе ҫавӑрттарма пуҫларӗ.

— Вӑт ку банкет та банкет вара — ӗмӗрте курман чей банкечӗ. Ай мӗнле аван. Тепрехинче, пирӗн пата пырсан, таҫти кӑнтӑрсен хӑрӑк чейӗпе мар, сар ҫип ути чейӗпе хӑналӑпӑр, — терӗ Шӑхран хӗрӗ.

— Тен, сар ҫип ути эрехӗпе?

— Чейпе ҫеҫ. Ҫӑкӑр-тӑвар хире-хирӗҫ теҫҫӗ.

Шавпа усӑ курса Панхристоф хӗре ирӗкерех илсе тухрӗ те, пӑшӑлтатрӗ:

— Роза, ман арӑм Хухлянтине ашшӗсем патне кайнӑ, тен, кая мар, чечексем хӑрма тытӑнчӗҫ ман хваттерте, шӑваракан кирлӗ.

Тутине выляткаласа Роза йӑл кулчӗ:

— Ҫын лартнӑ чечеке шӑварас килмест ҫав ман. Эпир хамӑр чечек акатпӑр кӑҫал. Упӑшкапа шӑварма пуҫлатпӑр, ӳстеретпӗр. Тавтапуҫ. Альбинӑран салам. Телей сунатӑп.

Тит Милов элекличченех тулхӑратчӗ-ха Мургаев, Большаков ӑна паян сӑра-эрехпе ашкӑнсан ыран ӗҫрен тухса сирпӗнетӗн тесе хӑратни ҫинчен пӗлсен, чӗтреме пуҫларӗ. Юлашки вӑхӑтра унӑн кӑшт пӑлхансанах нервисем ирӗке каяҫҫӗ. Пирус мӑкӑрлантарса ярсан кӑштах лӑпланчӗ те вӑл райпо пуҫлӑхне урӑх камантӑ пачӗ:

— Чикӗре тӑватпӑр банкет! Кам хуҫа Вӑрманкасра? Кӗпӗрнаттӑр влаҫӗпе эс те усӑ курса юл. Юлдашева хӑвӑн машинуна лартатӑн.

Концерт вӗҫленнӗ хыҫҫӑн шӑхрансем тытӑнса тӑмарӗҫ, сыв пуллашса ҫула тухрӗҫ. Милов ӳкӗтлесе Юлдашева хӑй ҫумне ҫывхартрӗ. Мургаев та унпа хыҫалти ларкӑча ларчӗ. Калаҫу тем ҫинчен те пырать, анчах пурпӗрех хӑйсен суракан суранне сӗртӗнмесӗр иртмест.

— Иксӗмӗр ӗнтӗ эпир пӗр-пӗрне йӗкӗрешрен те ҫывӑхрах пӗлетпӗр пуль. Ҫапла-и, Яков Сидорч? — сылтӑм аллине Мургаев хул пуҫҫийӗ ҫине хучӗ Юлдашев.

Тусӗн сылтӑм пӗҫҫине ыратмаллах пӑчӑртарӗ кӳрши:

— Вӑрманпа уй йӗкӗрешӗсем эпир — ҫӗр йӗкӗрешӗачисем. Мӗнле ӗҫлетпӗр эпир? А эс лӗпӗртетен ватӑлатпӑр тесе. У-ух, перетпӗр-ха, пур хӑвачӗ...

Йӑлл кулчӗ те Юлдашев шӑхӑркаласа илчӗ, вара ҫамкине ҫатӑрласа тытрӗ:

— Хӑмпӑсем эпир. Ҫурӑлса кайма патне ҫитнӗскерсем. Чӗлхепе те, куҫпа та йӑмшакланнӑ. Пӑхатӑп та сан Большакову ҫине, шухӑшлатӑп: маначчӗ вӑл.

— Пашалстӑ, Егор Васильевич, песплат парса яратӑп, паянах илсе кай, ҫийӗнчен ещӗк эрех парса яратпӑр. Ҫапла пуль, Тит Нилыч?

— Эп вакунĕпех пама хатĕр, - çирĕппĕн хуравларĕ Милов.

— Туятăп Альберт Григорьевич сире мĕнле нушалантарнине... Да-а, ытла нумай ларатпăр пулас хамăр пукан çинче... Çулпа çеç мар, ĕçпе те ывăннă иккен эпир. Ватăлатпăр пуль çав, Яков Сидорович. Ват лашапа çамрăккине танлаштараймăн. Кӳлсен, тиесен йывăртарах, хăшĕ мала каясси паллă. Пирнешкеллиех юлать. Ăна хăть пушăпа çап. Вăйĕ çук ун, хевти пĕтнĕ. Тăварса ямалла та кантармалла çеç ăна. Пире те çавах. Пĕркун обкомра пĕрремĕшне каларăм: «Юлашки пилĕк çуллăх, çитессине туртаймăп, ывăнтăм». Шухăшласа пăхăпăр тесе лăплантарчĕ. Çапла, тусăм, Альберт Григорьевич хăвăнтан малта чупса пынишĕн кӳренме кирлĕ мар. Пурнăç чуппи вăл. Туйрăм эп, эс тутарман çав Волковсене мĕн пур çĕнĕлĕхе — Большаков тутарнă. Çапах та район пуçĕнче ывăннă, кивелнĕ пуçлăх мар, çурхи тиха пекки кирлĕ. Пур вĕсем, парас пулать вĕсене тилхепене. Хам та юлашки çул ĕçлетĕп пуль. Ырăпа каяс ĕçрен.

Итлесе пычĕ-пычĕ те Мургаев тусне, машинăна чарма ыйтрĕ.

— Уç-ха пĕрне, — терĕ Милова тарăхуллăн. — Чуна çăвас. Кӳршĕ çăварне те хуплас. Юрĕ, Егор Васильевич, хамăр пахчара хамăрах татăпăр çимĕçне.

Коньяк ывăннă ват шăм-шака уçăлтарсах ячĕ. Калаçу та хĕрарăм илемĕ еннелле сулăнчĕ, шофер та вара хăюлланчĕ, пуçне пăрса, ыйтрĕ:

— Атьăр Большаковпа Аленчикована улăштаратпăр?

Милов ямшăка аякран тĕртрĕ:

— Кама кампа улăштармаллине ăна сансăрах пĕлеççĕ. Пăх малалла лайăххрах!

Чикке çитнĕ те иккен вĕсем. Мургаев тавралла пăхса çаврăнчĕ, райканаш пуçлăхне курмарĕ. «Килмен-ши? Юлнă пулсан тата аванрах. Хамăра ирĕк. Атту пĕрмай ун куçĕнчен пăхас пулать», — тесе шухăшларĕ пĕрремĕш секретарь кӳршине ыталаса илнĕ май.

Аллине черкке тытса Юлдашев сăмах каларĕ:

— Тăванăмăрсем-вăрманкассем! Хăвăрăн çитĕнӳсемпе паллаштарнăшăн, çăкăр-тăварпа кĕтсе илнĕшĕн, чейпе хăналанăшăн тавтапуç. Чей чăнах та кăмăл-туйăма çĕклерĕ, чĕрене çемĕçтерчĕ, ывăннине ирттерсе ячĕ, пуçра çĕнĕ шухăш çуратрĕ, кĕлеткене кахаллăхран çăлчĕ. Çак йăлана туслăх сĕтелĕ хушшине яланлăхах кĕртсе лартсан та çылăх пулас çук. Эсир унпа та пирĕнтен иртсе кайрăр. Анчах чикĕре çĕннинчен киввине куçса кайрăр. Куншăн та тав. Çапах та çĕннишĕн, халăха усă кӳрекен çĕнĕлĕхшĕн ĕçер те юлашки черккене... Сывлăхшăн, хаклă тусăм!

Мургаев ăна вăрттăн ятласа илчĕ. Юлдашев вара çапла каларĕ:

— Туслăх, Егор Васильевич, эрех кĕленчи тытса çак юпа тавра хоппалатса ташланинче мар та çав... Чей банкечĕ хыççăн кĕçĕр арăмпа ытакланса çывăрап ĕнтĕ тинех тесе ĕмĕтленеттĕм, халĕ мĕн пулса тухрĕ, пĕлместĕп. Ытла çемçешке эпир.

Чикĕри чул юпа силленсе хурланчĕ.

Хăйĕн «Атăлне» кĕрсе ларнă хыççăн Мургаев Ваçли Михалча асăрхаттарчĕ:

— Ытлашши хыт ан хăвала... Чукун çул хĕррипе кайма çук-и?

— Масар çырми пуçĕнчи кĕпере пăсса тăкнă, май çук, — терĕ кулса ярассинчен аран-аран чăтса Ваçли Михалч.

Акă умра Чансаслов куçĕ прожектор пек çутатать. Мургаев куçне шлепкипе хупларĕ, шуйттан яланах киле ларса пынине аса илнĕскер, аллине райкомалла сулса кăтартрĕ. Чансаслов масар çумĕнче тăрса юлчĕ.

Мургаева райком коменданчĕ уçса кĕртрĕ. Вăл иккĕмĕш хута йывăррăн хăпарчĕ, хăйĕн пӳлĕмне уçса кĕчĕ, плащне хывмасăрах сĕтел хушшине ларчĕ, хăнăхнă йăлапа телефон аврисене çĕкле-çĕкле хучĕ, питĕ ăслă та шутсăр кирлĕ кăтартусем парасшăн пулчĕ, ан-

чах сехечĕ çине пăхса илчĕ те, ах! тесе чĕрине хыпашларĕ, пирусне чĕртрĕ, бюро ирттермелли вăрăм сĕтел пуçне куçрĕ, чавсаланчĕ, икĕ аллипе пуçне пăчăртарĕ: «Ах, ку Большаковсене! Юлдашев юлташ та манран кулать. Пĕлетпĕр-ха эпир ăна района ертсе пыма. Сиртен ыйтас çук!»

Пĕтĕм чунĕпе-кĕлеткипе туять вăл çакăнтан кĕçех каяссине. Хăшĕсем ăна, тен, район патши тесе те шутламаççĕ, çавăнпа Большаков куçĕнчен пăхаççĕ.

Çапах та Вăрманкас районĕн пурнăçĕ, Вăрманкас çыннисен шăпийĕ çак пукан çинче, çак сĕтел тавра аталанса, татăлса пынă. Ыррине те, усаллине те парти бюровĕ йышăнăвĕпе татса панă. Миçе çын, миçе çемье йĕмен-ши Мургаев хистесе бюро членĕсене алă çĕклеттернĕ хыççăн?.. Çăкăр ыйтăвĕпе, ĕмĕрхи ыйтупа, Вăрманкасри хисеплĕ учителе çапса хуçни аса килчĕ. Виçĕ буханка çăкăршăн çынна çĕр айне чикме хатĕрччĕ. Ăна вăл вăрламан, сыснине çитерме туяннă. Ах, сысна самани...

Мургаев пуш пӳлĕме тĕтĕрет. Хыçлă пукан çинчен сиксе тăрать те вăл каллĕ-маллĕ утать, стена çумне пырса тăрать, чее куçпа пăхакан Ленинран çурăмпа пытанса кĕтесри сейфа уçать, çӳхе стакана коньяк тултарать, васкамасăр ĕçет, шоколад пур çинчех, ăна ĕммест, ун вырăнне çăвара тепĕр пирус хыпать. Халĕ унăн пушшех тухас килмест çак кĕтесрен, вăл Ильич куçĕнчен хăрать. Хут çинчи çул пуç ăна çапла калассăнах туйăнать, туйăнать çеç те мар, кăрмафун пластинкинчен-хăвăлĕнчен янăранă пек кĕрет хăлхана селĕп сасă: «Мургаев юлташ! Сверхчрезвычайлă итле! Мускаврa парти шкулĕнчех марксизм-ман теорие виççĕлĕх те вĕренеймерĕн, тĕнчен ытти наукисене те пуçна хываймарăн, ухмах пуçупах ал туйии ярса тытрăн, пушăпа хăлаçлантăн, «эпир — революционерсем!» тесе мана намăслантартăн, этемлĕхĕн чи тăнлă ăсчахĕсен шухăшсăннине çĕртрĕн, хăвăрăн ыр кăмăллăхшăн кăна çун-

нипе çутă пайăркана хурапа сăрлама тăшмансене ирĕк патăн. Пултараймарăн ман салтакăм пулма! Пурнăçран юлса пыратăн. Пирĕн пуç тĕшшине ăçта, хăçан, хăш вăхăтра камăн ури айне варăнтармаллине пĕлеймерĕн. Парти ĕçĕнче çил-тăвăл майĕпе ӳксе юлнă çӳп-çап вырăнĕнче пултăн. Кĕнеке уçса-хупма ӳркентĕн. Йăпăлтисем уçнă кĕленче тĕпне сăнама вĕрентĕн. Наянлантăн. Куçран пăх ман çине.Кала, мĕнле ĕçлес, мĕнле пурăнас тетĕн малашне?Вилсен те сана палăк лартмĕç. Çăханов юлташа пытарнă пек чысласа пытармĕç. Пăх та ман çине, паянлăха пӳлĕмрен тух. Кĕçех вăл сан пулмĕ, санран та лайăх пĕлекенĕн, паянхи пурнăç ыйтакан хĕрӳ çыннăн ĕç вырăнĕ пулĕ. Тух хăвăртрах! Чĕлĕм тĕтĕмĕнчен, сăра-эрех сĕрĕмĕнчен хăвăртрах тасалтăр район «хупахĕ»...

Шухăш пăтранăвĕпе, коньяк хăвачĕпе арпашăнса кайнă пуç тăнлавран мăлатукпа çапнă пек тӳнклетет, ĕнсе çине пăт пуканĕ хунă тейĕн. Ухмаха тухма пулать пуль капла, Большаковсен ури айне пулсан? Çук, Мургаев нихçан та вĕсене пуç çапмасть. Мургаев аллинчеха халь влаç. Çак сейф та... Тепре ярса ĕçет те вăл, унтан, тем аса илсе, тепре тултарать, аллине çĕклет: «Тав сана, Атăл землякне!» Сейф умĕнчен аран уйрăлчĕ Мургаев, вара хыçалалла пăхмасăр анкарти пек пӳлĕмрен тухрĕ. Паян вăл Ильич куçĕнчен хăрать, çул пуçа хирĕç пăхма вăтанать, унран таратъ... Райкомран тухсан... каллех ăна Ильич кĕтсе тăрать. Аллине çĕклесе тем калать, анаталла кăртлаттарса та шăхăртса иртекен пуйăс сассипе хупланнă хăлхи ăна тăнлаймасть. Акă, палăк хыçĕнчен шуйттансен делегаци пуçлăхĕ Чансаслов як сиксе тухрĕ. Çав вăхăтрах Ваçли Михалч та машинипе çитсе тăчĕ.

20

Ĕнер Вăрманкасран Çемен Быстров вăрттăн хыпар пĕлтернĕренпе канăç çухатрĕ Крутов. Çĕр çывăраймарĕ.

Ирех вара райкома тухса кайрĕ. Колхоз председателĕ Волков ăна вăрăм çула хăй чупакан «Атăлне» пачĕ. Шупашкарах çитмелле-çке.

Райкомра шăпчĕ-ха. Ĕçлекенсем килеймен. Шăпчăк ыйхиллĕ Быстров çеç «Шурăмпуç çăлтăрĕ» колхоз парткомĕн секретарьне кĕтсе чӳрече сакки çине уртăнса пăхса выртать. Хĕрĕвне курах-çке Семен Ильича иккĕмĕш секретаре суйларĕç. Çынни пит чĕрĕ, пултарать. Мургаев та мухта-мухта шантарать ăна: «Тепĕр виçĕ çултан эсĕ ман вырăнта лармалли пĕрремĕш çын. Унччен пĕр-пĕрне ăнланса, лăпкăнах ĕçлер». «Эп сире ăнланатăп, анчах лăпкăн ĕçлеме пултараймастăп, хăвăрах пĕлетĕр, куратăр, вăхăчĕ хĕрӳ, хăвăртлату тапхăрĕ, çĕнĕлĕх кĕрешĕвĕ вăйланать», — килĕшмест вăл пĕрремĕш секретарьпе. Машинăран тухнă Крутова Быстров алă сулса саламларĕ. Тĕл пулсан вĕсем нумай калаçса тăмарĕç. Обком валли хатĕрленĕ хутсене паппкине илсе чикрĕ те Крутов васкасах аялалла анчĕ. Алăкра вăл Оманова хирĕç пулчĕ. Пантелеймон Христофорович иртнĕ партконференцире пай пуçлăхĕнчех сыхланса юлнăччĕ-ха. Мургаев ăна хăй пенсие тухиччен пурпĕрех секретаре лартатăп тесе шантарса пурăнать. Анчах ĕмĕчĕ ниепле те пурнăçланаймасть.

— Салам чупкăна! Ăçта ирех вĕçтерен? — терĕ Оманов ăна алă парса. — Чупсан-чупсан, такăнан-ха.

— Пулĕ, такăнасси те пулĕ. Такăнсан та, ӳкес марччĕ. Ӳксен те, тăрасчĕ. Тăрсан — малаллах утасчĕ. Хам çулпах пырасчĕ, — куларах хуравларĕ Крутов.

— Сан çулу ĕнтĕ пĕр çул — ял çулĕ. Унтан эс тин каялла тухаймарăн. Ямастпăр сана малалла. Ум памастпăр. Çавăнтах ватăлтаратпăр. Эс пушали критикле пире. Сан сăмаххусем вĕсем ак çак стенана пăрçа сапнă пек кăна. Яков Сидорович пур чухне хăрамастпăр. Эх, Максим Максимович, пĕлместĕн пурăнма, суйламарăн телейлĕрех, лăпкăрах çул. Пĕрмай тем çитмест сана, ялан тем кирлĕ. Куртăн-и халь кам пуçĕнче мĕнле çĕлĕк лар-

нине? Мономах ҫĕлĕкĕ пирĕн пуҫ ҫинчех. Итлемерĕн мана. Итленĕ пулсан, Быстров вырӑнне заведующие ҫирĕплететтчĕҫ. Халĕ... Ӑнланмалла-и?

— Ӑнланмаллах, Панхристоф. — Каҫарӑр, пустуй пакӑлтатса тӑма вӑхӑт ҫук. Васкамалла. Ҫул кĕтет. Вӑрӑм ҫул.

Оманов шанчӑксӑррӑн алӑ сулса иккĕмĕш хуталла хӑпарса кайрĕ. Крутов ҫула тухрĕ.

Ку ҫул унӑн пурнӑҫĕнче ҫĕн ҫул пуласса вӑл Шупашкара ҫитсен ӑнланчĕ. Ӑна Вӑрманкас райкомĕн пĕрремĕш секретарьне сĕнеҫҫĕ. Мургаев отпускран тухсанах пленум пулмалла. Унччен унӑн колхозри ĕҫĕсене ҫĕнĕрен йĕркелемелле-ха. Партин ҫирĕм ҫиччĕмĕш съезчĕ хыҫҫӑнхи ҫĕнĕлĕх юхӑмĕ пурнӑҫ аталанӑвне тĕпрен хумхатса кисретнĕ вӑхӑтра ҫирĕплĕх кирлĕ. Парти сӑмахне халӑх чӑннипех ĕнентĕр, вӑл чӑннипе кĕрешĕве вӑйлаттӑр тесен, Крутовӑн та урӑхларах, халӑха килĕшӳллĕрех, ҫыпӑҫуллӑрах, усӑллӑрах ĕҫлемелле теҫҫĕ — район калӑпӑшĕпе.

Шухӑшла-шухӑшла калаҫрĕ Крутов хӑйне чĕннĕ пуҫлӑхпа. Колхоз-совхоз хуҫисене райком шанса панисем пулкаланӑччĕ-ха, анчах вĕсем пурпĕрех хуҫалӑх ĕҫĕпе ытларах вӑхӑта ирттереҫҫĕ, ӑслӑлӑх, шухӑшлавлӑх ыйтӑвĕсене хыҫала хӑвараҫҫĕ. Тем тесен те халӑх пуҫĕнче ӑс-тӑн шутлавҫиех, ӑсчахах кирлĕ. Ҫакна юлашки ҫулсенче мана пуҫларĕҫ. Ҫавӑнпа партийĕ те хӑйĕн тĕсне ҫухатса пырать. Партком секретарĕнчен тӳрех — райком секретарьне?.. Килте Маруҫ ырламалла ҫеҫ ĕнтĕ ку сĕнĕве... Упӑшки пĕрмай хура алса тӑхӑнса ҫӳренĕшĕн ӳпкелешни те пулнӑ. Ҫынсем пек перчетке те тӑхӑнтартас килет, паллах, киле ҫакланма пĕлмен «чупкӑна». Арҫын пур ҫинченех хĕрарӑм вутӑ ҫурни те пулкаланӑ вĕсен. Председательсемпе парторгсене тилхепе тыттаракан лав, тем, ҫирĕп, тӑн-тӑн кустӑрмаллӑ пек мар, шини ҫийӑнса тухса ӳкессĕнех туйӑнать. Шанчӑклах мар. Юлташсенчен те аванах мар. Ҫавӑнпа вӑл

хирĕçлерĕ:

— Манран вăйлăраххисем, ăстараххисем те пур вĕт пирĕн?

— Большаковпа Быстрова калатăр пуль?

— Çавсене. Иккĕшĕнчен пĕрне суйлама пулать.

— Юрĕ, шухăшлăпăр апла, — терĕ асли, кулкаласа. — Эпир сире, хамăр шутпа, пĕрремĕш секретарь тăватпăр та, тӳрех Чулхулана ăс пухма яратпăр тесе палăртнăччĕ. Халĕ ĕнтĕ палăртнине пăсмăпăр, сирĕн хушамата бюро çирĕплетнĕ, телейлĕ çул сунатăп.

Крутов та чăтаймарĕ, кулса ячĕ:

— Манпа мар, хушаматпа ĕçлетĕр: мана секретарь те тунă, вĕренме те янă.

Çапла Макçăм Крутов пуш уйăхĕнче пĕр уйăхлăха тахçанхи тăван хулана çитрĕ. Пуç туптамалли тимĕрçĕ лаççине таврари республикăсемпе облаçсенчен парти, совет, пичет пуçлăхĕсене пуçтарнă. Вăл хăйпе пĕрле вĕреннĕ «ачасене» те тĕл пулчĕ. Хăшĕсем самаях шӳме ĕлкĕрнĕ, măн кăмăлланнă, чулланса хытма пуçланисем те курăнкалаççĕ. Вĕсен хăйсен ушкăн. Максим Максимович кĕлетке пăсманнисемпе чĕрисене кăмпалантарманнисен çумне çыпçăнчĕ. Хăйпе пĕрле вĕреннĕ, пĕр пӳлĕмре çывăрса пурăннă Валентин Винокуров Сергач хула комитетне ертсе пырать, йĕлтĕрпе чупма пăрахман. Иккĕшĕ Пушкин ячĕллĕ парка малтанхи пекех хул-çурăма çемçетме, урасене çирĕплетме çӳрерĕç, пĕрле театрсенче, музейсенче пулчĕç, ирĕклĕ вăхăта чăннипех хула илемĕпе киленсе, культурипе савăнса ирттерчĕç.

Чулхула Макçăм Крутовăн чунне лăсканă та, кантарнă та. Вĕренӳ кăмăла кайнăччĕ, Маруçпа савăнса киленнĕччĕ. Ока Атăла юхса кĕнĕ тĕлте, çыранра, Линăпа тĕл пулни, Свердлов урамĕнчи авалхи çуртра амăшĕпе калаçни тата çав çухалнă хĕрарăма «Чулхулайка» ресторанĕнче качча тухнă ятпа саламлани вара питĕ тарăн

шухӑша ярать. Вӗсене аса иле-иле вӑл ҫӗр ҫывраймасть. Темшӗн-ҫке курасах килет пурнӑҫ сӗткенне ӗмсе тӑранайман ҫак хӗрарӑмсене. Чуна тем йӑшӑкласа тӑрать.

Чӑтаймарӗ Крутов, Сормовӑна персе ҫитрӗ, тымарсен хваттерне шыраса тупрӗ, анчах — кӑлӑхах. Вӗсем вырӑнӗнче урӑх офицер пурӑнать. Вячеслав Васильев подполковнике Атӑл ҫи ҫар округне куҫарнӑ иккен. Тан Ваҫли ачипе Тарӑнварти савнине курасси пулмарӗ.

«Эп сан аннӳ, эс — манӑн ывлӑм Владик» текен Антонина Ивановна мӗнле пурӑнать-ши тата? Ун патне кӗме хӑяймарӗ. Общежитине ҫитсен тепӗр тӗлӗнмелле тӗл пулу пулчӗ. Аялта, йышӑну пӳлӗмӗнче, Меркурий Керженев лара парать. Ют юнлӑ арҫынсем тӑванлах ыталанса илчӗҫ. Меркури ашшӗпе Михаил Степановичпа Макҫӑм амӑшӗ Антонина Ивановна арлӑ-арӑмлӑ пурӑннӑ-ҫке. Крутовсемпе пӗрле Семенов хулакомӗн пуҫлӑхӗ, Макҫӑмпа пӗр группӑра вӗреннӗ «ача» пур вӗт. Пӗркун вӑл ӑна хӑех Меркурий Керженева салам калама хушнӑччӗ. Акӑ халӗ салам парни ун умӗнче шӑлне йӗрсе тӑрать: «Мӗнле, паллӑ тӑватпӑр-и? Ӑҫта?» Епле чӑтса тӑрӑн-ха хаклӑ тӗл пулӑва черккене чиксе ҫумасӑр? Кайрӗҫ-кайрӗҫ те, утрӗҫ-утрӗҫ те, пупле-пупле «Чулхулайкӑна» ҫитрӗҫ. Мӗн ҫинчен кӑна калаҫмарӗҫ, кама кӑна аса илмерӗҫ «тӑвансем».

— Аннӳ карти таврах утатӑн-ха апла эсӗ, — кӑпӑкланакан эрехе майӗпен ӗҫет Меркури.

— Хамӑр тавралӑх та ӗнтӗ, мӗн тӑвӑн, — хашш сывлать Макҫӑм.

— Ҫав туй хыҫҫӑн та курман эпӗ ӑна, килмен те, тарӑхнӑччӗ те атте хваттерне ывӑлӑма ҫыртарманшӑн...

— Халь мӗнле пурнать-ши ҫамрӑк упӑшкипе?

— Атя кӗрсе курар? — хӑюллӑн сӗнчӗ Керженев.

Нумайранпа канӑҫ паман ӗмӗчӗ тинех пурнӑҫланма лайӑх май килсе ҫитнӗшӗн хӗпӗртенӗ Макҫӑм тӳрех килӗшрӗ. Акӑ часах вӗсем паллакан ҫӳллӗ, касса илемлетнӗ йывӑҫ алӑк умне ҫитсе тӑчӗҫ. Шалтан арҫын сас-

си илтӗнчӗ, камсем пулнине ыйтать. Вӗсем хӑйсем камне пӗлтернӗ хыҫҫӑн, алӑк хуллен уҫӑлчӗ. Йӑрӑмлӑ халат тӑхӑннӑ вӑтам ҫулсенчи арҫын вӗсене кӗме ирӗк пачӗ, шалти пӳлӗмрен хӗрарӑм сасси юрлавлӑн илтӗнчӗ: «Кам унта?» Хӑнасене тӗпелелле иртме сӗнчӗҫ. Арҫынсем алӑ панӑ вӑхӑтра сасӑ илтӗннӗ енчен тирпейлӗ тумланнӑ, кӑтралатнӑ ҫӑра ҫӳҫлӗ чиперкке тухрӗ те Меркурине ыталаса питӗнчен чуп турӗ, унтан тин: «Мӗнле килме пӗлтӗн, пичче», тесе утмӑл турат чечекки тӗслӗ куҫне Макҫӑм еннелле тинкерчӗ:

— Ку тата кам?

Меркури вӗсен аллисене тытрӗ те:

— Ку сан, Лариса, тепӗр пиччӳ пулать, Максим. — Паллашӑр.

Ларисӑпа Макҫӑм пӗр-пӗрин куҫӗнчен пӑхса тӑчӗҫ-тӑчӗҫ те, аллисене хыттӑн чӑмӑртарӗҫ.

— Э-э, эхэ, анне тахҫан каланине астурӑм, аттепе пӗрлешиччен чӑваш ачипе ҫуратнӑ ывӑл пур тетчӗ, апла эсӗ пулатӑн вӑл ман пичче... — аллисене кӑкӑр умне тытрӗ Лариса. — Владик ятлӑ пек астӑватӑп-ҫке... А тата мӗншӗн Максим? Ӑнланмастӑп.

Хӑй умӗнче чӑнах та йӑмӑкӗ тӑнине туйса илнӗ Крутов ӑна ҫинҫе пилӗкӗнчен ҫавӑрса тытрӗ те ҫӳлелле ҫӗклерӗ:

— Чӑн-чӑн пиччӳ эп сан, пӗлетӗн-и, ӗмӗрӗпе шыранӑ тӑвану! Анне ӑҫта? Ай, пуҫласа тухса кайрӗ ман ҫӑвартан «анне» тени. Ҫак анне ҫуратнӑ-ҫке ҫапах та пире, иксӗмӗре, йӑмӑкӑм. Аттесем пӗр мар пулин те эпир — тӑванах, пӗр тӑванах.

Ҫакна илтнипе Лариса та, вӗсен ҫумӗнче кускаласа тӑракан арҫын та пуҫӗсене усрӗҫ. Лариса пуҫӗпе тепӗр пӳлӗм еннелле кӑтартрӗ:

— Ҫавӑнта. Паллаштарам, манӑн упӑшка, Олег Артуров, Мускавран, амӑшӗ Арбатра пирӗн пӗчӗк Артурчике пӑхать. Хамӑр кунта пӗр уйӑхлӑх опера театрне килнӗччӗ. Эпир «Раҫҫейре», хӑна ҫуртӗнче, пурӑнаттӑмӑр. Анне санаторине сипленме кайнӑччӗ. Эпир ҫит-

нине пĕлсен васкаса таврăнать те вăл... килте тăр кăнтăрлах Захар пиччене вăн ак кунти драма театрĕн актрисипе тытать. Тӳрех шалкăм çапать аннене. Хăй вĕрентнĕ, хăй чи юратакан пултаруллă актриса çавăрса илме пултарнă-çке унăн упăшкине. Килте тепĕр драма лартаççĕ, намăссăрсем... Эй, турă... — нĕшĕклетсе йĕрсе ячĕ Лариса. — Атьăр, иртĕр анне пӳлĕмне?

Тепĕр çывăрмалли пӳлĕме йăмăкĕ хыççăн пиччĕшĕсем, амăшĕпе ашшĕ пăрахнă пăхаттирсем, шăпăрттăн кĕчĕç. Урам еннелле пăхакан чӳрече çумĕнче Антонина Ивановна выртать. Кĕлеткине чечеклĕ çивиттипе хупланă, сулахай алли кăкăрĕ çинче, сылтăммине уснă, куçне чарса пăрахнă, тути хĕррисем тем пăшăлтатса сиккелеççĕ, туртăнса пĕркеленнĕ пичĕ тăрăх шăрçа йăлтăртатса анчĕ. «Анне!» тесе ун патне хыпăнса чупса пыманшăн Ларисăпа упăшки Макçăмран тĕлĕнчĕç те пуль, анчах унăн та, Меркурин те куçĕсем шывланмарĕç. «Турă-ши, Хăват-ши, мĕн вăл, кам вăл тĕнчере çавăрттарать, çав вăй асап кăтартать пуль сана, анне, мана йытă çури выранне те хуманшăн, Меркурине ашшĕсĕр тăратса хăварса нушалантарнăшăн. Пурах пуль çут тĕнчере этем чун хавалĕпе выляса йĕрке туса пыракан Аслă Хăват», — тесе шухăшласа илчĕ те Макçăм, чĕрине хытарсах чĕрĕ вилен сылтăм аллине ачашларĕ, пăр пек сивĕ çапакан тăван пит-куçĕ патнелле тутине çывхартрĕ.

Хăна пӳлĕмĕнче апат сĕтелĕ хатĕрлесех шăкăлтатса ларчĕç вĕсем. Лариса хăйĕн пиччĕшне мĕншĕн Владик мар, Макçăм тесе чĕннине те, пиччĕшĕн ашшĕ-амăшĕ камсем пулнине те, арăмĕпе ачи-пăчи çинчен те пĕлчĕ. Пĕр-пĕрне хăнана чĕнчĕç. Артуровсем Чăваш çĕршывне çитсе курма шантарчĕç. Крутовпа Керженев ыран опера театрĕнче вĕсемпе тĕл пулаççĕ. Амăшне пăхакан хĕрарăм пур. Упăшки, еркенĕпе драма лартнă хыççăн, пырса та курман. Майри вилсен хăвăртрах хваттерне куçас тет пуль.

Меркурине Крутов хăйсен «хăна çуртне» илсе кайрĕ.

Çĕр каçма юлмасть вăл, васкать, ыран хăйсен ялĕсене оперăна илсе килет. Колхозĕ вĕсен çурмалла пайланнă та, Керженева пĕр портфельне тыттарнă.

— Астăватăн-и мĕнле măн пичкеччĕ пирĕн? Этем çурисем пĕр çĕрте пăнтăхас темерĕç, хирĕнчĕç те мекĕрленсе, пат! анчах татса пăрахрĕç тутăха пуçланă кăшăла. Халь икĕ пичке. Пурнăçра тем те курăн. Ку пички кăшăлĕсем тем таран чăтĕç-ха? Тем, тата вакланассăн туйăнать, малтанхи ывăç тупанĕ çине вырнаçакан пичкесем пулса тăрасран хăрататъ. То пĕлĕте çити хăпарса каятпăр, то çĕр çумне йăпшăнса выртатпăр... Аптриш ку ял ыйтăвне хулара татса паракансемпе, — тесе вăрçать вăл такамсемпе. — Эс хаçатра шав çĕклени пире пĕр енчен пулăшрĕ те темелле, тепĕр енчен..

— Мĕнле-ха? — тĕлĕнчĕ Крутов. — Обком секретарĕ ырларĕ-çке?..

— То-то çав обком секретарĕ ырларĕ, халăх мар. Йывăç кашăк ун чухне çапах та пире яшка çитернĕ. Ялĕ çине сурăхла пăхнăран аталанаймарăмăр. Кашăк цехне хупрĕç те лартрĕç çавăн хыççăн, обком хĕстернипе. Семеновра нумай шухăшласа тăмаççĕ, тытаççĕ те уçаççĕ тепĕр цех.

— Ăçта?

— Сирĕн патра, Çĕмĕрлере. Каскалакан-савалакан маçтăр нумай унта, вăрман çитет. Чăвашсене тăрантартăмăр вара, ĕнсене хыça-хыçах.

— Пĕлмен эп кун çинчен. Апла эп хур турăм сире?

— Аплах мар та ĕнтĕ. Ял хуçалăхне ура çине тăратма пуçларĕç çавăн хыççăн. Аякран тупăш килмест. Кут айĕнчинех ылтăнламалла.

Калаçу чукун çул вокзалĕнче вĕçленчĕ.

## 21

Юлашки вăхăтра Яков Сидорович Мургаев хăйне канăç паман Чансасловсене тĕлĕкре тăтăшах куракан пулчĕ. Чӳречерен те, алăкран та кĕреççĕ шуйттансем.

Хура-шурă пăрăва аса илтерекен Чансаслов пĕрмай хăлхаран кăшкăрать: «Вăхăт, Мургай. Нумай кĕттерен пире. Тумлан. Васка вырăн пушă чух!» Урраурраевпа Хамамалтанов тата Калтановпа Хӳрешкин текен шуйттанĕсем кăмака тăрринчен сиксе анаççĕ те, урайĕнче ташла-ташла юрлаççĕ: «Вăхăт-вăхăт сан, Мургай, хăвăрт-хăвăрт кăнса кай...»

Яков Сидорович вырăн çинчен чалт! сиксе тăрать, шуйттансене кăшкăрса хăвалать. Куç умĕнче кĕç никам та юлмасть. Арăмĕ ăна ачашла-ачашла ыталать. Мургаев тарлă çамкине ал шăллипе шăлса типĕтет те, буфетран кĕленче кăларса стакана эрех ярать. Ахлатса каллех вырăн çине лаплатса выртать. Арăмĕ ĕсĕклени те чĕрене хускатаймасть, Мургаев каллех Чансасловсемпе çапăçать.

Масар çумĕнчи çулпа та çӳреми пулчĕ ĕнтĕ Яков Сидорович. Пурпĕрех Чансаслов урăх çул çине тухса тăрать, «Район патши Мургай, эс халь манран ниçта та тарса пытанаймастăн. Эс — ман тус. Мана юрат, ларт пĕрле, кăтра пĕлĕт çине машинăпах вĕçсе хăпарăпăр», — тет мăн хырăмне шăлса.

Ĕçме те пăрахаймарĕ Мургаев, шуйттансенчен те уйăрлаймарĕ. Март вĕçĕнче çапла колхозран пит лайăх тиенсе таврăннăччĕ. Арăмĕ, тарăхнипе, пĕчченех кинона тухса кайрĕ. Яков Сидорович диван çине выртрĕ те шухăша путрĕ, пирус хыççăн пирус мăкăрлантарчĕ.

— Эх, пурнăç, — мăкăртатрĕ вăл сасăпах, — пĕтерчĕç ман пурнăçа Большаковсем, эх... Маймар, наука кандидачĕ пулнă та, пуçа каçăртнă. Ман ырлăхпа чап кураççĕ. Ман никĕс çинче района хăпартаççĕ. Кам тунă кунти ĕçе малтан? Кам тапаçланнă? Ăçта пулнă вĕсем унччен? Ăçтан вĕçсе килчĕç вĕсем? Ман çынсене райкомран хуса кăларасшăн. Прошлин çеç ватă. Прошлин та вĕсем майлă çаврăнса ӳкнĕ. Вăл та мана ăс парать. Ман пурнăç... Иртнĕ ман пурнăç — савăк иртнĕ, Большаковсенни пек мар. Эп вĕсенчен начар-им? Пурпĕрех

парăнмастăп. Çитеймеççĕ вĕсем мана. Пурпĕрех эп Мургаев. Эп — район хуçи. Эп пăхăнмас сире, Большаковпа Быстров. Пăхăнмас! Хĕстересшĕн мана, çӳлтен хĕстересшĕн! Шалишь! Мана пĕтĕм Шупашкар пĕлет. Курăпăр-ха Большаков мĕнле тапаçланнине. Комплекс-ферма мар. Комплекс пуйтарма та, çукка хăварма та пултарать. Пĕр чир лектĕр-ха? Крутовĕ тата? Хам инструктора илнĕскер. Секретарь, асли пуласшăн. Пĕрмай вĕрентет, ват çынна ăс парать. Пакăлтатчĕр. Эп хăрамас. Никамран та. Ман хӳтĕ пур. Ман алра район. Эп аслă хуçи. Хăратасшăн, тилхепе вĕçĕпе çапасшăн мана, хăваласшăн. Пурне те хам хăрататăп. Эп — Мургаев!

Сасартăк хырăм çинче Чансаслов курăнса кайрĕ. Хăранипе Мургаев çĕре шуса анчĕ, асăрхамасăр пирусне темле çĕтĕк çине ӳкерчĕ. Шуйттансем куç умĕнчен тасалччĕр тесе эрех ярса ĕçрĕ те вăл çывăрмалли пӳлĕме кĕрсе выртрĕ, майĕпен-майĕпен ыйхă ĕнтрĕкне путрĕ.

Пирус хĕлхемĕ ваткăллă çĕтĕке пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕн мăкăрлантарма тытăнчĕ, кăварланчĕ, çулăм тухрĕ, диван çинчи минтере, çивиттине ярса илчĕ...

Мургаев тĕлĕк курса выртать. Таçта, тамăкра пек, Чансасловпа хирĕç ларнă та шуйттансем, така хуранĕ айне вут пăрахаççĕ пек. Хурантан тăкăнакан вĕри сăмала çуннипе куçа тĕтĕм кĕрет, айăк пĕçерет. Вăраннă Мургаев аптранипе ниçта кайса кĕреймест. Пӳлĕм алăкĕ çулăм ăшĕнче, куçа тĕтĕм çиет, хăйĕн кĕпи çунать. Аран-аран чӳречерен тулалла тухса ӳкет вăл. Чупса пынă çынсем Яков Сидоровича сӳнтереççĕ, хăвăртрах пульницăна ăсатаççĕ.

Мургаев çурчĕ çулăм ăшĕнче. Тавралла халăх йăшăлтатать. Пушар машини çук. Çулăм чӳречесенчен тухса вĕри чĕлхипе стенасене çуллать, мачча ăшĕнче ниçта каяймасăр ахăрать. Акă, уласа, шатăртатса сиксе тухнă çулăм ашкăнса пĕлĕтĕлле кармашрĕ. Çил тухрĕ. Çунакан татăксем юнашар пӳрте чĕртсе ячĕç. Тин пушар машини çухăртни илтĕнчĕ.

Виҫӗ особняк ҫунса кайрӗ ҫав ҫурхи каҫ. Пушара урӑх малалла ямарӗҫ, чарса лартрӗҫ. Хӑҫантанпа ӗнтӗ мӑкӑрланма пуҫланӑ, ҫулӑмпах ҫунакан КПСС ҫуртне мӗнле пушарниксем сӳнтерме пултарӗҫ-ши? Коммунистсен туссӑр ҫемйинче те, хура халӑх хушшинче те ҫав сӑмах ҫеҫ ҫӳрет евӗккӗн.

## 22

Мургаев пульницӑра виҫҫӗмӗш кунне пуҫ мимине юн кайнипе вилнӗ. Хурлӑхлӑ хыпар пирки Большаков Крутова телефонпа пӗлтерчӗ.

Шкул директорӗ Лизунов, курса килнисене лекци вуласа панӑ хыҫҫӑн, вӗсемпе калаҫса кайрӗ. Пурин ҫине те шӑтарасла пӑхса юриех ыйтрӗ пулас:

— Ну, юлташсем, мӗнле, пирӗн патра тытнӑ экзамен ӗҫре пулӑшать-и?

Унпа юнашар тӑракан Крутов пуринчен малтан сӑмах хушрӗ:

— Пулӑшмасӑр, Петр Михайлович, пурнӑҫ экзаменне тытма вӗрентнӗшӗн тавтапуҫ сире. Халь, вӑн, тата ӑс хушма, пӗлӳ пухма килтӗмӗр.

Лизунов ун еннелле ҫаврӑнчӗ, пӗртен-пӗр аллине Крутова пачӗ, тата ҫивӗчрех пӑхса, каларӗ:

— Да. Эсир пурнӑҫ экзаменне мӗнле тытнине кӑштах пӗлетпӗр. Обкомсенчен сирӗн характеристикӑсене ыйтса янӑччӗ. Хамӑр вӗрентсе хатӗрленӗ «революционерсем» халӑхпа мӗнле ӗҫлени пит кӑсӑклантарать пире. Тен, усӑсӑрах пакӑлтататпӑр сирӗн умра? Халӑх умӗнче, парти умӗнче пурнӑҫ экзаменне нумайӑшӗ чыслӑ тытаҫҫӗ. Акӑ, эсир, Крутовччӗ вӗт, Чӑвашстанран? Парти строительстви пирки хампа тавлашнине, чӗрре кӗнине лайӑх астӑватӑп. Ман тахҫанхи туспа, Яша Мургаевпа, ӗҫлеттӗрччӗ мар-и-ха?

Крутовран ун ҫинчен тӗплӗн пӗлнӗ хыҫҫӑн, директор малалла хӗрӳленсех калаҫрӗ:

— Пурнăç экзаменĕ вăл — хамăр кашни кун тăвакан усăллă ĕç.Мĕнле пурнăçлама пултаратпăр ăна, халăх пире çав хакпа палăртать. Эп Яша Мургаева ахальтен аса илтĕм тетĕр-и? Çук. Пурнăç экзаменне парти вĕрентнĕ пек, парти хушнă пек тытсах пĕтерейместпуль вăл, ĕçке ернĕскер. Мана ун пирки хăвăр обком çынни курортра каласа тĕлĕнтернĕччĕ. Шел çамрăклăхри туса. Ĕçкĕ шĕкки парти-совет ĕçченне те, ахаль çынна та пĕрешкелех çиет иккен. Çапла, юлташсем, курсра та, ĕçре те çав шĕкĕрен хăраса тăрăр. Эпир сире ун пек пурăнма вĕрентмен.

— Ахаль те кĕреке хушшине ларсанах сирĕн канаш аса килет, — терĕ пĕри.

— Мĕнле канаш?

Пурте ахăлтатса ячĕç, çивĕчрех чĕлхеллĕ арçын хыçалтан персе ячĕ:

— «Сире эпир пачах та ан ĕçĕр, пачах ĕçме пăрахăр, тесшĕн мар, ĕçме вĕренĕр, культурăллă ĕçме вĕренĕр, ĕçкĕ-çикĕре те этем ятне ан ярăр, чыслă пурăнăр, çынсене те çаплах вĕрентĕр,» — тесе канаш параттăрччĕ.

Пуçа пăркаласа тăракан Лизунов çивĕч чĕлхеллине пӳрнипе юнарĕ:

— Хăвăр чăннипех çав канаша манман пулсан, пурнăç кĕнеки çине халех «пиллĕк» лартса паратăп.

Лекци хыççăн Крутов хăйсен пуçлăхне шыраса тупрĕ, ун пӳлĕмĕнче пурнăç философийĕ пирки каласса ларчĕ. Вĕсем пĕрне-пĕри ăнланчĕç. Лешĕ районти, ялти коммунистсен, халăхăн шухăшне ыйтса пĕлчĕ. Занятисем вĕçленесси те нумаях юлманччĕ. Курс заведующийĕ ăна киле кайма ирĕк пачĕ. Альберт Григорьевич машина янă.

Максим Максимович партшкулта кăштах чарăнса тăчĕ. Виççĕмĕш хута хăпарсан, «Пирĕн пурнăç» стена хаçачĕн çĕнĕ номерне курчĕ. Лайăх илемлетнĕ хаçат ăна тӳрех хăй патне туртрĕ. Унта Крутовăн «Маха пытарни» статйине те вырнаçтарнă. Çырасса

кунта вĕреннĕ чухнех çырнăччĕ, хаçата халĕ тин пачĕ. Акă мĕн калană унта:

«Хăçан, астумастăп, анчах пире тахçан пĕр çамрăк, ăслă философ Индири йогсен системи çинчен тĕплĕн каласа ăнлантарнăччĕ. Тăнран каяс пек вĕренсе ывăннă хыççăн, хамăрăн юратнă философ канашне аса илсе, утиял айне чăмрăм. Выртатăп вуласа, кĕнекере мĕн çырнине пуçа куçаратăп, куçа уçа-уçа хупатăп, сисмесĕрех тĕлĕрсе каятăп, тĕлĕк курма тытăнатăп. Эпĕ виле пытарнă çĕре пырса çитрĕм пек. Маха пытараççĕ-мĕн. Пирĕн çĕршывра революци пуличченхи çул вилнĕ Эрнст Маха, Австри физикне, философне, субьективлă идеалиста, эмпириокритицизм (опыта критиклени) юхăмне пуçаракана, материализм философине хирĕç тăракана, партшкулта вĕренекенсене тăнран яракана тепĕр хут пытараççĕ. Мĕншĕн ăна çĕнĕрен çĕре чикеççĕ тесе пуçа çĕмĕрсе тăмарăм, ушкăна лекрĕн тĕк, утмалла пĕрлех.

Колонна хуйхăллă кĕвĕпе чул сукмак тăрăх тăвалла йывăррăн куçать. Ту тăрне хăпаратпăр. Лашине чĕлпĕрĕнчен пирĕн философ Истматов тытнă. Тупăк çинче — Незнаев слушатель. Пит-куçне мăн кăмăллантарса вăл Левитан сассипе тезиссем вулать, паллах, Марксăн Фейербах çинчен çырнине мар, ман юлташăнне, унран çырса илнине.

Урапа хыçĕнче, колонна пуçĕнче, пирĕн юратнă-юратман хĕрарăм староста Матьтвая. Çурăм хыçне вăл почтальонсен мăн сумккине çакса янă. Унта — зачеткăсем. Кашнин мăйĕнчех — Ленин сăнне ӳкернĕ медальон. Пысăкăшĕ пурин те пĕр пек, тĕсĕ çеç урăхла: малтисен ылтăн, иккĕмĕш ретрисен кĕмĕл, хыçалараххисен пăхăр тĕслĕ. Тĕссĕр медальонлисем те пур. Мăн портфель йăтнă, мăйне кĕмĕл медальон çакнă Среднев пĕчĕк ача пек йĕрет. Пăхăр медальонлă Кайрин ăна лăплантарать: «Тупнă камшăн куççуль тăкмалли? Кама пытаратăн? Аçупа-аннӳне-и? Çук, марксизмăн чи хăрушă

тăшманне. Пĕлетпĕр-ха ăна кăштах.» «Ман унпа ыран экзаменра татах тĕл пулмалла-çке. Çĕре алтса чикĕпĕр те, мĕн юлать пуçра?» — нĕшĕклет лешĕ.

Янкăр тӳпене хура пĕлĕтсем хупларĕç. Пĕлĕте урлăл-ла çурса çиçĕм ялтлатрĕ. Аслати кĕрлерĕ. Куç чалтах уçăлчĕ. Пӳлĕмре çап-çутă. Пурте хăрлаттарсах ыйха туртаççĕ. Репродуктор Бахăн траур кĕввине янратать. Çӳлти хутра, пуç тăрринче, такамсем «асса!» тесех ташша сĕвеççĕ.

Аса илтĕм те ыранхи экзамен çинчен, çĕре ӳкнĕ кĕнекене çĕклерĕм, йог системи çинчен мансах Ленинăн «Материализмпа эмпириокритицизмне» каçса кайсах çĕнĕрен вулама тытăнтăм».

Крутов хăй хыçне çын пырса тăнине сисмен те, пăхрĕ те — шкул директорĕ Лизунов тăра парать.

— Вăйлă, ăслă шухăшлă статья, — терĕ вăл. — Эсир, тем, кайма тухнă? Илтнĕччĕ-ха курсран вăхăтсăрах «тарать» тенине. Апла, телейлĕ çул пултăр. Яша Мургаева салам калăр.

Максим Максимович директорăн çунса тăракан куçĕнчен пăхса хурлăхлăн пĕлтерчĕ:

— Вилнĕ çав пирĕн Яков Сидорович, сарăмсăр вилнĕ. Пушар хыççăн. Пуçне юн тулнипе. Пытарма каятăп.

Ку хыпарпа тĕлĕннĕ Лизунов хăрах аллипе пĕççине шарт çапрĕ:

— Да. Партин пĕр салтакĕ çунса кайрĕ: ĕçре, кĕрешӳре. Вăйлă салтаках теменччĕ те эпĕ ăна, çапах та — салтаках. Хăйĕн пуçĕ çитнĕ таран мĕн тумаллине тунах пуль. Ман ятран пуç тайăр ăна.

Партшкул директорĕпе сыв пуллашса Крутов аялти хута анчĕ.

Фойере ăна райком шоферĕ Васли Михалч кĕтсе тăрать.

Хуларан тухиччен шофер ăна аса илтерчĕ:

— Максим Максимович, тен, пасара кĕрсе хăяр туянар?

Васли Михалч юри вăлтнине вăл тӳрех ăнланчĕ, çавăнпа çиййĕнчех таварса хучĕ:

— Çула май Шăхран лавккинче туянни çирĕпрех, кунтан турттарса çитериччен шанать.

Ямшăк калаçăвне малалла тăсрĕ:

— Кунта эп сахал мар килсе кайнă. Купăста, кишĕр, хăяр, помидор, çĕр улми пайтах турттарнă. Ял çимĕçне хуларан яла сĕтĕреттĕмĕрччĕ — район хуçисем валли. Эп вĕсене хамăр патра пахча çимĕç ӳстермелли çинчен темчул та аса илтернĕ. Мургаева пĕр пенсионер, леш, сыснана çăкăр çитернĕшĕн партирен кăларнă учитель патне юри курма тесе илсе кĕтĕм. Теплицăран тĕлĕннĕ пек те пулчĕ вăл, ватă çынна мухтарĕ, хĕл варринче çĕнĕ хăярпа закусить туса тухрĕ те, манчĕ. Хăй çав çынна чĕресĕр тăратса хăварнине те манса кайнă вăл, ун эрехне мехлетсе тухрĕ, каçару ыйтма та пĕлмерĕ. Чулхулапа Чĕмпĕрте пур та, хыпаççĕ-и вĕсем? Вьюновпа Милов пур чухне. Латнă района Большаков килчĕ. Халь кăна шупашкарсем районтан симĕс суханпа хăяр мĕн чухлĕ турттарса кайрĕç? Пултарать ачи.

Васли Михалч райканаш пуçлăхне мухтаса пынишĕн Крутов хăй ăшĕнче савăнчĕ. Большаков çине тăнипе вăрçа-вăрçа тутарнă теплицăсем, пулă кӳллисем, тискер чĕр-чун ĕрчетекен хуçалăх, тăм савăт-сапа ăсталакан мастерской таврарах палăрчĕç-çке.

Яков Сидорович Мургаева, хăй обком секретарьне Çăханăва пытарса таврăннă чухне ĕмĕтленнĕ пек мар пулин те, чаплăнах пытарчĕç.

Хурлăхлă вăхăт иртсе кайсан та обществăна тытса пымалли йĕрке малтанхи пекех малалла ĕçлерĕ. Пуçлăх вырăнне пуçлăх ларчĕ. Шупашкарсем Большакова та, Крутова та тĕкĕнмерĕç, Пленум пĕрремĕш секретаре Семен Ильич Быстрова суйларĕ. Сысна кăмунинче хăйне лайăх енĕпе кăтартнине ĕненчĕç-ши Майлова, те Быстров хирĕçлесех кайманнипе, хăй вырăннех каялла пырса лартрĕç. Идеологсене улăштарчĕç: Посадкинана йăла комбинатне капăр тумланма, Оманова ДОСААФа пăшал пеме ăсатрĕç.

23

Оманов ҫӗнӗ ӗҫрен шӑнкӑравларӗ:

— Эх, айван, сан та ӗмӗтӳ тулмарӗ. Шупашкарта калаҫура пулни, Чулхулара вӗренни харама кайрӗ. Авӑ кама утлантарса лартрӗҫ урхамах ҫине. Ял кӗсрине кӳлсе суха пуҫпех ӗмӗрна ирттеретӗн ӗнтӗ.

Крутов та ӑна вирлех тавӑрчӗ:

— Суха пуҫ ҫивӗч пуҫ вӑл — тытма пӗлсен яланах ҫӑкӑр ҫитерет, сан пуҫу вара, тӑм пуҫ, такама та выҫӑ хӑварать.

Библиотекӑна ӗнер илсе килнӗ ҫӗнӗ кӗнекесене пӑхма каяс тесе алӑк патнелле утма пуҫланӑччӗ ҫеҫ Крутов, тул енчен такам шаккани илтӗнчӗ. Вӑл хӑйне хирӗҫ кӗрекен Лина умӗнче тӑп чарӑнчӗ, сиссе те юлаймарӗ... тутине хӗрарӑм тути пӗҫертнипе каялла чакрӗ.

— Салам, Макҫӑм, — терӗ Лина ӑна ыталаса. — Ан чӗтре, ан хӑра, ҫисе ямас, арӑму валли те, колхоз валли те хӑварап. Самартан Вӑрманкаса таврӑннӑранпа та сан куҫунтан ҫакнашкал хирӗҫ тӑрса пӑхмалли ҫук. Паян аттесемпе ятарласах Тарӑнвара килтӗм.

Максим Максимович лӑпланчӗ те Линӑна сӗтел ҫумӗнчи пукан ҫине алӑран ҫавӑтса кайса лартрӗ, пӗр вӑхӑт ун куҫӗнчен шӑтарасла пӑхрӗ. Сӑнӗпе ватӑла пуҫланӑ хӗрарӑмра вӑл ыйтуллӑ кӑмӑл туйӑмӗ пуррине сисрӗ.

— Пире, Макҫӑм, пӗрле пулма турӑ ҫырнӑ пуль, — аллинчи улӑм шлепкипе хулӑн кӗнекине юнашар пукан кӗтессине хучӗ Лина. — Ҫулсем ялан пӗр ҫӗре тухаҫҫӗ: юнашар.

— Чукун ҫул пек-и? — терӗ Крутов. — Рельссисем юнашарах, анчах — яланах уйрӑм.

— Никам та пырса тӗкӗнмесен, паллах, пӗрлешмеҫҫӗ. Иккӗн икӗ енчен хирсен...

— Апла хуҫӑлаҫҫӗ вӗсем, Лина, никама кирлӗ мар хурҫӑ татӑкӗсем ҫеҫ пулса юлаҫҫӗ.

— Тепӗр хут шӑратсан вӗсене, рельса тусан, каллех чукун ҫул хывма юраҫҫӗ-ҫке? — Максим Максимович куҫӗнчен ыйтуллӑн пӑхрӗ вӑл.

— Вĕсенчен вара урăх япала пулать.

— Хурçă хурçах ĕнтĕ, унăн паллăлăхĕ пурпĕрех улшăнмасть. Пирĕн те...

— Эх, Лина-мина, — хĕрарăма пуçĕнчен шăлса илчĕ те вăл чӳрече умне кайса тăчĕ, — ăнлантăм сана, юратăва та тепĕр хут шăратса çĕнетме пулать тесшĕн ĕнтĕ эсĕ.

Лина утмăл турат чечеклĕ кĕпине чĕркуççи çинчен çĕклесе майларĕ, çав вăхăтра çаралнă ӳтне вă-ă-ăраххăн хупларĕ, пуçне каçăртса çивĕтне хыçалалла ӳкерчĕ, маччаналла пăхса, Максим Максимовичран ыйтрĕ:

— Эсĕ ху тата «Парти ĕçĕпе çыхăнтăм та, хĕрарăмсене вуçех мантăм, тап-таса, турă пек çылăхсăр» тесшĕн пуль-ха.

Крутов чĕнмерĕ, вара Лина хурланса малалла каларĕ:

— Тап-таса, тесшĕн-и? Çу-ук! Мĕншĕн эп качча кайиччен ман çуралнă куна ман çумра ирттертĕн? Мĕншĕн Чулхулара, эпĕ ташша чĕнсен те, тĕртсе ямарăн? Мĕншĕн паян та алăк умĕнче кĕтсе илтĕн? Эпĕ чуп тунине те хирĕçлеймерĕн? Ман çаралнă пĕç кăкне епле ăмсанса сăнарăн! Пĕлетĕп эпĕ сана... эсĕ мана юратма пăрахманнине... куçунтанах ăнланатăп. Ачуна, Максимкăна, аса иле-иле çаврăнса тăтăн. Пĕл: эпĕ те сана юратма пăрахман, пăрахмастăп, нихçан та... Эсĕ ман чĕрери чи вăйлă, чи хĕрӳ, чи юратнă арçын. Шăрантăр юрату, пурнăç хуранĕнче вĕресе шăрантĕр пирĕн юрату. Саншăн эпĕ урăх çын пулин те, маншăн эсĕ çав Макçăмах, хăмăшсен юррине итлесе Кириловсен анкартийĕ хыçĕнче тупнă юратăвах. Çуралнă кун эсĕ ман çумма пĕрремĕш хут çыпçăнтăн, каччăран арçын пултăм, терĕн. Паян та манăн çуралнă кун...

Максим Максимович ĕсĕклекен Лина умне пырса тăчĕ, ăна тытса ыталамах шутларĕ, анчах вĕриленнĕ çан-çурăмне вăхăтра сивĕтсе хытарчĕ, сĕтел хушшине хăвăрт кĕрсе ларчĕ, çамкине ывăç тупанĕсемпе хупларĕ, пуçне çĕклемесĕрех:

— Чĕререн саламлатăп, Лина, — терĕ, — анчах халĕ манăн сан валли утмăл турат çыххи çуккă-çке, каçар ĕнтĕ. Паян эпĕ сана çакăнта ăшă кăмăла çеç парнелетĕп. Паян эпĕ — сан мар. Каччă мар...

— Çĕкле-ха пуçна, Макçăм, — ачашларĕ вăл ăна. — Пăх-ха ман çине? Эпĕ паян хам та улăхри, Санар улăхĕнчи чечек вĕт — утмăл турат чечекĕ? Юри сан пата хĕр чухне Тарăнварта тăханнă кĕпепе, улăм шлеп-кепе килтĕм, «Анна Каренинана» та илтĕм. Иксĕмĕр Хурăнвар вăрманĕн кĕтессинче тĕл пулнă чухне шăпах Лев Толстойăн кĕнекине вулаттăм. Çавна та сисмерĕн-и? Çавна та аса илмерĕн-и? Эпĕ паян сан кăмăлупа кунта мар, Кирилловсем патĕнче çăвăнасшăн, Макçăм? Эсĕ темшĕн питĕ кирлĕ мана. Сансăр çунатăп. Пĕлетĕн-и, туятăн-и çавна? Паян эпĕ унта пĕчченех юлатăп, пĕччен ех... Кĕтетĕп. Çуралнă кун-çке ман, асту çавна, ан асаплантар пустуй. Юратăва шăратас килет, хуçăлнă рельс хурçине шăратнă пекех. Çĕнетес килет, санпа пĕрле çĕнетес килет пурне те.

Пиçиххи çумне хĕстернĕ чечеклĕ пĕчĕк тутăрĕпе куççульне шăлса илчĕ те Лина, пуçне сĕтел çине ӳкерчĕ. Максим Максимович пӳлĕм тăрăх каллĕ-маллĕ утрĕ, кам та пулин килсе кĕресрен те шикленчĕ, телефон шăнкăртатнине те хăлхана чикмерĕ, каллех хĕрарăма лăплантарма тытăнчĕ:

— Эх, Лина-мина, шеллетĕп эпĕ сана. Ытла та çăмăл, çемçешке япаларан пулнă иккен сан юратăву, ăна Славик шăратрĕ, терĕн, Милов, каллех капитан...

— Ан кул манран! — шывланнă куçĕпе тарăхса пăхрĕ Лина.

Пӳлĕмре пĕр хушă çын сасси илтĕнмерĕ, телефон-сем çеç ăмăртмалла тăрлатрĕç...

— Çапла, Лина, — терĕ ассăн сывласа Макçăм, — каччăпа хĕр чухне тĕл пулнă пулсан та эпир халĕ урăх çынсем, чукун çул рельссисем пекех нихăçан та пĕрлешейменпĕр. Каçар мана тĕрĕссине каланăшăн. Сана

та манман эпĕ, Максимкăна та аса илетĕп, пысăкланчĕ пуль ĕнтĕ вăл халь... Çапах... арăмах юрататăп. Маруç умĕнче айăпа кĕрес шухăш çук. Килĕшмест пире унашкал хăтланни. Лăплан. Упăшкунах кĕтсе ил, килет вĕт вăл отпуска, кĕçех...

Çак сăмахсене чăтаймасăр Лина ура çине чалтах сиксе тăчĕ, тайăлса, тайăлса алăк патнелле утрĕ, унтан каялла çаврăнчĕ, пукан çинче выртакан улăм шлепкипе кĕнекине васкавлăн пырса илчĕ, пӳлĕм хуçине пуç тайрĕ:

— Тавтапуç ырă кăмăлушăн, Макçăм. Сан умăнта ухмахлантăм, чуна уçса патăм. Йышăнмарăн мана. Кăмăлна парнелетĕп, терĕн, — парнелемерĕн. Халь тин пĕлтĕм, хытнă сан чуну, авă, сĕтел çинчи çав тимĕр çул пуç кĕлетки пекех. Пурăн, хăвăн çирĕп идейусемпех пурăн. Пурăн, хăвăн чипер арăмупах пурăн...

Сĕтел хушшинчен тухса ăсатма пынă Максим Максимовича хирĕç Лина шывланнă куçпа пăхса тăчĕ-тăчĕ те, чăтаймарĕ, пуçне ун кăкăрĕ çине хучĕ.

— Мĕншĕн тарăн тымарсăр юрату пулчĕ-ши ку пирĕн? — пăшăлтатрĕ Лина Макçăмăн сиксе тухасла тапакан чĕрине вĕри кăкăрĕпе ăшăтнă май. — Пĕчĕк Максимка та чĕртсе аталантараймарĕ ăна.

Крутов хĕрарăма пĕчĕк ачана ачашланă пек пуçĕнчен шăлчĕ, вут пек çунакан кĕлетке вăйĕн туйăмне чăтаймасăр унран майĕпен уйрăлчĕ.

## 24

Максим Максимович «Шурăмпуçĕнче» ĕçлерĕ пулин те, арăмĕ унăн яла куçса пымарĕ, хĕр çуратнă хыççăн Вăрманкасрах юлчĕ. Иккĕшĕ те ерçмеççĕ. Кăра Макçăм арăмĕ хушăран пĕчĕк Уринене пăхма килет. Мăнукĕпе тухтăрсем патне кайсан, пĕр кăмăллă медсестра ватă çынна калаçтарать те калаçтарать, «ку кам ачи пулать-ха» тесе тĕпчет.

— Ывăлăн-ха, Макçăмăн, — пĕлтерчĕ лешĕ.

— Эсир Кăра Макçăмĕн матки пулатăр вĕт? Шофер-та ĕçлеттĕрччĕ. Сирĕн ывăл Максим Максимович-и?

— Çапла, çаплах ĕнтĕ, вара мĕн...

— Ним те мар, Урине инке. Сирĕн Макçăма курсан ман темшĕн куççуль тухать, те хурланнипе, те савăннипе, халĕ те чăтаймарăм, авă. Ача çуртĕнче ĕçлеттĕмччĕ-çке эпĕ вăрçă тухнă çул. Каччăпа уçăлса çӳренĕ хыççăн темшĕн киле каяс килмерĕ манăн, кăвак çутлах ĕçе çитрĕм. Пăхатăп, картлашка çинче ача чĕрене çурас пек сухăрать. Чĕркеме хăйне аванах чĕркенĕ, çапах кăвакарса хытсах кайнăччĕ, мĕскĕн. Астăватăн-и, турăш сăнлĕ Мелани инке пурччĕ, хăлхи илтменскер. Уншăн пулсан, çумра пăравус кăшкăртсан та шарт та сикмест. Ачи кăшкăратчĕ-кăшкăратчĕ те ĕнтĕ, лăпланатчĕ... Пулнă унашкалли. Алăка аран уçтартăм та йăтса кĕтĕм ачана. Мелани инке мăкăртатать: «Каллех ача, каллех такам пăрахса хăварнă, каллех эс тупса килтĕн, ах тур-тур ку пурнăçа, ку хĕрарăмсене... Выльăх та пăрушне хĕрхенет... Ан çухăрт сысна çурилле, хыптар чĕччуна!» — тет. Эпĕ çыртса илесрен хăратăп. Унччен те пулмарĕ, вăл манне кĕпе тӳмисене шăтăр-шатăр тутарчĕ те сивĕ ывăçĕпе кăкăртан ярса илчĕ. Ача ман чĕчче васка-васка нăчлаттарса ĕмме пуçларĕ. Эпĕ кăтăкланнипе хам кăшкăрса ятăм. Ача çаплах ман куçран пăха-пăха нăчлаттарать, унтан çăвара карса пăрахрĕ те каллех çухăрма тытăнчĕ. «Мĕн усси сиртен, хĕр типписенчен, сĕтӳ тухмасть, хамăн та çук, пĕр-пĕр ача ĕмĕртекен хĕрарăмччĕ халь, чуп, суса кил ĕнӳна», — тесе Мелани инке мана хусах кăларса ячĕ. Ласкарăм килелле. Сĕт йăтса каялла вирхĕнсе çитрĕм. Çăлса хăвартăмăр çапла ачана. Çавăнпа ман ун çине пăхсанах куççуль тухать. Урамра курсан та эпĕ ăна хамăн ача пек ăмсанса ăсататăп. Халь мĕн тери таса çын пулчĕ.

Пĕчĕк Уринене тухтăр пăхса тĕрĕсленĕ хыççăн вĕсем тепĕр пӳлĕме куçрĕç. Медсестра шурă тутăр вĕçĕпе куçне шăлса типĕтнĕ май мĕн каламаллине вĕçлерĕ:

— Ун чухне ирпе-ирех ача çурчĕ умĕнчен сан старикку туяпа тăклаттарса иртсе кайрĕ. Пирĕн унта йăли çаплаччĕ: кама малтан асăрхатпăр, «тупăннă» ачана çавăн ятне паратпăр. Кăра Максăмĕн телей пулчĕ. Максимка тупăнчĕ ун валли — сире валли. Кайран, астăватăр ĕнтĕ, ăна усрава илнине. Эпĕ те ача çуртĕнче нумаях пурăнаймарăм, салтака кайрăм, госпитальте ĕçлерĕм. Вăрçă чарăнсан, качча тухрăм, хулара пурăнтăм, икĕ ача ÿстертĕм. Упăшкам, вăрçă инваличĕ, чирлесе вилчĕ. Чун тăван çĕрех туртать çав, пĕлтĕр Вăрманкаса таврăнтăм. Ĕçлетĕп халь, ачасем пăхатăп, сыватататăп, ĕмĕр тăршшĕпех шурă халатпа.

Урине инке «ай тур-тур та ай тур-тур» тесех аллисемпе пĕççисене çапать:

— Эс пулнă-и вара пирĕн Максăма вилĕмрен çăлаканĕ? Сăпаççипах сана, ырă çынна, турриех илсе пынă пуль çав вăхăтра ун патне. Хамăр та пĕлмен ку таранччен. Хăй те... Хăй пĕлес пулсан-и халь. Асламăшĕ те...

— Амăшĕ текенни пур-и ун?

— Пур, тет, тупăннă. Яла та килсе кайнă тет çĕн упăшкипе. Чулхулара вĕреннĕ чухне Максăм вĕсем патĕнче те пулнă. Артистка вăл, ĕлĕк колхоз театрĕнче вылянăскер. Халь шалкăм çапнă тет.

— Апла-ха.

— Пĕлтерес килместчĕ пирĕн эпир унăн чăн-чăн ашшĕпе амăшĕ маррине. Вăрттăн тем тĕрлĕ те шухăшланă. Хам эп ача туса курман та, амăшĕн туйăмне, юратăвне йăлтах Максăма панă, старикпе иксĕмĕр те уншăн, ун телейĕшĕн тăрăшса пурăннă. Усрав ывăл йĕркеллĕ ÿссе, вĕренсе, ăслă, курăмлă çын пулнăшăн иксĕмĕр те хамăр ачапа савăннă пекех чĕререн савăнтăмăр. Унăн та, пирĕн те пĕтĕм пурнăç пĕр çыхха çыхăнчĕ пуль çав...

Хваттере таврăнсан Урине кинемей чунĕ кÿтнипе йĕрсех ячĕ, мăнукĕ çине пăха-пăха шухăшларĕ: «Çав хĕр ĕçе ирех пыман пулсан халĕ эсĕ те, пĕчĕк пепкем, çут тĕнчере кулас çукчĕ. Айăпсăр, вăйсăр, пулăшусăр

чуна кăкăр çумĕнчен уйăрма ăçтан вăй-хал çитнĕ-ши çав хĕрарăмăн? Аçан çавсене çапмалла та чи малтан... Çук пуль çав турă, пур пулсан вăл айăплĕччĕ вĕсене...»

Хунямăшĕ сăнран улшăннине Мария Николаевна шкултан таврăнсанах сисрĕ, чирлемен-ши тесе ыйтса та пăхрĕ. Урине кинемей нимех те шарламарĕ. Кĕç Максим Максимович та ялтан персе çитрĕ. Сăмах май амăшĕ медсестрапа тĕл пулни çинчен каласа кăтартрĕ.

Тепĕр кунне Крутов ачине консультацие хăй илсе кайрĕ, медсестрана пĕчĕк Урине аллипе чечек çыххи тыттарчĕ, тухтăр кусĕ умĕнчех ыталаса чуп турĕ. Медсестра чăтаймасăр макăрса ячĕ.

Канмалли кун ăна вĕсем килне хăнана чĕнчĕç, ваттисен йăлипе, ашшĕ-амăшĕ куçĕ умĕнче чаплă кĕпе тăхăнтартрĕç.

Макçăмшăн халĕ хăйне вилĕмрен çăлнă медсестра та, пăхса ӳстернĕ ашшĕпе амăшĕ те, арăмĕ те, ачисем те тĕлĕкри пек туйăнчĕç. «Вĕсене эпĕ вуçех курмасан та пултарнă вĕт, енчен те вăхăтра пулăшу паман пулсан? Тавах вĕсене пурне те — мана савăнăç кӳнĕ ырă çынсене. Хăйне анне тетересшĕн хистекен тĕлĕнмелле хĕрарăма вара... аса та илес килмест», — çак шухăштуйăмпа вăл Урине кравачĕ çумĕнче тăракан амăшне ачашшăн ыталарĕ:

— Эх, аннем-аннеçĕм. Мана пăхса çитĕнтернĕшĕн, пурнăç çулĕ çине кăларнăшăн сире, аттепе иксĕре, мĕнле тав туса çитерем-ши? Маншăн эсир чăннипех ырă кăмăллă, вăйлă, мăнă çынсем. Маншăн эсир... — Пырне тем капланнипе вăл сăмахне каласа пĕтерейменсĕрех пуçне аяккалла пăрчĕ, пит çăмартисем тăрăх вĕри шăрçасем йăрăлтатса аннинчен вăтанса чӳрече умне кайса тăчĕ.

## 25

Юпа уйăхĕ ăшă тăчĕ. Кĕрхи çумăр яланхи пек эрниэрнипе лӳшкемерĕ, хăй вăхăчĕпе çуса иртет те лăпла-

нать. Уй ĕçне вĕçлеме канлĕ пулчĕ. Ирĕкленнĕ халăх вăрманта кăмпа пуçтарать. Крутовсем çав вăхăтра Тымара Ульки аккана та пĕрле лартса пычĕç. Виличчен çуралнă ялта пулса курас, терĕ ватă çын.

Крутов Тымара çĕнĕ клуб уçма пырса çитрĕ. Кирпĕчрен купаланă, шурăпа сăрланă кермен вăрмантан тухсанах курăнать. «Маминовах председательте ларнă пулсан, хăçан кĕтсе илетчĕç-ши çак чаплă çурта тымарсем?» — шухăшларĕ вăл яла кĕнĕ май. Мургаев «эпĕр тунă, эпĕр пуйтарнă» тесе мухтанатчĕ те, анчах ял культурине çĕклессишĕн хăй мĕнле чăрмантарнине манатчĕ. Ăна чи малтан сысна витисем кирлĕччĕ-çке.

Район центрĕнче те Тымарти пек чаплă клуб çук-ха. Ял халăхĕ савăннă. Бригадăри партбюро секретарĕ Моисей Семенович Каргин çамрăксем хушшинче сиккелесе кăна çӳрет. Людмила Белова пысăк концерт хатĕрленĕ.

Салакайăк Карачăмĕ те юлмасть вĕсенчен. Епле тумланнă вăл: шап-шурă шăлаварпа, тĕрленĕ шурă кĕпепе. Тĕртсе тунă сарлака пиçиххи вĕçĕсем чĕркуççине перĕнеççĕ. Кăвапана çитекен сухалĕ çутăра кăваккăнсимĕссĕн йăлтăртатать. Вăрăм çӳçне каялла тăпăл-тăпăл тураса якатнă. Çăмлă куç харшисем айĕнчен икĕ çăлтăр çиççе пăхать. Хаш! туса вăрăммăн вĕрсе хăпартрĕ те вăл вăкăр хăмпине, шăпăр мăнаçлăн юрласа ячĕ: ăн-на, ăн-на, ăн-на-на!!!

— Ватăлма пĕлмест, çаплах яш-кĕрĕмпе пĕрле, — пуça пăркаласа ларчĕ Ульки акка. — Ăна итлесе хамăн туй аса килчĕ. Хăçанхи çынсем эпир? Ай, турах. Хăçантанпа ял кĕввине илтмен. Ял халăхĕн савăклăхĕ кину-телевисăрпа клупа кĕрсе пытанчĕ пулас халь. Улшăнчĕ пурнăç...

Ирпе Вăрманкаса кайма тухрĕç. Паян уяв, комсомол çуралнă куна районтрта чаплăн паллă тăваççĕ. Хăйпе пĕрле Крутов комсомол ветеранне Каргина тата Людмила Белована илчĕ. Çула май Маруç та киле ларса тухма шутларĕ.

— Итлĕр-ха, Максим Максимович? — ыйтрĕ Каргин. — Тӳрĕрен тухар мар-и? Çак чечексене хурса хăварасшăн. Палăк умне. Аттен паян çуралнă кунĕ-çке.

Таçтан-муртан сиксе тухнă Тан Васли танкăлтатса иртсе кайрĕ. Сывлăх сунать тата, мăшкăллать: «Салам кăмсамулсене — каçăртнă сăмсасене!» Каргин ăна хăваласах ячĕ. Вĕсем çула тухрĕç.

Крутов тӳрех килĕшрĕ. Машина Çĕлен улăхĕнче сарăлса выртакан вăрăм пĕве çумĕнчи çулпа пăрăнса вăрмана кĕчĕ, тарăн çырмана анчĕ, кĕпер урлă каçса, тăвалла хăпарчĕ.

Палăк умĕнче Сергей Тимофеевич Маминов, Тит Нилович Милов, Лина Сергеевна Васильева-Маминова тата çывăхри картун лесникĕ Темнов эрех ĕçсе лараççĕ. Палăк вĕçĕнчи çăлтăр çине пăшал çакса янă. Çул хĕрринче «Москвич» ларать.

Çак ӳкерчĕке курнă Каргин сăнĕ тӳрех хăрушла улшăнса кайрĕ. Чечеке Людмилăна тыттарчĕ те вăл чышкисене чăмăртаса вĕсем патнелле утрĕ.

— Ну-ка, тасалăр хăвăртрах кунтан! — тесе кăшкăрчĕ те Каргин ӳсĕрме пуçларĕ.

Никам та вырăнтан хускалмарĕ. Милов пĕççи çинче выртакан Лина вăшт çеç пуçне çĕклесе «салют!» терĕ. Машинăран тухнă Крутова асăрхасан тин пурте ура çине сиксе тăчĕç.

— Кама мĕн тунă çак эпир? Мĕн кăшкăрашать вăл? — шăлаварне силлесе якатрĕ Милов. — Эпир никама та усал туман. Кăмпа татнă хыççăн çан-çурăма кăшт юсас терĕмĕр çеç. Салам, Максим Максимович!?

Каргин сасартăк пăшала ярса илчĕ те вĕсем çинелле тĕллерĕ:

— Ман атте вил тăпри çинче ашкăнатăн-и? Пирĕнтен мăшкăллатăн-и? Хуп çăварна, Тит! Сана, атте çуралнă кун, сана çакăнта, аттене вĕлернĕ вырăнта, тĕп тăватăп. Сирĕн йăх ĕçĕ вăл. Марш кунтан ыттисем!

Ӳсĕр Лина çухăрса ячĕ, Милов мăйĕнчен уртăнчĕ, иккĕшĕ çилĕмпе çыпăçтарнă пек пĕрле каялла чакса, чакса пычĕç, тунката тĕлне пулса кутăн-пуçăн чикеленчĕç. Маминов вĕсене ура çине тăратрĕ. Темнов çеç ырăнтах хытса тăчĕ.

«Москвич» йывăçсем хыçĕнче курăнми пулсан тин Каргин пăшала леснике тыттарчĕ.

— Ярса пар-ха луччĕ пĕр çур стакан? — ыйтрĕ вăл ӳсĕрме пăрахса.

Каргин Темнов тыттарнă стаканран эрехе вил тăпри çине кăштах тăкрĕ, унтан пушатрĕ те çăварне пĕçернĕ пулă татăкки хыпрĕ, Людмилăран чечек çыххине илчĕ, çĕлĕкне хывса палăк умне чĕркуçленсе ларчĕ. Крутов та шлепкине алла тытса вĕсем çумне пырса тăчĕ. Каргина никам та сăмах хушакан пулмарĕ. Шапăртатакан çумăра пăхмасăр вăл чĕркуççи çинче ашшĕпе сассăр калаçрĕ.

Ирех вăйлă вĕрекен çил татах ахăрма пуçларĕ. Çумăр пĕрчисене вăл пульккă сапнă пек çулçăсем çине шапăртаттарать. Темнов кĕленчесене, апат-çимĕçе пуçтарса сумккине чикрĕ, пăшалне çурăм хыçне çакса, сыв пуллашмасăрах çырма хĕррипе картунĕ еннелле лаплаттарчĕ. Каргин та, йĕпеннĕ чĕркуççийĕсене шăлкаласа, машина патнелле утрĕ.

Малта ларакан Крутов, вăрман çулĕпе сиккелесе пынă май, шухăша путрĕ, хăйпе хăй калаçрĕ: «Каргин пăшалпа тĕлленĕ вăхăтра мĕншĕн алă çĕкленмерĕ-ха манăн? Мĕншĕн вăй çитмерĕ ăна чарма? Мĕншĕн? Мĕншĕн? Тăвăлнă çын çав самантра хăй мĕн тунине пĕлмесĕр курока туртса яма та пултарнă-çке? Пултарнă. Анчах?..»

Ансăр çул чăтлăха кĕчĕ. Машина ланкашкара сиксе илчĕ те, пĕчĕк çырма пуçĕпе каллех сылтăмалла пăрăнчĕ. Çилпе ӳкернĕ хăрăк туратсем йышланчĕç. Тента пырса çапăннă пĕр турат пурне те тарăн шухăшран вăратрĕ. Хыçалти Каргинпа Белова тӳрленсе ларнине Максим Максимович тĕкĕр çинче курчĕ. Каялла çаврăнса вĕсене сăмах хушас тенĕччĕ çеç, куç умне тепĕр ӳкерчĕк тухса тăчĕ.

Семен Каргин палăкĕ патĕнчен нумай пулмасть тарнă «Москвич», йывăç çапнипе, çĕр çумне лăпчăнса ларнă. Пурте ăна пĕр вăхăтрах асăрхарĕç. Каргин аллине Крутов хул пуççийĕ çине хучĕ. Белова çинçен айлатса илчĕ. Шофер машинăна хăвăрт чарчĕ те сиксе тухрĕ, ыттисем те васкасах анчĕç.

— Кама та пулин вĕлерет-ха çак ланкнă ăвăс, теттĕмччĕ тахçанах, — мăкăртатрĕ Каргин, — виçĕм çулхи çил-тăвăл хыççăнах çăка çине уртăнса юлнăччĕ. Иртнинче те пĕччен тĕртсе яма вăй çитереймерĕм.

Виç-тăват утăмра, пилеш айĕнче, Миловпа Лина выртаççĕ. Линăн уçăлса кайнă плащĕ Тит питне çурмалла хупăрланă, урисем хушшинче — пилеш сапаки. Крутов Тарăнварти Кирилловсен анкартийĕ хыçĕнчи пĕве хĕрринче шыва шампăртаттарса ларакан Линăна аса илчĕ. Кĕпине вăл йĕпенесрен çӳлеле çĕкленĕччĕ. Тулли уйăх çуттинче çак тăпăлкка урасем вăйлăн вылятчĕç. Акă, халĕ... Хăмăшсен кĕвви вырăнне вăрман улать. Хумсем шăмпăлтатнă вырăнне — сивĕ çумăр шапăртатать, пилеш сапакипе çара пĕçсем çинче ташлать.

Маруç плащ аркине çĕклесе хĕр чухнехи тантăшĕн намăссăр кĕлеткине хупларĕ те упăшки çине сиввĕн пăхса илчĕ. Çав вăхăтра Лина куçне уçрĕ. Тем каласшăн пулчĕ пулас вăл, тути хĕррисене чалăштарчĕ, унтан ахлатса йынăшма пуçларĕ.

Руль умĕнче ларакан Маминова туртса кăларчĕç. Виççĕшĕ те чĕрех, виççĕшĕ те ура çине тăраймаççĕ. Милов, Каргина курсан, тапаçланма пуçларĕ, часах тăнне çухатрĕ.

Аманнăскерсене майласа машина ăшне вырнаçтарчĕç. «Уазикĕн» чи хыçалти ларкăчĕсем çине Каргинпа Белова ларчĕç, шофер çумне — Крутов. «Москвич» картланă çулпа малалла кайма çук, икĕ енĕпе те шалкăм йывăç.

— Каялла пар-ха эс, ачам, çакăнтан инçех мар тепĕр çул пулма кирлĕ. Тытса пыр халь йытăсене, — тарăхса шăл хăйрарĕ Каргин.

Тăнне çухатнă хĕрарăм Милов çине кайса ӳкрĕ. Ан çапăнтăр тесе ăна Людмила аллинчен тытрĕ. Маминов тăна кĕчĕ, туртăнкаларĕ, çухăрса ячĕ: «Ăçта ман «Москвич?! Ăçта илсе каятăр мана? Сыватма хупасшăн-и? Эрех, эрех кирлĕ. Яр, яр, нумайрах. Ан хĕрхен», — тесе çапла лăпланчĕ. Миловĕ чĕнмерĕ.

Вăрманкаса çитиччен те калаçу çыхăнмарĕ. Линăна тытса пыракан Маруç шухăшларĕ: «Юрать сана ман Макçăм качча илмен. Славике улталанă пекех, эсĕ ăна та суйса пурăнаттăнччĕ ĕнтĕ. Эх, йытă ами, кĕрт. Намăса çухатнăскер. Чĕрĕлсен, упăшку куçĕнчен епле пăхăн-ши?»

## 26

Кӳршĕре те Крутовсен пурнăç улшăнчĕ. Валерий Гаврилович Нухратовăн ĕнсене хыçмалла пулчĕ. Грета Родионовнапа Виталий Арсентьевич Горячев хушшинчи вăрттăн çыхăнусем шаларах та шаларах кĕрсе пычĕç. Икĕ тĕп врач, икĕ пуçлăх, икĕ çемьене аркатса, пĕр кулăпа кулма пуçларĕç. Нухратов ниçта кайса кĕреймест. Аптранипе вăл Крутов патне каçрĕ.

— Тымартан мана кучченеç илсе пырса патăр вара, виççĕн виçĕ сехет тарларăмăр.

— Мĕнле вĕсен сывлăхĕ? — кăсăкланчĕ Максим Максимович.

Маруç вĕсен калаçăвне илтрĕ, упăшкине кăштах тĕртсе илес терĕ пулас:

— Майри пирки тӳрех калăр, Валерий Гаврилович? Çав йытă амин сывлăхĕ кирлĕ ăна. Çĕркаç тĕлĕкре те «Лина» тесе аташрĕ.

— Кай-ха эс ача патне, ан кансĕрле пире, — тесе тарăхăвне пусарасшăн пулчĕ кил хуçи.

— Пĕлмен, туйман сирĕн хваттере те кĕвĕçӳ кĕви ернине. Ах, пурте чĕрĕ çын çав эпир... Çапах та, пăхатăп та сирĕн пурнăçа, — ĕнсине хыçать хирург, — пурпĕрех ăмсанмаллипех ăмсанатăп.

— Мĕн пур-ши пирĕн ăмсанмалли? Хваттерти пӳлĕмсем ковер айĕнче мар, арăм ылтăн ăшĕнче мар, хам та...

Кӳршине калаçма чарсах Нухратов хăйĕн хаш-хаш юррине юрларĕ:

— Ăмсанатăп, Максим Максимович, пурпĕрех ăмсанатăп. Санран кулаттăмччĕ те малтанах, чухăн идеолог тесе мăшкăллаттăмччĕ. Эс мар, эп чухăн иккен. Ман ăш-чик чухăн, пушă. Япала, тулли сĕтел кирлĕ пулнă мана, тăмсая. Хамах ирĕк панă клиентсене ăпăр-тапăр йăтма, арăм базăсенчен, складсенчен сĕтĕрчĕ. Тултартăмăр хваттере, утмалли-çаврăнмалли те юлмарĕ, сарайне те чыхрăмăр — йĕке хӳресене кăшлама. Пурте пур халь, мĕн кирлĕ — пошалстă. Анчах пурнăç çук. Япала айне путрăмăр. Арăма та янкăс пурнăçрах çухатрăм.Кирлĕ мар мана халь ним те. Япали те, Грети те. Йăлтах илсе кайтăр, Горячева пуйтартăр.

Максим Максимович ăна «Боржоми» ярса пачĕ. Нухратов, ăш хыпнипе, икĕ стакан харăс ĕçрĕ. Крутов кӳршине лăплантарса пычĕ:

— Тен, майланса кайăр-ха. Горячева кунтан куçараççĕ вĕт? Кĕçех çĕнĕ главврач килмелле.

Ун пек каланине илтсен Нухратов ура çине сиксе тăчĕ те, пĕшкĕнсе пӳрнипе юнарĕ:

— Э-э, Максим Максимович... Ку номер каймасть. Хам арăмăн шуйттанĕ ăçта ларнине никамран лайăх пĕлетĕп ĕнтĕ эп. Горячев айне пулса лӳчĕркеннĕ чечеке ман тепĕр хут татса якатмалла-и, чĕртмелле-и? Çук! Урăх сăмах та пулма пултараймасть. Иккĕшне те главврач тесе партине илчĕç, иккĕшне те аскăнчăк тесе партирен кăларчĕç. Тепĕр хут илместĕр вĕт вĕсене? Илместĕр! Эп те урăх Гретăна арăм теместĕп, киле те кĕртместĕп. Кайтăр еркĕнĕ патне. Çу-ук! Ку пурнăç йăлăхтарчĕ мана. Ĕçме те пăрахатăп. Нимле взятка та кирлĕ мар. Кам илет — илтĕр. Паракан нумай. Вулама тытăнас пуль луччĕ. Сан библиотекуна тапăнас.

Крутов кулать:

— Ман унта каçса кайсах вуламалли чаплă кĕнекех çук. Хамăра кирли çеç.

— Вăт мана çав кирлĕ те. Атту пуç арпа тултарнă пек. Тин туйса илтĕм. Мĕн пĕлетпĕр эпир? Хамăр ĕçе — çын касма-ваклама çеç. Кам эпир? Ну, врачсем, тейĕпĕр. Интеллигенци представителĕсенчен хамăра хамăр чи чаплă вырăна хурса лăпăртататпăр. Пустуй калаçу. Нумайăшĕ пирĕнтен сирĕн çумра чĕрне хурине те тăмасть. Вăл шутра — эпĕ те. Алла скальпель тытма вăйпа ăсталăх кăна мар, ăс-тăн та, сăпайлăх та кирлĕ иккенне туя пуçларăм. Çĕр касхи чĕнмен пациентсем пире, хăйсене ура çине тăраттарассишĕн ылтăн кермен те лартса пама хатĕрччĕ. Тăна кĕрсен вĕсем ой! мĕн кăна шантармарĕç. Анчах пурин те — хăйĕн йĕрки. Скальпель те, эмел те пулăшаймасть хăрушă самантра. Çав саманта туйма пĕлнинче ĕнтĕ вăл пирĕн, тухтăрсен, вăйĕ. Чĕрĕ вилесем пырса патăр пире. Тăр сывă çын пулмасть вĕсенчен. Хĕрарăмне якатса кăларăпăр. Тепĕр хĕрарăм вăл, шăммишаккине ватса пĕтернĕ качака пекех, чĕрĕлет. Лешсем...

Ывăлне тумлантаракан Маруç упăшкине тепре йĕплесе илчĕ:

— Пирн Макçăма çавă çеç кирлĕ. Самар савнийĕ самăртарах...

Бориспа амăшĕ тухса кайсан арçынсем нумаях пакăлтатса лармарĕç, кайма тăрсан Нухратов, «Философи тĕнчине» аллинче çавăркаланă май, каларĕ:

— Тĕнче пиртен ăслăрах, шухăшлав та пире пăхăнмасть, юрату та пирĕн тавра çеç явăнать. Тытма йывăр ăна. Эсĕ тытнă пулас-ха, эпĕ — тытаймарăм. Кунта скальпель пулăшаймасть. Сирĕн вилме пуçланă партие операци туса çăлма май çук пекех, эпĕ те юратăвăма тин ĕнтĕ касса-эмеллесе чĕртеес çук. Каçар мана хăвăн пурнăç идеалне амантнăшăн. Эпĕ компарти пирки институтрах нумай шухăшланă. Пире те, лайăх ĕлкĕрсе пыракан студентсене, яваклансă вĕренпе унталла тур-

татчĕç. Хăйсене партипе çыхăнтарнă студентсемпе вĕрентекенсем ыттисенчен çӳлерех тытма, мĕн пур çăмăллăхсемпе чи малтан усă курма хăтланнине кураттăмччĕ те, яла таврăнсан атте хăлаçланнине пăхса йăлăхаттăмччĕ те, институтри «партбюро» тесе çырнă алăк умĕнчен чупса иртсе каяс килетчĕ. Мĕншĕн тесессĕн ман вăл ушкăна чун туртман. Гретăпа Горячевăн та чунчĕриййĕ партирен таçта вун çухрăмра тăнă. Пуçлăх пулчĕç те... Вĕсене уписательнă хĕрлĕ кĕнекепе парти çумне çыпăçтарса хучĕç. Çилĕмĕ типнĕ тĕк унта хуть мĕн чухлĕ тĕк, пурпĕрех хăпăнса ӳкет. Массăллă парти массăллă анархи юррине юрланине илтместĕн-и, кӳршĕм?

Вĕреннĕ çын шухăшлавĕн шайĕ хăй вырăнĕнчех пулни мар,Нухратов компарти пирки питĕ тишкерӳллĕ сăмахсем калани тĕлĕнтерчĕ Максим Максимовича, вара вăл Валерий Гаврилович ăшĕнче чăннипех хирĕç тăруллă, аркатуллă шухăш çĕнтерсе пынине ĕненме пуçларĕ. Нухратов тухса кайсан та лăпланаймарĕ вăл, ытла мăннишĕн хапсăнса мăйăр тĕшшине çиçĕм çитерсе янăшăн кам айăплине ăнкарма тăрăшрĕ.

Çапла, пур пуçлăхăн та партире тăмалла, пурин те ăна пăхăнмалла, вăл каланине ним шухăшламасăр пурнăçа кĕртмелле. Тĕп йĕрке ку. Анчах та çыннăн чунĕ мĕнле сывлăшпа сывлать-ши, вăл ют сывлăша ăша хывма пултарать-ши, хĕтĕртсе хăратнипе майĕпенех сивĕнсе пымасть-ши, çавна май, çӳлтен ирĕксĕрлесе тĕксе панă ĕçе ячĕшĕн е шикленсе кăна тумасть-ши, кунĕн-çĕрĕн «КПССа мухтав!» тесе кăшкăрттарни-юрлаттарни ухмахсен çурчĕ патнелле уттармасть-ши? Ăçтан çăвать çав наркăмăшлă çумăр? Хăш енчен вĕрекен çил хăвалать ăна Чăваш çĕршывне? Мускавра çумăр çусан виççĕмĕш кунне Шупашкарта та çумăр лӳшкет текен çунатлă сăмах мар-ши вăл? Хурăнварти Нухрат Кавĕрлин ачи ухмах мар: ăсĕпе те, аллипе те ĕçлет. Иртнинче те вăл тырă анинче сиккелекен шăрчăксем çинчен юмах янăччĕ. Чăн та, тулă тинĕсĕнче вĕсем лăпкăн

юрласа савӑнаҫҫӗ. Ҫурла качӑртаттарнӑ сасса илтсенех урӑхла юрлама, чӑлтти-чалтти сиккелеме тытӑнаҫҫӗ, хӳтлӗх тупаймасӑр тарса пытанаҫҫӗ. Вӗсен вырӑнне ҫӗр пыйти сырса илет, мӗн пур пулӑха вӑрттӑн ӗмет. Тӑван ҫӗре ҫав пыйтӑсем хупласа хунӑ-ши? Мускав урамӗсене те пыйтӑ-саранча тулса ларнӑ тенӗччӗ нумай пулмасть аспирантура сессине кайса килнӗ Тельман Волков. Тумӗсем ҫеҫ урӑхла вӗсен: Мускавра — ылтӑнран, Шупашкарта — кӗмӗлтен, Вӑрманкасра — пӑхӑртан. Тарӑнварта — тӑварлӑ тартан ҫӗлетнӗ. Пурте йӑшӑлтатаҫҫӗ — Аслӑ пӑрҫа сӑмахне итлеҫҫӗ. Макҫӑм Крутов та итлет ӑна.

Вокзал сортирӗнчи пек йӑшӑлтатакан масса чыхӑна-чыхӑна юрлать: «...ҫӗнӗ тӗнче тӑватпӑр, хуҫа пулатпӑр ҫӗр ҫинче». Мӗнле хуҫа пулатпӑр-ши? Сортирти хуҫасем-ши? Ытла усал шӑршӑ перет пур енчен те. Пӗтӗм усал-тӗселе тӗп тума хлоркӑпа сапӑннӑ тухтӑрсем те, влаҫа алрах тытасшӑн, ҫав массӑна куҫа хупсах кӗрсе каяҫҫӗ, ашкӑнма ҫул уҫаҫҫӗ. Ҫулне парти хӑй уҫса парать. Ҫамрӑк тухтӑр, ҫынсене сиплесе ӑсталӑха ӳстерес вырӑнне, пуҫлӑх пуканӗ ҫинче сиккелеме тытӑнать, тӗкӗ пуррине сиссе, хӑрами пулать, мӑн кӑмӑлланать, хӑйшӗн ҫеҫ ытларах ҫунма пуҫлать. Мӗншӗн ҫут ҫанталӑк саккунне пӑсаҫҫӗ-ши партин аслӑ ертӳҫисем? Нумай вӗренсе те ӑс ҫитерейменҫҫӗ. Ҫуркунне тухнӑ калчаран, тем пек туртса тӑссан та, тӳрех тут тӗшӗллӗ пучах тӑваймастӑн. Вӑл хӑйӗн вӑхӑчӗпе ӳссе ҫирӗпленет. Кӑкӑр ҫумне ромбик тӗкнӗ сӑмса шывӗнчен те паянах пуҫлӑх та, профессор та тӑваймастӑн. Служба картлашки пур. Ирӗксӗрлесе кӑчӑк туртнине сисекенсем хӑйсен умӗнче чуралла пуҫ ҫапнине пит кӑмӑлласҫӗ. Юрать-ха ҫак киревсӗрлӗхе унӑн кӳрши Нухратов вӑхӑтра ӑнланса илнӗ. Сахал-и тухтӑрсем хушшинче чирлӗ ҫын суранӗ ҫинче савӑк пурнӑҫ ташши ташлакансем?

Хӑйне чӗчӗ ачи чухне вилӗмрен ҫӑлнӑ ырӑ кӑмӑллӑ медсестра калани аса килчӗ: «Ытла мӑн кӑмӑллӑ халь-

хи çамрăк тухтăрсем, пире çын вырăнне те хумаççĕ. Халатне, тум-тирне пирĕннипе юнашар çакма хăраççĕ те... Тухтăр халачĕ сестра халачĕ çумĕнче çакăнса тăнăшăн ят-сумĕ пĕтет-ши унăн е пуçĕ ĕçлеме пăрахать? Хăй йĕркеллĕ сиплеме те вĕренсе çитеймен-ха, çынсене кĕнекере мĕн çырнине вуласа йышăнать... Вăтăр çул ĕçлесе те паянхи пек кутăн, шĕвĕ тухтăр курман. Тухтăр вăл ĕмĕр-ĕмĕр хăйне пулăшакана — сестра-и, санитарка-и — хисепленĕ. Вăрçа илсе кайса кăтартасчĕ вĕсене пĕр талăк... Сăмса шывĕсем. Пухăнннă та пĕр ушкăна... чирлĕ çын кирлĕ мар вĕсене, пуянрах пациент çеç кĕтсе лараççĕ. Çав аскăнчăк Горячев вĕрентет вĕсене. Пухусенче те хăйсем пĕр купара, канура та...»

Грета Родионовна упăшкинех шăршлаттарса пурăнĕши вараланнă чечекне е чун савниййĕ хыççăн тĕп хуланалла тапса сикĕ? Темле. Çапах та Горячев ăна, ватăла пуçланă хĕрарăма, упăшкинчен уйăрсах Шупашкара илсе каяссăн туйăнмасть. Унашкал намăса пĕлмесĕр хĕрарăмсем хыççăн ăйăрла чупакан ăçта çитнĕ унта тупать уççăнрах та ясартарах кĕçенекеннине. Хӳре çĕклекен кĕсре нумай.

Валерий Гаврилович, паллах, ашшĕ пек малтанах тупăк хатĕрлес çук, çав вăхăтрах арăмне те каçарма шутламасть. Пуян хваттер пуянĕ пулса юлать пуль вĕсен ашкăнăвĕ. Маруç Грета Родионовна пек, Лина Маминова пек чараксăр хăтланасси пирки ĕмĕтленме те пултараймасть вăл.

Тупăка аса илнĕ май пуçра пĕр шухăш тĕвĕленчĕ. Нухрат Кавĕрлине ял пурлăхне йăкăртнăшăн, пĕлӳ çитменшĕн парторгран кăларнă. Вăл хăйĕн малашлăхне пĕлсе пурăннă, майлă вăхăтра тара тытса тупăкне те тутарса хăварнă. Тен, вăл хăйĕн партийĕ валли те тупăк хатĕрленĕ? Ытла вăлтса та чеен пăхса калаçатчĕ-çке. Ленин вилнĕ хыççăн партие алă пусма аран пултарнă çул пуççемех ертсе пынă та, пуçламăш парторганизацисен пуçĕнче Нухрат Кавĕрлисем тăнă.

Хăй райкомра ĕçленĕ çулсенче Крутов час-часах тĕл пулатчĕ унашкаллисемпе.

Тарăн идейăллă, халăх юратакан, хăй çынна хисеплекен ăслă-тăнлă, анлă тавракурăмлă нумай вĕреннĕ парторг суйласа илме хĕнтерехчĕ. Райком инструкторĕ Прошлин та хăй мĕншĕн ĕçлесе ĕмĕрне иртгернине ăнланса çитереймесĕрех пенсие кайрĕ те... Ячĕшĕн партнă секретарьтен мĕн усси ĕнтĕ?

Посадкина идеологи комиссине ертсе пыратчĕ. «Çиçĕм» колхозран партбюро секретарьне Савватий Савельева тăнкăрука чĕннĕччĕ. Вăл мĕн калани асрах: «Политика тенине эп партине кĕнĕренпех, чĕрĕк ĕмĕр те пуль, кашни хĕл вĕренеп, çавах ни историйĕсене, ни никĕсĕсене пуçа хываймасп. Ĕçкĕре луччĕ пирĕн хамăрăн политика юмаххи. Унта пурне те шĕкĕлчетпĕр, аслă çул пуçĕнчен пуçласа... сире те уяса тăмастпăр. Хамăр шайри хамăр майлă çынсем эпир. Кĕмеç ман пуçа нимле исĕм вĕрентĕвĕ те. Иçĕм çырли мар вĕт вăл, çăвара хыптарсан та вăл пирĕншĕн пăрăç пек. Тем тăваççĕ манпа компарти лĕтĕрĕ туса. Прошлин кутран тапсах кĕртсе хăварчĕ пульшевиксен пуçне. Каймасть ман кунта. Ĕçлекен çын эп, папка хĕстерсе утакан кахал мар, платник, кормовоз. Ĕçрен юлман, никама та ятлаттарман. Орденне те, медальне те панă мана. Мухтанă. Эсир вара мана кунта ятласшăн. Пирн ялта Кукша Куçки пур. Вăл-и, манран çĕр хут нумайрах вĕренет политикăна. Сахалтан та вăтăр çул. Тем те пĕлет. Патрис Лумăн...

— Лумăн мар, Лумумбăн темелле! — тарăхса тӳрлетрĕ Оманов.

Савельев малалла каларĕ:

— Юрĕ, Патрис Лумумпăн çĕрĕмĕш савниййĕ, хăй Мускавра вĕреннĕ чухне, эсир хăварах манран лайăх пĕлетĕр Ахрик Ленинĕсене унта калăпласа янине, варлийĕ чăваш йыт пуллийĕ пулнă, çампа Шупашкарта пĕр урам ятне çаклатса юлнă хура кăвалер, тесе ĕненterет пире Кукша. Хăлха тăратсах итлет ял халăхĕ ăна.

Акă камсем кирлĕ сире. Ман пек тăм писмен мар. Тульккӑш хăй ак çаксене çеç, ывăç тупанĕнчи хыт муклашкасем мĕнне, пĕлмест. Ман çамка çинче политкрамота çаптаркки курăнман пекех, ун ывăç тупанĕнче те ĕç палли çук. Савхосра та, клатовщикре те, фермăсенче те ĕçлет вăл — ĕмĕрех. Компарти пуçлăхĕсем кашни ялтах çавнашкал савхуссем пулнă-çке, нивушлĕ пĕлместĕр? Çампа вăкăр пек хăй, пилĕк авса курман та-ха. Манашкал хытнă хулă мар. Вăт сире пурнăç пуçиццийĕ — çивĕч пуçици. Çынна вĕрентмелли, тăн кĕртмелли пуçици ун тахçанах пур: пуçĕнче. Ман ун пекки çук. Ĕçлемелли, тарпа кĕпе çĕртмелли, уншăн хĕпĕртемелли пуçици çеç. Мана хăть çакăнта çапса пăрахăр — эп унран шит те иртейместĕп. Манран усси пулмасть тесе каларăм-çке. Итлеместĕр. Неуч эп — Кремĕльти тахçанхи Калина пекех...

— Калинин теççĕ ăна, Союз старостине! — каллех ăслăланчĕ Оманов.

— Юрĕ, çаплах пултăр. Халь тин пурпĕрех. Çапах та Кукша Куçкинех суйламаллаччĕ секретаре. Шăпах çавăн пеккисем юраççĕ сире. Вăхăчĕ те пур ун, тăнĕ те — хăйсен умĕнчи тарăн çырмарах. Мана урăх асап ан кăтартăрах, çапах кестапсем мар эсир - кăмунистсем. Хама пурăнмалăх, çемьене тытмалăх пуç пур — çитет. Çын пуçне тытса таçта чикме хăнăхман, эп çурхи кĕсресене ăйăрпа ерттерекен мар. Çын пуçне кантарма мар, хамăнне те аран тытса тăратăп. Мĕн парса яратăр? Выговор-и? Хутаç парсах ячĕ карчăк, мейĕр, тултарăр. Сыснасем кĕтеççĕ мана. Пусыпкă авăртмалла. Çилсĕр армана ан авăртăр, çукран нимĕр ан юрăр...»

Çапла çав вăл, çынна ăс парса вĕрентме, ăна кирлĕ çулпа илсе кайма пĕлӳ кирлĕ.

Йăшăлтататакан темиçе миллионлă масса вуншар çул çавнашкал неучсен шăтăкĕнче хĕвел çути шырать. Аçа хăрамасăрах мăйăр тĕшшине çунтарса хăварать. Нухрат Кавĕрли пурăнать-ха. Тупăкĕ те хатĕрех. Кам кĕрсе выртĕ-ши унта маларах: хăй е партийĕ?

Максим Максимович чӳречерен сӑнать. Пӳрчӗ умӗнчех вӑрман пуҫланать. Вӑрӑм пӗве ҫумӗпе сукмак тӑрӑх Бориспа амӑшӗ выляса ҫывхараҫҫӗ. Пӗлет вӑл вӗсем ӑҫта кайнине. Сылтӑм ҫыранри пӗчӗк урамра ывӑлӗн кумамӑшӗ пурӑнать. Вӗсен килӗнче ҫветтуй шывлӑ хуранта чӑпӑл тунӑ унӑн, парторгӑн ачине. Пӗчӗкскер, халӗ ӑна-кӑна ӑнланмасть-ха. Амӑшӗшӗн — савӑнӑҫҫке. Амӑшӗ ывӑлне, антихристсенчен уйӑрса, Турӑ аллине тыттарнӑ-ҫке. Ҫынсенчен юлман. Халӑх хумӗ вӗсен ҫемйине те килсе ҫапрӗ.

27

Крутов пуш параппан ҫапса ҫӳрекен ҫын мар. Ӗҫ укҫи райкомра илсе тӑрать пулин те, Волкова пулӑшаканӗ. Вӑхӑт, ӗҫ пайласа тӑмаҫҫӗ. Тельман Федотович ӑратлӑ ӗнесем туянас тесе Кустӑрма енне кайнӑччӗ те, Максим Максимовичӑн сывлама та вӑхӑт ҫук. Вӑрманкасран шӑнкӑравларӗҫ: пит васкавлӑн райкома ҫитмелле!

Быстров ӑна кӗтсе ларать.

— Ӗнер Шупашкартан пӗлсе килтӗм, — терӗ ӑна сывлӑх суннӑ-сунман Семен Ильич. — Каллех ҫӑхав. Хиркина кӗтсе илмелле пулать. Унччен апат ҫисе килер-ха.

— Хупаха-и?

— Ҫук. Унта Милов еркӗнӗсем сив куҫпа пӑхаҫҫӗ. Темскер ярса хутӑштарса парӗҫ. Хамӑр еннех сулланар-ха.

— Тымар историйӗ апла, — ура пуҫне лекнӗ пӑр катӑккине тарӑхса тапса сирпӗтрӗ Крутов. — Кӗтнӗ эпӗ ырӑ мара.

Вӗсем тӳрӗрен анаталла анса паркри сукмак ҫине тухрӗҫ. Йывӑҫсем хӗллехи канлӗхре, шартлама сивӗрен хӳтӗленес тесе-ши, вӗлтӗртетсе тӑракан юр пӗрчисене ҫара тураттисемпе ҫума пуҫтараҫҫӗ. Хыр-чӑрӑш шурӑ пӗркенчӗкпе витӗнме ӗлкӗрнӗ.

Калаҫкаласа пынипе сисмен те, ҫурӑм хыҫӗнче ихӗрнӗ сасӑ илтӗнчӗ, ҫав самантрах Крутова такам ик туяпа ҫаклатса илчӗ. Ҫаврӑнса пӑхрӗҫ те тӗлӗнчӗҫ: спорт тумӗ тӑхӑннӑ Лина тӑра парать. Шаларах путса кӗнӗ

çырă куçĕ Макçăм куçĕнче тем шырать: măч-măч туса сӳнмен вăйне çулăмла сапать.

— Çул паратăр-и, хисеплĕ çул пуçсем? Тăрăр йĕлтĕр çине хыçала! Мана тытса пăхса пырăр. Иксĕре те анаталла ярăнтарса каяп, арăмусем умне тăкса хăварап, кĕвĕçтерсе ярап. Мĕн, хăратăр-им?

Крутов авалхи савнине ыталаса çĕклерĕ те хăйĕн умне тăратрĕ. Лина тем кĕтсе каллех ăна куçĕпе сăнăларĕ, хăй çумне ясаррăн туртрĕ, Макçăмăн куç шăрçи çине Санар улăхĕнчи утмăл турат чечекне çапса хăварчĕ.

— Чĕрĕлнĕ, якăлти, — алă сулчĕ Быстров. — Тем шăтăкне те сиктерĕн эс, арăмсене тăлăха хăварăн. Пĕлетĕн-и, упăшки килмелле кĕçех. Çар комиссарне яраççĕ. Пуçануна та çăкăр-тăварпа кĕтсе илмелле пулать.

Тепĕр кунне ирпе-ирех Крутова райкомра Хиркин кĕтсе ларать.

— Нумай çывратăн, комиссар, — алă тытрĕ Василий Николаевич. — Эп Шупашкартан санран маларах ĕлкĕртĕм.

Кĕç Быстров çитрĕ те иккĕшне те пӳлĕме чĕнчĕ.

— Çылăхлă эсир, — кулать обком инструкторĕ. — Çав Явкаланчăк явкаланчăкĕнченех, Миловранах хăпăнаймастăр эсир. Çĕнĕрен тивертсе илесшĕн сире. Акă, вулăр, савăнăр: «преступниксем», «çынçиен-воспитательсем».

Çăхав ытларах Крутов çинчен. Вăл ĕшкĕртнипе Тымарти парторганизаци секретарĕ Каргин таса чунлă çынсене культурăллă каннă вăхăтра пăшалпа пеме тăнă, управленин ответлă ĕçченĕ Маминов тата рапо пуçлăхĕ Милов, вĕсенчен тарнă чухне, йывăç айне лекнĕ, ĕмĕрлĕхех сусăрланса юлнă. Йывăçне те юри хатĕрлесе хума пултарнă. Айăплисене çирĕп хурав тыттармалла, çавăн пекех райкомра воспитани ĕçне вăйлатмалла. Унсăрăн, Быстров хӳттинче, Крутов йышши çын çиен-воспитательсем хăйсене пăхăнса тăракансене усала вĕрентеççĕ. Обком преступниксене пуçран шăлсан, Мускава, ЦКна пĕлтеретпĕр, тенĕ унта.

— Мĕн тумалла халь сирĕнпе, — куç айĕн пăхрĕ Хиркин. — Ĕçрен хăтармалла-и е хупса лартмалла?

— Ĕçрен кăларсан, тен, канăттăмччĕ кăштах, — çамкине ывăçĕпе хупларĕ Крутов. — Пуç та ыратакан пулчĕ, нервăсем те...

Милици пуçлăхне тата прокурора пĕрле илсе Василий Николаевич çав çулпа Тымара тухса кайрĕ. Ваçли Михалч каллех шӳтлет:

— Ытла камитлĕ çынсем эсир, театра кайма та кирлĕ мар.

Нимрен нимĕр пĕçерес текен Маминовсем таса çынсене вĕри хурана ярасшăн кăлăхах хыпăнчĕç. Крутовпа Каргин та, вĕсемпе пулнă Людмила Белова та хăйсен тасалăхĕпех юлчĕç.

Кĕçех Васильев подполковник çĕнĕ ĕçе пуçăнчĕ. Пурăнма çемйипе кунтан кайнă офицер вырăнне вырнаçтарчĕç. Лина Максăм Крутовпа юнашар çуртра пурăнма пуçларĕ.

28

Колхозăн чи хĕрӳ те чи канăçсăр вырăнĕ вăл — машинăпа трактор паркĕ. Пĕрлешӳллĕ хуçалăхăн хăватлă вăйĕ пухăннă унта. Хăвачĕ сисĕмлех ĕнтĕ, ĕçлекен кашни çын пуçне сакăр пине яхăн лаша вăйĕ тивет. Тарăнвартан, Хурăнвартан, Кайривартан васкаса пухăнаççĕ хастар «ямшăксем» хăйсен вырăнне. Техника «хулинче» хĕрӳ ĕç пуçланать.

Шоферсем пĕри те пĕри çула тухса кайрĕç, кĕçех тракторитсем те «хĕрӳ учĕсем» çине улăхса ларчĕç. Хумма Петĕрри те моторне кĕрлеттерсе ячĕ, çапах та «урхамахĕпе» тапранса кайма тăхтарĕ вăл, кабина алăкне хупмасăр, пĕр хушă çутă сенкер тӳпе ытамĕнчи тухăçалла тинкерсе пăхрĕ. Хурăнсем тăрринчен, вĕлтĕр-вĕлтĕр пĕтĕрĕнсе, çулçă çумăрĕ çăвать. Çапла, ун куçĕ умĕнчех паркаланса ӳсрĕç техника «хули» тавра лартса тухнă янкăс йывăççем, пĕве кайса сарăлчĕç те, халĕ ĕнтĕ, поэт каларăш, чăнахах та «пăхсан çĕлĕк ӳкес пек» капмаррăн

куҫа илĕртеҫҫĕ. «Ӳстерер-ха кунта ката, — тенĕччĕ колхоз председателĕ Волков, — хамăр ҫитĕнтернĕ хурăнлăхра куккук сассипе, шăпчăк юррипе киленер...» Кĕҫех вара механизаторсем тимлесе лартнă вăрман тăрăхĕ кайăк сассипе тулса шăранма пуҫларĕ, куҫ тулли илем кĕтесĕ пулса кайрĕ. Халĕ кирек хăш вăхăтра та хăй патне кăчăк туртса чуна ачашлать вăл: ҫуркунне черчен чечекĕсемпе, кайăксен шăнкăравлă юррисемпе, акăшмакăш капăр тумĕпе пуҫа ҫавăрать, ҫулла тӳлек сулхăнĕпе, кĕркунне шăпăл-шăпăл ҫулҫă ҫумăрĕпе, хĕлле тăнăҫ шăплăхĕпе хăйĕн ытарайми ырă ытамне туртать.

Хумма Петĕрĕ кăна мар, Тимухха Муллин те кассăн-кассăн вăшăлтатса вĕрекен ҫил варкăшĕ чӳхентерекен ката еннеле пăхать иккен. Паллах, ăна та ҫав чăлт шурă шупăрлă хурăнсемех илĕртеҫҫĕ, капăр ҫулҫисемпе кăмăлне ҫĕклеҫҫĕ. Ҫапах та, мĕн шухăшлать-ши ҫак самантра Муллин? Ачи, нимĕн те калаймăн, чăннипех те маттур вăл ĕнтĕ, тракторпа кăна мар, комбайнпа та ӳсĕмлĕ ĕҫлет: каланине итлет, йĕркене юрататъ, хăйне евĕр ăсталăх шкулĕ пĕтерчĕ. Ҫавăнпа Павăл Фомич, механизаци цехĕн пуҫлăхĕ, Тимуххана ҫĕнĕ трактор шанса пачĕ. Мĕн тейĕн, унашкал пултаруллă механизаторпа ăмăртса ĕҫлеме те лайăх. Тепĕр чухне, уйрăмах ăмăрту кăтартăвĕсем хăйне пит ҫырлахтарсах пĕтерейменсен, кăштах вăрттăн ăмсанасси те ҫук мар ҫамрăк юлташне Хумма Петĕрĕн (ара камăн-ха хăй хушаматне чи малта курас килмĕ!), ҫапах та пурпĕр килĕштермеллипех килĕштерет вăл ăна, хăйĕн вĕренекенĕн ҫитĕнĕвĕсемпе савăнать те. Халăхра ĕҫчен ҫынна ял савать тесе калаҫҫĕ пулсан, ҫак сăмахсем иккĕшĕншĕн те питĕ вырăнлă килсе тухаҫҫĕ: ака-суха ĕҫĕсенче те, комбайнпа тырă пуҫтарса кĕртнĕ чухне те, ытти ҫĕрте те вĕсем чи малтисенчен пĕрисем. Кăҫал та миҫе хутчен мухтава тивĕҫмерĕҫ пулĕ.

Иккĕшин тракторĕсем те сулăмлăн туртăнса илсе вырăнтан тапранчĕҫ. Пĕри мăн ҫул еннелле пăрăнчĕ,

тепри ферма патнелле кӗрлеттерчӗ. Вӗсемшӗн ҫулталӑк тӑршшӗпех тем тӗрлӗ ӗҫ те тупӑнать.

Хӑйсене кам ӑмсанса сӑнанине пӗлеймерӗҫ вӗсем. Мастерской алӑкӗнчен пӑхса тӑракан Мулла Микушӗн чӗри ялан ҫапла хыттӑн-хыттӑн тапма пуҫлать трактор кӗрлевӗнче. Ҫав хушӑра унӑн хӑйӗн те кабинӑра пулас килет-ҫке, анчах шӑла ҫыртать те пуҫа чиксе станоксем хушшине кӗрсе каять, юсав ӗҫӗсемпе майӗпен лӑпланать. Тек ӗнтӗ «хурҫӑ утсемпе» «уй-хир карапӗсен» тилхепине тытаймӗ вӑл, тухтӑрсем ӑна, сывлӑх хавшанине пула, ҫӑмӑлрах ӗҫе куҫма хушнӑ. Пӗлтӗртенпе ӗнтӗ Муллин юсавҫӑсен бригадине ертсе пырать. Ку ӗҫ хӗрӗх ҫул трактористра пиҫӗхнӗ ҫыншӑн мӗнле «ҫӑмӑллине» пӗлес пулсанччӗ медкомисси членӗсен, тен вара урӑхларах йышӑнатчӗҫ? Хӑй те малтан, ӳслӗк аптратнипе, килӗшес терӗ. Кайран тин чун йывӑрланнине туйрӗ, кӑмӑл трактор патнех туртрӗ. Ӳкӗтлесе те, темле йӑлӑнса та пӑхрӗ, анчах цех начальникӗ Воробьев та ӑна сӑмахпа ҫеҫ лӑплантарчӗ: «Хӑй вӑхӑтӗнче сиввине те, йӗпи-сапине те тӳссе чӑтса ирттернӗ, пенсие тухиччен ӑшӑ ҫуртра ырӑ кур хӑть». Юрать-ха бригадинче унччен механизатор пулнӑ, ҫак ӗҫрен тӗрлӗ сӑлтавсене пула уйрӑлма тивнӗ ӑстасем. Вӗсемпе ӗҫлесе, сӑмах-юмах ҫапса чунне кантарать. Техникӑна аван пӗлекен маттурсемпе, паллах ӗнтӗ, наряд йӗркипе ӗҫлеме те ҫӑмӑл. Вӗсем механизаторсене нихҫан та вӑрах кӗттермеҫҫӗ, юсав ӗҫӗсене кирек хӑҫан та вӑхӑтра, тирпейлӗ, пысӑк пахалӑхпа туса пыраҫҫӗ. Алӑра ӗҫ вӗремесен, хуранта яшка вӗремӗ ӗнтӗ, теме юрататъ Мулла Микушӗ юлташӗсене.

Ҫулталӑк тӑршшӗпех хӗрӳ кӗрешӳ пырать кунта. Кашни кунӑн хӑйӗн ӗҫӗ, кашни ӗҫӗн хӑйӗн вӑхӑчӗ, хӑйӗн кӗвви, хӑйӗн меслечӗ пур. Ака тӑвасси те, тырӑ акса пӗтересси те, вырса ҫапасси те, пӗри те тар тӑкмасӑр пулмасть. Ӗҫчен ҫынна ӗҫ савать пулсан, Муллинсемпе Воробьевсем тунӑ ӗҫе ял халӑхӗ савать. Маттур ӗҫлет ял гвардийӗ. Партком секретарӗ Крутов ҫапла калама

юратать. Колхозăн мĕн пур ĕçне куллен-кун хутшăнакан Максим Максимович уй-хир технологийĕн йĕркине питĕ аван пĕлет, çавăнпа ăна çирĕп тытса пыракан хастар çынсене кăмăлтан ырлать. Тек ĕнтĕ вĕсем Тымарта суха пуçпе çĕрулми лартмĕç. Индустри технологийĕ çитрĕ яла та. КСП-25 агрегат пысăк путвалта вăрлăха суйлать, касать, хăех транспортер тăрăх заправщик çине тиет. Уя турттарса тухнă вăрлăха автомашинăран сажалкăсене пушатаççĕ. Мĕн чухлĕ ĕç çăмăлланчĕ, мĕн чухлĕ ĕç вăйĕ тата укçа перекетленчĕ çакăн хыççăн!

— Эпир гварди те, ялти тĕп ĕçчен те, хуçалăх тĕрекĕ те шутланатпăр, — хĕсĕкрех куçне мăчлаттарса айăккăн пăхрĕ хăйпе калаçакан секретарь çине Муллин, — анчах темшĕн-çке яланах кал-кал пулса пымасть пурте. Мĕн тĕрлĕ хăватлă техника ахаль шăхăрса ларать. Запас пайсем çитменни касать, Максим Максимович. Мĕн пулса тухать-ха, пит тĕлĕнмелле. — Муллин майĕпен халат тӳмисене тӳмелерĕ. — Икĕ-виçĕ тенкĕ тăракан пĕр пĕчĕк детале улăштармашкăн пилĕк-ултă тенкĕлĕх хут çыртараççĕ. Çапла майпа районти юсавçăсем колхозăнне кашни гектартан çирĕм пус ытлашши шăйăрса илеççĕ. Çулталăка ку сакăр пине çитет, терĕ Марков.

— Тĕп бухгалтер куляннине пĕлетĕп-ха, — унпа килĕшрĕ Крутов. — Паян та Василий Иванч хăçан сахалланĕç-ши пирĕншĕн харам пырсем тесе çĕмрешсе ларатчĕ правленире.

— Тĕрĕс вăрçать вăл, «Сельхозтехника» пĕрлешĕвĕнчен юсавпа техника предприятийĕ туса хуни ят улăштарни выранĕнче çеç пулчĕ, çĕнĕ организаци çак таранччен пĕр пуслăх та усă кӳмерĕ-çке, малтан мĕнле çаратнă вĕсем колхоза, халĕ те çаплах йăкăртаççĕ колхоз кассине. Запас пайсене хамăр Вăрманкаса кайса илсе колхоз мастерскойĕнче хамăрах вырнаçтаратпăр, вĕсем вара РТПра туса панă тесе намăса пĕлмесĕрех наряд хатĕрлеççĕ. Çак ултава ниепле те пĕтерейместпĕр. Нивушлĕ парти енĕпе йĕркене кĕртме çук-ши, э, Максим Максимович?

Крутов ăна мĕн шантарма пултарчĕ-ха? Механизаци ыйтăвĕпе райком пленумĕнче тухса каласма хатĕрленни çинчен кăна пĕлтерме пултарчĕ.

— Вăт çавăнта пурне те асăнмалла, тырă типĕтмелли агрегат кивелнине те, тырă тасатмаллисем, пĕчĕк тракторсем, куçса çӳрекен кран, трактор прицепĕсем питĕ кирлине те... Ну, юрĕ, васкамалла, чĕлхе якатнăшăн укçа памаççĕ пире, паян «Беларуçе» чуптарса пăхмалла, — тесе Муллин унран уйрăлчĕ.

«Акă мĕнле иккен, ĕçченĕн яланах вăхăт çитмест пулсан, ĕçчене çав ĕçе тума техники те, ăна тухăçлă кĕрлеттерме майĕ те яланах çитсе пĕтмест. Колхозран килмен çитменлĕхсемшĕн ялти гварди Агропрома чунтанах ятлать. Тĕрĕс ятлать», — çапла шухăшласа утрĕ Крутов.

## 29

Хиркинăн «Шурăмпуç çăлтăрĕ» колхоз председателĕпе тĕл пулмаллаччĕ. Вăхăт май килнĕ чухне обком инструкторĕ унта çитрĕ. Ĕç кунĕ вĕçленсе пыратчĕ те, хуçана курас шанăç çукрахчĕ. Шухăша çирĕплетнĕ пекех, хирĕç тухакан хĕрарăм ыйту çине çапла хуравларĕ:

— Тельман Федотович çуккă, авă, çав ассусем пĕлеççĕ пуль вăл ăçтине.

— Мĕнле «ассусем» пирки каларĕ-ши ку тесе тӳрех тавçăрса илеймесĕрех хĕрарăм тĕллесе кăтартнă пӳлĕм алăкĕнчен шаккаса кĕрсе кайрĕ вăл. Шалта лăпкă сасăпа ĕçлесе ларакан пысăках мар машинăна асăрхасан тин ун пуçне пырса çапрĕ: ара, чăнах та ЭВМ вĕт ку.

— Тĕлĕнетĕр-и? — ыйтрĕ пĕр çамрăк хĕр.

— Хулара пулсан, тĕлĕнес çук. Ялта пуçласа куратăп та кунашкал автомат-бухгалтера. Чăннипех çăмăллăх пуль сирĕншĕн?

Алăкра çав вăхăтра Марков курăнса кайрĕ. Тĕп бухгалтер вĕсен калаçăвне илтрĕ пулас, «Салам пултăр, Василий Николаевич», — тесе хăнана алă тытрĕ те оператор вырăнне ăнлантарса пачĕ,

— Районти пĕрремĕш установка. Ман шутпа, республикипе те çукрах пек, илтмен. Пирĕн вара — пур. «Искра-555» маркăллă ЭВМ. Ятарласа ял хуçалăх предприятийĕсем валли кăларнăскер. Вăтăр пине ларчĕ. Миçе çыншăн ĕçленине калама та хĕн. Виçĕ çулта хăйĕн хакне саплаштармалла. Хуçалăх расчечĕпе, чек системипе ĕçленĕ чухне колхоза кашни пус-тенкĕпе перекетлĕн усă курма пулăшать. Кунта, акă, пăхăр-ха, кашни механизатор, шофер, ферма, бригада куллен мĕн хакпа мĕн туни йăлтах куç умĕнче. Колхоз экономикин пуç мимийĕ. Председатель те, эпĕ хам та тухма пĕлместпĕр кунтан. Кăтартусене чи малтан тӳрех хăй пăхса тухать. Мунча хыççăн паян та килессе пĕлсех тăратпăр, ăна квартал цифрисем канăç памаççĕ.

— Апла пулсан, кĕтес-ха ăна, мана шăпах кирлĕччĕ вăл, анчах...

— Ăнлантăм сире, Василий Николаевич, хаш сывланинченех туйрăм, «чипер йĕркеллĕ çын мунча хыççăн килтех выртса канмалла-ха, ку çын ахаль шахвăртать пуль» тесе шухăшланă пекех туйăнчĕ.

— Çаплах, Василий Иванович, витĕрех куратăр иккен мана, чăнах та ман пуçра çав майлă шухăшах вĕлтлетсе илнĕччĕ, — килĕшсе пуçа сĕлтрĕ инструктор.

— Ассусем çав эпир, — йăл кулчĕ оператор, — пурне те туятпăр, пурне те тĕплĕ шутлатпăр, çын шухăшне те вулатпăр.

Марков тĕплĕнрех ăнлантарчĕ:

— Тĕрĕссипе Тельман Федотович механизаторсем патĕнче. Унтах вăл вĕсене мунча кĕртет, унтах ăна хăйне те мунча кĕртеççĕ. Шанчăклах калатăп: халĕ вăл — мунчара. Кайса курар-и, питĕ чаплă. Ман унталлах, фермăна çитмелле, экономика занятийĕ ирттермелле.

Тарăнвар хушшипе купаласа тунă яп-яка çулпа вĕсем аналла анчĕç, ялтан тухса парка çитрĕç. Асфальт сарнă анлă лаптăк леш енче завод корпусĕ пек сарлака вăрăм çурт ларать. Шалти тасалăхпа илемлĕх тӳрех тыткăн-

ларĕ. Ытти хăш-пĕр хуçалăхсенчи пек тимĕр-тăмăр сапăнса выртнине, пылчăк-мазут çăрăлнине курмарĕ Хиркин. Чĕнтĕрлĕ решеткепе капăрлатнă картлашка иккĕмĕш хута илсе хăпарать. Хирĕç анакан шукăль тумлă Воробьев вĕсене хапăлласа кĕтсе илчĕ:

— Тархасшăн, кĕрĕр!

Юнашар утнă май, Павăл Фомич ăнлантарчĕ:

— Ку пирĕн — тракторсемпе автомашинăсене техника енчен тĕрĕслесе тăмалли пункт. Ĕçлеме те, канма та рай ĕнтĕ. Газпа ĕçлекен котельнăй хута янă хыççăн хĕлле те пурăнакан пӳртри пек лĕп ăшă тăрать. Сивĕре, çил çинче сахал нуша курнă-и? Тельман Федотович тăрăшнипе, çине тăнипе пулчĕ ĕнтĕ çак ырлăх. Лармалăма пĕлмест, канăç памасть никама та. «Ĕçрен куç хăрать, алă тăвать», — тет те хĕрӳлĕх туйăмĕпе пурне те хăй майлă çавăрать, хăйĕн шухăшĕпе хавхалантарса мĕн те пулин çĕннине тутарать. Акă, куратăр-и?

Пĕр-пĕр керменти пек йăлтăртататакан капăр пӳлĕм витĕр тухрĕç. Çемçе пукансем, чечексем, стена çинчи кăтарту хăмисем...

— Акă ку манăн кабинет пулать, — алăка уçса кĕртрĕ Воробьев. — «Пырать мана механизаторсен çуртĕнче пĕр кĕтес», — тесеттĕм. Çук, килĕшмерĕ председатель, ак çак мăн пӳлĕмех вырнаçтарчĕ. Хăй те пирĕн патран тухма пĕлмест. Халĕ вăл мунчараччĕ-ха. Кăмăл пулсан, илсе кайса кăтартатăп.

Аяла ансан матерской витĕр тухса пит типтерлĕ çĕре лекрĕç. Механизаторсем, юсавçăсем кашнинех хăй вырăнĕнче тумтирне хывса çакаççĕ те мунчана чăмаççĕ. Шалта сасăсем илтĕнеççĕ, тахăшĕ ахăлтатса кулать, пĕри такмакласа теприне ăшалать: «Мунчара çуса тасалăр, çирĕплетĕр ӳт-тире!»

Тумланма ĕлкĕрнĕ, пиçнĕ палан пек хĕрлĕ питкуçлă Волков савăнăçлăн хирĕç тухрĕ.

— Мунчи тутлă пултăр!

— Тавтапуç, Василий Николаевич, авă епле илĕнтерет Микуш. Хĕрлĕ кĕтесре эртелпе вуларĕç-ву-

ларĕç те Ухсайăн «Кĕлпукне», асра юлнă ун пуçĕнче мунча кĕвви, мана та çаплах ăшаларĕ. Аван-çке мунча пурри. Тасалма та, шăм-шака сиплеме те чухах ĕç хыççăн. Лайăх мунча кĕрсен кăмăл çулталăка пырать тет. Кĕрсе тухăр Марковпа. Чăннипе суйине вара пĕлетĕр хăвăрах.

Хиркин хирĕç мар, Василий Иванович та килĕшрĕ. Вырăн пушаниччен калаçса тăчĕç.

— Вăт епле улшăнать пурнăç, — тĕрĕсех тăнлаççĕши мана, тенĕн, Волков хушăран куçран ытарлăн пăхапăха илет, хирĕçлеменнине, иккĕленменнине туйсаши, кăшт тăхтанă хыççăн, малалла хĕрсе тăнлантарать: — Вун-вун пилĕк çул каялла çакăнта паянхилле тасалăхпа илемлĕх хуçаланасса ĕмĕтленмен те. Авалхи йăлапа, халăхра каланă пек, тимĕрçĕн пуртти катăк, çĕвĕçĕн сăхманĕ çĕтĕк, каскалаканăн пӳрт ăшчикĕ туса пĕтмен текен йăлапа çăрăлкаласа аппаланнă. Суймастăп, кĕрес те килместчĕ парка ун чухне. Çыннисем... чăтнă çав. Кунĕпе тарпа тусан ăшĕнче пăчăхса йывăр шăм-шакпа киле пусăрăнчăк кăмăллăн таврăннă. Авă халĕ вĕсен чунĕ епле уçă! Поэзи, муза юрлать механизатор ăш-чикĕнче! Хаваслăхпа тулать унăн чĕри. Чăннипех калатăп: шухăшламан эпир этем кăмăлне çĕклемешкĕн. Пĕрмаях хăваланă ăна: тавай, тавай, план пар, йышăннине ан çунтар! Эх, кăмăла хирĕç кăмăл пулнине темшĕн тавçăрса илеймен маларах. Вăхăчĕ те урăхларахчĕ те ĕнтĕ... Механизаторсем, выльăх-чĕрлĕх пăхакансем ĕçленĕ çĕрте культурăпа йăла комплексĕсем туса хуни пирĕн кăтартусене сисĕмлĕн ӳстерчĕ, çамрăксене ял çумне çилĕм пекех çыпăçтарчĕ, çынсен кăмăл-туйăмне тепĕр майлă — çĕр юратăвĕ майлă çаварчĕ. Кĕскен илсен, акă çапла туйăнать мана мунча юрри.

Председателе итленĕ май Хиркин куçĕ умĕнчен хăй правленире киленнĕ тĕрлĕ-тĕрлĕ чечексем вĕлтлетсе иртрĕç, хăлхара ăмăртмалла шăрантаракан майра кайăксен çепĕç юрри янăрарĕ, такмакпа милĕк çат-

латни ҫыпăҫуллă илтĕнчĕ. Пĕр пĕтĕмĕшле илем тĕнчи пек туйăнчĕҫ вĕсем.

Мунча кĕрсе тухнă хыççăн вĕсене председатель кану пӳлĕмне чĕнчĕ. Сĕтел хушшинче Кĕркурипе Хумма Петĕрĕ тата Мулла Микушĕ витре кĕрекен сăмавартан киленсех вĕри чей ĕçеççĕ, шӳт-кулă тăрать.

— А-ах, ĕлĕкрех пулсанччĕ халь... — пырне пӳрне вĕçĕпе шăклаттарса кăтартрĕ Кĕркури.

— Ĕлĕкрех эпир кунашкал хăтлă вырăнта ларасса тĕлĕкре те курас çукчĕ. «Симĕс çĕлен» ытамĕнчен хăтăлса тухма хăяймастăмăрччĕ. Сӳс ути чейĕ çав хаяр шĕвекрен техĕмлĕрех вĕт, э, Микуш? — юлташне çемçе çĕртен лектерчĕ Хумма Петĕрĕ.

— Маншăн ку иртнĕ пурнăç, — алă сулчĕ Муллин. — Истори. Эс ыттисене юса, çамрăксене. Пирĕн халь иксĕмĕрĕн биллиардла вылясси çеç юлать. Атя-ха, тупăшар. Çĕнтереел-и эп паян сана...

— Мана илместĕр-им пĕрле? — ура çине тăчĕ Кĕркури.

— Эс председатель ямшăкĕ, сан баранкăпа вылямалла, — терĕ Микуш.

Волков шоферне тытса тăмарĕ, юлташĕсемпе ячĕ.

— Чей ĕçĕпĕр те, ытти çĕре çитсе курăпăр, ак, — хăнана сĕтел хушшине ларма сĕнчĕ вăл.

Тĕп бухгалтер сĕт-çу фермине васкаса тухса кайрĕ.

— Ĕнер кăна-ха, — терĕ Хиркин ăна куçпа ăсатса янă май, — Политвĕренӳ çуртĕнче Хисеп хăмине çĕнетрĕç. Василий Иванович сăнне те вырнаçтарчĕç унта. Ытла уçă кăмăллă пăхса ларать, кĕç-вĕç çăварне уçса ялти ĕç-пуç çинчен калама пуçлассăнах туйăнчĕ. Паян та колхоза çитсессĕнех унпа тĕл пулмалла пулчĕ. Çул тăршшĕпех итлесе пытăм, сирĕн лару-тăрăва кăштах пĕлетĕп халĕ.

— Сире, тĕп хула представительне, министр рангĕнчи пуçлăх кĕтсе илни аван-ха, — кулса илчĕ Волков.

— Ăнланмарăм-ха? — пуçне чалăштарса пăхрĕ обком инструкторĕ.

— Маркова ялта колхозри «финанс министрĕ» теççĕçке, — ăнлантарчĕ председатель. — Кулса-шӳтлесе мар, серйуснах калатпăр çапла. Уншăн Василий Иванч хăй те кӳренмест. «Финанс министрĕ» пулма вара, ай-яй, унта çав таранччен тытăнса тăма та çăмăлах мар. Акă, Максим Максимович лайăх астăвать... — алăкран кĕрекен партком секретарĕ сывлăх сунса хăйсемпе юнашар ларасса кĕтрĕ те вăл малалла каларĕ: — Марков пирки эп. Пĕрре правление пырса пуçне чикрĕ те çавăнтах ывăнма пĕлмесĕр ĕçлет. Çур ĕмĕр пурăнса ĕç вырăнĕ улăштарса курман. Тĕп бухгалтера лартнăранпа кăçал çирĕм ултă çул çитрĕ.

— Крутов хушса хучĕ:

— Кăмăл-туйăмĕпе те, чĕлхи-çăварĕпе те, çи-пуçĕпе те илемлĕ çын вăл. Тасалăха, йĕркене юратать. Культурăллă, курăмлă. Нумай вулать, нумай пĕлет. Чăн-чăн пропагандист. Çĕннине колхозниксем патне çеç мар, пĕтĕм района сарать.

Тельман Федотович пӳрнисемпе сĕтеле шăкăртаттарса илнĕ май хавасланса каларĕ:

— Колхоз утăмĕсемпе ярса пусса пыратпăр ĕнтĕ эпир виççĕмĕр, Максим Максимович. Пĕрле кӳлĕннĕччĕ йывăр лава. Шалти хуçалăх расчетне, ертсе пырас ĕçри цех системине, диспетчер службине, шут ĕçĕнчи чек йĕркине, эртел подрядне тем тесен те эпир, Марков вырăнĕнче урăххи ларнă пулсан, çапла ăнăçлă йĕркелесе яраймастăмăрччĕ. Пуян халь эпир, мухтанмасăрах калатăп — ĕлĕкхинчен нумай пуянрах.Çуллен миллионран кая мар тупăш килсе кĕрет, рентабельнăç шайĕ утмăл процента çывхарать. «Финанс министрĕн» алли çăмăл. Цифрăсемпе ăста музыкант пекех выляма вĕренсе çитрĕ ĕнтĕ. Вĕсем унăн пурнăç кĕвви пулса тăнă, чунлă пекех. Вăл вĕсемпе калаçать, хавасланать, хушăран кăмăлсăр та юлать. Пулать унашкалли.

— Ăна тава тивĕçлĕ экономист ятне панăччĕ-и-ха? — ыйтрĕ Хиркин.

— Панӑ. Россия Федерацийӗнне те илме тивӗҫлӗ.

— Тата мӗнле чару пур? Тӑратмалла кандидатурине.

— Вӑхӑт ҫитсен, тен, савӑнтарӗҫ-ха. Иртнӗ пилӗк ҫуллӑхшӑн «Хисеп Палли» илчӗ. Малашлӑх.

Тельман Федотович машинӑна хӑй тытса пырать. Ӑста шофер, тейӗ ӑна вӑл камне пӗлмесӗр юнашар ларакан. «Атӑл» Тымар еннелле тухса асфальт сарнӑ ҫулпа малалла ӳхӗрет.

— Ҫак ҫула пулах ӗнтӗ эпӗ республикӑпа янӑрарӑм, сӑтӑрҫӑ, патшалӑха хирӗҫ тӑракан пуҫлӑх ятне те илтрӗм. Астӑватӑр пулӗ, Василий Николаевич, хаҫатра ман ҫинчен ҫырнине?

— Вӑрман хуҫалӑх министерстви пирки-и?

— Аха. Ҫул урлӑ чаркӑҫ лартма мана мӗн хистерӗ-ха? — пуҫне сылтӑмалла пӑрса пӑхса илчӗ те Волков хӑвӑртлӑха чакарчӗ. — Авӑ, мӗн сарлакӑш вӑл? Ансӑртарах. Мӗншӗн тесен, вырӑнти ҫул. Ҫирӗп сийӗ те ҫӳхе унӑн, тӗллӗнтӗллӗн ваннӑ та. Умри кашни путӑк-шӑтӑк чӗрене йӗплет. Укҫа тӑрӑх чупатпӑр вӗт, укҫана тап-таса ҫӑрса пӗтеретпӗр. Ҫавӑнпа ҫуркунне хупрӑм та лартрӑм. Вӑрманпромхозӑн каснӑ йывӑҫа турттарса тухмаллаччӗ. Хӗлле ҫывӑрса ларнӑ та хӗвелпе пӗрле чӗрӗлнӗ. План ҫунчӗ вӗсен. Мана та Шупашкарта ят тиврӗ, хытах. Эп уншӑн тарӑхрӑм та, кулянтӑм та, мӗншӗн тесен хамшӑн, хамӑн интерессемшӗн ҫунса туман-ҫке ҫав пӑтӑрмахлӑ ӗҫе. Ҫула сыхласа хӑварассишӗн, унӑн ӗмӗрне ытларах тӑсассишӗн. Мӗн чухлӗ вӑй-хала, нервӑсене пӗтернӗ пуль эпир уншӑн Максим Максимовичсемпе, на сана, пӗр предприяти интересӗсене тивӗҫтерессишӗн пирӗн ҫӗршер пин тенке сапса салатмалаччӗ ӗнтӗ! Ҫу-ук, парӑнмарӑмӑр, Мургаев партбилет туртса илессипе хӑратнинчен те, Шупашкартан хӗстернинчен те. Эпир патшалӑха хирӗҫ пулман, аталану ҫулне пӳлес шухӑшпа хӑтланман. Пирӗн колхоз ҫулне, патшалӑх укҫине перекетлӗрех тытас ӗмӗт ҫеҫ пулнӑ.

— Астумастӑп, мӗнпе вӗҫленчӗ ҫав вӑл ҫул историйӗ? — ыйтрӗ инструктор.

— Ак çак тăнлавра темиçе кăвак пĕрчĕ хутшăннипе, — ирĕксĕрех кулса ячĕ Волков. — Пире, хуçалăх пуçĕнче тăракансене, юрать, теççĕ пулмалла, вĕсем чăтаççĕ, унталла-кунталла çапăнтарсан та, çӳлтен-аялтан хĕссен те, çирĕп-çке. Тепĕр чухне пире чĕрĕ çын вырăнне хуманни, ыттисем пекех пирĕн те этем чĕри, чунĕ пуррине ăнланманни, пире те пуринпе пĕр йышши япаларанах тунине туйманни кӳрентерет. Çулне халь сарма, çирĕплетме йышăнчĕç, вăрманçăсен министерстви пулăшать. Кулăшла вĕт. Çав йышăну вăл ман чĕре ыратăвĕпе, чун лăсканăвĕпе, сывлăх çухатăвĕпе çыхăнчĕ. Унсăрăн май килмен-ши? Çапла çав, ялан питĕ йывăррăн пурнăçланать халăх ырлăхĕн ыйтăвĕ. Йăлтах вăл хăш-пĕр пуçлăхсем шалти туйăма бюрократизм кирĕкĕпе витсе хунинчен, ĕçлекен çыннăн малашлăхĕ çинчен шутлама пăрахнинчен килет. Эх, Маяковский пек, кăшлăттăм бюрократизма, хамăрăн çак мунчари тип пăс ăшĕнче ирĕлтерсе ăшаласа тасатăттăм. Вăйăм çитмест. Юрĕ, пире çак çула сыхласа хăварнипе те, ял çыннисене пурăнма, ĕçлеме кирлĕ условисем туса панипе те çитĕ. Кашнин хăйĕн вырăнĕнче кĕрешӳçĕ, çĕнтерӳçĕ пулмалла.

Председатель шăплансан, Хиркин ăна хистерĕ:

— Лăпланма юрамасть, Тельман Федотович. Пирĕн парти вĕт бюрократизма хирĕç кĕрешессине яланах чи кирлĕ ĕçсенчен пĕри тесе шутланă. Халĕ пушшех те ытларах кĕрешме ыйтать. Мĕншĕн тесен иртнĕ çулсенче çав чир пирĕн пурнăç аталанăвне самаях хавшатрĕ. Хальхи хăвăртлату утăмĕнче унран писме тăрăшмаллах. Унсăрăн малалла каяймăпăр.

— Марксистсем ахальтен мар ĕнтĕ бюрократизма тарăна кайнă социаллă юхан-суран вырăнне хунă, — калаçăва хутшăнмасăр чăтаймарĕ Крутов та. — Астăватăр-и Маркс уйрăм бюрократ пирки мĕн каланине? Патшалăх тĕллевĕ уншăн пуçлăх пулса карьера тăвас тĕллеве куçать, тенĕ. Сахал-и унашкалли? Пирĕн райкомра ĕçленĕ Оманов пекки? Пурнăç çулĕ урлă выртнă каскасем вĕсем.

— Тымар янӑ тункатасем, — терӗ Волков. — Шӑварса тӑнине пула чӗрӗлсе, хӑватлансах пыраҫҫӗ, йӗркеллӗ утма та, чупма та кансӗрлеҫҫӗ.

— Ҫавӑнпа тӑпӑлтармалла пирӗн ҫав тымара.

— Чи малтан шӑварса имлӗх парса тӑракансене типӗтмелле, вара тин кӑклама ҫӑмӑлрах пулӗ. Кунта Ленин урокӗсене аса илмелле. Ҫак усал йӑлана тӗп тумашкӑн Ильич ертсе пыракан аппарата ансатлатма, ӑна лайӑхлатма, тӗрӗслев ӗҫне массӑсене ытларах хутшӑнтарма, чиновниксен уйрӑм пайне тухӑҫлӑ ӗҫе куҫарма палӑртнӑ.

— Влаҫ органӗсен ӗҫне ӗҫ ҫыннисене хӑйсене нумайӑн явӑҫтарни бюрократизма пӗтӗмпе пӗтермелли пӗрремӗш утӑм пулӗ, тенӗ пирӗн ҫул пуҫ, — хушса хучӗ Хиркин.

— Ҫав уроксене маннӑ пуль ҫав. Асрах тытса кӗрешнӗ пулсан, эпир бюрократизм серепине кӗрсе ӳксе ҫыхланса ларман та пулӑттӑмӑр. Халӗ пурте бюрократизмран хӑтӑлар тесе кӑшкӑрашатпӑр, ҫав вӑхӑтрах формализм шурлӑхӗ хамӑра шалалла та шалалла ӗмет. Ӗҫе вӑраха яракан чӑкӑлташлӑх кӑшлать, ҫиет. Эп теоретик мар, практик, ҫавӑнпа тӗслӗх илсе кӑтартап, — терӗ Волков. — Партин кашни съездӗнче те, Цӗкан иртнӗ Пленумӗнче те ӗҫе ҫӗнӗлле йӗркелемелли ҫинчен питӗ ҫивӗч каланӑ. Ун пирки нумай сӑмахлатпӑр. Анчах ӗҫӗ пит уҫҫӑн курӑнмасть-ха. Тивӗҫлӗ пулӑшу сисӗнмест. Унччен мӗнле ҫитменлӗхсем пулнӑ — ҫавсемех сыхланса юлнӑ. Ял хуҫалӑхне интенсивлӑ майпа аталантармалла, тетпӗр. Тӗрӗс. Пирӗн те нумай вӑл енӗпе тумалли. Анчах «Сельхозхими» пӗрлешӗвӗ, юсавпа техника предприятийӗ кашни ҫул килӗшӗве пӑсаҫҫӗ. РАПОна кӗрекен организацисем пурпӗрех колхозсемшӗн уҫӑ кӑмӑлсӑр, питӗ йывӑррӑн ӗҫлеҫҫӗ. Мелиораторсем, пӗвене икӗ хут пӗвелесе, ҫур миллион тенкӗ укҫана шывпа юхтарса ячӗҫ. Пирӗн пек нуша куракансем сахал-и? Республикӑра мелиораторсен икӗ организаци. Анчах пӗрин уссине те путлӗн кураймастпӑр. Ял хуҫалӑхне тивӗҫлӗ усӑ паман министерствӑпа пӗрлешӳ кама

кирлĕ-ши? Чун тăвăрланать. Çав çитменлĕхсем вĕсем пире кăна ум пӳлмеççĕ, района, республикăна малалла утма чăрмантараççĕ.

Сăлтавсăр кулянмасть-мĕн председатель. Ял хуçалăхне хăвăртрах ура çине тăратассишĕн хыпса çунас чухне пуш сăмах вĕçтерсе колхозсемпе совхозсене çут пăр çине тăратса хăваракансем сыхланса юлнă-ха. Ытти çĕрте те илтет Хиркин Агропром комитечĕн çаврăнăçулăх, оперативлăх çитменнишĕн пăшăрханса калаçнине. Пысăк вăя пĕр чăмăра пухса унпа сулăмлăн çавăрттарас вырăнне çак аслă кантур ĕçĕн формине çеç мала хурса, пурнăçран, çынсен интересĕсенчен уйрăлса, ăна хут тăрăх ытларах туса пырать. Çавăнпа ӳсĕм палăрсах каймасть-ха пур енĕпе те.

Тельман Федотович, калаçнă май, çула кĕскетсе пычĕ.

— Эп астăвасса мĕн кăна туса пăхмарĕç-ши ял хуçалăхĕпе. Çӳлтен пĕрмаях «çĕнетеççĕ», пире çĕрпе усă курма, тырă хăçан акма, ĕне мĕнле сума, выльăх пăхма вĕрентеççĕ хайхи бюрократсем. Юрать эпир «питĕ хаклă кăтартусене» малтан пуç тавра çавăрттарса пăхма вĕренсе çитрĕмĕр. Вĕсене пурне те пĕр тăхтаса тăмасăр пурнăçланă пулсан-и, эпир нихçан та паянхи шайра пыраяс çукчĕ. Кăтартăвĕ темĕн чухлех, пĕве пĕвелемелĕх те пур, анчах хăш-пĕриншĕн кам хуравли те паллă мар. Мĕн тесе, мĕн хĕтĕртнипе пустуй çĕмĕрмелле хамăрăн усă паракан çирĕп йĕркесене! Эпир çав кăтартусенчен чи кирлине, чи усăллине кăна суйласа илме чеелĕх çитертĕмĕр.Çавăнпа кӳршĕсем пек гектар пуçне вун пилĕк-çирĕм центнер тырă илсе, кашни ĕнерен пин çурă-икĕ пин килограмм сĕт суса хӳрере çапкаланса пымастпăр. Концентраципе специализаци шавĕнче те сурăх фермине сыхласа хăвартăмăр, районта сурăх ĕрчетекен комплекс туса Мургаев шар курчĕ. Улăх-çаран çук çĕрте мăн кĕтӳ кирлех-ши? Çĕршывшăн, халăхшăн усăсăр çĕнĕлĕх йышши япала ячĕшĕн кăна тунăскер мар-и? Йăнăш ан пултăр тесен, çĕр ĕçĕ çине ялан çĕр куçĕпе

пăхмалла. Çĕр çинче ĕçлесе пурăнакан çынна çĕртен уйрăлнă канцелярист ан вĕренттĕрччĕ. Эпир хамăр уйра, ялта, колхозра мĕн акса ӳстерсе мĕнрен ытларах тупăш илмеллине никамран ăслăрах пĕлетпĕр. Пире тупăшлă ĕçлеме пулăшу, ирĕклĕх кирлĕ, — терĕ те вăл нумай пакăлтатса кайнăшăн каçару ыйтрĕ.

— Çавăнпа эпĕ сире сĕнӳ пама та хăяймастăп, — председатель куçĕнчен пăхса илчĕ обком инструкторĕ. — Сирĕн ĕçпе тĕплĕнрех паллашас шухăшпа çеç килтĕм.

Тымар бригадинче вĕсене Алеша Каргин кĕтсе илчĕ. Ăна кăçал «мăтăсă филиалĕн» пуçлăхне лартнăччĕ. Мастерскойра илемлĕх тӳрех куçа курăнать. Стенисене кăмăла уçмалли тĕспе сăрланă, маччине эрешлĕ плиткăсемпе çыпăçтарнă. Хĕрлĕ кĕтесĕ чуна илĕртет. Кашни япали хăй выранĕнче, пĕр пĕтĕм ансамблĕн уйрăлми пайĕ пулса тăрать. Сауна-мунча, канмалли, апатланмалла пӳлĕмсем, чăн-чăн биллиард, хĕрлĕ кĕтес механизаторсемшĕн ырлăх ĕнтĕ.

Каялла тухсан, Тельман Федотович радио ячĕ.

— Хамăр та ĕç çинчен çеç шухăшлар мар-ха, музыка итлер, кантарар пуç мимисене, — терĕ вăл тĕрлĕ каналсем тăрăх хăй юратнине шыраса. Сасартăк паллă юрăçăн уçă сасси илтĕнсе кайрĕ: «Миллион, миллион, миллион алых роз...»

Çулпа çăмăл «урхамах» тилхепине лăпкăн тытса пыракан председателĕн сăнĕ юрă вĕçлениччен пĕртте улшăнмарĕ. Шухăшне вăл хăех уçса пачĕ:

— Халăх ĕçлет, тăрăшать. Эпир те алă усса лармастпăр. Вĕсен ĕç условийĕсене çăмăллатсах пыратпăр, пурăнма, канма çĕнĕ çуртсем, керменсем, ача сачĕсем, профилакторисем, магазинсем, йышăну пӳнкчĕсем туса паратпăр. Чечек, кактус, юрлакан кайăк, аквариум, мунча, апатланмалли-канмалли таса пӳлĕм — вĕсем пурте илемлĕх тĕнчине пуянлатаççĕ. Ферма картишĕнче, колхоз правленийĕ тата ытти обществăлла çуртсем умĕнче ӳсекен пин-пин роза та илем салатать ĕçлекен çын енне. Ăшра юрăçпа пĕрле ĕнĕрлесе пытăм.

Тельман Федотовичăн чунĕ юрлани колхоз çыннисен чунĕ пĕр аслă хорта кĕрленĕ пекех туйăнчĕ Хиркина. Илемлĕх курăмĕ, ырă йăла хăвачĕ малашне ĕçченсен кăмăлне татах та çĕклессе шанать ĕнтĕ мал ĕмĕтлĕ хĕрӳ председатель. Инструктор шучĕпе Волков ял хуçалăхĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ кăна мар, ялти тава тивĕçлĕ культура ĕçченĕ те. Ыранхи кунпа пурăнаççĕ-мĕн вĕсем тахçантанпах. Халăх культурине ӳстерессишĕн партком секретарĕпе иккĕшĕ парти хушнă пекех кĕрешеççĕ.

— Кăмăла хирĕç кăмăл, тенĕ ĕлĕкех халăхра, — çăмăллăн калаçрĕ Волков. — Кăмăла кăмăл уçсан — çĕкленӳллĕ туйăм çуралать. Çĕкленӳллĕ туйăм сăрт-тăва та çавăрса хума пултарать. Кăмăлне кура телейĕ те, тет. Çапла пуль?

Хиркинпа Крутов хăйпе килĕшнине курнă «ямшăк» çапла вĕçлерĕ.

— Парти Программин çĕнĕ редакцийĕнче «илемлĕх ĕçлеве тата ытларах чапа кăларĕ, этеме çĕклентерĕ, унăн пурнăçне хитрелетĕ» тени пур. Çавна аса илетĕп те шухăшлатăп: мĕншĕн кĕрешмелле мар-ха çине тăрсах ĕç çыннин пурнăç илемĕшĕн? Мĕншĕн пĕри уçă кăмăлпа ĕçре çĕнтерӳ тунă чухне теприн хуçăк кăмăлпа пуçа усса пурăнмалла? Пур-ха халлĕхе пирĕн районта кăна мар, республикăра та халăхшăн çунман хыт чĕреллĕ пуçлăхсем. Тен, Василий Николаевич, çав кăмăла хуçакансен кăмăлне хăйсенне пăсмалла? Ан кансĕрлеччĕр вĕсем çынсене харăссăн утма. Кăмăллă çыншăн пурте кăмăллă пултăр: ĕçĕ те, канăвĕ те, пĕтĕм пурнăç илемĕ те. Тĕрĕс калатăп-и?

— Тĕрĕс, — машинăран тухсан алă тытрĕ ăна Хиркин. — Сирĕн патра хам та çунат хушнă пекех туятăп.

30

Района кĕçех парти обкомĕн бригади килчĕ. Хура тăпраллă мар тăрăхри ял хуçалăхне аталантарас тĕлĕшпе йышăннине мĕнле пурнăçлани çинчен секретариатра пăхса тухаççĕ-мĕн. Пĕр ушкăнĕ «Шурăмпуç çăлтăрне»

кайма кăмăл турĕ. Унти партком секретарĕн заместителĕ Каргин чĕннĕ пекех тата райкома пынă. Быстров ăна шупашкарсемпе лартса ячĕ. Лешсем çула май кÿршĕри совхозра та пулчĕç. Моисей Семенович вара вĕсене унтан тÿрĕрен хăйăрла та лачакаллă çулпа илсе тухрĕ. Темиçе хутчен кĕрсе ларчĕç, çăмăл автомашинăсене тĕрте-тĕрте хăшкăлчĕç.

— Справка çырма çакăнтан пуçлăр, — сĕнчĕ Каргин чеенрех. — Çул тума совхозăн хăйĕн вăй çитмест, район пулăшаймасть, çав йышăну хăвачĕ çине кăна шанма пулать.

— Çак çула та тăваймаççĕ-ши вара? — ыйтрĕç унран.

— Çук, тăваймаççĕ, — ĕненмеллех каларĕ Моисей Семенович. — Пирĕн Волков пултарчĕ, Тарăнвара çитиччен вун пилĕк çухрăм тăршшĕ асфальт çул хыврĕ. Таврăннă чух куратăр, ак. Совхозран каялла тухса унтанах шăлмаллаччĕ, тулькkăш çирĕм пилĕк çухрăм ытлашши чупмалла. Çавăнпа сире çакăнтан илсе килсе нушалантартăм. Каçарăр ĕнтĕ.

Машина ланкашкара хытă сиктернипе пĕр-пĕрин çумне тĕршĕннĕ çынсем урăх сăмах хушмарĕç. Шăплăха Каргин хускатрĕ:

— Хура тăпраллă мар тăрăхри хура-шур вырăнне çитрĕмĕр, юлташсем. Куратăр-и Хурашур ялĕ мĕнле çĕнелнине?

Машинăран тухнă çынсем вĕр-çĕнĕ пÿртсем çине пăхса илчĕç. Чÿрече хашакĕсене чăваш тĕррисемпе илемлетнĕ, вырăсла хапхасене тĕрлĕ тĕспе сăрланă. Симĕс курăк çинче сыснасем йăраланса çÿреççĕ, чăх-чĕп хуртkăпшанкă пуçтарать.

— Ячĕ интереслĕ, — терĕ Шупашкартан килнисенчен пĕри.

— Тĕлĕнетĕр-и, ачамсем? — ăнлантарма пуçларĕ Моисей Семенович. - Авалтан тухнă ят. Хура-шур тÿснĕ хресчен вăрмана тарса йывăç каснă, тунката хăртнă, хăйне тăранса пурăнмалăх çĕр лаптăкĕ уçнă. Анчах, тăра-

найман та, савăнайман та. Çывăхра чукун çул хывнă хыççăн çакăнти юмана ют патшалăха ăсатакан çĕрме пуян хуçасен аллине лекнĕ вăл, революцичченех вĕсемшĕн тар тăкнă. Кайран та çак ял çыннисем вăрман çыннисемех пулса юлнă. Вăрçăччен те, вăрçă хыççăн та мĕн пур вăй питти арçын вăрманпромхозраччĕ. Мĕншĕнни паллă ĕнтĕ, колхозĕ чухăнрахчĕ, ячĕшĕн шутланса тăраканскер çеçчĕ. Юлашки çулсенче çамрăксем майĕпенех хуланалла саланса пĕтме пуçларĕç. Тытса усра-ха вĕсене çак упа шăтăкĕнче? Эсир хăвăр та килĕшес çук тĕттĕм ялта пăчланса пурăнма. Çавăнпа... Куратăр-и? Пире ним тумасăр вăрман сулхăнĕнче хăяккăн выртать тесе ан шутлăр.

Моисей Семенович тĕллесе кăтартнă енче тĕлĕнмелли чăнах та пур иккен. Ял пуçĕнче çул çине асфальт сараççĕ.

Кунашкал ўкерчĕке вăрман варринче асăрхасса шутламан çынсем чăнах та унталла питĕ тĕсесе пăхрĕç, пĕрпĕринпе пăшăлтатса илчĕç.

— Куратăр-и? — пуçне ухрĕ Каргин. — Ял чĕрĕлет. Тымар енчен чĕрĕ тымар килет — çул. Пилĕк çухрăма тăсăлать вăл. Çич çĕр пин тенке ларчĕ. Колхоз çулталăкра илнĕ тупăшăн çурри пулать. Хаклă тымар-и?

— Йўнĕ мар.

— Çак пĕчĕк ялшăнах çавăн чухлĕ укçа тăкнин усси пур-ши?

— А какшă? — çамкине пўрнипе шаккаса кăтартрĕ Моисей Семенович. — Çак кунтăкра сахал мар пăтратнă пуль эпир ку яла сыхласа хăварассишĕн. Манран председательте чухне нимех те пулмарĕ. Маминов вăхăтĕнче пўртсем пушана-пушана юлма пуçларĕç. Авă, çиелтен хăмапа çапса лартнă чўречесем халĕ те пур. Пилĕк кил унашкалли. Унта пурăннă çынсенчен хăшĕсем Вăрманкасра, сĕтел-пукан фабрикинче ĕçлеççĕ, çын патĕнче пурăнаççĕ. Ултă çулта та хваттер илеймен, илесси куçпа та курăнмасть. Колхоза каялла илме заявлени пачĕç.

Халăхĕ йышăнсан юрать-ха. Пирĕн ялсем пĕр çапкаланчăка кĕртмерĕç. Ăçта лайăх — çавăнта ыр курасшăн унашкаллисем. Теприсем Шупашкарта, темле çырма шăтăкĕнче Шанхайри засыпушкăра шăршланса пурăнаççĕ, тет-и. Вĕсем те пурнăç чĕлпĕрне кунталла çавăрма шутлаççĕ те-ха. Ара, хулара тесе мĕн нуша куран çак? Кунта, ялта, вăрманта, уçă сывлăшра, курортри пек вĕт? Çав засыпушкăри тертлĕ пурнăçпа ним парсан улăштармас тăван кĕтесе. Мĕн, начар-им пурнăç халĕ Хурашурта? Ĕçлекеншĕн таçта та ĕç кăмăллă. Арçынĕ валли те, хĕрарăмĕ валли те çулталăк тăршшĕпе тар кăлармалăх пур. «Шурăмпуçпе» пĕрлешнĕ хыççăн, Волковпа Крутов çине тăнине пулах, пĕтмерĕ ку ял. Хĕрĕх килтен алла çитрĕ. Аллă çемьере çĕр вунă ĕçлекен çын. Тепĕр йăшарах панă колхозра ун чухлĕ çук пуль.

— Тĕрĕсех, — килĕшрĕ хăнасенчен пĕри. — Хула пулăшмасан хăш-пĕр çĕрте... Çак çирĕм çул хушшинче республикăра ял халăхĕ çирĕм пилĕк процент чухлĕ чакрĕ...

— Во, çапла çав, — хавасланчĕ Моисей Семенович, — хаçатра вулатăн та тĕлĕнетĕн. Улатăр, Пăрачкав, Çĕмĕрле районĕсене пурăнма куçса килме чĕнеççĕ. Тьфу, ăçта пырса тăрăнтăмăр. Ара, пирĕн патран ĕмĕрĕмĕр Çĕпĕр еннелле куçнă халăх. Халĕ, на сана, Чăвашьенчен Чăвашьенне пурăнма, ĕçлеме куçмалла. Хăй вăхăтĕнче халăха хисеплемесĕр, пурăнма, ĕçлеме лайăх услови туса памасăр ялсене хăртса хăварнă ĕнтĕ пуççăр пуçлăхсем. Халĕ чĕртесшĕн вĕсене. Ай-яй. Хăрнă тымар хăçан чĕрĕлнине курнă эсир? Ун çумне çĕнĕ хунав чиксе лартсан та вăл яланах чĕрĕлмест. Ют йывăça çĕр те асаплăн йышăнать, йывăççи те хурлăхлăн амалать. Ĕлĕк мур хыççăн пушанса юлнă, тет ялсем, хальхи çак тăнăç пурнăçра мĕн мурĕ пулчĕ-ши? Çавна ăнлантарса парăр-ха мана?

Пĕри: «Шупашкарта трактор завочĕ лартрĕç те, çавă нумай туртса илчĕ ĕç вăйне», — терĕ. Тепри: «Хальхи çамрăк культурăллă, яка, ирĕклĕ, çăмăллăн пурă-

насшăн», — терĕ. Виççĕмĕшĕ: «Хулара çапах та вăл ялтинчен ытларах ĕçлесе илет», — терĕ.

— Пурте тĕрĕс калатăр, уншăн та, куншăн та сайралчĕ пуль ял халăхĕ. Урбанизаци тетĕр-и-ха эсир? Вăт çав япала, ĕмĕр проблеми, пурнăç аталанăвĕн сикки авăра туртнă пекех туртать хресчене хула канлĕхне. Ăна эсир те, эпир те пĕтĕмпех тытса чараймастпăр. Прогресăн хăйĕн çулĕ, хăйĕн чуппи, хăйĕн вăйĕ пур. Анчах ял та аталану çулĕ çинчех-çке. Унăн та хăйĕн прогресĕ пур. Çав асфальт çулах илер. Вун-вун пилĕк çул каялларах тĕлленме те пултарайман Хурашур çынни хăй ялтан «Atăлпа» Мускава çитеп тесе. Курăр, епле тухса шăхăрчĕ вăл! Тепĕр вунă минутран Вăрманкасра пулать. Çирĕм çухрăм унта. Кам тетĕр эсир ăна? Таçта хулара ĕçлекенскер пуль, тесе ан шутлăр.Çук. Хамăр çынах. Тракторист. Арăмĕ фермăра ĕçлет. Иккĕшин уйăхри ĕç укçийĕ тăват çĕр-пилĕк çĕр тенке ларать. Çулталăк вĕçленсен премине пинĕ-пинĕпе илеççĕ. Килĕнче ĕне, икĕ тына пăру, виçĕ сысна,ултă сурăх, хур-кăвакал, чăххи-чĕппи, пахчийĕ тата сачĕ... Ал сулчĕ вăл сан засыпушку çине. Во мăй таран пурăнать, — пушшех хăпартланчĕ Каргин.

— Механизаторсемпе выльăх-чĕрлĕх пăхакансем çапла пуль-ха, ытти колхозниксем еплерех пурăнаççĕ тата? — ыйтрĕ унран пĕри.

Каргин кăштах шухăша кайса тăчĕ те, хуравларĕ:

— Ничаво пурăнаççĕ. Вăтам ĕç укçийĕ çĕр вунă тенке ларать, премийĕ ĕнтĕ мĕнле ĕçленĕ, продукци илнĕ тăрăх. Çĕр мĕн панипех çырлахмасть, çĕртен ытларах илме тăрăшать паянхи хресчен. Çавăнпа пирĕн çынсем çĕртен хăраса тармаççĕ, ун çумнех туртăнаççĕ, ун ăшшипех, ун тивлечĕпех пуян пурăнаççĕ. Çав туртăм, çав юрату мĕнле майпа тепĕр хут вăйланчĕ-ха? Пирĕн те сивĕнме пуçланăччĕ вăл. Касларăм-çке паçăрах Маминов пирки? Сергей Тимофейч алă сулчĕ те пĕрре Хурашур çине... «Унран пурпĕрех усси çук, пĕтсен тата лайăхрах», — тетчĕ. Районтисем те, ташĕ пĕр вăхăтра

шупашкартисемпе мускаврисем те вак ялсен малашсăрлăхĕ пирки хастарлансах калаçатчĕç. Вĕсене куçарса мăн ялсем — «хуласем» тăвас пирки ĕмĕтленетчĕç. Такам пуçĕнчен тухнă ăссăр шухăш мĕнле трагеди туса хучĕ, э? Вăт вăл халăх историне, халăх пурнăç тымарне, халăх кун-çулĕн малашлăх чечекне тĕтреллĕ куçпа — пуçпа пăхни мĕн патне илсе çитерет. Чĕрт-ха халĕ çав кӳршĕ районсенчи хăрнă ял тымарĕсене. Ĕмĕр-ĕмĕр çĕре тымар янă миçе этем йăхĕ вырăнтан яланлăхах куçса кайнă. Вĕсен вырăнĕнче пушă ялпа масар çеç юлнă. Ял ячĕ юлнă. Пирĕн вара Хурашур та, Авруй текен тепĕр ялĕ те чĕрĕ. Тымара вăхăтра шăваракансем тупăнчĕç, Тельман Федотовичпа Максим Максимович типме памарĕç ăна. Чăннипех ыранхишĕн тăрăшакан çынсем. Чи малтанах ял халăхĕ валли ĕç тупса пачĕç. Сĕт-çу фермин филиалне турăмăр, унсăр пуçне ĕне выльăх самăртма тытăнтăмăр. Хăмла пахчи хыврăмăр. Махорка ӳстеретпĕр. Чылай ĕçне машинăпа тусан та сахал кирлĕ-и ĕç вăйĕ? Хĕрсемпе хĕрарăмсем валли йăла комбиначĕн мастерскойне уçрăмăр. Çав вăхăтрах клубне те юсарĕç, ача сачĕ те майлаштарчĕç, пĕр пăтăрмах урлă çеç сиксе каçаймарĕç.

— Мĕн пулчĕ тата?

— Суту-илӳ пăтăрмахĕ. Райпо председателĕ Милов кутăна печĕ те, нисашту лартма килĕшмерĕ Хурашурта магазин. «Унччен çӳренĕ Тымара, халĕ те çӳреççĕ», — терĕ. Ара, ĕмĕрĕпех ют яла каймалла-и кĕрик-мĕн япалашăн? Ку ыйтăва та каярахпа хамăрах татса патăмăр. Атьăр-ха кĕрсе курар лавккине.

Шупашкар çыннисем Каргин хыççăн утрĕç. Клуб çумĕнчи пĕр кил умне çитсен вăл аллисене саркаларĕ те:

— Акă вăл Хурашур универмагĕ. Мĕн туянас тетĕр — çавна суйлама пултаратăр. А ну-ка, Хумма, кăтарт-ха хăнасене мĕн кăтармаллине, мухтан пĕрре, — терĕ Моисей Семенович хапхаран хирĕç тухнă вăтам çулсенчи лутакарах йăрă арçынна.

Килнисем çĕнĕ пӳрт çумĕнчи лапчăкрах пӳрт çине çырса çапнине тĕлĕнерех вуларĕç: «Хурашурти суту-илӳ çурчĕ».

— Магазин мар, суту-илӳ ҫурчӗ. Унашкаллине тӗл пулман пуль-ха эсир. Пирӗн кунта, упа шӑтӑкӗнче, тем те пулӗ, — мухтанса илчӗ Каргин.

Хумма пурне те шала чӗнчӗ.

— Ай-яй чаплӑ костюмсем ҫакӑнса тӑраҫҫӗ, кӗрӗк те пур, пушмакӗсем тата...

— Тумтир, кӗпе-йӗм, апат-ҫимӗҫ таварӗ, хуҫалӑхра кирлӗ япала, радиоприемник, телевизор тата темӗн те пӗр пур, — ӑнлантарчӗ сутуҫӑ, — шифоньер-стенка таранах. Вӗсене заявкӑпа илсе килетӗп. Тарӑнвар пекарнинчен кунне иккӗ ҫӑкӑр килсе параҫҫӗ. Ял ыйтӑвне тивӗҫтернӗ пек те, ку таранччен ятлаҫакан-вӑрҫакан курманччӗ те...

— Мӗншӗн суту-илӳ ҫурчӗ ятлӑ-ха вӑл? — чӑтаймарӗ пӗри, ыйтсах пӗлес терӗ пулас.

Хумма вырӑнне Каргин хуравларӗ:

— Каларӑм-ҫке сире Милов магазин лартма та, уҫма та ирӗк памарӗ тесе. Эпир вара ҫапла канаш тытрӑмӑр та ял пухӑвӗнче. Хумман кив пӳрчӗ лайӑхах, ма усӑ курас мар унпа? Хӑй килӗштерчӗ. Кайрӑмӑр пӗрле Вӑрманкаса. Малтан райкома кӗтӗмӗр. Быстров райӗҫтӑвком председателӗпе райпо хуҫине чӗнтерчӗ. Сӳтсе теврӑмӑр-яврӑмӑр та ыйту вӗренне, тӗввине салтрӑмӑр хайхи. Килӗшӳ тӑрӑх Хумма ҫурт парать, райпо — тавар. Сутуҫи те хӑех пулать. Икӗ еншӗн те усӑллӑ. Вӑт ҫакӑн хыҫҫӑн ӗнтӗ Хумма пирӗн ӗлӗкхи купца пек паллӑ ҫын пулса тӑчӗ таврара. Хурашурта магазин ҫук — суту-илӳ ҫурчӗ пур. Халӑхра усал сӑмах ҫук — кирлӗ тавар яланах пур. Вӑт ҫапла айланкаласа пурӑнатпӑр. Халӗ ҫӗвӗ мастерскойӗпе паллашӑпӑр та, ача садне кӗрсе выльӑпӑр та, ҫынсемпе пуплесе илӗпӗр те Тарӑнвара вӗҫтерӗпӗр. Мана кӑтартма, ӑнлантарма хушнӑ Хурашур хура-шур нушинчен мӗнле ҫӗкленнине. Сирӗн — хак парасси.

Хумма лавккинчен пурте кӑмӑллӑн тухрӗҫ, хӑшӗсем хӑйсене кирлине туянма та манмарӗҫ. Шупашкарта тӗл пулман япалана тепӗр чухне ялта куратӑн-ҫке. Урампа пынӑ май Моисей Семенович такампа калаҫрӗ:

— Суту-илӳ ҫурчӗ ӗнтӗ — вӑхӑтлӑх япала. Паянхи ыйтӑва татса панӑ вӑл. Нателo. Ыранхи вара... райпо каллех тӑсса ячӗ магазин ыйтӑвне. Чул ҫурт лартма шантарчӗҫ. Сӑмаха тытаймаҫҫӗ. Каллех сессире ҫунтарма тивет. Хальтерех запрос парас пуль. Эпӗ ку ял депутачӗ-ҫке. Суйларӗ те халӑхӗ, тивӗҫтермеллех ӗнтӗ унӑн хуйхи-суйхине. Районта татса параймасан, тен, эсир пулӑшӑр. Хӗстерӗр кӑштах ҫӳлтен. Юрать пуль?

Шупашкарсем хут ҫине ҫырса хунине куҫ айӗн пӑхса илнӗ хыҫҫӑн Каргин хаш сывласа ячӗ. Шанчӑка кӗтсеши е урӑхларах шухӑшласа, ӑна вӑл хӑй кӑна пӗлет. Унӑн ӑшӗнче халӗ пурпӗрех савӑнӑҫ хумӗ вылять. Ӗмӗр тӑршшӗпе халӑх нушишӗн кутӗрленнӗскер, пурте ырӑ пурнӑҫ курасса шаннӑскер, вӑл колхоз миллионӗсемшӗн те, ҫатма пек ҫулшӑн та, вунӑ минутра Вӑрманкаса ҫитекен тракторист машинишӗн те, Хумма лавккишӗн те, ача сачӗшӗн те, пур ырӑ улшӑнушӑн та чунтан хӗпӗртет. Ҫав пурнӑҫ тымарӗшӗн — чӗрӗ тымаршӑн — вӑл хӑй те Волковсемпе тата Крутовсемпе пӗрле ҫӗр ҫывӑрмасӑр тӑрӑшнӑ-ҫке.

## 31

Ҫур акине тухас умӗн Крутов парти комитечӗн ларӑвне ирттерме шутларӗ. Ларуччен фермӑсене ҫитсе курчӗ, механизаторсем патӗнче пулчӗ. Воробьев гвардийӗ кӗрешӗве тухма хатӗр. Кӑҫал ӗҫе хӑвӑртрах та тухӑҫлӑрах йӗркепе мӗн пур уйра усӑ курма палӑртнӑ. Ҫӗр улмие индустри меслечӗпе ҫитӗнтереҫҫӗ, алӑ вӑйӗсӗр, йӑлтах машина-тракторпа ӗнтӗ.

— Эп паян парткома пымасан мана кутран хытах лекет-и? — ыйтрӗ мастерской умӗнче тем чавалана-кан Хумма Петӗрӗ.

— Енчен те пирӗн ларуран хаклӑрах ӗҫ тӑватӑр пулсан, хӑваратӑп, — терӗ парторг. — Ҫынни, кворумӗ ҫиттӗрччӗ ҫеҫ.

Хумма Петĕрĕ йăлл кулчĕ, аллинчи мăлатукне усса тепĕр аллипе тарланă çамкине шăлса илчĕ, унтан вăрттăнлăхне пĕлтерчĕ:

— Çак культиватор çĕççисене хамăн пуç шутланă пек улăштарса çĕнетесшĕн-çке. Çур аки ыйтăвне эпĕ чĕлхепе мар, алăпах татса парам-ха.

Парти комитечĕ унсăрах пухăнчĕ. Акă, лару вĕçленсе пырать ĕнтĕ. Йышăну пӳлĕмĕнчен техничка кĕчĕ те секретаре хăлхаран тем каларĕ. Кĕç алăкра Карачăм мучин сухалĕ курăнчĕ. Васкаса утаканскер вăл пуçне кăвапа таран тайса вăтанарах сывлăх сунчĕ:

— Тайма пуçăм сире пурне те!

Вată çынна Максим Максимович хирĕç тухсах алă пачĕ, айккинчи пушă пукан çине асăрханса лартрĕ. Карачăм мучи кутне тĕкичченех сиксе тăчĕ, сухалне шăлашăла калаçма пуçларĕ:

— Вăт, ачамсем, вуç та хисеплеми пулчĕç мана Тымарта, хам юратакан Муйçей Каркинах упишать турĕ. Сирĕн пата пулăшу ыйтма килтĕм.

Тĕлĕннипе пурте мучи еннелле пуçĕсене çавăрчĕç.

— Мĕн пирки хисеплемест-ха вăл? — ыйтрĕ колхоз хуçи Волков.

Карачăм мучи хăюлланса сассине хăпартрĕ:

— Ара, мĕн, мана ват супнă тесе, партийцăна йышăнасшăн мар. Кăмунистсен канашне те пытăм. Çут çамкаллă çул пуçĕ умĕнчех кумпайнер пумущникне кăшласа лараççĕ хăйсем. Леш, Хĕрлĕ тар çĕрĕ-шывĕнчен тухса тарса пĕлĕте курпунĕпе шăтарнă кенçек çинчен шапăлтатаççĕ. Кумпайнпа тулă вырсах, Мускав çулне çивĕч чĕлхипе хырсах патша пуканĕ айне йăштанса çитнĕскер вăл Мишка-Шишка, теççĕ. Унашкал хир курпунĕ пирĕн хамăрăн та сакасникре туллиех. Ма пирĕн ун шăршлă пăхне çисе пурăнмалла. Вăл патшалăх пуçне ларнăранпа та пирн Çĕлен улăхĕнче чĕркуççи çӳллĕш çаран ӳсмен-ха. Хир сысни сутса пилĕк çуллăха виçĕ çулта пурнăçламалла-и пирĕн? Акă, сăмах çинех

персе ҫитрӗ вӗсен тусӗ. Тӗрӗс калаппӑр-и эпӗр, теҫҫӗ. Эпӗ те ҫухалса каймарӑм, сухал хумӗпе пӑчӑ пӳлӗме уҫӑлтарса ятӑм. «Тӗрӗс кумеклетӗр, — терӗм. — Ҫитет манран хир сысни кӑмунин патши Карачӑм тесе мӑшкӑлласа. Патшах теттӗр пулсан, патшах пулам — сысна патши. Ҫӗр сысна ним мар ыранах сутма пултаратӑп, анчах... сирн ятпа мар, Пӗрремӗш Карачӑм патша ячӗпе. Аш-какай кӑмпинатне мар тулӗк, Мускава ертсе каятӑп, Кремӗль кил хушшинех кӗртсе хупатӑп вӗсене. Унччен вара, унччен... мана эсӗр хӑвӑр рете илӗр, хӗрлӗ кӗнекеллӗ, Ленин юлташ пуҫлӗ пропуск туса парӑр. Унсӑрӑн эп хамӑн сысна кӑмунипе мӑн сехетлӗ Сӑпас пашни патне те ҫывхараймастӑп, выҫӑ мусквичсем. Хрущ саманинче ӗне нӑрри ҫисе анранӑскерсем, ман вӑрман кӗтӗвне хӗрлӗ лапам варринчех шашлӑка яма пултараҫҫӗ. Авӑ, пӗрене ҫинчи пӑтаран ҫакса янӑ хамӑрӑн Чӗмпӗр ҫемлякӗ Ильич та мана пулӑшас майлах чее куҫӗпе сире ӑслӑ канаш сӗнет. Акӑ, хучӗ те пур. Ӑна Крахьянпа тӗрӗсех шӑрҫаларӑмӑр пек... Мӗнле, илетӗр-и мана, сысна кӑмунин патшине, хӑвӑрӑн кӑмунуна? Мӗн, ӑслӑ-тӑнлӑ этем пур-и ҫав пирн ял партийцисен шайккинче? Ахӑлтатрӗҫ-ахӑлтатрӗҫ те тарӑхтарсах ячӗҫ. Пире вашнӑй аш кампанийӗ ҫинчен сӳтсе явнӑ чухне ан кансӗрлесе ҫӳре тесе Муйҫей Ҫимунчӗ хулран тытсах кӑларса ячӗ хӑйӗн кумпанийӗнчен. Те сысна хӳри, те пӑру хӳри яваҫҫӗ, те пуш чӗлхерен пушӑ яваҫҫӗ, пӗлеймерӗм. Алӑ султӑм та вара хамӑр яла пӑрахса утрӑм. Ну, ку Каркин юлташа, вӑрмана илӗртсе кӗрсе, пурпӗр Хир сысни кӑмунин пучутлӑ членне илетпӗр тесе урсах кайрӑм. Ара, хӑйсем, клатувшик таран кӑпӑсӑ аванкартӗнче шутланаҫҫӗ, мана, мана, пӑртҫетателӗн утветлӑ ҫыннине, сулнӑка ҫапса хӑварасшӑн. Тӗрӗслӗх хӗврех пулаканччӗ-ха тесе юри пиплютеккӑна кӗрсе вуласа пӑхрӑм сирӗн уставлӑ кӗнекене. Пит лайӑх, ӑнланмалла каланӑ унта, партие вун саккӑра ҫитнисене илмелле тенӗ. Пирнешкеллисене илме юрамасть тесе

пĕр сăмах та çырман. Çампа тĕрĕслĕх шыраса çӳретĕп. Нивушлĕ эп Каркинсенчен кая çын, сирнпе пĕрле мар? Мĕн, пĕлӳ çитмест-и ман? Кахал-и эп? Ах, тахçанах ĕмĕтленнĕччĕ те çав халăх аванкарчĕ пулма... Карчăка университет пĕтерсе те савăнтартăм, тепре кăмунăра пулса хĕпĕртеттерес тенĕччĕ... Улăм вăррине кайса усечка патăм та ун чухне, хăю çитмерĕ санпа калаçма, Макçăм Макçăмч. Çапах та халь... Акă саявки.

Çапла чунне кантариччен калаçса Карачăм мучи кăкăр кĕсйинчен хутлатнă тетрадь листи кăларчĕ те партком секретарьне тыттарчĕ. Ăна Максим Максимович сасăпах вуларĕ: «Чăваш АССРĕнчи Вăрманкас районне кĕрекен Хурăнвар гражданинĕнчен Воробьев Герасим Филипповичран. Чунтан-вартан ыйтатăп сире мана партие илмешкĕн. Эпĕ КПСС Уставне те, партин пур Программине те пурнăçра вĕрентĕм. Унта кăтартнă çулпа ку таранччченех такăнмасăр, пăркаланмасăр пыратăп. Çĕршыв уттипе малашне те çирĕп утăп.»

Ватă çын пĕр вырăнта салтак пек хытса тăрать, Крутов çинчен куç илме пĕлмест.

Ыйтса çырнине вуланă хыççăн ăна партком секретарĕ ăнлантарса пачĕ:

— Сире эпир, Герасим Филиппович, епле лайăх кăмăллă çыннине те, ĕçчен те таса чунлă, ăслă, ăсчах пулнине те питĕ аван пĕлетпĕр. Çапах та сире, парти уставĕпе, хăвăр ĕçленĕ çĕрте КПСС членĕн кандидатне илмелле, тепĕр çулталăкран тин — парти членне. Йĕрки çапла-çке.

— Эх, йĕрке, йĕрке... Ăçта пур-ши вăл, хамăрăн кив «Шурăмпуçĕнчи» пекки? Тĕлĕкре те курап эп кăмунăн мăн эртелĕ утияла кашни хăйĕн пуçĕ патнелле туртнине. Пĕррехинче, тĕлĕннипе, виç кун анраса çӳрерĕм. Тĕлĕкре çапла эп сăссăссăр картти çинче саркаланса выртап пек. Мăнук ман, мусăкшăн вилекенскер, магнитофонне тĕнче илтмелле янраттарать: «Нихçан арканми суйуса пĕрлештернĕ пур ирĕк республиксене аслă Руç...

Эпир кăмунисăмра уçсăн куратпăр çĕршывăн телейлĕ пулас кун-çулне...» Çав кимăн кун-çулĕшĕн, тăван халăхсен мухтавĕшĕн хĕрлĕ прупăск илсе, хамăн хир сысни кăмунипе партин аслă пухăвне, сйес текенни-не, рапурт парасшăн, кенçекĕн анкарти пек пӳлĕмне хамăн кăмунăна кĕртсе ярса, эпир те, тымарсем, пилĕк çуллăха виçĕ çул хушшинче тултартăмăр тесе, ĕмпери патшине личнăй парне парасшăн. Мана унччен çисе яма пуçланă курпун сыснасемпе вăл хуть те мĕн тутăр, хăйне кăшласа яриччен Ахрикăна каструле кайсан, хăть некăрсене валеçсе патăр теп. Кĕç ман ай сарăм йăшăл-татма пуçларĕ, çиçĕм ялтлатса тӳпене çурса ячĕ те, Хри-стус кĕреçе сухаллă икĕ çынна тата шакла пуçлă ха-мăрьяла, леш, райкум умĕнче кашни ир кăмуна шевли-пе пит çăвакан Тимĕрпе пĕрле пурне те вăркăнтарчĕ кăна тĕнче аварне. Хĕрлĕ утияла çавра çил çавăрттарса илсе кайсан, шапа хырăмĕ пек çара хырăмпа çуталса юлтăм, çумăр лӳшкеме пуçланă май ман айри карттă, исленнипе, çурăлса вакланса пырать ваçка. Эпĕ те çав авăра лекесрен хăранипе кăшкăрсах вăранса кайрăм. Эй турăçăм... Алă çывăрса ларнипе сăх сăхаймастăп вĕт. Халь те çурăм тăрăх сăсăл вĕçсе хăпарчĕ çавна аса илнипе. Мĕне пĕлтерет-ши ку? Тем, ахальтен мар пуль. Тĕлĕк пурнан пурнăçра куç умĕнче кайран ташламанни пул-манччĕ-ха ман. Ай самани те çав... Тем курасси те пулĕ малашне. Унччен хăть этемлех пурăнса юлас. Çавăнпа та... Ĕмĕрĕме кăпăсăссăпа ирттернĕскер, вĕçĕнче те пулин ăна инкекрен çăлса хăварас шухăш пур. Мĕнле, тĕрĕс калап пек-и?

Ял ăсчахне питĕ тăнлăн итлесе шухăша путнă Кру-товăн пуçĕнчи шухăшĕ те таçта çитиех сарăлчĕ, мучин ăс-тăн тавракурăмĕ хăйсем пек нумай вĕренмесĕрех вĕсенчен пĕртте кая маррине тĕв турĕ вара вăл.

Кĕреçе сухал ун-кун пăхкаларĕ, пуçне тата темле тăвăллă шухăш пырса кĕнĕн, çамкине икĕ аллипе те çавăр-са тытрĕ, унтан сассине çемçетсе, шанчăк туйăмĕпе ыйтрĕ:

— Кантитат пулма та исключени тени çуккă-ши?

— Çуккă çав, Герасим Филиппович, çуккă, сирĕншĕн тем пек çине тăмалла та...— Крутов ăна заявленине каялла пама пуçларĕ.

Лешĕ хирĕçлесе икĕ аллипех сулчĕ:

— Илместĕп, ыллăм, сиртех юлтăр. Вилес-мĕн пулсан, мана та партийцă, кăмунă ачи тесех пытарăр. Сирĕнпех, сирĕн ретрех пулас килет ман, Каркин Муйçейĕн камантинче мар. Унтан, малтанхи пекех пуç тайса, васкамасăр каялла çаврăнчĕ.

Крутов мучие йышăну пӳлĕмĕнче кăшт тăхтама ыйтрĕ.

Парти ĕç-пуçĕ вĕçленнĕ хыççăн вĕсем урама тухрĕç. Тулта çур хĕвелĕ аташать. Ăшă çил пит-куçа ачашлать. Хурăнвар вăрманĕ хыçĕнче çумăр çăвать. Вăл енчен асамат кĕперĕ палăра пуçларĕ, майĕпен хитреленсе пĕкĕленчĕ, Тарăнвар уйĕсенчен пуçласа Тымар вăрманне çитиех тытса илчĕ.

— Эх, тĕнче тĕлĕнтермĕшĕ! — унталла аллине тĕллерĕ Карачăм мучи. — Пурнăç çăл куçĕнчен шыв ĕçет, этеме илем кӳрет. Эсир те, ыллăмсем, ман юратнă тăванăмсем, аслă тăсăм хунавĕсем, малашне те çав асамат кĕперĕн нумай тĕслĕ кĕперĕ пекех, чăваш халăхне илем кĕртĕр, халăхра çирĕп тымар, тарăн, нихçан хăрман чĕрĕ тымар ярăр. Тăван халăх шухăшĕпе, чĕлхипе пурăнăр. Халăхшăн та, хăвăршăн та ĕçлĕр — хальхи пекех. Сирĕн пит-куçăрта эпĕ мĕн виличченех çав асамат кĕперĕ пек капăрлăха, халăхăн чĕрĕ илемлĕхне курса тăрам. Вăт сире ват çын канашĕ.

Крутов хушса каларĕ:

— Халăхран иртес теместпĕр-ха. Ватă çынсенчен те. Ватă вĕт вăл — хăй пĕр шкул — пурнăç шкулĕ.

Икĕ енче — вăй питти Крутопа Волков, варринче — сухала каçăртнă Карачăм мучи. Виççĕшĕ те харăссăн пусса хăюллăн малалла, тăвалла утаççĕ.

*Иккĕмĕш кĕнекен вĕçĕ*

**Владимир Прокопьевич Кузьмин**

# КОРЕНЬ ЖИЗНИ

Роман

*На чувашском языке*

Книга вторая

*Издается в авторской редакции.*

Подписано к печати 16.12.2008. Формат 60x84/16.
Бумага офсетная. Печать оперативная. Гарнитура Таймс.
Физ. печ. л. 19,5. Тираж 1500 экз. Заказ № 172.

Отпечатано в типографии «Новое Время».
428034, г. Чебоксары, ул. Мичмана Павлова, 50/1.
Тел.: (8352) 41-27-98, 46-43-46. E-mail: newtime1@mail.ru.

80,00

## ВЗАИМОДЕЙСТВИЕ В ИНТЕРЕСАХ ПОВЫШЕНИЯ ЭКОНОМИЧЕСКОГО ПОТЕНЦИАЛА ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ





З.В. Воробьева, генеральный директор

### ОТКРЫТОЕ АКЦИОНЕРНОЕ ОБЩЕСТВО СТРАХОВАЯ КОМПАНИЯ "ЧУВАШИЯ-ПОДДЕРЖКА"

428024, г. Чебоксары, проспект Мира, д. 90, корпус 1

ОАО СК «Чувашия-Поддержка» успешно работает более 15 лет. В его уставном капитале доля Правительства Чувашской Республики составляет 33,15 процента. Компания предоставляет широкий спектр страховых услуг, динамично развивается и имеет устойчивое финансовое положение. По объему собранных страховых взносов она входит в число лидеров регионального страхового рынка, а по страхованию урожая сельхозкультур занимает лидирующие позиции на российском страховом рынке. В целях доступности страховых услуг представительства компании открыты во всех городах и районах Чувашии, а с 2008 года ее филиалы открываются в других регионах России.

За заслуги и достижения в лидерстве по управлению бизнесом и за использование инновационных технологий компания награждена тремя международными призами общественного признания. В 2008 году она стала лауреатом Поволжской национальной премии в области страхования «Серебряный зонт» в номинации «Информационно-открытая страховая компания».

### ЧУВАШСКИЙ РЕСПУБЛИКАНСКИЙ СЕЛЬСКОХОЗЯЙСТВЕННЫЙ ПОТРЕБИТЕЛЬСКИЙ КРЕДИТНЫЙ КООПЕРАТИВ «СОГЛАСИЕ» (ВТОРОЙ УРОВЕНЬ)

ЧРСПКК «Согласие» создан в 1998 году при содействии СК «Чувашия-Поддержка». Сегодня он входит в число крупнейших сельских кредитных кооперативов России. Большой опыт работы на микрофинансовом рынке и высокая квалификация персонала позволяют кооперативу быть финансово-устойчивым и конкурентноспособным. Он успешно участвует в реализации социально-значимых республиканских целевых программ. В рамках его взаимодействия со СК «Чувашия-Поддержка» сформирована и развивается региональная двухуровневая система сельской кредитной кооперации. Микрофинансовые услуги становятся все более доступными и востребованными. Люди учатся жить в долг и успешно пользуются займами на выгодных для них условиях. Кредитные кооперативы хорошо вписываются в локальную социально-экономическую среду и становятся надежными партнерами для хозяйствующих субъектов, граждан и органов местного самоуправления.

### РЕСПУБЛИКАНСКИЙ СЕЛЬСКОХОЗЯЙСТВЕННЫЙ ПОТРЕБИТЕЛЬСКИЙ ОБСЛУЖИВАЮЩИЙ КООПЕРАТИВ «СОДЕЙСТВИЕ» (ВТОРОЙ УРОВЕНЬ)

Неотъемлемой частью многоукладной сельской экономики становятся сельскохозяйственные потребительские кооперативы сельскохозяйственных и несельскохозяйственных видов деятельности. Их предназначение - обеспечивать личным подворьям граждан доступ к рынкам сбыта и переработки сельхозпродукции, оказывать на селе услуги по обработке земельных участков и уборке урожая, продаже материальных ресурсов, перевозке грузов, выполнению ремонтно-строительных и других работ. В целях объединения и координации работы таких кооперативов, более эффективного ведения хозяйства и увеличения доходов их членов в 2006 году при участии СК «Чувашия-Поддержка» и ЧРСПКК «Согласие» создан РСПОК «Содействие». Он оказывает своим членам консультационные, информационные и маркетинговые услуги, помогает им создавать и развивать материально-техническую базу, проводит для руководителей и специалистов кооперативов обучающие семинары.

### УЧЕБНО-ИННОВАЦИОННЫЙ ЦЕНТР С УЧЕБНО-ДЕМОНСТРАЦИОННЫМИ ПЛОЩАДКАМИ

В рамках взаимодействия СК «Чувашия-Поддержка», ЧРСПКК «Согласие» и РСПОК «Содействие» на базе имущественного комплекса страховой компании осуществляются меры по созданию Учебно-инновационного центра с учебно-демонстрационными площадками на базе сельскохозяйственных потребительских кооперативов. Эта инициатива получила поддержку со стороны Минсельхоза Чувашии и России, а опыт работы этих трех структур востребован и за пределами республики.


| ОАО СК "Чувашия -Поддержка" | ЧРСПКК "Согласие" | РСПОК "Содействие" |
|---|---|---|
| тел./факс: (8352) 286-484 | тел./факс: (8352) 286-400 | тел./факс: (8352) 286-873 |
| www. podderjka.ru | www. chrspkk.ru | www. rspoksod.ru |